К84.09(=Ив)
М67
Ч-39691

Национальная библиотека ЧР
4-039691

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Тăван чĕлхепе калаçнă чух,
Турра кĕлтума лартнă çын пек,
эпĕ канса каятăп.

Митта Ваçлейĕ

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
ГУМАНИТАРНЫХ НАУК

ВАСИЛИЙ МИТТА

СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ

В двух томах

Том II

Очерки и рассказы, переводы,
статьи и рецензии,
письма, дневниковые записи,
документы

Чебоксары
Чувашское книжное издательство
2005

К84.09(=Чув)
М67

ЧĂВАШ ПАТШАЛĂХ ГУМАНИТАРИ
ĂСЛĂЛĂХЕСЕН ИНСТИТУЧĔ

МИТТА ВАÇЛЕЙĔ

ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

Икĕ томпа тухать

II том

Очерксемпе калавсем,
куçарусем, статьясемпе рецензисем,
çырусем, кун кĕнеки,
документсем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2005

УДК 821. 512. 111
ББК 84 (2 Рос=Чув) — 5
М 66

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн
Ăслăлăх канашĕ пичете çирĕплетнĕ

Редакци ушкăнĕ:

В.С. Григорьев, П.Е. Димитриев (Эйзин), А.Н. Тимуков, А.П. Хусанкай, Г.Ф. Юмарт

Рецензенчĕ ***В.П. Никитин (Станьял)***

Пухса хатĕрлекенĕ,
ум сăмахĕпе асăрхаттарусене
çыраканĕ ***Г.Ф. Юмарт***

Ăслăлăх редакторĕсем: ***А.Н. Тимуков, Г.Ф. Юмарт***

ПРОВЕРЕНО
20/0 22 СЕН 2017
4-39691
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Митта Ваçлейĕ

М 66 **Çырнисен пуххи.** II том. Очерксемпе калавсем, куçарусем, статьясемпе рецензисем, çырусем, кун кĕнеки, документсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2005. — 511 с.

«Çырнисен пуххин» иккĕмĕш томне пысăк пултарулăхлă çыравçăн прозăлла çырнă хайлавĕсемпе куçарусем, çырусем, статьясемпе рецензисем, кун кĕнеки тата документсем кĕнĕ.

УДК 821. 512. 111
ББК 84 (2 Рос=Чув) — 5

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2005
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2005

ISBN 5-7670-1379-9

РЕДАКЦИРЕН

Митта Ваçлейĕн «Çырнисен пуххи» икĕ томпа тухать. Усă курма меллĕрех пултăр тесе çыравçăн поэзийĕпе прозине уйрăмшар кĕнекере пичетлесе кăларма йышăннă. I тома сăвăлла хайлавсене тата куçарусене кĕртнĕ, поэт хăйĕн тăван ялĕнчи Каттис Мишшинчен çырса илнĕ халăх юррисене хушса панă. II томра прозăлла çырнă хайлавсемпе куçарусем, çырусемпе кун кĕнеки тата документсем çапăнаççĕ.

Вĕсене мĕн чухлĕ тата епле пичете хатĕрлени çинчен акă мĕн каламалла. Пичет архивĕнчи (Кĕнеке палатинчи) картотекăра кăтартнă калавсемпе очерксене тата статьясене ку кăларăма пурне те кĕртнĕ. Асăннă картотекăра вактĕвек тĕрленчĕксемпе хыпарсене палăртман. Иккĕмĕш тома хаçат çыххисемпе журналсенче тĕл пулнă ун йышши тĕслĕхсенчен хăшне-пĕрне кĕртесех терĕмĕр. Анчах та республикăри тата районсенчи хаçатсенче тухнă ытти материалсене шыраса тупма май килмерĕ.

Проза томĕнче çавăн пекех Митта Ваçлейĕн архивĕнчи ал çырусем те сахал мар пичетленеççĕ. Ку шута вак-тĕвек рецензисемпе çырусем, кун кĕнеки сыпăкĕсем тата документсем кĕреççĕ. Калас пулать, вĕсене пурне те пухса çитернĕ теме çук: пĕрисене шыраса тупман, теприсене пичетлеме иртерех (вĕсем çыравçă тăванĕсен вăрттăнлăхĕ шутланаççĕ) т. ыт. те. «Çырусем» тата «Кун кĕнеки» пайсенче уйрăм вырăнсене кĕскетсе пичетленĕ. Ун пек тĕслĕхсене тăваткăл скобкăсем ăшне нумай пăнчă лартса кăтартнă. 1937 çулта сăвăçа арестленĕ чухне кун кĕнекисене, кĕсье тетрачĕсене тата ытти алçырусене чылай илсе кайнă. Çапах та II том Митта Ваçлейĕн прозине унчченхинчен туллинрех кăтартать.

Калăпăшĕ пысăкран тата уйрăм кĕнекен тухнăран сăмах ăстин паллăрах прозăлла куçарăвĕсене ку тома кĕртмесĕр хăварнă (Ф. Гладковăн «Пуç-уралла этем» повеçĕ, М. Горькин «Фома Гордеев» романĕ, Н. Островскин «Тăвăлпа çуралнисем» романĕн сыпăкĕсем, Л. Кассилĕн «Аслă хирĕç тăру» романĕ). Республикăри радиокомитет архивĕнче Митта Ваçлейĕ 1932—1934 çулсенче хатĕрленĕ материалсем тупăнма пултараççĕ. Хальлĕхе вĕсене ятарласа шыраман. «Хисеплĕ вилĕм» калавсăр пуçне Митта Ваçлейĕ çак жанрпа татах та çырнă. Чăваш халăх поэчĕ Г.А.Ефимов каланă тăрăх, 1956 çулта «Ялав» журналта «Чĕлĕм Кавĕрли» ятпа кулăшла калавсен ярăмĕ тухса тăнă. Çав шутра Митта Ваçлейĕн те пĕр-икĕ калавĕ пичетленнĕ. Хальлĕхе хăшĕ-хăшĕ унăн пулнине палăртма май килмерĕ, çавăнпа та вĕсем çырнисен пуххине кĕреймерĕç.

Текстсене пичете хатĕрленĕ чухне авторăн чĕлхе уйрăмлăхĕсене упраса хăварма тăрăшнă. Анланма йывăр сăмахсен пĕлтерĕшне, тĕл пулакан тĕрлĕрен ятсене асăрхаттарусен пайĕнче анлантарнă. Ятарлă библиографие Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен калакан ĕçсене кĕртнĕ. Хăш-пĕр алçырусемпе сăн ўкерчĕксене кĕнекере усă курма ирĕк панăшăн редакци паллă çыравçă хĕрне Илемпи Васильевна Миттана чунтан тав тăвать.

«Çырнисен пуххи» чăваш вулаканĕсене ăс-хакăлпа кăмăлсипет тĕлĕшĕнчен ырă витĕм кўрессе шанса тăратпăр. Уйрăм çынсенче упранакан çĕнĕ материалсене Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивне ярса пама ыйтатпăр.

АВТОБИОГРАФИ

Эпĕ 1908 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче Аслă Арапуçĕнче (Патăрьел районĕ, Чăваш Республики), чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Атте те, анне те хут пĕлмен чăвашсем пулнă.

Ӳснĕ чух мана пуринчен ытла пысăк пичче Илле хавхалантарса вĕрентетчĕ. Вăл 1918 çултанпах коммунист пулнă, нумай тар-шур чăтса ирттернĕ: империализм вăрçипе граждан вăрçинче тата Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çапăçнă. Пысăк пичче 1941 çулта фронтра пуçне хунă.

1922 çул пуçламăшĕнче, хам вун тăватта çитсен, эпĕ комсомол ретне кĕтĕм.

Илемлĕ литературăна мĕн ачаран юратнă темелле, пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухнех ăна чĕререн кăмăллаттăм. Пушкинпа Гоголь кĕнекисене каçса кайса вулаттăм, юратнă сăвăсене пăхмасăр калама вĕренеттĕм. Чухласса сахал чухланă-ха ĕнтĕ, çапах та пичетри сăмаха хисеплесси «селифанла» пулман курăнать çав. Пĕррехинче çапла, хам пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухне-ха вăл, вырăсла сăмахсене чăвашлисемпе пăтраштаркалса тенĕ пек, пĕтĕм кăмăлтан çĕкленсе те антăхса «Капитан хĕрĕ» произведенире мĕн çинчен çырнине каласа панине астăватăп, майра учительницăна эп каласа пани пит килĕшнĕччĕ.

Чăваш поэзийĕн ытарайми илемĕпе («Арçури», «Нарспи» произведенисемпе) паллашни пуçăмра хам вăя виçсе пăхма хĕтĕртекен шухăш хускатрĕ: ун пек кĕнекесене çынсемех çыраççĕ иккен, чăвашсен хăйсен те сăвăçсем пур...

Чăвашсен Ульяновскри педагогика техникумне кĕнĕ вăхăтра, 1924 çулта, хам сăвăсемпе çырса тултарнă самай хулăн тетрадь пурччĕ манăн, каярахпа çав сăвăсенчен хăшпĕрисем пичетленсе те тухрĕç.

Ун чухне эп, хам комсомолец пулнă май, Александр Безыменскипе Александр Жаров сăввисене юратарах параттăм,

çырасса та вĕсем майлă çырма пăхаттăм. Есенинăн чуна пырса тивекен чипер сăввисем те мана пит илĕртетчĕç. Сăмаха тӳррĕн калас тетĕп, литературăра хамăр пек пурнăç шайĕпе çирĕпленсех çитеймен çамрăксемшĕн Есенинăн тӳнтерле-инкеклĕ çырнă сăввисем те чĕре патне пыратчĕç.

Поэзири паллă ĕçĕмсенчен пĕри «Хулăм сас» поэмăна шутлатăп. Ăна эпĕ 1930 çулта çĕнелен пурнăçăн чĕрĕ çулĕпе утнă чух колхозсем туни çинчен çырнă. Вăл поэмăри хăш-пĕр сасăсем В. Маяковскинчен вĕренсе пынине аса илтереççĕ.

Чăваш поэчĕсем вырăссенчен тĕплĕн вĕренсе пыни Çеçпĕл Мишшин силлабо-тоникăлла шкулне çирĕпленсе çитме вăй пачĕ. Хамăртан аслăрах поэтсем Çеçпĕл Мишшин шкулĕ чăваш поэзийĕн картипе çыхăнсах каймасть тесе калаçатчĕç, анчах сăвăри çав çĕнĕ йĕрке çĕнтерчĕ-çĕнтерчех, чăваш поэзи историйĕнче вăл асран кайми тапхăр пулса тăчĕ. Çав йĕрке чăвашла сăвă çырас меслетсене классикла янратмалли меслетсем уçрĕ. Халĕ эпир тĕнчери пур поэтсен произведенийĕсене те хăйсен тăван чĕлхипе çырнинчен кая мар хăватпа чăвашла куçарма пултаратпăр. А. Пушкинăн «Евгений Онегинĕпе» ытти сăввисем чăвашла та вырăсла пекех лайăх янăраççĕ, «Борис Годуновра» вара тăлмачă куçарнă чух цезурăсене те упраса хăварма тăрăшнă.

Ман шутпа, ӳлĕмрен пирĕн чăваш поэзийĕн ăсталăхне тюрк чĕлхипе калаçакан халăхсен, çав шутрах тутар халăхĕсен, поэчĕсем те тĕрĕслесе пăхма тытăнĕç.

1937 çулта манăн сăвăсен пуххисем икĕ пĕчĕк кĕнекен пичетленсе тухрĕç тата вырăсларан куçарнă поэмăсемпе прозăлла произведенисем пичетленчĕç. Çав вăхăтрах СССР писателĕсен союзĕн литература институтĕнче хам тĕллĕн вĕренеттĕм.

1955 çулта эпĕ куçарнă кĕнекесенчен М. Горькин «Фома Гордеев» иккĕмĕш изданипе пичетленсе тухрĕ, Валентин Овечкинăн «Районные будни» кĕнекинчен темиçе очерк куçарса кăлартăм. 1956 çулта манăн «Кăмăлтан» ятлă сăвăсемпе поэмăсен пуххи тухрĕ. «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманахра та сăввăмсемпе статьямсем пичетленеççĕ. Вăхăт ӳкернĕ хушăра Л.Н. Толстойăн «Вăрçăпа мир» романне чăвашла куçаратăп, — ĕçĕ пит те йывăр вара, анчах çапах та çакăн майлă пысăк ĕçре хамăн творчествăри телейĕн шăнăрĕ туртăнмасть-ши тесе шухăшлатăп.

Çавсемпе пĕрлех тата «Тăван Атăл» альманахăн редколлеги членĕнче те секретарĕнче ĕçлетĕп. Творчествăлла пархатарлă ĕçпе пурăнма ĕмĕтленетĕп.

Митта Вăçлейĕ

1956 çул, июнĕн 25-мĕшĕ

ОЧЕРКСЕМПЕ КАЛАВСЕМ

ПИОНЕР ЯЛĔ

Аслă Арапуçĕнче пионер отрячĕ пĕлтĕртенпех пур. Анчах пĕлтĕр, вожатăй пархатарлă пулманнипе, нимĕнле ĕç те палăраймарĕ.

Кăçал, иккĕмĕш сыпăклă шкултан пĕр комсомолец пионер курсне кайса килсен, ĕç шалтах урăх енне тапрĕ. Чипер, йĕркеллĕ ĕçлеме пĕлнипе урамра ахаль чупса çýрекен ачасем хавассăнах отряда кĕре пуçларĕç. Çавăнпа, ытла нумай кĕрсе тулнипе, икĕ отряд турăмăр: пĕри Ленин ю. ячĕпе, тепри Зиновьев ю. ячĕпе. Пĕрремĕш отрядра сакăр звено, кашнийĕнче тăватшар.

Пионер отрячĕсем пĕри «Ялти пионер», тепри «Пионер çулĕ» ятлă стена хаçачĕсем кăларса тăраççĕ. Тăтăшах пухусем туса, унта политика тĕлĕшĕпе калаçатпăр, юрăсем юрлатпăр, урама уçăлма тухатпăр.

Тата пионера кĕме çул çитмен пĕчĕк ачасем, вăл енне тапа пуçланипе, вĕсене те кашни вырсарни кун пуçтарса вăйăсем выляттаратпăр, юрăсем юрлатпăр. Ĕçлеме çăмăлтарах тесе вĕсем валли хăйне ушкăн, октябреноксен ушкăнĕ, организацилесшĕн.

Эпĕ кăçал Арапуçĕнче пулманни тăватă уйăхран та ытла мар-ха. Анчах тăват уйăх хушшинче ялта мĕнле кăна улшăннă, калама та çук... Пирваях яла пырса кĕрсен янăракан пĕчĕкçĕ ачасене тĕл пултăм. Пурте хăйсем юрра янă. Мĕн юрлаç тесе итлесе пăхрăм та — пионер юррисем юрлаç иккен. Хăйсем селĕп чĕлхисемпе «Ян-янах кайтăй пионей юййи...» тесе кăшкăраç. Тăрсах итлесе пăхрăм... Татах тытăнчĕç вырăсла пĕлмен чĕлхисемпе «Наççа çкуль в копе камсамуль...» тесе юрлаççĕ. Тĕлĕнсех кайрăм!..

Çапла çав виç-тăват уйăх хушшинче ял йăлтах улшăнса кайнă, Аслă Арапуç вырăнне Чаплă Арапуç пулса тăнă!

1926

ÇИЧӖ ÇУЛ ТУЛТАРЧӖ!

Апрель уйăхĕн 15-мĕш кунĕ Ульяновскри чăваш техникумĕсенче вĕренекен çамрăксемшĕн чаплă кун пулса тăрать. Çакă кун — кунти комсомол ячейки хăйĕн тĕреклĕ никĕсне хунă кун. Кăçал ĕнтĕ вăл çичĕ çул тултарса саккăра каять!

Çак ячейкăн историне кĕскенĕн кăна пăхса тухсан унта нумай йывăрлăхсем, йывăрлăхсем хушшинче чылай хĕрӳллĕ ĕçсем те пулнă.

Çакă ячейка пирĕн Раççей кисренсе, çĕмĕрĕлсе тăнă вăхăтра вутпа çулăм хушшинче çуралать. Анчах çак çамрăксем хăйсен ячейкинче нумаях ĕçлеймерĕç. Вĕсем пурте, 17—18 çулхискерсем, Çурçĕр еннелле Колчакпа кĕрешме каяççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-хăшĕ пуçне те чаплăн хунă (Р. Козлов — 17 çулта, С. Иванов — 19 çулта). Канаш ирĕкĕн Польшăпа çапăçмалла пулсан кунта та пирĕн Чĕмпĕр чăваш хĕлхемĕсем хăйсен пуçĕсене шеллемесĕр Польшăпа çапăçма каяççĕ. Вăрçă юн тăкăнмасăр иртмест: кунтан та пирĕн çамрăксем хăшĕ-хăшĕ таврăнаймаççĕ (Арсеньев — чăваш чаплă ораторĕ, батрак).

Вăрçă сирĕлет. Пирĕн çамрăксем вăрçăран таврăнса калла шкул саккисем çине ларса вĕренме тытăнаççĕ. Комсомол ĕçне те вирлĕн тытса пыма пикенеççĕ.

Анчах каллах тепĕр йывăрлăх — выçлăх персе çитет. Вăрçă вăхăтĕнче тустарăннă чăваш шкулĕ халь каллах аманать. Классенче, спальнăйсенче чăтма çук сивĕ! Тумтирсеммĕнсем кивĕ. Ачасем кунне 1/2 кĕренкке çăкăр çинче ларса та пăхрĕç.

Хальхи вăхăтра ячейкăра мĕн пурĕ 186 çын. Çак 186 çынлă ячейка умĕнче тата нумай ĕçсем, чăваш халăхĕн ыйтăвĕсем, ĕçсем (!) капланса тăраççĕ. Паянхи кун пирĕн Ульяновскри чăваш техникумĕсенчи комсомолецсем çав ĕçсене тума тепĕр хут чĕререн сăмах параççĕ!

Сывă пултăр çамрăксен хушшинче чи пирвай шăтса тухнă Ульяновскри чăваш комсомол ячейки!

1926

ИЛЕМЛĔ ЮРĂСЕМ САРĂЛАÇÇĔ

Çамрăк чĕре юрăшăн, сăвăшăн çуннине пурте туйса тăраççĕ. Вăл тĕрлĕ çĕнĕ сăвăсем тухассине кĕтсех тăрать, вĕсене епле савăнăçлă, кӳрнеклĕ юрлăттăм тет.

Çак тĕлĕшпе Максимовпа Павловăн юрри-сăввисем

пирĕн ӳсĕме питĕ телейлĕ турĕç. Халĕ ĕнтĕ чăнах та çав композиторсен кĕвви-сăвви юррисене чăвашсен вĕреннĕрех пайĕ кăна юрламасть, — ялти çамрăксем те (пуринчен ытла хĕр упраçсем) питĕ юратса юрлаççĕ. Вĕсем те композитор кăтартнă пекех кӳрнеклĕн, илемлĕн кăлараççĕ.

Кĕнеке çинчи юрă-кĕвĕсене ялсенче халăх хушшине сарасси вăл юрлаттарма ăста учительсенчен килет. Вĕсене пирĕн ку ĕçшĕн питĕ тав тумалла. Сăмахран, Аслă Арапуçĕнчи (Пат[ăрьел] уесĕ) 2-мĕш сыпăклă шкулти Аниссия Тимофеевнăна епле тав тăвас мар! Унăн урлă вĕренсе Арапуç çамрăкĕсем çав малтан кăтартнă композитор[сен] юррикĕввисене янăратаççĕ анчах. Арапуç çамрăкĕсем урлă халĕ ĕнтĕ пĕтĕм таврари ял çамрăкĕсем каллех çав кĕвĕсенех сăптăрма тапратрĕç.

Чăваш ĕç халăхĕ ĕмĕрех хăйĕн юррисене савса пурăннă, малашне вăл ăна тата пушшĕ упрама, савма тытăнать. Çавăнпа та унăн юрри-сăвви сарăлса пырать. Ăна хăвăртрах сарас тĕлĕшпе чăваш ĕç халăхне хăйĕн йывăр ĕçĕнче тата çемçенрех йăпатас тесен çĕнĕ юрă кĕнекисем кирли паллах! Çавăнпа та чăваш композиторĕсен татах та ĕçлемелле-ха! Каллех пирĕн кăмăла тултарма тапăçланмалла иккен-ха!..

1926

ХИСЕПЛĔ ВИЛĔМ

I

Вăхăт кĕркунне енне сулăннă. Хресченсем тырă вырса пĕтерсе, пикенсе кăна кĕлте кӳреççĕ. Аçта килчĕ унта тăпачă сасси, авăн çапни илтĕнет. Кунĕ те паян аван. Кăвак тăрă пĕлĕт уççăн кăна тĕнчене хупласа тăрать. Çакă кăн-кăвак пĕлĕт айĕнчен кăтра, шурă тĕтĕм евĕрлĕ пĕлĕтсем ерипен, хырăмпа шунă пек, тăсăла-тăсăла хĕвел тухăç еннелле пăрăнаççĕ. Кăнтăрларан тайăлнă хĕвел ĕç халăхĕ çине пăхса савăнтарса, шăрантарса тăрать.

Кирукпа амăшĕ те паян чăм шыва ӳксе ыраш çапаççĕ. Вĕсем пикенсе çапнине сарă ыраш кĕлтисем çирĕп тăпач айĕнче мамăк минтер пек хăпарса, йĕтĕн пек сӳсленсе анчах юлаççĕ.

— Эх, паян, анне, кун пит аван-çке, епле алă-ура çĕкленсе кăна пырать, ырашĕ те кăмакара типĕтнĕ пек ӳкет, — тесе хучĕ Кирук.

— Кунĕ пит аван та, темĕскер эпĕ йăша пуçларăм-ха, сылтăм хул меслетсĕр сурма тытăнчĕ, те вăл çăмăр пуласса, — терĕ ăна хирĕç амăшĕ.

— Ытах ыратать пулсан пăрахмасна çапма?

— Пăрахсан, çак лава çапса пĕтерсен пăрахар-ха, — тет амăшĕ.

— Апла пулсан майĕпентерех çап, хам вăйлăрах паклаттарам, — терĕ Кирук амăшне шеллесе.

Кирук амăшĕ питĕ йăваш, питĕ тирпейлĕ хĕрарăм. Вăл нихçан та çынна ятламасть. Ялти хĕрарăмсем те ăна питĕ юратаççĕ.

— Хĕветуççа пирĕн «çĕнĕ тĕнпе», çĕнĕ йĕркепе пурăнать пулсан та, пит аван хĕрарăм, пирĕншĕн халиччен нимĕн те усал туман-ха, вăл-ку пулсан пире пулăшма тăрăшать, — теççĕ.

Ĕçе те вăл пит хастарлă ĕçлет. Хăйĕн пĕртен-пĕр ачине, Кирука, юратмаллах юратать, ăна вырăс ачи пек тумлантарса çýретет. Вăл упăшки салтака кайса вилнĕренпе пурлăхĕнчен пĕр шăрпăк та катман. Упăшкинчен çичĕ çулта юлнă Кирукне шанса халиччен качча каймасăр пурăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ асаплана-асаплана Кирука вун ултă çула та çитерчĕ. Ăна вăл хута та вĕрентрĕ. Кирук кăçал сакăр çуллă шкула аван пĕтерсе тухрĕ. Амăшĕ ĕнтĕ ăна урăх ниçта та ярасшăн марччĕ, пĕр-ик çултан хама пулăшма авлантаратăп та тетчĕ, анчах Кирукĕ ăна хыт йăлăннипе кăçал каллех хулана яма пулчĕ.

— Тепĕр эрне çурăран, анне, манăн хулана каймалла пулать вĕт, — терĕ Кирук.

— Ăсатас пуль çав, атту кая юлсан илмĕç тата, — тет амăшĕ.

— Эх, анне, мĕншĕн ман çав тери вĕренес килет-ха, — тет Кирук çапнă май, — мĕншĕн пурне те пĕлес килет-ха?! Эх, пурте ман чĕреллĕ пулсан эпир те çапла пулмăттăмăр. Пуринчен ытла эпĕ хамăн тăван халăха — тĕттĕм чăваш халăхне хĕрхенетĕп. Хăçан çак пирĕн халăх ытти халăхсем пек пулса ыр халăх тĕшне кĕрĕ-ши? Çук, эпир çамрăксем тытăнмасăр чăваш халăхĕ сунан ĕмĕтне илес çук. Пирĕн часрах ку ĕçе тытăнас пулать. Ĕçе тĕплĕн тума малтан вĕренме кирлĕ! — тесе хучĕ чĕринчен, чунĕнчен пирĕн Кирук.

— Эх, ачам, мĕнле эсĕ тăнлă-пуçлă сăмахсем кăларатăн, мĕнле сан çамрăк чĕлхý-çăвару çавăн пек вут-кăвар евĕрлĕ? Сан сăмаххусем, ачам, пурте тĕрĕс. Вĕрен, ывăлăм, вĕрен! Эп ниепле те чарма пултараймастăп. Вĕренни хушăн пулĕ, тата ху каланă пек çынсене те нумай пулăшăн, — терĕ те амăшĕ ачи çине йăвашшăн пăхса илчĕ.

— Вĕренеп, анне, вĕренеп! Çын хурри пулмасп! Эп аттене хунă, атте пекех юлăп. Вăл хура халăхшăн тăрса пат-

ша тарçисен айне пуçне хунă, эпĕ те хам ĕмĕрĕмре чĕререн-чунран хура халăхшăн тăрăшăп! Уннăн хамăн çамрăк пуçăма та хума хатĕр!

— Пăрахăр çапма! Курмастрам эсир, ав Вăрманхĕрри Шăхаль çинчен çăмăр чашлаттарса тухать. Илье прарук та ĕнтĕ ăйăрĕсене кӳлсе тăратнă, хапхине кăна уçасси! — тесе кăшкăрса ячĕ кĕлтерен таврăнакан шӳтник Йăкăнатти Çимунĕ.

Чăнахах та, калаçнă май сисмен те, Шăнкăртамсем, Вăрманхĕрри Шăхальсем çинчен хуп-хура çумăр пĕлĕчĕ хăпарса таса пĕлĕте хупласа илнĕ. Кунта та час çитет пулас, урамри йăмрасене çил тулла пуçларĕ, çул варринчи тусана чун кĕчĕ, пахчари чăх-чĕпсем киле кăшкăра-кăшкăра тараççĕ, хиртен килнĕ çерçисем йывăçсем çинче чĕвĕлтетеççĕ... Тĕнче йăлтах хускалма тапратрĕ...

Кирукпа амăшĕ часрах çапма пăрахрĕç те сарăма хыпаланса пуçтарма тытăнчĕç. Тыррине пуçтарса кăшăлне шыв кайман арпалăха хăпăл-хапăл шăлса кĕртрĕç. Кăштах вĕсем пуçтарса пĕтерчĕç, унтах çумăр йăтса та антарчĕ. Кируксем çумăр витĕрех пахчинчен каçхи апатчен пăртак çырткалама хăяр татрĕç те киле чуптарчĕç.

Чĕреслетсе çумăр çăвать. Кĕркунне енне пулсан та, харăслатса аçа çапать, куçа çисе çиçĕм çиçет. Лапамсенче шыв тулса Пăланалла кĕрлесе юхать. Нисам папай та хăй кĕтӳне ячĕ. Çумăр витĕр ĕнтĕркенĕ сурăхсем урампа макăра-макăра чупаççĕ, сыснисем çухăраççĕ, тăранайман ĕнесем мĕкĕреççĕ. Пĕтĕм урам аслати сассипе, пуринчен ытла выльăх-чĕрлĕх сассипе кĕрлесе, чĕтренсе тăрать...

Каç пула пуçларĕ. Çумăр иртрĕ пулсан та, çанталăк çаплах шăмарса тăрать. Çумăрĕ татах çăвасшăн курăнать: хура пĕлĕтсем купалана-купалана Пашьел енчен Мăраталла вĕçтереççĕ, ыран ир татах çăвасшăн вĕсем ĕнереççĕ.

Кирук амăшĕ ĕне суса кĕчĕ те хăйă çутса ячĕ. Унтан ларса ăшă сĕт çине пăрça пашалу тураса çиме тытăнчĕç.

— Ман килес, апат тутлă пултăр! — терĕ кĕрекен Чукмар Тимми, ялти кулак, тĕнче куштанĕ.

— Килях, çиме кил! — тесе чĕнчĕ ăна хирĕç Кирук амăшĕ.

— Çиесси тармĕ те-ха, çиес тĕлĕшрен килте те аптрасах каймастпăр... анчах эпĕ ак мĕнле çăмăлпа килтĕм: кинĕн алли халь те тӳрленеймест; Кăруçка арăмĕ тата пиç хăмла çыхса пăхма хушрĕ; эсир хатĕрсĕр тăракан марччĕ, пиç хăмла пулмалла вăл сирĕн...

— Пур, пур, — терĕ амăшĕ.

— Ахаль сирĕн пек çынсем патне килсе кĕме тивĕçлĕ

те пулмалла мар та, анчах ним тăвайман енне кăна, — терĕ кулак шăлне йĕрсе.

— Мĕншĕн апла калан тата, Тимма пичче? — тесе ыйтрĕ тарăхарах Кирук амăшĕ.

— Вара сирĕн Кирук ытла та чапа туха пуçларĕ вĕт-ха, пуянсене кураймасть. Ав Мишша кум çинчен мăшкăлласа хаçата çаптарнă-ха, пурте çавăн çине калаç, тата кам пулас ăна...

Кирук чăтаймарĕ, çамрăк сассипе кăшкăрса пăрахрĕ:

— Эсĕ, кукка, килтĕн пулсан мăшкăлласа ан лар, сан мăшкăлна халь кăна курмастпăр, ытла чĕлхӳ кĕçтет пулсан урăх çĕре кайса вăрç! Ху пек куштансемпе харкаш!.. Тивĕç пулнă — çапнă, пĕр тивĕçсĕр çапмĕç!.. Тивĕç пулсан — сана та лектерĕç!..

— Эсĕ тата ман ята та çĕртесшĕн-и! Анчăк çури!.. Пĕчĕкçеççĕ хăй — кампа калаçать. Тата пĕтĕм яла çавăрса пурăнма хăтланать! Халь куту тасалнă-и-ха? Ак парăп эп сана, шуйттан çуратнăскер, хаçата çырма! — тесе Тимма Кирук çине чăмăрккапа хăмсарса пырать.

Кирук сĕтел çинчен çĕççине тытрĕ те:

— Ан çулăх манпа, хырăмна çавăрса кăларăп, ĕмĕтсĕр йытă! Тӳррипех каласан кам яла çавăрса пурăннине пĕлетне-ха эсĕ? Ăна сан пек куштансем çавăрса пурăнаççĕ. Пирĕн пек мĕскĕн çынсене эсир пĕр намăса пĕлмесĕр хĕстерсе пурăнасшăн! Çук, пурнаймăр, пирĕн хута кĕрекен те пулĕ!.. Вăхăт çитсен çĕртĕпĕр санăн ятна та... Эсĕ ху та çавна кăна шыратăн. Намăс сана!.. Кинĕре, çук çын хĕрне, выльăх пек ĕçлеттеретĕр, ăна ывăлупа иксĕр те хĕнетĕр! Тата ак халь аллине çапса хуçнă та пиç хăмла ыйтса çӳретĕн. Кинӳшĕн хăмла ыйтма килмен эс, вĕчӳпе килнĕ, сана çав Куштан Мишша хушса янă. Тухса кай кунтан! Сирĕн пек юн ĕмекенсене куçăм та ан куртăр!.. — тесе тарăхса кăшкăрчĕ Кирук.

— Камран илтеп ку сăмахсене?! Хам тăван ачинченех мар-и? Хĕветуççа, эсĕ те чармастăн ачуна! Ну, Кирук, шалчу тулĕ! Кусемшĕн хăçан та пулсан хам аллăмпах тавăрăп!.. — терĕ те Тимма тухса вĕçтерчĕ.

Çав вăхăтра Кирук амăшĕ ĕсĕклесе йĕрсе ларнă. Ăна Кирук пырса аллипе хулĕнчен тытрĕ те çапла каларĕ:

— Ан йĕр, анне! Вĕсен хурриех пулмăпăр-ха. Вĕсем ĕмĕрех пире хăйсен чĕлпĕрĕпе çавăтса пырасшăн, анчах вăл пулмĕ!.. Пире Канаш ирĕкĕ тĕрĕс çул уçса пачĕ, вĕсен пусмăрлăхĕнчен хăтарчĕ. Халь, юратнă аннем, эпир хамăр патшалăхра хамăр хуçа! Хамăр чĕлпĕре кулаксен, куштансен аллине памалла мар, пирĕн хамăрăн вĕсен чĕлпĕрне илсе

вĕсене лайăх çăварлăхласа тытса пымалла, асма памалла мар!..

Кирук амăшĕ кăсене илтсен:

— Чăн калатăн, ывăлăм, чăн каларăн, ылтăнăм! — тесе каллех савăннипе, кăмăлĕ хуçăлнипе макăрса йĕрсе ячĕ.

II

Вырсарни кун. Ялти комсомол клубĕнче тӳсе тултарнă пек çын. Ватти-вĕтти, хĕр упраç, йĕкĕтсем, арçынсем, хĕрарăмсем — пурте клубра лараççĕ. Çитменнине тата çитмĕл ик çулхи Кĕркури йысна та пĕр пичатнăй тăршшĕ патакне тăратса, купăс каланă пек, хăй-хăй ӳсĕрсе ларать. Этемсем пурте сăмах калакан енне пĕр пăркаланмасăр тинкерсе пăхса лараççĕ. Сăмах калаканĕ — Кирук. Ыран хулана каяс йĕркепе юлашки хут доклад туса хăварас терĕ. Вăл ялти комсомолăн ĕçĕсем çинчен калать. Пĕтĕм хăйĕн хастарлăхне, хăйĕн çемçе, çирĕп чĕлхи-çăварне, çамрăк ăсне-пуçне халăха кăтартса тĕлĕнтерет, ăна вăйлă, тарăн шухăша яртарать. Тĕлĕннипе пурте пуçĕсене силлеççĕ.

— Ку Хветуçăн ачи ача пулмарĕ, вут пулчĕ, шăлт ашшĕнех хывнă çав! — теççĕ.

Кирук доклачĕн юлашкинче ак çак сăмахсене хĕртсе хучĕ:

— Тепĕр хут калатăп, комсомолăн таса ятне халăх хушшинче чипер тытса çӳремелле. Унăн халăха тĕрлĕ майсемпе пулăшса тăмалла. Яланах унăн ĕçĕсем халăхшăн юратуллă, килĕшӳллĕ пулмалла. Çаксене йĕркипе туса пырсан пирĕн яла та илем килĕ, пĕтĕм чĕрчуна канăçлăх пулĕ. Вара сирĕн сунан ĕмĕтсем çитсе пырĕç, коммунизм ялавĕ çӳлерех çĕкленĕ! — терĕ.

Пĕтĕм халăх алă çупса ячĕ. Клуб чĕтренсе тăрать. Кĕркури йысна та хăйĕн ватă, типсе кайнă аллисемпе аманнă хурчка çапкалашнă пек çапкалашать. Суккăр Кулля аппа та кула-кула ал çупать.

Тепĕр вун пилĕк минутран собрани хупăнчĕ. Интернационал юрласа пĕтĕм халăх Кирука хупăрласа илчĕ. Пурте ыран каятна та ыран каятнам теççĕ.

— Ыран, ыран, лавккавĕç Мирунсемпе ларса каятăп, — терĕ Кирук.

— Эх, шалккă, пит шалккă! Çпектакльсенче те аван вылятчĕ, вечĕрсем те час-часах тăватчĕ, — теç пĕр çĕре пуçтарăнса тăнă хĕр упраççем.

— Санюкĕпе епле уйрăлса кайĕ-ши тата? — тесе хураç хушшинчен тата.

Ч-39691
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА

Халăх ерипен саланма пуçларĕ. Кирук та çĕнĕрен суйланă комсомол секретарьне, Кушак Элекçейне, хăйĕн секретарь ĕçĕсене пама кайрĕ. Вăл ĕçпе вĕсем çĕрлечченех аппаланса ларчĕç.

* * *

Çанталăк кĕркунне енне кайнă пулсан та, каç пит аван. Уйăх çути çап-çутă, çăлтăрсем вăльт-вальт тутарса, сиксе тухас пек пăхса тăраççĕ. Кирук шыв арманĕ еннелле утать. Унта вăл кĕçĕр хăйĕн чунĕ савни Санюкпа юлашки хут курса калаçмалла.

Санюк — ялти аван хĕрсенчен пĕри. Вăл ĕлĕк Кирук пеккисен енне яхăн та ямастчĕ, мĕншĕн тесен комсомол тенинчен унăн сехри хăпатчĕ. Ĕлĕк чухне çынпа йĕркеллĕ калаçма та хăяймастчĕ. Турра чунтан-вартан ĕненетчĕ, кашни праçникре кĕлле çӳретчĕ. Хута та йĕркеллех пĕлместчĕ. Халь Санюк йăлтах урăхла хĕр. Вулама ларать — шатăртаттарать анчах, çырма ларать — шăрçа пек çырать. Тĕрлĕ кирлĕ-кирлĕ марсене пĕр пĕрчĕ те ĕненмест. Калаçнă чух çăварĕнчен вут тухать. Çавăн пек турĕ Кирук Санюка. Ăна çын ăшне кĕртес тесе нумай вăл тĕрлĕ майпа тертленчĕ. Вара кайран аран-аран унăн супчăмне тупса хăй май çавăрчĕ-çавăрчех.

Санюк Кирука паçăртанпах кĕтсе тăнă. Кирук ун патне пырсан вĕсем тытăнчĕç те вершник патнелле уттарчĕç.

— Эх, Санюк, кĕçĕр çĕрĕ те епле аван-çке! Кун пек çĕрсем çуркуннехи каçсенче анчах пулаççĕ вĕт, — терĕ Кирук Санюка.

— Вара, кĕçĕр çĕр пит аван, иксĕмĕрĕн телейшĕнех пулчĕ пуль. Атя, Кирук, ав çав каска çине ларса мĕн калаçмаллине калаçар, — терĕ ăна хирĕç Санюк.

— Санюк, эпир кунтан кайсан та пĕр-пĕрне пăрахас мар, çавах çыру çӳретсе тăрас. Эсĕ ак мĕн çинчен мана пĕлтерсе тăма тăрăш. Эпĕ ял пурнăçĕ çинчен хаçата çырса тăнине ху та пĕлетĕн. Эпĕ малашне те çырса тăрас тетĕп. Çавăнпа та эсĕ мана ял пурнăçĕ çинчен пĕлтерсе çырса тăр. Эпĕ эсĕ пĕлтернине лайăхлатса вара хаçата ярăп. Ку ĕçре эп сан çине шанатăп. Юрать-и çапла?

— Юрать, Кирук, юрать. Эпĕ сана итлеме ĕмĕрех хатĕр. Анчах эсĕ мана ху та ан пăрах, çавах çыру ярса тăма тăрăш. Ытти пули-пулми çын хыççăн кайса ăшна ан пăс, манăн çамрăк чĕрене апла пулсан ан хăрат. Унта, аслă хулара, лайăх, ырă майрасем сан кăмăлна час кайĕç. Вара эсĕ ман çинчен аса илме пăрахăн...

— Эх, Санюк чунăм, эс ман çинчен çапла шухăшлатна? — терĕ те Кирук Санюк аллине чăмăртаса ăшшăн кăна ăна чуптуса илчĕ.

— Çук, ахаль кăна каларăм ăна, Кирук, ан çиллен, эп сан çине шанатăп, — терĕ йăвашшăн кăна Санюк.

Çапла Кирукпа Санюк каска çинче темĕнччен малашнехи çинчен шухăшласа ларчĕç. Вĕсен чунĕсене вешникрен шăкăр-шăкăр юхакан шыв тата хăва ăшĕнче юрлакан темле вĕçсе каймасăр кая юлнă кайăк йăпатса тăчĕ. Аякран йытă сассисем илтĕнеççĕ. Тӳпере хур кайăксен карталаннă мĕлкисем курăнаççĕ, вĕсен хурлăхлă сассисем çĕр çине илтĕнсе чĕре патнех пырса лекеççĕ. Автан авăтса çур çĕр çитнине пĕлтерчĕ. Атăл енче ӳхĕ ӳ-ӳк! туни илтĕнет. Йăваш çил хăвасене кăштăр-кăштăр тутарать. Çавсем пурте икĕ чуншăн ыррăн пек туйăнса тăраççĕ. Вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрмасăр тата тарăн шухăша яраççĕ...

* * *

Вăхăт иртет, вăхăт шăвать; çырмасенчи шыв пекех вăхăт юхать...

Кирук та ĕнтĕ хулара иккĕмĕш çул вĕренет. Ăна халь курсассăн палласа та илес çук. Ĕлĕк те тасаскер халь тата тасаланса кайнă, ĕлĕк те çивĕчскер — халь тата çивĕчленсе кайнă. Тĕлĕнмелле калаçать. Ун чĕлхине хĕç те витес çук, вут та тивес çук. Хăйпе вĕренекен ачасем ахаль мар çав ăна «вут чĕлхе» теççĕ. Вĕренме килсенех ачасем ун енне тинкерсе пăхма тытăнчĕç. Сисрĕç вĕсем Кирукра пархатар пуррине.

Кирук хута пит тăрăшса вĕренет. Учительсем ăна Галкин та Галкин тесе кăна тăраççĕ. Хăй йăвашлăхĕпе ачасем те ăна пит юратаççĕ. Вăл-ку пулсан пурте ун патнелле сĕртĕнеççĕ. Пурте Гриша та Гриша тесе анчах тăраççĕ.

Кирук кунти комсомол ячейкинче те пит хастарлă ĕçлет. Килсенех ăна ячейкăн бюроне суйланăччĕ. Халĕ ĕнтĕ ячейкăн ответлă секретарĕ те пулчĕ.

Кирук хулара пулсан та хăйĕн тăван ялне манмасть. Унта вăл кашни каникулта кайса та килет. Тата хăйĕн çывăх тусĕ Санюкпа яланах çыру çӳретсе тăрать. Ун урлă вăл ял пурнăçĕ çинчен яланах пилĕк пӳрнине пĕлнĕ пек пĕлсе тăрать. Ялти тĕрлĕ кирлĕ-кирлĕ мар ĕçсем çинчен пĕтĕмпех хаçата çырса тăрать. Ик-виç çултанпа ĕнтĕ хаçатăн чăн çывăх тусĕ пулса пурнать. Ун пери витĕр ялти кулаксем-куштансем темиçе хутчен те тухрĕçĕ. Куштан Мишшапа Чукмар Тимми те Çĕрпӳ тĕрминче çулталăка яхăн çĕреççĕ. Вĕсене каллех

çав Санюкпа Кирук майларĕç. Анчах ялта хаçата кам çырса тăнине никам та пĕлеймест тĕплĕн. — Кам иккен вăл «Хĕлхем»? Яланах çырать. Ну, çапать те çапать çав кулаксене-куштансене тесе кулаççĕ ял çыннисем. Кулаксем çилленсе шăлне хăйраса çýреççĕ.

— Ах, пĕлесчĕ ăна, пыршине кумăттăмăрччĕ! — тесе йынăшаç...

Шартлама сивĕ тăрать. Раштавччен тата виçĕ эрне-ха. Кируксене тепĕр эрнерен раштава киле те яраççĕ ĕнтĕ. Кирук хăйсен спальнинче пĕчченех ларать. Ытти ачасем уроксенчен таврăнса пурте апата кайнă. Кирукăн паян апат та çиес килмест, темĕскер иртеннех унăн ăшĕ çунать.

— Мĕн эс паян кăмăлсăр ларан? Сывă-и, Гришша? — тесе ыйтрĕ кĕрекен Кирук юлташĕ Яша. — Мĕн пулнă сана?

— Хам та пĕлместĕп ĕнтĕ! — тесе хучĕ Кирук юлташне.

— Ман килес! — тесе ячĕ çав вăхăтрах лавккавĕç Мирун. — Кирук çакăнта пурăнаканччĕ-ха...

— Çакăнта, çакăнта, кунталла кил, — тет Кирук.

— Ну, паян сивĕ те, чăтма та çук! Аран-аран Иванпа кĕрмешкелесе çитрĕмĕр...

— Сивĕ çав, пит сивĕ! Ав пирĕн чýречесем те епле урлăпирлĕ шăнса кайнă, — тесе Кирук Мируна алă пачĕ.

— Паян пире тавар илкеле те кансĕр пулать ĕнтĕ... Ну, чăтăпăр-ха! Пирвайхи рас кăна курмастпăр. Эпир çамрăк чухне çак раштав сиввисенче вăрмана пĕр хут тумтирпе каяттăмăр, çара аллăнах тата. Алăсем шăнма пуçласанах юрпа ухаттăмăр, вара вут пек пĕçерсе тăратчĕç...

— Пирĕн килте мĕнле пурнаç-ха, анне чирлет-и? — тесе ыйтрĕ Кирук.

— Пурнасси — масар, аннý ытла начар выртать-ха, йăлтах ýслĕк пусса илчĕ ĕнтĕ. Сана пит курасшăн вăл. Кирук та Кирук тет. Çавăнпа ĕнтĕ сана манпа киле пыма каласа ячĕç. Ак тата Каттис Тарас Санюкĕ çыру парса ячĕ, — терĕ Мирун çыру парса.

Кирук çырăва вуласа пăхсан пĕр хĕрелсе, пĕр шуралса кайрĕ.

— Эх, мăнтарăн анне, виленех пуль çав. Кун пек чиртен хăтăлма пит йывăр... Хуть тата пилĕк-ултă çул пурăнасчĕ... Анчах ним те тăваймăн ĕнтĕ!.. Пырасах пуль çав, виличчен хуть курса юлас. Ват çынсен йăлипе вăл пиллесе хăварасшăн пуль ĕнтĕ...

— Пиллетĕр, Кирук, пиллетĕр. Ват çын пиллĕхĕ çитет вăл. Ахаль каламаççех çав, аçу-аннý пиллĕхĕ вутра та çунмасть, шывра та путмасть тесе. Ак тата сана, Кирук, мĕн калам: Мишшапа Тимма тĕрмерен таврăннă. Сана пит

юнаççĕ тет. Пире ханшапа çавăн тăрăх тытса çĕрттерчĕç тесе калаçса çĕреççĕ тет. Яла пырсан сыхланарах çŭре, — терĕ Мирун Кирука.

— Тата Тиммапа Мишшаран хăрасан хĕвел те тепĕр енчен тухĕ! — тет Кирук кулас килменрен кулса.

— Çук, Кирук, вăл шŭт ĕç мар, лектерĕç те вĕсем!..

— Лектерĕç пулсан хăйсене виçĕ хут ытла лектеретпĕр, пирĕн хута кĕрекенсем те пур, Мирун пиччe. Пирĕн Канаш ирĕкĕ вутлă хĕçпе тăшмансенчен сыхласа тăрать! — тесе хучĕ Кирук.

Шăнса килнĕ çинчен Мирун Кируксем панче чей ĕçрĕ, çикелерĕ те пасара тавар илме тухса кайрĕ. Кирук шкул пуçлăхĕ патне отпуск илме кайрĕ. Шкул пуçлăхĕ Кирука шеллесе отпуск пĕр турткаланмасăрах пачĕ. Тата шăнасран хăйĕн тăлăпне çул çине парса яма пулчĕ.

Каça хирĕç Кируксем хуларан çирĕм пилĕк çухрăмра тăракан яла çитсе выртмалла тухса кайрĕç. Кирукăн чĕри, вăхăт çитмесĕр кайнипе, сĕре ыратрĕ. Вăл юлташĕсемпе уйрăлнă чухне кăмăлĕ хуçăлса чуть-чуть пĕчĕк ача пек макăрса яратчĕ. Анчах хальччен йĕме вĕренменскер часах макăрасран тытăнса юлчĕ.

Кируксем çул çинче чухне каç пулчĕ. Çанталăк тата сивĕтсе кайрĕ. Хĕллехи сивĕ çăлтăрсем тухса ŭкес пек ялтăртатса çунаççĕ. Вĕсем Мирунăн лавĕ çине чĕркенсе ларнă Кирук çине тăлăп çухи витĕр вăрттăн пăхаççĕ. Кирук вăйлă шухăша кайнă, пĕр чĕнмесĕр пырать. Унтан Иванпа Мирун мĕн çинчен те пулин ыйтсан тŭррĕн кăна каласа хурать. Лешсем вара Кирукăн ăшĕ çуннине пĕлсе урăх унпа пули-пулми çинчен калаçма пăрахрĕç. Кирукăн чĕри вăркать, ăшĕ çунать. Вăл малалли пурнăç çинчен вăйлă, тĕплĕ шухăша кайнă. Ĕлĕкхи çинчен те асăнать. Санюк çинчен, амăшĕ çинчен шавах аса илсе пырать. Вĕсемпе ĕлĕк епле çуркуннехи шăнкăрчсем пек, хура чĕкеçсем пек шăкăл-шăкăл калаçса, чуна пусарса пурăннине аса илет те, чунĕ хурланать... Кирукăн майĕ-майĕпе куçĕ хупăна пуçларĕ. Вăл çуна сулнăка кайса пынипе сăпкари пĕчĕк ача пек силленсе пырать. Ыйхăллă шухăшлă пуçĕпе тата тĕрлĕ шухăша каять. Такан чăклатни, лаша тулхăрни, хуплă çуна чăр-чăр туса шуни ăна ăшă ыйхă парса куçне хуптараççĕ. Вăл ерипен çывăрса кайрĕ...

Акă тĕлĕкĕнче те вăл амăшĕпе Санюкĕпех асапланать. Ăна хăйсен килĕ курăнать. Вăл вĕренсе тухса Санюка качча илнĕ пек. Амăшĕ чĕрĕлнĕ пек, нихçан та ăна чирлемен тейĕн, хĕп-хĕрлĕ кĕпе тăхăнса, çĕнĕ çын пек чупкаласа ĕçлесе çŭрет пек. Вĕсем виççĕш те шăкăл-шăкăл калаçса,

ырă пурнăçпа савăнса анчах пурăнаççĕ пек. Ак çав вăхăтрах Чукмар Тимми киншалпа чупса кĕчĕ пек те, тӳрех Кирук патне хăмсарса чупса пырать пек. Кирук Тимма кукка! тесе хытах кăшкăрса ячĕ. Çав вăхăтрах Санюк шкапран револьвер илсе Тиммана, Кирука чикме памасăр шартлаттарчĕ пек. Тимма урай варрине йăванса кайса, юн кайнипе халтан кайса харлатса выртать пек. «Çапла кирлĕ сана, халăх юнне ĕмекен!» — тесе Кирук ыйхă тĕлĕшпе хытах кăшкăрса ячĕ.

— Ах тур, Иван, тĕлĕкĕнче те епле асапланать, вăпăр пусмасть-ши ăна? — тет Мирун.

— Пусать те пуль çав, турра-мĕне ĕненмеç вĕсем, ав татах епле аташать... — тесе хучĕ ăна хирĕç Иван.

Часах Мирунсем хваттере те çитрĕç. Иван Кирука асаплă ыйхăран вăратрĕ те хваттере илсе кĕрсе кайрĕ.

IV

Паян Кирук амăшне çĕре чикеççĕ. Кирук хуларан килсен амăшĕ пĕр талăк та пурăнаймарĕ. Киле каça çитрĕ те амăшне тепĕр кун кăнтăрла иртсен çухатрĕ.

Кирук пӳрте кĕрсенех ăна мĕскĕн амăшĕ часах тавçăрса палласа илчĕ. Вăл Кирука хăй патне чĕнсе ăна типе пуçланă кăн-кăвак аллисемпе ыталаса илчĕ. «Юратнă ывăлăм... ылтăнăм», — тесе Кирука хăй кăкри çумне тытса темĕнччен йĕрсе выртрĕ. Ăна Кирук йăпатать: «Чĕрĕлĕн-ха, анне», — тет. «Çук, ачам, чĕрĕлессĕн туйăнмасть», — тесе каллех йĕрсе ярать.

Кирук амăшĕн пуç вĕçĕнче çĕрĕпех ларчĕ. Амăшĕ унпа хăйĕн çук сассипе тертленсе çĕрĕпе калаçрĕ. Çĕрĕпе ăна малалла мĕнле пурăнмаллине ăс парса вĕрентрĕ. Тепĕр кун ирхине амăшĕн, мĕскĕнĕн, чĕлхи çĕтрĕ. Вăл Кирука аллисемпе темскер кăтартать, чĕлхине йăвалать, куçĕсемпе вылятать, вăхăчĕпе шăлне шатăртаттарать. Тăрсан-тăрсан куçĕсенчен таса куççулĕсем кăвакарнă пит тăрăх шыв пек юхса анаççĕ. Кирук та амăшне хĕрхенсе пĕчĕк ача пек йĕрет. Кăнтăрла çитсен амăшĕ туртăнкала, тапкалана пуçларĕ. Ăна сив тар, вилĕм тарĕ, тухрĕ. Пăртак тăрсан пĕрре йывăррăн сывласа карăнса илчĕ те, урăх сывлăшĕ те пулмарĕ, йăнăшнă сасă та туйăнмарĕ... унăн илемлĕ тӳрĕ ӳчĕ йăлтах тăсăлчĕ... хитре çутă хура куçĕсене майĕпен тĕксĕм çапрĕ, пăртакран вĕсем хуллен кăна хупăнчĕç...

Пӳрт тулли çын. Унта Санюк ашшĕпе амăшĕ те пур. Пурте тенĕ пекех куççуль тăкаççĕ. Чукмар Тимми те йăмăкне пытарма пынă. Вăл, ĕлĕк те хăрушăскер, халь тата хăруш-

ланса кайнă. Тĕрмере çĕрнипе ăна йăлтах çĕр сăнĕ çапнă. Хутран-ситрен Кирук çине сиввĕн, тискер кайăк пек пăхса илет. Санюк та çавăнтах куççуль тăкса ывăннипе тăнран кайса ĕçлесе çӳрет. Ун çине Тимма каллех пит хаяррăн пăхать.

— Ку амăшĕ вилнĕ-вилменех ăна качча пырасшăн çӳрет ĕнтĕ, — тесе ăшĕнче калани палăрать. Санюк вăл Кирук амăшĕ вăйран кая пуçласанах ун патĕнчен хăпмарĕ. Кашни кун ун патне пырса вăл хушнине туса каятчĕ. Вилнĕ чухне те вĕсем Кирукпа иккĕшĕ ун патĕнче ларчĕç. Мĕскĕн амăшĕ вĕсене пиллесе хăварчĕ. Ĕмĕр иксĕр пĕрле пурăнăр тесе чĕринчен пиллерĕ.

— Кирук, мĕнле хăй каласа хăварнă пекех — пупсăрах пытармалла пулать пуль сан аннӳне? — терĕ сарă Иван.

— Эпĕ нимĕн те калама пултараймастăп. Хăвăр мĕнле тăватăр, эпĕ сире хирĕç пыраймастăп, халăха кӳрентерме пултараймастăп. Анчах çапах та пупсăр пытарсан тĕрĕсрех те, аванрах та пулĕччĕ, — тет Кирук.

— Эпир ним те калама пултараймастпăр, хăй каласа хăварчĕ, çавăн пек пытарас пулать ĕнтĕ ăна, — терĕç пытарма пынă çынсем.

— Ăна апла пытарма йăт çури мар вĕт вăл! Хамăн йăмăк, эпĕ хам мĕнле пытарас тенĕ, çавăн пек пытарма пултаратăп! Çавă Кирук пек антихриссем аллине памастăп! Эсир, халăхсем, мĕн хăтланатăр тата?! — тесе сассине чĕтретсе Тимма кăшкăрса пăрахрĕ.

— Çитĕ, кукка, сана! Кама хăратан эс кăшкăрса! Халь йăмăку-и? Ĕлĕк ăна урай варринче выртан çӳп вырăнне те хумастăн! Вăрçас килет пулсан тухса кай кунтан! Эсĕ тарăхтармасан та ăш тулса çитнĕ кунта!

— Чăнахах та каян пуль çав, Тимма пичче, — теç пытарма пынă çынсем.

Тимма йĕри-тавра сиввĕн пăхса илчĕ те:

— Ан хăрăр, кайăп! Ку çуртран таçтах тарăп! Ылханатăп ку çурта! Çак çурт вырăнне вĕлтĕрен пустăр, вĕлтрен ăшĕнче çĕлен шăхăртăр! — тесе алăка шартлаттарса тухса кайрĕ вăл.

V

Кирук амăшне пупсăр-мĕнсĕрех пытарса таврăнчĕç. Кун пек пытару ялта халиччен пĕрре çеç пулчĕ-ха. Пытарма пынă çынсем Кируксем патĕнче апат тукаларĕç, хуйхăркаларĕç те килĕсене саланма пуçларĕç.

— Санюкăн кунтах юлмалла ĕнтĕ, атту Кирук упа пек

ăçтан пĕччен пурăнтăр, хуйхăрса вилет вăл, — теççĕ хăшĕ-пĕрисем.

— Эсĕ те, Тарас йысна, эс те, Маттюк аппа, хĕрĕре чармалла мар ĕнтĕ, пĕрле пурăнма пиллес пулать анчах, — теççĕ теприсем.

— Эпир нимĕн те чарма пултараймастпăр, хăйсен ирĕкĕ, — тесе хучĕç вĕсене хирĕç Санюк ашшĕпе амăшĕ.

— Атте-анне, ваттисен йăлипе пиллĕр эппин, — терĕ Санюк куççулĕпе.

— Килĕр-ха апла, — терĕç вĕсем.

Кирукпа Санюк вĕсем патне пырса чĕркуççи çине ларчĕç. Пилленĕ чухне пурте йĕреççĕ. Санюк амăшĕ куç уçаймасăр:

— Пил, ачасем, пил, — тесе Санюка ыталаса йĕрет.

Ашшĕ те йĕре-йĕре пиллет:

— Тĕрĕс-тĕкел тăнă пулсан туйлă-çуйлă панă пулăттăмăр. Анчах ним те тума çук... Пил, ачамсем, пил. Ĕмĕр йĕркеллĕ пурăнăр. Ырăлăх-сывлăх пултăр сире. Ача-пăчалла пулăр, ватăличчен пурăнăр... Эп урăх нимĕн те калама пултараймастăп, — тесе чăтаймасăр хурланса макăрса ячĕ.

Ытти çынсем те ырлăх-сывлăх сунаççĕ, ĕмĕр пĕрле пурăнма пиллеççĕ.

Пăртак тăрсан пурте майĕпен саланса пĕтрĕç. Каç та пулчĕ. Санюкпа Кирук сĕтел хушшине ларса, хуйха сирсе ярас тесе шăкăл-шăкăл калаçаççĕ.

— Хуйхăрса та ним те тăваймăн, Санюк! Пирĕн ĕнтĕ иксĕмĕрĕн малашнехи пурнăç çинчен кăна шухăшлас пулать. Мĕнпур атте-анне çурчĕ, пурлăхĕ хамăр алла юлчĕ. Çакă çуртăн шанчăкĕ пирĕн иксĕмĕр çинче анчах ĕнтĕ. Пирĕн хамăр пурнăçа иксĕмĕр пурăнса тата малалла яма тăрăшас пулать.

— Пирĕн хушăмăрта тата мĕн пулмалла, тата пурнас пулать çав. Эпир пĕр-пĕрне юрататпăр, çавăн пекех пирĕн пурнăçа та юратас пулать, пурнăçне хăйне те пире юрататарма тăрăшас пулать. Вара пирĕн пурнăç савăнăçлă пулĕ, вăл малалла кайĕ, — терĕ Санюк.

— Чăн калатăн, Санюк, чăн калатăн! Пурнăç пире хамăра юратса тăтăр! Мĕнле эсĕ çавăн пек ырă сăмахсем каларатăн! — тесе Кирук Санюка ыталаса илчĕ.

Кирукпа Санюк çĕр хута темĕнччен çавăн пек калаçса ларчĕç, кунĕпе чупса çýресе ывăннипе лампăна сýнтерсе выртса çывăрчĕç. Тулта уйăх çути çап-çутă. Уйăх хăйĕн çутине чýрече витĕр ярса тĕттĕм пýртре выртакан Санюкпа Кирукăн таса çамрăк пичĕсене çутатать. Вĕсем кунĕпе чупса йĕрсе ывăннипе вилсе кайнă пек пĕр сисмесĕр çывăраççĕ.

— Аха, ман телее, алăк питĕрмен иккен-ха!.. Ăçта выртаç-ха вĕсем?.. Акă кунта! Йыт çурисем, чунăрсем ман алăра вĕт ĕнтĕ! — терĕ Чукмар Тимми йăпшăнса кĕрсе.

Хăйĕн аллинче чавса тăршшĕ çĕçĕ, уйăх çутинче çуталса тăрать.

— Ме сана, пĕт! — тесе лартрĕ çĕççе Кирук кăкăрĕ çине.

— Ме сана тепре! — терĕ те, Кирук кăкăрĕнчен латăртатса тухнă çĕçĕ Санюк кăкăрне пашлатрĕ. Мĕскĕнсем, икĕ çамрăк телейсĕр чунсем, йынăшса ячĕç.

— Йынăшăр, анчăксем! Мана пĕтересшĕнччĕ, пĕтерейместерĕр. Хăвăрах хам аллăмпах пĕтертĕм! Эпĕ ку ĕçе тăвасшăн ик-виç çул ăвăнса çÿрерĕм! Ĕнтĕ тинех турăм!.. Çапла тăваç сире!.. Ну, аван-и, хаçат йыттисем? Леш тĕнчере каллах ман çинчен хаçата çаптарăр. Каллах тĕрмере çĕрттерĕр!!! Çук, ĕнтĕ вăл пулас çук! Ну, Кирук, тинех шалчу тулчĕ ĕнтĕ!.. Ах-хах-хах... — тесе Тимма, ухмаха тухнă пек, шăлне йĕрсе тухса тарчĕ.

Мĕскĕнсен кăкрисенчен пичке пăккинчен юхнă пек юн çÿлелле сирпĕнет. Мăнтарăн мĕскĕнсем, йынăшрĕç, йынăшрĕç те ыйхăллă куçĕсене уçмасăрах вилсе кайрĕç. Вĕсен юнĕ вырăн çинчен кĕрлесе анать, урай тăрăх кÿлленсе юхать. Пăхма хăрушă, калама тискер...

Мĕскĕнсем, мăнтарăн хисеплĕ çынсем, пĕтрĕр иккен, пĕтрĕр!..

VI

Тепĕр кун ирех çынсем мĕн пулнине пĕлсе Кируксем патне чупса пухăнчĕç. Пурте ахлатаççĕ, пурте пĕççе шарт çапаççĕ.

— Ах, мĕскĕн, мĕскĕн ачисем, епле выртаççĕ, епле çамрăк пичĕсем чĕрĕ пекех çуталса тăраççĕ, — тесе пурте ĕсĕклеççĕ.

— Кам хăтланнă-ши ку ĕçе?

— Кам пулас, çав Тиммах ĕнтĕ, — теççĕ теприсем.

Нумай вăхăт та иртмерĕ:

— Акă тытрăмăр ăна, çамрăксен ĕмĕрĕсене татакана! — тесе пилĕк-ултă çын Тиммана сĕтĕрсе кĕчĕç.

Тимма юн кăна, тата кăн-кăвак кăвакарса кайнă та, халăх умĕнче пуçне усса, чĕтресе тăрать. Ватă Кĕркури йысна Тимма патне утса пычĕ те:

— Эх, мĕн турăн?.. Епле çакă таса çамрăксем çине санăн аллу çĕкленчĕ?! Епле сана çапла хăтланма намăс пулмарĕ?! Çакă çамрăк çынсене вĕлериччен санăн луччă мана чиксе пăрахас пулатчĕ. Маншăн, ват çыншăн, никам та куççуль

тăкакан пулмĕччĕ. Кусемшĕн ав пĕтĕм халăх макăрать, — тесе кăшкăрса каларĕ.

— Ан пăтратăр тата манăн тулса çитнĕ ăша! — тесе кăшкăрса ячĕ Тимма.

Халăх пурте ун çине чăрсăр пăхса илчĕ.

— Асаттемсем! пиччесем! инкесем! тантăшсем! пурте! пурте! — тет вилесем патне пырса комсомолец Çимун. — Пирĕн çак вилесен умĕнче епле пуçсене тайса тăрас мар, епле вĕсем çине пăхса шухăша каяс мар?! Çакă икĕ виле, вĕсем ахаль виле мар, вĕсем хисеплĕ виле! Çакă икĕ чун пирĕншĕн, хура халăхшăн, пуçне хунă чунсем! Çакă икĕ чăн-чăн чăваш ачисем, чăвашшăн виличчен çунакан хĕлхемсем. Вĕсем пирĕн чăваш ялне хĕвел пайăрки пек çутатса тăратчĕç! Анчах вăхăтсăр вилсе куçĕсене хупрĕç. Çакă икĕ хисеплĕ виле умĕнче пирĕн, çамрăксен, чĕререн-чунтан вĕсен ĕçĕсене малалла илсе пыратпăр тесе сăмах памалла! Вара çакă икĕ хисеплĕ чун ĕмĕрĕсене татакансене ку ĕçшĕн каçарма пирĕн вăй çитмест. Пирĕн вĕсене хамăрăн çирĕп вăйпа лайăх пăчăртас пулать! Çак ĕçшĕн вĕсене Канаш ирĕкĕн аслă сучĕ умне тăратма эпир тивĕçлĕ! Вăл ку ĕçе чăн тĕрĕс тĕрĕслĕ! Ку ĕçре эс, Тимма, ху пĕччен кăна пулман. Кунта санăн юлташусем те ĕçленĕ. Вĕсем те пиртен часах хăтăлса тараймĕç! Эсир, Тимма, çак çунан хĕлхемсене сӳнтерсе ыр курăпăр терĕр пуль?! Ĕлĕкхи пек ялта пуçлăх пулса пурăнăпăр терĕр пуль?! Çук, вăл пулаймĕ! Çакă икĕ хĕлхем вырăнне пирĕн çамрăкран çĕр хĕлхем пулса çулăма тухса йăлкăшса кайĕ! Вара çакă çулăм сире, халăх юнне ĕмекенсене, тĕпĕ-йĕрĕпех çунтарса, ăшаласа тухĕ!!! Ачасем! атьăр çакă таса вилĕмпе вилнĕ юлташсен ячĕпе пытару маршĕ юрлар.

Çамрăксем пурте хурлăхлăн юрласа ячĕç, пурте хурланса йĕрсе тăраççĕ.

— Хисеплĕ çынсем, хисеплĕ вилĕм... — тесе куççуль тăкса пĕр-пĕринпе пăшăлтатаççĕ.

1926

АСА ИЛНИСЕНЧЕН

Халтăраса тăракан 1919-мĕш çул. Пур çĕрте те «хĕрли» те «шурри» тесе анчах калаçаççĕ. Тин ӳтленнĕ йĕрĕ куçлă хаçат «Канаш» та çывăрмасть... Ленин, Троцкий, Колчак, Юденич т.ыт.те «Канашăн» сарă пичĕ çинче вылянаççĕ.

Пирĕн Нямма пичче — ялта пĕр аван старик. Ялта вăл

анчах «Канаш» хаçата çырăнса илетчĕ. Хăйĕн куçĕсем тавçăрайманнипе яланах пирĕн пата пыратчĕ.

— Ваççа, ачам, атя-ха... Каллах «Канаш килчĕ!» — тесе мана, вунă çулхи ачана, алă çинче йăтса кайнă пекех хăйĕн килне илсе каятчĕ. Ял-йыш Нямма пиччене хаçат илнĕшĕн курсах каймастчĕ. Мана та ун пирки аннесенчен сăмах тивкелетчĕ.

— Ме-ха, Ваççа, вула, — тетчĕ вара вăл.

Халĕ аса илсен тĕлĕнетĕп: сахал çеç вĕреннĕ чăваш старикĕ чĕтренсе тăракан самана тĕпне-йĕрне веçех пĕлсе тăратчĕ. Кам вăл «шурри», «хĕрли» — пурне те аван пĕлнĕ вăл. Пĕрре çапла «Кашкăрсем тар шăршинчен тараççĕ» ятлă статья тĕл пултăмăр.

— Э-э, кам çинчен çырнине сисетĕп! — тесе хавассăн кăшкăрса ячĕ Нямма пиччe. — Ну, вула-ха, вула-ха!

Эпĕ ăна шуррисем тарни çинчен (те Колчак çарĕ, те Деникинăн — астумастăп) вуласа патăм. Старик, мĕскĕн, ку сăмахсене илтсен çамрăкланса кайнă пекех туйăнчĕ. Вăл маншăн, вунă çулхи ачашăн, хĕрлисем çинчен, шуррисем çинчен тĕрĕссине хĕрӳллĕн çутатса пачĕ.

Хушшинчен Вильгельм çинчен тĕл пултăмăр.

— Кам вăл, Нямма пиччe? — тесен:

— Пирĕн Микулай патша пек этем юнне, хресчен юнне ĕмекен çын!.. — тетчĕ.

Хаçатра инçетрен пĕрре пĕчĕк калавсем те пурччĕ. Калавсенчен пĕрне халь те лайăх астăватăп. Вĕсене вулама вара эп пит ухутаччĕ. Нямма пиччe те шӳтлерех хĕл пулсан эх-эх-эх! тутарса çинçерех саспа кулса ларатчĕ.

Мана хаçат сарă тĕсĕ ытла тĕлĕнтеретчĕ, чисти сахăр хучĕ манерлехчĕ.

— Нямма пиччe, çак хаçат хутне мĕскерле япаларан тăваççĕ-ши? — тесе ыйтаттăм та:

— Йăвăçпа улăмран пулмалла: ак йăвăçăн хуписем те пур, — тесе шатра питлĕ «Канаш» çине кăтартатчĕ.

Чăнахах та хаçатран хăш чухне хамăн пӳрнесемпе йывăç хуйăрĕсем хăйпăтса пăрахаттăм.

Нямма пиччерен «Канаша» камсем çырни çинчен ыйтаттăм.

— Ăслă чăвашсем çыраççĕ... Вĕрен-ха, Ваççа, эсĕ те çырса тăракан пулмăн-и, — теетчĕ.

Чăнахах та Нямма пиччен сăмахĕсем вырăнлă пулчĕç. Ун урлă çеç тăван хаçата юратма вĕреннĕ чĕрем ахаль сӳнсех пĕтесшĕн мар, хам та «Канашăн» корреспонденчĕ пулса тăтăм!

Нямма пиччe халь те пурăнать. Çитмĕлсенчен иртнĕ ĕнтĕ.

Çапах та халĕ те питĕ паттăр-ха! Чĕмпĕртен киле таврăнсан тӳрех чупса пырать. Хаçатсем вуласа паратăп. Ĕлĕкхисене асăнатпăр...

«Канаш» хаçат тăхăр çул тултарнă йĕркепе Нямма пиччене тата «Канашăн» малтанхи подписчикĕсене хĕрӳллĕ салам!!!

1927

«АТĂЛ ПĂЛХАВÇИСЕМ» УЛЬЯНОВСКРА

Ульяновск урамĕсенче пĕлтерӳсем: «1—2—3-го марта русский боевик — «Волжские бунтари»» текен сăмахсемпе мухтанса тăраççĕ.

— Что за картина?

— Из чувашской жизни, — тет тепри.

Касса умĕнче çын çапса хĕстернĕ пек. Ирĕксĕрех кусем виçĕ сеанса та шăнăçаймĕç темелле.

Зал. Ак юлашки шăнкăртаттару, вара чăвашăн ĕлĕкхи пурнăçĕ пирĕн умра!.. Тытăнчĕ... Тӳсме йывăр картинăсем иртеççĕ. Вĕсене курнипе ирĕксĕрех çан-çурăм чĕтĕрет. Эпир кăна мар, вырăссем те çаплах. Вырăссем те йывăррăн сывласа лараççĕ. «Атăл çине бурлака каяççĕ»... «Яппун вăрçинчен алăсăр таврăнать»... Музыка йĕрет. Майрасем йĕреççĕ.

Ĕненмесĕр:

— Сирĕн чăнахах та çавăн пек-им? — тесе ыйтаççĕ.

— Вăл ĕлĕкчĕ, — тет пĕри.

— Вот темнота и невежество чуваш!.. — тесе чылай çĕрте каларĕç.

Ак пирĕн умра пăлхану. Уретниксене тытса сарайне хупаççĕ. Пурте алă çупса ячĕç.

Пĕр сăмахпа каласан «Атăл пăлхавçисем» кинокартина виçĕ кун хушшинче Ульяновска хăйĕн сăнне аван кăтартрĕ. Халăх кăмăлне тупрĕ.

Чăвашсен пирвайхи картинĕ хăйне хапăллаттарать пулсан ыттисем те апла пуласси паллах!

1927

ЧЁЛЁМ МЁКЁТИ

Пуш уйăхĕн юлашки кунĕсем. Паян кун питĕ харшай.

Çепĕç сăнлă ирхи çуркуннен çамрăк ўтне ылтăн хĕвел ытаклать. Хĕллехи сивĕ куççуль чĕрĕлсех пыракан хĕвелтен сиплĕх илсе Сĕвенелле шăнкăртатать.

Кĕпер карлăкĕ çинче пĕр кас çерçи туй тăвать. Унтан та кунтан Сĕверен пăр кăларакан вырăссем вăрçни янах каять. Тин вĕçсе килнĕ хура куракĕ те хăрушă карклатать.

Паян тин ўтленекен çуркуннен ырă шăршипе çăвăнар тесе эпир юлташпа иксĕмĕр хула урамне тухса утрăмăр. Тухнă япала пасарах кайса килес терĕмĕр.

Пире Чĕмпĕрĕн пасарĕ питĕ кăмăла каять.

Кам пĕлмест пуль Чĕмпĕрĕн чăпар пасарне? Кам анчах пымасть пуль ку пасара? Мĕнле кăна халăхăн хĕр-ывăлĕ çук-ши ку хулан йăвинче?

Ак пусма таварлă еврей темле мăнтăр майрашăн йăмшак чĕлхине çуллантарать. Ав унта чикан хĕрĕ писев сĕрнĕ хĕр ачан ал тымарне тытса темĕн пăшăлтатать. Кунтах тата паллă нимĕç курка евĕрлĕ чĕлĕм паккать; китайцă шăлтăрккасем сутать; тутарĕ, ирçи, вĕр çĕнĕ çăпаталлă чăвашĕ... пурте пур. Пурин пичĕ çинче те кăмăллă чĕренĕн хĕвелĕ йăлтăртатать! Çук, пурин пичĕ çинче те мар!..

Ак инçе те мар ухсах-чăлах вырăс пĕр пус укçашăн сăмси-çăварĕ ахлатса йĕрсе яриччен юрлать. Кунтах пĕр хăмăр шинельлĕ инвалид шарманка çавăрать. Эх, мăнтарăн шарманĕ! Йĕрет, улать, ирĕксĕрех ним тўсмен тĕнче тутимасине сисмен çамрăк пуçăма шухăша ярать. Шарманка вăл — чаплă çынсемшĕн кулăшла музыка. Анчах çапах та манăн чĕрем шарманка сассине хапăллать.

Юрлать, йынăшать шарманка... Хăйĕн хуçин пурнăç юхăмне хуçи епле тĕнче шултăркаса тăнă вăхăтра ырă ĕçшĕн çынлăхран тухнине шарманка йăлтах хăйĕн кĕввинче каласа парасшăн...

Юрла, кала, шарманка!..

Аякрах мар тата суккăр вырăс икĕ ретлĕ купăс кĕввипе хăйĕн хуйхине вылять, хăйĕн тўсĕмлĕ чĕрин хурлăхлă кĕввипе итлекен халăха «тĕне» кĕртет.

Унтан тутар «малайĕ» асат хуçнă мĕскĕн «анайĕ» çумĕнче кашăксем шакăртаттарса «Кирпичики» юрлать.

Çаксем пурте Атăлпа эмелленекен Чĕмпĕрĕн кăмăлне каяççĕ пулас. Чĕмпĕр вĕсене хапăллать пулмалла...

Çаксем пурте манăн тăвăллă чĕрене йăва çавăрса тарăн шухăша яраççĕ...

— Пăх-ха, пăх, ку чăваш вĕт, — тет мана юлташăм.

Çаврăнса пăхрăм та пирĕн тăван чăваш пĕр нэпмăн умĕнче пуççапса тăнине куртăм. Хăй темскер вырăсла пĕлмен чĕлхине хуçкалантарать, куççулĕсем пĕркеленчĕк пичĕсем урлă кӳленсе юхаççĕ. Услап нэпмăн ăна хирĕç çăварне ейсе янă та пĕтĕм вăйĕпе кĕçенсе ахăрса тăрать.

— Фасиль Фанч! Фасиль Фанч! — тесе йĕкĕлтет.

Ку чăваша эпĕ малтан хула мунчинче курсаттăм. Вăл ватă ĕнтĕ, сахалтанах утмăлалла çитнĕ, кӳпшектерех пит çăмартисем пĕркеленсе кайнă, çӳçĕ-сухалĕ кăвакарăшнă утă евĕрлĕ, çӳллĕш — пĕчĕккĕ. Çĕтĕк мулахай, пилĕксĕр çĕтĕк кĕрĕк («лаптак кут») тăхăннă, çĕнĕ çăпата сырнă.

Мунчара вăл темĕнле вырăса хăйĕн хуйхи çинчен каласа йĕретчĕ.

Ав паян та йĕрет. Мĕскерле хуйхă-ши ку чăвашăн тесе шухăшласа тăнă çĕртех вăл куçран çухалчĕ.

* * *

Сĕм тĕттĕм, шăтăр сивĕ каç. Ăçта килчĕ унта анчах электрицă çути пăртак йăмăхкалать, тата аякра иртекен автобусăн чакăр куçĕсем хутран-ситрен йăлтлаткалаççĕ.

Чĕмпĕрĕн пĕр улах урамне хресчен çурчĕ вырнаçнă. Эпир çак çурта виççĕн кĕрсе кайрăмăр.

Унта тутарĕ, чăвашĕ, вырăсĕ, ирçи... хулана килнĕ йăлапа пурте чейпе, кулачпа апатланаççĕ. Хушшинчен «Мелекес сăрине» те сыпкаласа илеççĕ.

Хресченсемпе пăртак калаçкаласан эпир те сăра ыйтрăмăр.

Хĕререх пуçпа чылай хресчен нушисем çинчен сăмах тытрăмăр. Сиплĕхлĕ чăваш поэзи çине те пăртак пусса пăхрăмăр. Хусанкай, Рзай, Ваçанкка тата ыттисем çинчен калаçма та сăра курки патĕнче пит аван пек туйăнать.

Çавăн пек калаçусем хушшинче эпир вăхăт юхăмне те аванах туймарăмăр. Хресченсем кайса пĕтнĕ. Вĕсем вырăнне икĕ хĕрлĕ салтак кăмăллăн сăра стаканĕсене чуптăваççĕ, тата аяккарах виç-тăват беспризорнăй ачасем сăра ĕçнĕ хыççăн пилĕк пусшăн харкашаççĕ...

* * *

Йынăшуллă йĕрӳ сасă пирĕн ăшă сăмаха татма пулчĕ. Çаврăнса пăхсассăн эпĕ ĕнерхи чăваша курах кайрăм.

Мĕскершĕн йĕрет-ха ку чăваш? Мĕскерле хуйхă-ши ку мĕскĕнĕн? Ĕнерхи пекех, пĕр вырăс умне чĕркуçленсе кукленсе ларнă.

— Вот мой пумакă йеç... Сынук Элексантăрскăй пуль-

нитсă пумĕр... пошалстă, христарати, тайте на хлеп... три тня не емши... — тесе йăлăнать мĕскĕн старик.

Эпĕр старике хамăр пата чĕнсе илсе пăртак укçа тата шур çăкăр патăмăр.

— Хăш ял пулатăн-ха эс, асатте?

— Хулаçырмисем, ачасем... Эсир чăвашсем-им-ха. Апла... хулаçырмисем. Спаççипах, ачасем, спаççипах, ачамсем. Ман ятăм Миккит. Ялта Миккит Чĕлĕмух тесе чĕнеççĕ.

— Мĕнле хуйхă пулчĕ-ха сирĕн, асатте?

— Хуйхи ман нумай... Виçĕ хут çунса кайрăм... Эх, хаспати пушĕ муй анчах ĕнтĕ. Мăшăрăм та тухаймасăр çунсах вилчĕ çав. Кăçал ак крещенире чиркӳрен вут тухрĕ те, çур яла яхăн çунчĕ. Турă каçартăр та, пачăшка вут тĕртнĕ теççĕ.

— Мĕншĕн тĕртнĕ-ха вăл тата?

— Кам пĕлет, пĕр Турă кăна пĕлет пуль ĕнтĕ... Эсир, ачамсем, ĕненсех каймастăр пулĕ те, юрĕ ĕнтĕ... Эх-хех-хех... Пупа ĕçсе çӳренĕшĕн сирпĕтсе кăларнăччĕ... Чиркӳре тата укçа пулнă тет... Чиркӳ те çунчĕ... Чиркӳ те çав...

— Эсĕ, асатте, хăвăн хуйху çинчен каласа пар-ха, чиркӳ çинчен тарам.

— Калăп, ачамсем, калăп, — тесе старик куççульне шăлса сассине çӳçенчĕклĕн чĕтретме тытăнчĕ.

— Асăнсассăн таçта кайса кĕретĕп... Эп ĕлĕк пит тĕреклĕ тăраттăм. Виç лаша тытаттăм. Вулăсра ямшăк чупаттăм. Тăваттăн пурăнаттăмăр. Икĕ ывăлăм кăрнатир пек ӳсетчĕç. Чĕвĕлтетсе çеç пурăнаттăмăр. Анчах ку пурнăç чылая каяймарĕ çав...

Старик тӳсейменнипе ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

— Вут тухрĕ... арăмăм çунса кайрĕ... Ярман вăрçи тапранчĕ, аслă ывăлăм Мĕтрине салтака илсе кайрĕç... Мĕтри пĕр-ик çул хушши çыру ярса тăчĕ, кайран ним сас-хура та пулмарĕ... Кĕçĕн ывăлăм Ваççа вун сакăр çултах креснăйсемпе кайрĕ. Унтан выçлăх çул киле таврăннă чухне Нашаткин пульницинче вилсе выртрĕ... Пит маттурскерччĕ... — тенĕ хыççăн юхса анакан куççульне кĕрĕк аркипе шăлса илчĕ.

— Ме-ха ĕçсе пар, асатте, — тесе эпĕ Мĕкĕт Чĕлĕмуха сăра курки тыттартăм.

— Спаççипах, ачамсем, спаççипах... Кăçал крещенире ак каллах ăшша кайрăмăр... Ăçта каяс тен ĕнтĕ?.. Нумай пулмасть çыру илтĕм. Ăçтан-ши ку çыру? Вăл çыру аслă ывăлтан иккен... Мĕтри... Мĕтри... Вăл çапла çырать: «Атте, шăллăм!.. (Шăлнĕ вилнĕ вĕт-ха!) Эпĕ плентан таврăннă чухне чирлерĕм. Эпĕ халь Чĕмпĕрте Элексантăрски пульницăра

выртатăп. Чĕрĕлесси пулать-и, пулмасть-и... килсе курăр».

Лашам çук. Çуранах Чĕмпĕре ик кун хушшинче çиткелерĕм. Элексантăрски пульницана пыратăп та, ывăлу... вилчĕ теççĕ.

Мĕкĕте пичче паçăрхинчен те хытăрах йĕрсе ячĕ. Пичĕ тăрăх мĕскĕнĕн куççулĕсем шăпăртатса юхаççĕ.

Эпĕ те чăтаймарăм. Ирĕксĕрех куçăмсем шывланчĕç... Юлташсем мĕн эс тесе мана тĕртсе лараççĕ.

Аякра сăнаса ларакан салтак та чăтаймарĕ...

— Чужие слезы на меня очень действуют, — тесе пуçне усрĕ.

Мĕкĕте пичче каллех калама тытăнчĕ.

— Çапла, вилнĕ çав Мĕтрийĕм... Пытарайманччĕ ăна... чассавнине пăрахнă... Аран-аран палларăм. Темиçе çул курманскерне ăçтан палласа илĕн-ха? Сухалĕ хамăннинчен те кăшт анчах каярах пулнă пулас... сухал вырăнĕ кăн-кăвак, хырса янă... Салтака кайнă чухне мăйăх та сăрманччĕ-ха...

Ăçта каяс ĕнтĕ халь ман, ачамсем... Çуртăм та çук... Çемьем те çук... Ĕлĕкхи каç чăтайманнипе темиçе хут çакăнма тăтăм... Тур ямасть пуль çав... те тата курасси пĕтмен-ха... Эй, мăнтарăн турри!..

Чĕлĕмух татах куççульне аркипе шăлса илчĕ.

— Асатте, эс хăвна пенси хлопотать тума тăрăш ĕнтĕ.

— Пульницара та çавнах каларĕç çав... Ăçтан тумалла-ха ăна?..

— Эсĕ Пăва уесĕ вĕт, Пăвара...

Мĕнле тумаллине чылай каласа патăмăр ăна. Ытла аптрасан хамăр шкула та пыркалама хушрăмăр.

Ĕçтерсе, çитерсе тата пăртак хваттерлĕх укçа парса Мĕкĕте Чĕлĕмуха ăсатрăмăр. Вăл пире хăйĕн хуйхă-суйхă тӳснĕ чĕринчен куççульпе пиллесе хăварчĕ.

* * *

— Мĕншĕн йĕтĕн эс паçăр? — тесе манран пĕр юлташ кулма пикенчĕ.

— Вара çав старикшĕн епле куççуль тухмĕ-ха, ун пурнăçĕ епле йывăр, тата ун куççулĕсем те мана питĕ хурлантараççĕ, — тетĕп.

— Эх, ухмах! Эсĕ нимĕн те курман çав-ха, — тет манăн юлташăм. — Çав Миккит Чĕлĕмух вăл — деклассированнăй элемент. Вăл ĕмĕр ыйткаласа пурăнакан этем, — тет.

— Çук, эпĕ сана ĕненместĕп. Эпĕ çавăн пек чăваш çыннине чĕререн шанатăп. Вăл пуртан çапла çӳремест. Ун пек хуйхă курсан пурте...

— Эс ун сăмахĕсене пурне те шанса пĕтереймĕн. Ак илха кукка ялĕсене, унти чăвашсен тыррисем ишĕлсе выртаççĕ, хăйсем çапах та хуласене ыйткалама çÿреççĕ, — тет тепĕр юлташăм.

— Çук, эсир тĕнче курнă çын пулсан та, салтакра пирĕншĕн темиçе çул çапăçнă пулсан та сирĕн сăмахăрсемпе килĕшейместĕп, юлташсем! Эпĕ хамăн тăван чăваш çыннине шанатăпах!..

Манăн кăмăлăм хуçăлнипе каллех куççулĕсем юхса анчĕç.

Эпĕ йĕнине сиссен юлташсем каллах кулса ячĕç. Айван! Айван эс тесе мана уртарасшăнах каларĕç пулмалла.

Чылайччен тавлашрăмăр. Анчах никамăн шухăшĕ те çиеле тухни пулмарĕ.

Вун пĕр сехет çитрĕ... Эпир тăтăмăр та хуçăк кăмăлăмăра çавăтса тухса шкулалла утрăмăр.

* * *

Тепĕр кунне эпĕ çĕтĕк çăпатапа чаплаттарса пыракан ÿсĕр çынна куртăм. Вăл — Микит Чĕлĕмух. Эрех кĕленчи йăтса хупаха кĕрсе кайрĕ.

Чĕлĕмуха сăнамалла эпĕ те ун хыççăн кĕтĕм. Кĕсйинчен укçа хутаççи кăларса тепĕр бутылка эрех ыйтрĕ. Укçи чылай. Пурте пилĕкшер пуслăх вак укçа.

Микит Чĕлĕмух сисиччен хупахран тухса вĕçтертĕм.

Кун хыççăн Мĕкĕте пичче тата та мана шухăша ячĕ. Юлташсен ĕнерхи сăмахĕсем аса килчĕç.

Чăнахах та Микит Чĕлĕмух ялтан сивĕнекен этем. Анчах мĕн ăна ялтан уйăрать? — Унăн телейсĕр пурнăçĕ-и?

Микит Чĕлĕмух пек этем чăвашран пĕрре çеç мар. Ун пеккисене Чĕмпĕрте кăна мар, ытти хуласенче те курма пулать. Чĕмпĕрте çеç мар ун пек чăвашсем хăйсен хуйхисуйхисене эрехпе пытарасшăн! Ку ĕç нарастаран мар!

Ирĕксĕрех пăшăрханмалла!..

Çак çухалнă çынсем ирĕклĕ мĕльюн çурăллă чăваш халăхĕпе пĕр супинкке пулса пурăнас чухне — вĕсем ют çĕршывра хуйхăпа, эрехпе туслашса пĕтеççĕ.

Эпир, чăваш çамрăкĕсем, çĕнĕ телей тăвас тетпĕр. Тăван чăваша чĕререн пулăшасси, ăна тачă пĕрлештерме тăрăшасси, ирĕкпе сиплĕхленекен Тăван çĕршыва кăмăлтан юратса малалла ярасси — пирĕншĕн пысăк, çĕнĕ телей пулмалла!

1927

ЛАВ ХЫÇÇĂН ЛАВ

Пысăк ĕç çинчен тата чăваш хресченĕн чун хавалĕ ирĕклĕн тапни çинчен каласа парасшăн эпĕ.

Тырă-пулă пухас ĕçе ăнăçлăн тапратса яни пур енчен те палăрса тăрать. Пуринчен ытла ĕç хресченĕ хăйĕн чăн çул-йĕрне ăнланни, хăйĕн пулас пурнăçĕ мĕнле меслетсемпе тымарланассине чухласа илни савăнтаратех, юлташсем.

Хутар ялĕ. Ыран октябрĕн 1-мĕшĕ. Ырантан хĕрлĕ лавсем вĕçĕ-хĕррисĕр килсе Хутарти «удельнăй» кĕлечĕсене мачча кашти таранах тырăпа тӳпелемелле тетпĕр...

— Çамрăксем, хĕрлĕ обоз!.. — тесе кăшкăрать уполномоченнăй.

— Ыран çеç килмелле марччĕ-и?

— Тавай!.. Паянах.

Ик çĕр çирĕм çамрăклă Хутар Çамрăк Хресчен Шкулĕ вĕренӳ класĕнчен тухса хĕрлĕ лавсене хирĕç ялавсем вĕлкĕштерсе çĕнĕ юрă кĕввисем май утать.

Çӳлтен, сăрт тăрăх, вĕçĕ-хĕррисĕр лав тăсăлать. Кĕрхи хĕвел чун кĕнĕ сăрт çамкине ытарайми мерченсем пăрахать. Пуçри кăвак лаша тапса туртать. Вĕлкĕшекен хĕрлĕ хăмач лашанăн кăвак пилĕкĕ çине ӳкет, — тулли лава туртас вăя хисеплесе тата пин хут хăват сĕннĕнех туйăнать...

— Сывă пултăр тӳпеми хĕрлĕ обоз! Сывă пултăр Совет çăкăрĕ! — тесе кăшкăрать чăрсăр пионер.

Виç çĕр çăвартан тухакан урра! ян каять, — Ескетен çыранĕсене çитсе çапăнса виç çĕр çăвартан тата пин çăвар, вунă пинлĕ çăварлă сасă пулса янăра-янăра каять.

Ĕлĕкхи удельнăй кĕлечĕсем патне çитсе тăратпăр.

— Удельнăй кĕлечĕсем! Сирĕн пӳлмĕрсем ĕлĕк янтарлă хресчен тыррипе тăкăнса тăнă пулсан, ĕлĕк сирĕн тĕпсĕр, тăрана пĕлми пӳлмӳсемшĕн саламат тырă пухнă пулсан, паян кун ирĕкри ĕç хресченĕ савăнăçлă тулă пĕрчисемпе сире тӳпелĕ. Сирĕн ĕлĕкхи уделусем пирĕншĕн юрăра анчах вырăнлă пулĕç тесе калас килет.

Митинг уçăлать. Сăмахсем тĕрлĕ организацисенчен саламланаççĕ. Мăка чĕлхеллĕ хресчен те: «Сывă пултăр хамăр Совет! Сывă пултăр хулапа ялăн çыхăнавĕ!» — теме пĕлет иккен.

Ыран октябрĕн 1-мĕшĕ тенĕ чух çăмăл алăпа хывнă тырă ĕлĕкхи удел кĕлечĕсене пин пăт ытла вырнаçать. Вырăн нумай-ха. Удел кĕлечĕсен выçăхнă пырĕ аслă. Куллен-кун хĕрлĕ лавсем. Кĕлетсем çăтаççĕ вĕсене. Кĕлетсем тулаççĕ.

Паянхи куна! Октябрĕн 17-мĕшне! РĔК сăмахне çĕр про-

цент ытла пурнăçа кĕртнĕ. Ыран — ик çĕр процента çитĕ. Тепĕр кун каллех хĕрлĕ обоз хыççăн хĕрлĕ обоз тăсăлĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕ. Вăрнар станци — ĕлĕкхи упасен йăви, ыран — чăваш промышленноçĕн тĕп шăнăрĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр обоз Вăрнар ыранлăхĕ патвар пуласси çинчен паянхи куна шантарса хурать.

Кольцовка хĕрлĕ обозĕ пĕр енчен, Уйкас-Юнтапан тепĕр енчен тăсăлаççĕ. Вăрнарти пĕтĕм ĕç халăхĕ, хĕрлĕ ялавсем-пе хирĕç тухса хĕрлĕ лавăçсене саламлать.

— Сывă пулăр, паттăр юлташсем! — тесе кăшкăрать çӳллĕ çӳрен лашине тăп-тăп тытса пыракан кăвак сухал.

— Ур-ра! Ур-ра! — харăссăн кăшкăрать демонстраци.

— Митинга уçатăп, — тет РĔК председателĕ.

Çак вăхăтра станцăна вĕçĕмсĕр вăрăм поезд тулхăрса хашкаса çитет. Чĕлхепе калайми картин! Кăмăл, темĕншĕн, калама çук пăлхаварăн тăвăлать. Кăмăлĕ, чĕрре кĕрсех, темĕнле савăнăçлă çĕклентерӳн пайăркисемпе пĕтĕм ӳт-тире çупăрлать... Анланăр-ха! Тин çеç хашкаса çитнĕ поезд хресченĕн перекетлĕ тыррине кĕтсе тăнăнах туйăнать... Ĕмĕрне ывăнми поезд малашне те хулапа ял ĕçĕшĕн канăççăр ĕçлеме тупа тунă пек шанчăк парса Мускавалла юрттарать.

— Юлташсем!.. Тăвансем!.. Ĕç хресченĕсем!.. — тет савăнăçлă куççулĕсемпех вĕри чĕреллĕ райком секретарĕ Краснов В.И. Иксĕлми хăватлă граждан вăрçин хĕрлĕ ывăлĕсенчен пĕри, умри вилĕме шахтер куçĕсемпе шăтаракан салтак. Халь вăл райком секретарĕ, паянхи телейлĕ пăлхавар пек ĕçе кура, камшăн, мĕншĕн тискер арăслансем пек çапăçнисем ахаль сӳнсе ларманнине кура куçĕсем савăнăçлăн шывланаççĕ. Пĕтĕм кӳлепипе секретарь кисренет.

Эпир мĕншĕн çапăçнине, мĕншĕн çапăçассине каласа парать секретарь. Пирĕн çунан ĕмĕтсем, пирĕн пулас иксĕлми хăватлă чăваш промышленноçĕ çинчен калать. Хресчен тырри, ĕçлекен класĕпе пĕр шухăшлă хресченĕн ирĕк тырă-пулли пирĕншĕн мĕн хака тăнине каласа парать. Пĕртен-пĕр ирĕклĕ савăнăçлă ĕç патшалăхĕн тăшманĕсем-пе кĕрешсе ĕçре хресченĕн тутă тырри мĕнле вырăн йышăнса тăнине астутарать секретарь.

Рабочи бригадăран Чулхулари ĕçлекен саламлать. Хресчен тыррипе хапрăк-савăтсен тухăçлăхĕ уйрăлми çыхăнса тăни çинчен калать вăл.

Çитмĕл çултан та иртнĕ кăвак сухалла старик асатте сăмах илет.

— Паттăрсем! Паттăрсем! — тет çирĕппĕн асатте. — Эпĕ ватă çын. Ĕлĕкхи пурнăçăн тутине лайăх активнĕ эпĕ, — тет асатте. — Пире куланайшăн çӳçрен çăлатчĕç, шăршлă

тӗрмене те кая-кая ларнӑ эпир... Саламатпа пирӗн виҫӗ хут тире сӳнӗ. Халӗ эпир урӑхла. Паян кун хамӑр Совет влаҫне хастарлӑн пулӑшатпӑр. Совет влаҫӗ пире манмасть. Паян тулли лавсемпе килтӗмӗр. Тулли лавсемпех каятпӑр. Шкуллӑх пӗрене тиесе каятпӑр. 50—60 лав тырӑ вырӑнне культура никӗсне тиесе каять. (Ку чӑн! Хресчен, ватӑ хресчен ҫапла калаҫать. Мӗншӗн-ха вӑл, ӗлӗкхи пек, ытлашши тыррине Улатӑра, Йӗпреҫе сутма каймасть? Тырӑ укҫине мӗншӗн вӑл ӗлӗкхи пек ҫул ҫинчех, килне ҫитичченех, ӗҫсе-кӳпсе ямасть? Чӑваш ӗҫ хресченӗ, ирӗклӗ, тӑнлӑ чӑваш хресченӗ!..)

— Сывӑ пултӑр пирӗн Совет, сывӑ пултӑр!.. — тесе пӗтерет асатте.

Паянхи кун пӑлхаварӗн паттӑрӗсем — ҫамрӑксем — старике хисеплӗх сунса пӗлӗтелле ыткӑнтараҫҫӗ.

— Ур-ра! Ур-ра! — янӑрать таврара.

— Шӑм-шакка! — тесе пӗчӗк ача пек ахӑлтатать кӑмӑл тулнӑ старик.

Михӗсем тулаҫ та пушанаҫ, унтан каллех тулаҫҫӗ, тулаҫҫӗ... Хресченӗн перекетлӗ тырри станцӑн анлӑ пӳлмисене тӳпеленет. 1564 пӑтлӑ икӗ обоз пӗр самантра пушанса тӑрать. Ӗҫ чарӑнмасть — пӗри каять, тепри ҫитет. Шӑлами пӳлмесем тӳпеми пулаҫҫӗ. Кӗлете тулаҫҫӗ. Ҫӗнӗ кӗлет тавай!

— Хатӗр пул, Коопхлеб! — приказлать райком.

— Пирӗн хатӗр! — тет телефон тӑрӑх Коопхлеб.

Паянхи куна, октябрӗн 17-мӗшне, хӗрлӗ обозсем райӗҫтӑвком шухӑшне кая хӑварса 134 процента ҫитерсе тырӑ тӑратрӗҫ. Ырансенче процентсем ӳсмеллех. Ырансенче ӳсмеллех, мӗншӗн тесен пирӗн паянлӑх ӳсӗмсӗр тӳсме пултараймасть.

Хӗрлӗ обоз шӑвать. Лав хыҫҫӑн — лав. 40—50 хӗрлӗ лав. Удельни кӗлечӗсем тӳпеми. Тавай ҫӗнӗ кӗлет! Ку пулхавӑр мар-и? Тырру перекетлӗ, чӑваш ӗҫ ҫынни!

Савӑнӑҫлӑ ӗҫ. Телейлӗ перекет!

1929

КӐҪАЛХИ АКА — ӐНӐҪЛӐ АКА

«Хӗрлӗ Октябрь» колхоз (Кӗҫӗн Ҫӗрпӳел, Аслӑ Патӑрьел районӗ) кӑҫал ака ӗҫне калама ҫук ӑнтарчӗ. Сӑлтавӗ — ӗҫе вӑхӑтӗнче хатӗрленсе тирпейлӗн кӗтсе илнинче. Кӑҫалхи акан чи паллӑ ӗҫӗ вӑл — иртен те ир, тӑр пылчӑк ҫине пекрехех акса хӑварни. Ҫак ӗҫ апрель уйӑхӗн 3-мӗшпе 5-

мĕшĕ хушшинче пулса иртрĕ — 10 га тулă, 26 га сĕлĕ акăнчĕ. Колхоз кун пек «хăтланни» вара пурне те тĕлĕнтерчĕ. Аслатте-асаннесем туса пăхман ĕç! Кун пек ĕмĕрне тытса туман щиклĕ ĕçсене, паллах, колхозра анчах туса пăхма пулать. Ĕçĕн усси халех палăрма пуçларĕ те ĕнтĕ. «Кĕрхи çĕртме çине акса сӳренипех ĕç тухас çук», — тетчĕçĕ, çĕр хытса, пĕлевленсе каясран хăратчĕç, пĕрре те апла пулмарĕ. Çĕр кăпăк пек кăпăш тăрать. Сирсе пăхсан — сĕлли те, тулли те питĕ паркан сăмсаланни курăнать. Юлашки вăхăтра кунĕсем пăртак сивĕрех тăчĕç, çавăнпа шăтса тухаймарĕ. Акă паян кун питĕ çемçе те ăшă. Кун пек пулсан ыран, тепĕр кун шăтса тухатех.

Апрелĕн 9-мĕшĕнче ака ĕçĕ пуçланмаллипех пуçланчĕ. Икĕ бригада ăмăртмалла ĕçлерĕç. Ĕçре — 20 çын, 40 лаша, 10 ака пуç, 12 сӳре, 2 машина пулчĕ. Тĕш тырăсене акса пĕтерме çичĕ кун пăхнăччĕ. Бригадăсем ăмăртура кулленкун çĕкленнĕçем çĕкленсе пынипе ĕçĕн вăхăчĕ чылай кĕскелчĕ. Çак уйăхăн 13-мĕшне тырă акăнса пĕтрĕ, çакăн хыççăн виçĕ кун хушши пăрça йышши культурăсем акăнчĕç. Çанталăк çумăра кайиччен иртерех акмалли тырăсем акăнса пĕтрĕç.

17-мĕш числана акă мĕн акăннă: тулă 20 га, сĕлĕ 57 га, пăри 11 га, ясмăк 11 га, пăрça 4 га, тăрна пăрçи (тĕшлĕх) 11,5 га, тăрна пăрçи (утă валли) 18 га.

Аслă калăм кунĕ колхоз 18 га ĕçлесе илнине уйрăммăнах палăртас пулать. Ку кун ĕç планĕ 150 процента çити пулчĕ.

Çанталăк йĕперех тăнипе тата юласса та кайри культурăсем анчах юлнипе 17-мĕш числаран вара колхоз ытлашши васкарĕ. Акмалли тата акă мĕн юлнă: тымар çимĕç 1,35 га, купăста-хăяр 0,5 га, кантăр 1,62 га, улма 10 га.

Çĕр кăçал иртерех акнипе йывăртарах пек, анчах колхозăн лашисем «мĕнле тухнă — çаплах кĕнĕ», пăртак та ĕшенмен, акапуçĕ те, машини те палăртса кăна пынă, мĕншĕн тесен «Хĕрлĕ Октябрь» лашисем пекки районĕпе те сахал, тытса чарайми лашасем! Ку колхозра лашасене пит лайăх пăхаççĕ вара (уйрăммăнах комсомолка Кулине), пысăкрах ответ ыйтакан лашасене колхоз председателĕ Никитин юлташ хăй пăхать. Никитин юлташ чирлĕ лашасене эмеллеме те пултарать. Акă çапла ака умĕн тахăш тăшманĕ пĕр лашан çу тупанне пăта ярсаччĕ, лашан ăмăрĕ вара элесмелес шыçса кайрĕ. Çав лашана Никитин юлташ хăех эмеллештеркелесе паянхи куна ĕçе юрăхлă турĕ.

Кăçалхи çул ĕç ытарма çук ўсĕнсе пычĕ. Ĕçлекенсен кăмăлĕ пĕрре те ўкмен. Хиртех çичĕ номер стена хаçачĕ тухрĕ. Ĕçе хăват парса пырас тĕлĕшпе çак пĕчĕк çеç хаçат тем пысăкăш вăй пулса тăчĕ. Лашасене сывлаттарнă чух кĕнеке-хаçат вуланă, калаçусем ирттернĕ. Тата хиртех, ĕç шăранса кăна тăнă чух, колхозниксен хушшинче культурниксем 200 тенкĕлĕх зайĕм (плансăр пуçне!) çырăнтарчĕç.

Колхоз чун хавалĕ уйрăм пурăнакан хуçалăхсем çине куçрĕ. Вĕсем те акă ĕçĕпе кăçал сатур пыраççĕ.

Çапла «Хĕрлĕ Октябрь» тĕп тырăсене акса пĕтерчĕ ĕнтĕ. Ăнăçлăн, пĕтĕм кăмăлпа акса хăварнăскер — вырса-пуçтарса илме те кăмăллă пулĕ тесе шанаççĕ колхозниксем.

1932

КАДКИН ЯТЛĂ ПĔР ÇЫННĂН ЧАРАКСĂР ĔÇĔСЕМ

Ун ĕçĕсем РайККра. Контроль комиссийĕ Кадкин примерĕ çинче хăш-пĕр этемсем класс тăшманĕшĕн мĕн таран усăллă пулса тăнине татăклăн каласа парĕ. Çав шăршланнă этемсем хăйсен кĕсйинче парти билечĕ выртнине пула пирĕншĕн пушшех те инкеклĕ иккенне Контроль комиссийĕ пĕтĕм районти ĕç массисен умĕнче уççăн палăртрĕ.

Виçĕм çул Аслă Арапуçĕнчи (Аслă Патăрьел районĕ) колхоз çамрăкĕсен шкулне Кадкин ятлă учитель пырса кĕрет. Парти членĕ. Совпартшкол пĕтернĕскер. Пĕтĕм пит-куçĕ çамрăк сывлăхпа пиçĕхсе тăрать. Пĕр сăмахпа каласан — паянхи хĕрў ĕçсемшĕн вут кăларса кĕрешме вăйпитти йĕкĕт пек.

Чăнах та, малтанласа Кадкин хăйне пит харсăррăн тытнă. Тĕрлĕ кампанисен çĕнтерĕвĕшĕн чи малтан алă çĕкленĕ, класс тăшманĕпе пĕр каçарусăр кĕрешме чĕннĕ, начар ĕçлекенсене ятлама пĕлнĕ, хăтăрса та илнĕ. Ял канаш председателĕ те, секретарĕ те Кадкиншăн каçсах кайнă. «Вăт çын, мухтаса илсен те ытлашши пулас çук», — тенĕ вĕсем савăнса.

Анчах!.. Пурна киле çак çамрăк çын кăмăла пĕтĕмпех таврăнтарма пуçланă. Председатель те, секретарь те сиввĕн пăха пуçланă ун çине. Кадкин пулăшăвĕ «упа пулăшăвĕ» пулса кайнă. Çилленнĕ председатель. Тарăхнă актив. Тўсеймен енне Хромов (председатель) Кадкина президиум ларăвĕнче мĕнпур сулăмпа тивертсе те ярать. Анчах нимĕн те пулăшмасть. Кадкин çав-çавах юлать. Юлашкинчен вара...

...Ун ĕçĕсем паян РайККра. Эпир кунта кĕскенĕн анчах Кадкинăн хăш-пĕр ĕçĕсем çинчен асăнса илĕпĕр.

Пĕрре Иван Михалч (Кадкина шкулта çапла чĕнеççĕ) хăйĕн ачисене çапла вĕрентнĕ:

— Пятилеткăна ăна шанса туман...

Каласа пĕтеричченех пĕр чăрсăр вĕренекен сиксе те тăрать:

— Пулать-и, пулмасть-и тесе кăна тунă-и вара?

— Не возражать! — тесе хăтăрса илет хаяр учитлĕ.

Чылай авăрнă Кадкин. Анчах ачасем ăна ниепле те ăнланайман, тен, ăнланасшăн та пулман пулĕ... Пурна киле Кадкинпа вĕренекенсем хушшинче хирĕçŭ çивĕчленсех каять. Кадкин хăйĕн «авторитечĕ» çине тапăнакансене комсомолтан кăларттарать. Чылай ача вĕренме пăрахать. Райкомол çак ĕçе хутшăнсан çеç Кадкин пăртакçă «лăпланать».

Кадкина парти ячейкин секретарĕ тăваççĕ. Ответлă ĕç. Пĕтĕм подрайонĕпе пăхса тăмалла. Тирпейлĕ те ŭсĕмлĕ ĕçлес кăмăлĕ те пулнă пуль ачан, анчах «тактика» текен меслете ăнланса илеймен-мĕн пирĕн секретарь. Кадкин «командовать» тума тытăнать. Учителе курать-и — хăтăрса пăрахать, колхознике тĕл пулать-и — хистерсе илет, пĕр-пĕр ĕçпе ял канашне лекнĕ хĕрарăмпа куçа-куçăн тăрать-и — сăсăрлантарса тăкать. Кадкин — сĕмсĕр секретарь. Анчах темшĕн кампанисем хирĕнчĕклĕн пыма пуçларĕç. Колхоз айлăн-çийлĕн çаврăнать. Колхозниксем пуху теççĕ, пуху çук. Кадкин пухăва юратмасть. Пухăва вăл сайра хутра кăна пыркалать. Пырсан та пĕр сăмах та каласмасть, калассан та сăмаха сĕре сая ямасть, секретаре çакăн пек постановленисем çырса хур тесе анчах команда парать.

Кадкинăн пĕр тус пур — Ундолов ятлăскер. Ундолов — колхоз председателĕ. Пĕр вырăнта пусăрăнса ĕçлеме Ундолов юратмасть. Мускавăн-мĕнĕн çапкаланса çŭрет. Киле тавраннсан ĕçке ларать. Кадкин — Ундоловăн уйăлми тусĕ. Пĕрле — ĕçкĕ, пĕрле — катаччи, аскăнла ĕçсем те пĕрлех. Вĕсене пула колхоз арканнăçемĕн арканать. Лашасем кайса ŭкеççĕ, ĕç хатĕрĕсем салана-салана кайнă, тыр-пулă уйхирте ишĕлсе, çĕрсе выртать. Колхоза хуçасăрлăх текен çĕлен пĕтĕмпех ыталаса илнĕ. Вĕсен шав ĕçкĕ, колхозниксене Ундолов ĕçре курман, вăл пĕр конюха анчах пĕлнĕ. Конюх Ундолов тула тухма кайнă чух хыçалтан хунарпа çутатса пынă. Пухусем пулман. Колхозниксем Ундоловпа Кадкин аллине пĕрерĕн-пĕрерĕн лекнĕ. Ундоловпа Кадкин вĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн «суйланă». Хутран-ситрен пуху-мĕн пулсан та колхозниксем пуçа пĕшкĕртсе çеç ларнă. Ундолов хаяррăн «ăса» вĕрентнĕ, пухусенче каласма юратман

Кадкин пĕр-пĕр кĕтесрен сиввĕн, кашкăр пек пăхса ларнă. Сăтăрçăсен аллине тивĕçсĕр лекнĕ икĕ партбилет колхозниксемшĕн темрен те йывăр пулнă.

РайОНО çав кĕркунне (пĕлтĕр) Арапуçĕнчи колхоз çамрăкĕсен шкулне, шкул ĕçĕсене çирĕплетес йĕркепе, пĕр комсомолеца тата тепĕр ватă учитле вĕрентекенсем туса ярать. Комсомолец-учитель ялти актив пулăшнипе наччасах ĕçе кĕрсе каять. Тыр-пул пухас ĕçри прорывсене пĕтерме штурмлă субботниксем тăвать, ăнлантарулла ĕçе пуçарать. Кадкинпа Ундоловсене те юлташла ятлакаласа илмешкĕн тивет ăна. Анчах «Комчванство» чирĕпе тертленекен икĕ сăтăрçă «комсомолецсен» аллине тӳсеймеççĕ. Парти райкомне элек хыççăн элек вĕçет. «Колхозниксене пăтратать, ĕçлеме май памасть...» тата ытти те. Райисполком нумай та шухăшласа тăмасть, комсомолец-учителе тепĕр ĕçе куçарать те хурать. Пурна киле çĕнĕрен килнĕ ват учитель те хăйĕн ĕлĕкхи вырăнне куçать.

Пирĕн «геройсене» каллех ирĕк юлать. Вечертан — туя, туйран — вечера. Лашасем çавах вилеççĕ, тыр-пулсем шав çĕреççĕ.

Пуху. Нумай пусăллă уя куçасси çинчен сӳтсе явать ялйыш. Ыйту хыççăн ыйту ывтăнать. Çĕнĕ ĕç. Егоров агроном тара ӳксе ăнлантарать. Таçтан-муртан хай Кадкин пырса кĕрет. Хресчен Егорова тепĕр ыйту парать...

— Мĕн кăшкăрса ларатăн, анкă-минкĕ! — тесе кĕтмен çĕртен ахăрса ярать Кадкин. — Куçас тăк куçас, мĕн нумай аврашса лармалли пур вара?..

— Ак тамаша, — тесе илеççĕ вăрттăн хăш-пĕр шăл йĕренсем.

Пĕр сасă пек пуху сасăсăр пулать — пĕлеççĕ... Кадкина хирĕç каласа пăх-ха, — çиччас тыттарса ярĕ (ун пеккисем пулкаланă унăн). Агрономăн тертленни те сая каять. Пуху нимĕнле решени те йышăнмасть.

Çамрăк Егоров чарăнмасть. Кадкинран «вăрттăн» тепĕр пуху ирттерет. Пуху каллех хĕрсех каять. Хай хресчен пĕркунхи ыйтуне каллех çавăрттарса хурать. Кăмăллă ответ туянать. «Пуху многополье çине куçма пĕр сасăпа йышăнать» тесе çырса хурать савăннă ял канаш секретарĕ.

— Сан пек пулсанччĕ пурте, Егоров юлташ. Хăш чухне ятласа та илен, çавăнтах кăмăла та уçса яран, — тесе ăсатаççĕ хресченсем Кириле агронома.

Финплан прорывра. Партячейка секретарĕ ĕçкĕре. Ял канаш ĕçе пушатса пăрахнă. Район ыйтать, район 2—3 кун срок парать. Кадкин тин аса илет. Вара вăл пĕр исполнитель илет те чукмар йышши патак тытса «ĕçе штурмлама»

тухса каять. Камран сăмавар, камран тӳшек сĕтĕрет. Пĕр квартал хушшинче тирпейлĕн те йĕркеллĕн пымалли ĕç 2—3 кун хушшинче асар-писер тăман кăларса тустарать. Савăнать Кадкин.

— Хамсăр пуçне нимĕн те пулмасть çав! — тесе кăкăрне шаккать.

Анчах кулак — класс тăшманĕ те: «Маттур, Кадкин, пултаран, ильăм! — тесе кăкăрне савăнса шаккаса тăнине Кадкин курмасть.

Колхозăн ревизи тапранать. Ундолов ыйхăсăра каять. Кадкин та хăйĕн тусĕ патне çӳреме пăрахать. Халĕ Кадкин пĕркунхи пек каçсерен тухса çӳремест ĕнтĕ. «Тем курăн, хăруш, пĕр-пĕр кулак çапса пăрахĕ», — тет Кадкин хăйĕн тусне тĕл пулсан-тусан.

Ундоловăн виçĕ пин çурă укçа тухмасть. Колхоз пурлăхĕ миçе пинлĕх арканни çинчен каламастпăр та. Ундолов ытлашши шухăшласа тăмасть — тухать те тарать. Кадкин та ятлаçан пек тăвать: «Пĕтерчĕ, шуйттан!» — тесе илет Ундолов çинчен.

Çаксене районра пĕлнĕ. Ундолов тухса тарнă та çухалнă. Район лăпланнă. Анчах «ăрăва» тепĕр сăтăрçă юлнă иккенне район тивĕçлĕн тавçăрса илеймен курăнать.

Кăçал. Колхоз çамрăкĕсен икĕ ĕне. Иккĕшĕ те кавсăлса пурăннипе çава тухас умĕн кайса ӳкнĕ. Пĕр ĕни ĕнтĕ виççĕмĕш эрне выртать, эрне каялла вăл пăруласа пăрахнă, асапланнă май ĕнен пĕтĕм ăш-чикки сиксе тухнă. Ĕне асаплăн ĕнерлет. Кадкин кашни кун çав ĕне патĕнчен иртеирте каять. Ун куçĕ курмасть. Ун пуçĕ урăх шухăшсемпе пăнтăхса тăрать. Ĕне вилет. Пĕтĕм ял ШКМ ĕни çинчен каласать. Кадкинăн пуçĕнче те ĕне. Анчах мĕнле ĕне?

Какай хатĕрлес ĕç хĕрсе пырать. Ялли Ваççили çирĕп задани туянать.

— Ваççили, ĕнӳне ман пата кĕртсе пар.

— Памалла пулсан — хамах района леçсе парап.

— Çук, ман пата кӳмелле...

Кадкин пуянăн ĕнине тытать те ашшĕсем патне Каçала леçсе парать. Ĕне вырăнне ĕне. Ашшĕн кайса ӳкекен ĕнине Патăрьелне леçсе парать.

Ваççилин тата пĕр мăшăр лайăх сăран атă пулнă, вăл Кадкина питĕ килĕшнĕ. Тытать те çавăрса илет.

— Саккунсăртарах пулмĕ-и ку? — тесе ыйтать председатель Молочников.

— Мĕн каласатăн эс! Нивушлĕ эпĕ сирĕн ялăрта пĕр атăлăх та ĕçлемен?!

Шкул фермине пӳртлĕсен лаши кĕрсе кайнă-мĕн. Кадкин

хăлхине ăшшăн кĕрет ку хыпар. Тытать те кĕрет. Çакăн пек «паттăрла ĕçшĕн» хăй валли пӳртлĕсенчен икĕ пăт çурă тĕш çăнăхĕ сăптăрса илет.

Кĕркуннене хирĕç Кадкин «самозаготовкăна» тытăнать. Шкул пахчинчен хăяр-çарăк, помидор йăтать, ачасем çăварĕсене карса çеç тăраççĕ.

Парти ячейкипе комсомол ячейки ӳсменни, тĕрекленменни çинчен каласси те çук, мĕншĕн тесен Кадкин пек этемсенчен кун евĕр ĕçсене нихçан та кĕтмелли çук. Колхоз кăçал çуркунне çуррине яхăн саланса кайни çинчен те ытлашши чарăнса тăмалли çук. Мĕншĕн тесен Кадкин пек «руководительсем» колхозăн аслă çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме килмен вĕсем, вĕсем хăйсен намăссăр ĕçĕсен кăкăр сĕчĕпе кулака ĕмĕртеççĕ, вĕсем пирĕншĕн ют çынсем!

Анчах çак ют çын, юлташсем, партире те, учительте те тăрать-ха. Контроль комиссийĕ çак ĕçе тĕплĕн пăхса тухса Кадкина тивĕçлĕ ответ тыттарĕ тесе шансах тăратпăр. Коммунистăн, просвещенецăн ятне çĕртекен — коммунист та, посвещенец та пулма пултараймасть! Пĕтĕм шăрша-марша хамăр хушăран шăлса тасатар!

1932

ÇĔРШЫВ ЮРЛАТЬ

(Экспедицире курса-илтнисем)

Савăр маттура,
Савăр маттура —
Колхоз маттурне.

Илемлĕ чăваш çĕршывĕ, илемлĕ унăн юррисем!

Трахумлă хăйчикки çутипе йĕрĕхлĕ ирсĕр йĕнĕре ĕмĕр ирттерекен çурма тискер чăваш çинчен мар,

вĕтĕннĕ, кавсăлнă, кĕштек пек çĕрĕ çинче айван утне кӳлнĕ асаплă суха хыççăн халтан кайса йăраланан чăваш çинчен мар,

бурлак йăлмакне тăхăнса, Атăл хурахĕсем пухакан мул киммисене юн хăсса сĕтĕрекен хĕн-хур айĕнчи чăваш ывăлхĕрĕсем çинчен мар, —

пирĕн çĕршывăн юрри паян урăххи çинчен, пирĕн çĕршывăн ĕнтĕ урăхла юрă пур.

Паян —

пĕтĕм республика кăкăрĕ тулли сывласа ларакан паттăр савăтсем çинчен,

кăмăл тулли тулă пуссисем çинчен,

«кукăр хурт — çырларан» сехри хăпнă юмахри чăваш

вырăнне чи-чи ăстайлă машинăсен çўллĕ культурине алла илекен маттурсем çинчен,

çемйипех кĕнеке вулакан республика çинчен,

садсен ачаш сулхăнĕпе çатма пек яка çулсем тăрăх тĕк татнă пек ыткăнакан çил-çунатлă парне машинисем çинчен,

элес-мелес çуталса ларакан колхоз керменĕсем, илемлĕ ўсекен колхоз хулисем çинчен,

чĕкеç пек чĕвĕлтетсе колхоз хирĕнче ĕçлекен хĕр упраçсем, паттăр та хăюллă ударник-йĕкĕтсем çинчен,

пархатарлă ачи-пăчипе мухтанакан телейлĕ ватăсем çинчен,

мухтавлă туй пуçĕ пек илемлĕ парне элемĕсем çакса янă Шупашкар çинчен —

сăвă хываççĕ паян, юрă юрлаççĕ. Ку юрăсен ятлă, тава тивĕçлĕ авторĕ çук. Ку юрăсен авторĕ те, юрлаканĕ те — хамăр, — хăватлă ĕçсен сулăмĕпе улăп пек карăннă чăваш ĕç çынни, социализм тăвакан, Ленин ялавĕ айĕнче телейлĕ, культурăллă, çутă пурнăç хывакан чăваш ĕç халăхĕ.

Ку юрăсен авторĕ — каплам-капламăн çĕкленсе килекен, хăватлăн тапса тăракан кăмăл иккен. Ку кăмăл — иксĕлми вăй-хăват, пин-пин чĕресен хăватлă çĕклемĕ. Çак кăмăлăн юрри — пирĕн çĕршывра, куçпа виçсе илейми колхоз хирĕсенче, савăнăçпа тулнă ик куç тулли колхоз кĕрекинче.

Кам —

Колхозăн ятне çĕклекен? —
Пирĕнпе кар тăрса ĕçлекен...
Тытăр, тытăр пыллă куркăра,
Пуçлăр, пуçлăр савнă юррăра.

Илемлĕ-мĕн чăвашăн çĕршывĕ. Илемлĕ унăн юрри-сем...

Эпир ăслăлăхпа культура экспедицийĕн виççĕмĕш маршручĕпе республикăн кăнтăр енчи районĕсене çаврăнтăмăр. Ултă районта çичĕ яла çитрĕмĕр. Халăх поэзийĕ тесен каçса каякан пирĕн юлташсен «кушилисем» юрă-сăвăсемпе тулса Шупашкара сулмаклăн таврăнчĕç.

Акă умра пĕр купа «Халăх юрри-сăвви, сăмахлăхĕ». Сиккасси, Патреккел, Сăрьел, Палтиел, Сăкăт, Çĕрпўел, Туçа юрри-сăввисем, вăйăи-куллисем, юмах-халапĕсем, çăмăл та çивĕч вĕлтĕркке сăмахĕсем. «Халăх сăмахлăхĕн» çыххине салтасси уйрăм тĕпчевçĕсен ĕçĕ, вĕсем çак халăх поэзийĕн мулне тĕплĕн хак хуччăр, паянхи хакпа тишкерччĕр, шайлаштарччăр. Анчах ку ĕç, пĕр енчен, пирĕн те, писательсен те. Ĕç халăх таланчĕ мĕн çинчен юрлать, мĕнле юрлать,

тата мĕнле сăвă-кĕвĕсем ăмсанать? Хамăра хамăр çакăн пек ыйту парса эпир илсе килнĕ сăвăсен çыххине салатса пăхар эппин.

Ĕлĕкхи юрă кĕнекисенче эпир «ĕçкĕ-çикĕ юррисене, туй-çуй такмакĕсене, хĕр йĕррисене» вулаттăмăрччĕ.

Пурнăçра, пурнăçăн аслă кĕнеки çинче йăлтах урăхла юрă-сăвăсем пулнă. Унта çĕрме пуянăн хăйне юрă, чухăнăн «кĕлмĕçĕн» хăйне пулнă. Пирĕн ĕлĕкхи «кĕнекеçĕсем» вичкĕнлĕхне пичет урлă тата та хăвăрт парса, икĕ вăй хушшинче аталанса пыракан кĕрешĕве чĕрре кĕртесшĕн пулман курăнать. Çавăнпа та эпир пуянсен юрри вырăнне «ĕçкĕ-çикĕ» юррисем, чухăнсен юррисем вырăнне никам илтмен, пĕлмен такшин «Карсун Кавăрлисен», «Тăлăх Пăрттасен» юррисене вулаттăмăр...

...Пуянăн кăкăр тулли кĕмĕл-талир çакнă «хĕвел питлĕ» мухтанчăк хĕрĕ çимĕксенче пĕтĕм вăйăа янăратса:

Эй, илем, кам илем?
Çакă ялта эп илем!

тесе сăвăсем каланă.

Пуян ачи такмак каласа:

Апарук та чиперук,
Чипертерех ташларук.
И чипер те ташламасан,
Атте ятне çĕклес çук!

тесе тилĕрсе кайса сикнĕ.

«Ашшĕ» ĕçке çитсе курка тытнă-тытманах:

Урхамах пек йăлттам утăма
Ĕнтĕ ăçта кăна тăратам?
Шурă крыльца умне тăратмасан
Карта алăк умне тăратас çук.
Çакă киле кĕрсен ăçта ларам?
Кĕрекене кĕрсе лармасан —
Алăк патне кайса ларас çук, —

тесе юрласа янă. Вара тулли кĕрекене саркаланса кĕрсе ланнă та:

Урхамахсем утă ай çиеççĕ,
Качакисем пăхса тăччăрах.
Ырă çынсем, пуянсем!
Ĕçеççĕ-çиеççĕ —
Кĕлмĕçĕсем пăхса тăччăрах.

Çак этемлĕхĕн мĕнпур тивĕçлĕхĕ çине лачлаттарса суракан иртĕнсе кайнă юн ĕçенĕн ирсĕр сассине хирĕç алăк

патĕнчен тепĕр юрă — хăюсăр юрă — «кĕлмĕçсен» сасси илтĕннĕ:

Апла калаçмасан капла çук,
Пĕр турă çырнинчен иртме çук.
Тăваткăл та сĕтел хырă хăма
Саваласа тунă ăстисем.
Эпир мĕн курасса, илтессе
Лараяйса çырнă пĕр турă.

Ку «айăпсăр юрă» кĕрекери пуянăн кăмăлне те кӳрентермен. Ку юрăсене чăваш пупĕсем «Чăвашсен ĕçкĕ-çикĕ юррисем» тесе кĕнекере çаптарнă.

Анчах пурнăçĕ çав «мирлĕ» кĕреке юррисем пек лăпкăн шуман. Пĕтĕм çĕршывĕпе çĕр вăрçисем хирĕле-хирĕле иртнĕ.

Пуянăн мăшкăлĕ ахалех çырлахăнман.

Пуян хĕрĕн хытланчăкĕсем чухăн хĕр кăмăлне лăсканă, пуян ачин йĕс таканлă атти çĕре мар, чухăн çын ачин кăмăлне таптанă, «алăк патĕнчи» чухăн пыл-сим мар, наркăмăш пек сăмахсем çăтнă. Ахаль те тулса çитнĕ ăшчик тата та тăкăсланса килнĕ, ахаль те хĕресленсе кайнă пит-куç татах çупкă çине çупкă туяннă. Ку мăшкăл каплипех иртмен. Пур сăлтав та пĕр çĕре пухăннă. Пĕр вĕчĕ çине тепри тиеннĕ. Çĕрсене «çĕнĕлле» тунă чух сахал мар пуян кĕлечĕ-авăнĕсене вут хыпа-хыпа кайнă, пуян ачисем çинче улахсенче кисмен муклашкисем çиçсе тăнă, мухтанчăк «пĕр илемсен» çӳç тунисем сахал мар тăпăла-тăпăла тухнă.

Ятсăр поэтсем çуралнă. Вĕсем чăваш чухăнĕсен телейсĕр пурнăçĕсем çинчен чăн сăмах каланă. Вĕсен юрри, вĕсен сăмахĕ — капитализм тĕнчинче анчах ĕрчеме пултарнă çĕлен-калтасен ирсĕр ытамĕнче ахлатакан чăваш ĕç халăхĕн сасси пулнă.

Удельнийĕн, удельнийĕн кантурне
Хĕрлĕ сăрпа, хĕрлĕ сăрпа сăрланă.
Хĕрлĕ сăрпа, хĕрлĕ сăрпа мар иккен —
Хура халăх, хура халăх юнĕпе.

Ĕнтĕ çил çаврăнать, çаврăнать,
Çĕмĕрт çеçки хăвана явăнать.
Шухăшламан чухне шухăшăм çук, —
Шухăшласан çамрăк пуç çаврăнать —
Тĕнче мăшкăль пуçа çавăрать.

Çапла, пурнăç çĕнĕ юрăсем çуратать. Чăваш ĕç халăхĕ хăйĕн пурнăçри вырăнне тĕмшĕртме пуçлать, хăйĕн

тăшманне паллама тытăнать. Ёмёртен амаланса пынă класс вёччи нихăçан хуралман кёнеке çине сăн илсе юлать, — ку кёнеке — чăвашсен халăх поэзийё.

* * *

Октябрь революцийё чăваш ёç халăхён пӳлённё сывлăшне уçса пачё. Шанчăксăр чиртен сывалнă этем пек, чăваш ёç çынни, ёмёр ырă кун курманскер, чи тутлă ёмётсемпе тёнче çине куç уçрё.

Октябрь парни — Совет, чăваш ёç халăхёшён те çăлăнăç çулё çинчи кёрешӳ ялавё пек çёкленсе чёре çуменчи чи çывăх сăмах пулса тăчё. Мёнпур Раççей ёç халăхён тăшманё — капитализм тёнчин каяшёсем, кулак, вăрçă, выçлăх чăваш ёç халăхёшён те, халиччен пулман пек нихăçан килёштерми тăшманăн тухса тăчёç. Чăваш ёç халăхё, парти тата Раççей пролетариачё ертсе пынипе, мёнпур халпа авăрланса, тăшмансене хирёç татăклă кёрешёве тухрё. Чăваш пупёсен, эсерёсен «хура халăхё» чёп-чёр юна ӳксе кёрешекен икё вăй пулса тăчё. Чăваш ёç çынни сасси те:

Турă та, паттăр та, патша та —
Никам пире çăлаяс çук.
Çăлăнас пулсассăн çăлăнăпăр
Пёр хамăр алăпа анчах! —

тесе, пролетари революцийён хаяр хорёпе пёрлешсе мёнпур кăкăрпа юрласа ячё.

Кулак, сехри хăпнă тăшман, «тăван» пек те пулса пăхрё, Совет влаçне «юратма» вёренчё, чухăнпа вăтама хăйпелен пёр кăмăлпа пурăнма чёнчё.

Чиркӳсенче япшар чёлхеллё лозунгсем çырăнма пуçларёç.

«Акă мёнле ырă, мёнле илемлё: çынсем пёрле пурăнни пит ырă, пит илемлё!» — Аслă Арапуç чиркӳне çырса çапнă лозунг.

— Пулăшрё-и? — Пулăшмарё!

— Тăвансем, — терё пуп елей çăвё пек сасăпа.

Анчах ăна хирёç: «Сирён пек брат — Эпир кётӳ кётнине рад», — тесе ответ пачёç.

Колхоз юхăмё тапранса кайрё. Чухăнсем, Совет влаçён ялти тёрекё, тата вёсемпе пёрле вăтам хресченсем çăлăнăç çулне колхозра курчёç.

— Вăйлă индустри — тёреклё колхоз — пирён çăлăнăç, — терё çёршыв.

— Талккăшĕпех колхоз тунипе кулака класĕпех кăкламалла, — терĕ çĕршыв.

Кулак хăйĕн эсрелĕ çывхарса килнине кура чи чее меслетсене суйласа илсе çапăçма пикенчĕ. Āçта тĕттĕм — çавăнта уттарчĕ кулак, āçта çемçе — çавăнта сăвăс пек тирĕнчĕ кулак, āçта суранлă — çавăнта çапа пуçларĕ кулак.

Хресченĕн икĕ питлĕ чунĕ тăшмана лайăх хŭтлĕх, çав хŭтлĕхпе витĕнсе вăл сĕлеке юхтарсах кĕрешет.

Кулак «шăп вăхăтĕнче» сиктернĕ хухатьăн, «кирлĕ чух» тĕртсе хунă юмах-сăмахăн тутине пит лайăх чухлать. Кулак хăй тавра чĕлхе āстисене: пуп, юмăç, сектантсене мобилизацилет.

— Индустри, индустри... Машина, машина тетпĕр. Çакăн çинчен пĕр пĕчĕкçеççĕ юмах пур, — тесе пуçлать хăйĕн сăмахне япшар чĕлхеллĕ кулак агенчĕ.

Ĕлĕк исрайлă халăхĕн Чарсламан (Царь Соломон) ятлă патши пулнă тет. Питĕ āслă пулнă имĕш çав патша.

Исрайлă патшалăхĕнче пĕр чаплă маçтăр пурăннă. Вăл патша валли, кăмăлне каям тесе, парнелĕх никам нихăçан ларса курман чаплă кŭме тунă, — чи хаклă чулсемпе илемлетнĕ, чи таса ылтăнпа тыттарнă. Çак кŭмен хакне никам та шайлайман. Патша вара каланă: илсе çŭрĕр āна мĕнпур Исрайлă çĕршывĕ тăрăх, тен, кам та пулсан ун чăн хакне калакан пулĕ тенĕ.

Вара çав кŭмене пĕтĕм патшалăх тăрăх кăтартса çŭренĕ, анчах унăн хакне никам та пĕлмен.

Пĕрре тăр çеçен хирте кŭмене илсе çŭрекенсем пĕр кĕтŭçе тĕл пулнă. Кĕтŭç пĕр вăхăтра виçĕ ĕç туса ларнă: тула тухнă, пыйти-шăркине вĕлернĕ, çавăнтах тата çăкăрне те çинĕ.

— Мĕн тăватăн эс, айван? — тенĕ иртен-çŭренсем.

— Киввине тăкап, çĕннине пухап, тăшмансене пĕтереп, — тенĕ кĕтŭçĕ.

Иртен-çŭренсем пĕр-пĕрин çине пăхса илнĕ те, ку шăп хăй пире кирлĕ çын пулмарĕ-ши тесе шухăшланă.

Вара вĕсем:

— Кала-ха, ырă çыннăмăр, çакă кŭме мĕн чул тăрать пуль? — тенĕ.

Кĕтŭç кŭме çинелле куçне хăпартнă та çапла каланă:

— Чăн калатăп сире, акă çакă (çисе ярайман татăкне кăтартса) пулмасан, акă çакна та (хăй айне тĕллесе) тăраймасть вăл — тенĕ.

Çав кĕтŭçĕ Чарсламан хăй пулнă.

— Халĕ сисрĕр пулĕ ĕнтĕ, — акă āçта вăл «чăн хак». Çăкăру пулмасан — сан машина йыттăн кайри урине те

тăмасть вăл. А çăкăрĕ ăçта каяссине хăвăр та чухлатăр ĕнтĕ...

Ку кулакăн калавçи. Унăн тата такмак ăстисем те сахал мар:

Шурă чăлха, çĕн çăпата —
Ан кĕр шыва — путатăн.
Ан кай, тăван, колхоз хыççăн —
Çири кĕрĕкне сутатăн.

Ку ик-виçĕ çул каялла пулнă. Машина Совет Союзне нимле хĕç витми çĕршыв туса хучĕ. Машина Совет Союзне этемлĕх халиччен курман мул пачĕ, рабочипе колхозника савăнăçлă, çутă, тутă пурнăç кӳчĕ.

Çак хăватлă факта хирĕç камăн ăçта сĕкĕнес-ха? Апла пулсан кĕрешӳ меслечĕсене улăштармалла иккен. Кулак улăштарать, çакна май кулакăн юмахĕ те улшăнать.

— Ак эс колхоз, колхоз тен. Тутă, тутă тен. Аван конешнă. Çакăн çинчен эп пĕчĕк çеç кăна юмах илтнĕччĕ-ха.

«Пĕрре çапла пĕр Улайка хире уçăлма тухнă. Ăна ăнсăртран кашкăр тĕл пулнă.

— Çиетĕп вĕт, Улай, — тесе шаккать тет шăлне тукмак хӳре.

— Çиессе çийĕн те, Тукмак, анчах усси нумаях пулас çук-çке, ыран каллех выçă вĕт, — тесе хурать тет Улай. — Луччĕ сана эпĕ урăхла усă тăвам...

— Мĕнле усă-ши йытăран? — тесе ыйтать тет хайхи кашкăр.

— Акă мĕнле. Ман хуçам пит пуян, унăн мулĕ пит нумай, тавай çав мула иксĕмĕр сыхлăпăр. Хуçа сана йышăнĕ.

Кашкăр килĕшет. Вара йытăпа кашкăр пуян килĕ еннĕлле чуптарчĕç тет.

Хапха айĕнчен кĕнĕ чух хай пирĕн кашкăр тапах чарăнать...

— Мĕн ку сан?.. Мăйу çинче...

— Э-э, касмăк йĕрри.

— Апла хуçу сана сăнчăрта тытать-и?

— Сăнчăрта.

— Апла пулсан сывă пул, йытă тус! Хам ирĕкĕм — хамах. Хырăм выçă пултăр та — пуçăм ирĕкре юлтăр».

— Ну, чăн мар-и ĕнтĕ, юлташсем?

Çапла пĕтерет хăйĕн сăмахне кулак хăйматлăхĕ.

Çакăн пек ĕçлеççĕ кулакăн чĕлхе фронтне тăратнă салтакĕсем.

* * *

Хула çулне пĕлнипе
Эпĕ кайрăм хулана.
Ленин çулне ăнланнипе
Эпĕ кĕтĕм колхоза.

Хура вăрман урлă эп çул хыврăм
Самар сарă шывне курасшăн.
Кулака пăхмасăр колхоз пултăм, —
Пуриншĕн те телей тăвасшăн.

Кулак поэзине хирĕç колхоз поэзийĕ — социализм тума хăюллăн çĕкленнĕ мĕльюнсен сасси вутлă-кăварлă хĕç пек йăтăнать. Ку сасă чăнлăх çулĕ çинчен тӳррĕн каласа парать, ку сасă тăшман «юрри» пек улах кĕтессинче юптарса, çĕлен сасси пек шăхăрмасть, ку сасă куç кĕретĕн хирет, тӳррĕн перет, мĕншĕн тесен çак сасă мĕльюнсен кăкăрĕнчен тăвăл пек тулхăрса тухакан хăват.

Хутлам-хутлам хут купăс —
Пĕр хутламĕ ытлашши.
Çĕнĕ пурнăç тумашкăн
Пуппа пуян ытлашши.

Чăвашсен халăх поэзийĕшĕн характерлă çепĕç, йăваш чĕлхе, кăмăла кăтăклантарса илĕртекен кĕреке кĕввисем, сăрнайпа кĕслене килĕшекен сасăсем хальхи кунсемшĕн витĕмсĕр ĕнтĕ. Класс вĕччи аça-çиçĕм пек кĕрлесе тăрать. Класс кĕрешĕвĕ хресчен поэзине тупă пек тулхăрса тăракан сасăпа авăрлать. Çак кĕрешĕве кĕсле кĕввипе тухма çук, кунта пурне те ура çине тăратакан параппан, хаяр çапăçăва çиллессĕн чĕнекен вут çăварлă труба кирлĕ.

Çавăн пек поэзи чăвашсен халăх творчествинче те аталанать.

Шыв хĕрринчи шăршлă курăка —
Сапакине тат та — шывалла.
Колхозсен тăшманĕ — кулака
Пĕрех хыçран тап та — тулалла!

Колхоз совхоза çитрĕ куртăр-и?
Пурте пĕр шухăшлă пултăр-и?
Эй, машина!
Пирĕнпеле пĕрле пултăр-и?

Колхозпала трактор тĕл пулсан
Иртет каять пусмăр ĕмĕрĕ.
Эй, машина!
Иртет кулаксенĕн ĕмĕрĕ.

Социализм ĕçĕнчи йывăрлăхсене мĕнпур хала парса, çĕнтерӳллĕн сирсе пыракан колхознике хăйĕнчен кая юлнă юлташĕсен — единоличникĕсен ыйтăвĕ яланах пăшăрхантарса тăрать. Колхозăн малтанхи çулĕсем — чи йывăр, чи кансĕр вăхăт. Пурте пĕр шухăшлă пулса, пĕр ĕмĕтшĕн вăй хурса кĕрешес чух чылайăшĕ халĕ те иккĕленсе тăраççĕха, кулак лартса пĕтернĕ серепере чăлханаççĕ; вак хуçалăх туртăмĕсен йăт пыршийĕпе, сырланĕпе çыхланса ӳкнĕскерсем, чăн-чăн пулăшу кăмăлĕпе сĕнекен колхозникăн çăлăнăçлă аллине тытмаççĕ. Колхозник çакна курать, вăл вак хуçалăх йĕркине мĕнпур чăрсăрлăхпа шăла çыртса питлет, кӳрĕшне-тантăшне, хурăнташне-пĕлĕшне колхоза чĕнет:

Пахчи-пахчи паранки —
Вун ик сысна юлашки.
Вак хуçалăх тытасси
Мул хуçисен юлашки.

Акă Патрекел (Кĕçĕн Елчĕк рай[онĕ]) колхозникĕ Блинов Хĕветĕр, 60 çула çывхарнă старик, юрă ăсти, çавăн пек единоличниксем çинчен çапла юрлать:

Пĕчĕкçеççĕ таракан
Шав пӳрт тăрăх чупкалать —
Кив çурăкне шыраса.
Ан чупкала, таракан,
Кив çурăку питĕрĕннĕ.
Пĕччен хуçалăх шухăшлать,
Пĕччен пуçпа шухăшлать —
Кив пурнăçпа пурнасшăн.
Ан шухăшла кив йĕркешĕн, —
Унăн çулĕ питĕрĕннĕ.

Апла пулмастăр эсир,
Капла пулмастăр.
Шур супăньпе çăвăнсан
Шурă пулатăр.
Коллективпа пурăнсан
Пурлă пулатăр.

Акă тата Сăкăт (Аслă Патăрьел районĕ) старикĕ Якрав Çтаппанĕ çакăн пек юрлать:

Ушкăнĕ, ушкăнĕ шур кăвакал —
Хăмăш тĕпне çыртса тăраççĕ.
Колхоза кĕреймен çыннисем
Çанни вĕçне çыртса тăраççĕ, —
Тата мĕн шухăшпа тăраççĕ...

Тен, хытăрах та калать пуль Якрав старик. Анчах ăна уншăн ятламалли çук. Вăл ахаль мар «çилленет».

Якрав Çтаппанĕ пек хастар колхозниксем тăрăшнипе «Хĕрлĕ ялав» колхоз тулă кулачи çиет, урхамах пек утсем тытать, кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе ăратлă выльăх ĕрчетет, ăстайлă машинăсемпе ĕçлет, хула пек çуртсем лартать.

Якравăн — ултă кĕтеслĕ янăраса тăракан çĕнĕ çурт, радио кĕрлесе ларать, йĕри-тавра портретсем, алăк пек аслă чӳречесем çинче чăлт шурă чĕнтĕр чемеклĕ карăсем, тĕпелте тĕрĕллĕ юр пек шурă ал шăллисем, казак пек ывăлĕсем колхозра вăй парса ĕçлеççĕ, майра пек кинĕсем шăкăл-шăкăл калаçса пĕтĕм кил-йыш илемне кӳрсе, акăш пек юхса çӳреççĕ. Çак тулли патвар, савăнăçлă ăру — Якрав колхозник ăрăвĕ ӳсет. Нумайччен тĕнче тăрăх çапкаланса çӳренĕ кĕлмĕç Çтаппан паян — пуян колхозник Степан Евграфович, ватăлмалăх кунне ырлăха курмаллипе курать, малашне тата та авана ĕмĕтленет.

Ну, мĕншĕн-ха тата ыттисен те, калăпăр, çав халиччен «чăхăмласа» тăракан единоличниксен, Якрав Çтаппанĕ пек пулас мар? Е ударник Çтаппанĕсем колхозра мĕн пурне туса çитерсен анчах — ырлăх алăкне ярах уçса ярас та янтă çĕре кĕпĕрленсе кĕрсе каяс-и? Çук, давай йывăрлăхне те пĕрле тӳсер, вара ырлăхне те пĕрле курăпăр.

Шыв хĕрринче пилеш пиçет-çке,
Çупкăм, çупкăм шыва ӳкет-çке.
Тăвансем, тантăшсем, колхозсем,
Колхозăмăр асрах тăрать-çке.

Юратать колхозник хăйĕн колхозне. Хире тухать-и вăл, йĕтем çине каять-и е «кĕр мăнтăрĕпе» хăнара пулать-и — колхоз ун чĕлхи çинчен кайма пĕлмест. Тĕрлĕ çитменлĕхсемшĕн вăрçать ăна вăл, ятлать, çав хушăрах «пирĕн колхоз» тесе мухтанса та илет. Малтанласа чĕлхе-çăварта йывăррăн çавăрăннă, хăлхана тӳрккессĕн илтĕннĕ колхоз (кулкус, конхус, канвуз тата ытти те!) — халĕ ĕнтĕ колхозниксен чи илемлĕ, чи тутлă, чĕрене пыракан юратнă сăмах пулса тăчĕ.

Колхозăн телейлĕ кил-йышĕнчи хаваслăх çинчен юрлать колхозник:

Эртелпеле тăрса ут çулсассăн
Кӳрĕпĕр-ши çаран илемне?
Бригадăпа тăрса хире тухсассăн
Кӳрĕпĕр-ши колхоз илемне?

Ăмăрту çинчен юрă хывать колхозник:

Ыр ут юртать, юртать, пуçне ухать, —
Инçе çула çывăх тăвасшăн.
Колхозпала колхоз ăмăртатпăр, —
Ялан малтан мала каясшăн.

Аякранах кăчăк туртса ларакан хăйсен çĕнĕ клубне тарават колхозник:

Пирĕн клубăн çурчĕсем —
Тăп-туллиех çыннисем.

Пархатарлă колхоз тума паттăр çынсем кирлĕ тет колхозник:

Çерем çĕрне ватмашкăн
Тимĕр сӳре кирлĕ-мĕн.
Паттăр колхоз тумашкăн
Паттăр çынсем кирлĕ-мĕн.

Колхозник мĕнпур кăмăлтан юрлать, мĕншĕн тесен вăл колхозра савăнăç туяннă:

Куккук ăçта авăтать —
Вăрман хĕрри катара.
Чухăнпа вăтам ăçта савăнать —
Коллективлă пурнăçра.

Ленин ятне пĕрре те асран ямасть колхозник:

Вăрман урлă каçрăмăр
Вĕрене çулчи çутипе;
Хир-хир урлă килтĕмĕр
Сарă тулă пуссипе,
Хула витĕр тухрăмăр
Электрицă çутипе,
Ял-ял витĕр килтĕмĕр
Колхоз краççын çутипе.
Çак колхоза кĕтĕмĕр
Ленин юлташ хушнипе.

Мĕн çинчен кăна юрламасть-ши колхозник?

Иртен те ир акни, нумай пусăллă уя куçни, çум курăкне пĕтерни, ĕнĕл пулни, Хĕрлĕ Çар çинчен, совет влаçĕ кисренми тĕрек илни çинчен — пурин çинчен те колхозникăн юрăллă сăмахĕ пур.

Колхоз вечерне-и е хăй пек колхозниксем «ыр сунса» чĕннĕ çĕре каять-и Тинюковсен амăшĕ (çитмĕл çул урлă каçнă Сăкăт карчăкĕ) — юрласа пĕтреймест вара юррине. Питĕ аван çаврăнать-ха ватă инкен кăкăрĕ:

Пирĕн вăрманта вăрăм чăрăш,
Куккук ларса авăтать,
Çавăнпа чăрăш авăнать, —
Колхозсенĕн лайăххипе
Ай-хай чунăм савăнать.

Пирĕн умра юман пур, —
Атьăр юман касмашкăн.
Юман касар, тупан тăвар —
Сӳремешкĕн пит лайăх.
Колхоз тăвар, пĕрле ĕçлер —
Пурăнмашкăн пит лайăх.

Пирĕн умра çаранлăх,
Çаранлăхра çырлалăх.
Çырла татар, кукăль тăвар —
Колхозсене хăналар.

Ĕçлет, юрлать, савăнать колхозник. Анчах çав вăхăтрах вăл — сыхă тăрассине те манăça хăвармасть, мĕншĕн тесен:

Аслати авăтать, çиçĕм çиçет,
Ворошилов лаши кĕçенет.
Улпучĕсем турта хатĕрлеççĕ
Турă лашисене кӳлмешкĕн.
Кулакĕсем çурта хатĕрлеççĕ
Колчак килсен асăнса çутмашкăн.

Анчах кирек мĕнле пулсан та колхозник ак çакна лайăх шанать:

Аслă шывра пулă ишсе çӳрет —
Нихăçан тухас çук çĕр çине.
Кулаксем те пире кураймаççĕ, —
Нихăçан тухас çук çиеле.

Çĕршыв юрлать. Çĕнĕ пурнăç çĕнĕ юрă-сăвăсем çуратрĕ. Çак юрăсенче паянхи этемĕн сăн-сăпачĕ, ĕмĕчĕ, кăмăлĕ.

АСĂРХАТТАРНИ. Автор ку очерк çырăнса пĕтмен тесе шутлать. Малалла çамрăксен поэзийĕ çинчен хăйне уйрăм чарăнса тăмалла. Уйрăммăнах тата форма ыйтăвĕ çинчен сăмах тытмалла. Формăн нацилĕхĕ, кӳршĕри халăхсен влияннийĕ, форма улшăнса пыни — унăн сăлтавĕ, ĕлĕкхи юрăсене улăштарса юрланин лайăххипе начар енĕ, халăх творчествипе чăваш писателĕсем — çак ыйтусем пурте пичетре вырăн тупмалла. Халăх творчести çинчен писательсен çитес конференцийĕнче уйрăммăнах ыйту лартсан та питĕ вырăнлă пулĕччĕ.

Автор.

Хăш-пĕр сăмахсене ăнлантарса пани.

Йĕнĕ — пурăнмалли шăтăк, сăмахран, упа йĕнни.
Кĕрмен — чаплă çурт, дворец.
Элем — ялав.
Вĕчĕ — çилĕ, месть.
Хахать — халăх çине сиктернĕ сăмах.

1933

КĂÇАЛХИ КАЛĂМ

Кирлĕ мар пире Мункун,
Пасхă, Инэчи!..

(Уйри ст[ена] хаçатĕнчен)

Вăрман хĕррине лăп кăна тăсăлса выртнă айлăма виçĕ ял кӳршĕ-аршăллă вырнаçнă. Çакă виçĕ ялтан иккĕшĕ — Сĕнтĕр, пĕри — Шăхач. Виçĕ ялăн виçĕ чĕлхе, виçĕ ял виçĕ тĕслĕ калаçать, мĕншĕн тесен пĕр Сĕнтĕри — чăваш, тепри — ирçе, Шăхачĕ — вырăс. Чылайччен çак ялсем пĕрпĕрне ăнланман теççĕ, анчах пурăна киле пĕр евĕр пурăнăç, пĕр пек хуйхă-суйхă вĕсене пĕр-пĕринпе паллаштарнă, виçĕ халăхăн пĕр ĕмĕт чăмăртаннă, чĕлхере те пĕр евĕр сăмахсем çуралма пуçланă. Акă ĕмĕр илтмен «колхоз» ятлă сăмах сиксе тухнă. Ку сăмах виçĕ чĕлхере те пĕр пекех илтĕннĕ, пурин шухăшне те пĕр майлах пăтратнă. Ку сăмах пыра киле виçĕ ялшăн та чăнлăх пулса тăнă, юлашкинчен çакă ялсенчен 145 килĕ «Сталинград» ятлă колхоза чăмăртаннă. Анчах пирĕн шухăш кун çинчен каласси мар-ха, пĕр пĕчĕкçеççĕ кăна пример урлă «Сталинград» çыннисем кам иккенне каласа парасчĕ пирĕн.

«Сталинград» çынни — тĕлĕнмелле чăрсăр этем. Унăн чăрсăрлăхĕ чи малтан — ĕçре. Ĕçре «Сталинград» çынни кирек хăçан та кал-кал та çиллес. Вăл пĕр ĕçе тирĕнсе ларсан хăй те асăрхаймасть, ун мĕнпур шухăшĕ-кăмăлĕ, мĕнпур сывлăшĕ ĕçе парăнать, çав ĕçĕн вăйĕ, сулăмĕ пулса тăрать. «Сталинград» этемне, вăл ĕçре пулсан нимĕнле вăй та туртса илеймест, хăйсем калашле, çурăм хыçĕнче аçа çапсан та вăл хăнк та тумасть, мĕншĕн тесессĕн вăхăтра тунă ĕçĕн хакне «Сталинград» паттăрĕ лайăх пĕлет. Анчах та... халиччен пĕр вăй кăна çак харсăр этеме ĕçрен туртса илме пултарнă. Çакă вăй Мункун ятлă пулнă, Сĕнтĕр чăвашĕсем ăна Калăм тенĕ, шăхачсем Пасха ят панă, ирçесем Инэчи тесе чĕннĕ.

Çавă кун Сĕнтĕр-Шăхач çыннин алли лаштăрах кайнă.

Çавă кун урлă выртакана тăрăх илсе хума та юраман. Ĕç алли вара урăх енне сулăннă — малтан черкке тытнă, каярахпа чукмар енне те кармашнă. Хытă ĕçлет Шăхач вырăсĕ. Анчах ĕçес тĕлĕшпе нихăçан та маххă памасть. (Ку сăмах ирçепе чăвашне те тивет.)

Астăваççĕ... Калăм кунĕ. Телей валеçнĕ кун. Çак кун «пуянĕ те, çукки те — пĕрех». Çак кун вăрман патшисем (промышленниксем) хăйсен аскăн ытамĕсене хутланнă тукун авакансемпе, урапа çапакансемпе, пичĕке-шетник тăвакансемпе (Сĕнтĕр-Шăхаль авалтанпах ремеслалă ял) япшаррăн чуптăвашнă. Çак кун чухăнăн та начар пулса килмен-мĕн, вăл «çын пек» пуласшăн юлашки тинкине кăларнă, Мункун ячĕпе юлашки ят çĕрне сутса ĕçнĕ, пĕртен-пĕр выльăхне пусса çинĕ.

Çурхи кунсем ылтăн пек тăнă. Пĕр кун пĕтĕм çулталăкăн телейне татса пама пултарнă. Анчах ĕç çынни ăна-кăна пĕлмен, шăмат кун кăнтăрла сулăнсанах ака лашине тăварнă та — Мункуна кайнă. Пĕр кун иртнĕ, иккĕмĕш те иртнĕ — ака пĕтмен ана çинче суха пуç çав-çавах тăлăххăн шултăр-каса ларнă. Çĕр юлашки пăсĕпе йăсăрланнă, пиçсе çитнĕ çĕр, çамрăк ама пек, мĕнпур кăмăлпа çĕнĕ вăрлăха юншăхланă, ыйтнă, анчах хуçа çĕрĕн çурхи сассине манса кайнă, вăл пĕр тăванĕ патĕнчен теприн патне:

Акăнать-тăкăнать туллăн пучахĕ,
Иртет каять шухăшлă ĕмĕрĕ... —

тесе янратса çÿренĕ.

Хĕвел хĕртнĕçемĕн хĕртнĕ. Ылтăн пек кунсем сая çех кайнă. Çĕрĕн те техĕмлĕ пăвĕ, сĕткенĕ куллен-кун иксĕлсе пынă, пурне те тăрантаракан ама хĕсĕр юлас хăрушлăх умĕнче тăнă. Сĕнтĕр-Шăхач çав-çавах Мункун, Пасха, Инэчи тунă. Виçĕ кун ĕçкĕре иртнĕ, тăваттăмĕш кун — шăп ака аса илнĕ кун — пуç çурăлас пек ыратнă, вара «мухмăр чĕртмелле» пулнă, час-часах çак мухмăр «чĕрĕлес» вырăнне чĕрре кĕрсе кайнă — вара вăл эрнипех тăсăлнă; тен, эрнипех кăна та мар пулĕ, мĕншĕн тесен куç-пуç урăхса çитнĕ — çĕрĕ те урăхса, сĕвĕрĕлсе çитнĕ. Вăрлăх кăмака çине акăннă пек акăннă, çумăр пулсан — пулкаланă, пулмасан — пĕтнĕ.

Турăран тенĕ вара сĕнтĕр-шăхачсем. Анчах çав инкек çулталăка пынă «Мункун мухмăрĕ» иккенне сахаллăн чухланă.

Кăçал. Хирте. Акара. Ыран Аслă Калăм тенĕ чух. Бригадăсем ак «сывлăш çавăрса илме» вăхăтлăха чарăнчĕç...

— Мункун тесе выçă юлмастпăр! — тет парти ячейкин секретарĕ Виноградов юлташ.

— Минле ара?.. Пыр шытык пит киçтет вит... — тет шӳтник ирçе.

— Кӳр пуш аврипе хыçса ярап!.. — тесе хурать сăмах тĕлĕшĕнчен нихçан та татăк тăман пĕр йĕркĕн комсомолец.

Кулаççĕ... ахăлтатаççĕ.

— Вот яккĕмпаш! Мункун та тумалла, çĕрне те акмалла!.. Кая парвик?! (Āçта каяс?!)

— Пĕрер кун «канасах» пулать ĕнтĕ, лашасем те ĕшеннĕ...

«Канасах» сăмах хыçĕнче Мункун тĕрткелешсе тăни такамшăн та паллă. Чылайăшĕн кăмăлĕ «çавăн» енче. Анчах çав вăхăтрах тепĕр хирĕçле кăмăл тапса тăрать, ку кăмăл вăл — пурнăç кăмăлĕ, çуллен-çул ӳссе, аталанса пынă кăмăл, çак кăмăла пула пирĕн ĕç хресченĕ паян кăна пурăнма тăрăшмасть, вăл ыранхишĕн те мĕнпур чĕререн çунса тăрать.

— Ну, тата, Мункун-масару! Авăр тĕпне! Пĕр шухăшласан вăл та çапла çав. Мункун тумасан сан çăварăнтан мĕн тухса ӳкет?.. Пĕрер курка сăра та, пĕр-ик çăмарта та. Тусан?

— Хĕл хута çиес çăкăру!

— Пулма пултарать.

— Ну, çав пĕр куншăнах-и?

— Пĕр кун çĕр куна тăрантать вăл, пепкем!..

— Маншин вçоровно! Тусан-тывас, тумасан — çок!..

Тепĕр кун. Тĕтреллĕ ир. Пуффăр яланхи пекех уççăн янăрать. Пуффăр сасси кашни килех кĕрсе тухать, кашнийĕшĕнех кăмăллăн кăтăкласа ирхи ăшă ыйхăран вăратать. Унтан-кунтан колхозник килет. Пĕри ак машина патĕнче аппаланать, тепри лашине кӳлет. Ĕç кунĕ яланхи пекех шавлăн тапранчĕ.

— Хатĕр-и?

— Хатĕр!

— Хатĕр тăк атьăр!..

Сакăр бригада. Саккăрĕ те ĕçе кӳлĕнчĕç.

— Эх, чорт воçми, Мункун тăвасшăнччĕ, пулмарĕ, — хуйхăрам пек тăвать Кукушкин.

— Ту ара!.. Кам чарать сана? Ирĕксĕр ĕçлеттерме саккун çук вĕт...

— Ну, брат, шалиш! Эс трудодень ту та, эп Мункун ту иккен. Но... йăран!..

Сăмах çыххи паян пушшех те çăмăллăн çаврăнать. Пĕр акă Мункун сăмах çине сăмах кăларать, култарать, ахăрттарать.

— Тĕлĕнмелле япала! ĕмĕр хисеплĕ Инэчи хисепсĕре тухрĕ, — тет пĕр ватăрах ирçе. Унтан кăмăлсăр пек пулса: — Ырлăха-ши ку, хурлăха-ши?.. — тесе хушса хурать те мĕнпур кăкăрпа кулăшлан ахăлтатса илет.

Каç пулса килет. Бригадăсем ĕçрен таврăнаççĕ.

— Ырăлăх пулчĕ пуль, Ваçилий пичче... Паян пирĕн Инэчи пит ăнăçлă пулчĕ, план ытлашшипех тулчĕ, — тесе çаптарнă саспа калаçса пырать комсомолец Матви.

— Та, ыльăм... Мункун юн куна тăрса юлчĕ...

1933

РАДИО-ХАÇАТ ЙĔПРЕÇРЕ

Пусăрăнса кăна ĕçлесе ларнă чух пирĕн радио-хаçат редакцине пĕр вăйпитти этем тăвăл пек тулхăрса кĕчĕ.

— Кунта-и радио?

— Кунта... кунта.

Çӳллĕрех пӳ-силлĕ, пĕр çирĕм пилĕк урлă каçнă тĕреклĕ те пиçĕ çамрăк пирĕн умра — ăнсăртран мăшкăла тăрса юлнă хаяр вăй евĕр — тилĕрсе тăрать. Урмăшса кайнă хурарах куçсем пĕр юлташ çинчен теприн çине çиçĕм пек вĕлтлетсе çӳреç. Типсе куштăркана тута-çăвар пĕтĕм пыр тĕпĕпе темскер ахăрса каласшăн, анчах хатĕрленсе тăнă чăрсăр сăмахсем, кăмăл ытла та чӳхеннĕрен пулас, чĕлхе çине витĕмлĕн килмеççĕ.

— Çак иккен-ха, апла... радио... Эп... Эп «Тымар» колхозран... Хай... председатель.

— Э-э-э... К-йĕв юлташ, эсир-и-ха вăл?

— Так, так... ларсамăр.

Умра кам тăнине пирĕн ачасем чухласа илчĕç. Шевле пек çăмăл кулă пĕтĕм пӳлĕме çутатса ячĕ.

К-йĕв юлташăн пирĕн çине пăртак «вĕчĕ» пур. Ĕнер каç пĕтĕм Йĕпреç районĕ «Тымар» колхоз председателĕ çинчен илемсĕр хыпар итлерĕ...

...Колхоз хĕрсе кайса аван илнĕ. Задани татăклă: çаван чул-çаван чул çапса çаван чул-çаван чул паянах станцăна леçмелле.

Кунĕ çырла пек тăнă. Вăй-хал çĕкленнĕçем çĕкленсе пынă... Юлашки сарăма пĕтерсе тухнă чух вăрман хыçĕнчен пĕр çĕлĕк пек пĕлĕт çĕкленет. Кĕтмен çĕртенех çак «çĕлĕк» пĕтĕм тӳпене хупласа илет. Унччен те пулмасть, пĕтĕм таврана çил-тăвăл лăскама тытăнать.

— Э-э-эй-й!

— Э-э-эй-й!

— Тĕнче пĕтет!

— Тĕнче пĕтет!..
— Часрах! Часрах!
— Тавайăр кĕреçе!
— Кĕрепле тавай!
— Часрах! Часрах!
— Тĕртĕр! Тĕртĕр!
— Акă çакăнта!
— Капан патнерех!..

Йĕтем, хуйханнă выльăх кĕтĕвĕ пек, хĕвешсе тăрать. Пурте хыпса ӳкнĕ — нимĕн тытса, нимĕн тума пĕлес çук. Пĕлĕт тĕк татнă пек кашласа килет, пĕлĕт халь-халь татăлса анас пек.

— Атьăр! Атьăр!
— Тавай! Тавай!
— Çта председатель?!
— Чаршав айĕнче!
— Ыйха тĕшĕрет!
— Тпру!
— Çавăр, çавăр лашана!
— Улăмне çемçет, çемçетерех хур!
— Начальник çемçене савать!

Кӳлсе тăратнă лаша председатель патне вĕçтерчĕ...

Çумăр çитрĕ. Çумăр йăтса антарчĕ. Çумăр чĕреслетсе ярать.

Акă председатель те:
— Мĕн турăр, юлташсем?
— Эпир мар ăна, çӳлтен.
— Председатель, кунтарах кил, атту йĕпенсен...
— Çта сĕтĕренсе çӳреççĕ!..
— Ни бригадир, ни пуçлăх!..
— Вара çумăр килессе обезательнă председатель курмалла-и?
— Пирĕн çта вăхăт... пĕлĕте сыхлама?
— Пуç йăтмасăр ĕçлетпĕр!

Лачăкам йĕтем, шыва ирĕксĕр тытса ывăтнă йăтă пек чылайччен харкашса, çилленсе тăчĕ.

Ĕç тӳрленмерĕ. Юлашкинчен председатель типĕреххине уйăрса илсе станцăна паянах ăсатма каларĕ.

Нӳрпе пылланнă тырра станцăра йышăнман. Тулли лавсем мĕнле кайнă, çаплипех таврăннă...

Çак ĕç çинчен эпир ĕнер каç радиопа пĕлтернĕччĕ.

— Элек вăл, тем тесен те — элек. Вĕчĕхпе тунă. Кăнтăр çутипех чаршав айне кĕме мар, çĕрле канмашкăн та вăхăт çук... хăйăр юхать.

Председатель сăмахĕсем шăл витĕр хирĕнсе тухаççĕ. Вăл хăй те, хĕвелпе-çилпе пиçсе кушса кайнăскер, хăпара-хăпа-

ра тухнă ик алă хуçи, тĕреклĕ те çирĕп çамрăк, тата ун пăртак тытăнчăклăн, йывăр, пыр тĕпĕпе килекен сасси — пирĕн умра ĕнерхи фельетонăн услап геройĕ мар, ĕçчен, тăн-тăн характерлă этем тăнине систерет. Тĕлĕнетпĕр эпир, мĕнле çакăн пек çын çавăн пек пысăк «промах» пама пултарнă.

— РКИ-не пĕлтерĕр, юлташ К-йĕв.

К-йĕв пек хăнасем пирĕн патăрта пĕрре çеç пулман. Çав каçах эпир тата Йĕпреç ялĕнчи финанс «Клахмачĕсем» çинчен пĕр фельетон патăмăр. Тĕлĕнмелле ĕç пулса тăчĕ. «Сенсаци» темелле. Тепĕр ир пĕтĕм Йĕпреç тенĕ пек çавăн çинчен каласать. Редакцине те, студине те çын хыççăн çын килет. Пурте «вĕр çĕнĕ» материалсемпе.

— Юлташ редактăр, Яковлев çинчен эсир тата çакна калайман.

— Тепĕр клахматне манса хăварнă эсир. Ай, ăна та пĕрер çунтарса илесчĕ!..

— Пракахвине панă та, пĕтĕмĕшпех мар! Укçи-мĕнĕ ӳсĕрле шыва чăмнă «финклахмат» Пракахви çинчен пирĕн «çĕнĕ корреспондент» — колхозник ак мĕн хуштарса хурасшăн:

— Эсир пĕлместĕр-ха, сĕре интереснăй çын вăл Пракахви, — кула-кула каласа парать колхозник. — Укçа пухма тухсан, сирĕн радио калашле, нихçан та вăл урă çӳремест. Çтан кăна тупать темелле! А тупасса çăмăл тупать вăл... каналье. Пĕр-пĕр тăн-тăнрах пурăнакан хресчен патне кĕрсе ларать те вара ак çапла сăмах тапратать: «Хм... самана хĕсĕнсех пырать. Саккун çине саккун. Пĕри тепринчен хытăрах... Каллах «тустарасси» çинчен каласаç-ха. Сирĕн касра та пĕр иккĕшне палăртса хурас пек тăраç».

Чее мур, канальйĕ. Питĕ чее пирĕн ял совет президиумĕн членĕ Пракахви! Тупать-тупатех. Нихçан та урă çӳремест. Çавăнпа ун финплан 30 процент анчах тулнă-ха...

Çав каçах хайхи Пракахви пĕтĕм ачи-пăчи, арăмĕ, пĕтĕм ял-йыш, пĕтĕм район умĕнче тепĕр «çупкă» туянчĕ.

Йĕпреçре эпир, Линарпа иксĕмĕр, Чăваш радиокомитетĕнчен ятараласах кайнăскерсем, тăхăр передача турăмăр. Передачăсем пирĕн: финанс, тыр-пул, выльăх-чĕрлĕх, çĕнĕ вĕренӳ çулĕсем тавра пулса пычĕçĕ. Йĕпреç районĕ радио тĕлĕшпе республикăра чи малти районсенчен пĕри. Унти район радиоузелĕ çич çĕр тĕле тĕрлеттерсе тăрать. Сахалтан та пире кашни каç 1500—2000 çын итленĕ. Йĕпреç районсенче кашни ял советĕнче телефон. Передачăсем хыççăн чылай телефон пирĕн ятпа шăнкăртатнă. Акă Кĕлĕмкас-

синчен хыпар вĕçет, акă тата Мăрат «хăçан калаçатăр» тесе интересленет. Пирĕн пата телефон тăрăх та, пуштăпа та, «ахаль çул майĕпе» те хыпар пухăнать.

Чап-чакăр çутăпа тулнă, илемлĕ çитсăпа карăннă тăпăлтăпăл пӳлĕм — радиостуди. Сĕтел çинче хатĕр материал, чĕрĕ, мĕнпур кăмăл тулли сывласа тăракан материал. Кăвар пек чыхвăрлă сводкăсем, витĕр заметкăсем, хĕç евĕр фельетонсем. Сĕтел çинче пĕчĕкçеççĕ кăна ним мар япала, пысăкрах калăп хыç евĕрлĕ тăваткăл микрофон.

Шăп... Линар йăл-ялăн куç хĕссе илет — пуçлатпăр. Пуçланчĕ... Сасă çĕкленнĕçемĕн çĕкленет, кăмăл хăпарнăçем хăпарать. Эпир пĕлетпĕр: çак пĕчĕкçеççĕ кăна микрофон пирĕн сасса çĕр çине илсе çитерет, çĕр çĕрте çĕр тĕслĕ этем пире итлет. Эпир пĕлетпĕр: радио çиçĕмĕ салатан çулăм сăмахсем пĕтĕм район талккăшне ытамласа илнĕ. Акă чаплă ударниксен ячĕсем, ударниксен стройĕ, паттăр салтаксем пек çивĕччĕн пусса, пĕтĕм районĕпе çаврăнать. Мухтавлă музыкçă мухтав кĕввине ытла та халавлăн калать. Акă репродуктор патне канма ларнă ударник ятне илтет, хăйĕн ятне, хăйĕн тивĕçлĕхне çан-çурăм кăмăллăн сăрлатса кайнинчен тавçăрса илет.

Акă клахматсем — кахалсен команди. Ĕмĕр çывăрса тăранайман айвансем евĕрлĕ вĕсем, анасласа, лăкăштатса пыраççĕ. Ăçта каяççĕ вĕсем? Пĕтĕм район вĕсенчен кулать, пĕтĕм район вĕсен ячĕсене хура хăма çинелле тĕллет.

Пирĕн сас çĕкленнĕçемĕн çĕкленет, пирĕн кăмăл хăпарнăçем хăпарать. Эпир пĕлетпĕр: çакă самантра пирĕнпе пĕтĕм район калаçать, пирĕнпе пĕрле пĕтĕм район мухтанать, пирĕнпе пĕрле пĕтĕм район тарăхать, пирĕнпе пĕрле пĕтĕм район кулать.

Акă Кĕлĕмкасси колхоз председателĕ Шемякин юлташ. Вăл колхоз правлениннче каçса кайсах радио итлесе ларать. Унччен те пулмасть, чăрсăр фельетонист унăн ятне наркăмăш пек кастарса илет.

— Радио мар, аçа! — тет Шемякин юлташ. — Э?

Эпир пĕлетпĕр вара, çавă каç «куçран-пуçран вут тухса кайиччен» туйăннă Шемякин юлташ çĕрĕпе пĕр чĕпчĕм ыйăх та тăвайман...

Радиостудинчен пушанса тухнă çĕре пӳлĕм тулли халăх, халăх мар, пӳлĕм тулли куç, çунса-йăлкăшса тăракан пĕр хăватлă куç.

— Редактор юлташ, «ĕнерхисене» тепре юрамасть-и?

— Чăнах та юрĕччĕ, хăшĕ кунта илтеймен.

— Хам каласа парам-и ак, эп итленĕ, — янăрать пĕр çамрăк.

Тĕлĕнсех кайрăмăр. Ĕнерхи тăватă пĕчĕк фельетона çак çамрăк автортан кая мар шăрантарса пачĕ. Витĕмлĕ образсем, тĕл лекекен ухă-сăмахсем çамрăкăн асне шанчăклă вырнаçнă. Унне кăна мар. Радиохаçат хăварнă чылай юмахсăмах Йĕпреçсен асĕнче пурăнчĕ.

Ĕçлеме пит ансат пулчĕ. Райком, райĕçтăвком тата «Колхоз пурнăçĕ» хаçат çак ĕçре пирĕнпе пĕрле пулчĕç. Юлашкинчен эпир сентябрĕн тăваттăмĕшĕнче радио тăрăх пĕтĕм республикăпа çыхăнтăмăр. Чăваш республики Йĕпреçрен çĕнтерӳллĕ рапорчĕсене итлерĕ, Йĕпреç геройĕсемпе паллашрĕ.

Ку передачăна хатĕрлес ĕçре райком секретарĕ Брусников юлташ тата райфинпай пуçлăхĕ Яковлев юлташ вирлĕн ĕçленине палăртас пулать.

Финпай пуçлăхĕ Яковлев пире ăсатнă чух акă мĕн каларĕ:

— Финанс ĕçĕ пирĕн начарччĕ. Сентябрĕн пĕрремĕшне сакăр вунă процент вырăнне утмăлăшне те аран-аран илтĕмĕр. Паян куна ак, сентябрĕн тăваттăмăшне, тăхăр вуннă патне çывхарса çитрĕмĕр. Эсир пире калама çук пысăк пулăшу патăр.

Яковлев юлташ, кăмăлĕ кайнă енне, ытлашширех те каларĕ пулас, анчах çапах та пĕр сăмахсăрах радио хăйĕн ĕçне турĕ. Радио парти чĕлхипе калаçакан чăн-чăн агитатор, пропагандист тата организатор пулса тăчĕ. Радио районти чи паттăр ударниксен хисепне тухрĕ.

Пирĕн шухăш: кашни районтах радиоузел пулмалла. Кашни районăн, пичетлĕ хаçатпа пĕрлех, чĕрĕ те кашни кун тухса тăракан радиохаçат пулмалла. Йĕпреçре туса пăхнă пирĕн малтанхи пусăм кун çинчен пит ĕнентерӳллĕн каласа кăтартать.

1933

МУР

Йĕпреç калавĕ

Этемĕн ăсне нихçан та пĕтерес çук çав. Этемĕн ăсĕ çĕрте те çĕрмест, шывра та путмасть тенĕ ваттисем. Тĕрĕс каланă. Анчах хăш-пĕрин ăсĕ ăсран пăса тухса кайнине те час-часах калаçаççĕ.

Пирĕн ялта Тăхтаман ятлă чăваш пур.

Ытлашши нимех те çук пек Тăхтаманăн, нимĕнех те вăл хăйне уйрăммăн палăрса тăмасть пек, анчах тинкеререх пăхăр-ха ун çине! Çак хĕсĕкрех куçлă чăмăш кăна чăвашра тилĕ пек чее ăс лăпчăнса ларать.

— Пирĕн Тăхтаман ытлашши ваклашмасть, çынна тӳрĕ тумасть, пурăнать вăл шăп кăна, — теççĕ ял-йышсем.

Пĕрре Тăхтаманăн ула ĕни колхоз вăкăрĕпе пĕрлешнĕ. Сунтал пек çамкаллă краснокорбатовски каччă хăйĕн çĕнĕ тусĕпе Тăхтаман карташнех кĕрсе кайнă.

Тăхтаман хăй кулак пулмасан та (хăй мар, ăрура та вĕсен кулак тенĕ çын пулман) колхоза питех кăмăл памасть. Темшĕн тӳртен пăхать вăл колхоз çине — хăй те ĕретлĕн пĕлмест. Хăй ăссĕн вара колхоз çинчен темтепĕр виртлешсе калаçма юратать. Пĕр сăмах кăна калать Тăхтаман, шăппăн кăна каласа хурать, — вара çав куларах тăран тута хупăлчи витĕр хĕсĕнсе тухнă пĕчĕк çеç сăмах тепрер кунтан пĕтĕм яла çавăрса илет.

Колхоза «кунхус» тесе кам каланă пуль тетĕр?

— Пирĕн Тăхтаман!

Кам МОПР ячейкине «мухмăр ячейки» тесе ят панă? — Тăхтаман.

Кам «кино передвижкăна» «кино тертлентеришкă» тенĕ? — Тăхтаман.

Çак Тăхтамана пулах колхозăн ним айăпсăр лашисем те пули-пулми ят туяна-туяна пĕтнĕ.

— Ак хăй «Ярусланне» утланнă — трактор кӳлме каять пуль, — тет вара Тăхтаман колхоз председателĕ ула лашапа пынине курсан.

Красногорбатовски вăкăр та ятсăр тăрса юлман.

— Настояшчи Эсремет, — тенĕ Тăхтаман колхозăн улăп пек вăкăрне курсан. — Кун пек тискер япала яла халиччен килсе кĕмен, тем ыррах пулас çук, выльăх мурĕ пулас-иха, — тенĕ вăл теме систерсе.

Хăйĕн ула ĕни Хĕрлĕ Эсремете ертсе кĕнине курсан Тăхтаман ним мар пулса кайнă.

— Пĕтерет ĕнене! — тенĕ Тăхтаман.

Чăнах та, пĕтĕм картиш тулли курăнан тĕлĕнмелле выльăх çумĕнче чăваш ĕни çăвăр путекĕн курăнса тăни теменле килĕшӳсĕр пек пулнă.

— Хăваласа кăларăр проклятăя! Хăвалăр! Пĕтерчĕ! Пĕтерчĕ!.. Пĕтĕм ăрăва пĕтерчĕ, асатте ăруне пăсрĕ, хăвалăр! Хăвалăр! Хăвалăр!

Те чăнласах çилĕпе кăшкăрнă Тăхтаман, те шăл йĕрсе анчах хăтланнă — тен, вăл ăна хăй те пĕлмен.

Анчах Шерпике тăхлач:

— Чим-ха, чим, Тăхтаман, пăрушĕ лайăх пулать теççĕ, пĕтĕм ял çавăнпа чуптарать, — тесе Тăхтамана чăнласах та лăплантарасшăн пулнă.

* * *

Типпе кĕрсен тунти кун Тăхтаман карчăкĕ Шерпике тăхлачă пӳрте яп-яка пăру йăтса кĕчĕ. Çамрăк пăру кунран-кун йăл илсе пырса, вун икĕ кун çитнĕ çĕре пулă пек таптаса пулса кайрĕ. Тĕсĕ хăйĕн хĕп-хĕрлĕ, урисем çавăрса тунă пек, чĕрнисем шăмă тура евĕр йăм-йăм курăнса тăраççĕ. Çĕлен пек авкаланса пӳрт тăрăх сиккелесе çӳрет пăру.

Савăнать Шерпике тăхлач.

— Ырă ăруран ырах пулать çав, — тет вăл. — Акă ĕне ватăлса килет, тăхăр пăру амăшĕ пулчĕ ĕнтĕ. Çак Чĕкеçе (пăрушне çапла ят панă вăл) епле те пулсан ӳстересчĕ-ха ĕнтĕ, — тесе калаçса çӳрет пирĕн тăхлач.

Тăхтаман та илемлĕ пăрăва курать. Ун хĕсĕкрех витĕр куçĕсем пăру çине тăрăххăн-тăрăххăн пăхса илеççĕ те теменле, выçă анчăкăнни пек симĕссĕн-кăваккăн курăнса каяççĕ.

Тăхтаман кун чул пулса та пĕр-ик пăруран ытла ӳстерсе курман. Пăру ӳстерес тĕлĕшпе вăл яланах Шерпике тăхлача хирĕç пынă. Е ăна «тĕс килĕшмест», е вăкăр пулать, е «самани йывăрланчĕ, ик-виç ятакпа ăçтан выльăх ӳстерен», çапла вара Тăхтаман пăрушĕсем вун икĕ кун урлă каçайман, хуран пек çилĕпе чашкăрса çӳрес ĕнесем хăйсем хурана кĕре-кĕре ӳкнĕ. Çавăнпа та Тăхтаман Чĕкеç илемĕ çине антăхнă куçпа пăхса тăнинчен тĕлĕнмелли те çук.

— Илемлĕ тата, шуйттан! Шуйттан илемлĕ пулмасăр, çав хăй илемĕпех çылăха кĕртет ĕнтĕ пире. Ав карчăка та йăлт хăй май çавăрса илнĕ... Та, аван кăмăрчак.

* * *

Пĕрре çапла Шерпике тăхлач ханша юхтарнă. Тăхтаман пирĕн ханшана тиркесех каймасть. Акă вăл юхтарса кĕнĕ шеппех икĕ стакан чи малтанхине янклаттарчĕ. Ăшă та хаяр ханша пĕтĕм ӳт-пĕве наччасах япшаррăн ыталаса илчĕ.

— Ах, саккуски пулмарĕ... Сутĕн пулсанччĕ кунта, — текелесе тепрер те ӳпĕнтерчĕ Тăхтаман.

Сутĕн тенĕрен, Тăхтаман пуçне çавăнтах «хай» шухăш çĕмĕрĕн пек вĕçсе кĕчĕ.

— Пулчĕ... Сĕреп! Сăвапĕнчен урăх ним те пулас çук, — тесе мăкăртатать Тăхтаман.

— Анчах мĕнле? Ăратлă вĕт, шуйттан, ăратлă шуйттан. Туянтарма пултараççĕ. Та, пулчĕ! пулчĕ... Чĕкеç, кил кунта!.. Ан хăра... Никам та айăплă мар, кун-çулу çапла пулчĕ пуль... Эх, ытла çемçе-çке эс, кăмăрчак!.. — тесе ачашлать алла вĕреннĕ пăрăва Тăхтаман.

Унччен те пулмарĕ — Тăхтаман пĕр кĕреке курки хаяр ханша тултарса илчĕ те пăру çăварне клеще пек аллипе уçса чаш! тутарчĕ. Ханша пĕтĕм çамрăк ўт-пĕве наччасах хыпаласа илчĕ. Пăру ним тăваймасть, тапăртатать, чыхăнать, ĕнĕрет. Тăхтаман чарăнмасть, пăру çăварне курка хыççăн курка ўпĕнет, юлашкинчен пăру, пĕтĕм куçне-пуçне тавăрса пăрахнăскер, тепле месерле вĕçерĕнсе каять те çилтăвăл евĕр пĕтĕм кил-çурта тустарма тытăнать.

— Ха-ха-ха, ха-ха-ха! — варне тытса кулать Тăхтаман.

Аптранă пăру урай варне тăсăлса ўкет, тăват урине те çўлелле тăратса тапăртатса выртать.

— Арăм... арăм! Ха-ха-ха! Пăру вилет!.. Пăру... Кĕр-ха, кĕр... Ха-ха-ха!.. Кĕр тетĕп!..

Тĕк татнă пек хыпаланса кĕчĕ Шерпике тăхлач. Чĕкеç тапаланса выртнине курсан чутах йăванса каймарĕ.

— Ах, пĕтрĕмĕр!.. Пĕтрĕмĕр... Мăнтарăн пăрăвăм, мăнтарăн пăрăвăм!.. Чуп часрах, шуйттан! Мĕн ахăлтатса тăран, пăянцă! Чуп старостă патне!.. Эх, пĕчĕккĕм, пĕчĕккĕм... Мĕн пулчĕ, пепкем, мĕн пулчĕ, пепкем!..

Тăхтаман ури тупанĕсене хыçа тивертсех советалла тухса чуптарчĕ.

Председатель хăйне нумай кĕттермерĕ, килсенех — «юрать!» тесе решени турĕ.

Какайлă пулчĕ вара Тăхтаман. Шуйттан пăрушĕн ашĕ те ахаль аш пекех иккенне туйса мухта-мухта çирĕ. Çитменнине тата колхоз вăкăрне те мухтаса илчĕ: пысăк ăруран ашĕ те пысăк пулать çав тесех тута хĕррисем кăпăкланиччен мехмĕрленчĕ Тăхтаман. Пĕр Шерпике тăхлачшăн анчах ку кĕтмен çĕртен пулнă аш кăмăлсăр пулчĕ. Кашни яшка çакмассеренех куççулĕ тухатчĕ тăхлачăн.

Халĕ те асăнать-ха тăхлачă хăйĕн пĕчĕкçĕ Чĕкеçне. Чĕкеç тантăшĕсем ĕнтĕ пурте ĕне пулнă, кашни каç, кĕтўмассерен, вĕсем пысăк кўмерккеллĕ тăкăс çиллисемпе пăлан евĕр чаркаланса Тăхтаман умĕнчен иртсе каяççĕ. Акă вĕсем саркаланса утса пынă чух урам илемĕ килсе тăрать. Унтакунта хапхасем уçăлса хупăнаççĕ — шавлă çамрăк хĕрарăмсем ачашшăн Тырлань, Тырлань текелесе хăйсен сĕт-çуллă ĕнисене хирĕç тухса илеççĕ.

Пĕр Тăхтаманăн хапхи çеç уçăлмасть, пĕр Шерпике тăхлачă анчах Чĕкеçне хирĕç тухса илеймест, ку ватă кил-çурт енне пĕр ĕне те пăхмасть, ку юхăннă кил-çуртра пĕр выльăх чĕрни те çук.

Шел Шерпике карчăка. Вăл вара шур илнĕ куç пек тĕтрелсе тăран чўрече витĕр пăхса илет те çакăн пек калать:

— Ман Чĕкеç те çавсем пек пулатчĕ вĕт ĕнтĕ. Эх, Тăхтаман, çавăн «ăсех» пĕтерет çав пире. Халь ак сĕтсĕр-мĕнсĕр типсе пурăн... Хăть амăшĕ те пулсан пурăнмарĕ-çке!

* * *

Шерпике тăхлачăн Тăхтаманĕ пек этемсем пирĕн халĕ те чылаях иккен-ха. Анат Клешкасси колхозĕ (Йĕпреç районĕ) кăçал сакăр пăру ўстермелле пулнă, анчах... пĕрре анчах юлнă... Ытти... ытти Тăхтамансен çăварне кĕрсе кайнă.

Тури-Клешкасси колхозĕнче (çав районах) 98 ĕне, 24 пăру ўстермелле. Тăватă пăру аран-аран хăтăлкаланă.

Туçара 152 ĕне, 52 пăру хăвармалла пулнă. Иккех юлнă.

Климкасси (каллех Йĕпреç районĕ) колхозра вăтăр икĕ пăру çуралнă. Ял совечĕпе колхоз правленийĕ каласа панă тăрăх, виççĕшĕ вилнĕ, вуннăшне пуснă, вун тăххăрăшне сутнă.

— Ку енчен те вăтăр иккĕ, леш енчен те вăтăр иккĕ, — баланс пур, анчах пăрăвĕсем çук.

Климкассинчех единоличниксен хушшинче хĕрĕх пăру çуралнă (анчах ма çуралнă-ши вĕсем?). Кунта та баланс танлашать: пĕри вилнĕ, вун тăххăрăшне пуснă, çирĕмĕшне сутнă.

— Сходится? — тесе ыйтать Климкасси председателĕ.

— Так точнă!.. — тесе ответлет секретарĕ.

Вĕсен паян кăмăл аван, ĕç вылянса кăна пырать, — вĕсем иккĕшĕ те паян «пăру тяпписем» çисе килнĕ.

Акă ăçта халĕ те пăру çине Тăхтаманла пăхаççĕ. Акă ăçта пăрун çемçе те техĕмлĕ ашне туртаççĕ.

Çак асăннă ялсем — выльăх çăвисем, вĕсен пуçлăхĕсем — выльăх мурĕсем.

1933

ПИРТЕН ПĔРИ

Канашран Юхмана çитес чух сулахаялла пĕр Треньел ятлă ял юлать... Ялкор юлташăм! эхер те çав асăннă яла лекмешкĕн тĕл килсен тўрех Антон Лапщин ăçта пурнать тесе ыйтăр. Вара сире çак маттур ачана наччасрах тупса парĕç, вăл сире мĕнпур кăмăлтан тарават кĕтсе илĕ. Хырăмăр выçă пулсан — çăкăр парĕ, канăç кирлĕ тăк — кантарĕ, çитменнине тата хăйĕн ял-йышĕ çинчен тĕлĕнмелле халапсем те ярса кăтартĕ.

Антун хамăр çын, эпĕ ăна мĕн ачаранах паллатăн. Халĕ вăл вăтам пў-силлĕ вун çичĕ çулхи йĕкĕт. Акă ун çине пăхса

илетĕн те — мĕнпур йăвашлăх, мĕнпур пек лăпкă кăмăл çак çамрăк ачана вырнаçнă пулĕ тетĕн. Ни пĕвĕ-сийĕнче, ни сарă çаврарах питĕнче — ниçта та ытлашши «çĕвĕ-çакă», кăмăла тавăрса тăракан кăльтим-мальтимлăх çук, — ун кашни пусăмĕ шайлашăннă майăн, ун кашни сулăмĕ — вăхăтлă, вырăнлă. Ăçтан-ха çак ем-ешĕл çамрăк ачан хăйне хăй кун евĕр тытмашкăн пĕлни? Кам вĕрентнĕ ăна, ăçта вăл ўснĕ? Тинкеререх пăхсассăн анчах çак çамрăкăн чўхенми лăпкă кăвак куçĕсенче аякра-аякра, инçетри шевле пек, çиçĕнсе тăракан вăрттăн кăвара куратăн. Ку кăвар вăл те çамрăклăх çути, те тин çех аталанма пикеннĕ чĕри хĕлхемĕ. Çак кăвар — çутă хĕлхем — Антун каласнă майăн е пĕр çывхарса килет, вара пĕтĕм çамрăк сăна çутатса ярать, е каллех аяккалла тарса вăрттăн çех йăмăхса тăрать.

Кам калĕ-ши çак йăваш çеç çамрăкра пĕр хаяр кăна арăслан çитĕннине. Калакан пур. Çак çамрăк арăслана пĕрисем мĕнпур кăмăлпа савса ўстереççĕ, теприсем...

Теприсем çинчен малалла калăпăр.

Антунсен ялĕнче 1931 çулхи çуркунне колхоз организациленнĕ. Çĕнĕ колхозра çичĕ хуçалăхран пĕри — комсомолец Антон Лапшин пулнă. Пыра киле колхоз пысăкланнă, çулталăк тулнă тĕле тата вун пилĕк хуçалăх хутшăннă.

Çĕнĕ ĕç тени инкексĕр мар. Лапшинсен колхозĕ те хăйне хăй инкек тупнă. Лапшинсен колхозĕ хăйĕн хўтлĕхне пĕр класс тăшманне хўтлĕх панă. Вара çак колхоз хурпала тĕвĕленнĕ çимĕç пек часах шурма, хăврăлма пуçланă. Колхозăн чирне пурте сиснĕ, ырă ĕмĕтпе пикеннĕ ĕç ăнманшăн чылайăшĕн чĕри ыратнă, анчах никам та çак инкеклĕ ăнсăртран сывалмашкăн тивĕçлĕн тăрăшман, хай йывăр чир çакланнă пĕр-пĕр тĕксĕм çын пек аптранă, йынăшнă, çапах та «пульницана» каяс-тăвасси çинчен аса та илмен. Комсомолец Лапшин çакна ăнланса илнĕ. Чылай шухăшланă, чылай пуçа çĕмĕрнĕ. Юлашкинчен тытнă та хаçата пĕр заметка çырса панă.

Акă мĕн çинчен пĕлтернĕ Лапшин çырăвĕ:

«Треньел пуянĕ» тенине Пĕтĕм Юхма районĕ илтнĕ. Çак ятпа хĕрлĕ таварпа сут тăвакан Паймин çўренĕ. Юхмана тухнă-и вăл, Кĕçнерни пасарне-и, пĕтĕм пасар куçĕ ун çинче пулнă. Пайминăн тĕрлĕ пусма таварсем мĕнпур пасар куçне йăмăхтарса тăнă.

Треньел сăрчĕ çинче пĕр çил арманĕ мăн кăмăллăн хăлаçланса ларнă, вăл, конешнă, Пайминăн пулнă. Кил хушшинче паттăр йĕкĕтсем ĕçлесе çўренĕ — вăл Паймин тарçисем пулнă. Çак Паймин «Адам чухне» пурăнман, пирĕн

вăхăтра пурăннă, çапах та ун пĕр ывăлĕ Иван Антунсен колхозĕнче хăйне валли ăшă вырăн тупнă. Ку ĕç çапла пулнă:

1930 çул. Ялăн кивĕ тумтирĕ çĕнĕрен аталанан улăпа ниепле те вырнаçтарайман, кив тумтирĕн кавсăлнă çĕвви-çакки çатăртатса тăнă. Пуянсемшĕн йывăр хыпарсем çýренĕ. Çак йывăр хыпарсем, сулмаклă чул пек, Иванăн хăлхи чиккине те киле-киле çапăннă. Хыпар хыççăн ĕçĕ те персе çитнĕ. Пуян Ивана кутăнланса тăнăшăн ирĕксĕр ĕçлеттерекен çĕре янă. Вара вăл тарнă. Вăл тинех чухласа илнĕ, халь ăна арман та, лапка та кирлĕ пулман. Иван Мускава çитнĕ. Чулхулара автосавăт тунă çĕрте те пулнă. Тилĕ пек чееcкер тата хăйне хăй харсăррăн тытма пĕлекенскер, Иван рабочисем хушшинче ырă ятлă пулса часах бригадира та кĕнĕ.

Паймин аслă уявсенче рабочисен ячĕпе час-часах трибуна çине те çĕкленнĕ. «Эпир социализм тăватпăр, — тенĕ Паймин, — кулаксене тĕппипех кăклатпăр!» — тенĕ.

Пайминăн арăмĕ те, упăшки пекех чĕрĕскер, çывăрман. Вăл хăйĕн асамлă илемĕпе тата ĕçкĕ хăвачĕпе ялти пĕтĕм маттура — карма çăварсене, куштансене тыткăна илет. Вара пĕр телейлĕ кун Паймин Иван, Треньел пуянĕ, кулакран «саккунлă вăтам» пулса тăрать. Иван киле таврăнать. Колхоз алăкĕ уçăлсан йăвашшăн йăпшăнса колхоза кĕрсе каять...

Çакăн çинчен каланă ĕнтĕ Лапшин юлташăн заметки. Анчах эрех вăйĕ Лапшинăн чăнлăхĕнчен хаяртарах пулнă. Пĕтĕм колхоз куштанĕ: «Пирĕн кулак çук!» — тесе шарт та март тунса тăнă.

1932 çул. Çуркунне çитеспе Антун Юхмара счетоводсен курсĕнче вĕреннĕ. Пĕрре вăл çапла тĕлĕнмелле хыпар илтнĕ: Треньел колхозĕ саланнă!.. Ку хыпар чăн пулнă. Антун киле таврăннă çĕре колхозра 22 килтен пиллĕк кăна тăрса юлнă. Вĕсенчен пĕри — Паймин Иван. Пуринчен те мăшкăлли çакă пулнă: Антун амăшĕ, кĕмешкĕн пĕрле килĕшсе кĕнĕскер, тухмашкăн ывăлĕсĕрех тухнă. Пĕр хĕрарăм Антун амăшĕ хут çине ýкернĕ çаврашка тавра колхозран тухакансем алă пуснă (кам малтан пуснă — пĕлмешкĕн çук). Антун амăшĕ валли те вырăн хăварнă. Вара Антун амăшĕ, алă пусма «чухлайманскер», хăйсен ĕлĕкхи ана паллине лартса янă.

Лăпкă Антуна вут хыпнă. Вăл пĕрин патĕнчен теприн патне çýренĕ, пухура пĕтĕм хĕрýпе тухса каласнă — ĕç тухман, никам та Антуна итлесшĕн пулман, çын мар, тăван амăшĕ те итлемен. Мĕншĕн тесессĕн Треньел колхозĕ

Антун амăшĕшĕн çăлăнăç пулман. Ку колхоз пĕр çулталăк хушшинчех нумайăшĕн «çăварне пĕçернĕ». Мĕншĕн тесен çакă колхозра пуян алли каллех кашнийĕн мăйĕ патне тăсăлнă, çак алла çапса хуçмашкăн никам та хăяйман. Епле ун пек пулнă?

Мĕншĕн?

Мĕншĕн тесессĕн çакă хăрушă алă хăш чухне ырă пулма та пĕлнĕ, — ун витĕр час-часах пыл-сымĕ те юхнă, çими те тăкăннă, — хуçи ытла та тарават кăмăллă пулнă.

«Панă çăкăр-тăвар нихçан та çухалмасть... Пĕтерĕччĕç — çăкăр ямасть!» — çак сăмахсем Пайминшăн шанчăклă чăнлăх пулма ĕлкĕрнĕ. Чылайăшĕн алли çак «чăнлăхпа» вараланнă пулнă. Чăнах та, Паймин ĕçки-çикине активмен этем ялта та сахал пулнă. Тăшман çăкăрĕ, темĕнле тухатнă çиме пек, килĕшмен шухăша килĕштернĕ, çĕкленнĕ алла усăнтарнă, пуçа çавăрнă, кăмăла улăштарнă. Сутăннă этем хăйĕнчен хăй именсе ăш вĕçнĕ çын пек сĕрĕмре çŭренĕ. Çапах та вăл хăрушă алла куçран çухатайман, хăрушă алă кирек ăçта та ăна йĕрленĕ, — вăл тарнă, анчах хăтăлайман...

Хăрушă алă колхозăн килĕнче кĕтесрен кĕтесе çĕлен пек явăнса çŭренĕ, вăл никама та канăç паман... Пĕтĕм чун-чĕрене çак, çĕлен пек, алăран сивĕ çапса, çŭçентерсе тăнă. Анчах никамăн та çак çĕленĕн пуçне татма хăвачĕ çитмен...

— Мĕншĕн?..

«Кŭлĕ шуйттансăр пулмасть...» Колхозăн та, тен, «çĕленсĕр» пулмалла мар пулĕ тен. Чылайăш çакна ĕненнĕ. Вара этемсем çак «ылханлă» çуртран тармашкăн шут тытнă. Вĕсене чаракан, шанчăк паракан никам та пулман... Антун сасси ытла та çамрăккăн илтĕннĕ. Пĕрин хыççăн тепри тухса кайнă, юлашкинчен асăннă «Çаврашка» правлени сĕтелли çине килсе ŭкнĕ.

Ма тухатăр тесен — нимĕн те чĕнмен. Чĕнсен те сăмаха шахвăртса анчах каланă. Хăшĕ-пĕри çеç çакăн пек каласа панă: колхозăн ĕçĕ нихăçан та тирпейлĕн пуçарăнса пырайман, тырри-пулли тăваннă, машин таврашĕ арканаарканa кайнă, виçĕ тапхăр тырă çухалнă т. ыт. те, тата ыт. те пулнă.

Акă тата тепри хăйĕн ачисемшĕн ŭпкелешет, колхоз ăна пĕр кĕтŭ ачашăн пĕр пĕрчĕ тырă та паман. (Ăçтан тăрантарам-ха пĕччен пуçăмпа?!) Çав вăхăтрах Паймин ав пур ачишĕн те «норма» илнĕ.

Антун амăшĕн те хăйне кура сăлтав тупăннă. Вăл пĕрре йĕтемре авăн илекен машина патĕнче ĕçленĕ. Машина

мĕнпур вăйпала чĕтренсе, ташласа ларнă; сасси, хăлăхсăр сассийĕ, пĕтĕм ăш-чике чавалана. Кĕлте хыçăн кĕлте ывтăннă. Анна инке, çулланнă хĕрарăм, чăмланă улăма ăтăр пек сĕтĕрнĕ. Малтан кăмăл темскер пăтранса килнĕ пек туйăннă, унтан пуç çаврăнса кайнă, вара нимĕн те астумасть вара?.. Пĕтĕм йĕтем юн хăсса выртакан Анна инке çине тĕлĕнсе пăхса тăнă. Çак алă виçĕ çулхи хĕрарăм пĕлтĕр упăшкине пытарнă, халĕ çĕрĕ-çĕрĕпе урасăр выртакан асат хуçнă хĕрĕ умĕнче ларнă. Кăнтăрла вăй çитми ĕçе тытăннă.

Канлĕрех ĕç ыйтсан Паймин сăмăла йĕрсе: «Канлĕ ĕç кăмака çинче!» — тесе йĕкĕлтешнĕ. Ку юри тунă япала пулнă — Треньел колхозĕнче вăйсăрри йывăра кĕнĕ, вăйлисем çăмăла çех çÿренĕ. Çавăнпа та Анна инкешĕн «колхозпа тамăк пĕр пекех пулнинчен» нимĕн те тĕлĕнмелли çук.

Колхозăн çак суранĕсем пурин суранĕ те пулнă, пурте аптранă, пурте «вăхăт çитиччен» çак çăпан-шăтана шăла çыртса та пулин чăтнă. Вăхăчĕ çитнĕ вара, 22 хуçалăхран пиллĕкĕшĕ анчах тăрса юлнă, вĕсенчен те пулин пĕри — Паймин Иван пулнă.

Аптранă Антун. Çапах унăн ĕмĕчĕ татăлсах татăлман. Вăл колхоз кил-йышне хуйхатнă çĕленĕн мăйне пăрса татмашкăн вăй аталансах пынине сиснĕ. Çак вăй чи малтан хăйсен комсомол ячейкинче уçăрах курăннă. Пĕрре «хур курнă» ячейка малалла çивĕчрех пулма тăрăшнă.

Колхоза каялла кĕрес пирки Антун темиçе хутчен те правлени алăкне шаккаса пăхнă.

— Пулмасть, — тенĕ лешсем, — аннÿсĕр кĕртме саккун çук! — тенĕ.

Анчах амăшĕ яхăнне те яман, вăл Паймин таврашне пуç çапиччен выçă вилмешкĕн хатĕр пулнă. Чылайăш çакăн пек шутланă, чылайăш колхозран камшăн тухнине тата та уççăн тавçăрса илме пуçланă: «сĕрĕмрен» тухса ÿкнĕ этемĕнни пек, чылайăшĕн пуçĕ урăла пуçланă. Антуна ку савăнтарнă. Антун юлташĕсемпе тата та хĕрÿрех ĕçлемешкĕн тапратнă.

Пĕрре Антунсем аллăн пухăнса района çыру янă. Аллăн тан: «Колхозра кулаксем, çавăнпа колхоза кĕместпĕр», — тенĕ. Район çынни килнĕ, анчах чее правлени тахçанах хатĕрленсе тăнă.

— Никам та мар, юлташ, Лапшин тăвать... Вăл хăй колхозран тухнă, колхозăн юлашкине те салатас тет пулĕ...

— Да-а-а! — тенĕ районран килнĕ çын çăмăллăн сывласа (кун пек пулсан ун йĕркелесси-тăвасси кирлех те пулман).

— Çавăн пек, çавăн пек! — тенĕ правленинчисем çунат

хушса. — Хăвăр та пĕлетĕр, юлташ, колхозран тухнă çыннăн сăлтавĕ те кулак çине тиесси кăна вĕт. «Пуянсем пирки тухатпăр», — теççĕ вара...

Район çынни çак ăслă сăмахсемпе килĕшмесĕр тăма пултарайман.

Антун чарăнман. Вăл «Канаша», «Коммунара», «Çамрăк колхознике», «Октябрь ялавне» çитнĕ.

Ялкорăн чăрсăр сăмахĕ каллех районтан çын кӳртернĕ. Паймин руководствипе ĕçлекен правлени сăмахран татăк тăман:

— Никам та мар, кулак ачи çырать ăна, — тенĕ правлени.

— Мĕнле кулак ачи?

— Вара, Лапшин ашшĕ çăмарта пухакан пулнă-çке. (Антун ашшĕ, граждан вăрçинче йывăр аманнăскер, патшалăх йĕрĕпе çăмарта пухакан организаци агенчĕ пулса пĕр-ик çул çăмарта пухкаланă.)

— Да-а-а, — тенĕ район çынни çăмăллăн сывласа.

— Ну та, кулак паянхи кун темĕнле меслетпе те усă курать, вăл хаçатсем çинче те пирĕн çинчен элексем парать... Класс туйăмне çивĕччĕн туяс пулать, — тесе хытарнă та вара çак «лашана шĕветсе çӳрекен» каллех хăйĕн йăви еннелле вĕçтернĕ...

— Ну, мĕскер вăл, пĕр-пĕр селькор! Другое дело ĕçе йĕркелекенсем! Çапла-и, Элексей? — тенĕ Паймин.

— Так точно! — тенĕ Юманов Элексей, сĕнсе панă куркана янк! тутарнă.

Юманов Элексей те, çакна та калас пулать, кулакăн кĕввине маçтăр ташлать, анчах та ан ывтăнăр, вăл хăй те «пирĕн пеккисене» аванах ташлаттарать.

— Паян пĕрне лартăн, — тет кĕскенĕн Элексей.

— Лартăпăр, — тет вара Иванĕ (сăмах кунта ĕçкĕ çинчен пырать).

Иванăн урăхла каласан та юрамасть, мĕншĕн тесен вăл Элексей характерне пĕлет, пĕрре кăна мар вăл: «Сана колхозран кăларатпăр!» — тесе кăшкăрнă. Колхоз председателĕ Хĕрлĕ Павăл та тата хăрах алăллă Лакăм Павăлĕ те, Степан Элександрĕ те тăман Элексей çулĕ çине.

— Мĕн тăвăпăр? — тенĕ Антун. — Пирĕн пĕр çул кăна, вăл — колхоза кĕресси. Эхер те кулак колхоза шал енчен çĕмĕрет пулсан эпир «ун колхозне» çавăн евĕрех тăвар. Тул енчен ĕç тухмасть, ачасем. Шăл витсех каймасть...

Иртнĕ кĕркунне Лапшин Антун хăй пек пĕр пилĕк-ултă маттур тупса амăшĕ-мĕнĕпех колхоза кĕчĕ.

Кăçал çуркунне Паймин Иван, Треньел çĕрме пуянĕ, «пĕр вĕтĕннĕ селькора пула» колхозран сирпĕнчĕ!

«Треньел ялĕнчи «Октябрь ялавĕ» колхоз çур акине ăнăçлăн ирттерчĕ. Пĕр кулака колхозран кăларнă хыççăн çĕнĕрен тăватă хуçалăх кĕчĕ», — тесе пĕлтерчĕ пĕр хаçат. Çакăн авторĕ çак пирĕн очеркăн геройĕ Лапшин пулчĕ.

1933

ТУРКМЕН КАВИРĔСЕМ

Кирек те хăш кишлака çитмессерен — чайхана; иртенçӳрен этем, — инçе çула тухнă-и вăл, çывăха-и, — çеçен хирти шăрăхпа пиçнĕ хыççăн яла кĕрсен сывлăш çавăрма тӳрех чайхана тĕлне чарăнать. Çурта пек кĕрнеклĕ кăтра туппăльсем, лапсăркка турачĕсене чатăр пек карăнтарса янă адам йывăççисем, ем-ешĕл мерчен евĕр витĕр курăнан шăрçа çулçăллă акаци тĕмĕсем хăйсен йĕри-тавра шерпет тути калан сулхăн сапса тăраççĕ. Йывăç кăкĕсем çуммипе çип çапнă пек тӳрем канавсем тăрăх çап-çутă шыв шăнкăртатса юхать. Çак илем хушшине вырнаçнă чайхана, пĕр-пĕр тăм хуралт çумне эстрада евĕр урамалла яр-уççăн тĕртĕнтерсе тунăскер, ĕшеннĕ çулçӳревçĕн кăмăлне аякранах тараватлăн кăчăк туртать. Кунта, чайхана умĕнче, кантарма тăратнă тĕве караванĕсене, сĕнксе тăракан юлхав ашаксене, кăркăс йăлтам урхамахĕсене, тусан пуснă автомобильсене пĕрмаях курма пулать. Хуçисем сулхăн шилĕкре урисене тутарла хуçлатса ларса канса кайса техĕмлĕ кокчай ĕçеççĕ.

Туркмен кавирĕсене эпир чи малтан пĕр узбек кишлакĕнчи чайханара куртăмăр. Çакă тĕлĕнмелли çĕршывсенче икĕ уйăх хушши курса çӳресе тĕлĕнмешкĕн те йăлăха пуçланăскерсем, эпир çав тери паха кавирсене тĕл пулсан тепĕр хут тĕлĕнмесĕр тӳсеймерĕмĕр.

Чăвашăн хăш чух тĕлĕнни çеç мар, хапсăнасси те пур. Эх, ку япала пиреччĕ! тетĕн вара. Чăнах та, ешĕл çулçăсен хушшинче асамат кĕперĕ çĕнĕрен туса лартнă аслă клубсенче тата та хăватлăрах курăнĕччĕç-и, анчах çапах та ăмсанмăпăр. Çак хаклă кавирсем кунта чи-чи вырăнлă иккен, вĕсем вăрман тĕлĕшĕнчен йывăр çĕршывсенчи, ним мар пӳрт-çуртсен ăш-чикне кермен сăнĕпе илемлетсе яраççĕ. Пăх вĕсем çине — пĕтĕм чуну уçăлса каять, лар вĕсем çине — пĕтĕм ĕшеннĕ шăм-шакку лăштăрах канать. Акă вĕсене çапăран тыттарнă стенасем тăрăх хăмăш маччаран çĕр урайне çитиччен лăс кăна усса янă, — тĕрлĕрен тĕрлĕ тĕс парса сăрăсен килĕшӳллĕ вылявĕпе куçа ачашшăн илĕртсе тăраççĕ. Сарлака урайĕнче те çав кавирсемех, вĕсем çинче

чей паракансем пански чăлха вĕççĕн çăмăллăн утса çӳреççĕ, вĕсем çинче килен-каякансем урисене канлĕн хуçлатса ларса кăвак чей ĕçеççĕ.

Мĕнле ылтăн алăллă çын тĕртнĕ-ши ку тăрăхсене? Камăн тирпейлĕ çепĕç пӳрнисем суйланă-ши çак чипер тĕрĕсене? Мĕнле ăслă художник çак ахаль чух ахаль сăрăсене пĕрпĕринпе килĕштернĕ-ши? Кам-ши вăл сăрăсен килĕшĕвĕн хăватне шайласа илсе виç-тăватă тĕслĕ ним мар сăрăран чун-чĕрене чӳхентерекен асамлă поэзин кĕввине кӳрекен?

Кунта — тĕрлĕрен геометри фигурисен янăравлă вылявĕ, «телей мăйракисен» йыхравĕ, пуш хирте пĕр-пĕрин хыççăн ерипен утакан тĕвесен шăнкăравĕ, тин çех çуралнă чап-чакăр шур мамăк ачаш куллийĕ. Художник хăй мĕн курни-илтнине, хăй мĕнле пурнăçпа пуранне, хăйĕн кăмăлне çак кавирсем çине ӳкернĕ, хăйĕн çумĕнчи юррине ĕмĕрне тĕс кайман сăрăсен вăййипе мĕнпур пархатарлăхне парса юрланă. Кам вăл çак художник, çакă поэт? — Халăх. Казах, узбек, туркмен халăхĕсем. Çакă тĕлĕнмелле произведенисен ятсăр авторĕсем — казах, узбек, туркмен хĕрарăмĕсем.

Аван казах кавирĕ, паха узбек кĕççи, анчах туркмен алли пуринчен те ирттерет. Вăл хăйĕн илемĕпе хăватлăрах сас парать, вăл пуранăçемĕн çĕнелсе пырать — тĕртнĕ чух чăлт шурă çăм пурăна киле пурçăн пек йăлтăртатма пуçлать, слон шăммин тĕсевне йышăнать, çавăнпа та чайханана тирпейлекен ăстайлă алă туркмен кавирне чи тĕпеле, чи вăта çĕрти вырăна çакать, вара ун çумĕнчи ытти кавирсем, тĕп вăйран хăват илнĕ пек, купăс çинчи пĕр тĕп чĕлĕхе пуссан ыттисем те унăн чĕтревĕпе килĕшӳллĕн янăраса кайнă евĕр сас парса тăраççĕ.

Туркмен кавирĕн историйĕпе эпир Ашхабадра — туркмен кавир центрĕнче паллашрăмăр.

Туркмен кавирĕ çинчен тĕнче авалах пĕлнĕ. Ун çинчен каланине X ĕмĕрте пурăннă писатель-географ Нер-Шахи кĕнекисенче те тупма пулать иккен, ун çинчен каярах паллă çулçӳревçĕ Марко Поло та: «Кунта тĕнчери чи илемлĕ кавирсене тăваççĕ», — тесе каланă имĕш.

1539 çулта тĕртнĕ туркмен кавирĕ халиччен те пулсан Лондонра пĕр паллă музейре авалхи искусствăн чаплă парни пек çакăнса тăрать.

Туркмен кавирĕсем — куçса çӳрекен халăхăн авалхи культурин памятникĕсем. Туркменсем, ытти халăхсем пек, хăйсен авалхи культури çинчен урăхла майсемпе каласа хăварайман. Вĕсен перссемпе арабсенни евĕр тĕрлĕрен искусствăсем чĕрĕлекен пуян вырăнсем — хуласем пулман.

Анчах хăйсен чунне-чĕрине, хăйсен кăмăлне, мĕнле пурнăçпа пурăннине туркменсем чăн-чăн искусствăн пуян парнисем пулса тăракан кавирсем урлă витĕмлĕ чĕлхепе каласа хăварнă. Пĕтĕм тĕнче йышăннă тăрăх, техника тĕлĕшĕпе, тĕрĕсен илемĕпе тата вĕсен трактовки енĕпе — пĕр сăмахпа каласан, искусствăна витĕр ăнланса тунипе кавир ĕçĕнче туркмен аллинчен никам та нихăçан та иртеймен.

Туркмен кавирĕсен историне, пĕр ватă ăстаçă Гольвин каланă тăрăх, виçĕ тапхăра уйăрма пулать.

Пĕрремĕш тапхăр — натурăллă хуçалăх вăхăчĕ. Туркменсем ун чух вырăнтан вырăна куçса çÿренĕ. Хуçалăхра мĕн кирлĕ пулнă — пурне те хăйсен аллипе тума тăрăшнă. Кавир ун чух харпăр хăйĕн килĕ валли — юрта ăш-чиккине илемлетекен хатĕр пулнă. Унпа юрта стенисене карнă, алăк карри кавиртенех пулнă, утсене, тĕвесене илемлетме ятарласа кавирсем тĕртнĕ, кĕлĕ кавирĕсем хăйне пулнă, ĕçмеçиме чикмелли уртмахсене те, тăвар хутаççисене те кавиртенех тунă.

1882 çултан туркмен кавирĕшĕн иккĕмĕш тапхăр пуçланать. Вырăс патши туркменсен çĕршывне колонизацилет. Европăри улпутсем туркменсен тĕлĕнмелле кавирĕсемпе интересленме пуçлаççĕ. Вара кавир ĕçĕ çурма промышленноçлă çул çине тухать. Кавир хуçисем, евчисем çуралаççĕ, вĕсем туркмен хĕрарăмĕсем хушшинче тĕрлĕрен заказсем салатаççĕ. Уйăммăнах çакна калас пулать: туркмен хĕрарăмĕ ун чух хăй ĕçне хăй хуçа пулман, упăшки ăна пĕр-пĕр хуçа заказне панă, вăл вара пирĕн ĕлĕкхи чăптаçăсен условийĕсенче çĕрĕн-кунĕн ĕçленĕ, çăм-краска тусанне çăтнă, вăхăтсăр чире кайнă, ватăлнă, çапах хăйĕн ĕçĕшĕн виçĕ пус кĕмĕл те алла илеймен, килнĕ пек хак пĕтĕмĕшпех хăяккăн выртса пурăнакан упăшки аллине лекнĕ. Çакă йăваш, лăпкă, чĕнсе те чĕнмен хĕрарăмăн тертлĕ ĕçĕ çинчен никам та аса та илмен, тĕрĕссипе каласан — вăл хĕрарăма упăшкисĕр пуçне никам та курман, унпа никам та интересленмен, ун ячĕ никама та кирлĕ пулман. Пĕр-пĕр мăкăшçă вырăс купсине кавир ĕçĕнче кулăшла йÿне килекен туркмен кавирĕ анчах интереслентернĕ. Ятсăр хĕрарăм пурлăх тунă, унăн ытарайми талантлă тĕрринчи кашни тĕвви ют патшалăхсенче ылтăнпа хакланнă. Сăмахран, Австринчи пĕр граф иртнĕ ĕмĕрте туркмен çĕр-шывĕнче тĕртнĕ пĕр кавиршĕн пĕр мĕльюн тенкĕ ылтăн панă. Çавă юмахла кавир халь Лондонра.

Виççĕмĕш тапхăр туркмен кавирĕшĕн 1926 çултан пуçланать. Туркменистан ку вăхăтран вара — Союзлă республикăсенчен пĕри. Вăрçăсемпе выçлăхсем хыççăн юхăннă

кавир ĕçĕ çĕнĕрен вăй илсе тапранать. Кавир тăвакан артельсем уçăлаççĕ, паян куна çак артельсенче пĕр миллион халăхлă республикăран 25 пин хĕрарăм кавир ăстаçисем пулса ĕçлеççĕ. Виççĕмĕш тапхăр кавир ĕçĕнчи ĕлĕкхи мăшкăллă çураçусене пĕлмест. Суту-илӳ, пару-илӳ çирĕп организаци аллинче. Ку тапхăрăн темрен те паха енĕ: хальхи вăхăтра туркмен хĕрарăмĕ кавир ĕçĕнче творчествăлла вăй анчах пулса тăни. Туркмен хĕрарăмĕ ĕнтĕ, ĕлĕкхи пек, чыхăнаchыхăна çăм чавмасть, çăм çумасть, пĕветмест, арламасть, вăл хатĕр çип туянса, тĕртсе тĕрлес ĕçре анчах хăйĕн аслă пултаруллă вăйне парать. Ĕлĕк кавир ĕçĕнчи малтанхи ĕçсене тума туркмен хĕрарăмĕн пĕр тăваткăл метр кавиршĕн 140 сехет çухатмалла пулнă. Халĕ вăл ĕçсене пĕтĕмĕшпех машина туса парать.

Паян кун туркмен хĕрарăмĕ — кавир художникĕ ятсăр мар ĕнтĕ. Анна-Даний Назарова — Чарик Великав ячĕпе тăракан колхозри ăстаçă. Ăна пĕтĕм республика пĕлет. Камăн алли — çавăн алли теççĕ. Ют патшалăхран килекен тиркевçĕ сутăçсем те чи малтан Анна-Дание Назаровăна ыйтаççĕ. Акă тата Алиева юлташах илер. Ĕлĕк хут пĕлмен кавир ăстаçи халĕ республикăри пĕтĕм кавир ĕçĕн пуçлăхĕ, Тĕп ĕçтăвком членĕ.

Туркменистан экспортĕнче кавир 64 процент йышăнать. Çулталăкне туркмен хĕрарăмĕсем 20 миллион тенкĕлĕх кавир тĕртеççĕ.

Паллă деталь: ĕлĕкхи кавирсем çинче çын сăнĕ çук. Хĕвел тухăçĕнчи хăш-пĕр халăхсен саккунĕ çапла каланă: «Çын сăнне тума пултартăн пулсан — ăна сывлăш пама та пултар, — ку ĕç этемĕн ĕçĕ мар, вăл пĕр Аслă Турăран анчах килет».

Хальхи кавирсем тăрăх туркмен хĕрарăмĕ авалтан юлнă пуян еткерлĕхе епле сисĕмлĕн ăсласа илсе çĕнĕ шедеврсем панине куртăмăр эпир. Кунсăр пуçне хальхи кавирсем çинче хамăрăн аслă çул пуçсен хăватлăн ӳкернĕ сăнĕсене, мамăк хирĕсенчи колхозниксен савăнăçлă ĕçне кăтартакан тĕрĕсене куртăмăр эпир. Çĕнĕ пурнăç çуратнă телейлĕ этемсем паха пир-авăр тăрăхĕ çине нихăçан тĕс каймалла мар образсем пулса ĕмĕрлĕхе сăрланнă. Вара эпир каларăмăр: çын сăнне тума пултарнă художница — çав сăна ĕмĕр-ĕмĕр пурăнмалăх сывлăш пама та пултарнă иккен, мĕншĕн тесен вăл хăй, художница, çĕнĕ этемлĕхрен, этемлĕхе çул кăтартса пыракан аслă çул пуçсенчен хăйне валли ĕмĕрлĕхе çĕкленме сывлăш та, хăват та, чун та туяннă.

1934

МАМĂК УТРАВĔ

Ют патшалăхри пĕр чаплă инженер стратостат тума шухăш тытнă. Унăн хăйĕн шухăшне пурнăçлама техникăра кирлĕ тĕрлĕрен пир-авăр кирлĕ пулнă. Виçĕ çул шыранă инженер, виçĕ çул хушшинче хăйĕн çĕршывĕнче те, Европăри ытти патшалăхсенче те çитмен çĕр хăварман, тĕрлĕрен пуçлăхсене, хуçасене пуççапнă вăл. Тĕвене йĕп çăрти витĕр тухма епле йывăр — инженера та унăн аслă ĕçĕнче кирлĕ материал хатĕрлеме çавăн пекех йывăр пулнă, мĕншĕн тесен ĕçе кирлĕ материалсем ют патшалăхсенче пин-пин алăра, пин-пин çĕрте, вĕсене пин-пин тĕслĕ кăмăллă çынсем урлă шыраса тупмалла.

Çав инженерах пирĕн Совет Союзне килсе пире пирвайхи стратостат тума канашсем панă. Стратостат валли кирлĕ тĕрлĕрен пир-авăра (технически ткань) вăл пирĕн çĕршывра виçĕ уйăх хушшинче суйласа хатĕрленĕ. Мĕншĕн тесен пирĕн пĕтĕмĕшпех пĕр алăра, пĕр кăмăлта, пĕрлĕхлĕ аслă хуçалăхра, мĕн тĕсли кирлĕ — çавна суйласа ил. Пурте пур пирĕн çĕршывра, пурте пĕр çĕршыврах.

Çакă — тахçан такамран илтнĕ сăмах е пĕр-пĕр хаçатра тахçан вуланă тĕслĕх Вăтам Азинче çýренĕ чух тепĕр хут аса килчĕ. Ку тĕслĕхĕн чăнлăхне, хăватне эпир хамăр куçпа хамăр курса, хамăр ăш-чикĕмĕрпе хамăр туйса ĕмĕр манмалла мар пек ăсăмăра хутăмăр.

Акă эпир час киле таврăнатпăр. Пĕр-пĕр уяв кунĕ хамăр хула аэродромне кайăпăр, хăюллă çамрăксем пурçăн çунатлă парашютсемпе вĕçнине курăпăр, вара эпир пиртен тăватăпилĕк пин çухрăмра тăракан Узбекистанăн таса пурçăнне аса илĕпĕр.

Шупашкар магазинĕсенче куçа илĕртсе тăракан шурка тăрăхĕсем, йăл-йăл кулакан тĕрлĕрен çитсăсем, кăмăла тараватсатинсем куратпăр е пирĕн умра çара пурçăн тутăрĕсене хĕрле çавăрса çыхнă чăваш студенткисем иртсе кайнине курăпăр-и, — вĕсем яланах Казахстанпа Узбекистанăн чăлт шурă мамăкĕсемпе ытарайми пурçăнĕсене аса илтерĕç, пирĕн куç умне чаплă Пахта-Арал юр пек шурă мамăклă хирĕсем, Ташкентри текстиль хапрăк çитсисем, Самаркандри пурçăн хапрăкĕсем тухса тăраççĕ...

Ташкентран пĕр çĕр çирĕм çухрăм хĕвел анăçнелле кайсан Пахта-Арал ятлă совхоз пур. Ку совхоз Казахстанăн кăнтăрти облаçне кĕрет, Пахта-Арал совхозĕ — Казахстанăн савăнăçĕ. Казахстанăн çеç мар, пĕтĕм Вăтам Азин, пĕтĕм Совет Союзĕн. Паянхи Пахта-Арал урлă казах халăхĕ хăйĕн

аслă çĕршывĕн ыранлăхне курать. Çавăнпа та Пахта-Арал çинчен ку çырура уйрăммăн çырас килет.

Куçпа виçсе илейми тӳрем çеçен хир. Мĕн ир пуçласа каçчен хĕвел ачашлать, хĕрсе çитнĕ сывлăш, туртса карăнтарнă хĕлĕх пек, хăйне хăй янăраса тăрать. Сурса сурчăк ӳкмест, шăрăхпа йывăрланнă пуçа нимĕн те уçмасть, алчăранă, ĕшеннĕ куçсене нимĕн те савăнтармасть. Йĕри-тавра тăмлă хăйăр, хура кĕсен тĕслĕ чул кĕмĕрккисем, унта-кунта шăрчĕсемпе хăмсарса тăракан шăртлă курăксен типнĕ тĕммисем. Кунта — хайхи пур географи карттисем çинче те анлăн сарăлса выртакан Вăтам Азинчи Выçă çеçен хир.

Унччен те пулмасть — çул çӳрекенĕн ĕшеннĕ куçĕсем тĕлне ытарайми оазис тухса тăрать. Ку çĕршыва ĕлĕкхи географи карттисем тăрăх çех пĕлекен çын йывăррăн сывласа илсе мираж теме те пултарать. Анчах ку япала мираж мар, куç тĕлне пулнă ем-ешĕл вырăн — чаплă Пахта-Арал. Сарăхса кайнă вилĕ тинĕсĕн варринче ем-ешĕл утрав пек ларать Пахта-Арал. Арал — чăвашла *утрав*, пахта — *çĕр мамăкĕ*. Тĕрĕс каланă ку вырăна çакăнти çынсем — «мамăк утравĕ» тесе.

Мамăк утравĕ Пахта-Арал районĕн шурă пир çине тунă картти çинче — шурă хут листи çине çакса хунă ешĕл тĕслĕ линейка пек. Унăн тăршшĕ çирĕм тăхăр километр, сарлакăшĕ — сакăр километр.

Сырдарья шывĕнчен Пахта-Арал енне канал килет. Каналăн тăршшĕ Пахта-Арала çитиччен çĕр те пĕр километр. Çак канал тăрăх — этем хăй аллипе тертленсе уçнă çулпала чĕрĕлĕх çăлĕ юхать. Ку çул пырсан-пырсан пĕр юпленсе кайса ĕмĕр сая кайса выртнă вилĕ çĕре хăйĕн сиплĕхлĕ нӳрĕпе чĕртет. Кĕлленнĕ тăварлă çĕр тракторсемпе алăнса* йăтăнать, тăраниччен шыв ĕçет, вара унăн çине мĕн ӳкет — çав шăтать. Казах хресченĕсем калашле, ку çĕр валли шыв анчах пултăр, паян алри туяна чиксе ларт — ыран çав туяран ем-ешĕл çулçăллă йывăç ешерет. Çирĕм тăхăр километр тăршшĕ совхоз çĕрĕ тăрăх канал пырать. Çак канал хăйĕн юпписемпе икĕ айккинелле вунă пин гектар çине шăварать. Пĕр тĕпре икшер çĕр таран мамăк коробки чăмăртанать, люцернăна кунта çу каçиччен тăватă-пилĕк хут çулса илеççĕ, кунта дыньăсем лутка-кимĕ пек ӳсеççĕ, арбузсем çирĕм çичшер килограмм таран пулаççĕ. Ултă-çичĕ çул каялла лартнă адам йывăççисем пирĕн енчи утмăл-çитмĕл çул хушши ӳснĕ юмансем пек. Кăçал çуркунне акнă май-кине (клещевина) ятлă эмел курăкĕ пӳртрен çӳллĕ çĕмĕрт йывăççисем пек.

---

* Сухаланса.

Питĕ нумай вăй хумалла пулнă этемĕн çак вилнĕ паттăра чĕртме.

Пахта-Арал совхозĕн кун-çулĕ вăл — вĕçĕмсĕр пыракан хаяр кĕрешӳ çулĕ. Ку кĕрешӳ çут çанталăка хирĕç çех пуçланнă кĕрешӳ мар, ку кĕрешӳ — казах халăхĕн пĕтĕм асаплă аваллăхне хирĕç пыракан кĕрешӳ, аваллăхшăн чĕвен тăрсах çапăçакансене хирĕç — тулли пурнăçшăн, телейлĕ этемлĕхшĕн, пĕтĕм казах халăхĕн хисепĕшĕн тапраннă кĕрешӳ.

Совхоз 1925 çулта организациленнĕ. Парти сассине илтсе казах батракĕсем хăйсен ĕмĕтсĕр байĕсене пăрахса пин-пин çухрăмран Выçă çеçен хире шыв пама утнă. Ĕмĕр шывшăн, ĕмĕр çĕршĕн хур курса пурăннă чухăн дехкансем хулпуççи урлă хăйсен кетменĕсене (мотыгисене) уртса пулас Пахта-Арал енне илемлĕ ĕмĕтсемпе куçнă. Казах халăхĕн пархатарлă ывăлĕсем, мĕн ăс пĕле пуçланăранпа выçă хирсене чĕртес шухăшпа асапланса ӳснĕскерсем, аслă шкулсене вĕренме васкана. Вĕреннисем мĕнпур пек çамрăклăхне, пĕлӳне, пуçланă паттăр ĕçе пама хальхи Пахта-Арал еннелле çул тытнă. Вара чăтма çук шăрăх пуш хирте тата та шăрăхрах ĕç пуçланса кайнă.

Тăшман та çывăрман, «Алаш-Орда» контрреволюциллĕ организацин юлашкийĕсем, Дутов каяшĕсем, байсен евчисем хăйсен ылханлă ĕмĕчĕсемпе, çеçен хирти хура çĕленсем пек, Пахта-Арал еннелле шăваннă.

Ĕмĕтлисем каналсем алтнă, шлюзсем тунă, çуртсем лартнă, йывăçсем ӳстернĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, темиçе тĕрлĕ машинăсемпе сухалана, акнă.

Ĕмĕтсĕррисем каналсене пăснă, шлюзсене çĕмĕрнĕ, çуртсене ишнĕ, йывăçсене хуçнă, выльăхсене вĕлернĕ, машинсене пăрахăçа кăларнă, кирлĕ мар вăрлăхсем актарнă, хуçалăхăн туртăмне суя çулсем çине куçарма тăрăшнă, — сăмахран, пĕтĕм çĕршыва мамăк тăратакан вырăна темиçе çул хушши мамăк вăрлăхĕ тăвакан вырăн туса, тĕрлĕрен кирлĕ мар опытсемпе аппаланса çавă тем чул хĕнпе туртса илнĕ пуян çĕре сая ярса тăнă.

Тăшман çиеле тухайман. Ĕлĕкхи выçă хиртен большевиксем вун ултă пин гектар туртса илсе чи пуян совхоз, чи пархатарлă утрав туса хунă. Ку утрав ӳссех, сарăлсах пырать, Выçă Хир чакнăçем чакать. Вун çичĕ центнер мамăк парать Пахта-Арал гектарĕ. Агроном Хомич ĕçлекен Ильичевка отделенийĕ 30-шар центнер таран парать гектартан, кăçал Пахта-Арал патшалăха 12 мĕльюн тенкĕлĕх мамăк сутать. Мĕн чухлĕ мамăк вăл!

Хомич хисепленĕ тăрăх, Пахта-Арал кăçалхи мамăкĕнчен пир-авăр тĕртсен çав пир тăрăхĕ Мускавпа Пахта-Арал хушшине темиçе хутлама çитет.

Пахта-Арал хăйĕн паха ĕç опычĕсемпе, историйĕпе Вăтам Азинчи пур çамрăк совхозсемшĕн, пысăк колхозсемшĕн шкул пулса тăрать. Пахта-Арал кун-çулне пĕлекен совхоз час аталанать, ўсĕм çулĕ çинче пулас йăнăшсенчен асăрханать, мĕнле тусан епле пулассине малтанах пĕлсе тăрать.

Мамăк тăвас ĕçпе пирĕн Союзра мĕнле кăна çĕнĕ шухăш çуралать, мĕнле кăна çĕнĕ шухăш тухать — тўрех Пахта-Арала асăнать, Пахта-Арал тĕрĕслет, сăнать, вара хăйĕн сăмахне калать.

Пахта-Арал хăйĕн ĕмĕрĕнче ултă пин таран маçтăр мамăкçăсем вĕрентсе кăларнă. Вăл маçтăрсем халь Казахстанра, Таджикистанра, Узбекистанра, Кавказра.

Аван пурăнаççĕ кунти рабочисем. Ĕç хакĕ аван ўкет. Çапçутă хваттерсем, пуян лавккасем, йўн продуктсем. Рабочисем тăхăр тĕлте пурăнаççĕ (тăхăр отделени, кашни отделенин хăйĕн поселки, хăйĕн хуçалăхĕ, ĕç хатĕрĕсем, шкул, партипе комсомол организацийĕсем).

Ильичевка отделенийĕ — тĕп отделени. Вăл ултă-çичĕ çул хушшинче ўссе ларнă сулхăн вăрман айĕнче. Урамсем ик айккипе арык шывĕ юхать. Рабочисен хваттерĕсем тĕрлĕрен паха чечексем айĕнче. Ильичевкăра калама çук пысăк клуб. Ун пек клубсем пирĕн ятлă хуласенче те сайра. Тулли вăтам шкул, совхозуч, вырăсла, казахла хаçатсем, мамăк тапакан завод, механика мастерскойĕ, сысна ферми, сурăх ферми, 50 грузовик, 250 трактор т. ыт. те.

Хальхи вăхăтра мамăк пухас ĕçре лайăх ĕçлекен рабочи кунне 18 тенкĕ таран ĕçлесе илет.

Совхозра ударниксен шучĕ 2500 çын ытла.

Совхозра ятлă çынсем: Орлов — совхоз директорĕ, ирçе, ĕлĕк рабочи пулнăскер, СССР Тĕп ĕçтăвком членĕ, Ленин орденĕпе парнеленнĕ. Семенов Урзали — казах, ĕлĕкхи батрак, малтан совхозра чернорабочи, кайран — тракторист, шофер, халĕ — автоĕçĕн механикĕ. Совхозра — мĕн совхоз пуçланнăранпа, Хомич — белорус, ĕлĕкрех совхоз рабочийĕ, халĕ агроном тата Ильичевка отделенийĕн начальникĕ. Краснов Захар, чăваш çамрăкĕ, паллă пахчаçă. Рисмухамедов Сарсен — казах, мамăк ĕçĕн маçтăрĕ, çамрăк агроном.

7—8 çул ĕлĕк совхоз директорĕ Орлов юлташ мамăк ĕçне вĕренме Америкăна кайнă. 1933 çултанпа мамăк ĕçне вĕренме Америкăран Пахта-Арала çўреççĕ. Чи малтан Аме-

рикăран мамăк ĕçĕн докторĕ, ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн директорĕ Харлант килнĕ. Харлант Пахта-Арал хирĕсене курсан хăйĕн куçне хăй ĕненмен. Вара вăл вăрăммăн сывласа янă та çапла каланă: «Çакăн пек хуçалăха илсе пыма Совет системинче çеç пулать, мĕншĕн тесен кунта пĕрлĕхлĕ хуçалăх планĕ».

Харлант доктора совхозра çамрăксем, уйрăммăнах руководствăра, ытларах ĕçлени тĕлĕнтернĕ. «Мĕншĕн пур ĕçре те çамрăксем?» — тесе ыйтнă вăл. Çамрăк Хомич ăна çапла каланă: «Пирĕн республикăмăр та хамăр пекех çамрăк, çамрăкра пуласлăх, эпир хамăр пуласлăха витĕр курса тăратпăр, çавăнпа та эпир парти чĕннине чи малтан чĕрене илсе мĕнпур харсăрлăхăмăра парса ĕçлетпĕр. Хытхура ўсмен çĕрте шур ылтăна акса тăватпăр, вĕлтрен шăтман çĕрте сиплĕхлĕ сулхăн паракан вăрмансем ĕрчететпĕр, тыркас йăва туман çĕрте хуласем лартатпăр», — тенĕ.

Тулли пурнăçпа пурăнать мамăк утравĕ. Кашни канмалли кунсенчех туй-çуй — çамрăксем авланаççĕ, качча каяççĕ. Ача амăшĕсемпе пĕчĕк ачасем утрав çинче — чи хисеплĕ гражданнсем.

Утрав ўсет, вăл çултан-çул аслăлансах пырать, Вылçă Хир тинĕсĕ чакнăçем чакать. Нумай вăхăт иртмĕ, мĕнпур Казахстан, мĕнпур Вăтам Ази çĕршывĕ çак утрав пек пулĕ, ун чух вара «Мамăк утравĕ» темĕç, «Мамăк тинĕсĕ» тесе ят парĕç.

1934

ЙĔПРЕÇ ÇУЛĔСЕМ

(Иртнĕ-çўренĕ чух çырса илнисем)

Кăçал мана Йĕпреç çулĕсем тăрăх çўреме тĕл килчĕ. Çўрекен çын нумай курать, нумай илтет, çулпала иртнĕ чух е пĕр-пĕр çăл сулхăнĕнче канса ларнă чух унăн пуçне тĕрлĕрен тĕрлĕ шухăшсем кĕреççĕ. Çул ăçтан пуçланать, ăçта пĕтет — ăна никам та пĕлмест. Тен, çул çўрекенĕн шухăшĕсем те çавăн евĕрлех пуль, вĕсем те, çулсем пекех, пырсан-пырсан пĕр юпленсе, е такăр йĕрпеле, е этем ури сахал пуснă сукмакпа кĕрсе каяççĕ.

Акă эп Йĕпреçпе Патăрьел хушшинчи çулпала пыратăп. Çул такăр, çутă, эпĕ каяс тĕл ывăç тупанĕ çинчи пек курăнать. Утма çăмăл, пуçри шухăшсем те, хампала пĕрле чи çывăх тус-йышсем калаçса пынă пек, вăрăм çула кĕскетме пулăшаççĕ.

* * *

Вăл хĕрĕх çул ытла ĕлĕкрех пулнă. Мускавпа Хусан хушшинче хывса пĕтернĕ чугун çулĕ тăрăх пĕтĕм тавралăхăн сехрине хăпартса пирвайхи пуйăс пынă. Çеçен хир чĕтресе юлнă, хура вăрман тăрсан-тăрсан пĕр уласа янă. Хуйханнă кайăк-кĕшĕксем чăл-пар саланса пĕтнĕ, пăлан кĕтĕвĕсем тăрăна-тăрăна ўксе, тĕкĕшсе-сĕкĕшсе аяккалла тарнă.

Вутлă урхамах çул май ĕлĕкхи Пăва уесне те кĕрсе тухнă, вăл Йĕпреç ятлă чăваш ялĕ тĕлĕнче пĕрер самантлăха чарăнса хаяр сасăпа шыв ыйтса илнĕ те хыпса çунан ăшчикне пусарса каллех тĕк татнă пек малалла чуптарнă.

Йĕпреç енчен тухнă хаяр сасă Кĕтне шывĕн лăпкă улăхне те вăратнă. Ваттисем каланă тăрăх, Кĕтне çинче ку сасса чи малтан сулăçă Мартин илтнĕ. Вăл вара, темĕнле кăвак хуппи уçăлса хупăннине курнă пек, «ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕм çиттĕр» тесе сасă еннелле сăхсăхса илнĕ тет те пилĕкçурăмсăр хăварнă Кĕтне шывне типме ылханса Йĕпреç еннелле çул тытнă пулать.

Тĕрлĕ çĕртен тĕрлĕ шыв юхать. Акă ватă йăмра айĕнчен тăрна куçĕ пек тăп-тăрă çăлкуçĕ йăлтăртатса тухать. Ку çăлăн ятне эпĕ пĕлместĕп, вăл ăçта кайнине, хăш çырмана кĕрсе хăш тинĕсе çитсе тухнине те никам та пĕлес çук, мĕншĕн тесен ку çăлăн пурнăçри шăпи ытла та пĕчĕккĕ. Тен, вăл хăйне валли çул шыраса çакă хура вăрманта чылайччен аташса çўрет пулĕ, вара хăйне юлташ тепĕр ятсăр çăлкуçне тупса унпа пĕрле пĕр вăй пулса ятлă пысăк çырана юхса кĕрет пулĕ. Анчах эпĕ пĕлетĕп: çакăн пек, нимле карттă çинче те ят илмен пин-пин çăлкуçĕсем пулмасан Аслă Атăл та тулли юхмĕччĕ. Сўнччĕр-ха çак çăлкуçсем, вара пирĕн Атăл та хăрăк шырлан пек типпе юлĕччĕ. Çавăнпа та Атăл хăйĕн тарават айлăмĕн хăватлă туртăмĕпе çакă çăлсене пин-пин çухрăмран пуçтарать, вĕсем Атăла-Сĕве пулса, Сăр пулса, Çавал пулса юхса кĕреççĕ.

Чăваш çыннисем вырнаçнă çĕршывра çул-йĕрсем ĕмĕрĕмĕрĕн ятсăр çăлкуçсем пек, хăйсен тĕп туртăмне шыраса çўренĕ, вĕсем юплене-юплене хирсем урлă каçнă, тарăн варсене ана-ана кайнă, хура вăрмансене кĕрсе çухалнă. Анчах хăйсен тĕп туртăмне вĕсем тупайман: пушă хирти юхан шывсем пек, вĕсене пырсан-пырсан пĕр çĕр çăтнă. Çавă çулсемпе пурлăх çўремен, вăл çулсем хăйсен юлашки кунĕсене пурăнакан ватсупнă суккăр ыйткалаканăн йĕрĕсем анчах пулнă...

Мартин хаяр сасă енне васкасах утнă, вăл, чее ăс-

пуçлă чăваш, Йĕпреç енчен килнĕ йыхрав мĕн ĕçпе чĕннине наччасах туйса илнĕ. Унăн киремет хырри айĕнче пĕр тăм чӳлмек пурлăх ним усăсăр упраннă. Çав пурлăха чавса кăларас ĕмĕтпе çуталнă çулпала Мартин йыхрав енне васканă.

Тепрер çултан Мартин Йĕпреç станцинче кантур пек çурт лартнă, унăн тырă кĕлечĕсен авăр пек пӳлмисем пӳ ярса пӳ çитейми пулнă, станци тулашĕнче Мартинăн вутлă арманĕ халтлатса ларнă. Нумай та иртмен — тырă илекен Мартинăн чапĕ пĕтĕм таврана сарăлнă. Мартин патне унтан та кунтан çул уçăлнă. Ĕмĕртенпе ĕмĕтсĕр çухалса çӳренĕ суккăр çулсем хăйсен туртăмне шыраса тупнă. Пăва земстви Мартинсен кăмăлне пула станцăпа уес хули хушшине 90 çухрăма аслă çул хывнă. Пурлăх куçа пуçланă. Мускавпа Хусан хушшине тăсăлса ӳкнĕ магнит пĕтĕм пурлăх çулĕсене хăй енне çавăрнă. Вуншар çул ларнă кив капансем хăвăрттăн шĕкĕлченнĕ. Яла урăх сĕм çапнă. Çĕр вăрçисем хирĕле-хирĕле киле пуçланă. Пуян çурчĕсем кивĕ чĕренчепе йăшнă улăма сирсе пăрахса хĕç тимĕрпе витĕннĕ. Кулак хăй тарçисен штатне ӳстернĕ. Чухăнсен çĕрĕ пуянсен аллине куçа пуçланă, пыра киле вĕсен (чухăнсен) пĕртенпĕр çулĕ — ĕмĕрхи йăлапа бурлака е пĕр-пĕр хапрăк-савăта каясси çеç юлнă. Çаврăнăçуллăрах ал-уралла çынсем сутăва тытăннă. Ехрем хуçа пĕтĕм Атăл тăрăхĕнчи чи янравлă хуçасенчен пĕри пулнă. Селиван хуçа пухакан çăмартасем акăлчан лорчĕсен кĕрекине илемлетнĕ. Пĕр сăмахпа каласан, капитализм хывтарнă çул Чăваш çĕршывĕ урлă ахаль иртсе кайман. Унччен пăчăхса пурăннă пурлăх вăйĕсем тĕнĕсем витĕр сывлăш туяна пуçланă. Анчах ку сывлăш пуян Мартинсемшĕн кăна сиплĕхлĕ пулнă. Хуларан хулана тăсăлнă тискер тимĕр çĕлен хăйĕн икĕ айккинелле çулйĕрсем мар, юнлă тымарсем янă. Çакă тымарсем тăрăх капитализм ĕç халăхĕн юлашки сĕткенне туртса пурăннă...

Çапла пуçланнă Йĕпреç çулĕсен историйĕ.

...Райком секретарĕ Храбров юлташ хăйĕн делегацийĕпе Тĕп ĕçтăвкомăн кăçалхи май уйăхĕнче пулса иртнĕ сессийĕнчен Шупашкарти ĕçсене пĕтермесĕрех хыпаланса тухса кайрĕ. Йывăр чăтмашкăн хытă сăмаха. Йĕпреçсене пĕтĕм сесси маттур çул-йĕрсен республикĕ ячĕпе ятларĕ. Анчах нимĕн тума та çук, республика сăмахĕ мĕн чул йывăр пулсан та — чăтас пулать, — пирĕн республика ячĕпе мĕнпур Союзри çул-йĕрсен судйи калаçать. Чăнах та, мĕнле манăça хăварнă пулать-ха çакă пысăк ĕçе Йĕпреç большевикĕсем? Çур акине лайăх ирттерчĕç, финанс ĕçĕ республикипех малта пырать, районра — пурлăх кĕрет, пурлăх

тухать, культура сарăлать, таçти-таçти çĕрсем Йĕпреç станципе çыхăннă, анчах çапах та çав пурлăхпа культура çýрекен çулсене йĕпреçсем манса хăварнă.

— Хăвăртрах хăвала, Микишов! — тет хăйĕн шоферне секретарь.

Машина ахаль те тĕк татнă пек каять, телеграф юписем вĕлтлетсе çеç пыраççĕ, сехетре 70—80 километр хыçала юлать. Çул лайăх. Микишовăн аллисем руль çинче савнин чĕрçи çинчи пек канса пыраççĕ, мĕншĕн тесен Йĕпреç машини халĕ урăх районăн такăр çулĕпе вĕçтерет... Сасартăк:

— Тпру! Хулленрех, Микиш!.. Атту кунта пуç чашкисĕр тăрса юлатпăр.

— Хамăр района кĕтĕмĕр, Храбров юлташ.

Çапла таврăннă сессинчен Йĕпреç делегацийĕ.

Массăсене наччасах çĕклеме йывăр. Анчах халăх пĕр хавхаланса кайсан унпа пĕрле пĕр ĕçре пулса ертсе пымашкăн çех пĕл. Колхозпа пĕрле пирĕн ялсене темĕн чул çĕнĕлĕх кĕчĕ. Çĕнĕ япала хăнăхиччен яланах тýрккессĕн туйăнать.

«Акă чăваш сĕлли вырăнне темĕнле «дипĕ» актараççĕ, пĕлнĕ çынсем каланă тăрăх, вăл ытла та типпипе лаша шăлĕсене пĕтерет тет. — Йышăнас мар!» «Акă пăри вырăнне тулă актараççĕ. Нихăçан шăл туни пытаниччен çăкăр çимен чăваша çăвар тулли кулач çитересшĕн. — Йышăнас мар!» «Акă юр кайнă-кайман шăнлă пăрлă çĕр çине тырă актарасшăн. Лайăх пулать теççĕ. — Йышăнас мар!» «Акă çулйĕр тума каймашкăн чĕнеççĕ. Авал çаплипех пурăннă. — Йышăнас мар!»

Халĕ колхозăн пухăвĕнче пĕр-пĕр çур вальтерех этем тухтăрччĕ те: «Дипĕ» ытла типĕ, ăна ан акăр. Тулă ытла тутлă, пăри акăр. Иртен те ир акни — çĕре сая яни, çулйĕр ĕçĕ шăм-шакка кансĕр», — тесе калаттарасчĕ.

Мĕнпур пуху пĕр сасăпа:

— Хăвалăр ăна! — тесе аça та çиçĕмĕн тулхăрса ярĕччĕ.

Петров юлташ калашле, çул-йĕре тирпейлĕн, лайăх, илемлĕн тытасси чăваш ĕç халăхĕн кулленхи йăлине кĕчĕ те ĕнтĕ. Анчах çак йăла паян кунччен те пĕтĕмĕшпе мар-ха.

Йĕпреç вăрманне хир енчен пĕр обоз кĕрсе кайрĕ. Ку лавсем юхма енчен килеççĕ иккен. Аслă çул сарлакăшĕпех хăйăр кĕрчĕсем хĕвĕнсе выртаççĕ. Çак яштăркка хăйăр çул çýреме пылчăкран усал, лаша ури пакăлчак таран путать, тиевлĕ лав кýпчек таран анать, кирек мĕнле маттур ут та кунта ĕшенет.

Машина ку çулпа — хăй пĕрре çийĕнет, тепре, чĕри татăлса çитнĕ выльăх пек, бензин ĕçет. Çак çула çул пай пуçлăхĕ Матвеев та юратмасть. Акă вăл, çулсене тĕрĕслесе тухнăскер, «чуман» велосипедне çавăтнă та аран-аран сулланса пырать. Матвеев ăшша пиçнĕ, халтан кайнă, велосипеда çĕклесе 18 çухрăм вăрман урлă каçиччен унăн вун сакăр хут тарĕ тухрĕ, çавăнпа та халь кăна çакă «шуйттан урапине» Кĕтне шывне ытса хăварманнишĕн хăйне хăй çĕтĕлсе пырать.

— Юлташ, — терĕ хиртисенчен пĕри лашине сывлăш çавăрмашкăн чарса, — мĕнле дикарьсем пурăнаççĕ çак районта, кун пек çул эп ку яхăнта ниçта та курман.

Матвеев урмăш бюрократ пек нимĕн те чĕнмерĕ. Анчах ăна бюрократизмшăн ятламалли çук — унăн çăварĕ типсе куштăркаса кайнă, чĕлхи унаса хытарнă замазка пек, çăвар тўпине çыпçăнса ларнă.

— Чăнах та, — терĕ Матвеев çырма хĕррине çитсе пĕрикĕ карттус шыв ĕçнĕ хыççăн. — Хирти чăваш «замечанийĕсенче» чăнлăх çук мар...

Вара Матвеев Корезино вырăсĕсене аса илчĕ. Пĕрре вăл Корезино ялне çул тўрлетме каламашкăн пынă. Ăна унта «влаçсем» ăратлансах йышăннă: «Юрать, эсир каланă пек пулĕ, ыранах тухатпăр», — тенĕ...

Тепĕр эрнерен Матвеевăн каллех Корезино ялне çитмелле пулнă. Вăл çĕнĕ çулпа пырса яла вашлатса кăна кĕреп тенĕ чухне машина тап чарăннă. Чурачăксем тунă культурăллă çул пĕтнĕ, Корезинăсен «адам чухнехи» çулĕсем пуçланнă. Яла кĕрсен Матвеев пĕр мыскара курнă. Аслă урамра урăм-сурăм ахăрса тăнă. Чике сухалла каска пек этемсем йўле пилĕкĕн, çарамас лапăстатса хĕвĕшнĕ. Вĕсем хушшинче рычаг пек ал тăвисем шăхăрса çўренĕ. Кунта йĕрў те, шăл кăтарту та пулнă. Корезино ялĕсем ватти-вĕттипех хулалла (чушкăлла) вылянă...

Яланах асăрханса пусакан Матвеев кунта та теветкеллĕ утăм туман, вăл «вăйăран вăкăр тухĕ» тесе варт анчах çаврăннă та лăпкă урама ўксе колхоз правленийĕ енне çул тытнă.

Колхоз правлениннче пуçне сĕрĕм тивнĕ «товарищ Угаров» пуçлăхра ларнă. Матвеев ўпкелешнине хирĕç Угаров: «Кам ĕçлекен ĕçлетĕр, манран пулмасть», — тесе сыв мар пуçĕ çине кăтартнă.

— Вот дикарьсем, — тенĕ вара Матвеев та.

Майăн 30-мĕшĕнче Йĕпреçре райĕçтăвкомпа райкомăн сарлака пленумĕ пулса иртрĕ. Ку пленум çул-йĕр уйăхлăхне хăват кўртес тĕлĕшпе пысăк вăй пулса тăчĕ. Район хăй

çул-йĕрсем тĕлĕшпе пархатарсăр вырăна тăрса юлнине шайласа илчĕ. Ку пленумра климкассисен сăмахĕ ытла та хытă тиврĕ. Климкассисем Канаш тракчĕ çине хăйсен участокне куçкĕски пек çутатса хунă. Çав вăхăтрах кӳрĕш ялсен (Туçа) мĕнле пулнă çаплах юлнă, вĕсен çулĕпе иртсе çӳрекенĕн тинки тухнă.

— Асту, Сидоров! — терĕç климкассисем Туçа колхозĕн председательне.

— Каларĕ тесе калăн, хăвăр участока тӳрлетме пуçличчен сирĕн ял çынни пирĕн çул çине ура та ярса ан пустăр. Пирĕн çула мăшкăл тăватăр эсир. Сидоровшăн тата ун евĕрлисемшĕн ку пленумра ларма чыслах пулмарĕ.

Тепĕр кун Йĕпреç çулĕсем çине кăткă пек халăх тухнă. Сидоров та çынран юлман, юлма мар, пăртак ирттернĕ те — халăхпа пĕрле ик-виçĕ купăс çĕклесе тухнă, çитменнине Туçа хĕрĕсен паллă хорĕ пĕтĕмĕшпех тенĕ пек ĕçре.

Шофер тарăхать:

— Пăрахатăп луччĕ, — тет. — Машинăна та канăç çук, хама та. Ирхине кăвак çутăлла тăратăн та мĕн тĕттĕм пуличчен...

— Ничево, — тет Храбровĕ, — ĕçлени йывăр сăмах илтни мар. Лайăх çул хăвнах лайăх...

— Вăл çаплине çаплах та...

Райĕçтăвкомăн «ГАЗ»ĕ кун каçиччен районта çитмен вырăн хăвармасть. Ĕç аван пырать пек, халăх хавхалансах ĕçлет, анчах çавăнтах тĕрлĕрен чăрмавсем сиксе тухаççех. Акă Чăваш Тимеш единоличникĕсем утмăл-çитмĕл çын тухнă, вĕсенчен лавлисем 5—6 çын анчах. Ĕç тĕрĕс йĕркеленмен, çынсем аптранă енне йывăçсен сулхăнне кая-кая ӳкнĕ. Энтриялсем торф тупаймасăр хăшкăлнă. Секретарь машина çинчен сиксе анса пĕринчен кĕреçе ыйтса илчĕ, унтан сарлака утăмсемпе вăрмана кĕрсе кайрĕ. Пĕр çирĕм чалăш та каймарĕ пуль — вăл хăй патне ĕçлекенсене чĕнсе те илчĕ.

Çынсем пынă çĕре секретарь ем-ешĕл мăк айĕнчен читнай тĕслĕ сап-сарă торф кирпĕчĕсем кăларать.

— Куртăр-и?

— Куртăмăр, — теççĕ лешсем аптраса юлса.

— Ну, вăт çак торф пирĕн хăйăрлă çулсемшĕн пит сиплĕхлĕ япала, вăл аскăн хăйăра çат кăна хытарса лартать. Акă çакăнтан (ал лаппине тӳртĕн тытса) çӳхе ан сарăр... Ну, атя, Микишов!

Анчах Микишовĕ таçта аякрах, вăл автомобиль тулли хĕр упраç тиенĕ те катаччи чуптарса каялла таврăнать.

Хĕрсем автомобиль çинчен хур акăш пек какăлтатса вĕçсе анчĕç. Пĕри, çĕмиллĕреххи, чăтаймарĕ:

— Храбров юлташ, кăçал манăн туй пулать, туй-çуй тума машинăна обязательнă пар, — терĕ те каласа пĕтернĕ-пĕтерменех тантăшĕсем хушшине тарса пытанчĕ.

— Обязательно, обязательно!.. Малтан тулккĕ çулне лайăхрах якатăр, атту туй кӳми хĕрĕ-мĕнĕпех ӳпне-питне чикеленсе кайĕ.

Халăх кулса, шавласа тăрса юлчĕ.

Машина Тимеш колхозĕн участкине çитсе чарăнать. Хирĕç пĕр хăмăр сухалла вăтам çулсенчи çын темĕнле хура кирпĕч йăтса пырать.

— Пăхăр-халь, юлташсем, сирĕн валли кучченеç хатĕрлерĕмĕр.

— Мĕн ку?

— Хăвăрăн пĕлмелле.

— Нивушлĕ ку торф?

— Шăп çавă. Кунта эпир пĕлтĕр пĕр пĕчĕк участкăна сăнамалăх сарнăччĕ. Паян çав участокран пĕр кирпĕч катса илтĕмĕр — ĕненменнисем валли. Тимĕр кĕреçе касаймасть, чул пек хытса кайнă. Çав тĕлти çул кĕрне-çуне пăхмасăр йĕтем пекех тăрать.

Шофер, колхознике ĕненсех пĕтермесĕр, тепĕр катăк катса пăхрĕ. Çĕр кăмрăкĕ пек! Опыт — тĕлĕнмелле! Йĕпреçĕн аскăн хăйăрĕ пусарăнать.

Машина малалла каять. Çитес участокра чăрăшкассисем ĕçлеççĕ. Машина чарăнать. Бригадир хирĕç пырса алă парса тухать.

— Акă мĕн, Иванов юлташ, эсир ĕçе ача-пăча вăйăйилле кăна тăватăр. Мĕнле-ха вăл çакăн чул хăйăра çакăн чул торфпа лăплантараççĕ? Çăкăр чĕлли çине ача-пăчана песок сапса парса йăпатнă пек аппаланатăр. Пырăр пĕр-икĕ çын тимешсем патне, вĕсем сире мĕнле тумаллине вĕрентсе ярĕç...

Машина тăманлă выçлисен участкине çывхарать. Лариван Элекçейĕ, 63-ри шӳтник старик, лутраскер, тем вăрăмĕш хура сухалĕпе чут çех чăлханса ӳкмесĕр, çул çине вĕçтерсе тухать, унтан тӳп-тӳррĕн карăнса илсе машинăна хирĕç сылтăм аллине яш çĕклет. Машина чарăнать.

— Икĕ Рахман, пĕр-пĕрне пăрахман, эпир те, юлташсем, пĕр-пĕрне пăрахас çук. Эсир каланине тунă, малтан торф сарнă, унтан хăйăр сапнă! Каллах торф сарнă, каллах хăйăр сарнă. Икĕ хут торф, икĕ хут хăйăр, паян кунтан пирĕн çул уçă, пиртен — ирĕк, пӳлĕхрен — пиллĕх, пар туртма — лайăх пирусна, — тесе пĕтерет старик хăйĕн «рапортне».

— Молодец! — тет секретарь, Элекçей пиччене сухалĕнчен лăпкаса.

— Рад старатсă, — ответлет старик, тахçан авал салтак пулнăскер.

«Рапорт» хыççăн Элекçей салтак «вольно» команда парсан, пĕтĕм халăх килнĕ çынсене тата машинăна сăрса илет. Шофер каллех катаччине каять. Автомобиль çине тиеннĕ хĕрсен пичĕсем улма пек пиçсе пыраççĕ, стариксен кăлкан пек шурă сухалĕсем ăшă кулă евĕр ачаш çилпеле вăль-вăль чăхенеççĕ.

Маттур ĕçлеççĕ выçлисем. Ваттисем те кая юлмаççĕ; кая юлма мар, вĕсем çамрăксемпе тан пĕтĕм ĕç коллективне хавхалантарса пыраççĕ.

Акă Абросимов Пракахви, вăл чаплă çул-йĕр ударникĕ Тябуковăн юлташĕ, — 78 çулта. Кăçал Пракахви пичче çул ĕçне тухас тесе те шухăшламанччĕ, ватлăх çитнĕ ĕнтĕ. Çапах вăл чăтаймарĕ, тухрĕ-тухрех. Пĕрре çапла Выçлине автомобиль килет, ăна Пракахви пичче, урампа утса пыраканскер, курах каять. Унччен те пулмасть, машинăран: «Лар, асатте!» — тенĕ тарават сасă илтĕнсе каять.

Пракахви пичче нумай шухăшласа тăмасăр-тумасăр сикет те ларать. Çапла вара вăл çав кун пĕтĕм ял-йыш умĕнче чыс курать. Тепĕр кун Пракахви кĕреçе тытать те çул тӳрлетме уттарать.

— Раç çавăн пек ыр япалана усал çулпала çӳретме юрать...

Абросимов старик хыççăн Архипов Иуда та юлмасть:

— Мана мĕн, эпĕ Пракахви çумĕнче — авланмалли каччă кăна вĕт.

Чăнах та, Иуда пичче çитмĕл пĕрте кăна-ха...

Кăçал евитленĕ çул-йĕр уйăхлăхĕ Йĕпреç çулĕсене чылай тĕс кĕртрĕ. Район хăй çинче выртакан намăса сирес тĕлĕшпе пикенмеллипех пикенчĕ. Нумай ял ĕçтăвкомĕсем хăйсен харсăрлăхне тивĕçлипех кăтартрĕç. Акă Канаш тракти çинче Вырăс-Тимешпе Климкасси участкисем. Вĕсен çулне тухсан лашасем ăраснах хумханса юртаççĕ, пуçĕсене ухса çеç пыраççĕ, кустăрма çăмăллăн та çемçен çаврăнать. Автомобиль пĕрре куç хупса иличчен пĕр çухрăм каять. Климкасси çулĕпе иртсе кайнине сисместĕн те, мĕншĕн тесен çакă çула тăрăшса çынсем сисиччен ĕçлесе тунă.

Акă тата Йĕпреçпе Патăрьел хушшинчи тракт. Кам астăвакан астăвать — çак çул пирки ĕлĕксенче чи хăрушă хыпарсем çӳренĕ. Хир енчи çыннăн Йĕпреçе каймалла пул-

сан тахçан малтан чун сӳлетме тытăннă. Ку çул çырма-çатралла, шывлă-шурлă, вырăнĕ-вырăнĕпе ашса тухайми хăйăрлă пулнă. Йĕпреçĕн хура вăрманĕ урлă вун сакăр çухрăм хушши тĕксĕм те тĕттĕм, кукăр-макăр тискер çул каçнă. Çакă вăл Пăва земстви уçнă çул пулнă. Ку çулăн тертлĕхĕ çинчен вĕçĕ-хĕррисĕр выртакан хуçăк тĕнĕлсем, çĕмрĕк кустăрмасем лайăх калатчĕç. Пырсан-пырсан — пĕр чĕрĕ йывăçсем çинче пуртăпа касса тунă вилĕ хĕресĕсем куçа курăнатчĕç, кунта иртен-çӳренсене хурах пусса вĕлернĕ. Бандит Калюков, вăрă Шакур ĕрĕхтерсе çӳренĕ çакă çулпала. Ку вăрмана пĕр енчен кĕрекен тепĕр енчен сыввăн тухма сахал шаннă, ку çул çинче темĕнле чĕреллĕ çын та кайăка тухса кайнă, вăрман паракан кашни сас уншăн тăшманнăн туйăннă, вун сакăр çухрăм хушши çӳç-пуç вирелле тăрса пынă...

Халĕ ак йăлтах урăхла. Тракт çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ тăсăлса выртать. Аслă та ирĕк ку çул. Иксĕлми кăмăллă хĕвел пĕр çакă çула çутатасшăн çеç пăхнăн туйăнать. Тискер те тĕксĕм çулран — çутă, хавăслă çул тăвас тĕлĕшпе кунти ĕç халăхĕ сахал мар ĕçленĕ. Ёмĕр ларакан кутамас юмансене тӳнтернĕ, авалхи хырсене каса-каса янă. Мĕн чул тымар хăпăтман, мĕн чул çĕр çĕклемен! Çавăнпа та çак аслă çул мĕнпур тулли кăмăлпа, илемлĕ çуркунне евĕр, йыхравлăн кулса çеç тăрать, хăйĕн торфпа кĕççеленсе витнĕ тикĕс çийĕпе çăмăллăн чуптарать, ешĕл вăрман илемĕпе, чечексен ырă шăршипе, кайăк-кĕшĕксен сассипе мĕн вăрмантан тухичченех ăсатать.

Ку çулпа пынă чух эсĕ кашни çухрăмра тенĕ пекех тирпейлĕн туса хунă хыçлă тенкелсем куратăн, ĕшеннĕ пек пултăн пулсан — ларатăн та канатăн.

Акă сан куç тĕлне, канса ларнă чух, шурă юпа çине çапса хунă хĕрлĕ хăма пулать. Хĕрлĕ хăма сана тăван чĕлхепе çул-йĕрсене мĕнле пăхмалли çинчен вĕрентет. Кун пек хăмасене эс çул çинче тăтăшах куратăн, пурне те вуласа тухма вăхăту пулсан вăрман урлă каçиччен эс пĕтĕм çулйĕр ĕç наукин курсне вĕренсе тухатăн.

Тен, санăн пăртакçă çырткалас та килет пулĕ. Апла пулсан хутаççуна салат та çимӳне кăлар. Çăл та кунта инçе мар, çăл шывĕ тăрна куçĕ пек тăп-тăрă йăлтăртатса выртать. Кун пек çăлсем сан çулу çинче татах та пур. Акă Вăрнара каякан тракт çинче Шĕпекеч колхозникĕсем çăла пура ярсах тирпейленĕ. Йĕри-тавра канлĕ тенкелсем лартса тухнă. Ку тенкелсем тепрер çултан вĕрене, каврăç йывăççисен сулхăнĕнче пулаççĕ.

Эсĕ кантăн, апатлантăн, питне çурăн, шăлăнтăн, халĕ

малалла утатăн. Сана хирĕç тиевлĕ лавсем, таварпа тулнă грузовиксем, çăмăл автомобильсем иртеççĕ. Вĕсем пурте хуларан яла васкаççĕ, вĕсене пурне те лайăх çул, çăмăл çул кирлĕ.

Этеме юн çулĕсем мĕнле кирлĕ, пирĕн çĕршывăмăра та çакă çулсем çавăн пекех кирлĕ. Республикăн картти çине пăхăр-ха: епле унта çул-йĕрсем юн тымарĕсем пек туратлана-туратлана каяççĕ. Çав туратсем ăçта çитеççĕ — çавăнта пурнăç пур, ăçта турат парка та вăйлă каять, унта пурнăç тĕрекĕ çитĕнет. Пирĕн çулсем тăрăх пурнăç чупать. Юрăхсăра тухчăр-ха çав пурнăç çулĕсем — вара пĕтĕм чечекленекен çĕршыв пăчланнă, сывлăшсăр пулнă пулĕччĕ.

Мĕнпур тĕнчепе çыхăнса тăман çул-йĕр пачах та çук. Акă çакă çулпала Мускава кайма пулать, вăлах сана Магниттуне илсе çитерĕ, Украинăна ертсе кайĕ, Белоруссине, Башкирине, Туркестана...

Çакă çул пĕтĕм социализм тĕнчипе çыхăннă. Çак çулпала Сталинград тракторĕ, колхоз тырри, Иваново мануфактури, Мускав культури çӳрет...

Анчах Йĕпреç тăвас пеккине йăлтах туса çитермен-ха. Пур ял та ĕçе пĕр пек тухса пĕр евĕр пахалăхпа туса кĕмен. Кун çинчен Канашпа Вăрнар тракчĕсем аван калаççĕ. Хăшпĕр ялсем хăйсен ĕçне çăвар вылятмалла кăна тунă (Йĕпреç ялĕ, Энтриел тата ыттисем те). Ланкамсене, техникăн саккунĕсене пăхăнмасăр, мĕнле аса килнĕ çапла питĕрсе лартнă, вара лешсем пĕр-икĕ лав иртсе кайнă шеппех каллех ĕлĕкхи пекех пулса юлнă. Хăш-пĕр ялсем тата торфа ытла шелленĕ, вăрман торфсăр тăрса юласран хăранă пулать. Чĕркуççи таран путакан хăйăрлă çул çине çурхах хулăнăш торф сарнă. Нимĕн усси те пулман, хăйăр çавçавах ашкăнса выртать.

Йĕпреçсен çул-йĕр тĕлĕшпе тепĕр инкек палăрать. Вăл — ĕçе пĕр çи тытăнса тăвас та кайран ун çинчен манса каяс. Июнĕн малтанхи эрнисенче йĕпреçсем çул-йĕр ĕçне мĕн чул вăй хучĕç, мĕн чул лайăх çулсем туса тухрĕç. Анчах, акатуйне кайса килнĕ юлташсем каласа панă тăрăх, чылайăшĕ халĕ çавă çулсенчен пăрахăça тухас пек.

Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен Йĕпреç районĕнчи чылай ялсемшĕн пĕр тунă çул-йĕрсене тирпейлĕн тытасси кулленхи йăлана кĕрсе çитмен-ха. Пĕр тунă ĕçе кайран тирпейлĕн упраса пыма йывăр та мар, анчах çакна йĕпреçсем манаççĕ, темĕн чул тăкнă вăя кайран упрама пĕлменнипе нарастаран сая яраççĕ. Вара ӳлĕмрен тепĕр хут компанипе харăс-

латса тытăнаççĕ, çĕнĕрен темĕн чул вăй хураççĕ, вăхăт пĕтереççĕ. Кун пек пулакан ĕç вăл — ĕç те мар, хăвăн вăйна ху хисеплесе тăманни анчах. Йĕпреçсен çакна пĕр саманта та манмалла мар.

1935

ВАТТИ

И пахчи те пахчи шур купăста,
Çулçине татмасăр пуç пулмасть.
Эсирех те ватă, эпир çамрăк, —
Ватти ăс памасăр ĕç ăнмасть.

Матви пичче, каçар! Сăмахна пӳлсех калам-ха. Пирĕн сăмахăмăр икĕ тĕрлĕ пулсан та, шухăшăмăр пĕр. Санăн канăççăр пуçунта нихçан сӳнми пичетленсе юлнă лайăх юмах пек чĕрĕ сăн-сăпатсен хăватне вăй-халăм çитсен йăвашлатас кăмăлăм çук, вĕсем манăн куç умĕнче те, санăн ăсăнти пекех, чĕрене ĕмĕрлĕхе, витермелĕх çиçсе тăраççĕ. Акă халĕ çех, санпа калаçса ларнă вăхăтра, манăн ума çакăн пек картина тухса тăчĕ, вара эп ăна кăмăлăм çĕкленнĕ чух алла кăранташ тытса шур хут çине санăн ятупа ӳкерсе хурас терĕм!

«Тĕпелте, сĕтел патĕнче, эрмек-чермек хăй чикки хăйĕн качи çинче йĕрсе çунан хăййа хĕстерсе тăнă. Хура пӳртĕн чутламан стенисем ăçта çутă ӳкнĕ унта çĕр кăмрăк евĕр йăмăха-йăмăха илнĕ. Канăççăр таракансем пӳртре пĕртен-пĕр тасарах вырăн урлă сак тăрăх хĕвĕшсе çӳренĕ. Хутран-ситрен шăрчăк сасси тăлăххăн илтĕнсе кайнă. Сĕтел хушшине канлĕн кайса ӳкнĕ пĕтĕ кушак юлхавлăн мăрăлтатнă.

Хăй чикки умĕнче 6—7 çулхи ача сĕнксе ларнă, куçĕсем ун хăйсене хăйсем хупăннă, типшĕм çан-çурăмĕ — хальхаль ӳпĕнсе каяс пек — мĕнпур тытăмне çухатнă. Тармакланса тăртаннă кĕсен-çăпанлă кăтра пуçĕ çĕрелле чикĕннĕ, анчах ачан çывăрмалла пулман. Хăй çути пăртакçă лăплансанах тухатмăш евĕрлĕ эпи карчăкĕ ачана хăратса тăкнă, вара ача шартах сиксе илсе чĕтревлĕ хыткан аллисемпе хăйă сăмсине татса пăрахнă е çĕнĕрен тепĕр хăййине улăштарса хунă. Хăй чикки каллех пĕр вăхăта хаваслăн амаланса кайнă, типшĕм ача кукленсе ларса тепре сас пуличчен каллех тĕлĕрме пуçланă.

Сасартăк амăшĕн сасси илемсĕррĕн илтĕнсе кайнă. Ыйхăллă ача тăн-тан пăхкаласа илнĕ, унтан алчăранă куçĕсем

ун тӳрех кутник сакки енне тинкерённе; амăшĕ вут тивнĕ хурăн хуппи пек ăшталаннă: пĕр тăсăлнă, пĕр хутланнă е выртнă çĕртен хăвăрттăн сиксе тăрса, тилĕрсе кайнă хур ами пек, икĕ аллипе икĕ енчен хăйне хăй çаптарнă. Унччен те пулман, пĕр нӳрлĕ темĕскер çĕр урайне нăчлатса аннă, вара çĕнĕ сас, чуна кайса тивекен хивре, çӳçенчĕклĕ сас, хура пӳртре çухăрса янă. Типшĕм ача майĕпен кăна тепĕр хăййине улăштарса хунă та, нимĕн те пулман пек, каллех тĕлĕрме тапратнă.

Акă хăй çути варкăшса кайрĕ. Алăкран сивĕ сывлăш персе кĕчĕ. Ача каллех йывăррăн куçĕсене уçса пăхрĕ. Алăк патĕнче ашшĕ тăрать, вăл, ют киле килнĕ пек, çĕлĕкне хул хушшине хĕстернĕ. Кăшăлла кастарнă çӳхерех çӳçне икĕ еннелле тирпейлĕн туртса янă. Эпи карчăкне чĕнсе килсенех вăл таса пус кутне васканă, унта вырăс туррине те, чăваш йĕрĕхĕсене те ӳке-ӳке пуççапнă, пĕлнĕ-пĕлмен чĕлхепе кĕлĕсем каланă. Вăл ывăл ыйтнă, ăна ывăл... çĕр кирлĕ пулнă...

Пӳртре ача сасси çуйăхса кайсанах вăл хăвăрттăн сиксе тăнă та пĕтĕм тăлпăвĕпе силленсе илнĕ, уйăх çути ӳкнĕ пит-куç çинче чылайччен тăсăлнă кĕллĕн салхулăх çухалса, хаваслăх выляса тăнă: ывăл! ывăл! Ывăла сасранах уйăратăн. Çапах та вăл пӳрте иккĕленеррехĕн йăпшăнса кĕнĕ. Алăк урлă каçсанах турă кĕтесси çинелле пăхса лăпкăн кăна пĕрре хĕрес хурса илнĕ те:

— Мĕн ача, тăхлачă? — тесе эпи карчăкĕнчен ыйтнă.

— Сана мĕн кирлĕ? — тенĕ леш хăрăкрах сасăпа. Хăй вăл темĕскер пăшăлтатса калаçса ача патĕнче аппаланнă.

— Мана... çĕр кирлĕ.

— Мĕнле хĕр? Пĕтĕм ял çĕр пирки калаçать, эс çапах хĕр ĕмĕтленен, — тенĕ тĕлĕнен пек пулса хăлхаран тайлăкрах эпи карчăкĕ. — Акă пăх, ывăл...

— Михал, паян мĕн кун? — тесе ыйтнă çăмăлланнă хĕрарăм йăваш сасăпа.

— Юн кун, карчăк.

— Пархатарсăр кун. Пирĕн пĕри те телейлĕ кун çуралман. Кунăн та кунĕ пулас çук, — тенĕ амăшĕ пăшăрханса.

— Ан кулян, карчăк. Ку та пурăнмасан — кам пурăнтăр? Тухнă-тухманах арçури пек янратса ячĕ, шартах сикрĕм хам та. Кӳр-ха, тăхлач, амăшне кăтартар... Акă пăх...

Канса, лăштах канса выртакан хĕрарăм асап йăлхахĕ карнă куçĕсене ачи çинелле илчĕ, унтан хуллен çех пыр çыххине ярса ĕшеннĕ аллисене пĕчĕк ача еннелле тăсрĕ. Пĕчĕкçеç йĕпе кĕмĕркке чĕтренкелесе пăхрĕ, пĕр-иккĕ çухăрса ячĕ, унтан халиччен тутă мĕн иккенне пĕлмен ай-

ван çăварне теменле ăшă, кăмăллă япала лекнине сиссе пĕркеленчĕк тутисене вылятма пуçларĕ.

— Аха, наччас ăнкарса илчĕ. Пĕлет хăйне мĕн кирлине. Ку та пурăнмасан! Пурăнать, амăшĕ, пĕртте ан кулян. Ав пăх-ха, епле вăл чăлт-чăлт пăхса выртать, хăй çутине шырать ава. Пурăнать ку ача, пурăнать.

— Тем пекчĕ, Михал...

Ача ашшĕ тепĕр хут турă кĕтесси еннелле çаврăнса тăчĕ те савăнăçлă сывлăшпа ассăн сывласа ярса вăраххăнтарах кăна пĕр-икĕ си урлă-пирлĕ хĕрес илчĕ...

Çапла çутă тĕнчене тепĕр чăваш хутшăннă. Вырăс пупĕ ачана авалхи кĕнекеçĕ ячĕпе Матвей ят панă, ялта чăвашла — Шăнкăрч Матви тесе чĕннĕ... Халĕ колхозра Матвей Михалч тесе чĕнетпĕр, тата чаплă çынсем те, Патрекел ялне килес-тăвас пулсан, час-часах Скворцов Матвей çурчĕ тĕлне кăтартса яма ыйтаççĕ.

* * *

Матвей Михалч хăй çуралнине астусах каймасть, мĕне кирлĕ, тата унтанпа вăхăчĕ те сахалах иртмен ĕнтĕ... 67 çул. Анчах теменшĕн «пархатарсăр кун, ывăл, çĕр...» — çакă кайран çех пĕтĕмĕшпе ăнкарса илнĕ сăмахсем Матвин хăлхине хăй çуралнă кунах кĕнĕн туйăнать. Ку кăна мар, тĕпелте ни сӳни-сӳнми йăмăхса ларнă хăй чикки те теменле асра юлнă пекех, ăна та çавăн чухнех асăрхаса хăварнă пек.

Пулĕ те, Матви пиччe, пулмĕ темелле мар. Эрне, эпир ун пек-кун пек япаласем çинчен илтсех кайман, вĕреннĕ çынсем те ун çинчен татсах каламаççĕ, анчах эпир шанатпăр: эсĕ чи пирвай курнă çутă — вăл хăй чикки пулнă, эсĕ чи пирвай илтнĕ сăмах, ху калашле, «пархатарсăр, телейсĕр, çĕр, ывăл» сăмахсем пулнă. Эсĕ ăшшине туйиччен сиввине курнă, çемçине пĕличчен хыттине сиснĕ, ыррине куриччен усалне тӳснĕ...

Сирĕн сăпкăр çине хĕвел ӳкмен, сирĕн ачалăха никам ачашламан, ватăлас кунăра хисеп те канăç та кĕтмен.

Меншĕн пурăннă эсир? Мĕнле çăлтăр сирĕн кун-çулăра çавăтса пынă? Унăн çинчен, тен, никам та шухăшламан... Сирсе сирĕлми тĕттĕм пулнă, тĕнчĕре сирĕнне хăрушă каç витсе тăнă. Эсир хăвăрăн çутăсăр çулăр çинче кал-калрах ярса пусмашкăн та шикленнĕ, эсир пĕр-пĕринчен хăраса тăнă, меншĕн тесен хăлхана кĕрен, анчах куçа курăнман кашни ура сасси — сире инкек çывхарнăн туйаннă. Сирĕн пурнăçăра пĕр туйăм çех сӳни-сӳнми хăйă чикки

пек амалантарса тăнă, вăл туйăм — хăвна ху асăрханни, выльăхла сыхланни, анчах хăвна ху кăна, ху марри вăл саншăн тăшман пулнă. Инкек куçа курăнса килмен, пин çынтан пĕри çех паттăр юлнă, пĕри çех такăна-такăна ўксе хăйĕн йывăр хĕресне çĕклесе пыма пултарнă. Ыттисем тăкăнса шĕкĕлченсе юлнă. Вĕсем ăçта вырттса юлни çинчен никам та пĕлмен, астуман. Пĕрне-пĕри алă парас йăла саккун пулман, мĕншĕн тесен çынна пулăшни хăвна вилĕм кўни пулнă ун чух. Пĕтекен пĕтнĕ, ўкекен юлнă... Кам юлнă хыçала? Мĕн пулнă хыçалта — ăна никам та пĕлмен. Истори вĕçсĕрлĕхе кайса çухалнă, мĕншĕн тесен вăл историн умĕ те, хыçĕ те пулман, умра та, хыçра та никам та, нимĕн те курăнман...

Паттăр эсир, Матви пичче!

Эсир пирĕн халăхăн чăн телейлĕ ывăлĕсем тейĕттĕм эпĕ. Эсир пĕтнĕ пин çинчен пĕрре суйланса илнисем.

Телейлĕ эсир, Матви пичче! Эсир никам та çитмен çĕре çитсе куртăр. Эсир сирĕнччен никам курман çутта чи малтан куртăр.

Паттăр эсир, Матви пичче!

Сире яр уçăлса кайнă çутă, ăнсăртран тĕттĕм ăшĕнчен персе тухнăскерсене, çапса ўкермерĕ. Нихăçан курман хĕвел сирĕн пăчланнă куç шăрçисене ĕмĕрлĕхе пурнăç пачĕ.

Телейлĕ эсир, Матви пичче! Ватăлас кунăрта уçăлнă кăвак хуппи çутă та, телей те, пурлăх та пачĕ. Сирĕн пархатарлă кун çитрĕ.

Каласа пар эс пире, Матви пичче! Ак сан кермен пек илемлĕ пўртўнте пĕр пусăм ача-пăча чупса çўрет. Вăл санăн ывăлун ачисем, тĕттĕм тĕнчинчен килнĕ этемĕн мăнукĕсем. Шанатăн-и эс вĕсем ху йăху иккенне, туятăн-и эс вĕсен савăнăçĕнче хăвăн нихăçан пулман ачалăхна? Акă эс, темĕнле айăпа кĕнĕ çын евĕр, куç хўрипе çех хăюсăррăн кулса илетĕн, кулатăн та кăвакарнă пуçна сулкалатăн. Ак пĕр мăнуку сан патна чупса пычĕ, санăн çумна çăмăллăн сиксе ларчĕ, хулу айне йăпшăнма пуçларĕ. Эсĕ унăн йĕтĕн тĕслĕ çўçне ачашлатăн, хутланнă, кукăрăлнă пўрнўсем сан кăмăллăн ачашлама пĕлеççĕ. Мăнуку сана юмах калама ўкĕтлет. Йăтса ил ăна хăвăн тĕреклĕ чĕркуççи çине, йăпшăнтар ăна ватă кăкăру çумне, ярса пар ăна илемлĕ юмахна. Май килнĕ чух эпир те итлĕпĕр, эпир санăн паттăрусемпе çўрĕпĕр, вĕсен савăнăçĕпе савăнăпăр, вĕсен хуйхипе хуйхăрăпăр. Вĕсем çутă тĕнченĕн алăкĕ умĕнче вун икĕ пуçлă çĕленпе епле çапăçнă, эпир те çавăн евĕрех тăшмансемпе çапăçма авăрланатпăр, санăн паттăрусенчен те хăюллăрах пулма сăмах паратпăр.

* * *

Каç пуласпа Матвей Михалч хăйсен бригади йĕтемĕ çине хурала хăпарчĕ. Чылайччен вăл йĕтем тавра темĕскер шыранă пек утса çўрерĕ. Е унăн куç тĕлне майсăр выртакан кĕрепле тĕл пулать, ăна вăл пырса хăй кăмăлне кайнă пек тўрлетсе хăварать (урлă выртакана тăрăх илсе хур!). Е акă кантра татăкĕ так ахаль ура айĕнче йăванса выртать, ăна вăл тирпейлĕн çĕклесе илсе арпалăха кайса çакать (хуçалăхра катăк пуртă та кирлĕ пулать!). Е тата пĕр-пĕр капана тĕллет те чылайччен хăяккăнтарах кăна пăхса тăрать (темскер кăмăлне каймарĕ ĕнтĕ?). Тин çеç ĕçе пăрахнă машинăсем патне те çитет вăл, хыпашла-хыпашла пăхать (сиен пулман-и, çуне сĕрнĕ-и?). Унтан сăвăрса пĕтереймен тырă кăшăлĕ умне пырать те пĕрер ывăç тулă ăсса илсе ывăçĕсем çинче вĕре-вĕре авăсма тытăнать (шултра, витĕр курăнать, кăвакарчăн куçĕ пек!).

Çакă вăхăта ун патне ĕçе пăрахса киле анма хатĕрленнĕ çамрăксем пухăнаççĕ. Вăл вара шăппăн кăна, никама та асăрхаман пек, хăйпе хăй калаçма пуçлать:

— Ĕлĕк чăвашсем тулă пулсан пустав тăхăнтартать, пулмасан — улача тетчĕç. Пирĕн енче тулă тени нихăçан та пулман, çавăнпа та улачи те ураççирен анчах пулнă... — Вăл пăртак тăхтанă пек пулса тепĕр ывăç кукленсе илет, вара каллех вăраххăн сăмахне тăсать: — Эпĕ астăвасса пирĕн ялта 350 ятчĕ. Халĕ хĕрĕ-хĕрарăмĕпе — 1300 çын ытла шутлаççĕ. Çĕр реçинккă мар — тăсăлмасть... 43 çул ĕлĕк выçлăх пулчĕ. Этем тем хыпса çăтасса çитрĕ. Çанталăк кăçалхинчен усал пулман. Кăçалхи пекех, самай тырă ўснĕ вăхăтра пĕлĕтсем çўретчĕç, анчах çăмăр çумастчĕ... Кăçал, ăсу кайĕ, кўртсе пĕтерме çук тырă пулчĕ...

Унтан Матви пичче хăйĕн шухăшĕсенчен тăрук вăраннă пек пулса çамрăксем енне çăмăллăн пăхса илет те хăпарнă сасăпа:

— Этеме мĕн пурĕ те çĕр çапăçтарнă, анчах этем çĕршĕн çапăçма пĕлмен, — тесе хыççăн каласа хурать.

Çамрăксем Матви пиччĕшĕ хăйĕн калас шухăшне сасартăк мĕнле вирлĕ тĕвĕлесе хунине сиссе пĕр-пĕрин çине пăхса йăл-йăл кулса илчĕç. Вĕсем старикĕн сăмах-юмах меслетне пит лайăх пĕлеççĕ. Старик малтан сăмаха аякран-аякран çавăтса килет, унтан тин мĕн калас тенине çавăрттарса хурать.

Старик хăпарту шăрши çапса тăракан çĕнĕ улăм çине кайса ларчĕ. Киле кайма тăнă çамрăксем те темĕнле вăя пăхăнса каллех ватти тавра кая-кая ўкрĕç.

— Халь мĕн мар сирĕн пурăнни, — калать вăл малалла, —

Каринкин тихисем пек выляс та кулас — шухăш та çав кăна...

— Каккуй кунта вăйă шухăшĕ-ха. Ак ыран ирех авăн илме тух, тепĕр кун тырăпа Канаша кай, техэкзаменне те çавăнтах пар... хăйăр юхать, — тесе хурать пирĕнтен пĕри.

— Вара эс ăна акăш-макăш ĕç тесе шутлатăн-и? — сассине хăпартать старик.

— Тата мĕн тейĕн ăна, Матви пичче?

— Ĕç мар вăл, туй! Ависсен амăшĕ калашле, аслă туй. Туй-çуй тăватпăр эпир халь!

Çамрăксем каллех йăл-ял кулкаласа илчĕç. Хăшĕ Матви пиччепе хирĕçме хăтланать, анчах леш авторитетлă кăна сасăпа пурне те пӳлсе илет те каллех çапла тапратать:

— Акана тухатăр, урхамах пек утăрсем çинче шăхăрса, юрласа çех пыратăр. Тыр вырма тухатăр — пилĕк ăçтине пĕлместĕр, — вырса параканни пур унта сирĕн, хыртарса кăна пырать... Сирĕн — шав выляс та кулас, ĕçре те тĕк тăмастăр... Ватăсене те йăлт астарса яратăр... Ав пĕркун Ависсен амăшĕ, шăлсăр карчăк, хĕрсемпе тыр вырса таврăнать тет. «Хĕрсем, пăхăр-ха, пăхăр-ха, эпĕ вун çиччĕре чухне çакăн пек утаттăмччĕ», — тесе тек тăхăр кукăр хуçланкаласа пырать тет... Эй, шăлсăр!..

Çамрăксем тӳсеймесĕр ахăрашса ячĕç.

— Ав каллех кулăпа сирĕн... екей, ача-пăча! Кĕр çитсен куланай мĕнне пĕлместĕр эсир, сирĕншĕн тӳленĕ, татнă, хуйхă çук, улах хуйхи кăна сирĕн. Ак эпир пурăннă тăк пурăннă, ĕçленĕ тĕк ĕçленĕ!..

— Айта мухтан, мухтан, Матви пичче, сана чаракан çук, — хушса хурать каллех пирĕнтен пĕри ӳпкелешнĕ пек пулса.

— Мухтанса-и вара вăл, айван! Матви пичче ĕлĕкхипе мухтанас çук. Эп кулак тавраш мар. Хăвăра эп мухтатăп, ачасем. Сирĕнпе мухтанас килет. Ухмахла ĕçпе никам та мухтанмасть. Ĕçĕ те, пурнăçĕ те пирĕн ухмах пулнă, мĕн кăна калама ĕнтĕ! Çапнă пире — утнă, сĕнкĕлтетнĕ; çаварлăха карт туртса илсе аçа саслăн кăшкăрса пăрахнă пирĕн çине — кайса ӳкнĕ, кĕлерсе выртнă. Тӳнĕ вара пире, кӳпкенĕ. Унтан, сывлăш çавăрнă пек пулсан, каллех тăнă, каллех сĕнкĕлтетнĕ. Мĕншĕн çапла пулнă, ăна никамăн та пĕлмелле пулман, пĕлес текен ыррине курман.

Вара пире Матви пичче хăйĕн пурнăçĕнчен пĕр мыскара каласа пачĕ. Эпир ăна хăлхана тăратсах итлесе лартăмăр.

Ун чухне вăл вун икĕ çулхи ача пулнă. Тетĕшпе иккĕш тин çех сухаран таврăнса чăм шыва ўкнĕ ырхан кĕсрине тăварса тăнă. Ашшĕ кĕлетре пўлме тĕпне каптăртаттарнă, — вăл лав çине тырă тиенĕ, ыран кăвак çутăллах Теччĕ хулине сутта тухса каймалла. Çав вăхăтрах карта хапха урлă деçатски курăнса кайнă, унăн кăкăрĕ çинче çĕрме пуян сăмаварĕ тĕслĕ сарлака медаль йăлтăртатса тăнă (деçатски медальне пит хисепленĕ курăнать). Вăл карташне кĕмесĕрех:

— Уретник килнĕ, çвешей хăваттире хăпарăр! — тенĕ те малалла уттарнă.

Матвин ашшĕпе тетĕш пĕр-пĕрин çине салхуллăн пăхса илнĕ, вĕсем деçатски мĕнле çăмăлпа килнине сиснĕ. Власть çыннисене курсанах ашшĕн, темĕнле каçарусăр айăпа кĕнĕ çынăнни пек, чĕрине çĕçĕ кĕрсе кайнă. Матвипе тетĕшĕ те çавнах туйнă. Аçта çын нумай — унтан иртсе кайма та хăранă вĕсем. Пасара та, чиркĕве те, пухăва та çўреме пăрахнă. Темĕншĕн аçта çит — унта вĕсен куçне яланах е староста, е уретник лекнĕ, пĕри çурт-йĕрсĕр хăвараспа хăратнă, тепри — виçĕ хут тире сўмешкĕн пулнă.

— Тырри пулмасть, çĕрĕ сахал. Акă ыран пĕр лав кайса сут та ĕнтĕ — пĕр ята саплама та çитмест. Тырă хакне каллех ўкернĕ тет купсасем!.. — каласа хунă ашшĕ ассăн сывласа ярса.

— Атте, пухаç-пухаç çав укçана, кам валли вăл куланай? — ыйтса пăхнă Матви.

— Кам шуйттан пĕлет! Патша валли каять теççĕ... Хыснан сысни пысăк, тем парсан та тĕшĕрет, тăраннине пĕлмест. Анчах эс, ачам, ку пули-пулми сăмахна çын умĕнче персе ан яр, тем курăн.

— Ав çав уретниксене асса пурăнма вăл пирĕн вăй тата пупсене, — тесе хунă шăл витĕр тетĕшĕ.

— Кайса килетĕн пуль эппин... Çавăнта енчĕкре пĕр кĕмĕл пурччĕ... Тен, пĕррелĕхе каçарĕ...

— Каймастăп, — тенĕ Матви тетĕшĕ. — Паян урса килнĕ теççĕ. Елчĕкре мужиксем пит тавлашнă тет.

— Матви, ывăлăм, эс кайăн эппин. Пыр та тыттар, кам ачине кала. Эс ача-пăча...

Матви вара çуртри пĕртен-пĕр кĕмĕле илсе чикнĕ те тукасалла уттарнă.

Çвешей хваттире çитичченех Матви хăлхине темĕнле хăрушă сасăсем илтĕне пуçланă. Сасăсем вăйланнăçемĕн вăйланнă. Тахши тахшине тамăк саслăн хăтăрнă, тахши тахшине йăлăннă. Унтан темĕскер илтĕннĕ, йывăр алăк уçăла-

уçăла хупăннă. Темшĕн сасăсем çĕр айĕнчен тухнăн туйăннă, калăн çав çвешей хваттир айне усал таркăнсем пытанса ларнă тесе. Матвин чĕри ыткăнса тухас пек тапнă, анчах вăл хăйĕн чĕри çинчен шутламан, вăл çаплах малалла утнă. Унăн сылтăм алли йĕм кĕсйине чикнĕ кĕмĕл тенке ўт шăтиччен чăмăртанă, Матви ăна та туйман. Акă вăл хăй халиччен нихăçан ура ярса пусман чаплă пўртĕн пусми умне çитрĕ. Алăк уçă. Пўртре — кўршĕ çынни хĕрлĕ сухаллă Иван пичче. Унăн тавра вăрăм уретник, ăçтан тытам та ăçтан çурам тесе çаврăннăн, выçă кашкăр пек, чĕвен тăрса йăпшăнараххăн çўрет. Çаврăнмассерен çутă шпорĕсем чăнкăртатса илеççĕ, алăри саламат пуçне хĕстернĕ çĕлен пек хăйне хăй авкаланса тăрать.

— Кала, мерзавец, миншин куланай памастын? — ахăрать уретник чăваш чĕлхине хуçкаласа.

— Вашшĕ пăлхароти! Ывăл авлантартăм...

— А-а-а, сирĕн той тума окçа пор, куланая жок?!

— Вашшĕ пăлхароти? Кĕтсемĕр пăртак, мĕншĕн у тери васкатăр?

— Э-э-э, миншин-и? Миншинне пилес килчĕ? Ак пил!..

Унччен те пулмарĕ — чĕн саламат сывлăшра чăвлатса та кайрĕ. Тилĕрсе кайнă уретник татти-сыпписĕр çунтара пуçларĕ. Тăхлан тўлемеллĕ япала çитсе лекмессерен Иван Павăлч, ялта ятлă çын, халиччен патак çиме мар, сивĕ сăмах та илтменскер, ача пек кăшкăрса ярать.

— Çитет... пăлхароти... Тўлĕп, лашама сутап!.. Арăма сутап!

— А-а-а, эс арымна сутма-и!..

Саламат каллех çĕнелсе кайрĕ. Урнă уретник пашкакан пулчĕ. Чăтаймарĕ Иван Павăлч, усăннă пуçне хăвăрттăн çĕклесе илчĕ те хĕрлĕ çўçне çулăм пек варкăштарса:

— Çĕлен! — тесе çухăрса ячĕ. Унтан кисĕп евĕр сылтăм аллине çĕклесе илсе сулахайне малалла тăсса, упа пек тулхăрса уретник çине ывтăнчĕ. Анчах кĕтмен çĕртен куç урлă саламат килсе лекрĕ... Иван Павăлч çавăнтах тĕшĕрĕлсе анчĕ.

— Уç часрах! — тесе кăшкăрса ячĕ уретник.

Деçатски хăпăл-хапăл урай хăмине илсе пăрахрĕ те юн ярса выртакан Иван Павăлча тĕпсакайне тĕртсе антарчĕ. Пĕтĕм тĕпсакай кĕрлесе кайрĕ. Шăтăкран пуçсем, алăсем курăна пуçларĕç, усал сăмахсем ыткăнма тытăнчĕç. Деçатски часрах хупса хучĕ, уретник хăма çине хăвăрттăн пырса тăрса пĕр-икĕ хут сиксе илчĕ, унтан: «Бунтовать, я дам вам бунтовать!» — тесе чукмар пек йĕнĕллĕ шашкипе урай хăмине чылайччен тăрăслаттарса тăчĕ.

Тĕпсакайĕнчи сасăсем лăпланнă пек пулчĕç. Уретник

тӳрленсе тӑрса вӑшт-вашт мӑйӑхне шӑлкаласа илчӗ те алӑк еннелле пуçне çавӑрса: «Кто следующий?» — тесе чинлӑ, мӑн кӑмӑллӑн кӑшкӑрса ячӗ.

Матви, чулланса кайнӑ юпа пек, алӑк умӗнче тӑрать. Вӑл çак тискер картина пӗтӗмпех курчӗ. Вӑл малалла утасшӑн — урисем пӑхӑнмаççӗ, каялла чакасшӑн — вырӑнтан уйӑрӑлаймасть. Вара ача темӗнле пыр тӗпӗпе уласа кӑшкӑрса ячӗ те алӑри тенкине уретник еннелле вӑркӑнтарса тухса вӗçтерчӗ.

Сулмаклӑ кӗмӗл уретник пит-куçне аванах лекнӗ курӑнать. Вӑл чӑрсӑр ачана çав кун кунӗпех ял тӑрӑх шыраса çӳренӗ, анчах ачан ятне никам та пӗлмен. Деçатски те пӗлменçи пулнӑ.

Уретник çуккине сиссе тӗпсакайӗнчисем те тухса вӗçтернӗ, анчах вӗсем хӑйсемпе юлташ пӗр пысӑк пичӗке пуян сӑри ларнине те пӗртте манман. Çав каç урам хушшинче нихçан çуйӑхса çӳремен Иван пичче çӗрӗпе влаça хирӗç такмаксем юрласа çӳренӗ.

— Çавӑн пек пулнӑ ӗнтӗ пирӗн ӳсӗм, — тесе пӗтерчӗ хӑйӗн сӑмахне Матви пичче.

Эпир, каçса кайсах итлесе лараканскерсем, калав пӗтмӗшӗнче кулмасӑр чӑтаймарӑмӑр. Матви пичче йӑли çав ӗнтӗ, вӑл кирек мӗнле калава та шӳтпе вӗçлесе хурать.

— Матвей Михалч, куланай пит пысӑк пулнӑ-им вара ун чух? — тесе ыйтрӗ пӗр çамрӑк.

— Пысӑк çав. Эпир астӑвасса ят пуçне пилӗк тенкӗччӗ.

— Пилӗк тенкӗ? Пилӗк тенкӗ пысӑк-и вара вӑл? Эп ун чул укçана таçтан та тупап, — хушса хучӗ тепри, ӑна-кӑна ытлашши тӗшмӗртсех кайманни.

— Айван! Ун чух пирӗн пек хресченӗн мӗнпур пурлӑхӗ те пуспала кӑна шутланнӑ. Куланай — тенкӗпе. Латнӑ эсир халь таçтан та укçа тупатӑр. Мускавӗ — Мускав мар, тухнӑ кайнӑ... Елчӗке кайса килнӗ пек. Канашӗ — Канаш мар, тухнӑ кайнӑ... Ик-виç уйӑх иртет-и, иртмест-и — пӑхатӑн, çавӑн ачи çавӑн чул укçа туса килнӗ теç. Çитменнине, тиек пек тумланса янӑ-ха тата. Аçта кай — унта укçа. Авӑ Шӑхранта тӗнче пысӑкӑш савӑт тӑваççӗ тет-ха... Эпир пӗр пус пӑхӑра ниçтан татса илме пӗлмен. Мӗнпурӗ тырӑ çинчеччӗ. Тырри те пулман. Хӑçан пирӗн пек кӗлмӗçсен тырӑ тытса пулни пур?

Ыраш пӑтне 22 пуса параттӑмӑр, сӗлле 15-пе йӗре-йӗре вырнаçтаркаланӑ. Кутӑн кайса ӳкӗччӗç купсасем, хамӑр леçсе хамӑр панӑ вӗт. Кӑрмӑша çитиччен çӳренӗ. Çавӑнта пӗр

пус ытларах илме пулать тесен темиçе çĕр çухрăма кайма пулнă. Пурнăç та мар ĕнтĕ, мĕн калама. Куланай хыççăн вара тырру хĕл пуçланиччен те çитмен. Çавăнпа та чун ыратса каять ĕлĕкхине асăнсан...

Çапла пĕр кун хăтасем патĕнче, ĕçкĕре, Аслă Елчĕк çыннине ватă пуçăмпа хăтăрса пăрахрăм. Сĕтел хушшине кĕрсе ларнă та тек лăркать, тек сӳлет: «Ку çитмест, вăл çитмест; ку капла, вăл çапла; налукĕ пысăк, ялан укçа та укçа; мĕн, эпир укçа çăвăрлатпăр штулĕ?» — тет. Тӳсеймерĕм: «Эс кам кĕрекинче сарăлса ларатăн?! — терĕм. — Мĕн çитмест сана! Ĕçкĕ илемне ярса ларатăн! — терĕм. — Аллăнта — курка, умăнта — чыс, мĕн çитмест сана? Ĕç те çи! Акă булка — хăпарса кăна пиçнĕ. Сан açу кунăн ятне те пĕлмен. Акă шăрттан — çу юхса тăрать, турилкке тулли аш, çăмарта, хăшне саван — çавна тыт. Ленкес тулли пыллă сăра кăпăкланса ларать, ытах çитмест пулсан нӳхрепре тата та пур. Кала, мĕн çитмест сана? Колхоз çыннин сана кăна чысламалăх вăйĕ пур... Шупашкартан килнĕ экспедицине чысласа янă пирĕн колхоз! Пĕлетĕн-и эс çавна?!»

Хайхи этем хĕп-хĕрлĕ хĕремесленсе кайрĕ. Ним калаймасть. Шуйттан, хăй çине пăхсан кăрнатир пек. Кĕрĕ, питкуçĕнчен юн тăкăнать... Пĕç тĕп таран атă, пĕлис шăлавар, хура сатин кĕпе. Мĕн çитмест мура?

— Мĕн çитмест?.. Сăмах витмест ун ку чухне, — акă мĕн çитмест.

— Чăн калатăн, ачам. Çав пирĕн Нестраканов пек, пуян кĕрӳллĕскер вăл. Хунĕсем тахçанах ăсаннă. Ĕлĕкхи çитмест ăна, çавăнпа тек йĕке хӳре пек пăтраштарса çӳрет... Çук, пире халь питех пăтратаймăн, эпир пĕррепе икке чухлакан пулнă ĕнтĕ...

— Чылайччен калаçса лартăмăр Матви пиччепе. Ачасем киле каясси çинчен те манса кайрĕç. Юлашкинчен Матвей Михалч:

— Ну, ачасем, кайса çывăрăр, атту тек ыйхăласа лараттăр. Сăмах тата нумай пулĕ, унăн вĕçне тухас çук. Чуптарăр, ыран ирех тăмалла, — терĕ.

Йĕкĕтсем — хăшĕ килелле уттарчĕç, хăшĕ çавăнтах çапнă улăм çинче çывăрса юлчĕç. Старик çывăра пуçланă урисем çине тăрса пăртак хур açи пек пĕр вырăнта тăпăртатса илчĕ, унтан вăхăта пĕлме хăй тахçантанпа сăнаса тăнă çăлтăр çине пуçне çĕклесе пăхрĕ. Çур çĕр çитмен-ха. Старик каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрекелеме пуçларĕ.

Илемлĕ каç. Уяр пĕлĕтĕн кăвак анĕ сатинăн курăнать, унăн çинче пăч-пăч çăлтăрсем — сапаласа янă кĕмĕл тенкĕсем пек. Акă вĕсем çине тулли пит-куçлă уйăх, пурлăх

умĕнчи пуян хĕрĕ пек, ни кули-кулми мăн кăмăллăн пăхса тăрать. Кăвак çинче ăраснах паллă йĕр тăрăх — хур кайăк çулĕ, калăн çав тулли кăкăр урлă çакса янă тевет тесе. Акă пĕр йĕрке — талĕр тенкисем куç вăйне илсе йăмăхаççĕ, акă тепĕр йĕр — пĕтĕм тенкĕсем, вĕсемпе юнашар ылтăн шыв çине чиксе кăларнă алă пуслăхсем, унтан вăтăрлисем, пăчпăч — ахах чулĕсем, хаклă мерченсем, куçа çисе тăракан, витĕр курăнакан вĕтĕ шăрçасем. Илемлĕ августăн каçĕ.

Ĕлĕк пĕрре патша çынни Атăл тăрăх иртсе пынă тет. Шупашкар тĕлне çитсен кĕмĕл çакнă пуян хĕрĕсене курнă тет. Патша çынни: «Ку мĕнле халăх?» — тесе ыйтнă тет. Ăна: «Кунта чăвашсем пурăнаç», — тесе ответ панă тет. Вара хаяр патшан çынни: «Кун пек пуян халăх эп халиччен курман, вĕсен тумĕ те кĕмĕл кăна. Ку çĕршыв паянтан манăн пулать, чăваш çине куланай ытларах хурас», — тесе евит тунă тет...

Илемлĕ каç. Кун пек каçсенче колхозăн пурлăх йĕтемĕ юмахри пек курăнса тăрать, — калăн çав пĕр-пĕр çӳллĕ крепăç е замок тесе. Ĕретпе ларса тухнă тулă капанĕсем никам çĕмĕрсе кĕрейми чуллă хӳме пекех туйăнаççĕ. Тепĕр ĕрет ыраш капанĕсем — хăйсен шӳрекĕ тăррисемпе ватă пашнесем пек лараç, çакăн пек уяр та çăлтăрлă каç вĕсем çӳлелле туртăннăн, çĕкленнĕн куçа курăнаç.

«Кун пулать ыран, — тесе шухăшлать старик, — самай авăн илме. Колхоз кăçал та тырăран аптăрамасть. Çеркей Якурч кун пуçне çур пăта яхăн ĕмĕтленет-ха...»

— Кам унта?.. Кам? Стрелять буду!..

— Эсĕ те пеме пĕлетĕн-и, Матвей Михалч?..

Капансен тĕттĕмĕнчен çап-çутă йĕтем çине пĕр çын сиксе тухрĕ.

— Какшĕ, перĕпĕр!.. Э-э-э, эсĕ-и, Çеркей Якурч?

— Ну, мĕнле ĕçсем, Матвей Михалч?

— Аван. Çанталăк çырла пек. Ку куна сая ярас пулмасть.

— Да, ыран виçĕ çĕрте те çапатпăр. Каça хирĕç Канаша тиес тетпĕр. Ĕç пырать, Матвей Михалч.

— Пыратне пырать вăл, Çеркей, уншăн сăмах та çук, анчах пĕрне те манас пулмасть. Çуртра вăл пĕри тепринчен килет. Пĕрне мантăн тăк, тепĕрне тума çук вара. Пичĕкен пур хăми те пултăр тата кăшăлĕсем те тĕреклĕ тăччăр, çавăн чух кăна вăл юхма пăрахать... Конешнă, манмастăр эсир... Акă, хăвăр калашле, республикре çук мунча туса лартрăр, анчах...

— Каллех эс пире, Матви пичче, çав мунча пирки тĕртсе илесшĕн пуль ĕнтĕ, — тесе кулса ярать председатель.

Унăн тип-тикĕс илемлĕ шăлĕсем уйăх çутинче хăй çути ўкнĕ фарфор пек выляса каяççĕ. — Атя кала, кала... Эс ватти.

— Анчах колхозра миçе стан урапа, çавна пĕлетпĕр-иха эпир? — каласа пĕтерет пўлнĕ сăмахне Матви пичче.

— Да, да... — тет председатель, хăй çав вăхăтрах табак чĕркеме пикенет.

— Кунта туртма юрамасть... Урапа миçине пĕлес пулать. 50 лашана 30 стан анчах.

— Çапла, — тет председатель, табакне хутаça калла силлесе.

— Канаша каяс тăк ритăван кускачĕсене кăларса илмелле. Кĕлте пĕтмен. Паян ав колхозниксем купăста укçине уйăрса ярасшăн калаçаç. Эп каларăм: юрамасть-ха халь терĕм. Çитес пасарта как-нипуть кустăрмасем туянас терĕм. Тĕрĕс вĕт.

— Тĕрĕс, конешнă. Ман хамăн та шухăшăм çавăн пек, — çирĕплетет председатель.

— Ĕлĕк пуянсем пĕр-пĕрне кураймасăр калатчĕç: «Мĕн çав Мĕкĕте? Пуян-и вăл? Мĕн пур ун: тулĕ тимĕр те ăшĕ мимĕр», — тетчĕç. Çавăн пек ан пултăр, ывăлăм. Мунча вăл тармĕччĕ-ха, ăна пĕрер çул тăхтанă пулсан та юратчĕ.

— Çаплине çапла та, Матвей Михалч... Акă ĕç пĕтнĕ шеппе хутса ярар-ха çĕнĕ мунчана... Исленсе кайăн, тухас килмĕ. Хай такмакра каланă пек: «чулĕсем мерчен, ăшшийĕ шерпет, милĕкĕ пурçăн». Киленсе кайса çапăн, ăшшине хамах парса тăрăп вара ун чух.

— Çаплине çапла вăл, Çеркей. Ак ыран Канаша кайма тăр-ха. Урапасем çуккине курăн. Ху та вара: «Матви пичче, ма ку урапасем çукки алă çул ĕлĕк пулман-ши?» — тейĕн.

Старикпе вăйпитти кĕрĕ çын пĕр-пĕрин çине пăхса чылайччен кулса тăчĕç, унтан алă парса, пĕр-пĕрне ырă каç сунса уйрăлчĕç.

Старик те, председатель те пĕр вăхăта пĕр-пĕрин çинчен шухăшларĕç.

«Маттур çын, — терĕ старик. — Ваттисен сăмахне итлет. Тăватă çул хушшинче мĕн кăна тутармарĕ ĕнтĕ. Арбузов ун пек марччĕ, мĕнле те пулсан канаш парсан «правлени сам знайăт» тетчĕ те пирĕн пек ваттинчен пăрăнса çех каятчĕ».

«Ăслă старик, — терĕ председатель те хăй ăшĕнче, — «Тулĕ тимĕр, ăшĕнче мимĕр». Епле шаплаттарса хучĕ вăл?! Эпир тулне те, ăшне те тимĕр пек çирĕп тăватпăр. Çуртра ватти кирлех, особеннă колхозра».

Кунĕпех çапла «кăштăртатса» çўрет Скворцов старик. Ăна

пур çĕрте те тирпейлĕ пултăр. Урлă выртакан тăрăх выртăр е пачах çул çинче ан пултăр. Çӳрет вара вăл колхозăн аслă хуçалăхĕ тăрăх. Витене кĕрсе ларать-и (унта хăй пек Блинов старик пур), тимĕрç лаççине кĕрсе тухать-и — ун куçĕ яланах мĕн те пулсан асăрхать. Акă нумай пулмасть колхоз сад пахчи тытнă. Матвей Михалчăн унта кайса килмеллех: тĕреклĕ тытнă-и? Акă çамрăксем 185 çул ларнă чиркĕве ишсе пăрахнă, унта Матвей Михалчăн çитмеллех: юрăхлă материал чылай-и? Акă колхоз кăçал иртерех ыраш акма тухасшăн. Матвей Михалчăн хире çитсе килесех пулать: çĕр пиçнĕ-и? Акă уйăлнă ывăлĕ Симун, завхозра ĕçлекенни, Пăвана купăстапа кайса килнĕ те, Матвей Михалчăн унпа курса калаçмаллах: мĕн хака панă тата правленине отчет тăратнă-и?

Пурнăç вăл тӳрĕ те тирпейлĕ пултăр. Пурнăç тӳрĕ те тирпейлĕ çынсене юратать. Çавăнпа та Матви пичче ачасене хытă алăпа ӳстернĕ, чи малтан тӳрĕ пулма вĕрентнĕ. Чăнах та, ачасем Матви пиччен пăсăклă пулман: асли ав, Çеркей, Çипирте пысăк ĕçре тет, — Крайоно теççĕ. Вăталăххи — Ваçли — ялта ятлă учитель. Ун хыçĕнчи — Симун — завхоз, виçĕ хут награда тухнă ăна. Шупашкарта та пĕлеççĕ, съезда-мĕне каяс тăк — тӳрех Елчĕкрен машинăпа ларса каять. Кĕçĕнни — парторг, никам та вăл ачана хурласа калаçмасть. Акă мĕнле ачасем ӳстернĕ пирĕн Матви пичче! Конешнă, çăмăллăн ӳсмен вăл ачасем. Вĕсем ӳснĕ чух Матви пичче пĕр выльăх чĕрнисĕр те тăрса юлни пулнă. Тăраниччен çăкăр çимен, парăма кĕре-кĕре пĕтнĕ. Симун-завхоз йыснăшĕ патĕнче тарçăра пекех пурăнчĕ. Мĕн тăвас тен? Пурнăçĕ çапла пулнă, эрне йывăр пулнă та, тӳснĕ çапах. Халь уншăн ак ватă Матвие чап та, ят та, пурлăх та. Пĕр Матвие кăна-и, ялта Матви пек стариксем мĕн чул тата? Нумай ватта Совет çĕнĕ çутăпа паллаштарчĕ. Ятсăр, телейсĕр, пархатарсăр çуралнăскерсем, ятне те тупрăмăр, пархатарне те куртăмăр, телейне те илтĕмĕр...

Тул çутăлас майне кайрĕ. Уйăх кай енне сулăнса темĕнле ыйхăланă пек пăхать. Çăлтăрсем тĕссĕрленчĕç. Ялта автансем шарлатса авăтаççĕ. Унта-кунта хăй çути курăна пуçларĕ: колхозниксем çутăлнă-çутăлман ĕçе хатĕрленеççĕ. Акă пĕр çăлтăр яр авăнса илсе тутар чиккине вăлтлатса ӳкрĕ.

— Ман çăлтăр çӳлте! — терĕ старик ĕлĕкхи йăлапа. — Анчах хăшĕ-ши ман çăлтăрăм?

Старик чылайччен пĕлĕт çинелле пăхса тăчĕ.

Тахçан выртакан, тахçан тăракан, канăç мĕнне пĕлмен бригадир Сироткин çитрĕ.

— Мĕн сăнатăн, Матви пиччe?

— Хам çăлтăра шыратăп-çке, ачам. Анчах тахăшĕ?

— Ан та шыра. Сан унти çăлтăру сӳннĕ. Халĕ сан пурнăç çăлтăрĕ çĕр çинчех, çавна ан çухат. Çапла-и, Матви пиччe?

— Çапла, ачам, çапла.

— Апла пулсан халь эс киле кайма та пултаратăн. Кан. Акă эпĕ ачасене халех тăратăп. Ялтан та час хăпарĕç. Паян кун ылтăн пек.

— Ну юрĕ эппин, ĕçĕр ăнăçса пытăр.

— Эс калаш пек пултăр.

Вара старик ял еннелле уттарчĕ. Ял тулли хăй çути, вĕсенчен пĕри ватă хуçине тараватăн кăчăк туртать. Çемçе тӳшек, мамăк минтер аса килсе кайрĕ, ватă шăм-шакка халь пуринчен те тутли çавă.

1935

ÇАМРĂККИ

Ай-вай пикесем —
Шыв ыйтсассăн пыл параç.
Пирĕн колхоз çамрăксем
Пĕтĕм ĕçе вăй параç.

Ф.Я. Блинов

Ваттисем калаçкаланă тăрăх, авал кăлавана ларма нумаях кирлĕ пулман-мĕн: мул — ĕçтерсе çимелĕх, тата сухал — саркаланса лармалăх. Çакă икĕ хăватлă рекомендаци пулсан çитнĕ вара, этем кăлавана юрăхлă пулнă. Пуçĕ-мĕнĕ пулнă-и ун, пулман-и — ăна, хальхин пек, никам та тиркемен. Чăнах та, мĕне кирлĕ кăлавана пуç тавраш, вăл ахаль те... голова!

Старостăна лекме тата ансатрах пулнă теççĕ. Кунта вара сухала-мĕне пăхсах кайман иккен, тен, май та килмен пуль, — ăçтан-ха кашни ăçтиçук чăваш ялĕнчех кăвапа таран сухаллă çын тупас? Пире вĕт, чăваша, турри пит татсах паман, нихăçан чăваш çынни сухалран савăнайман. Çакса янă ăна тăхăр хут хăрăхнă турашĕл пек йĕксĕк сухал, юрĕ тенĕ пуль. Вулăсра та чаплă сухал сайра пулнă, тен, вăл та вырăс колонизаторĕсен ырлăхĕпе çех тупăннă пулĕ, — уншăн та ĕрехмет. Çавăнпа та çак витĕмлĕ сăлтавсене кура староста пулма пĕр-пĕр Тăхтаман евĕрлĕ хăнчăр куçлă, вĕтĕннĕ сухаллă лутакай этем те пултарнă, анчах пĕр-икĕ услови кирлĕ пулнă: прикасрисене кӳртсе кăларма вăю çиттĕр тата çăвару кармарах та тамăк саслăрах пултăр...

Апла пулсан мĕн калăпăр-ши эпир Михаил Воронцов çинчен? Пирĕн Михалан вăл та çук, ку та çук. Ашшĕ-амăшĕ ăна пысăк мул пиллесе хăварман, сухалĕ... çитĕнсе ĕлкĕреймен тата ыт. те, тата ыт. те. Тен, çавăнпа та-и, Воронцов Михаил кăлава та мар, староста та мар. Вăл — Патрекел ял ĕçтăвком пуçлăхĕ çех...

Вăл — вăтам пӳ-силлĕ, тăп-тăп çан-çурăмлă, тирпейлĕ йĕкĕт. Çирĕм виççĕ çинче пырать. Эйдеман парнеленĕ ешĕл костюм унăн çинче — хăй ячĕпе заказ парса çĕлетнĕ тум пекех. Икĕ тенкĕ пек маттур палли пĕтĕм анлă кăкăрĕ çинче çиçĕнсе кăна тăрать: ГТО тата «Ворошиловский стрелок». Чăрсăр велосипедист. Шыв тесен — авăра сикĕ, турник тесен — пуçхĕрлĕ ыткăнма хатĕр. Çавăнпа та-и, тен, Патрекел ялĕнче ăçта килчĕ унта турник, — епле кăна ханша трубисем тупса çитернĕ темелле! Спектакльсенче ялан вăл «любовник» ролĕнче («Судра» комединче — Криворотов!). Пухусенче сылтăм хулне авăса-авăса калаçать, вăл ялти чи хĕрӳллĕ ораторсенчен пĕри, пĕр сăмахпа каласан, вăл пулнă-пĕтнĕ хальхи ялти çамрăксенчен пĕри.

Михал — Осоавиахим совечĕн председателĕ. Апла пулсан çӳçĕ Эйдеман пек кĕске кастарса тăрать пек, вирелле тураса ямалла. Вăл — ялти вун пилĕк вĕçевçĕрен пĕри. Апла пулсан планер çине ларсан руле, Каманин пек, куçа хĕсерех тытмалла. Вăл — ялти комсомолецсене ертсе пыраканĕ. Апла пулсан кашни каланă сăмах е чул пек сулмаклă ӳкмелле, е хăлат пек çăмăл вĕçмелле. Обкомол секретарĕ пек сăмаха татса, кирлĕ чух янратса, «выводсемпе» калаçмалла. Вăл, Сергей Коротков пек, колхоз комсомолĕ, вăл — ĕçĕн руководствинче. Апла пулсан мухтавлă Кульцав колхозĕ çинчен илтмессерен пит-куç пĕçере-пĕçере каймалла, кăмăл кĕвĕçсе килнине епле те пулсан çын сисиччен тытса чармалла.

Пирĕн Воронцов чăнах та çапла.

Пушă вăхăт-и, ĕç вăхăчĕ-и — Патрекел çынни кирек хăçан та ОСО клубне çитет-çитетех. Чылай лайăх çынсем каланă тăрăхах, клуб тени вăл — иккĕмĕш ĕçкĕ иккен. Пĕр вĕренсен — турă кăна çырлахтăр! Как вара каç енне кайрĕ — чĕре хăйне хăй йăшăлтатма тытăнать, йăш-йăш-йăш тăвать. Е тата арăм енчен пĕр урлăрах сăмах пулсан — пĕтрĕ вара, акатуйне каяс лашанни евĕрех сикме тытăнать. Лара-тăра пĕлмест, тен, ăш вĕçнĕ çын пек, аттуна та хăрахшарăн тăхăнса яратăн. Унтан арăмна: «Наччас кӳрĕше кайса килемха, табакран кавсăлтăм», — тетĕн те часрах тухса вĕçтеретĕн.

Клубĕнче те ытлашши нимех те çук ĕнтĕ. Чиркӳ тăррине сӳтсе хамăр алăпа хăртаса тунă шатрун çурт аякранах курăнать. Уйрăмах каçхине пит илемлĕ вара. Вуннă лампи-

сене пурне те çутатса ярсан, калăн çав Атăл тăрăх ялтăртатса килекен шурă пăрахут пулĕ тесе. Таçтанах санăн кăмăлна кăчăк туртать, курса тăранайми тăван пек çывăххăн, ырăн, тараватăн туйăнать. Шала кĕретĕн — тасалăх. Воронцов çŭп-çапа юратмасть. Йĕри-тавра сăрлă саксем, сăрлă урай, тăпăл-тăпăл пŭлĕм. Стенасем çинче пысăк портретсем, картинăсем. Чŭрече пысăкăш куçкĕски — хăвна курас килсен пуç тŭпинчен пуçласа ура тупанне çитичченех тишкер. Вăрçă плакачĕсем. Газран тарса пытанмалли çуртсен макечĕсем — шăп темиçе пин паçмана кĕрекен хамăрăн пахча çимĕç нŭхрепĕ пекех. Кĕçĕн калибрлă винтовкăсем, теçетки-теçеткипе противогазсем, физкультура хатĕрĕсем тата ыт. те, тата ыт. те. Пурне те вĕсене халиччен пин хут та çавăркаласа пăхнă, анчах çапах та темĕн мурĕшĕн — как каç енне сулăнчĕ, чун вара клубах туртăнать.

Пĕрре çапла пĕр каçхине клубра ларатпăр. Бригадир Сироткин, ватă салтак, тахçан вуланă роман тăрăх мыскаралла халап çаптарать. Каринкин Якур — мухтавлă конюх (мухтанчăк мар!) хăйĕн юпах тихисемпе мухтанать. Никандр Левăй, матрос пулнăскер, Махно хыççăн тустарса çŭренипе тĕлĕнтерет. Иванов Карачăм («Хĕрлĕ çăлтăр» редакторĕ) хаçат сăрлать — такшине лектерсе илнĕ тата: йăх-йăх-йăх кулать. Патефон кĕрлесе ларать — е хулăммăн хумхатса илет, е çинçен шăнкăртатса каять. Шупашкартан килнĕ юлташ Шаляпин çинчен каласа парать.

Патефон ывăсĕ çаврăнса пĕтмессерен телефон шăнкăравĕ сив чир тытнă пек ниçта кайса кĕрейми чĕтрет. Елчĕке ыйтать, Юхми чĕнет, Канашĕ тата кирлĕ тет. Пирĕн клуб кĕçĕр Воронцов ăсĕпе темиçе ял, темиçе район телефонĕпе çыхăннă. Михал ку ĕçе «трансляци» тет.

Ывăс каллех васкамасăр çаврăнма тытăнать. Михал аллисене хыçалалла тытса пŭлĕм тăрăх музыка çемми май кăллĕн-кăллĕн уткалать. Ак вăл тăрăх сак çине кайса ŭкнĕ Арçук бригадир çине пăхать, унтан кĕтесрен тумтир илсе çамрăк бригадирăн пуçĕ айне ачашшăн майласа хурать. Кусла пек йăванса кайнă вăрăм бригадир харлаттарса çывăрать — унăн канăçĕ те çакăнта анчах. Çур çĕр иртсен пĕр сехетре бригадăна ĕçе кăлармалла — авăн ĕçĕ хĕрŭллĕ. Çавăнпа та Левăй киле анса çывăрма шикленет, кун пек ответлă вăхăтра ăшă вырăн тăшманран та хăрушăрах...

Акă Микула та çитрĕ. Письмоносец Орлов Микули. Уншăн каçĕ каç мар, ирĕ ир мар.

— Атьсемĕр, — терĕ Микула пĕртен-пĕр аллине çŭлелле йăтса, — пысăк хыпар!

— Мĕнле хыпар? — çĕкленчĕç сасăсем.

Патефон сасартăк чарăнса ларчĕ. Телефон чылайччен кĕçенсе тăчĕ, анчах вăл та, никам та асăрхаманнине кура, юлашки хут кăмăлсăррăн шăнкăртатса илчĕ те шăпланчĕ.

— Мĕнле хыпар?

— Вăрçă пуçланман-и?

— Тельман мĕнле?

Микула нимĕн те чĕнмест, вăл çав-çавах, хулари хĕреслĕ урамра тăнă постовой пек, аллине яш! çĕклесе тăрать.

— Кала ĕнтĕ часрах, ăш çунтармăш! Тен, манăн ум статья валли шăп юрăхлă пулĕ, — чăтаймарĕ Карачăм та.

— Кала, мĕнле хыпар? — терĕ юлашкинчен Михаил пур сасăсене çĕнтерсе.

— Кульцав колхозĕ каллех преми çаклатнă... Калаçакан кино!.. — каласа хучĕ тин кăна «ăш çунтармăш» Орлов аллине ярса.

Унччен те пулмарĕ — пĕтĕм пÿлĕм, çул панă юхăм пек, тапранса кайрĕ. Сăрă шăрши те сирĕлсе пĕтмен «Канаш» номерĕсем алăран алла куçа пуçларĕç.

— Вуласа пар-ха пире те, — тесе кăшкăрма тытăнчĕç лампа çывăхне вырăн илейменнисем.

— Мĕн вуламалли пур унта, — сасартăк сиксе тăчĕ Воронцов. — Пире пурсăмăра та çыхмалла та кайса пăрахмалла çав Пихапсел авăрне. Çакă кăна юлнă... Илнĕ!.. Мускав премине илнĕ! Пĕлетĕр-и эсир çакна! Калаçакан кино!

Юлашки сăмахсене Воронцов шăлне шатăртаттарсах каларĕ пулас. Унтан пурин енне те çаврăна-çаврăна илсе:

— Нечевă кунта ĕç вăхăтĕнче сулланса ларма! Саланăр... Ыран каçхи апат хыççăн пĕрер сехете комсомолецсем, Осоавиахим активĕ клуба пухăнмалла, — сассине пĕр хăпартса, пĕр антарса каласа хучĕ председатель. Вара те чăнласах та çилленсе, те шÿт кăна туса портфельне кăп! хĕстерчĕ те урăх нимĕн те хушмасăр хăвăрттăн тухса уттарчĕ.

— Ахăртнех, каллех мĕн те пулсан туртса кăларчĕ пулас ĕнтĕ, — тесе хучĕ пиртен пĕри сасартăк пÿлĕнсе ларнă шăплăха уçса.

Пурин пичĕсем çинче те çăмăл кулă кăвак хуппи пек уçăлса хупăнчĕ — мĕн те пулсан пулатех! Колхоз чанĕ вун иккĕ çапрĕ. Эпир пĕрне-пĕри сывлăх, ырă каç сунтăмăр та килсенелле салантăмăр.

Çавă каç Воронцов Михаил килĕнче кăвак çутă киличченех лампа сÿнмерĕ. Нумайччен хăйпе хăй çапăçса ларчĕ Михаил. Пĕр хирĕçсе кайнă ăш-чик ниепле те лăпланма

пĕлмерĕ. Канăçсăр шухăшсем тăпăлнă çăмха пек чăлханса пĕтрĕç. Āçта вĕсен умĕ, āçта сумĕ, āçта вĕçĕ, āçта хĕрри — ниçтан та чухласа илме çук. Пĕр çĕртен уçса яратăн — тепĕр çĕртен тăпăлса пырать, пĕр тĕлтен ситретĕн — каллех тепĕр тĕлтен чăлханать.

Акă вăл шур хут тытать те хăвăрттăн-хăвăрттăн чашлаттарса çырма тытăнать, унтан сасартăк, ручкине çĕклесе çапса, ура çине сиксе тăрать. Пĕр-икĕ самант каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет, вара каллех тенкелĕ çине йывăррăн кайса йăтăнать.

Çыру сĕтелĕ çинче иккĕмĕш çул ĕнтĕ пĕр илемлĕ кĕлетке тăрать. Гипсăран унаса хытарнă Рим хĕрĕ, тутлăн анаслана пек, йыхравлăн каркаланнă пек хăлаçланса тăрать. Михал āна вăраххăн хăй умне туртса лартать, çавăркала-çавăркала пăхать, унтан йĕрĕннĕ пек пулса шăл витĕр: «Пĕрре те пирĕн хĕрсем пек мар», — тесе каялла тĕртсе ярать. Рим пики хăйĕн вырăнне хăвăрттăн, кăмăлсăррăн чакса ларать.

Куçсем пĕр япала çинчен теприн çине куçса çӳреççĕ. Анчах нимĕн те пĕр хирĕçнĕ чуна лăпкăлăх кӳмест. Акă хăйă çутинче мерчен пек йăмăхса тăракан витĕр курăнан чернил савăчĕсем, асамат кĕперĕ пек тĕс парса тăракан веер евĕр пуçтарса хунă тĕрлĕ кăранташсем, ручкăсем, куçа тараватăсăрăпа сăрланă тирпейлĕ сĕтел — çаксене пурне те Михал хăйĕн кăмăлĕ килĕшнĕ пек туяннă, йĕркеленĕ, упранă. Çыру сĕтелĕ, ял тăрăх чупса çӳренĕ хыççăн ларса канмалли вырăн, юратнă вырăн. Чи лайăх кĕнекисене Михал çакăнта вулать, чи лайăх рапорчĕсене çакăнта çырать. Паян çакă сĕтел, çакă яланах кăмăллă кĕтес, ирсĕр ĕçĕн свидетелĕ пулнă вырăн пек, кăмăла тавăрса тăрать, чуна тăвăрлатать. Михал каллех сиксе тăрать, каллех кабинечĕ тăрăх каллĕ-маллĕ çӳреме тытăнать. Çилникре ача сасси илтĕнсе каять. Михал часрах пырса алăкне хыттăн хупать. Стена çинчен юратнă Эйдеман куç хӳрипе кулса пăхать. Михалăн идеалĕ. Анчах вăл та паян илемсĕр кулнăн, шăл йĕрнĕн туйăнать. Акă 7—8 çамрăк, майкăсемпе, трусиксемпе. Вĕсем, çип çапнă пек, йĕркерен тăрса тухнă: Патрекел физкультурникĕсем. Вĕсем çине те Михал темĕнле, шурă куçпа пăхса илет. Сасартăк вăл хăйĕн сăнне пысăк трюмо çинче курах каять... «Нивушлĕ ку эпĕ?..» Куçсем урмăшнă, алчăранă. Куç харшисем, пĕр-пĕрин çине сиксе ларас пек, хутланса илнĕ, çӳç-пуç тармакланса, шăртланса кайнă.

— Фашист! — Михал ку пархатарсăр сăмаха шăл витĕр кăларса йывăррăн кулса ячĕ. — Çук, эпĕ ĕшеннĕ. Манăн тинкене çав Аптишемех илет. Тырри каймасть, укçи килмест. Çыннисем çуллахи шăрăхра пĕç тĕп таран кăçатă

тăхăннă та хуйхă-суйхăсăр кулет туса çӳреççĕ. Эй, кĕççе питсем, кăçат пуçсем!..

Вăхăт çитсен мĕнле урса кайнă тинĕс те лăпланать, тăвăл хыççăн лăпкăлăх анать. Михалăн та кăмăл уяртас енне кайрĕ. Вара вăл пĕр вăрăммăн, пĕр ассăн сывласа ярса çыру сĕтелĕ хушшине каллех майĕпен кĕрсе ларчĕ, унтан сĕтелтен пĕр листа александрийски хут кăларса аллине линейка илсе çав хут çине темскер планĕ ӳкерме пуçларĕ.

Мĕн шухăшларĕ вăл çав каç, мĕншĕн чунĕ хирĕçрĕ ун — тĕплĕн калама çук. Тен, хăй те ун çинчен йĕркеллĕн каласа параймĕ, мĕншĕн тесен хăш чухне так ахаль хăвна ху çĕтĕлсе ларатăн, — вырăссем ăна «хандра» теççĕ, пирĕн чăвашсем — «хăнтăрамак» теççĕ пулас. Анчах çапах та паян татсах калаймăпăр, ыран кун мĕн килĕ те мĕн калĕ.

«Иртнĕ кунăн çути çук» тени тĕрĕс мар, атьсемĕр. Кун пек айван сăмаха диалектикăна чухлайман пĕр-пĕр çутçăвар анчах туртса кăларма пултарнă. Кун пек «концепци» Михалăн тĕп шухăшĕсене тата ун кĕнекисем çинче мĕн çырнине пĕтĕмпех хирĕç пырать. Чăнах та, ытла та «механистла» шухăшланă-çке ĕлĕкхи этем! Эрне, пĕр шухăшласан, хăйне кура сăлтавсем пулнах ĕнтĕ, çавăнпа та ытлашши питлемелли те çук пек, — мĕншĕн тесен пĕрремĕш — ун чухне пирĕн Патрекелĕнчи пек политшкулсем те пулман, иккĕмĕш — чи кирли — революцилле практика çукки пурне те кастарса тăнă. Анчах çапах та çакă вăл «объективлă» сăлтав кăна. Унашкал «объективлăхшăн» чуман урхамахĕ сиксе утлансан оппортунизм çулĕпе сĕтĕрĕнесси паллах.

Час-часах çакăн пек шухăшлать вара пирĕн Михал, — философилес кăмăлăн екки кайнă чух.

Чăн сăмахăн суйи çук. Тĕрĕс шухăшлать Михал. Хăвăрах астăвăр, ешĕл çав, Михал калашле, оппортунистла сăмах хыççăн кайсан хамăр ялти пуян Михаляна та каçарас пулать эппин. «Пулнă, иртнĕ, иртнĕ кунăн çути çук». Апла пулсассăн кил-ха эппин, Михаля тусăм, комсомолец Михал çумнерех, вăл санпа шăкăл-шăкăл калаçса социализма мĕнле çăмăлтарах тумалли çинчен тумит тăвасшăн... Ну-у, çук! Ытлашши хапсăнан! Михал сана хăйĕн яхăнне те ярас çук. Сана социализм мар, тутарсен райне кӳртсе ларт, — пурĕ пĕр эс — çав-çавах, пурĕ пĕр эс Микула турра сăхсăхса, Микула патшана асăнса, вăрçă учĕ утланнă çеттуй Якури пек, кашни самантрах, çилле шăнăраймасăр сиксе тăма хатĕр. Ахаль мар эс яппун килессе кĕтетĕн, ахаль

мар тĕтреллĕ ирсенче колхозăн тинĕс пек хирĕсем тăрăх акула евĕр шăршласа çŭретĕн, хăвăн ĕлĕкхи тислĕк анисене шыраса тупса, вăрттăн паллăсем лартса хăваратăн. Ху çапах та ав: «Усал та пулнă пуль, ырă та пулнă пуль — каçарăр, иртнĕ кунăн çути çук», — тесе айванседе шыратăн. Пĕлет сире Михал, аван пĕлет, ахаль мар вăл сирĕнпе мĕн ăс пĕле пуçланăранпах çапăçма пуçланă.

Иртнĕ кунăн çути пур. Иртни асра тăтăр, пуласси асра пултăр. Акă мĕнле сăмах килĕшет Михала. Иртнине асра тытни кирлех, вăл малашне мĕнле пурăнмаллине ăс парать. Калăпăр, пĕрре тытса ларнă вырăна тепĕр хут пырса кĕместĕнех ĕнтĕ. Çавăн пекех, пĕр йăнăшнă йăнăша тепре тума кăмăл пулас çук.

Йăнăш турĕ пĕрре Михал та. Тăшмана парăнчĕ. Путлăха кĕрсе ŭкрĕ. Ахаль путасса путмарĕ те, çапах та питĕ хытă вараланса пĕтрĕ.

Михалан амăшĕ мĕн вилсе выртичченех ывăлĕн политикăлла йĕрĕпе çапăçса ирттерчĕ. Вун ултă çулхи ачине авлантарса ячĕ. Унтан — минчетсĕр усрамастăп терĕ. Вара çамрăк кĕрĕве кашкăр пек хунчăкăшсем, çыхса пăрахса тенĕ пекех, минчете* сĕтĕрсе кайрĕç. Мĕнле чăтнă çак мăшкăла комсомолец? Михал ăна хăй те лайăх астумасть. Пĕр самант çех темле пуçра юлнă пек: вырăс тиечукĕ ăна: «сухсух, сухсух, безбожник»! тесе пĕтĕм чиркŭри халăх умĕнче хăтăрса пăрахни. (Каярахпа, икĕ-виçĕ çултан, Михал хăйне те лайăх сăхсăхтарнă.) Чиркŭрен киле таврăннă чухне вăл нимĕн те асăрхаман, ун пуçĕ тукмакпа çапса анратнă пек пулнă, куçĕсем нимĕн те курман. Вăл хăй киле çитсе ŭкнине хăй те астумасть. Мĕн пуласси тепĕр кун пулнă. Ячейка Михалана бюрона чĕнтерсе билетне туртса илнĕ. Матрос Левăй флот чĕлхинчи чи витĕмлĕ сăмахсемпе хирĕлсе çĕнĕ кĕрĕве минчет хыççăн тепĕр хут «сбавить» туса янă. Чылай вăхăт кирлĕ пулнă Михалана çĕнĕрен комсомол ятне илме. Патрекел комсомолецĕсем хăйсен хушшинче «икĕ питлĕ çурвале» тŭсме пултарайман. Чăнах та, ăçтан-ха çакăн пек сарăмсăр ĕç хыççăн эсĕ ху икĕ питлĕ те мар, çурваль те мар иккенне ĕнентерен? Анчах Михалан кирек мĕнле пулсан та ĕнентермеллех пулнă. Унăн телейне колхоз ĕçĕ тапранса кайнă, — акă ăçта хăвăн пархатарлăхна чăнах та кăтартма пулать. Тата Осоавиахим организациленчĕ те, Михал валли пайтах ĕç пулчĕ.

Минчет историйĕ Михалăн асĕнчен нихçан та каяс çук. Чăнах та, суранăн палли çухалнă темелле, ун çинчен халь

---

* Венчете.

никам та шарламасть... Анчах çав вырăн халĕ те тапхăр-тапхăрăн хускалать, хаярăн ыратса каять. Тата чи мăшкăлли — тăшман çав вырăна пĕлет, хăйĕнпе кĕрешнĕ чух ялан çав тĕлтен çапма хăтланать.

Иртнĕ кунăн çути пур.

Йывăр пулнă пире, комсомолецсене, халăх çине тухма. Пĕр сăмах кăна калатчĕç: «Килте йытă пăтратман — ялта яшка пĕçерет», — тесе анчах хуратчĕç. Хирĕç пĕр сăмах та чĕнейместĕмĕр. Çавăн пек сăмах хыççăн мĕнпур чăрсăрлăха шăнăр туртса хутлатнăн туйăнатчĕ. Эх, халăхăн чĕлхи! Наркăмăш чĕлхе! Мĕн чухлĕ эс пирĕн хăлхана çĕртмен пулĕ. Эх, халăхăн çăварĕ! Хапха çăвар. Мĕн чул эс пирĕн паттăр йĕкĕтсене антăхнă крокодил çăварĕ пек тискеррĕн уçăлса хыпса çăтасшăн тăрăшман пулĕ. Ну мĕн тумалла пулнă-ха 14—15 çулхи комсомолецăн е пионерăн? Ĕçлес, вĕренес, çĕкленес кăмăл мĕнпур вăйпа тапса тăнă. Михайловăн «Сайра маякĕсем», Коваленкăн политграмоти, Ярославкин библийĕ çĕр çывăрттарман. Пĕрле пухăнса калаçас килетчĕ, ху тенĕ тантăшпа чи вăрттăн шухăшсем пирки чунтан-вартан сăмах татасшăнччĕ. Çÿреттĕмĕр вара хамăр пеккисем ăçта килчĕ унта. Хупăннă çуртсене пухăна-пухăна лараттăмăр, типĕ çырмасен тĕпĕнче канашсем тăваттăмăр. Пирĕншĕн ун чух сысна вити пек хурал пÿрчĕ те пулман. Шартлама хĕл кунĕсенче пĕр-пĕр тăлăх инке патне ăшăнма кĕреттĕмĕр, вара алăк умне хурал тăратса каçса кайса стена хаçачĕ сăрлаттăмăр. Ну вара тăшмансене суйлаттăмăр та. Анчах пирĕн те аяла пулас килместчĕ. «Шампа хырăм, патпулкă çурăм, хăнкăла аяк пĕрчи, шĕшлĕ ура, кунтăк пуç — çав кам пулать?» — теттĕмĕр те, çак «витĕмлĕ» сăмахсемпе элес-мелес карикатура туса: «Ку пирĕн ялти çав-çав кулак, — тесе лаплаттарса хураттăмăр. — Лекрĕ хайхи, вăтаранах татăлчĕ!» — теттĕмĕр вара.

Пирĕн вăрттăн-кĕрттĕн тухакан хаçатăн ĕмĕрĕ нихăçан та вăрăма кайман. Çакса хунă-хуман куçран çухалатчĕ, ахăртнех, «ялти ятлă» çынсенчен нихăшин те хăйĕн сăнне эпир ÿкернĕ пек курас килмен пулĕ.

Пыра киле эпир хамăра хамăр та, пурнăçа та лайăхрах чухлама пуçларăмăр. Кулак тени пирĕн карикатура кăна мар иккенне туйрăмăр. Комсомол тени — ача вăйăи мар иккенне лайăх пĕлтĕмĕр. Чăваш йăлипе, ваттисенчен вăтанса ĕçе вăрттăн-кĕрттĕн туни — хăйне манер оппортунизм иккенне куртăмăр. Совпартшкулсене, рабфаксене çул тытрăмăр. Хĕрлĕ ялкорсен ятне тивĕçлĕ пултăмăр. Вара

никам тытса çурайми пирĕн хисеплĕ хаçатсем ялти эксплуататорсене хирĕç çĕнĕ пурнăçшăн, социализм çулĕшĕн ăспа, хаярлăхпа авăрланса кĕрешме пуçларĕç. Эпир тин вара тăшмана «вăтаран татма» вĕрентĕмĕр.

Михал ун чухне çав чăрсăр хаçатçăсенчен пĕри пулнă. Вăл хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле кивĕ Патрекелне хирĕç тухмаллипех тухнă.

Вăхăт унтанпа нумай иртрĕ. Паянхи Патрекел унччен хи Патрекелне тĕл пулсан палласа та илеймĕ. Çавăн пекех пирĕн Воронцов та «килте йăтă пăтратман» ачаран ял ĕçне пĕтĕм тавра курмалăх ятлăн туса тăракан çын пулчĕ.

Михал пионер организацинче кĕрешӳ мĕн иккенне ача чунĕпе чи малтан тавçăрса илнĕ. Комсомол организацинче — кĕрешӳре хăюлăх, ăс, пĕлӳ кирлине пĕлнĕ. Халĕ вăл парти кандидачĕ, çĕнĕ çул çине тухнă ялăн сулăмне çирĕппĕн тытса пыракансенчен пĕри.

Унтанпа вăхăт нумай иртрĕ.

Мĕн чул ача Хĕрлĕ Çар шкулĕ витĕр тухрĕ, мĕн чул çамрăк аслă шкулсенче вĕренет, мĕн чул вĕсем колхоз производствинчи пархатарлă вăйĕ пулса тăраççĕ. Çавăнпа та-и, тен, Воронцов Михаил: «Пурте вĕсем пирĕн, пурте вĕсем эпĕ чылай çул секретарь пулса ĕçленĕ ячейкăран», — тесе мĕнпур кăмăлтан калаçать.

Акă Борисов — ыран-паян инженер пулать. Блинова Хветуç тухтăра вĕренет. Иванов — летчиксен шкулĕнче. Арсений Левăй — ăстайла рационализатор, кулакран юлнă авăн машинине хăйĕн проекчĕпе «реконструкцилесе» колхоз валли техникăн юлашки кăмăлĕпе çаврăнакан машина туса пачĕ.

Ахаль мар колхоз председателĕ Сергей Петров хăйĕн çыннисемпе мухтанать. «Кам çук пирĕн колхозра?» — тет вара пĕр-пĕр савăнăçлă праçникре. «Инженерĕ — хамăрăн, агрономĕ — хамăрăн, летчикĕ — хамăрăн, тухтăрĕ — хамăрăн, тимĕрçĕ — хамăрăн, плотникĕ — хамăрăн, ветеринарĕ — хамăрăн, пурте — хамăрăн, хамăрăн!» — тет те кĕрекене кисретсе тăрст! тапать. Ан тив, мухтантăр председатель. Михалсен мухтанас тесен сăлтав çителĕклĕ. Михал хăй те малта пыракан ял Совечĕпе мухтанма пултарать. Мускав таранччен палăрса тăракан Осоавиахим организацийĕ çинчен, кăмăлăр пулсан, каласа кăтартать, çичĕ-сакăр награда илнĕ ударниксемпе паллаштарать. Вăл хăй те Мускавра Эйдеман умĕнче доклад тунă çын. Осоавиахим тĕп совечĕн председателĕ хăй аллипе хăй пирĕн Михала вĕр çĕнĕ наган парнеленĕ. Чăваш Тĕп ĕçтăвкомĕн председателĕ хăй аллипе хăй Михала тăван ывăлне савнă пек çурăмран лăпканă...

Чăнах та хăватлă организаци Патрекелĕнче. Акă мĕн çырать Воронцов юлташ ОСО организацийĕ çинчен:

«Вун пĕр çул çитет Патрекелĕнче Осоавиахим организацийĕ пуçланса кайни. Пирĕн ячейкăн организаторĕсем — граждан вăрçин паттăрĕсем — вун пĕр çул каялла, ячейка уçăлнă чух, вĕсем çинчен вăрçă тар шăрши те сирĕлсе пĕтмен пулнă. Вăхăт сахал мар иртрĕ. Вун пĕр çул хушшинче çамрăк ачасем комсомол хăвачĕпе çĕкленсе паттăр осоавиахимцăсем пулчĕç, чылай йĕкĕтсем Хĕрлĕ Çара кайса маттур салтаксем пулса таврăнчĕç, ячейка организаторĕсем колхозра хисеплĕ ватăсем вырăнне ларчĕç.

Осоавиахим организацинче ĕçлени пире хамăрăн кулленхи задачăсене вăрçăри пек витĕр курса тăма вĕрентрĕ, хамăр вăйсене кирлĕ чухне кирлĕ пек шайлаштарма хăнăхтарчĕ. Осоавиахим ĕçĕнче çакăн пек пахалăх йăлине туянни — пирĕн вăл колхозра та тата пĕтĕм Совет ĕçĕнче те часах палăрчĕ.

Эпир хамăр Совет çĕршывне социализм тăшманĕсем юнасах тăнине пĕр самант та манмастпăр. Пирĕн задача: кашни колхоза сыхлăх крепоçĕ тăвасси. Çак задачăпа пирĕн организацин ĕçĕ кулленех ăнăçлă çыхăнса пынă. Пирĕн тĕрек — колхоз тĕрекĕ, çавăн пекех, колхоз тĕрекĕ — Осоавиахим тĕрекĕ.

Сăмаха вăрăма ямасăр, эпĕ кунта пирĕн организаци кăçал мĕн-мĕн тунине каласа парасшăн.

Пирĕн вăй пысăк: эпир 388-ăн. Хими кружокĕ витĕр кăçал 112 çын вĕренсе тухрĕ. Тĕл пеме 33-н вĕренчĕç, вĕсенчен 24-шĕ «Ворошиловский стрелок» ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

«ОСО çамрăк тусĕсен» кружокĕнче 45 çын çамрăк çыхăнуçă, тата 19 тĕл перекен вĕренсе тухрĕç. Авиамодель кружокĕ 42 çын вĕрентсе кăларчĕ. Пирĕн хамăрăн хор пур, унта 22 çын хисепленет. «Пирвайхи пулăшу» ĕçне вĕреннĕ колхоз хĕрарăмĕсем пирĕн 20 çын. Метеорологи кружокĕ те пур пирĕн, унта 5 çынна яхăнах ĕçлет. Çанталăк хăçан мĕнле пулассине кружок тĕрĕсех каласа пама пултарать.

Çамрăксем пирĕн физкультура ĕçне питĕ хавас. 24 çамрăк каччă, хĕрсем «ГТО» значокĕ илмелĕх норма пачĕç.

Вăрçă ĕçне эпир вĕренсех пыратпăр, кĕнекесем тăрăх анчах мар, пирĕн кирлĕ хатĕрсем те чылаях. Планер пур пирĕн, унпа 15 çын вĕçме вĕренчĕ. Винтовкăсем, противогазсем пур. Хамăр сыхлăх çуртĕнче организациленĕ вăрçă кабинечĕ пире вĕренес ĕçре лайăх пулăшу парать.

Эпир, осоавиахимцăсем, Сталин юлташ каланисене асрах тытса тăратпăр: «Пире ют çĕр пĕр шит те кирлĕ мар,

анчах хамăрăнне те пĕр вершук та никама та парас çук» («Çамрăк колхозник», сентябрь).

Акă мĕнле организаци пур Патрекел ялĕнче. Нумай панă, нумай вĕрентнĕ Осоавиахим колхозниксене. Çак организацин чи лайăх йăлисем социализм çулĕпе кал-каллăн утакан çĕнĕ ялăн ĕç-хĕлне куçнă. Осоавиахим вăл Патрекелшĕн мĕн пурĕ пулса тăнă: вăл — колхоз, вăл — ял Совет, вăл — драмкружок, вăл — хоркружок, вăл — сад, вăл — клуб, вăл — чыс, вăл — хисеп, вăл — савăнăç, вăл, пĕр сăмахпа каласан, — пурнăçăн, ĕçĕн стилĕ. Тен, унсăрăн пирĕн Патрекел, сывлăш питĕрĕннĕ этем пек, пÿлĕнсе те ларĕччĕ-и? Çук, эпир хамăр яла çак организацисĕр мĕнле пулассине те тавçăрса илме те пултараймастпăр. Чĕрĕ чуна уçă сывлăш кирлĕ пулсан пире те Осоавиахим кирлĕ. Пĕрре кăна йыхравлă сăмах пăрахтăр председатель — 388 çын пĕр çын пек пĕр тăрук сиксе тăма хатĕр. Акă ун çинчен мĕн каласа кăтартать колхоз председателĕ Петров юлташ:

«Пирĕн колхозран килен-каян пĕр тĕлĕнет: «Епле сирĕн çав тери йĕркеллĕ, хăвăрт та тирпейлĕ ĕçлеççĕ», — теççĕ вара. Эпир ун пек чух ним калама аптраса: «Пирĕн колхозĕ те «Осоавиахим» çав», — тесе анчах ответлетпĕр.

Колхоз ĕçĕ хăйне пĕр статья, Осоавиахим ĕçĕ — хăйне, — çакăн пек шухăш пирĕн нихăçан та пулман. Пирĕн яланах колхоз ĕçĕ ăнсан, Осоавиахим ĕçĕ те ăннă, çавăн пекех, пĕри хирĕçсен, тепри те хирĕçессе кĕтсех тăр вара. Пĕр сăмахпа каласан, пирĕн ялта Осоавиахим организацип колхоз нихăçан та пĕр-пĕринчен уйрăм-супинке пурăнман, малашне те çаплах пултăр.

Акă сире пĕр факт каласа парам. Астăватăр пуль, кăçал пĕр вăхăтра питĕ вăйлă çумăрсем пулчĕç. Эпир унччен кăна пĕве туса хунăччĕ. Ку ĕçе пирĕн шăп кăна пин ĕç кунĕ кайрĕ.

Хай çăмăр çăвать те çăвать вĕт, чисти пĕлĕт йăтăнса аннă пек.

— Пĕтрĕ пĕве, — тет ман арăм.— Ăçта кĕпе-йĕм çăвăпăр ĕнтĕ?..

— Пĕтрĕ пин трудодень, — тетĕп.

Çапах та хама хам пăртакçă йăпататăп: чим-ха тетĕп, Михал патне чуптарам, мĕн те пулин решить тумаллах тетĕп.

Унччен те пулмарĕ — чан сасси кĕрлесе те кайрĕ. Пăхатăп: Михал... Воронцов! Хăй вăл курăнмасть те, йăлт ăна çумăр карса илнĕ, чан вĕренне туртнă май мĕкĕлтетни кăна пăртакçă палăрать.

Хайхискер хăпăл-хапăл тумланса яратăп та вĕçтеретĕп пĕве патне. Э-э-эй, кунта халăх! Çтан кăна тухса ĕлкĕрнĕ. Ахăртнех, пурин те пĕве шухăшех пулнă пуль çав. Хăшĕ кĕреçепе, хăшĕ сенĕк тытнă, тепри пакур йăтнă.

Çавă кун Кĕçĕн Пăла çинче пĕр пĕве те юлман. Ĕмĕр ларнă пуян пĕвисем хирĕлчĕç. Пирĕн çĕнĕ пĕве чăтрĕ. 300 çын ытла Осоавиахим членĕсем ĕçлерĕç. Шыва кая-кая тертлентĕмĕр вĕт. Дисциплина çапла пирĕн. Хăваланипе мар. Пирĕн кохозник хăçан мĕн тумаллине пĕлет.

Колхоза пирĕн 1928 çултах организациленĕ, ăна пуçласа яраканнисем ОСО членĕсем.

Çакăн пек организаци пурри колхоза калама çук пысăк пулăшу. Тӳррипе калас пулать: хамăр хими отрячĕн ĕçĕсене пула эпир иртнĕ çул çур тыррисен тухăçне 15 процентран кая мар хăпартрăмăр.

Пирĕн лашасем лайăх витесенче тăраççĕ, конюхсем Осоавиахим ударникĕсем, вĕсем валли Осоавиахим юриех курс та организацилесе ирттерчĕ.

Юлашки икĕ çул хушшинче пирĕн чылай çĕнĕ хуралтă та хăпарчĕ. Çĕр çирĕм тонна кĕмелĕх улма-пахча çимĕç нӳхрепĕ турăмăр (калăн çав — ку мĕнле блиндаж е газоубежище тесе). Алă лашалăх вите, машина сарайĕ, кĕлетсем, столовăй, чиркĕве ишсе сыхлăх çурчĕ тата пĕчĕкрех клуб турăмăр.

Кăçал çĕнĕ мунча лартрăмăр (ун пекки Елчĕк таврашĕнче урăхран курăнмасть-ха). Планер валли (самолетлăх та вырăн пулать) ангара тăватпăр.

Патшалăха парас парăм пирĕн çинче нихăçан та вăраха тăсăлман.

Юлашкинчен çакна кăна калас пулать: колхоза большевикла, колхозниксене пуян тăвас тĕлĕшпе Осоавиахим пире калама çук пысăк вăй парать. Ну, конешнă, эпир, колхозниксем, хамăр патăртах вăрçă ĕçне вĕренсе пырассине те «пĕрре те манăça хăвармастпăр» («Çамрăк колхозник», сентябрь).

Тепĕр кун каланă вăхăта Сыхлăх клубне лăк тулли халăх пухăнчĕ. Кунта ОСО активĕ, комсомолецсем, ял Совет членĕсем, пĕр сăмахпа, яла тĕс парса тăракан ятлă çынсем. Пĕрисем каçхи апат тукаланă та темĕнле васкавлă ĕç пулĕ тесе часрах хыпаланса килнĕ. Пухура та вĕсем темскер хыпаланса, ăшталанса лараççĕ. Теприсем, хай клуб чирĕпе асапланакансем, чун туртнине çĕнтереймесĕр, каллех арăмĕсене улталаса тухса килнĕ, вĕсем чинлăн кăна

пĕр-пĕринпе сăмах хушса лараççĕ; виççĕмĕшсем, бригадир Левăй пеккисем, выртмаллипех пуçтарăнса килнĕ. Кирек мĕнле пулсан та пурте темĕнле пысăк ĕç çинчен калаçу хускалассине кĕтсе лараççĕ. Воронцов ĕç вăхăтĕнче пухусене пустуй ыйтупа пуçтаракан марччĕ, акăш-макăш (ку вăл «чрезвычайнăйне» пĕлтерет) кирлĕ пулсан çеç. Апла пулсан паян чрезвычайнăй пуху.

— Юлташсем, — терĕ Воронцов, — хăвăр та пĕлетĕр, халь пухусенче сăмах кунчаласа лармалли вăхăт мар. Çавăнпа та кĕп-кĕскен кăна калаçăпăр.

Шупашкартан ĕнер хыпар çитрĕ. Паллă политикăлла хыпар пур. Кульцав колхозĕ каллех преми илнĕ. Калаçакан кино илнĕ. Чухлатăр-и, калаçаканни, нимуййи мар. Пĕтĕм яла илтĕнтерсе тăрать. Куртăр-и, мĕнле ĕçлеççĕ çынсем! Пирĕн мĕн пур, э?!

— Пирĕн те патефон пур вĕт, — тесе майлаштарса хучĕ пĕри, шăл йĕрентереххи.

— Вĕсем урăм-сурăм клуб лартнă. Электрица станцине хута яраççĕ. Типографи пур вĕсен. Выльăх витисем театр пек — балерина ташламалла. Мĕн çук вĕсен? А пирĕн мĕн пур? Нимĕн те çук пирĕн. (Кунта, конешнă, Михал хăйсене ытлашширех хурларĕ, сăмах витĕмлĕрех тивтĕр терĕ пулас.)

— Клуб — шăрпăк коробки пек, электрица тени асра та çук, витесем хĕсĕк, пысăк клуб тума чиркӳ çуртне те сӳтеймерĕмĕр.

— РĔК хушмасть вĕт! — тарăхса кăшкăрчĕ пĕри.

— Епле хушмасть? Ăна та пĕр хут пуп илсе килсе светит туса ишмелле мар ĕнтĕ. Е райĕçтăвкомран килсе ишсе парасса кĕтетпĕр-и? Клуб тума пире никам та чармасть, вăл трактир уçни мар.

— Акă тĕнчере çук клуб туса лартар-ха, вара хăйсемех: кунта сирĕн патăрта съезд пухма юрамасть-и тесе юмахлĕç. Илтнĕ-и эсир тепĕр уйăхран Кульцав колхозĕнче съезд пухăнасса? Пĕтĕм республикăри лайăх колхозсенчен ятлă çынсем Кульцава пухăнмалла. Петров юлташ хăй те пулать. (Воронцов сăмах май тĕпелте çакăнса тăракан Петров юлташ портретне тĕллесе кăтартрĕ.) Пирĕн те епле те пулсан лекес пулать çав съезда. Апла пулсан мĕн тумалла-ха?.. Акă мĕн тумалла...

Воронцов хăй умне кĕпçелесе хунă александрийски хута илчĕ те тирпейлĕн салатса тăратрĕ: акă! Анчах вăл çав вăхăтрах хăйĕн секретне иртерех уçса панине сиссе хута калла хăвăрттăн чĕркесе хучĕ. Çынсем темĕнле çаврашкасем, тăваткăлсем, ункăсем, виçкĕтеслĕхсем анчах курса юлчĕç.

— Кăтарт-ха, кăтарт, мĕн вăл?

— Мĕнле плант вăл?

— Кайран, — терĕ Михал. — Кульцава лекес тесен акă мĕн тумалла: уй-хир ĕçĕ вăхăтра пĕттĕр, ана çине пĕр шăл тырă та ан юлтăр. Тĕрĕс-и?

— Тĕрĕс! — терĕç ыттисем.

Унтан Михал хальхи вăхăтра кашни колхозник, комсомолец, ОСО членĕ умĕнче тăракан задачăсем çинче уйрăммăн-уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Докладăн ку пайне çапла пĕтерчĕ вăл:

— Çак каланă ĕçсем пирки эпир районта мала тухсан тата пирĕн хальччěнхи çитĕнӳсене асра тытсан эпир пĕр сăмахсăрах Кульцавра пулас чаплă çынсен съездне кайма тивĕçлĕ. Эпир мала тухма пултаратпăрах, мĕншĕн тесен пирĕн колхоз çыннисем Аптимеш клахмачĕсем мар.

Анчах çаплине çапла та-ха, çапах та ку кăна сахал-ха. Пирĕн çав Кульцав колхозне пĕр самант та куçран ӳкерес пулмасть. Ăмăртас пулать вĕсемпе, вĕçĕ-хĕррисĕр ăмăртас пулать. Нивушлĕ эпир çынран кая? Нивушлĕ калаçакан кинона Кульцавăн кăна илмелле? Нивушлĕ çакăн пек мăшкăла чăтма пултаратпăр? (Мĕншĕн мăшкăл — ăнланма çук, ахăртнех, ку сăмах ытлашширех пулчĕ пуль.)

Чĕркесе хунă хут Воронцов аллинче каллех кăлтăр уçăлса кайрĕ.

— Акă курăр... Çакă пирĕн ял планĕ, анчах кăçалхин мар, килес çулхин.

Куçсем лампа çутинче тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе ялтăртатса тăракан шурă хут çинчи тĕрĕсем çине ӳкрĕç.

— Ак çакă, Пăла хĕрринчи лаптăк, — пуп сачĕ, халĕ Эйдеман ячĕпе тăракан пирĕн сад. Çакă сад виçĕ гектара яхăн. Ĕлĕк чух пирĕн этем унта ура ярса пусайман. Арăслан пек йытăсем çав сада сыхлатчĕç... Çĕнетес пулать, чĕртес пулать ăна. Кăçал тĕреклĕ ракатка тытрăмăр, анчах вăл çитмест. Çак сад чăнах та пирĕн канăç, савăнăç вырăнĕ пулмалла. Акă сăрлă хапхаран сада кĕрсе каятпăр. Йĕри-тавра улма йывăçсем — шап-шурă чечекре. Акă эсĕ ылтăн тĕслĕ хăйăр сарнă тӳп-тӳрĕ аллейăпа утса пыратăн, санăн куç умне йывăçсен айĕнчен юмахри пек пĕр çап-çаврашка çурт сиксе тухать. Ăна тĕрлĕ илемлĕ сăрăпа сăрланă. Вăл çурт умне пырса тăрсан шала кĕмесĕр чуну чăтас çук. Акă вăл çурт, — çаврашка паллă тунă. Ку — пирĕн садри читальня. Кĕр те диван çине таянса ларса кăмăлу кайнă таран кĕнеке-хаçат вула.

Санăн шыва кĕрес килнĕ тейĕпĕр. Читальнăран тух та уттар эсĕ ак çак çулпала. Вăл çул сана тӳрех лапсăркка

йывăçсем айĕнче ларакан купальнăна илсе çитерет. Акă вăл — тăваткалскер.

Шыва кĕтĕн, çăвăнтăн, тухрăн, шăлăнтăн — халĕ сан пăртакçă утса çӳрес килет. Кай эсĕ акă çакă çулпала, вăл сана илемлĕ хурăнсен, вĕренесен айĕпе пĕтĕм сад тавра çавăтса çаврăнать. Ку çул чи илемлĕ вырăн, уйрăмах шыв хĕррипе пынă чух. Кунта хурлăхан, крыжовник, чие нумай. Чи лайăх кайăксем кунта йăва тăваççĕ, чи илемлĕ юррисене кунта юрлаççĕ. Пырсан-пырсан эсĕ хăмаран çапса тунă пĕчĕкçеççĕ сăрлă çурт тĕл пулатăн, аякран пăхсассăн — вăл шăнкăрч хăвăлĕ пек анчах, патне пырсассăн — сана унта чыс та, хисеп те. Санăн, тен, ĕçессӳ килнĕ пулĕ, апла пулсан пĕр кĕленче курка тутлă шерпет тултарса ĕç. Санăн, тен, пăртакçă пыру ярăнать пулĕ — апла пулсан пĕрер чăм сăра та ĕçме пултаран, — пике пек колхоз хĕрĕ сана тараватлăн тултарса парĕ...

Акă кунта — пирĕн хайхи сцена, эстрада. Кăна пăсса çĕнĕрен тăвас пулать. Шупашкарти Крупская садĕнчи кăвакарчăн пĕсехи тĕслĕ раковина пек авăнчăк çурăмлă пултăр, апла тусан сас вăйлăрах каять.

Сад тăрăх çаврăнтăмăр-турăмăр, халĕ ĕнтĕ физкультурниксен стадионне кайса курас кăмăл пур. Стадион акă вăл — садран пĕр çĕр чалăш анатарах, çерем çинче. Кунта ак чи малтан темĕскер тăрнашки куç умне пулать. Парашют вышки ку. Пăхсан çĕлĕкӳ ӳкет. Кунта ачасем сывлăшра чикеленмелле выляççĕ. Аван вĕт? Сывлăшра чикеленеççĕ! Ан тив, чикеленччĕр. Ава лererех пирĕн ачасем футболла выляççĕ. Вячеслав Миролюб туппа урнă пек тапать. Эпир пăхса тăтăмăр-тăтăмăр та ялалла уттартăмăр. Пăла урлă каçнă чух шыва кĕрекенсене куртăмăр. Ав унта ачасем сăрлă кимĕсемпе ярăнса çӳреççĕ. Ав Доброхотов старик вăлта ярса ларать. Пулă хыпать, шултриех лекет, мĕншĕн тесен хамăр тăрăшнипе пирĕн пĕвене çурхи шыв та татса каяймарĕ. Шыв хĕрринче пирĕн халĕ туса лартнă кермен пек мунча.

Ялта мĕн пулмалла килес çул? Ун çинчен халиччен каллех ялăн тепĕр енчи тулашне тухар-ха.

Акă пирĕн колхозăн хули. Кунта правленийĕ, столовăй, хĕвершăл пункчĕ, тырă амбарĕсем, лаша вити, пушар сарайĕ, чăх-чĕп вĕçсе каçайми лупассем. Кусем çаплипех юлччăр. Акă тимĕрçĕ лаççи. Пире пысăк мастерской кирлĕ. Атту тăватă тимĕрç ĕçлет — ниçта çаврăнма вырăн çук. Мăлатука та хулпуççи урлă сулăнтарса çапма çук — юлташшун пуçне тивертен-тивертенех.

Акă кунта пирĕн планер, тăвăр читлĕхе хупса лартнă

кайăк пек хуйхăллă. Ангар тума пуçланă ĕçе кăçал пĕтерес пулать. Чăн-чăн самолет валли те вырăн хатĕр тăтăр.

Акă кунта çĕр мунча пек вите ларать. Çав витере Каринкинăн çичĕ юпах тиха, ниçта выртса тăма пĕлмеççĕ. Çакă вырăна хальхи вите пек тепĕр вите туса хуратпăр, никĕсне хывнă та ĕнтĕ.

Атьăр-ха халь çак урампа ялалла анар. Акă тем пысăкăш лаптăк, — ку чиркӳ площачĕ сарăлса выртать. Кунта ĕлĕк ятлă çынсен масарĕ пулнă. Чул палăксем йăванса выртаççĕ: тĕне кĕнĕ пуян тутарсен, чăвашсен, пупсен, темĕнле офицер майрисен. Выртин — выртчăрах, чăрмантармăпăр. Анчах ку вырăн халĕ пĕтĕм ялăн намăсне ярса тăрать. Кăлкан пек çӳçлĕ пуç тӳпине кĕсен-çăпан тухнă пекех. Акă чăваш ĕнси çинче пӳрленсе ларнă чи пысăк çăпанĕ — чиркӳ. Вăл кунта 185 çул ларнă. Тăррине сӳтсе пăрахрăмăр, анчах никĕсĕ таран тасатаймарăмăр. Çак вырăнта акă çак клуб ялтăраса лармалла. Çак тĕлтех пирĕн шкулсем. Кунта малашне пĕрлешӳллĕ пысăк çуртсем пулмалла, мĕншĕн тесен Орловăн ялан тăмпа сапланă çĕтĕк-çатăк çуртра пурăнмалла мар. Апла пулсан халех çак площаде сад чĕртме тытăнас пулать. Çак халĕ масарсăр вырăн ялта чи илемлĕ вырăн пултăр.

Халĕ урам тăрăх кайăпăр. Çакă вăрттăн пăхса тăракан пăнчăсем мĕскер пулĕ тетĕр? Пĕри — ак Скворцов Семен тĕлĕнче, тепĕри — пирĕн тĕлерех, виççĕмĕшĕ — Каринкин Никандрсем патнерех. Çак пăнчăсем кирлĕ вăхăтра пит кирлĕ пулĕç, — вĕсем Осоавиахимăн сăнав пункчĕсем.

Акă çаксем мĕн яраписем тата? Пирĕн урамсем тăрăх шăрçа пек йăрăмланса тухнă. Ку Доброхотов Михаил улма йывăçĕсем. Эпир ун примерне нихăш те илесшĕн тăрăшмастпăр-ха. Вăл ав урама тăрăх хăйĕн умне пĕр кас улма йывăççи лартса тухнă. Штоп килес çула пĕтĕм çурт умĕнче улма йывăççисем чĕрĕлччĕр. Ытарайми пултăр пирĕн ял. Чĕнтĕрлĕ кĕпер урлă каçса пирĕн яла кĕнĕ çын юмахри сад пахчи витĕр тухса кайнă пек пултăр. Çулçисем çупчăр, улмисем ташлаччăр, сарă кайăксем юрласа тăччăр. Пирĕн ял урлă каçакан машинăсем яла кĕрсенех юрттине чарччăр. Канса, савăнса, колхоза мухтаса, ырă ятпала уйрăлччăр.

Тума пултаратпăр-и эпир çаксене? Калăр.

— Пултаратпăр, — терĕç пурте харăссăн сывласа ярса. — Эс каланисенчен нумайăшне тума тытăннă та ĕнтĕ.

Чăтаймарĕ Каринкин Якур.

— Колхозниксем, — терĕ вăл, — манăн сăмах кĕске. Хăнана чĕнетпĕр-и килес çул Эйдеманпа Петров юлташсене? Курччăр вĕсем пирĕн ырлăха!

— Тӗрӗс! Тӗрӗс! — тесе шавласа кайрӗ пуху.

— Вăй ҫитет-и пирӗн ҫаксене тума? Ҫитет. Пирӗн вăйпа тем тума пулать. Ҫакă план килес ҫул пурнăҫа кӗрсен, эпир Кульцав колхоза хыҫа хăваратпăр. Сывă пултăр социализмла ăмăрту! — тесе пӗтерчӗ хăйӗн сăмахне Воронцов.

Унтан сасартăк пренисем пуҫланчӗҫ.

Пӗри — ҫапла тусан аванччӗ тет, тепри — капла тусан лайăх тет. Ҫӗнӗрен ҫӗнӗ плансем ҫуралма пуҫларӗҫ. Пӗрне-пӗри ӳпкелешрӗҫ, ҫителӗксӗр ӗҫленӗшӗн ятлаҫрӗҫ.

«Социализм вăл эпир вилсен тин пулать» текен стариксем те хӗрсех калаҫма пуҫларӗҫ. Тен, вӗсем те ҫав илемлӗ пурнăҫа кӗске вăхăтрах тума пулать иккенне ӗненчӗҫ пулмалла.

Чăнах та, пит ӗнентерӳллӗ каларӗ Воронцов. Ахаль ӗненмӗттӗн те, анчах пирӗн колхозӗ ҫавнашкал вӗт, мӗскер ăс тытать — ҫавна тăвать-тăватех.

Ҫиччӗмӗш теҫетке пурăнакан конюх Блинов та ҫак пуху хыҫҫăн ҫӗрӗпе ҫывăраймарӗ. Вăл витери хунар ҫутипе усă курса лӳчӗркеннӗ хут ҫине юрла-юрла темӗскер тӗрлерӗ. Тепӗр кун ирхине Федор Якăлч Блинов «Хӗрлӗ ҫăлтăр» редакцине ҫакăн пек сăвă илсе пырса пачӗ:

Вӗрене чӗлтӗм, купăс турăм
Пин-пин кӗвӗ калама.
Планер килчӗ, эп ҫырăнтăм
Сывлăш ҫинче ярăнма.

Утсем утрӗҫ килелле,
Сăртсем юлчӗҫ каялла.
Эй, вӗҫер-и ҫӳлелле? —
Пирӗн ӗмӗт малалла.

Ав Эйдеман пахчинче —
Физкультурник каччисем.
Улма ташлать, ҫулҫă ҫупать,
Пирӗн ҫамрăк савăнать.

Ай-вай пикисем —
Шыв ыйтсассăн пыл параҫ.
Пирӗн колхоз ҫамрăкӗсем
Пӗтӗм ӗҫе вăй параҫ.

Урхамахăн уринче
Йӗс такан та тӳсес ҫук.
Пире вăрҫă хирӗнче
Пӗр тăшман та тӳсес ҫук.

Пирӗн вăхăт чăн килчӗ,
Ленин сăмах чăн пулчӗ.
Вун ҫичӗ ҫул хушшинче
Совет тӗнчи вăй илчӗ.

1935

ШУЙТТАН ЛЕВЕНТЕЙ

Эпир ăна аякранах паллаттăмăрччӗ. Вăрăм та хытканскер, вăл пырсан-пырсан пӗр хăрах урине темӗнле хирӗнчӗклӗн силлесе илетчӗ. Авă Шуйттан Левентей килет теттӗмӗр вара.

Вăхăт унтанпа чылай иртрӗ ӗнтӗ. Эпир астăвасса, Шуйттан Левентей кашни эрнерех пирӗн пасара тухатчӗ. Пӗрпӗр камит хыҫҫăн ахăрашса ҫӳрекен чарусăр ачасем пек, эпир те Левентей хыҫӗнчен кӗпӗрленсе ҫӳреттӗмӗр. Анчах

пирĕн тантăшсем Левентейрен нихăçан та йĕкĕлтешсе кулман. Эпир унтан хăраттăмăрччĕ. Вăл пирĕн енне ăнсăртран çавăрăнса пăхсан эпир пĕр-пĕрне тĕрткелешсе чăл-пар саланса пĕтеттĕмĕр. Çапах пире темĕнле вăй Левентей хыççăн турттатчĕ. Левентей пăрăнать — пирĕн те пĕр сас-чĕвсĕр чĕрне вĕççĕн çавăнтах утмаллаччĕ. Мĕн пасар саланиччен Левентее куçран çухатмастăмăр. Ăна эпир, аманнă тискер кайăк хыçĕнчен хăравçă йытăсем йăпшăнса пынă пек, çил армань патне çитиех ăсатса яраттăмăр. Вара вăл, Левентей, темĕнле тискеррĕн пирĕн енне çаврăнса тăратчĕ те, эпир тĕк татнă пек, ўке-ўке каялла вĕçеттĕмĕр.

Унăн çинче хĕлле те, çулла та — пĕр лăскăнчăк, тĕс кайнă тăла сăхманччĕ. Пилĕк урлă пушăт урхалăх туртса çыхатчĕ.

Çулла пулсан вăл нихçан та ура сырса чăрманман. Пуçĕ те ун яланах çараччĕ, хĕрлĕ тăм тĕслĕ, чăвашла кастарнă çăра çўçне сарă пушăтпа кăшăлласа çўретчĕ. Пуçне вăл яланах çўле тытнă, ылтăн тĕслĕ сарлака сухалĕ çил çук чухне те, ука пек, хăйне хăй чўхенсе пыратчĕ. Путарах панă икĕ кăвак куçĕ нихăçан та çын çине пăхман, ялан ун куçĕсем пĕлĕтре темскер шыранă пекчĕ...

— Атте, — теттĕм эпĕ киле таврăнсан, — мĕншĕн Левентее Шуйттан теççĕ? Шуйттан ун пек пулать-им? Ытла та вăл пирĕн Антун пичче евĕрех-çке. Лешĕн те çўçĕ хĕрлĕ, кунăн та хĕрлĕ; лешĕн те сухалĕ ылтăн, кунăн та — ылтăн. Çамкисем те пĕр пекех. Анчах ку уксак, леш клуххуй... Ку Шуйттан, леш çеттуй. (Чăнах та, ун чухне пирĕн Антун пичче çеттуя тухма хатĕрленетчĕ, чăн тĕне кĕмешкĕн мишерсене те час-часах ўкĕтлетчĕ, ятлатчĕ, хĕнесе те пăхатчĕ.)

— Ачам, — тетчĕ вара атте, — ку пурлă, леш юрлă. Ку ăслă, леш айван. Пĕлетĕн-и?

— Анчах та ма Шуйттан-ха вăл?

— Шăхаль Левентей пĕлĕте çĕкленсе çеттуя тухасшăн пулнă. Анчах çеттуя мар, шуйттана тухнă. Антун Петрович çĕр çинчех шуйттанран çеттуя тухать. Пĕлетĕн-и?

— Пĕлтĕм, — теттĕм. Анчах хам нимĕн те пĕлместĕм (ăнланмастăм).

Нумай пурăнатпăр-и, сахал-и — пурăна киле Шăхаль Левентейĕ мĕншĕн шуйттана тухнине эп пĕлтĕм.

...Левентейĕн алли пит маçтăр пулнă. Вăл мĕн çамрăкранах тĕрлĕ ăпăр-тапăр каскалама юратнă. Пурăна киле Левентей чапĕ пĕтĕм таврана сарăлнă, чи лайăх армансене пирĕн енче çав тунă. Левентейччен пирĕн таврара çăм машинисем пулман теççĕ, çăма хирлўпе таптарнă. Çăм машинине те чи пирвай Левентей ăсласа кăларнă тет.

Пĕрре Левентей темĕнле ăс тытнă. Ăна ĕçе чĕннĕ — ĕçе кайман, халăх çине чĕннĕ — халăх çине тухман. Вăл кунне-çĕрне пĕлмесĕр хăйсен аслăкĕ айĕнче ларакан ĕç станĕ патĕнче аппаланнă. Виçнĕ, каснă, савалана, чутланă, вартанă, каллех виçнĕ, каллех каснă е вăхăчĕ-вăхăчĕпе юман пукан çине ларса, ăш вĕçнĕ этем пек, ним хускалмасăр пĕр çĕре тинкерсе пăхса тăнă. Левентей мĕн ăс тытнине никам та нимĕн те пĕлмен.

Пĕр кунхине Левентей арăмĕ Укиме аслăк айĕнче пĕр япала курах каять... Кайăк!

— Мĕн ку, Левентей?! Ах тур-тур-тур-тур!..

— Э, ан шарла... паян эпĕ вĕçетĕп, — тенĕ лăпкă çех саспа Левентей.

Аслăк айĕнче çуначĕсене сарса сап-сарă кайăк ларнă, кайăкăн çуначĕсем аслăк урлăшне аран çех вырнаçнă. Урлăпирлĕ тыттарнă пилеш ўречĕсем çине сап-сарă хуп карăннă. Курман-илтмен кайăк халь-халь аслăка сиртерсе çĕкленсе каяссăн ларнă.

— Ах тур-тур-тур, Левентей, — кăлтăртатнă Укиме инке, — шуйттан пуль эс, шуйттан пуль. Этем тени хăçан вĕçни пур?!.

Левентей нимĕн те чĕнмен. Вăл сарă кайăк çине лăпкă куçĕсемпе тăрăххăн-тăрăххăн пăхса тек каллĕ-маллĕ ун тавра çаврăнкалана...

...Тепĕр ирхине кĕтмен çĕртен чан кĕрлесе кайнă. Ĕç умĕнхи шăрăх кунсем тăнă. Халăх шартах сиксе вăранса часрах пушар сўнтерме чупнă. Анчах вут-кăвар тавраш ниçта та курăнман. Чан çав-çавах кĕрленĕ. Халăх вара чиркў еннелле сулăннă. Паперт çинче чиркў хуралçи хăлаçлана-хăлаçлана темĕскер каласа кăтартнă. Маларах çитнĕ çынсем хуралçăран ак çакна пĕлнĕ:

— Эп сехет çапма тухаттăмччĕ, — тенĕ хуралçă. — Акă пĕлĕтре пĕр çĕлĕк пек япала курăнах кайрĕ. Акă хайхи ўснĕçемĕн ўсе пуçларĕ, — утă купи пек, ыраш капан пек, сĕкĕрт пек, пўрт пек, чиркў пек пулса кайрĕ; унччен те пулмарĕ — йăлтăр-ялтăр турĕ те — темĕскер çĕр çине шăтăр-шатăр персе те анчĕ. Йынăшса-а-а янă сас пулчĕ. Вара эпĕ вăрт-варт пĕр-икĕ хут хĕрес хывса илетĕп те хам çине чана кĕрлеттерсе яратăп. Хуть мĕн калăр, çак вăл шуйттанах!..

Хуралçă суйнă. Ĕç вăл каланă пекех асар-писер пулман... Чиркў картишĕнче темĕнле хуп татăкĕсем выртнă, пĕр хуп чĕлли тимĕр решетке çинче çакăнса тăнă, унта-кунта хуçăк кăшăл пек япаласем пулнă çавăнтах, инçе мар, пĕр çын ним хускалмасăр ўпне май выртнă. Çынни Левентей

пулнă. Вăл — ни вилĕ, ни вилеймен. Хăрах йĕм пĕççи витĕр юн сăрхăнса тăнă.

...— Атте, — тетĕп вара эп. — Левентей шуйттан пулман вĕт? Вăл вĕçесшĕн пулнă. Ун пуçĕ ĕçленĕ, анчах ăс çитмен. Çынсем хуппа мар, хăмпăпа вĕçеççĕ. (Ун чух эп яраплан çинчен илтмен.)

— Хуппа вĕçсен, — Левентей пек ху-у-п-п! тăвать, хăмпăпа вĕçсен — хăмпу çурăлать. Этеме вĕçме каламан. Пĕлетне? — тетчĕ вара атте...

...Мĕскĕн Левентей пичче! Эс вилнĕ теççĕ. Тăпру çăмăл пултăр. Санăн чăрсăр ĕмĕтне эпир паян ырă кăмăлпа асăнатпăр. Нумайччен ăнланайман сана. Нумайччен сан яту тавра хура карта çавăрăнса тăнă. Санăн ӳтне чиркӳ йышăнман, çумăр-мĕн пулсан — тĕшмĕшлĕ чăвашсем тăпру çине шыв пыра-пыра сапнă. Лилиенталь çинчен вулаттăм-и е Райт çинчен илтеттĕм-и — темшĕн сан чухăн яту та, çав янравлă ятсем евĕрех, манăн чĕрене илтĕнетчĕ. Тĕттĕм те хăюсăр пулнă чăваш. «Çĕр хурчĕ» çĕртен пуçне урăх нимĕн те ыйтман. Анчах сан кăмăлу никам асне килмен хăюлăха туяннă, вăл этем курман-илтмен çӳллĕхсене илесшĕн пулнă. Эсĕ çĕр туртăмĕнчен те вăйлăрах пулса ирĕк кайăксем пек çут çанталăкăн анлăхĕпе кăмăл тулли савăнасшăн пулнă... Тен, эсĕ хăвăн вăйна ху та шанман пулĕ. Тен, ăссăр вăй çĕклесе пынă пулĕ. Тен, эсĕ «çӳлти патшалăхăн» илемĕсене канăççăр чирлĕ шухăшупа тĕлĕкри пек хапсăнса асаплă çĕртен, киревсĕр пурнăçран, путсĕр этемсенчен çӳлелле, çын пырайман çĕрелле тарасшăн пулнă пулĕ... Эпир ăна тӳррĕнех пĕлместпĕр, анчах санăн ылтăн пек аллуна ватăсем халь те асăнаççĕ, санăн чăрсăр кăмăлна эпир халĕ те хисеп тăватпăр. Хăюллă, чăрсăр ăс пулнă санра, анчах вăл ылханлă ĕмĕрĕн инкеклĕ чулĕ çине ӳксе çĕмĕрĕлнĕ...

...Эпĕ Елчĕк енчи Патрекел ялĕнче. Кунта «Осоавиахим» ятлă колхоз пур. Тĕлĕнмелле çынсем пурăнаççĕ çак колхозра. Мĕн кăна пĕлмеççĕ вĕсем, мĕн кăна вĕренмеççĕ... Акă хĕвел питлĕ çап-çутă хĕр. Вăл хĕрлĕ тутăрне хĕрле çавăрса çыхнă. Ун тавра ача-пăчасем шăкăл-шăкăл калаçса темĕн каскалаççĕ. Акă эпĕ вĕсем патне пыратăп. Пионерсем аллисене çĕклесе салам параççĕ. Пĕри виçет, тепри çырать, виççĕмĕш темĕскер картать — пурин аллинче те ĕç, пурте темĕскер ĕçлеççĕ.

— Мĕн тăватăр эсир, ачасем?!

— Эпир авиамодель тăватпăр. Тепĕр пилĕк кунтан авиаци кунĕ...

Хĕвел пек çутă питлĕ хĕр кăмăллă çăмăл куллипе пурне те ачашлăн çупăрласа тăрать.

Авӑ çамрӑксем. Вĕсем колхозăн кермен пек кил-çурчĕ хушшинчен планер туртса тухаççĕ. Сарлака çунатлă чăлт шурă кайăк халь-халь хăпарса каяссăн туйăнать.

— Вĕçетпĕр-и? — тет пĕр паттăр йĕкĕчĕ.

— Вĕçетпĕр, — теççĕ ытти каччисем.

Йĕри-тавра колхозăн тулли кăмăлпа тулса çитнĕ туллийĕ. Акă кунта пĕр ушкăн, унта — тепри, лере — виççĕмĕш: бригадăсем илемлĕн карталанса кĕлте çыхаççĕ. Парăс çĕкленĕ кимĕсем пек ылтăн хумсем хушшинче курăнан машинăсем пĕр-пĕринпе мирлĕн шăкăлтатса калаçни илтĕнет. Акă Пăла шывĕ çутăлса выртать. Теçеттинĕ-теçеттинĕ кишĕр-хăяр, теçеттинĕ-теçеттинĕ — хур акăшсемпе тулнă ешĕл кӳлĕ евĕр купăста пахчи. Авӑ вĕр çĕнĕ колхоз мунчи, унăн хыçĕнчен сад пуçланать. Вăл Эйдеман паркĕ — «Осоавиахим» колхозăн канăçлăх сачĕ.

Каччăсем планера сăрт çине илсе хăпарчĕç.

— Вĕçĕр çӳлерех, колхоз çамрӑкĕсем! Çакă пирĕн илемлĕ пурнăçа хура тăшман килсе хурах пусасшăн, халат кайăкĕнчен те хăюллăрах пулăр, ăмăрт кайăкĕнчен те инçерех курăр. Вĕçĕр, çамрӑксем, вĕçĕр! — тесе мĕнпур кăкăрпа çĕкленсе калассăм килет...

Çакă вăхăтра, Левентей пичче, каллех эс манăн асăма килетĕн. Вара эп санăн çинчен çакă калавӑма çырмашкăн пултăм.

1935

ЭПĔ ЛЕНИНА КУРНИ

(Е.Я. Орлова каласа пани тăрăх çырнă)

Малтанхи хут Ленина курни

Тепĕр кун Вак халăхсен комиссариачĕ çумĕнчи Чăваш пайĕ мана РСФСР Çут ĕç комиссариатне ячĕ. Манăн, малта каланă пек, шкул тулашĕнчи çут ĕçне йĕркелекен инструкторсен курсĕнче вĕренмелле. Курс пуçлăхĕ — Н.К. Крупская. Каярах, эпир фронта кайсан, çакă курс никĕсĕ çинче политпросвет институчĕ уçăлнă.

Тал-Мăрса мана çав кунах шыраса тупрĕ. Артист хаваслӑ. «Упи çăкăрĕ» хăйĕн миççине ăнăçлăн пурнăçланă. Тал-Мăрса киле пуян таврăнать, унăн ещĕкĕсенче çĕнĕрен уçăлакăн Чăваш театрĕ валли нумай-нумай реквизит, тĕрлĕ бутафори.

— Çăкăр-тăварпа килекене алăк хăлăпĕ кăтартмаççĕ, — тет çамрăк «дипломат». Хула курса çӳретпĕр. Магазинсем хупă. Тем чул лайăх çуртсем те пушă — алăксем çук, чӳре-

чесем çĕмрĕк. Трамвайсем йĕркеллĕн çӳремеççĕ. Кусла пек лашасем пырсан-пырсан пĕр такăнса ӳкеççĕ. Анчах халăх пурăнать. Халăх утать, чупать, урам тулли çын куçать. Рабочисем, служащисем, вĕренекенсем, çар çыннисем. Ывăннă, ĕшеннĕ, йĕркеллĕ тăхăнман, таса çăвăнман, çапах утать, куçать халăх, хастарлăн пăхать, хăй çулĕпе пырать.

РОСТА витринисен умĕнче — çапса хĕстернĕ пек. Юлашки хыпарсем. Фронтсенчи лару-тăру. Çăкăр ыйтăвĕсем. Маяковскин витĕр касакан сатири. Инçе те мар — тем анлăш афиша: Федор Шаляпин!

Канашлусем. Конференцисем. Съездсем. Вĕренӳ. Экзаменсем. В.И. Ленинăн халăхпа курнăçса калаçмасăр пĕр кун та иртмест. Ĕнер вăл — Ходынкăра, салтаксем патĕнче, паян — фабзавкомсен, профсоюзсен конференцийĕнче сăмах калать, ыран — çут ĕç работникĕсен съездĕнче. Вăл пур çĕре те ĕлкĕрет. Унăн пур çĕрте те пулмалла, шанчăк, ĕмĕт, кăмăл, ĕненӳ памалла...

— Уласа çунать революци кăмаки — Мускав! Сывă эпир — революци хĕвелĕ Ленин пулсан! — тет поэт манпа сывпуллашса...

Совет Российĕнче пурăнакан вак халăхсен суйланă çыннисем çут ĕç ыйтăвĕсемпе Мускава пухăннă. Канашлура В.И. Ленин пулать тесен мĕн чухлĕ савăнмарăмăр пуль эпир, Н.К. Крупская курсĕнчен пынă представительсем. Тĕпелте — президиумра ларакан В.И. Ленин халĕ те куç умĕнче. В.И. Лениншăн президиум сĕтелĕ — чаплă кĕреке мар, ĕç вырăнĕ. Вăл пĕрре те ахаль лармасть, тухса калакансене «куçа кĕрсе» итлет, пĕчĕк кĕнекине алăран ямасть — çырать, паллăсем тăвать, вирлĕрех самантсенче: акă вăл — пирĕн ĕçсем! тенĕ пек пĕрре оратор çине — ырлавлăн, тепре итлекенсем çине — сарлакан та уççăн пăхса илет.

Етĕрне çынни Ададышкин, манăн янташ, революци ĕçĕ чăваш хушшинче мĕнле амаланса пыни çинчен калать. Чăваш халăхĕ Совет влаçĕшĕн фронтра та, тылра та вăя хĕрхенмесĕр çапăçать. Контрреволюци çарĕсен тапăнăвĕ чăваш чиккине çитсен чыхăнчĕ. Тимĕр хӳме пек çĕкленчĕ Совет çĕршывĕ. Халăх Хĕрлĕ Çар валли, хăйĕн чи-чи вăйпитти ывăлĕсене панисĕр пуçне, çĕршер миллион пăт тырă тăратать. Çав шутра Çĕрпӳпе Етĕрне уесĕсем кăна 1918 çулта пилĕк миллион пăт тырă панă, ку вăл пĕтĕм Хусан кĕпĕрни панă шайран 70%!

Çапла, пирĕн делегатăн Ленин умĕнче нимĕн хĕрелмесĕр каласма сăлтав пур. Вăл малалла халăха çутта кăларас ĕç Етĕрне уесĕнче мĕнле аталанса пынине витĕмлĕ тĕслĕхсемпе каласа кăтартать.

А.В. Луначарский, РСФСР Çут ĕç халăх комиссарĕ, илемлĕн, ятуллăн, хĕрӳллĕн калаçать. Ахаль мар ăна ылтăн чĕлхе-çăварлă теççĕ. Вăл: «Пĕтĕм тĕнчене кисретсе тăракан вырăс революцийĕ çĕнĕ пурнăç тума çĕкленнĕ мĕнпур халăхсен хавалĕпе вăйлă!» — тет. В.И. Ленин кăмăллăн кулкалать, оратор çине савăнăçлăн пăхать...

Акă председатель Владимир Ильича сăмах пачĕ. Трибуна çинче — Ленин. Пурнан пурнăçăмри мĕнешкел самант! Çап-çутă çамкаллă, тăваткалрах питлĕ, шĕвĕртерех кастарнă çырă сухаллă, вăтам пӳллĕ, тăп-тăп çан-çурăмлă ахальрен ахаль çын. Çи-пуçĕ — тирпейлĕ, çыпăçуллă. Çакăн пек сăнпа тухса тăчĕ вăл пирĕн ума. Пăхатăн та, акă вăл халь-халь чăвашла калаçма пуçлассăн туйăнать...

В.И. Ленин сăмах каланă чух хăйне тирпейлĕн, çирĕппĕн тытать, ăшталанмасть. Ансат та сулмаклă чĕлхепе калаçать. Шухăш тупсăмне уйрăмах палăртуллă тăвас тенĕ чух вăл икĕ аллине малалла кăнтарса халăх çывăхнерех ярса пусать, унтан çавăнтах чакса тăрать. Мĕн чухлĕ вăй, мĕн чухлĕ ăс — халăх вăйĕ, халăх ăсĕ — капланса, тапса тăрать çакă тĕнчере чи вăйлă çын пулма çуралнă Этемре, халăхсем тата саманасем ĕмĕр-ĕмĕр тĕмсĕлсе кĕтнĕ Улăпра! Ăна курса, ун сассине илтсе çĕнĕрен çуралнă çын пек туйрăм эп хама, тĕнче ман умра çĕнĕрен уçăлса кайрĕ.

Тĕлĕнмелле! Совет çĕршывĕ çинче хура хăрушлăх йăтăнса тăнă чух, Антанта вăслатнипе 14 патшалăх пирĕн çине талпăнса килнĕ чух ăçтан çакăн пек чун лăпкăлăхĕ, тĕреклĕх! Ленин халăхсене хут вĕрентесси çинчен, революцин çакă пысăкран та пысăк ĕçне куллен мĕнле пурнăçласа пырасси çинчен хĕрсе кайса сăмахлать. Мĕн чухлĕ шкул, хаçат, кĕнеке кирлĕ çĕкленнĕ халăха! Ленин пурин çинчен те шухăшлать, пурне те хисепе илет... Халĕ эпир, унтанпа нумай-нумай çул иртнĕ хыççăн, унăн аслă ĕçĕсене тата та лайăх ăнланатпăр. Кăнтăртан Деникин ахăрса килнине кура, Питĕр хулине Юденич юнаса тăнине пула халăх пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр! тесе пĕççе çапса ларма пултарайман. Салтак хура тăшманпа юна ӳксе çапăçнă чух рабочи юхăннă промышленноçа чĕртме тăрăшнă, сухаçă хирте тăрмашнă, çамрăк — вĕреннĕ. Мускавра, кĕпĕрнесенче, уессенче съездсем, конференцисем, канашлусем, черетлисем те, черетсĕррисем те, шавласа иртнĕ. Аслă шкулсем, курссем уçăлнă... Астăватăп: 1919 çул, çуркунне, Чĕмпĕрти чăваш семинаринче вĕренекен ачасем, вăтăр виççĕн, парти мобилизацийĕпе Колчака хирĕç Хĕвел тухăç фронтне тухса кайрĕç. «Чăваш шкулĕнчен семинари турăмăр. Эпир çĕнтерсе таврăннă çĕре кунта пирвайхи чăваш институчĕ пулмалла», — терĕç вĕсем,

çутă пуласлăхшăн çапăçма каякан вăтăр виçĕ паттăр. Чăнах та, паттăрсем таврăннă çĕре Чĕмпĕрте — чăвашсен малтанхи институчĕ. Унта паллă ученăйсем — Н.И. Ашмарин, А.И. Яковлев, С.А. Акимов (Парижри Сорбонна университетне пĕтернĕ чăваш) ĕçленĕ.

Кам тата, Ленинсăр пуçне, тĕнче историйĕнче саманан чи пысăк ĕçĕсемпе пĕрле кулленхи ĕçсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе, шайлаштарса пыма пултарнă?

Чăн, пĕтĕм тĕнче пăлханса тăнă чух пурне те пĕлсе, курса, астуса тăракан этем кăна революцийĕн генийĕ. Çавăн пек этем кăна рабочи класăн, иксĕлми вăй парса тăракан партийĕн, пĕтĕм халăхăн çулпуçĕ пулма пултарнă.

Ăшă паракан, çутă саракан пурнăç хуçи — Хĕвел пек туйăнатчĕ мана Ленин. Вăл тата коммунистсен партийĕ пулман пулсан камăн ăшши, камăн çути шанчăк та тĕрек кӳнĕ пулĕччĕ-ши халиччен пулман йывăр çапăçура халтан кайнă рабочи класа, блокада йăлмакĕпе пăвăннă миллион-миллион выçă çынсене, такăнса ӳксе суха тăвакан чухăн хресченсене, çарран çапăçакан революци салтакĕсене, пире, хырăм выççине манса революци ăслăлăхне вĕренекен çамрăксене?!

Август уйăхĕ. Пурăнма темĕн чул йăвăр пулсан та — вĕренетпĕр. Кунне пире — 150 грамм çăкăр, икĕ пĕчĕк катăк сахăр параççĕ. Ирхи апат — вĕри шыв (ăна çур çухрăма кайса ăсмалла, хамăр патăрта вĕретес — вутă çук) тата пушшуççиленсе кайнă типĕ пулă татăкĕ. Кăнтăр апачĕ — кăпăкланса тăракан симĕс шӳрпе. Каçхи апат — мĕн те пулин. Эпĕ 750000 тенкĕ стипенди илетĕп. Сухаревка ятлă чаплă пасарта — кĕрепенкке ыраш çăкăрĕ 84 пин тенкĕ, пĕр чей чашки вир пăтти 10 пин тенкĕ. Çапах — аптăраман. Юрланă та, ташланă та. Трамвайсем шанчăкран тухнă пирки атă-пушмаксăр тăрса юлтăмăр. Маруся ятлă тантăшпа (Питĕр хĕрĕ, çурма вырăс, çурма француз) çарран, çара пуçăн çатлаттарса çӳретпĕр. Çӳççене арçынла кастарнă, унсăрăн çивĕтсене тирпейлĕн тытма вĕри шыв та, супăнь те çук. Маруся мана ялан чăвашла — хурăнташ тесе чĕнет.

Ытла та култармăшчĕ хĕрлĕ хĕвел çаврăнăш пек шевелюраллă Маруся. Пĕрре вăл çапла, урампа иртсе пынă чух, сасартăк атă тасатакан çын умне чарăнчĕ те çара урине ещĕк çине мĕнлетлĕн хурса: «Рим матронисен урисене арçынсем миро çăвĕпе çунă. Эпир те, революци хĕрĕсем, çавă чыса тивĕçлĕ. Итлĕр. Ыран кунта таса савăт, ырă шăршпа сиплештернĕ ăшă шыв тата кăпăк пек çемçе шурă пир пултăр, — терĕ. — Куллен киле-киле çăвăнăпăр».

Хирĕç ним калама аптăранă атă тасатакан чăл-чал пăхкаласа тăм кĕлетке пек ларса юлчĕ...

Пĕрре эпир, Мускав çывăхĕнчи историллĕ вырăнсене экскурсисене кайса килнĕ хыççăн хамăр клуба пухăнса ларнă. Юрлакан — юрлать, ташлакан — ташлать, кĕнеке тытса ларни — вулать, кашнийĕ татти-сыпписĕр йĕрекен кансĕр ачаран та усал хырăм выççине епле те пулсан манма тăрăшать.

Сасартăк залри шăй-шая çĕнтерсе аялти хутра аслатиллĕ сас «Коммунистсем, пăшал тытăр!» кĕрлесе кайрĕ. Çийĕнчех тепĕр сасă: «Пурин те 10 минутран Хамовники райкомĕнче пулмалла!» — тесе пĕлтерчĕ.

Эпир сиксе тăрса кам мĕнле пулнă çаплипех тумлансатуса тăмасăр парти комитетне чупрăмăр. Райком çурчĕ шăртне тăратнă гигант-чĕрĕп пек хăмсарса ларать: йĕритавра темиçе ĕрет пулемет — йĕс çăварлăхĕсене çыртнă, сăмсисене кăнтарнă.

Мана, йӳле пилĕке, алăк патне пропусксем тĕрĕслеме тăратрĕç. Çара пуçăн, çарран. Хисеплĕ, ятлă юлташсем хăвăрттăн пуç тайса, парти билечĕсене кăтартса иртсе каяççĕ — пăшалсем патне васкаççĕ.

(Çав кун Леонтьев тăкăрлăкĕнче хăрушă ĕç пулса иртнĕ: рабочисемпе хресченсен тăшманĕсем Мускаври партактив пухăннă çурта ултă бомба пăрахнă, нумай юлташсене амантнă.)

Пурте пухăнса çитсен мана та хĕç-пăшал салатакан пӳлĕме чĕнсе илчĕç. Мĕн тумалла? Ман алăра кун пек хăрушă япала нихăçан та пулман. Пăшал тытса пеме мар, аякри пăшал сассинчен те хăранă эпĕ. Юлташсем кулаççĕ.

— Ну, апла пулсан эсĕ асли пул. Ак çакă икĕ маттур сан распоряженинче, — тет мана хĕç-пăшал валеçекен командир кипке тăхăннă икĕ çамрăк рабочи-коммунистсем çине кăтартса.

Тĕрĕслеме палăртнă шанчăксăр вырăнсен адресĕпе тухса каятпăр. Маруся пăшалпа. Вăл, мăн арçынсен хушшинче пуринчен те пĕчĕккĕскер, чи пысăк пăшала суйласа йăтнă пек туйăнать. Эпир патрульлемелли район — Новодевичье. Пароль — «Орел».

Иккĕмĕш хут Ленина курни

Октябрь. Сивĕ. Выçлăх хăрушлансах пырать. Ун çумне тепĕр инкек — хĕл çывхарни хушăнать. Эпир вĕренекен çурт нӳрлĕ, тĕксĕм. Хутса типĕтме — вутă çук. Пирĕн ра-

йонта кашни каç пĕрер йывăç çурт çухалать, хŭме таврашĕ ниçта та юлман, урамра шăрпăк выртсан та — çавăнтах пуçтарса илеççĕ. Мĕнле хĕл каçкалĕ Мускав!

Вăрçă фронтĕнче чи-чи хăрушă тапхăр. Деникин ахăрса килет, Воронежа, Орел хулине илнĕ, Тула кĕпĕрнине çĕмĕрттерсе кĕнĕ. Калăн, Мускав ăна тепре сиксе ŭкмелĕх çеç. Ленин июль уйăхĕнче Центральнăй Комитет ячĕпе: «Юлташсем! Социализмла революцишĕн шалкăм самант, ахăртнех, хальччен пулман чи йывăр самант килсе капланчĕ... Пурте Деникина хирĕç çапăçма!» тени паян тата та хатарлă янăрать. Кăнтăртан килекен хăрушлăх кăна мар, Англи, Франци, Америка авăрланă юн ĕçен Юденич Хĕрлĕ Питĕр çине иккĕмĕш хут тапăнса килет...

Тĕрексĕр чунлисен хушшинче паника, ăна хулари вак буржуази тата революцие пула привилегисĕр тăрса юлнă улпут-тиексем акаççĕ.

Ĕмĕр-ĕмĕр тĕлĕнмелле, ĕмĕр-ĕмĕр этем ывăл-хĕрĕсемшĕн ĕненме йывăр тĕслĕх пулса тăрĕç Ленин çав кунсенче тунă ĕççем! Вăл каллех, çил кайăкĕ тăвăлра анчах канăç курнă пек, кунĕн-çĕрĕн ĕçлет. Каллех, вăл куллен рабочисемпе, салтаксемпе, хресченсемпе, вĕренекенсемпе куçа-куçăн курса калаçать. Мĕн чухлĕ çыру, мĕн чухлĕ статья çырнă вăл çав синкерлĕ кунсенче. Мĕн чухлĕ халăх умĕнче тухса калаçнă.

Ленин чĕннипе пуçарнă «Парти эрнинче» Мускавра 13600 çын рабочи партие кĕрет. Вĕсен хушшинче — эпир Марусьăпа иккĕн «çавăрнă» 4 прачка.

Хăйсем валли ырлăх-пурлăх ăмсанса мар, ирĕклĕхшĕн кĕрешме, тăван революцишĕн пуçа хума, чуна пама партие кĕнĕ çынсем вĕсем! Революци ун чух таса çынсене вилме е çĕнтерме чĕннĕ. Ленин, революцин аслă çул пуçĕ, «Парти эрнин» итогĕсене пĕтĕçтерсе, çак тимĕртен тунă çынсемпе епле лайăхрах усă курасси çинчен çырать, вĕсене вăл патшалăх тытăмĕн чи кирлĕ вырăнĕсене лартма хушать (ан тив, хальлĕхе вĕсен пĕлŭ те, опыт та çитмест — вĕренеççĕ!). Хаяр сăнав вутне лекнĕ тимĕр, ăста тимрĕç аллинче хĕртĕнсе-шăварăнса, пурне те витекен, витĕр илекен çивĕч хурçă пулать. Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен этем те çавах, вăл асапăн вутĕнче мĕнпур тутăх-юмăхне тасатса çирĕп хурçă пахалăхне туянать. Патшалăх тытăмĕн карапне ертсе пыма чăн тивĕçлĕ çынсем — çавсем. Паллах, революци вучахĕнче çирĕпленсе тухнă çакă çынсем чура пулма пултарайман.

Мускав, Петроград, Иваново тата ытти промышленность хулисем хăйсен чи лайăх ывăл-хĕрĕсене вăрçа ăсатаççĕ.

Мускавран куллен çар эшелонĕсем фронтсен еннелле тухаççĕ.

Октябрĕн 24-мĕшĕнче В.И. Ленин Свердлов университетĕнче, фронта кайма пуçтарăннă вĕренекенсем патĕнче, пулать.

Эпир те, Çут ĕç комиссариачĕ курсĕнче вĕренекенсем, Надежда Константиновнăна ўкĕтлетпĕр: фронта, фронта! Аçтан кун пек вăхăтра вĕренӳ шухăшĕ пуçра тăтăр! Курсра парти организацийĕ ку ыйтупа ятарласа решени йышăнчĕ. Партире тăман юлташсем те фронта каяс кăмăла хапăл турĕç. 160 çын. Н.К. Крупская салхуланса: «Мĕн тăвас пур — шухăшăр тĕрĕс, — терĕ. — Сире ăсатса яма питĕ те шел, çĕнĕ ĕçе — шкул тулашĕнчи çут ĕçне вĕренме пĕтĕм Российăран пухăнсаччĕ эсир. Анчах коммунистсен халь фронтра пулмалла, партире тăманнисене ырă тĕслĕх кăтартмалла».

Фронта каяс умĕн пирĕн хамăра чи çывăх çынна — В.И. Ленина курас килчĕ. «Кунта пирĕн атте-анне çук, вĕсен вырăнне Ленин пиллетĕр пире», — тесе шутланă ун чухне кашнийĕ. Надежда Константиновна пирĕн йыхрава Владимир Ильич патне çитерме пулчĕ.

Октябрĕн 28-мĕшĕ. Эпир залра. Урамра — автомобиль. Ленин! Капăрах ăна хирĕç хускалтăмăр. Ленин коридорпа çирĕппĕн, ирĕккĕн, хăй тахçан пĕлсе тăнă кил-çурта кĕнĕ пек утса пырать. Унпа пĕрле Н.К. Крупская тата çамрăк хĕр стенографистка. Шофер машина патне юлнă. Урăх никам та çук. Ку вăл — ун чухнехи Мускавра! В.И. Ленин, тумтирсем çакмалли кĕтесе пырса хывăнчĕ, пальтине, кепкине пирĕн тумтирсем хушшинех çакрĕ, унтан зала кĕрсе трибуна патне иртрĕ. Эпир, коридорта чăрманса юлнă пĕр ушкăн хĕр, савăннипе ним тума пĕлместпĕр, унăн çакса хăварнă тумтирĕ çумне тĕкĕнетпĕр, сĕртĕнетпĕр. Маруся, шăпăрлан, акă Ильичăн кепкине ярса илнĕ — тăхăнса пăхасшăн. «Асту сана, çак каялла!» — хăтăрса пăрахрăмăр эпир ăна.

В.И. Ленин пире çĕршыври лару-тăру çинчен пĕлтерчĕ, фронтри Питĕр, Çурçĕр, Хĕвел тухăç, Кăнтăр, Хĕвел анăç ĕçсем çинчен каласа пачĕ. Пире, коммунистсене, пур çĕрте те малта пыма, ĕшеннисене вăй пама, ăнланса çитейменнисене ăнлантарма, шансах пĕтерейменнисене шанчăклă тума чĕнсе каларĕ. «Рабочисемпе хресченсен представителĕсем пулса фронта каякан çынсен халĕ пĕр лозунг çеç: «Вилĕм е çĕнтерӳ!» — терĕ В.И. Ленин. Вăл пире часрах çĕнтерӳпе таврăнма пиллерĕ, халăх телейĕшĕн — социализмшăн тунă аслă революци кулленхи мирлĕ ĕçĕсене хăвăртрах пикенме кирли çинчен каларĕ.

Юлашкинчен эпир В.И. Ленинпа тата Н.К. Крупскаяпа уйрăлас умĕн вĕсене хамăр хушшăмăра лартса сăн ўкерттертĕмĕр. Çак самант манăн пурнăçра чи телейлĕ самант, «кăвак хуппи» уçăлнă самант, тейĕттĕм, ăна пула манăн пурнăç, эрне яланах тикĕс пулмарĕ пулсан та, яланах çутă пулчĕ.

Тепĕр кун эпир Çут ĕç Комиссариачĕ аллинчен Реввоенсовет аллине куçрăмăр. Фронта каякансен хушшинче чăвашсем — тăваттăн. Пурте вĕсем сăн ўкерчĕкĕ çинче пур. Çакă ўкерчĕке эпĕ хальччěнех тирпейлесе усратăп. Вăл пирĕн кил-йышра ăруран ăрăва каймалли сăваплă еткерлĕх, таса реликви.

В.И. Ленин халăхпа епле çывăх пулни çакă чăваш килĕнче ĕмĕр-ĕмĕр упранмалли япаларан та лайăх курăнать.

1956

КУҪАРУСЕМ

Н.А. Добролюбов

ТӖТТӖМ ПАТШАЛӐХ

(Островский пьесисем тӑрӑх 1859 çулта çырнӑ статьян пӗр сыпӑкӗ)

Умра хамӑр кӗçӗн тӑвансенӗн асаплă, хурлӑхлă сӑнӗ-пичесем; вӗсен ӑраскалӗ — хӗн-хур, вӗсене чӗмсӗррен парӑнса пурӑнма пурнӑç шӑпийӗ тухнӑ. Çемçе кӑмӑллă Митя, йӑваш чӗреллӗ Андрей Брусков, мӗскӗн хӗр Марья Андреевна, мӑшкӑла юлнӑ Авдотья Максимовна, телейсӗр Дашӑпа Надя — хӑйсен шӑпине пӗр ўпкевсӗр пӑхӑнса пирӗн умра салхуллӑн тӑраççӗ... Çакӑ вӑл — персе хӗстернӗ сывлӑшӑн, аран çех ассă̆н сывлакан хурлӑхӑн тӗнчи, пӗтӗм ӑш-чикне мӑканӑн, туртса ыратакан ватӑ суранӑн тӗнчи; çакӑ вӑл — тӗксӗм тӗрменӗн, тупӑк шӑплӑхӗн чӗмсӗр тӗнчи; çав чӗмсӗрлӗх, хӑрушӑ шӑплӑх хутран-ситрен çех ўпкевлӗ имшеркке сасӑпа кӑшт уçӑлам пек тӑвать, анчах вӑл сасӑ та тухнӑ-тухманах йӑмса, çухалса ларать.

Ӑшӑ та, çутӑ та, ирӗклӗх те çук çакӑ тӗнчере. Хӗсӗк тӗрмерен пӑнтӑхнӑ шӑрш, наркамӑшлă нўр çапса тӑрать. Ирӗк сывлӑшран пӗр уçӑ сасӑ та, кунӑн çутинчен пӗр пайӑрка та унта кӗреймест. Енчен пӗрре çех тӗксӗм тӗрмере хӗлхем тени — кашни этемӗн кӑкӑрӗнчех пурнӑç вараланчӑкӗн капламӗ пӗтӗмӗшпех хупласа иличчен çунса тӑракан таса çулӑмӑн хӗлхемӗ йӑмӑхса каять. Пӑнтӑхнӑ йӗрӗнчӗк сывлӑшра аран-аран çех тӗлкӗшет хӗлхем, анчах хӑш чух, пӗрер самантлӑха, амаланса илет те вӑл — вара асаплă çынсен салху мӗлкисем çине ырлӑхӑн, чӑнлӑхӑн çутийӗ ўкет. Çавӑ пӗр самантлӑха килнӗ çутта пула эпӗр унта хамӑрӑн тӑвансем асапланнине куратпӑр, вӗсенче — тискерленнӗ, вараланнӑ, чӗлхесӗр юлнӑ чӗр чунсенче — этемлӗхӗн сӑн-питне те тавçӑрса илме пулать-мӗн, — вара ун пек чух пирӗн кӑмӑл тӑвӑрланса килет, чӗремӗр хаяррӑн, хирӗнчӗклӗн ыратса каять. Мӗскӗн телейсӗрсем, асап хуçнӑскерсем — вӗсем нimĕн те чӗнмеççӗ, вӗсем летарги

ĕнтĕркевĕпе хутланса ларнă, çитменнине, вĕсен хăйсене явса илнĕ сăнчăрсене хускатмашкăн та хăюлăх çитеймест; асаплă вырăна ăнкарса илес туйăм та пĕтесси патнех çитнĕ вĕсен; анчах çапах та хăйсене пусса илнĕ йывăрлăха вĕсем туймаççĕ мар, вĕсем ыратнине пĕлес туйăма çухатман. Суран сурнине чĕмсĕррĕн, хускавсăр чăтаççĕ пулсан та, вăл çавăншăн анчах — кашни кăшкăравлă сас е ахăлтату çакă пăнтăхнă авăрта вĕсенĕн пырне питĕрсе лартать, кăкăра чикен чикнĕн ярса илет, сăнчăрпа пиеленнĕ ўт-пĕвĕн кашни хусканăвĕ ахаль те кансĕр вырăна тата та кансĕр тумашкăн пăхать, йывăрлăх, асаплăх ўсессипе хăратать.Ниçтан та вĕсен савăнăç кĕтме çук, ниçтан та çăмăллăх шырама çук: вĕсем çинче тискер куштанлăх, иртĕннĕ айванлăх хуçара ларать, — вăл — Большовсем, Торцовсем, Брусковсем, Уланбековсем тата ытти те, — çакă куштан ăссăрлăх нимĕнле ăслă тивĕçлĕхе те пăхăнмасть, никамăн умĕнче те ответ тытмасть. Куштанлăхăн тискер ĕренкĕсĕр кăшкăрăвĕ анчах çакă тĕксĕм шăплăха сирет, вăл çех çакă этемĕн шухăшĕпе кăмăлĕн çăви çине шиклевлĕ хĕвĕшў кўрет.

Çапах та вилесем мар-çке çавă мĕскĕн çынсем, вĕсем виле шăтăкĕнче çуралман та, пурăнмаççĕ те вĕт. Тĕнчен ирĕк çути вĕсемшĕн те пулман мар ĕлĕк, чăнах та ĕнтĕ, вăл çутă самантлăха çех пулнă, ăна вĕсем хуйхă мĕн иккенне чухламан ирхи ачалăхра кăна курнă, — çапах та вăл пулнă. Çакă иртсе кайнă ылтăн вăхăта ирсĕр тĕрмере те, куштанлăхăн йўçĕ тыткăнĕнче те манаймаççĕ вĕсем. Пĕрпĕр куштанăн чараксăр тискер сасси, влаçлă ухмахăн аллисем сарлакан хăлаçланни — тĕрмере асапланакансене ирĕклĕ пурнăçăн уçă талккăшне аса илтерет, хăйсен хĕнхурлă ăс-тăнĕсенче хупланнă, анчах çапах та тĕппипех çухалман кăмăла — ирĕк шухăшпа вĕри чĕрен мăнаçлă кăмăлне вăратать.

Вара тулман кăмăлăн, килĕшменлĕхĕн, вăй-халсăр çиллĕн, шăлсăр хаярлăхăн кĕвелĕкĕ çакă авăрăн тĕпĕнче йўçĕхме тытăнать, вăл хумханнă тĕпсĕрлĕхĕн çине тухасшăн, анчах хăйĕн пăтранăвĕпе тискер, ĕренкĕсĕр хăрушлатать... Çук вăл! Чĕрĕ шухăшшăн, чун çумĕнчи сăмахшăн, ырлăхлă ĕçшĕн вырăн та, ирĕклĕх те çук. Янăравлă, уçă сарлака ĕç-хĕллĕх çине куштанлăхăн йывăр пуслăхне йăвантарнă. Анчах пурнан пурнăçра этемĕн пурнас кăмăлне пĕтермешкĕн çук, вăл кăмăл хăйне мĕнле те пулсан палăртатех. Мĕн чул çак пурнас кăмăла хĕсеççĕ, çакăн чул ун палăрасси асаплă, инкеклĕ пулать; анчах кирек мĕнле пулсан та, этем мĕн хытса лариччен çав кăмăл палăрма пăрахмасть.

Торцовсен, Уланбековсен, Брусковсен тёттём патшалăхёнче пуç пулса тăракан куштан ăссăрлăхăн вăйё чăнласах та çавăн пек ёнтё — унта темён чул этем хытса-шăнса ларать, пурнăç тупсăмне те, ирёклёх кăмăлне те, чёре туртăмён вăй-халне те çухатать, кам та кам ăслă-тăнлă пурнăç тума пултарать — çав идиотла халсăрлăхра кýтет, пурнăçа ирёксёр выльăхла çех ирттерет. Анчах пурнан пурнăçра йёркён*, пурнăçлă натурăсем те çук мар; ун евёррисем хăйсен ăш-чикне хуçăлнă кăмăлăн наркăмăшне — кирлё вăхăтра унпа усă курма — пуçтараççё, вёсем çёлен-калта пек шăвăнаççё, йăпшăнаççё, хутланаççё, авкаланаççё, хурăн пуçлă çёлен пек, шапа пек çаврăнкалаççё. Вёсем сас-чёвё памаççё, вёсене илтме те, асăрхама та çук, мёншён тесен пурне те вёсем майёпе тăваççё; кал-каллăн шуни, кăрт-карттăн хускални хăйсен касмăкри ýт-пýне хаяррăн кайса тивессе вёсем лайăх пёлеççё; çири сăнчăра тытса туртнипе тёрмерен тухса тарас çуккине, сăнчăр вырăнне суранлă ýт-пýрен аш татăкёсем тăпăлса тухассине лайăх чухлаççё вёсем. Вара хăйне майлă ёç, вăрттăн ёç пуçланса каять: авкаланса илсе, йăпшăнса-пёрёнсе, пётёрёнсе ýксе вёсем тёрлёрен май сăнаса пăхаççё, — майёпен кăна, никам сисиччен, алăсене хăтарма пулмё-ши теççё, унтан вара сăнчăрсене те касса татмашкăн пулёччё... Çакăнтанах, вăрттăн-кёрттён, никама систермесёр, пуçланнă хускануна пёрле, — пёрпёрне хаяр сунни, пётём тавралăха вёче хывни, ултавлăх, путсёрлёх, этем пёр хăйён канăçлăхёшён кăна хăтланни тапранать. Ку ёçре малтанах усал шухăшпа ăсласа хунă план тавраш çук, кунта чăн-чăн кёрешёве çёр айёнчен яланах илсе пырас çёмил шухăш та çук, чеелёх те çук; мёнпурё те кунта тулти сăлтавсем пирки хăйне хăех килнё — нимён чул та шухăшласа туман, нимён те йёркеллён шайлаштарман туйăм — хăвна ху сыхлассин туйăмё анчах. Тёттёмрен е хёрен-суханран епле хăйне хăй, пирён кăмăлпа килёшмесёр, куççулё тухать, епле пирён куçсем сасартăк килнё вăйлă çутăпа шарса каяççё, епле пирён ýт-пý сивве туйса çýçенсе илет, — шăп çакăн евёрех, çавă этемсем те хăйсен ирёксёр, нимён чул та ăсласа-туса тăмасăр, ултавлă ёçе путсёр эгоистла тăрăшăва пикенеççё, мёншён тесессён вёсем валли уçă, савăнăçлă тýрё ёç тумашкăн май та, ирёк те çук... Нимён айăпламалли те çук çавă çынсене, çавах та вёсенчен сыхланни пăсмасть: вёсем вёт хăйсем мён тунине хăйсем те пёлмеççё. Вёсем, пёр-пёри килсе тăскаса каясран хăраса (чуралла вёренсе ýснёскерсем), татăк çакăртан

---

* Канăçăр.

юласран пĕрĕн-кайăн шикленсе (чуралла пурăнаканскерсем), чуралăхăн тĕп добродетелĕсенчен пĕр-не — намăссăр чеелĕхе туянма мĕнпур вăй-халне хураççĕ. Мĕскертен вара вăтанасси пур вĕсен, мĕнле тĕрĕслĕхе, мĕнле тивĕçлĕхе хисеп тумалла вĕсен? Вĕсен çинче куштанлăх, ăссăрлăх хуçара ларать-çке, вăл мар-и вĕсене нимĕнле айăпчĕрĕпсĕр, нимĕнле тивĕçлĕхе пăхăнмасăр намăссăррăн пăвать, пĕтерет. Çакăн пек ирсĕр алă айĕнче ўссе çитĕннĕ çынсен хушшинче тасалăхшăн, тўрĕлĕхшĕн, тĕрĕс тивĕçлĕхшĕн тăрас кăмăл ниепле те йăлана кĕреймест, вăл унта çитĕнеймест. Акă мĕншĕн ĕнтĕ йĕренкĕсĕр ултав çавăн пек çынсемшĕн мухтавлă паттăр ĕç пек туйăнать, путсĕр ĕç — сатурлăх пек курăнать. Ун пек çынсем сире чике таран лартма, çаратма, çĕçĕ айне тăратма пултараççĕ, çав вăхăтрах вĕсем сирĕнпеле чунтан-вартан савăнăçлăн, юратуллăн калаçса тăрĕç, яланхи пекех ырă чĕреллĕ пулса добродетелĕн темĕн чул паха енĕсене кăтартĕç. Вĕсен натуринче усаллăх та, хаяр сунаслăх та çук; анчах вĕсен епле те пулсан çиеле тухмалла-çке, куштан ăссăрсен ирĕкне пула кĕрсе ўкнĕ лачакаран хăтăлмаллах-çке; вĕсем лайăх пĕлеççĕ — иртĕннĕ куштансем ирĕккĕн сывлакан уçă сывлăша тухмашкăн ултав та укçа кирлĕ, вара вĕсем çакна пĕле тăркач чееленме, йăпăлтатма, пĕр-пĕрне лартма вăрттăн çĕрте ют пурлăха хыптарса илсе пысăккăн та, пĕчĕккĕн те кĕсьене тултарма пуçлаççĕ. Ан тив, çаклатнă пурлăх ют пурлăх пултăр — вĕсен ун пирки шухăш та çук! Вĕт вĕсенчен хăйсенчен те мĕн пуррине те — вĕсен шухăшне те, ирĕкне те туртса илнĕ; ăçтан вĕсем тĕнчере мĕн тўрĕ, мĕн тўрĕ марри çинчен калаçма пултарччăр?

Çапла ĕнтĕ Островский сăнласа паракан тĕттĕм патшалăхра çиелтен курăнакан парăнулăх, чăн-чăн идиотствăна, кулуйлăха çитнĕ мăка хуйхă-суйхă тĕнчи чуралла чеелĕхпе, ирсĕр ултавпа, намăс-симĕссĕр тивĕçлĕхсĕрпе çыхăнса каять. Кунта никам та никам çине те шанчăк хума пултараймасть: сире хăвăрăн тусăрах кашни самантрах лартасшăн ăвăнать е чăн та ĕçĕ тухсан хăвăр умăнтах хăйĕн йĕрĕлĕхпе мухтанса илме пултарать; компаньон тупăшлă спекуляцинче мĕнпур укçана, документсене хăй кĕсйине çавăрса чикет, унтан юлташне чĕрĕллех шăтăка ярать; хунĕ кĕрўшне хулăм тĕлĕшпе лартать; авланакан çын евчине килĕшнĕ хака памасăр улталать; качча каякан хĕр ашшĕамăшĕнне вăрлать; арăмĕ упăшкине суйса пурăнать. Нимĕнле тасалăх та, нимĕнле тĕрĕслĕх те, нимĕнле тўрĕлĕх те çук çакă тĕттĕм патшалăхра. Хуçара ларакан куштан ăссăрлăх, тискерлĕх, айванлăх çав патшалăхран чыслăхăн,

тĕрĕслĕхĕн мĕнпур пек ăнланăвне пĕтĕмĕшпех хуса кăларнă... Ăçта этемĕн тивĕçлĕхĕ, этемĕн ирĕклĕхĕ, этем юратупа телее ĕненни, тӳрĕ ĕçе пуççапни куштанлăхпа ăссăрлăх айне таптаннă — унта çав аслă ăнлану çĕрсе çĕр пулнă, ун пек çĕрте вăл пурăнма пултараймасть...

1936

Н. Чернышевский

МĔН ТУМАЛЛА?

(Роман сыпăкĕсем)

I

Ухмах

1856 çул июлĕн 11-мĕш кунĕ ир çинче Петербургри пĕр пысăк хăна килĕнче, Мускав чугун çулĕн станцийĕ патĕнчинче, мĕнпур килĕнтеш аптăраса ӳкнĕ, çуйхăннă. Унченхи каç, 9-мĕш сехетре, хăна килне пĕр чăматанлă улпут килнĕ-мĕн, вăл нумер йышăннă, евитлĕ пулма паспăртне панă, чей тата пĕр котлетка ыйтса илнĕ, çĕрле хăйне чăрмантарма хушман, мĕншĕн тесен ĕшентĕм, питĕ те çыврас килет тенĕ, анчах ыран ирхине сакăр сехет çитсен хăйне вăратма хытарсах каланă, васкавлă ĕçсем пур тенĕ, вара нумерĕн алăкне çаклатнă та çĕçĕпе, вилкăпа тата чей хатĕрĕсемпе сас тукаласа часах шăпланнă, — ахăртнех, çывăрнă пулмалла. Ир пулнă. Сакăр сехетре тарçăсенчен пĕри ĕнер килнĕ çын патне шаккана, лешĕ сас паман; тарçă тата та хытăрах шаккать, хытăран хытă — çук, килнĕ çын чĕнмест. Питĕ те ывăннă курăнать. Тарçă пĕр чĕрĕк сехет тăхтаса тăнă, каллех вăратма пикеннĕ, каллех вăратайман. Вара вăл ытти тарçăсемпе канашласа пăхать, буфетчикпа сăмахлать. «Мĕн те пулин пулман-и унпа?» — «Алăка çĕмĕрес». — «Çук, апла юрамасть, ун пек чух алăка полиципе çех уçаççĕ». Тата тепре — хыттăнрах — шаккаса пăхма тĕв турĕç; капла та тăратаймасан вара полици патне ярас терĕç. Акă каланă пек юлашки хут сăнаса пăхрĕç — вăратаймарĕç; полици патне ячĕç, халĕ акă вăл килсен мĕн пуласса кĕтеççĕ.

10 сехетсем тĕлне полици тиекĕ çитрĕ, хăй аллипе хăй шаккаса пăхрĕ, унтан тарçăсене шаккама хушрĕ, — çитĕм çав-çавах, паçăрхи пекех. «Нимĕн тума та çук, атя алăка хăйпăт, атьсемĕр».

Алăка çĕмĕрсе уçрĕç. Пӳлĕм пушах. «Пăхăр-ха кравать

айне» — килнĕ çын кравать айĕнче те çук. Полици тиекĕ сĕтел патне пырать, — сĕтел çинче пĕр листа хут пурмĕн, ун çине шултăра сас паллисемпе çапла çырса хунă:

«11 сехет çĕрле каятăп, таврăнмастăп. Мана Литей кĕперĕ çинче 2-пе 3 сехет тĕлнелле илтĕç. Никам çине те сĕмленме кирлĕ мар».

— Ак хай мыскара паллă та пулчĕ, хальччен ниепле те тавçăрса илеймерĕмĕр, — терĕ полици тиекĕ.

— Мĕн пулнă тата, Иван Афанасьевич? — ыйтрĕ буфетчик.

— Тултарăр-ха чей, каласа парăп.

Виçĕ сехет çитеспе çур сехет маларах çĕрле — çĕрĕ вара питĕ тĕттĕм, пĕлĕтлĕ пулнă — Литей кĕперĕ варринче вут çути ялтăраса кайнă, çавăнтан пистолет пенĕ сас илтĕннĕ. Хурал таврашĕсем çавăнтах пăшал сасси енне чупнă, сайралнă иртен-çÿренсем те унтан-кунтан чарăннă — пăшал кĕрĕслетнĕ çĕрте никам та, нимĕн те пулман. Апла пулсан пемен, перĕннĕ. Çавăнтах шыва чăмма хатĕррисем тупăннă, кăшт тăрарахпа пакурсем сĕтĕрсе килнĕ, таçтан пулăç сĕрекине тупса ăна хута янă, чăмнă, шыранă, сĕрнĕ, пĕр аллă та ытла пуль шултăра турпассем тытнă, анчах виле-качка çакланман. Тата, тепĕр тесен, çтан тупасси пур? — çĕр тĕттĕм. Вăл, пулсан та, çак икĕ сехет хушшинче тинĕс патне те çитнĕ пуль, — кай, шыра унта. Çавăнпа та çавăнтах прогрессистсем палăрнă, вĕсем паçăрхи сĕме çавăрса çапнă: «Так, нимĕнле виле те пулман пуль? — тенĕ прогрессистсем. — Тен, пĕр-пĕр ÿсĕр е ахаль шăпăрлан ухмахланса илнĕ пуль, — пенĕ те тара панă, е кунтах, тăрмашакан çынсем хушшинче, хăй çавăн пек шăй-шай кăларнăшăн шăл йĕрсе тăрать пуль?»

Анчах нумайăшĕ, яланхи пекех, ыррăн сÿтсе-явса шутланă чухнехи пек, консервативлă пулса кивĕ сĕме хÿтĕленĕ: «Каккуй ухмахланнă — хăйне хăй çамкаран кĕрĕслеттернĕ, çав кăна». Прогрессистсем аяла пулнă. Анчах çĕнтернĕ парти çĕнтерÿ хыççăн, яланхи пекех, икке уйрăлнă. Перĕннĕ тейĕпĕр, анчах мĕншĕн? «Ўсĕрпе», — тенĕ консерваторсен пĕр пайĕ. «Çука ернĕ», — çирĕплетнĕ теприсем. «Ахаль, ухмах», — тенĕ такам. Çакă «ахаль, ухмах» сăмах çинче пурте килĕшĕве килнĕ, çакна хирĕç лешсем те, перĕнмен текеннисем, нимĕн каламан. Чăнах та, ÿсĕр-и е юра ернĕ çын-и перĕнсе илнĕ, е пĕр-пĕр шăлйĕрен ахаль çеç хăтланнă, — пурпĕрех ку мыскара айван та ухмах.

Çакăнпа кĕпер çинчи çĕрлехи ĕç чарăнса тăнă. Ирпе вара Мускав чугун çулĕ патĕнчи хăна килĕнче ухмах ухмахлан-

манни иккенни, чăнах та перĕнсех перĕнни палăрнă. Анчах историн результатĕнче пĕр элемент юлать, аяла пулнисем те килĕшмесĕр тăма пултарайман, вăл, çав çын, чăнах та ухмаххи, ан тив, ахаль çеç алхасман, перĕнсех перĕннĕ пулсан та, пурпĕр ухмаххи. Çакă пуриншĕн те йышăнуллă результат консерваторсем çиеле тухнипе пушшех çирĕп пулнă: чăнах та, ун пирки вăл кĕпер çинче перкелешсе выляннă çеç пулсан иккĕленме те пулĕччĕ: ухмах-и вăл е шăлйĕрен анчах-и? Анчах вăл перĕннĕ-çке кĕпер çинче, — кам кĕпер çинче перĕнтĕр-ха? Мĕнле-ха вăл, кĕпер çинче? Мĕншĕн кĕпер çинче? Айван ĕç вăл, кĕпер çинче! Çавăнпа та пĕр сăмахсăрах ухмах.

Кунта хăш-пĕрин каллех иккĕленӳ килет: кĕпер çинче перĕннĕ, — кĕпер çинче перĕнмеççĕ, апла пулсан перĕнмен те. Анчах каça хирĕç хăна килĕнчи мĕнпур килĕнтеше полици пайне чĕнтернĕ, унта вĕсене шывран тупнă персе шăтарнă карттус кăтартнă, — пурте çав карттус чăнах та килнĕ çын çинче пулнине йышăннă. Çапла ĕнтĕ, ним сĕмленмесĕр, перĕннех темелле, прогресăн вара сивлевлĕн сывлăшĕ пĕтĕмĕшпех çĕнтерĕннĕ.

«Ухмах» тенĕ пирки пурте килĕшнĕ, çавăнтах калаçма та пуçланă: кĕпер çинче — пулать те мыскара. Кăна ĕнтĕ вăл нумайччен асапланас мартан, тен, лайăхах тивмесен тенĕ, — ăслă шутланă! Кирек те мĕнле суранран та шыва ӳкет, тăн килсе кĕриччен лачăртатса та анать, — чăн, кĕпер çинче... пит ăслă.

Халь ĕнтĕ, ăсу кăна кайĕ, уйăрса илме чăннипех май пулман, — ухмах та, ăслă та.

II

Ухмахла ĕçĕн пĕрремĕш пулăмĕ

Çав кунах, кăнтăрла çитерехпе, пĕр çамрăк пике Чул утрав çинчи пĕчĕк дачăн виçĕ пӳлĕмĕнчен пĕринче çĕвĕ çĕлесе ларнă, хăй ĕçленĕ май çурма сасăпа французла юрă, хăюллă та йĕркĕнскерне, юрланă.

«Эпир чухăн, — тенĕ юрăра, — анчах эпир ĕç çыннисем, пирĕн алăсем тĕреклĕ. Эпир тĕттĕм, анчах ухмах мар, туртăнатпăр çутталла. Эпир вĕренетпĕр — пĕлӳлĕх пире хăтарĕ; эпир ĕçлетпĕр — ĕç пире пуйтарĕ, — пирĕн ĕç тухать, — пурнăпăр, курăпăр.

Эпир кĕрнексĕр, анчах ун пирки хамăр çеç чăтатпăр. Эпир тĕшмĕшлĕ, анчах уншăн хамăрах хĕн куратпăр, çакна эпир туятпăр. Эпир телей шырăпăр, ырă кăмăл тупăпăр,

пурте ырă пулăпăр, — пирĕн ĕç тухать, — пурнăпăр, курăпăр.

Ĕç пĕлӳсĕр хĕсĕр, пирĕн телей — пурте телейлĕ пулсан çеç. Çутта тухăпăр — вара пуйăпăр; телейлĕ пулăпăр — пĕртăван пек пурнăпăр, — пирĕн ĕç тухать, — пурнăпăр, курăпăр.

Ĕçлер, вĕренер, юрлар, юратар, çăтмах пултăр çĕр çинче. Пурнăçпа савăнар, — пин ĕç тухать, час килет, час тухать, час куратпăр ăна».

Хăюллă та йĕркĕн пулнă юрă, мелодийĕ ун хаваслă янтăранă, унра пăртак нота çеç пăртакçă кулянса илнĕ, анчах вĕсем те пĕтĕмĕшпе илсен çутă характерлă кĕвĕпе витĕннĕ, рефренра çухалнă, юррăн юлашки çаврăмĕнче пăчланнă, тĕрĕсрех каласан, витĕнмелле, пăчланмалла пулнă, — чăнах та, пăчланнă та пулĕччĕç, ытах пике кăмăлĕ халь урăхларах пулнă пулсан; анчах халь çавă хурлăхлă нотăсем юрăра ыттисенчен вăйлăрах илтĕне-илтĕне кайнă, çакна асăрхаса пике хăй те çӳçене-çӳçене илнĕ, амаланма пуçланă кулянчăк нотăсене пусарас тесе вăл юри савăнăçлă сасăсене çĕклерех панă, анчах пыра киле вăл хăйĕн сĕмĕсемпе юрăран вĕçерĕнсе юратнă шухăшĕ патне тавраннă, вара хурлăхлă сасăсем каллех çиеле тухнă. Ахăртнех, çамрăк пике хурланăва парăнасшăн мар, анчах хурлăхĕ те хăйĕнчен мĕн чухлĕ хăваласассăн та унран юласшăн мармĕн. Анчах хурлăхлă-и, савăнăçлă юрă мар-и е каллех вăл хăйне кирлĕ пек хĕпĕртӳллĕн янтăрама пуçлать-и, пике хăй ĕçне тăрăшса тăвать. Вăл лайăх çĕвĕçĕ.

Пӳлĕме кил хĕрĕ, ятуллă та çамрăкскер, кĕчĕ.

— Пăхăр-халь, Маша, епле эп çĕлерĕм? Сирĕн туйăр ячĕпе хам валли çĕлекен рукавчиксене эпĕ пĕтертĕм те темелле.

— Ай, ман валли эсир пĕтерсе панинче тĕрри нумайрах пек туйăнать.

— Апла пулмасăр! Хăйĕн туйĕнче хĕр пуринчен те юсаврах пулмалла!

— Эпĕ сире çыру кӳтĕм, Вера Павловна.

Çырăва сӳтнĕ чух Вера Павловна пичĕ çинче темĕн, ăланса илменлĕх, палăрса кайрĕ: конверт кĕтесĕнче хулари почтăн штемпелĕ. «Мĕнле-ха апла? Вăл Мускавра пулмалла-çке?» Вăл çырăва хăвăрттăн уçрĕ те шурса кайрĕ; çыру тытнă алли усăнчĕ. «Çук, апла мар, эп уйăрса илеймен, ун пек пулас çук!» Вăл çырулла аллине каллех çĕклерĕ. Мĕнпур ĕçĕ те кунта пĕр-ик самантлăх çеç. Анчах хальхинче ун куçĕсем çырура сахал йĕркесем çине вăрахчен ним хускавсăр пăхса тăчĕç, çутăскерсем, тĕксĕмленнĕçем

тĕксĕмленчĕç, вара лăнчах кайнă алăсенчен çĕвĕ сĕтелĕ çине çыру шуса ўкрĕ, Вера Павловна питне аллисемпе хупласа татăлса макăрса ячĕ: «Мĕн турăм пулать! Мĕн турăм пулать!»

— Веруçăм, мĕн тата? Эсĕ йĕрекен марччĕ-çке? Хăçан капла пулнă пуль сан? Мĕн çитмен-ши?

Çак сăмахсемпе пĕр çамрăк çын васкавлăн, анчах çăмăллăн та асăрхануллăн пўлĕме кĕчĕ:

— Вула... ав сĕтел çинче...

Ёнтĕ вăл тек макăрман, аран çеç сывласа пĕр тапранмасăр ларнă.

Çамрăк çын çырăва тытрĕ, вăл та шуралса кайрĕ, унăн та аллисем чĕтреме пуçларĕç, вăл та çыру çине темĕнччен хытса пăхса тăчĕ, эрне вăл пысăк мар, пĕр-ик теçетке сăмахлă çеç пулсан та:

«Эпĕ сирĕн канлĕхе чăрмав кўресшĕн мар. Сцена çинчен анатăп. Ан шеллĕр; эп сире иксĕре те çав тери юрататăп, çавăнпа та хамăн хăюлăхăмшăн савăнатăп çеç. Сыв пулăр».

Çамрăк çын нумайччен çамкине шăлкаласа тăчĕ, унтан мăйăхне пĕтĕрме пуçларĕ, çири пальто çанни çине пăхса илчĕ; вара тин шухăшĕсене пуçтарчĕ. Вăл çамрăк хĕрарăм еннелле пĕр утăм турĕ, лешĕ çав-çавах пĕр хускалмасăр ларать, летаргине кайнă пек, аран çеç сывлать. Çамрăк çын ун аллине тытрĕ:

— Веруç!

Анчах икĕ алă пĕр-пĕрне перĕннĕ-перĕнмен хĕрарăм, электричество токĕпе сиксе çĕкленнĕ пек, сехревлĕн кăшкăрса ярса ура çине тăчĕ, унтан çамрăк çынна тытамаклăн сирсе каялла калтах чакрĕ.

— Кай! Ман çума ан çулăх! Эс юнлă! Сан çинче ун юнĕ! Куçăм ан куртăр сана! Каятăп, халех каятăп сан патăнтан! Пăрăн ман патăмран! — Вăл хăлаçланнă май пушă сывлăша тĕртет те тĕртет, унччен те пулмарĕ — сулăнса кайрĕ, кресло çине ўкрĕ, питне аллисемпе хупларĕ. — Ман çинче те ун юнĕ! Ман çинче! Эс айăплă мар — эп пĕччен... Эпĕ çеç! Мĕн турăм пулать! Мĕн турăм пулать!

Вăл каçса кайса макăрать.

— Веруç, — шăппăн, йăвашшăн ўкĕтлет çамрăк çын, — тусăм...

Вера Павловна сывлăшне йывăррăн çавăрчĕ те лăпкăн, анчах та чĕтревлĕ сасăпа аран çапла каларĕ:

— Савнийĕм, хăвар халь мана! Тепĕр сехетрен каллех кил — унччен эп лăпланăп. Шыв пар та мана кай!

Вăл ăна чĕмсĕррĕн пăхăнчĕ. Хăйĕн пўлĕмне хуллен

таврăнчĕ, каллех çыру сĕтелĕ хушшине ларчĕ — унта вăл паçăр çеç, чĕрĕк сехет маларах, кăмăллăн, лăпкăн ĕçлесеччĕ — перо тытрĕ... «Çакăн пек самантсенче хăвна ху тытма пĕлмелле те; манăн тытăм пур, — иртет... иртет...» Анчах келем, хăй тĕллĕнех, ăна пăхăнмасăр, темĕнле статья хушшине çакăн пек сăмахсем çырса хунă: «Тӳссе ирттерĕши? Хăрушă — телейĕм пĕтрĕ...»

— Савнийĕм! Эпĕ хатĕр, кил, калаçар! — илтĕнчĕ кӳршĕ пӳлĕмрен. Çамрăк хĕрарăм сасси янтăравсăр, анчах çирĕп пулнă.

— Тусăм, пирĕн уйрăлас пулать. Эпĕ çапла шутларăм. Йăвăр. Анчах пĕр-пĕрне курса тăма пире йăвăртарах пулĕччĕ. Эпĕ ăна вĕлерекен. Эпĕ ăна саншăн вĕлернĕ.

— Веруç, мĕнпе айăпа кĕтĕн-ха эс апла?

— Нимĕн те ан кала, мана тӳрре ан кăлар, унсăрăн эп сана курайми пулатăп. Эпĕ, эпĕ пуринчен те айăплă. Каçар мана, савнă тусăм, саншăн асаплă решени йышăнатăп эп, — хамшăн та çавах, тусăм! Анчах эп урăхла тума пултараймастăп. Итле. Эпĕ Петербургран тухса кайма пултăм. Иртнине астутаракан вырăнсенчен аяккарах пурăнни ансатрах пулĕ. Эпĕ хамăн япаласене сутатăп; вăл укçапа эпĕ пĕр тапхăр йӳнеçме пултаратăп, — çта? Тверьте-и е Чулхулара, пĕлместĕп, пурпĕрех. Эпĕ юрлав урокĕсем шырăп; ахăртнех, тупăп та, мĕншĕн тесен пĕр-пĕр пысăк хулана вырнаçас тетĕп. Тупаймасан гувернанткăна кайăп. Ман шухăшпа, эпĕ аптăрасах каяс çук, анчах та аптăрасан вара сана пĕлтерĕп; тăрăш, сых ячĕшĕн санăн ман валли пăртак та пулсан укçу хатĕр тăтăр; эс пĕлместĕн мар, мана кирли тем чул, тăкак нумай, эрне хам хытă пулсан та; эп ун пек-кун пексĕр йӳнеçме пултараймастăп. Илтетĕн-и? Эпĕ санăн пулăшуна сирсе ямастăп. Ан тив, тусăм, çакă вăл эсĕ маншăн çав-çавах чун савни пулнине кăтарттăр... Халь ĕнтĕ яланлăхах уйрăлар! Хулана тухса кай... Халех, халех! Пĕччен юлсан мана çăмăлрах пулĕ. Ыран эп кунта урăх пулас çук — вара калла кил. Эпĕ Мускава каятăп, унта пăхкалăп, пĕлĕп — провинцири хуласенчен хăшĕнче уроксем тупма шанчăклă пулĕ. Мана ăсатас шутпа, станцине ан пыр, хытарсах калатăп. Сыв пул, тусăмçăм, пар аллăна, юлашки хут ăна чăмăртам.

Çамрăк çын ăна ыталасшăн пулчĕ, — анчах вăл унăн туртăмне хирĕçлерĕ.

— Çук, кирлĕ мар, юрамасть! Ку вăл унăн ятне кӳрентерни пулĕччĕ. Пар аллăна. Чăмăртатăп ăна — куратăн-и, мĕн тери çирĕп! Ан ӳпкеле!

Вăл унăн аллине хăйĕннинчен ниепле уйăраймарĕ.

— Çитĕ, кай! — Вăл аллине туртса илчĕ, çамрăк çын хирĕçлеме хăяймарĕ. — Каçар!

Вара вăл ун çине калама çук çепĕç пăхса илчĕ, — çав кăна, унтан çирĕп утăмсемпе утса тусĕ енне пĕрре те çаврăнса пăхмасăр хăйĕн пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ.

Çамрăк çын шлепкине темĕнччен шырарĕ; шлепке ун аллине пилĕк-улттă ленкрĕ пулсан та, ăна вăл курмарĕ. Вăл ӳсĕр çын пекех; пыра киле вăл ăнланса илчĕ: алă айĕнчи ним те мар, хăй шыракан шлепке-мĕн, мал пӳлĕме тухрĕ, пальто тăхăнчĕ; ак ĕнтĕ вăл хапха патне те çывхарать: «Кам чупать-ха кăна ман хыççăн? — Мама пулас... ахăртнех, вăл тăнсăр пулчĕ пуль!» Вăл çаврăнса пăхрĕ — Вера Павловна ун çине ыткăнчĕ, мăйран ыталарĕ, хыттăн чуптурĕ.

— Çук, чăтаймарăм, тусăм! Халь ĕнтĕ — каçар ĕмĕрех!

Вара вăл киле часрах чупрĕ, вырăн çине кайса ӳкрĕ, паçăртанпа пӳлĕнтерсе тăнă куççульне ирĕк пачĕ.

III

Ум сăмах

«Повесть юрату çинчен калать, тĕп геройĕ — хĕрарăм, ку аван, повеçĕ хăй начар пулсан та», — тейĕ хĕрарăм вулакан.

— Ку тĕрĕс, — тейĕп эп.

Арçын вулакан çакăн пек çăмăл пĕтерĕмпе килĕшес çук, — арçыннăн тем тесен те шухăш-хакăлĕ вăйлăрах тата ун вăл, хĕрарăмăннипе танлаштарсан, лайăхрах аталаннă; арçын çапла калĕ, тен, хĕрарăмĕ те çаплах шухăшлать пуль, анчах хăйĕн шухăшне вăл уçса калас çук, çавăнпа унпа тавлашăва кĕме манăн сăлтав çук; арçын вулакан çапла калĕ: «Эпĕ пĕлетĕп: çав перĕннĕ тенĕ улпут перĕнмен». Эпĕ çийĕнчех «пĕлетĕп» тенĕ сăмаха ярса илетĕп те çапла хуравлатăп: «Эс ăна пĕлместĕн, мĕншĕн тесен ăна сана никам та каламаň-ха, эсĕ мĕн каланине çеç пĕлме пултаратăн; ху эс нимĕн те пĕлместĕн, çитменнине — эпĕ повеçе çакăн пек пуçласа сана хур туни çинчен те пĕлместĕн-ха эс. Пĕлнĕ-и эс ăна? Пĕлмен? Ну, апла пулсан пĕл эппин».

— Тĕрĕс, эпĕ публика çинчен начар шутлани çинчен калавăн пĕрремĕш страницисем уççăнах калаççĕ. Эпĕ романистсен йăлана кĕнĕ чеелĕхпе усă куртăм: хамăн повеçе эффектлă сценăсемпе, варринчен е вĕçĕнчен татса илнĕскерсемпе, пуçларăм, вĕсене тĕтрепе пĕркерĕм. Эсĕ, публика, ырă, питĕ те ырă, çавăнпа та ăна-кăна чухлаймастăн эс, уйăраймастăн. Сан çине шансах пĕтерме çук: алла илнĕ

повеçе вуланин усси пуррипе çуккине эсĕ малтанхи старницăсенчех тавçăрса илеймĕн, санăн туйăм начар, ăна пулăшу кирлĕ, апла тенĕрен — ун пек пулăшу иккĕ: е авторăн ячĕ, е çырулăх манирĕ. Эпĕ сана хамăн малтанхи калавăма çеç ярса паратăп, санăн хальлĕхе ку тĕлĕшпе туяннă хатĕр шухăш çук: пур-и авторăн илемлĕх таланчĕ (мĕн чухлĕ писатель сан — илемлĕх таланчĕн ятне санран туяннисем!), çук-и, эсĕ хальлĕхе пĕлместĕн, манăн хушаматăм сана кăчăк туртас çукчĕ, çавăнпа та ман сан валли эффективлăх ăманĕпе вăлта яма килчĕ. Ан ӳпкеле мана уншăн, эс ху айăплă: санăн уçă чунлă айванлăху мана çак киревсĕрлĕх патне илсе çитерчĕ. Анчах халь ĕнтĕ эс ман алла лекнĕ, çавăнпа та хамăн калавăма малалла эп ним чеелĕхсĕрех тăсма пултаратăп. Ман шухăшăмпа, çапла пулмалла пек. Малашне пĕр вăрттăнлăх та пулас çук, эсĕ кашни положенин сӳтĕмне çирĕм страница маларах курса пырăн. Тен, кăмăл кайнă чух, пĕтĕм повеçĕн сӳтĕмне те халех каласа хурăп эп сана: ĕç савăнăçлăн пĕтмелле, бокалсемпе, юрă-ташăпа; нимĕнле эффектлăх та, нимĕнле эрешлĕх те пулмасть. Автор эрешлĕх çинчен асне те илмест-ха, ырă публика, мĕншĕн тесен унăн шухăшĕ урăх: мĕнле арпашу сан пуçăнта, мĕн чухлĕ хĕн, ытлашши ырату кӳрет кашни этеме санăн ăнланусен тискер чăлханăвĕ — çавăн çинчен ялан шутлама килет авторăн. Шел те кулăш сан çине пăхма: çав тери эс халсăр та çав тери усал пуçу тулли лакса ларнă тĕрлĕрен ăпăртапăр пирки.

Эп сан çине çилĕллĕ, мĕншĕн тесен эсĕ çынсем тĕлĕшпе çав тери усал; астусамччĕ, тархасшăн, çакна: çынсем вăл — ху. Мĕншĕн эс çав тери усал-ха хăвăн пирки? Çавăнпа эп сана ятлатăп та. Анчах сан усаллăху ăс халсăрлăхĕнчен килет, çавăнпа ятланă май сана пулăшас та пулать. Çтан тытăнар пулăшма? Пуçлар çакăнтан: сан шухăшу халь, туятăп, ман çинчен — мĕнле мур — çыравçă ку, çакăн пек мăшкăллăн манпа пуплекенскер тетĕн эсĕ. Хам мĕнле çыравçă иккенне калăп эп сана.

Манра илемлĕх таланчĕн мĕлки те çук. Эпĕ чĕлхепе те тивĕçлĕ пек усă кураймастăп. Анчах ку вăл пырĕ те пырĕха: вула, ыр кăмăллă публика! Вулани усăсăр пулмĕ. Чăнлăх — аван япала, çыравçă уншăн ĕçлет пулсан, вăл унăн çитменлĕхĕсемпе яланах çырлахать. Çавăнпа та эп сана çапла калатăп: ытах та эп малтанах евитлесе хуман пулсан, тен, эсĕ повеçе илемлĕ çырнă, авторăн поэтикăллă талант пайтах тейĕттĕн. Анчах эп пĕлтертĕм сана: манăн талантăм çук, халь ĕнтĕ сан хăвăнах пĕлмелле — ман повеçĕн мĕнпур тивĕçлĕхĕ унăн чаплăхĕнче çеç.

Тепĕр тесен, манăн ытарайми публика, санпа калаçас пулсан сăмаха вĕçне çитиех пĕтермелле; каласа пĕтерменнине пĕлме сан яланах кăмăл пысăк, анчах чухласа илме ăсталăх çитеймест. Эпĕ хам çинчен хам — манра илемлĕх таланчĕн мĕлки те çук, ман повесть ăсталăх енчен питĕ айван тенипе, асту, çакна ан шутланă пул: эпĕ сан аслă текен калавçусенчен пĕрре те кая мар, романăм та вĕсем çырнисенчен начар мар. Эп ун çинчен мар калатăп. Манăн калавăм ĕçтăвăм тĕлĕшĕпе чăнах та начар, калăпăр, чăн-чăн талантпа парнеленнĕ çынсен произведенийĕсемпе танлаштарсан; санăн питех те паллă писателӳсен чапа тухнă сочиненийĕсемпе ăна эс ăсталăх тĕлĕшпе хăюллăнах юнашар е маларах та тăрат — йăнăшмастăн... Илемлĕх тени ман калавăмра вĕсенчен чылай ытларах; ку тĕлĕшпе эс ан та пăшăрхан.

Тав ту мана; сан йăлу — хăвна тиркекенсене пуççапасси, мана та апла пуç тай.

Анчах та, публика, санра пĕр пай — çав халь ĕнтĕ аванах палăрать темелле, — çынсем те пур, вĕсене эп хисеплетĕп. Санпа, нумай-нумайийисемпе, эпĕ тӳрккес, санпа кăна, çав нумайлăхпа, калаçрăм эп хальччен. Леш халь тин асăннă çынсемпе эпĕ урăхла калаçнă пулăттăм: сăнатăн, тен, именчĕклĕн те. Анчах ман вĕсемпе ăнлантаруллăн калаçмалли çук. Вĕсен ăсĕ-шухăшĕ маншăн хаклă, анчах эп малтанах пĕлсе тăратăп, çав ăс-шухăш ман май. Ырă та вăйлисем, тӳрĕ те пĕлӳллисем, эсир пирĕн хушăмăрта çуралма пуçлани нумаях пулмасть, анчах эсир сахал мар ĕнтĕ, вăл хутшăнсах пырать. Эсир ĕнтĕ публика пулнă пулсан мана вара çырма та кирлĕ мар пулĕччĕ; ытах та эсир пулман пулсан мана çырма вăхăт ĕлкĕрмен пулĕччĕ. Анчах эсир публикаах мар-ха — публика хушшинчисем, хушшинчисем çех пулсан та, эсир ĕнтĕ пур, çавăнпа та манăн çырма вăхăт, манăн çырмалла.

Пĕрремĕш сыпăк

Вера Павловнăн ашшĕ-амăш килĕнчи пурнăçĕ

Вера Павловна çитĕнĕвĕ воспитани енĕпе хăйне уйрăм палăрса тăман. Чăнах та, унăн медицина студенчĕ Лопуховпа паллашиччен иртнĕ пурнăçĕнче ытлашши нимех те çук пек, анчах паллă тумаллисем пурах. Калас пулать, унăн хăйне хăй тытас тĕлĕшпе ун чухнех хăйне уйрăмлăх пулман мар.

Вера Павловна Гороховойра, Садовойпа Семенов кĕперĕ

хушшинче, нумай хутлă çуртра ўснĕ. Халь ĕнтĕ вăл çурта хăйне тивĕçлĕ нумĕрпе паллă тунă. 1852 çулта, çавăн пек нумĕрсем çук чухне, ун çинче çакăн пек çыру палли пулнă: «Тĕрĕс тивĕçлĕ статски советник Иван Захарыч Сторешников çурчĕ». Çыру палли çапла каланă; анчах Иван Захарыч Сторешников 1837 çултах вилнĕ, унтанпа çуртăн хуçи унăн ывăлĕ Михаил Иванович пулнă, — документсем çапла каланă. Çуртра пурăнакансем каланă тăрăх, Михаил Иванович хуçа ывăлĕ çеç пулнă-мĕн, чăн-чăн хуçа çуртра ун амăшĕ, Анна Петровна, шутланнă.

Çурт ун чухнех, хальхи пекех, пысăк пулнă: икĕ хапхаллă, урам енчен тăватă подъездлă, хыçал енчен виçĕ картишлĕ. Параднăй умпусма тĕлĕнче, бельэтажра, 1852 çулта, халĕ те çаплах, хуçа-пике арăмĕ, Анна Петровна терĕмĕр, хăйĕн ывăлĕпе пурăннă. Анна Петровна халĕ те-ха, ĕлĕкхи пекех, паллă дама, çавăн пекех Михаил Иванович та халĕ те, ун чухнехи пек, паллă, илемлĕ офицер.

Кам пурнать-ши халь пĕрремĕш картишнелле тухакан хура та чыссăр пусмасенчен пĕринче, 4-мĕш хутра, сылтăмри хваттерте — пĕлместĕп. Асăннă 1852 çулхине унта çурт управляющийĕ Павел Константинович Розальский, тĕреклĕ, кĕре арçын, Марья Алексеевнăпа, хыткан та чăн-чăн çўллĕ пў-силлĕ мăшăрĕпе, çитĕннĕ хĕрĕпе — çав ĕнтĕ вăл пирĕн Вера Павловна — тата 9 çулти ывăлĕ Федяпа пурăннă.

Павел Константинович, çуртра управляющий пулнисĕр пуçне, тата темĕнле департаментра сĕтелпуçĕн çумми пулса ĕçленĕ.

1955

Л.Н. Толстой

ВĂРÇĂПА МИР

(Роман сыпăкĕсем)

Пĕрремĕш том

ПĕРРЕМĔШ ПАЙĔ

— Акă, князь, Генуяпа Лукка халь ĕнтĕ Бонопарте килйышĕн еткерĕ. Çук, малтанах каласа хуратăп сире, ытах та эсир пирĕн вăрçă пур иккенне халĕ те тунатăр пулсан, ытах та çав масасăр Антихристăн (чăн та, Антихрист вăл!) мĕнпур тискерлĕхне каллех хўтĕлеме пăхатăр пулсан, — эпĕ вара сире урăх пĕлместĕп, ўлĕмрен манăн тус мар эсир, хăвăр калашле — ман варлă чурам мар. Ну, иртĕр, иртĕр, питех ан хăрăр. Сывлăх сунатăп! Вырăнлă пулăр, калама пуçлăр.

Çапла кĕтсе илнĕ Анна Павловна Шерер, вăл вăхăтри паллă хĕрарăм, Мария Федоровна императрицăн çывăх фрейлини, хăйĕн патне кĕçĕрхи вечера пуринчен малтан çитнĕ ятуллă та чыслă Василий княçа. Ку ĕç 1805 çулхи июльте пулнă. Анна Павловна чылай кун хушши ўсĕркеленĕ, ăна, хăй калашле, грипп ернĕ (грипп сăмах, калас пулать, ун чухне çĕнĕ пулнă, ăна сахалăшĕ асăннă). Çавă кун ирхине Анна Павловна, хăйне уйрăмах кичеммĕн туйса, хĕрлĕ лакейĕ урлă çывăх пĕлĕшсем патне пуриншĕн те пĕр евĕр çырса çакăн пек йăхрав салатнă:

«Ытах та сирĕн, граф (е князь), çитес каça лайăхраххи нимех те пулмасан, мĕскĕн чирлешке патĕнче ирттерес перспектива питех шиклентермесен сире эпĕ паян хамăн патăма çиччĕпе тăхăр сехет хушшинче курма хапăл та, хавас та. Анна Шерер».

Çак йыхрава пула килнĕ те ĕнтĕ Василий князь.

— Турран килтĕр, мĕнле хĕрўллĕ тапăну! — тенĕ вăл, çакăн пек йышăнупа ним чул та именмесĕр. Ун çийĕнче патша килĕнтешĕсем тăхăнакан эрешлĕ мундир, урисенче пански чăлха тата пушмак, умĕ тулли çăлтăр пулнă, лаптакрах сăн-пичĕ çуталса тăнă.

Калаçу ытларах француз чĕлхипе пынă. Князь французла ытарма çук чечен калаçнă (авал пирĕн маçаксем ку чĕлхепе калаçнă çеç те мар — шухăшланă та), унăн сасси шăппăн, тўлеккĕн, хута кĕревлĕ интонацисемпе ачашшăн янтăранă, — çавăн пек йăла пулнă ун чух патша çывăхĕнче тата аристократсен тĕнчинче ватăлакан ятлă çынсен. Вăл Анна Павловна умне пырса духи сапнă кукшине ялтăравлăн пĕшкĕртнĕ, вара унăн аллине хисеплĕн чуптуса диван çине канăçлăн вырнаçса ларнă.

— Чи малтан: сывлăхăр мĕнле, çавăн çинчен пĕлтерĕр, савнă тусăм. Лăплатăр мана, — сассине улăштармасăр калаçнă князь — хисеплĕн, хĕрхенўллĕн, анчах ун тараватлă тонĕ хыçĕнче ытахальлĕх тата çитменнине, виртлешў те уççăнах палăрнă.

— Çтан сывлăхлă пулас-ха... çапла чунпа асапланнă чух? Пирĕн вăхăтра туйăмлă çын çтан лăпкă пулма пултарас? — тенĕ Анна Павловна. — Шанатăп, эсир ман патăмран васкас çук паян?

— Паян юн кун, ан манăр. Акăлчан посланникĕ патĕнче уяв. Ман унта курăнмаллах, — хуравларĕ князь. — Час кунта ман хĕрĕм кĕрет, вăл мана лартса каймалла.

— Эпĕ вăл уяв паян пулмасть пуль тесе. Калас пулать, уявсем тата фейерверксем йăлăхтарма пуçларĕç те ĕнтĕ.

— Эхер те сирĕн кăмăлăра маларах пĕлнĕ пулсан, тен,

çав уяв паян пулман та пулĕччĕ, — тенĕ князь, пĕр хускатса янă сехет пек, сулăмшăн анчах, сăмах витĕмĕ ĕненте-рӳллĕ пултăр тесе ним чул та тăрăшмасăр.

— Ан тарăхтарăр-ха мана. Калăр, Новосильцовăн депеши тĕлĕшпе мĕнле тĕвĕ пур? Эсир пĕлместĕр мар.

— Хай мĕнле калас? — хуравланă князь сулхăн та кичемлĕ тонпа. — Мĕнле тĕвĕ пур? Акă мĕнле: Бонопарте хăйĕн карапĕсене чĕртсе çунтарнă, эпир те çаплах тăватпăр пулас.

Василий князь яланах, кивĕ пьесăн рольне калакан актер пек, юлхавлăн пуплешнĕ. Анна Павловна Шерер, йăлтах урăхла, хăйĕн хĕрĕх те пĕр çулне пăхмасăрах, чĕрĕ те хавхаланаллă пулнă.

Хавхаланаллă пуласси ун йăлана кĕнĕ, унăн обществăри тивĕçлĕхĕ пулса тăнă, вара хăш чухне, екки кайман вăхăтсенче те, хăйĕн пĕлĕш-тантăшĕсен кăмăлĕсене хăварас мар тесе вăл ирĕксĕрех хăйне энтузиастка пек тытнă. Савăш йăл кулă, Анна Павловна пичĕ çинче яланах выляса тăраканскер, тĕс кайнă сăна питех килĕшмен, анчах ку япала ун шучĕпе юратнă кăлтăк пулнă, çавăнпа та ăна пăрахма, ӳлĕм тӳрленме, хăйĕн çитменлĕхĕпе юриех йăпанса пурăнакан иртĕннĕ ачанни пек, унăн шухăш та, кăмăл та, ирĕк те пулман.

Калаçу варринче, сăмах политика çине куçа пуçласан, Анна Павловна пушшех хĕрсе кайнă.

— Ах, ан калăр мана çав Австри çинчен! Тен, эпĕ нимĕн те ăнланаймастăп пулĕ, анчах пĕлетĕп: Австрин вăрçас шухăш паçăр та пулман, халĕ те çук. Вăл пире тытса пырать. Пĕртен-пĕр Россия Европăн çăлаканĕ пулмалла. Пирĕн ырлăх çăлкуçĕ — аслă патшамăр хăйĕн çӳллĕ шăпине чухлать, ăна вăл кăлăха хăварме. Акă çакна, пĕртен-пĕр çакна эпĕ ĕненетĕп. Пирĕн ытарайми патшамăр — пирĕн шанчăкамăр, ун умĕнче тĕнчери тем аслăш роль; вăл, мăнтарăн, пирĕн ырлăхамăр, хăйĕн ăраскаллă ĕçне, турă пулăшнипе, пурнăçлатех: халĕ çав вăрă-хурахăн сăнне йышăнса тата ытларах та асса кайнă революцин çĕлен-калтине касса ваклатех. Сăваплă чунăн юнне пирĕн пĕччен çырлахтармалла. Кам çине шанмалли пур пирĕн? — ыйтатăп эп сиртен... Услам сывлăшлă Англи Александр император чунĕ мĕн тери çӳллине ăнланмасть те, ăнланас та çук. Вăл ав Мальта çинчен каяс пирки хăнк! та тумасть. Англи пирĕн тăрăшусен кайри шухăшне, тупсăмне пĕлесшĕн — çавна тĕпчет. Мĕн каланă вĕсем Новосильцова?.. Нимĕн те. Пирĕн император хăйне хăй уямасăр, хăйĕн валли нимĕн хапсăнмасăр, пĕтĕм тĕнче тивлечĕшĕн

çуннине вĕсем ăнланмаççĕ, ăнланас та çук. Мĕн сăмах панă вĕсем? Нимĕн сăмах та. Пулмасть, мĕн пама пулнине те вĕсем парас çук! Пруççи ĕнтĕ хăйĕн шухăшне евитлерĕ: Бонопартене çĕнме çук, ăна хирĕç пĕтĕм Европа та нимĕн те тăваймасть терĕ... Эпĕ Гарденбергенне те, Гаугвицăнне те çур сăмахне те ĕненместĕп. Пруççин чапа тухнă нейтралитечĕ — капкăн анчах. Эпĕ пĕртен-пĕр турă пиллĕхĕ çине тата савнă императорăн çӳллĕ шăпи çине шанчăк хуратăп. Вăл Европăна çăлатех!.. — Анна Павловна сасартăк чарăннă, вăл хăй çакăн пек хĕрсе кайнинчен хăй вирт-лешсе йăл-ялăн кулса илнĕ.

— Ман шухăшпа, — кулкаласа каланă князь, — эхер те сире çав пирĕн савнă Винцегороде вырăнне янă пулсан эсир Пруççи королĕн килĕшӳне штурмласах илнĕ пулăттăр. Ылтăн чĕлхе-çăварлă эсир. Чей пулать-и мана паян?

— Халех. Чимĕр-ха, — сăмах хушнă Анна Павловна каллех лăпланса, — паян ман патăмра икĕ питĕ те интереслĕ çын пулмалла: пĕри — Мартемар виконт, вăл Рогонсем урлă Монморансипе хурăнташлă, Францири чи лайăх хушаматсенчен. Кунта та вăл, эмигрантсен хушшинче, аванни, чăн-чăнни. Тепри — Морио аббат, илтсе-и эсĕр çав тарăн ăс çинчен? Патша хăй унпа чылайччен калаçнă. Пĕлетĕр-и?

— Э! Питĕ те хавас, хавас питĕ те, — тенĕ князь. — Калăр-ха, тархасшăн, — хушса хунă вăл тата, тин анчах темĕскер астуса илнĕ пек, ытахальлĕн те ним марăн, эрне ун халь парас ыйтăвĕ, чăннипе каласан, паян хăй çакăнта килни тĕп тĕллевĕ пулсан та, — чăнах-и, тăлăх императрица Функе барона Венăри пĕрремĕш секретарь вырăнне яма кăмăл тăвать теççĕ? Барон, ман шутпа, йĕксĕкрех этем пек. — Асăннă вырăна Василий князь хăйĕн ывăлне валли кӳресшĕн пулнă, анчах ав такамсем ку тĕлĕшпе императрица Мария Федоровна урлă Функе бароншăн тăрăшаççĕ иккен.

Анна Павловна князь сăмахне илтсен куçĕсене майĕпен хупăнтарнă, ку ĕнтĕ — императрицăна мĕн кирлине тата ун кăмăлне мĕн кайнине эсĕ те, ыттисем те тӳре тума пултараймаççĕ тенине пĕлтернĕ.

— Барон Функе çинчен императрицăна аппăшĕ рекомендаци панă, — çакна кăна каланă вăл типĕ те салхуллă сасăпа. Императрица ятне асăннă самантсенче Анна Павловна яланах улшăннă, унăн пичĕ çинче хисеп, юрату тата пăхăну палли темĕнле хурланупа тунсăхлăн витĕнсе тасан та тарăннăн сăнарланнă; акă халĕ те, чĕлхи çине хăйĕн аслă хӳтĕлевçин ячĕ килсенвăл çемĕçсе кайнă: Функе барона

патша амăшĕ пысăк чыс туни çинчен вăл тепĕр хут каланă, ун куçĕ çине каллех хурланулла тунсăх йăлхахланнă.

Князь сӳрĕккĕн нимĕн те чĕнмен. Анна Павловна çапла, хăйĕн патша таврашĕнче туптанса çивĕчленнĕ хĕрарăм чеелĕхĕпе тата ăсĕн хăвăртлăхĕпе, мăнатлă княçа императрица халаллана çын çинчен çакăн пек чăрсăр калаçнăшăн чиртсе илесшĕн пулнă, анчах çавăнтах вăл ăна йăпатма та манман.

— Сăмах май, — тенĕ вăл, — сирĕн кил-йышăр çинчен. Пĕлетĕр-и, сирĕн тăван хĕрĕр çын çине тухма пуçланăранпа пĕтĕм обществăн савăнăçĕ пулса тăрать. Пурте ăна çутă кун пек илемлĕ теççĕ.

Князь хисеплĕн тайăлса хăй тав тунине палăртнă.

— Тăтăшах эп çапла шухăшлатăп, — сăмахне çĕнетнĕ Анна Павловна пĕрер самант чĕнмесĕр ларнă хыççăн князь çумнерех куçнă май ачашшăн кулкаласа (калăн, вăл çак жестпа политика калаçăвĕпе тĕнчеçи хахачĕсем пĕтрĕç, халь ĕнтĕ чун-чĕре сăмахĕ пуçланмалла иккенне пĕлтерчĕ тесе), — тăтăшах эп çапла шухăшлатăп та, телей тени çакă тĕнчере хăш чух ытла та тĕрĕс мар валеçĕнет-çке тетĕп. Мĕн тивĕçшĕн сире ăраскал çавăн пек ытарса илейми икĕ ача панă?.. Паллах, Анатольсĕр пуçне, ăна эп юратмастăп, — хушса хунă вăл апелляцисĕр-мĕнсĕр, куç харшисене кăшт çĕклесе. — Мĕн тери ырă ачасем! Эсĕр пур — вăл ачасене кирлĕ пек картмастăр, çавăнпа та вĕсен хакне хăвăр та тăмастăр.

Вара вăл княçа куçран пăхса хăйĕн хаваслă йăл куллипе кулса янă.

— Мĕн тăвас? Ман вырăнта Лафатер çапла каланă пулĕччĕ: манра ашшĕ-амăш юратăвĕн икелĕ çук тейĕччĕ, — хуравланă князь.

— Пăрахăр шӳт тума. Эпĕ сирĕнпе кулса мар калаçасшăн. Пĕлетĕр-и, кĕçĕн ывăлăр ман кăмăла каймасть. Хамăр хушшăмăрта çеç пултăр та (каллех ун пичĕ çине хайхи хурлану тухнă), императрица патĕнче те ун çинчен сăмахларĕç, хĕрхенеççĕ сире...

Князь чĕнмен. Анна Павловна та ним сăмах хушмасăр ун çине чылайччен тинкерсе пăхса ларнă. Василий князь питне туртăнтаркаласа илнĕ.

— Мĕн тăвас-ха ман? — хуравланă вăл юлашкинчен. — Эсир пĕлместĕр мар, ашшĕ хăй ачисене вĕрентсе ӳстерессишĕн мĕн тума пултарать, çавна эп пĕтĕмпех тунă, анчах иккĕшĕ те — панккав-и — панккав. Иккĕшĕ те тăп-тăр ухмах, анчах пĕри лăпкă ухмах — Ипполит, тепри чарусăр ухмах — Анатоль. Вĕсен уйрăмлăхĕ те çав кăна, — каланă

вăл хальчченхи пек мар килĕшӳсĕртерех тата хăпартланарах кулнă май, тута-çăвар таврашĕнчи пĕрĕмсенче темĕскер, илемсĕрскер, кăмăлсăр та тӳрккесскер, хирĕнчĕклĕн пытанса тăнине кĕтмен çĕртен уççăн палăртса.

— Ăсу кайĕ, мĕншĕн сирĕн пек çынсен ачисем çураласçĕ? Эхер те эсир ашшĕ пулмасан ман сире ӳпкелеме нимĕнле сăлтав та пулас çукчĕ, — калана Анна Павловна куçĕсене шухăшлăн çĕклесе.

— Эпĕ сирĕн варлă чурăр, сирĕн умра çеç ним пытарусăр калаçма пултаратăп. Ман ачасем — ман пурнăçăн касмăкĕ, ман йывăр хĕрес. Хама хам çапла уçса калатăп эп. Мĕн тăвас?.. — вăл аллине сулса хĕрхенӳсĕр шăпа умĕнчи хăйĕн парăнулăхне палăртнă, вара сăмахне татса шарламасăр ларнă.

Анна Павловна та шухăша кайнă.

— Эсĕр хăвăрăн ашкăн ывăлăр Анатоле авлантарасси çинчен шухăшламан-и? Ватă хĕрсен, — кулкаларах калана вăл, — çынсене авлантарас мани пур теççĕ. Çав чире эп хамра туймастăп-ха та, çапах калас пулать, манăн сăнаса хунă пĕр хĕр пур, пирĕн хурăнташ ватă ашшĕ пирки питĕ телейсĕр пурăнать, эпĕ Болконская княжна çинчен калатăп. — Князь чĕнмен, анчах та ятлă тĕнчен пултарулăхне пула хăвăрттăн ăспа та мĕн кирлине чухласа илсе пуçне кăшт çеç сĕлтнĕ, ку ĕнтĕ асăннă хыпар шута илĕннине пĕлтернĕ.

— Çук, эсĕр пĕлместĕр, Анатоль мана çулсерен хĕрĕх пине ларать, — калана вăл, ахăртнех, хăй шухăшĕсен хурлăхлă хускавне ниепле чараймасăр. Унтан, кăшт чĕнмесĕр тăрсан: — Кун пекех пулсан мĕн кăтартĕ вăл тата пĕр пилĕк çултан? — тенĕ князь. — Акă ĕнтĕ атте пулнин усăлăхĕ. Пуян-и вăл сирĕн княжна?

— Ашшĕ питĕ пуян, питĕ хытă, — ялта пурăнать. Пĕлетĕр пуль, паллă князь — Болконский, леш император чухнех отставкăна тухнăскер, «прусс королĕ», — çапла ят панăччĕ ăна. Вăл питĕ ăслă çын, анчах тĕлĕнтермĕшĕ нумай, тата йăвăр характерлă. Мăнтарăн княжна, хăрăк турат пек телейсĕр. Унăн тетешĕ пур, хăй нумай пулмасть Lisā Мейнена кавча илни, Кутузов адъютанчĕ. Вăл та паян ман патăмра пулать.

— Итлĕр-ха, савнă Анет, — калана князь хăйĕн сăмах юлташне сасартăк алăран тытса тата ăна темшĕн аялалла пĕкĕнтерсе. — Майлаштарăр эсĕр çак ĕçе, вара эп сирĕн чи варлă чурăр (сирĕн рап, хайхи ман староста калашле, вăл çырăвĕсене çапла вĕçлет: покой-ер-п). Хĕр аван кил-йышран тата пуян. Мана çав кирлĕ те.

Вара вăл хăйне яланах уйăрса тăракан ирĕклĕ хусканăвпа, фамильярлă кĕрнеклĕн хускаланса фрейлинăна алăран ярса тытнă, чуптунă, унтан, чуптунă хыççăн, кресло çине йăтăнса аннă та хăяккăн пăха-пăха фрейлина аллинне енчен енне суллакаласа илнĕ.

— Чимĕр, — каланă Анна Павловна шухăшласа илсе. — Эп ун çинчен паянах Lisa-не, çамрăк Болконскин арăмне пĕлтеретĕп. Тен, ĕç майлашĕ те. Çапла эпĕ те вара сирĕн кил-йышăра пула ватă хĕрсен римислине вĕренме пуçлатăп.

II

Анна Павловнăн хăна пăлĕмĕ майĕпен тула пуçланă. Петербург аристократийĕн чи ятлă сийĕ пуçтарăннă кунта, çĕр тĕрлĕ çын — çул тата характер тĕлĕшпе, анчах пĕр тĕрлĕ — хăйсем пурăнакан общество енĕпе; Василий княçăн хĕрĕ чипер Элен та çитрĕ, вăл ашшĕне посланник уявне илсе кайма ятарласах кĕнĕ. Хĕр çинче шифр тата бал платйи пулнă. Çитнĕ Петербург хулинчи чи-чи ăрăмлă илем, паллă пике, çамрăк Болконская, пĕчĕкçĕ княгиня, иртнĕ хĕлле çеç качча тухнăскер, юлашки вăхăтра вăл, çийĕнче пуррипе, пысăк çутлăха тухма пăрахнă, анчах пĕчĕкрех каçсенчен пăрăнсах тăман. Ипполит та, Василий князь ывăлĕ, Мортемарпа килнĕ, ăна вăл евчĕ пулса хăнасемпе паллаштарнă; Марио аббат та тата ыттисем те пĕрин хыççăн тепри килсе тăнă.

— Эсĕр курнăçмарăр-и-ха е эсĕр паллашмарăр-и-ха ман мăнаккапа? — тенĕ Анна Павловна килен хăнасене, вара кирек кама та чи малтан çуллĕ бантсемпе капăрлатнă пĕр кăптăрмăш карчăк патне (вăл хăнасем киле пуçласан тепĕр пăлĕмрен юриех тухса ларнă иккен) хисеплĕн, чыслăн çавăтса пынă, куçĕсене хăна çинчен мăнаккăшĕ çине куçарса ячĕсене каланă, унтан аяккалла пăрăнса тăнă.

Пур хăнасем те никам та палламан, никамшăн та интереслĕ мар, кирлĕ мар мăнаккана саламлас йĕркене хисеп тунă. Анна Павловна хурланулла тунсăхпа, уявлă кăмăлпа салам йăлине тăвакансем çине ырлавлăн пăхса тăнă. Мăнакка пурне те пĕр саспа, пурне те пĕр сăмахпа йышăннă: килекене сывлăх суннă, хăйĕн сывлăхĕ çинчен каланă тата императрица, турра шĕкĕр, паян хăйне хăй лайăхрах туйни çинчен пĕлтернĕ. Çак йĕркене тума пыракансем, хăйсене хăйсем чиперрĕн тытас пирки, васканине палăртмасăр, чăрмавлă йăвăр ĕçе ирттернĕ хыççăнхи пушаннă кăмăлпа карчăк патĕнчен пăрăннă, вара мĕн каç вĕçленичченех урăх ун патне пыман.

Болконская, çамрăк княгиня, хăйпе пĕрле ылтăн укапа

тӗрленӗ бархат енчӗкре алӗҫ илсе килнӗ. Унӑн килӗшӳллӗ, кӑшт ҫеҫ палӑрса тӑракан хура мӑйӑхлӑ ҫӳлти тути, шӑлӗсене пӑхсан кӗскерех пулнӑ, анчах ҫакна пула вӑл пушшех кӑмӑллӑн уҫӑлнӑ, хӑш чух тӑсӑларах илсе аялти тути ҫине калама ҫук ятуллӑн аннӑ. Ҫакӑ ҫитменлӗх — кӗскерех тута тата ҫурма уҫӑ ҫӑвар — унӑн уйрӑмлӑхӗ, хӑйне уйрӑм илемӗ пек туйӑннӑ: ҫапла пулать те вӑл чӑн-чӑн кӑмӑла каякан хӗрарӑмсен тӗлӗшпе. Ҫакӑ сывлӑхпа тата чӗрӗлӗхпе тулса тӑракан, хӑйӗн мал ӗмӗтпе ҫыхӑннӑ йӑвӑрлӑхне ҫӑмӑллӑн ирттерекен ҫамрӑк та лайӑх хӗрарӑм ҫине пӑхма кирек камшӑн та савӑнӑҫлӑ пулнӑ. Ватӑ ҫынсем те тата кичемлӗх ертнӗ салху ҫамрӑксем те унпа пулса пӑртакҫӑ сӑмах хушкаласа илсен хӑйсене хӑйсем ҫак маттур хӗрарӑм евӗр пулма пуҫланӑ пек туйнӑ. Кам та кам унпа калаҫса унӑн кашни сӑмах ҫинех килекен ҫутӑ куллине, пӗрӗн-кайӑн йӑлтӑртатса тӑракан чечен шӑлӗсене курнӑ, ҫавӑ эпӗ уншӑн паян нихӑҫанхинчен те кӑмӑллӑрах тесе вӑрттӑн мухтанса илнӗ. Кӑна пурте ҫакӑн пек шутланӑ.

Пӗчӗкҫӗ княгиня пӗчӗк утӑмсемпе хӑвӑрттӑн тайкаланса утса, аллинчи ӗҫ енчӗкӗпе сӗтел тавра ҫаврӑнса, платйине йӑл-ял кулнӑ май савӑшлӑн тӳрлеткелесе диван ҫине кӗмӗл сӑмавар патне вырнаҫса ларчӗ, калӑн, унӑн шучӗпе, вӑл мӗн кӑна тумасть, ҫавӑ хӑйшӗн те тата ыттисемшӗн те partie de plaisiz (хавасла япала) тесе.

— Эпӗ ӗҫ пекки илсе килтӗм-ха та, — тет вӑл хӑйӗн ридикюльне уҫнӑ май пурин ҫине те пӗр вӑхӑтра пӑхкаласа.

— Астунӑ пулӑр, Annette, капла эсир манран ҫыннаултаратӑр, — ятлам пек турӗ вӑл хуҫа пикене. — Эсир йӑхравӑрта пӗчӗк улах ҫеҫ пулать тесе ҫыртӑр; куратӑр-и, эпӗ мӗнешкел пиеленнӗ.

Вара вӑл хӑйӗн чӗнтӗрсемпе илемлетнӗ ҫырӑ тӗслӗ платйине, кӑкӑртан пӑртак аяларах сарлака хӑюпа пилӗклетнӗскере, кӑтартас тесе аллисене саркаласа илчӗ.

— Нимӗн те ан пӑшӑрханӑр, Lise, кирек те мӗнле пулсан та эсир пуринчен те хӳхӗмми, — ответлерӗ Анна Павловна. — Пӗлетӗр-и, ман арҫыннӑм мана пӑрахса каймалла, — тет вӑл паҫӑрхи тонӗпех генерал енне ҫаврӑнса. — Вилме каять. Калӑр-ха, мӗне кирлӗ ҫав ирсӗр вӑрҫӑ? — ыйтнӑ вӑл Василий княҫран, унтан ответ илессе кӗтсе тӑмасӑр ҫавӑнтах Василий князь хӗрӗпе, чипер Эленпа, калаҫма пикеннӗ.

— Мӗнле аванскер ку, пӗчӗкҫӗ княгиня! — тенӗ Василий князь Анна Павловнӑна шӑппӑн калаҫса.

Часах пӗчӗкҫӗ княгиня хыҫҫӑн массивлӑ та хулӑн ҫамрӑк ҫын, ҫӳҫне кӗскен кастарнӑскер, ҫитнӗ, вӑл куҫлӑхпа, вӑл

вăхăтри мода йăлипе, çутă панталонпа, çӳллĕ жабопа тата хăмăр фракпа пулнă. Çакă хулăн çамрăк çын халĕ Мускавра юлашки кунĕсене ирттерекен Безухов графăн, Кĕтерине вăхăтĕнчи чаплă вельможăн саккунсăр ывăлĕ пулнă. Вăл хальлĕхе нимĕнле ĕçре те тăман-ха, тин çеç ют çĕршывран вĕренсе пĕтерсе килнĕ, общество хушшине те çак кун чи малтан тухнă. Анна Павловна ăна пуç тайса саламланă, анчах ун тайăмĕ хăйĕн салонĕнче иерархи тĕлĕшпе чи аялта тăраканнисем валли параканни пулнă. Çапах çакă хăйне майлă кĕçĕн сортлă салама пăхмасăрах, Пьера курсан Анна Павловна пичĕ çинче хумханни тата хăрани уççăнах сăнарланнă, ун пекки хăш-пĕрин вырнаçусăр тата килĕшӳсĕр катмар япалана курсан пулать. Чăнах та, Пьер пӳлĕмри ытти арçынсенчен чылай пысăк пулнă, анчах та унран хăрани Анна Павловнăн чи малтан урăххинчен килме пултарнă: çамрăк çынна ытти çынсенчен ăслă та именчĕклĕ куçсем, ахальтерехĕн çеç сăнаса пăхаканскерсем, уйăрса тăнă.

— Питĕ те лайăх, Monsieur Pierre, эсир çакăн пек мĕскĕн чирлешкене килсе кăмăл туни, — тенĕ ăна Анна Павловна хăйĕн мăнаккăшĕ патне çавăтса пырса, çав вăхăтрах вăл шиклевлĕн мăнаккăшĕпе куçа-куçăн пăхса илнĕ. Пьер темĕн мăкăртатса каланă, хăй ялан куçĕсемпе темĕскер шыранă. Вăл пĕчĕкçĕ княгиньăна курсан савăнăçлăн, хаваслăн кулса янă, ăна çывăх пĕлĕшле пуç тайнă, вара тин карчăк патне пынă. Анна Павловна хăрани ахалех пулман, мĕншĕн тесен Пьер императрица сывлăхĕ çинчен лайăх итлесе пĕтермесĕрех пăрăнса кайнă. Хăранă Анна Павловна ăна чарас тесе: — Эсир Марио аббата пĕлетĕр-и? Вăл питĕ интереслĕ çын... — тенĕ.

— Илтнĕ. Унăн ĕмĕрлĕх мир тумалли план пур имĕш, ку вăл питĕ интереслĕ, анчах пурнăçа кĕме пултарасси — иккĕллĕ...

— Эсир апла шухăшлатăр? — ответленĕ Анна Павловна мĕн те пулин калам та каллех кил хуçин чăрмавĕсем патне куçам тесе. Анчах Пьер тепĕр килĕшӳсĕрлĕх туса хурать. Паçăр вăл хăйĕнпе калаçаканăн сăмахне итлесе пĕтеричченех пăрăнчĕ; халĕ хăйĕн патĕнчен каймалли хуçа пикене тĕлсĕр калаçупа тытса чарчĕ. Вăл çине тăрсах, пуçне пĕксе, услап урисене сарса, аббатăн планĕ мĕншĕн химера иккенне Анна Павловна умĕнче сăлтавласа калаçма пикенчĕ:

— Эпир кун çинчен ӳлĕм калаçăпăр, — тенĕ Анна Павловна кулкаласа.

Вара хăйне тыткалама пĕлмен çамрăк çынран ерипен хăтăлса вăл хăйĕн хуçа пике положенийĕнчен тухса тăра-

кан чăрмавĕсене каллех алла илет, сăнать, итлет, çта каласçу йăвашланма пуçлать, унта часрах хăйĕн пулăшăвне пама хатĕрех тăрать. Пир-авăр мастерскойĕн хуçи, ĕçлекенсене епле вырнаçтарса лартать, вара хăйĕн заведенийĕ тăрăх утса çýренĕ май чарăннă е хирĕнчĕклĕн сас парса çаврăнакан йĕкене асăрхать, ун патне чупса çитет, хута ярать е ытлашши кайнине кирлĕ пек карта лартать, — çавăн пекех Анна Павловна та, хăйĕн хăна пýлĕмĕ тăрăх çýресе сăмах йăмнă е ытлашши шавлама пуçланă ушкăн патне çитсе тăрса, пĕр сăмахпа е пĕчĕк ылмаштарупа каласçу машинине каллех кирлĕ пек хăвăртлăх çине лартнă. Анчах çак чăрмавсем хушшинче унăн Пьершăн пăшăрханни уйрăмах палăрнă. Вăл ăна куçран яман. Акă леш Мортемар тавра пухăннисем мĕн каласçнине тăнлама пынă, унтан, пăртак тăрсан, аббат каласçакан кружок патне куçнă. Ют патшалăхра вĕренсе çитĕннĕ Пьершăн Анна Павловна каçĕ Российăра курнă каçсенчен малтанхи пулнă. Вăл кунта Петербургри пĕтĕм интеллигенци пуçтарăннине пĕлнĕ, çавăнпа ун, теттесен лавккине лекнĕ ачанни пек, куçĕ-пуçĕ алчăраса кайнă. Вăл хăй илтме пултарнă ăслă каласçусене илтмесĕр юласран питех те хăранă. Вăл кунта пухăннă шанчăклăн та ятуллăн çутăлакан питсем çине пăхса ялан мĕн те пулин уйрăмах ăслăраххи палăрасса кĕтнĕ. Юлашкинчен вăл Морио патне пынă. Каласçу ăна интереслĕ пек туйаннă, вара вăл чарăнса итлеме пуçланă, çамрăк çынсен юратнă йăлипе, май килнĕ чух хăйĕн шухăшĕсене каласа пама авăрланса тăнă.

III

Анна Павловнăн каçĕ хута кайнă. Йĕкесем унта та, кунта та пĕр чарăнмасăр тикĕссĕн йăсланă. Ма tante-сĕр пуçне ун патĕнче халь...

[1956]

Валентин Овечкин

РАЙОН ĔÇĔ-ХĔЛĔ

Çумăр виççĕмĕш кун чарăна пĕлмерĕ. Аптранă хĕвел енчетрен пĕрре тухнă пек тăвать, алчăравлăн пăхкаласа илет, çурхи ейý пек шурланса тăракан уй-хире мар, хуралт çийĕсене те типĕтсе ĕлкĕреймест, каллех — йăтса антарать, чĕреслетсе çăвать.

Райкомăн иккĕмĕш секретарĕ патĕнче, кабинетра, районти чи пуян тата малта пыракан «Совет влаçĕ» колхозăн

председателĕ Демьян Васильевич Опенкин ларать. Вăл мăн хырăмлă, хулăн мăйăхлă самăр çын; кăвакарнă çӳçне кĕскен кастарнă, çийĕнче — йĕпеннĕ, тĕл-тĕл пылчăкланнă парусина плащ. Опенкин кунта юлан утпа килнĕ. Учĕ, çитерсе тăракан ăратлă çӳрен ăйăр, райком лупас айĕнче йĕнерĕпех тăрать, тем çитмест — пуçне йăлăнтаруллăн ухкалать, кукалет, шар-шар кĕçенет, чĕлпĕрне татасшăн хăтланать. Хуçи ларсан-ларсан пĕр хулăн ĕнсине майсăр пăркаласа хулпуççи урлă лаши çине чӳречерен пăхкалать, çиллессĕн шăмарса илет.

Райком секретарĕ Петр Илларионович Мартынов урайне сарнă çемçе палас тăрăхĕсем çийĕпе аттисемпе сас тумасăр каллĕ-маллĕ уткалать.

— Урăх санран тырă тухмасть, — тет вăл Опенкина. — Эсир парса татнă. Уншăн мар чĕнтертĕм сана, Демьян. Эсĕ пирĕн чи ватă председатель, опытлă хуçа, пурнăç çынни. Канаш пар — мĕн тытса мĕн тума пулать çакăн пек йĕпере? Виçĕ пин гектар çава-çурла тĕкĕнменни. Алла усса ларнипе ĕç тухмасть, мĕн те пулин тумалла. Анчах ĕçĕ ĕç пултăрччĕ, ахаль лариччен кĕрĕк арки те пулин йăвалана тенĕ пек мар... Ĕнер «Ильич пехилĕ» колхозра председатель сĕтелĕ çинче хам панă телефонограммăна куртăм, тунмастăп, питĕм хĕрелчĕ. Çавăн пек кăтартусем парса колхоз çыннисене текех культарас марччĕ. Мĕнпур техникăна хута яма хушнă эп, анчах хам, хушаканни, аран вĕсем патне çуран çиткелерĕм — «газик» хирте путса ларчĕ, ăна сĕтĕрттерме ялтан вăкăрсем чĕнтермелле пулчĕ.

— Ăçта унта — куçа уçма çук! Ну, ишет те, ача!.. — терĕ Опенкин.

— Çавапа, калăпăр, çурлапа... çанталăка пăхмасăр мĕн чухлĕ те пулин тума пулмĕ-ши? Э?

— Пĕлместĕп, Ларионыч, ман йĕпе-сапара тырă вырма опыт çук, — куç хӳрипе кулса илчĕ Опенкин. — Пирĕн колхоз кирек хăçан та тырăсене типĕлле кӳртет, ĕлкĕретпĕр... Ну, вырма çурлапа та юрĕ тейĕпĕр, анчах малалла мĕн? Тырра шурлăхра кĕверни çеç пулать. Çанталăк çаплипех тăрсан — çĕрет... Татать, явăл, йĕвене! — Опенкин айĕнчи пукана шатăртаттарса чӳрече еннелле йывăррăн çаврăнчĕ, унтан кантăка ик еннелле уçса ярса: — Тпру, Кальян! Асту эп сана! — хаяррăн кăшкăрчĕ, вара кил хушшипе иртсе пыракан райком конюхне курса: — Никита! Нăхта пур-и сирĕн? Тархасшăн, илсе кил, йĕвенне хывса ил, нăхтине тăхăнтарт, — терĕ.

Мартынов чӳрече патне пычĕ.

— Ăçтан туянтăр кун пек маттура?

— Сальски тавраш̆ĕнчен. Буденновски йăх, дончак несĕлĕ. Çирĕп лаша. Йĕнерпе çӳреме чи лайăх йăх шутланать.

— Çӳретсех тăмалла, пăсăлма пултарать.

— Пушах тăратмастпăр. Ĕнер унпала каучуксовхоза кайса килтĕм. Манра — çĕр çирĕм кило. Тиев çителĕклĕ.

— Мĕн эс, Демьян, çав тери ишĕлетĕн? — хырăмĕнчен тĕксе илчĕ Опенкина Мартынов. — Кулак сăнĕ çапнă.

— Хам та тĕлĕнетĕп. Ларионыч, элле, мĕн пулнă мана? — аллисене сулчĕ Опенкин. — Канлĕ пурнăçран мар. Пĕрлештернĕ хыççăн ним канăç та çук, тинке тухать. Тăватă пин гектар, сакăр бригада. Мĕн чухлĕ ытларах çуйханатăп, çавăн чул ытларах самăрланатăп.

— Апат аван анать пуль?

— Чăн, аппетит тĕлĕшпе — турра шĕкĕр!

Уçă чӳречерен çумăр çапса çава пуçларĕ, кусуй çинчи хаçат-журналсем йĕпенме пăхаççĕ. Опенкин кантăка хупрĕ. Мартынов сĕтел хĕррине кайса ларчĕ.

— Пĕлтĕрхи пек пулмĕ-и каллех? — Опенкин ăслă, хура, кăштах ĕшеннĕ куçĕсене Мартынов çине çĕклерĕ.

— Мĕнле — пĕлтĕрхи пек?

— Кӳршĕсем каллех çитмĕл процентпа çырлахĕç, пирĕн каллех хушса памалла пулĕ.

— Тырă пирки-и? Çук, ку тĕлĕшпе халь хытă... Тен, кĕтевле пама тĕл килĕ. Сан çапнă тырă нумай, ыттисен — çук. Вĕсемшĕн хыв та кайран саплашатăр.

— Акă вăл хайхи! — йывăррăн шатăртатакан пукан çинче ăшталанса илчĕ Опенкин. — Каларăм-çке: мĕн те пулсан шухăшласа тупаççех! Çамкаран пулмасан çамкана! Вăрçă иртнĕренпе мĕн чухлĕ пулăшнă эпир ытти колхозсене! Кивçене кĕме пĕлеççĕ, татăлма шутламаççĕ. Ăçта çӳрет-ши пĕр лайăх ревизор, тупата?! Дебитор парăмĕшĕн мана тахçанах суда памалла! Пин центнер тырă кӳрĕш-арăш çинче. Патшалăха та тӳленĕ вĕсемшĕн, вăрлăхлăх та панă. Ялан — кĕтевле. Вĕсем пур — хыçкаланмаççĕ те. Председательсене мĕн чухлĕ каламан: «Хăçан татăлас тетĕр-ха, тăвансем, мĕнле — намăс пур-и сирĕн?» — тетĕп. «Татăлăпăр-ха, — теççĕ шăл йĕрсе, — акă коммунизм пулсан...» — Ман шухăшпа, — çилленсе сиксе тăчĕ Опенкин, вара йывăррăн машлатса, шăршăнса хытнă плащ аркипе пукан хыçĕсене кăштăртаттарса, кабинет тăрăх утма пуçларĕ, — ман шухăшпа, çав харам иждивенчествăна пĕтермесĕр коммунизм пулас çук. Пурин те тăвас пулать ăна, коммунизма! Апла мар: пĕрисем тăваççĕ, терт кураççĕ, теприсем çын ĕнси çине утланса çӳлти патшалăха кĕме пăхаççĕ!..

— Чим-ха, лăплан, Демьян Васильевич, — хутшăнчĕ Мартынов. — Тен, кивçенсĕр те ирттерĕпĕр.

— Мĕнле кивçен! Кала тӳрех: сăвапшăн пани те. Кăçал та пире никам пĕр грамм калла тавăрмасть. Хĕстер-ха вĕсене, тӳрех сирĕн пата йăртлатаççĕ, йĕрмеше пуçлаççĕ; эсир вара вĕсен хутне кĕрсе пире çапла калатăр: «Хальччен тăхтанă — тăхтăр, ан шыраттарăр. Тырри-пулли пит сахал, ĕç кунĕ тăрăх пăртак валеçчĕр, вăрлăхлăх хывччăр», — тетĕр.

Вăл, çӳллĕ те сулмаклăскер, патмар урисене урлă ярса Мартынов умне пырса чарăнчĕ.

— Эпĕ çăткăн çын мар, Петр Ларионыч, тархасшăн, ун пек ан шутла ман çинчен. Ма пулăшас мар пĕр-пĕрне, инкек-мĕн пулсан? Калăпăр, пăр çапнă, шыв илнĕ... Пожалстă, ун пек чух хапăл тăватпăр! Анчах вĕсен мĕнпур инкекĕ те ăнман бригадирсенчен тата тул çутăлсан та мамăк тӳшек çинче харлаттарса çывăракан председательсенчен килет пулсан, кунта вара нимĕнле кивçен те пулăшас çук!.. Хамăр колхозшăн мар çапла пăшăрханатăп. Пирĕн — пур. Тата пин центнер салатсан та юра ерес çук. Анчах çакă вăл пурнăç туни мар. Капла — пуçран шăлнипе, мемме панипе — ĕселенсе пыракан колхозсен пурнăçне нихçан та юсаймастпăр.

— Эпĕ те, Демьян, юлса пыракан колхозсене çапла майпа юсăпăр тесшĕн мар. — Вăл Опенкина, вун пилĕк çул хушши колхоз председателĕнче ĕçлесе хурапа шурра сахал мар курнă çынна, тарăн та ăслă куçĕсенчен тӳрремĕн пăхса илчĕ. — Капла эпир, чăнласах та, колхозсенче те йĕрке кӳрес çук, района та çĕклес çук. Хушса панă план урăх пулмасть. Нимĕнле сăлтавпа та, нимĕнле йӳтĕмпе те!

Опенкин шанса пĕтермесĕр пуçне пăркаларĕ.

— Ку вăл, Ларионыч, хальлĕхе кăна, эсĕ пĕрремĕш вырăнта пулнă чух. Виктор Семеныч таврăнсан мĕн пуласси паллах. Тӳрех: «Ăçта-ха çав пуян Демьян, лайăххăн силлес пулать ăна!» — тейĕ.

— Виктор Семеныча та ӳкĕте кӳртĕпĕр. Сана тата сан пек плана вăхăтчен тултаракан вăйсене силлесси çăмăл меслет вăл.

— Хăçан ун отпускĕ тухать?

— Путевкине малалла тăсмасан шăмат кун таврăнать.

— Акă килнĕ ятпа пĕр-икĕ сехет канкалĕ те пуçлĕ каллех сăсăрлантарма!

Мартынов хирĕç чĕнмерĕ, чӳрече патнелле куçса пăртак тăхтаса тăрсан калаçăва урăххи çине çавăрчĕ.

— Питĕ начар-ха пирĕн колхозсем — хуçалăх тĕлĕшпе.

Çумăр çунă-çуман шар кура пуçлатпăр. Эхер те çак йĕпесапа тата ик эрне пырсан?.. Вунă хут ытларах кирлĕ пире тĕш авăнĕсем, витнĕ йĕтемсем. Тен, кĕлтери тырра типĕтмелли аслăксем тусан та аван пулмалла?

— Рига тенĕ авал ун пек аслăксене, — сас пачĕ Опенкин.

— Ан тив, çара юпасем çине сайхахлăх сарса улăм витнĕ çи витти анчах пултăр.

— Хӳме хĕвмесен тата авантарах, — килĕшрĕ Опенкин. — Çил ирĕккĕн çӳрет, часрах типет... Халĕ çĕр талккăшĕ урăхçке, Ларионыч. Ĕлĕк, эпир астăвасса, хуçалăх çынни аксан — пилĕк теçеттин акнă. Атя туса пăх-ха эс тăват-пилĕк пин гектаршăн, — миçĕ рига кирлĕ!

— Эпĕ те çавнах калатăп, — терĕ Мартынов. — Халĕ йăлтах урăхла виçепе шайлас пулать. Колхоза виçĕ авăн тума задани паратпăр. Виççĕ мар — вăтăр кирлĕ!.. Е уяр пире çунтарать, е çумăр тĕп тăвать, çитĕннĕ тырра пĕтерет. Хăçан та пулсан вĕçĕ пулать-и çакăн? Эсĕ, Демьян Васильевич, питех пăшăрханмастăн курăнать. «Мана çанталăк ик эрне лайăх тăрсан çитет», — тетĕн пуль? Асту, ытлашши ан вĕç. Е вырма тухсанах ăншăртлă çумăр пуçлансан? Вара ху та хурах кăшкăрăн. Ан тив, ун пекки вунă çулта пĕрре çеç пултăр, анчах ăна та пирĕн кĕтсе тăмалла, хатĕр пулмалла.

Опенкин йăл-йăл кулкаласа Мартынова лăпкăн тăнлать.

— Ун пеккине те манмастпăр, Ларионыч. Акă пирĕн колхозран виçĕ уйăх ĕнтĕ Киров облаçĕнче вунă çын вăрман ĕçлеççĕ. Вун пилĕк вакун вăрман кӳтĕмĕр кăçал. Тата виçĕ ăстрăм çавăн чул, çавăн чул кӳмелле. Çитет — электростанцилĕх те, клуб лартма та, витесемпе авăнсем тума та.

— Сирĕн çитĕ!..

— Мĕншĕн пирĕн колхозра ĕç ăнăçса пырать, мĕншĕн пирĕн çынсем харăслатса ĕçлеççĕ? — ыйтрĕ пăртак тăхтасан Опенкин. — Ăнлантарса парам эппин, Ларионыч. Мĕншĕн тесен колхоз пуян, ĕçкунĕ çине тырă та, укçа та тухать. Чи йывăр айăп пирĕн колхозра — çынна правлени йышăнăвĕпе виçĕ кунлăха ĕçрен хăварасси.

Мартынов кулса ячĕ.

— Ăнлантарчĕ те! Колхоз сирĕн мĕншĕн пуян? Мĕншĕн тесен лайăх ĕçлетĕр, пĕр-пĕринчен ирттерсе ăмăртатăр.

— Чăн, — йăл кулчĕ Опенкин, — çав ĕнтĕ вăл пĕр хускалсан. Йывăрлăхне эпир те сахал мар курнă... Пĕрре, вăрçă вăхăтĕнче, пирĕн пата Михей Кудряшов, «Революци хумĕн» председателĕ, пычĕ; астăваймастăп — мĕн çăмăлпаччĕ. Хам пата илсе кайрăм эп ăна. Кĕрекере — хура

çăкăр. «Мĕнле намăс мар сана! — хайхи ятлама пуçларĕ мана. — Председатель пуçупа пурăнма пĕлместĕн!» — тет. Мĕн намăсĕ пултăр-ха ун чух? Кансĕр вăхăт, вăрçă. Хĕрлĕ Çар фондне çавăн чух планран ирттерсе пин çурă центнер хыврăмăр эпир, — хамăр ирĕкпе, никам хистемесĕр. «Аптрамăпăр, мĕнле килчĕ çапла пурăнкалăпăр, çăкăрне ăна паранкăпа хушса пĕçерсен те юрать, чăтас пулать!» — терĕмĕр. Йывăр çулсем иртрĕç, каллех уралантăмăр. Пĕлтĕр мана «Революци хумĕнче» пулма тĕл килчĕ. Кудряшов сĕтелли çинче çăкăр мĕнле-тĕр — пĕлеймерĕм, колхозниксенне куртăм — хура. Вăрлăхĕсем те çитмеççĕ иккен, кивçене каймалла. Эпир пур — миçе çул ĕнтĕ шурă çăкăр çиетпĕр, вăрçăчченхи пекех. «Мĕнле намăс мар сана!» — тавăртăм эп ăна хальхинче. — Хăвна çынсенчен уйăрмасăр вĕсемпе пĕрле хура çăкăрпа пурăннă пулсан, тен, эсĕ хаяртарах пулнă пулăттăн, йывăрлăхсене çĕнтерме хытăрах тăрăшăттăн!.. Колхоз вăл пирĕншĕн, председательсемшĕн, анчах мар, эпир, председательсем, акăш-макăш пурăнассишĕн мар. Пурне те лайăх пулсан председателе те аван — çапла ăнланатăп эп...

...Опенкина ăсатсан та чылайччен шухăшларĕ ун çинчен Мартынов. Эх, районти колхоз председателĕсем пурте ун евĕр пулсанччĕ! Ак унăн кустăрми йĕрĕлче пек çаврăнать — колхоз пуян, çавăнпа çыннисем те харсăр ĕçлеççĕ. Хăш-пĕр колхозсенче те «кустăрма» кусать, анчах кутăнла: ĕçкунĕ виçи — тĕпренчĕк, мĕншĕн тесен тырă пулман, çынсем начар ĕçленĕ. Мĕншĕн начар ĕçленĕ? Мĕншĕн тесен ĕçкунĕшĕн иртнĕ çулхине те тырă сахал тивнĕ. Çапла ĕнтĕ, ку япала кустăрма мар, тухатнă тукăн пулса тăрать. Тытса чармалла, çапса татмалла çак кутăн тукăна! Анчах кам татĕ? Демьян пек çынсем, камшăн халăх тивĕçлĕхĕ хăйĕнни евĕрех, çывăх та хаклă... Мартынов «Совет влаçĕ» колхозра иртнĕ хĕлле отчетпа суйлав пухăвĕнче пулсаччĕ. Ун чух, Опенкин кандидатурине председатель пулма çĕнĕрен палăртсан пĕр колхозник: «Демьян пирĕн — чăн-чăн чун-чĕреллĕ коммунист», — тесе мăнаçлăн каланăччĕ.

Çиллĕ çумăр шултра тумламĕсемпе кантăка вĕтетнĕ чул пек çапăнать. Мартынов паян иртенпе чылай çынна йышăнчĕ: райком пайĕсен пуçлăхĕсене — кашнине харкам хăй ыйтăвĕсемпе, район агрономне, райисполком ял хуçалăх пайĕн пуçлăхне. Çанталăк пăсăлнине пула паян пĕтĕм актив килте иккен.

— Юрăхлă мар капла, юлташсем, — терĕ вĕсене Мартынов. — Хирти ĕçсем районта питĕ те япăх, çапах килте ларатпăр. Çакăн пек чух колхозра пулмалла та!

— Мĕн тăвас халь колхозра? — ыйтрĕç унран.

— Тырра, çапнине те пулин, хăтарас пулать. Кăшăлтах çĕрет. Авăнсем тата витнĕ йĕтемсем тăвăр, тырра унта туртăр, авăсăр. Машинăсем çӳреймесен типĕтнĕ пеккине элеватора вăкăрсемпе турттарăр.

Усал çанталăк вăраха кайсан мĕн-мĕн тумалла, чĕрĕ вăйсене районта чи малтан мĕнле ĕçсем тавра çĕклемелле — çакăн çинчен Мартынов паян çирĕп шухăшласа хучĕ, вара хăйĕн помощникне чĕнсе илсе тăхăр сехет тĕлне бюро членĕсене пысăк мар ларăва пуçтарма каларĕ.

Ĕç кунĕ пĕтеспе, Мартынов киле апата кайма тăнă чух, кабинета Марья Сергеевна Борзова, — пĕрремĕш секретарь арăмĕ, çамрăк, анчах та иртерех ӳте кайнă, савăш сăнлă, пăч-пăч сар тутлă, çутă хура куçлă хĕрарăм, — «Сортсемовощ» конторĕн директорĕ пырса кĕчĕ.

Пĕркун пĕр колхозра Мартынов арбуз ăнманни çинчен илтнĕччĕ. Колхоз виçĕ çул хушши арбуз акать-мĕн, анчах усăсăр, арбуз писмест, сысна валли çеç юрăхлă пулать. «Мĕнле сорт?» — ыйтрĕ ун чух Мартынов колхозниксенчен. «Кубань вăрлăхĕ», — терĕç ăна. Çакăнта Мартынов обком тата Ял хуçалăх министерстви умĕнче лартмалли тепĕр çĕнĕ ыйту тĕвĕленнине сисрĕ, вара вăл киле таврăнсан Борзовăна пахча çимĕç вăрлăхĕсем района ăçтан-ăçтан килнине пĕлтерекен ведомость тума хушрĕ.

— Акă хатĕр, Петр Илларионович, — терĕ Борзова Мартынов умне çырса тултарнă хут листи хурса. — Накладнойсем тăрăх. Чăн, пĕрре те мичуринла тухмасть. Тирĕн хамăр патăртах вырăнти лайăх сортсем пур, анчах вĕсене облаçри контора таçталла ăсатать, пире — кӳртернĕ сортсене парать. Арбуз, дыня — Çĕрымран тата Кубаньрен, помидор — каллех Кубаньрен...

— Унта çу кунĕ кунтинчен уйăх çурă вăрăмрах, çавăнпа унти вăрлăхран хунакан çимĕç, вăрăм çăва хăнăхнăскер, васкамасăр ӳсет, — терĕ Мартынов Борзова ведомоçне тишкерсе.

Марья Сергеевна йĕпеннĕ плащăн аркине тирпейлĕн пуçтарса сĕтел патĕнчи кресло çине пырса ларчĕ.

— Манăн ар — Борзов юлташ паян килмелле, — терĕ вăл.

— Мĕнле паян? — пуçне çĕклерĕ Мартынов. — Отпускĕ пĕтеймен-çке.

— Чăтаймарĕ пулас. Эпĕ ăна кунтан хăй хытарса хăварнипе область хаçатне — сводкăллă номерсене — авиапочтăпа ярса патăм...

— Паян пулсан çитмелле ĕнтĕ вăл, — Мартынов сĕтел çинчи сехете пăхрĕ. — Поезд вăхăчĕ паçăрах иртнĕ.

— Эпĕ те çавна калатăп. Тен, каçхине пĕр сехетре пулаканнипе килĕ? Апла телеграмма çинче паянхи числа мар, ыранхи пулĕччĕ. Акă: «Çирĕм виççĕмĕшĕнче кĕт, чуптăватăп», — тенĕ.

— Чим, кунта ман паçăр килнĕ телеграммăсем пур, эп вĕсене вулайман-ха. — Мартынов сĕтел çинчи хутсене уçкалама пуçларĕ. — Чăн, пĕри Борзовран: «Çирĕм виççĕмĕшĕнче çитетĕп...» Анчах чуптăвасси çинчен сăмах çук.

Марья Сергеевна тарăн сывласа илчĕ.

— Каллех каçхи ларусем пуçланаççĕ ĕнтĕ. Каллех иксĕр кашни бюрора ирччен тытăçатăр.

— Пĕлместĕп, — хуравларĕ Мартынов, — мĕн пулĕ ĕнтĕ Ессентуки сиплĕхĕ хыççăн. Тен, язви халь ытлах аптратмĕ.

— Эпир унпа ун язвичченех паллашнă. Нумайранпа пĕлетĕп ăна. Чиртен мар. Характер — иксĕрĕн те характер! Чул çине çава тенĕ пекех... Уйăрас пулать сире — иксĕр ик районта пулмалла.

— Виççĕмĕш çынтан илтетĕп çакна: тепĕр района куçарма ыйт та ыйт теççĕ. Хĕссех кăларасшăн-им вара эсир мана? — ыйтрĕ Мартынов.

— Эпĕ тепĕр района вырăн ыйт тесе каламастăп-çке. Уйăрмалла сире тетĕп. Е унăн кунта юлмалла, е — санăн. Ну, кала-ха, Петр Илларионыч, мĕн çитмест сире иксĕре?

Мартынов куç хŭрипе кулса:

— Мĕншĕн манран тĕпчетĕн? Унран ыйт, вăл сана çывăхрах, — терĕ.

— Вăл хăйне евĕр калать.

— Мĕн калать? Мартынов хаçатçă пулнă, шурă хута хуратнă, хур шăмми тытакан хур курман, пурăнтăрччĕ малашне те çав ĕçпех. Парти ĕçĕнче вăл кара аври те ăнланмасть тет пулмалла. Çапла-и?

— Ун пек те калакалать.

Телефон сас пачĕ. Мартынов трубкăна тытса чылайччен калаçрĕ. Çав хушăрах ăна колхозниксенчен пилĕк çын партбилет илме килни çинче кĕрсе каларĕç. Борзова кайма тăчĕ.

— Юрĕ, Марья Сергеевна, калаçăпăр-ха. Ку хута эпĕ хам пата хăварам, эсĕ мана тепĕр ĕç — вырăнти тата кŭртернĕ сортсем мĕнле тухăç панине кăтартакан сводка туса пар.

— Аван, вăраха ямăп. Халь киле васкам, апат хатĕрлем. Тен, паян персе çитĕ те. Ахăртнех, поезд юлса килет пуль?..

Çамрăк коммунистсене партие кĕнĕ ятпа саламласа билетсем панă хыççăн тата вĕсемпе колхозри ĕçсем çинчен калаçса пĕтерсен Мартынов сĕтел арчисене питĕре-питĕре

илчĕ, тумланчĕ. Унтан вăл тин кăна киле каяс шутпа коридора тухсаччĕ — райком умне пĕр машина çитсе те чарăнчĕ, самантранах хускалса та кайрĕ, вара пусма çине çуртпуç çынни сулмаклă уттипе Борзов хăпарчĕ; вăл вăтам пÿ-силлĕ кĕрĕ çын, сăн-пичĕ — саркăм, сывлăхсăр, çийĕнче — ури пакăлчакĕ таран сăран пальто.

— Акă çитрĕ те, — терĕ Мартынов коридорта чарăнса тăрса. — Сана ку поездпа кĕтменччĕ. Сывлăх сунатăп!

— Салам ĕç халăхне! Халсем мĕнле? — алă пачĕ Борзов.

— Пурăнатпăр çапла. Эсĕ мĕн тата — конституцине пăсатăн? Кану тивĕçлĕхĕпе кирлĕ пек усă курмастăн.

— Кану терĕ-ха! — Борзов шлепкине хывса силлерĕ, йĕпе пальтине йÿле ячĕ.

— Кабинета кĕрер-и?

— Самантлăха анчах. Эпĕ киле те çитмен-ха. Канăн унта! — Борзов йăрхах патне пырса калушĕсене тата çиелти тумтирне хыврĕ, тĕпелелле иртрĕ, анчах секретарь кресли çине мар, сĕтелĕн пĕр енне, пукан çине ларчĕ. — Çакăн пек вăхăтра ухмахсем кăна юсанма çÿреççĕ! Радио тăрăх ялан пĕр сасă: тыр-пул пухас, тыр-пул парас, шăн суха тăвас... Пирĕн облаçа «Правда» виçĕ хутчен юлса пыракансен ретĕнче асăнчĕ.

Мартынов та кресло çине лармарĕ, чÿрече патне кайса тăчĕ. Вăл шакла пуçлă, сарлака кĕлеткеллĕ Борзовран пăртак çÿллĕрех, сенкер куçлă, хĕвелпе пиçнĕ брюнет, унăн чылайранпах хачă тивмен лапсăркка çăра çÿçĕ тăнлавĕсемпе ĕнси çинче ункăн-ункăн кăтраланса тăрать, кĕлетки — типшĕмрех, пĕкĕртерех, сахал кĕрнеклĕ. Çулĕсем тĕлĕшпе вĕсен хушши ытла пысăк мар: Мартынов хĕрĕхе çитеймен, Борзов — пăртак иртнĕ.

— Ху айăплă, — сăмах хушрĕ Мартынов. — Çуркуннех, акасем пĕтсенех каймаллаччĕ сан. Каларăм сана ун чух: путевка ыйт, кай, тÿрлен пăртак, терĕм.

— Аки пĕтет — çум çумласси çитет. Çак конвейертан хăçан та пулсан хăтăлма пулать-ши? Хĕлле каяс — курортăн интересĕ те çулла çеç... Ну юрĕ, каласа пар: ĕçсем мĕнле?

— Хăçан çитрĕн эс? Поезд вун виççĕ те хĕрĕхре пулчĕ.

— Эпĕ вокзалтан тÿрех элеватора кайрăм. Машина пирки шăнкăравласа сире чăрмантармарăм — МТС директорĕн «газикĕ» пулчĕ. Тĕрĕслерĕм, тырă мĕнле кĕнине пĕлтĕм. Начар турттараççĕ, Петр Илларионыч!

— Чăн, лайăхрах кирлĕ те... Çумăрччен графика пĕрре те пăсман.

— Виçĕ колхоз — «Совет влаçĕ», «Хĕрлĕ Октябрь» тата

«Шурăмпуç» — пĕр эрне хушши пĕр шăл тырă паман пулсан ăçтан графика тĕрĕс тытма пултарнă эсир?

— Ытти колхозсем кулленхи заданинчен ирттерсе тултарчĕç. «Совет влаçĕ», «Октябрь» тата «Шурăмпуç» парса татнă.

— Мĕнле парса татнă?

— Пĕтĕмĕшпех татнă, натуроплата-мĕнĕпех.

Борзов Мартынов çине хĕрхӳн те хĕрхенӳллĕн пăхса илчĕ.

— Председательсене те çаплах калатăн-и? «Татнă» тетĕн-и? Эх, Петр Илларионыч! Хăçан вĕренсе çитĕн?! Колхозсен сводки ăçта?

Унтан вăл секретарь вырăнне куçса ларчĕ, хăй çывăхĕнчи ытлашши пек япаласене — лампăна, кĕл сулчине, тĕпне чей юлнă стакана — кăрт-карт тĕксе шутарчĕ. Сĕтел çинче, хулăн листаллă кĕленче айĕнче, цифрăсем çырса тултарнă, графасем çине пайланă хут: колхозсен акакан çĕр талккăшĕ, выльăх-чĕрлĕх хисепĕ, поставка планĕсем. Мартынов ирĕксĕрех Опенкинăн паçăрхи сăмахĕсене аса илчĕ те йăл кулчĕ: «...Пĕр-икĕ сехет канкалĕ те пуçлĕ каллех сăсăрлантарма».

— Куратăп, ахаль мар маларах килтĕм, тĕп-тĕрĕс турăм. — Борзов таса хут листи тытрĕ, кăранташ кăларчĕ, сĕтел кĕленчине пӳрнипе шăлса пăхрĕ. — «Совет влаçĕ». Мĕн чухлĕччĕ вĕсен? Аха... Госпоставка, натуроплата... Аха. Ку вăл çиччĕмĕш группа. Комисси вĕсене тухăçлăх тĕлĕшпе çиччĕмĕш группăна кĕртнĕ. Е, калăпăр, тăххăрмĕш группа парсан?..

— Чи пысăккине-и?

— Чи пысăккине. Капла мĕн чухлĕ тухать? Шутласа пăхăпăр. Тăххăрмĕш группăпа Пуян Демьянран тата пин çурă центнер тырă тухать. «Шурăмпуçĕнчен» — сакăр çĕр патнелле. «Октябрьтен» — каллех çавăн чухлĕ. Куртăн-и, ачам? Акă вăл тырă! Пĕлместĕн вĕсенчен тырра мĕнле кăлармаллине!

Мартынов палăрти-палăртми кулкаласа сĕтел патне пычĕ.

— Эп «ачам» мар, Виктор Семеныч. Ун пек-кун пек фокуссем мана паллă. Анчах çитет çапла аппаланса! Чăн та! Мĕнле сăлтавпа эсĕ вĕсен натуртӳлевне чи пысăк виçепе çĕнĕрен шутласшăн?

— Çĕршыва тырă кирлĕ — ак мĕнле сăлтавпа!

Мартынов пирус чĕртсе ячĕ, ытлашши вĕриленсе каяс-ран хăйне хăй алла илес тесе пĕр самант чĕнмесĕр тăчĕ.

— «Совет влаçĕнче», паллах, ытти колхозсемпе танлаш-

тарсан тырă тухăçлăхĕ аванрах. Çапах тăххăрмĕш группа шайне çитме вĕсен инçе-ха. Пуçтарса кĕрессе вĕсем вăхăтра турĕç — тирпейлĕ, таса, тăкаксăр. Икĕ пусăри кĕрхи туллине пăр çапрĕ, кăна та манас пулмасть. Мĕншĕн апла тăххăрмĕш группа парас вĕсене? Çитменнине — юри суйса? Мĕн калатăр Опенкин колхозниксене?

— Мĕн калас тет — çавна калатăр. Пире тырă кирлĕ. Мĕн, хĕрхенетĕн-им эсĕ ăна? Ватă вăкăр! Чăтать.

— Пĕлетĕп, вăл колхозниксене ўкĕте кĕртме пултарĕ, тырă парĕç вĕсем. Анчах кунта тупсăмĕ çапла çеç пулма пултарать: ку тырра вĕсенчен йĕркесĕр, тĕпсĕр колхозсемшĕн парăм саплама илеççĕ.

Акă райисполком председателĕ Иван Фомич Руденко килсе кĕчĕ, вăл гимнастеркăпа çеç, çара пуçăн, — çаплипех картиш урлă кўршĕри райсовет çуртĕнчен чупса каçнă.

— Аван-и, Виктор Семеныч! Чипер çитнĕ ятпа — салам. Ăнсăртран чўречерен пăхрăм та — курах кайрăм: такам, ытла та палланă шăм-шаклă çын, сирĕн пата кĕрет, Виктор Семеныч мар-и тетĕп. Канса пĕтермесĕр таврăнтăн апла?

— Салам, Фомич! Пĕтермесĕр таврăнтăм.

Руденко пĕрре Борзов çине (салху, çилленнĕ!), тепре Мартынов çине (çăварĕнчи пирусне чăтăмсăррăн кăшлать!) пăхса илчĕ.

— Мĕн, курнă-курман хирĕлтĕр-им тата? Тен, кансĕрлерĕм пуль?

— Çук, — Борзов сĕтел хушшинчен тухса Руденко çине пăхмасăр ун валли пукан тĕртсе пачĕ. — Лар. Ну, кала малалла, Мартынов.

— Çакна çеç калатăп, — Мартынов пирус тĕпне кĕл суланчине пусса сўнтерчĕ, — бюро членĕ тивĕçĕпе усă курса сирĕн сĕнĕвĕре хирĕç сасăлатăп. — Унтан Руденко çине пăхса: — Опенкина тата ыттисене, плана тултарнисене, тăххăрмĕш группа пама шухăшлать, — тесе евитлерĕ.

— Ну-у? — уçăмсăррăн сас пачĕ Руденко. — Кăна шухăшласа пăхас пулать...

— Колхоз лайăх ĕçленĕ-и е вăйăн-шайăн кăна-и, çапах ĕçкунĕшĕн валеçме пур çĕрте те пĕр пек хăвармалла иккен!.. Çĕршыва тырă кирлине эпĕ те манмастăп, Виктор Семеныч, — каларĕ малалла Мартынов. — Плана тултармалла. Анчах ăна тĕрлĕ майпа тултарма пулать. Сăмахран, хăш-пĕр колхозсенче план тултарнă хыççăн, тен, хĕсĕкрех те пулĕ, анчах çынсем ăнланĕç: чăн, хамăр айăплă, сулчă ĕçлерĕмĕр — сахал илтĕмĕр, лайăхрах ĕçлĕпĕр — лайăхрах илĕпĕр, советла тĕрĕслĕх çакăн пек пулмалла та тейĕç.

Пирĕн агитаторсен кун пек чух халăхпа калаçмалла: «Мĕн чухлĕ ĕçлетĕн, çавăн чухлĕ илетĕн» теме лайăхрах пулать вара. Ан тив, юнашар «Совет влаçĕнче» виçĕ хут ытларах илччĕр! Çакăнпа ĕнтĕ политика тăвас пулать!.. Ку пĕр меслет. Тепĕр меслет те пур, анчах ун çинчен... — Мартынов аллине сулчĕ те кабинет тăрăх хутлама пуçларĕ.

— Чăн, Виктор Семеныч, ылтăн çăмарта тăвакан чăхха пусас марччĕ пирĕн, — хутшăнчĕ Руденко та.

Борзов тепĕр хут сĕтел хушшине ларчĕ.

— Юрать. Шутлар эппин, тен, кусене тĕкĕнмесĕр те ытти колхозсенчен мĕн чухлĕ те пулин тырă кăларма пултарăпăр?.. — Вăл пӳрнине колхозсен ятне кăтартакан графа çине тĕллерĕ: — Хăш колхозран пуçлар? Акă «Çутталла». Çапни паяна мĕн чухлĕ вĕсен?

— Нимĕн чухлĕ те çук, — хуравларĕ Мартынов. — Çанталăк пăсăличчен çапнине пĕр турттарса пычĕç. Вырни — капанта. Вырманни те вунă процента яхăнах.

— МТС хур турĕ вĕсене, — хушса хучĕ Руденко. — Комбайнерсем çамрăк, курсантсем. Вĕр çĕнĕ машинăсем ĕçлес вырăнне кунĕ-кунĕпе ахаль лараççĕ.

— Аха. «Çутталлара» тырă çук тейĕпĕр. Поставка тĕлĕшпе...

— Утмăл икĕ процент, — пĕлтерчĕ Руденко.

— «Хĕрлĕ сухаç» мĕнле?

— Çавнашкалах.

— «Пирĕн çул»?

— Вĕсен ĕçĕ чылай начар, — сĕтел патне пычĕ Мартынов. — Вырманни — вăтăр процент, вырнине те капана хывман. — Унтан пăртак тăхтаса тăрсан: — Председатель çук унта, — тесе хушса хучĕ. — Чи юлса пыракан колхоза чи шанчăксăр çынна ятăмăр. Мĕншĕн, айăпне çырлахтарас йĕркепе-и? Промкомбинат ĕçне юхăнтарнăшăн-и?

— Аха... «Иккĕмĕш пилĕкçуллăх»?

— Унта çапнă тырă нумай, — терĕ Руденко. — Анчах хирте выртать, кăшăлта. Типĕтмелле.

— Мĕн мурĕшĕн пуплетпĕр апла тĕрĕслĕх тата политика çинчен? — сĕтеле ал тупанĕпе айккăн çатлаттарчĕ Борзов. — Тырă ăçта? Халех, çак минутра, машинăсем çине тиемелли, элеватора леçмелли тырă?

— Çак минутрах машинăпа тухса каяймăн-ха та... — пуçне чӳрече еннелле сĕлтсе илчĕ Мартынов.

Тулта — çав-çавах, чĕреслетсе çумăр çăвать.

— Чарăнать — тепрер кунтан типет. Анчах тырă ăçта? Пĕрисем плана тултарнă та тасалнă иккен: халĕ район сводки çине сурсассăн та юрать. Теприсем ав халиччен çапай-

ман, мĕн, обком, сирĕн шухăшпа, çав эсир калакан тĕрĕслĕх вырнаçса çитиччен кĕтсе тăрĕ-им? Çак пилĕккунлăхра конкретлă мĕн тума пултарăпăр — çавна калăр мана. Мĕн кăтартăпăр черетлĕ сводкăра? По-ли-тик-сем!..

— Апла политикăсăр ĕçлес пулсан райком секретарĕсем те кирлĕ мар. Плансене пурнăçлама пĕр-пĕр агент пекки тытас та — ĕçлетĕр, — хуравларĕ Мартынов.

— Куратăп эп, — терĕ Борзов, — районта тырă поставкине чарса тăракан тĕп чăрмав — эсĕ, Мартынов юлташ. Ху демобилизациленнĕ, ыттисене те сĕвĕрĕлтеретĕн. «Тултарнă!» Парти организацине куçкĕрет аркататăн.

— Ну, ку ытлашши те, Виктор Семеныч! — пуканĕ çинче хыпаланса илсе ўпкевлĕн каларĕ Руденко.

Мартынов Борзов çине шăтарас пек тинкерсе каялла, пукан хыçĕ çине, тĕренчĕ, вăрăм çўçне тăрмалама пикенчĕ. Унăн пиçĕхнĕ пичĕ шуралса кайрĕ. Анчах калас сăмахне пуçлаймарĕ — Борзов шăнкăрав пачĕ те, кабинета секретарь помощникĕ, шуранка çамрăк каччă, Саша Трубицын кĕчĕ.

— Çитрĕр-им, Виктор Семеныч?!

— Çитрĕм. Салам. Лар, çыр: «Пурне те — МТС директорĕсене, колхоз председателĕсене, колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене... Район тыр-пул пухса кĕртес тата государствăна тырă парса татас енĕпе ĕренкесĕр юлса пыни пĕтĕмĕшпех сиртен, эсир ĕç çине питех те çиелтен, ним шухăшсăр пăхнинчен, государство интересĕсене пуçĕпех маннинчен килет...» Çыртăн-и? «Çапла хушатпăр: халех, çак телефонограммăна алла илсенех, пĕтĕм ответлăха хăвăр çине илсе мĕнпур комбайнсене тата ахаль ĕç хатĕрĕсене хута ярăр». Çыртăн-и? «Çапмалли машинăсем талăкĕпех ĕçлемелле... Тырă турттарас ĕçĕн кулленхи заданине пĕр сăмахсăр тултарса пымалла, çак вăхăтрах, çитес ик-виçĕ кун хушшинче, иртнĕ пилĕккунлăхран юлнă парăма тўлесе татмалла... Мĕнпур авто тата выльăх транспортне тырă турттарас ĕçе куçармалла... Çакăнта каланисене шута илмесен парти тата государство енĕпе йывăр ответ тытатăр...» Алă пуснă — Борзов... тата, — Руденко çине хăяккăн пăхса илчĕ, — Руденко.

Руденко алă сулчĕ:

— Яра пар!..

— Ку хутăн пĕр экземплярне, Трубицын, упра, — терĕ Мартынов. — Тен, хăçан та пулсан пирĕн мĕнпур сочиненисен пуххи пичетленсе тухĕ.

Саша Трубицын, кайма тăнăскер, чарăнса Мартынов çине чăр пăхса илчĕ.

— Кайса пичетле, — хушрĕ Борзов. — Тепĕр сехетрен мĕнпур колхозсене çитернĕ пултăр!

Трубицын кайрĕ.

— Ку «молние» ĕнтĕ чуна лăплантарма çиçтертĕн пулас? — ыйтрĕ Мартынов. — Çапах ахаль ларман, хутсем çырнă, стандартлă телеграммăсем çаптарнă...

— Ху çыр лайăхраххине. Эс — çыру папи, литератор, — суя лăпкăлăхпа хуравларĕ Борзов; унтан Руденко енне çаврăнса темĕн каласшăн пулчĕ, ыйту пачĕ, анчах леш панă ыйтăва ответлемесĕр пуçне Мартынов еннелле сулчĕ.

— Çук, итле эс, Виктор Семеныч, — унăн пĕр сĕнӳ пур.

— Мĕн сĕнет вара вăл?

— Акă мĕн сĕнетĕп, — пуканĕ-мĕнĕпех Борзов патне куçса ларчĕ Мартынов. — Çак çанталăка пăхмасăр вăрмана кайса сайхалăх тата çапă касма пулать-и? Пулать. Аслăк туса ăна улăмпа витме пулать-и? Паллах, кăмăллă мар ĕнтĕ, çуха хыçне шыв анма пултарать, анчах тума пулать. Фронтра вут-çулăм айĕнче кĕперсем хывнă. Пылчăкра ĕçлеме машинăна ӳкĕте кĕртме çук, çынна пулать. Акă мĕн çинчен калаçса татăлар.

— Пĕр ĕç тепĕрне кансĕрлемест, — хуравларĕ Борзов.

— Çук, кансĕрлет! Колхоз председателĕн пуçне тĕрлĕ ăçтиçук чыхса тултарсан вара вăл ĕçлĕ канаша та йышăнми пулать. «Мĕнпур комбайнсене хута ямалла...» Кун пек телефонограммăсем çырни — ахаль сӳпĕлтетни! — тинех капланса тăнă çиллине уçса ячĕ Мартынов. — Апла — купала эппин пурне те пĕр çĕре: акма та тухчăр, шăн сухана та пуçлаччăр.

— Обкомран ун йышши телеграммăсем пулмаççĕ-им? Вĕсем: «Мĕншĕн акмастăр?» — тесе ятлаçнă чух пирĕн часчасах чĕркуççи таран юр.

— Область пысăк. Кунта — юр, унта — ăшă, лере — çумăр, тепĕр çĕрте — уяр. Районта пурте пĕр çĕрте, пурте куç умĕнче. Пĕлетĕн-и, Виктор Семеныч, çĕр ĕçлекенсем пирĕн директивăсенче мĕне тиркеççĕ? Ухмахланнине. Кукăль мĕн çинче ӳснине вĕсем пиртен лайăх пĕлеççĕ.

Борзов нумайччен чĕнмесĕр ларчĕ. Пăртак та пулин ăшăрах сасăпа калаçма хăйне хăй вăйпах, ирĕксĕрлесех лăплантарчĕ вăл.

— Чунтан сĕнетĕп сана, Петр Илларионыч, кай обкома, тăкса пар пурне те вĕсем умне, анчах çакна калама ан ман: унпа пĕрле ĕçлеме пултараймастăп те. Ан тив, куçарччăр сана тепĕр района. Хамах сана пĕрремĕш секретарь вырăнне яма рекомендаци парăп. Обкомра пирĕн çапла

тăваççĕ те. Ытах та пĕр-пĕр çĕрте иккĕмĕш секретарь пĕрремĕшпе çураçуллă пурăнмасть пулсан — ачи маттур, ун хăйĕн пĕрремĕш кĕслене калас килет-çке, — ăна вара тепĕр района пĕрремĕш секретарь туса яраççĕ, ну-ка, кăтарт, тăванăм, ху тĕллĕн ĕçлесе пултар теççĕ... Кăмăлу пулсан паянах кайнă. Тен, хамăрпа кӳршĕллĕ районах куçарĕç. Ăмăртса ĕçлĕпĕр. Ертсе пыр! Эсĕ хăвăн тĕрĕслĕхӳпе — хресченле, эпĕ хамăн чăнлăхпа — пролетарилле...

— Тьфу! — чăтса лараймарĕ Руденко. — Калаçатăр та вара. Пролетарилле, хресченле! Пирĕн чĕлхере ун пек сăмахсем илтĕнмеççĕ те халь. Большевикла ертсе пымалла!

— Урăх района куçма ман шухăшăм çук, — хуравларĕ Мартынов, — кунта эпĕ хăнăхнă ĕнтĕ, колхозсене пĕлетĕп, çынсене паллатăп. Пĕрремĕш кĕслешĕн те çунмастăп. Пĕлместĕн эс мана, Виктор Семенович! Мана иккĕмĕш вырăнта та ĕç çителĕклĕ. Анчах эпĕ Молчалин мар «... хам пуçпала хăймалла мар шухăшламашкăн» теме.

Вара вăл тăчĕ те кепкине тăхăнчĕ.

— Каяр, апат тăвар. Сывлăхлă çын та — сывлăхлă чун. Марья Сергеевна пулчĕ кунта, кĕтет вăл сана, телеграммуна илнĕ... Тăхăр сехете бюро пухăнмалла, эпĕ чĕнтертĕм. Каялла тумастăн пуль?

— Мĕншĕн каялла? — ответлерĕ Борзов. — Канашлас пулать. Пуçлар ĕçлеме. — Çавăнтах вăл помощникне шăнкăравласа колхозсен çумне çирĕплетнĕ пур уполномоченнăйсене те бюро ларăвне чĕнтерме каларĕ.

...Канашлу шавлă иртрĕ. Бюро членĕсен пĕр пайĕ чылай ыйтусемпе Мартынов майлă пулчĕ, тепĕр пайĕ — Борзов майлă. Çапах та тырă парса татнă колхозсене пысăкрах группăна куçарас тĕлĕшпе комиссие сĕнӳ пама бюрора йышăнмарĕç. Тăхтас терĕç — çанталăк мĕн калать тата ытти колхозсем йĕтем ĕçне мĕнле майлаштарĕç.

Киле юхтарса çăвакан çумăр айĕн чылай çĕрле саланчĕç. Мартыновпа Руденко хĕреслĕ урама çитиччен пĕрле пычĕç.

— Ну, хаяр та эс паян! — терĕ Руденко. — Пĕрре те парăнмарăн ăна. Дуэльти пекех хăтлантăр, бокс темелле.

— Тунсăхланă, уйăх курман пĕр-пĕрне, — ответлерĕ Мартынов.

— Борзов çурăлса кайсан та хăйĕнне тăвать-тăватех: мĕнпур шухăшĕ ун халь — хăй таврăннă ятпа çитес пилĕккунлăхра иртнĕ пилĕккунлăхран икĕ хут ирттерсе тырă парасси... Обкомра танлаштарса пăхма сăлтав пултăр: Мартынов çакăн чухлĕ паратчĕ, Борзов — кун чухлĕ!.. Санаторие те

вăл канăçсăр чунпа кайрĕ. Епле-ха капла, шăп ĕçе тухас чух обком ăна юсанма ярать? Мĕн, ку япала Мартынова ытларах шаннине пĕлтермест-и?..

Урлă урама çитсен Руденко сулахая çул тытрĕ, ярса пусмассерен ятлаçса тĕттĕмре шывлă путăксене пакăлчак таран ана-ана кайса калушĕсем тулли пылчăк ăса-ăса хĕсĕк тăкăрлăкпа малалла утрĕ, хашлатса сывласа: «Эккей, пĕрремĕш чин тени пĕрремĕш пуç тенине пĕлтермест иккен», — тесе хăйпе хăй мăкăртатса илчĕ. Мартынов малалла аслă урампах кайрĕ, вăл та шуса ўкесрен сыхланкаласа пусмассерен урине шыв кўлленчĕкĕсене чике-чике кăларса ятлаçса пычĕ. Хваттерне çитичченех пĕр шухăш çаврăнчĕ ун пуçĕнче: «Çакăн пек тавлашса мĕн чухлĕ вăхăт сая яратпăр, вăй çухататпăр. Ĕçеччĕ çак вăя! «Паны дерутся, у хлопцев чубы трещат», — тет халăх...»

Тепĕр кун ирхине, çутăлнă-çуталман, Мартынов ут утланса кая юлса пыракан пĕр пысăк колхоза — «Хĕрлĕ сухаçа» — тухса кайрĕ. Унта вăл икĕ кун пурăнчĕ. Коммунистсене, фронтовиксене пухса калаçрĕ. Фронтовиксемпе калаçнă чух вăл вĕсене вăрçă çулĕсене аса илтерчĕ, нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр пылчăкпа çăрăлнă вăрçă çулĕсем тăрăх çумăр витĕр йывăр пулеметсем çĕклесе утнине, путса ларнă тупăсене лашасемпе кăларма пĕрле кўлĕннине астутарчĕ. Çĕнĕ контора тума хатĕрленĕ кирпĕчпе йывăçа тырă авăнĕсем тата витнĕ йĕтемсем тăвас çĕре яма сĕнчĕ. Пур бригадăсем те хире тухрĕç — хăшĕ наçилккепе улăм çĕклет, хăшĕ — тырă. Капансене çумăртах çапма пуçлас тесе çапмалли машинăсем валли аслăксем тума та пикеннĕччĕ, анчах иккĕмĕш кунне каç пуласпа çумăр чарăнчĕ, çĕрле те çумарĕ. Ирхине хĕвел тухрĕ, улшăннă çил мал енчен вĕре пуçларĕ. Çанталăк нумайлăха майлашăнса кайрĕ.

Тыр-пула пуçтарса кĕресси тата ытти хир ĕçĕсем майĕпен хăйсен еккипе кая пуçларĕç. Çулсем кушрĕç, каллех тин çеç çапнă тырра тиесе вĕçĕ-хĕррисĕр автомашина колоннисем иртме тытăнчĕç. Хайхи маларах каланă пекех пулчĕ: колхозсем Борзов килнĕ пĕрремĕш пилĕккунлăхра унченхи çумăрлă кунсенчен чылай ытларах тырă пачĕç. Район тырă поставки планне, малти районсемпе пĕрле пулмасан та, кая юлмасăр вĕçлерĕ.

* * *

Пĕрре Марья Сергеевна Борзова Мартынова курса:

— Мĕншĕн эс, Петр Илларионыч, пĕрре те пирĕн пата пымастăн? Пыр-ха пĕр-пĕр каç, — терĕ.

— Рехмет, — тав турĕ Мартынов пăртакçă тĕлĕнсе. Борзовсем ăна хăнана чĕнменни чылай пулатчĕ. — Ерçӳллĕ каçсем питĕ те сахал.

— Çук, чăнах та, пыр-ха. Мĕншĕн Виктор Семенычпа пĕрмай çапăçмалла. Калаçса ларăпăр.

Мартынов пыма сăмах пачĕ, анчах хăйĕн сăмахне пурнăçлама васкасах каймарĕ. «Ахăртнех, чейпе хăналанă май çураçтарасшăн пуль пире», — шухăшларĕ вăл.

Часах Борзов вунă кунлăха обкома — райкомсен пĕрремĕш секретарĕсен семинарне тухса кайрĕ. Апла пулсан та Марья Сергеевна Мартынов патне юриех шăнкăравларĕ:

— Паян шăмат кун, Петр Илларионыч, — терĕ вăл, — ыран — канмалли, çавăнпа ĕçе иртерех пăрахсан та юрать. Лару пулмасть-и каçхине? Колхоза каймастăн-и? Апла пулсан хăвăн сăмахна астутарам... Астăватăн? Кил. Кĕтетĕп.

Вăл пынă çĕре Марья Сергеевна ятарласах капăр тумланнă, ăна пăртак, палăри-палăрми писев пек, именӳ сăнĕ çапнă (ахăртнех, ытлашши çине тăрса чĕннипе Мартынов хăйĕн çинчен темĕн шухăшлĕ тесе пуль). Пурçăн блузки çинче — Ленин орденĕ.

— Хули пирĕн çавнашкал, — шакăлтатать вăл буфет патĕнче чашăк-тирĕксене кĕмсĕртеттерсе, — ку вĕçĕнче ачху тусан леш вĕçĕнче «сывлăха!» тени янах каять. Акă ыранах сăмах кайĕ: «Мартынов Борзова патне упăшки çук чухне чей ĕçме çӳрет», — тейĕç. Калĕçин тата! Сурам эпĕ тĕр-тĕр халап çине!

Марья Сергеевна сĕтел çине тирпейленĕ вăхăтра Мартынов пӳлĕмсене кĕре-кĕре çӳрерĕ. Кунта вăл пĕлтĕр, хăй килсенех, пĕр-икĕ хут пулсаччĕ. Ача-пăча пӳлĕмĕнче Борзов амăшĕ мăнукĕсене çывăратать, юмах калать. Пĕчĕккисем вĕсен иккĕ: ултă çулхи ывăл ача тата тăваттăри хĕр ача. Асли, çитĕннĕ Нина, килте çук иккен, ахăртнех, кинора е хĕр тантăшĕсем патĕнче. Залра, пианино патĕнчи кресло çинче, çĕпĕр кушакки, темĕн пысăкăшскер, çывăрать. Пур пӳлĕмсенче те стенасем çинче — кайăк читлĕхĕсем, унта — шăнкăрчсем, шăкăлчисем, пилеш кайăкĕсем. Икĕ анчăк, овчарка тата ирланд сеттерĕ, чĕрнисемпе урайне чакăртаттарса Мартынов патĕнчен шит те юлмаççĕ. Апатланмалли пӳлĕмре пĕр кĕтесре çемçе мăкран çавăрнă йăвара чĕрĕп пурăнать. Борзов тĕрлĕ чĕрчунсемпе кайăксене тарават пулмалла.

— Ку орден сан, Марья Сергеевна, мĕн тивĕçшĕн? — ыйтрĕ Мартынов диван çине ларса. — Уяв кунĕсенче сана час-часах орденпа куратăп, тахçанах ыйтасшăнччĕ. Партизанта пулнă-и?

— Çук, партизанта пулман. Ку вăл — вăрçăччěнхи парнех... — Марья Сергеевна ассăн сывласа илчě. — Тракторпа ěçленěшěн тивěçлě пулсаччě.

— Чăнах-и? Эсě тракторпа та ěçленě-и вара?

— Эх, çынсем ěнтě халь манăн хушамат мěнлине те маннă!

— Борзова?

— Çук, Борзова мар. Ман хěр чухнехи хушамат — Громова.

— Громова?.. Акă мěн! Каçар, пěлмен. Ăçтан пěлес ěлěкхи хушаматна?.. Хăш Громова? Ангелинăпа ăмăртса ěçленě Маша Громова мар-и? «Правдăра» сирěн портретсем юнашар тухнăччě. Вăл эсěччě-и вара?

— Эпě... Маша Громова, Ростов облаçěнчен.

— Астăватăп — Ростов облаçěнчен.

— Дон çинчи казак хěрě... Борзов та унта, пирěн районта, комсомол райкомěн секретарě пулса ěçлерě. Вăтăр саккăрмěш çулта паллашрăмăр.

Эп унăн иккěмěшě, пěрремěш арăмě вилнě. Нина — малтанхинчен. Ну, ларăр сěтел хушшине... Эсир хăвăр ăçтан пулатăр, Петр Илларионыч? Ěлěк мěнле ěçпе пурăннă?

— Манăн биографинче хисепе тивěçли нимěн те çук. Пиçмен писатель, — нимěн пăшăрханмасăр, савăнăçлă пекех, калама пуçларě Мартынов. — Вунă-вун ик çул каялла эпě асса-тěссе пěр очерк пекки çыртăм, ăна «Комсомольская правда» хаçатра пичетлесе кăларчěç. Çак кунтанпа эпě литамак текен чирпе чирлерěм — литература амакě... Романсем çырса пěр-икě центнер хут пěтертěм, анчах тулăкě пулмарě. Хаçат ěçне куçрăм. Спецкор пулса нумай çýресе куртăм. Кунта киличчен юлашки çул Н. облаçěнче район хаçачěн редакторě пултăм. Унта та çырма пăрахман. Ывăл ача пěлет, — кашни почтăпах тěрлě редакцирен ответ кěтеттěм, — чупса пыратчě вăл вара: «Атте, часрах киле кай, унта сан валли пысăк çыру пур!» — тетчě. «Эх, — калаттăм хам ăшра, — савăнтармарăн, ывăлăм! Пěчěкки пулсан авантарахчě. Пысăк çыру — каялла янă ал çырăвě». Тавтапуç пěр критика, вăл тýррине тýрех: «Юлташ, романсем çырасси сирěн ěç мар пулас. Пурнăçра хăвăр валли урăх тěллев суйласа илěр», — терě. Ак эп урăх ěç суйласа илтěм. Тěллевě вăл пирěн пурин те пěрех. Хам тěллěн мар суйларăм, парти ěçне куçма сěнý пачěç те — килěшрěм.

Мартынов уçă кăмăлпа кулса ячě.

— Нумай критиклерěм, нумай хиртěм райком секретарěсене. Халь курăпăр: хамăн мěнле пулě!..

— Çынна çеç кăтартмастăп, Петр Илларионыч, —

хутшăнчĕ Марья Сергеевна, — час-часах ўкĕнетĕп, хама чи усал сăмахсемпе вăрçатăп: мĕншĕн вăл ĕçе пăрахрăм, мĕншĕн колхозран кайрăм тетĕп. Эпĕ Паша Ангелинăпа халĕ те ăмăртнă пулăттăм! Паллă мар, кам çинчен нумайрах çырĕччĕç!.. Борзова кайсан тракторпа пĕр çул çеç ĕçлерĕм — пăрахтарчĕ. Бригадир пирки кўлешетчĕ. Нарастаран кўлешнĕ. Йăваш та тăнăç кăмăллăччĕ пирĕн бригадир, унпа сĕт-турăх турттарма та юратчĕ темелле. Ачи чăнах та илемлĕччĕ, пăхаттир, каска пек хул-çурăмлă, хĕрсем куç илместчĕç ун çинчен, анчах вăл яхăнне те яман, — директор ăна ку тĕлĕшпе хĕрсен бригадине янă чух лайăх хытарнă. Директор хушамачĕ Палачевчĕ, эпир унран хăйĕнчен çеç мар, хушаматĕнчен те хăранă... Пĕрре хиртен эпĕ киле çутăлас умĕн тин таврăнтăм, — мотоциклпа çўреттĕм ун чух. Çитнĕ-çитмен допрос: «Кампа çўрерĕн, кампа çĕр иртертĕн? Сан смена каçах улшăнать-çке...»

— «Натикпа» çўрерĕм, — тетĕп. — Юлташ хĕр чирлесе ўкнĕ, уншăн ĕçлерĕм». Шанмасть. Тепĕр ир ятарласа вăл МТСа çитнĕ, хĕр юлташ иртнĕ каç ĕçлени-ĕçлеменнине тĕрĕслене... Унтан çурт илтĕмĕр, хуçалăх тĕвĕленчĕ, ăна ĕçрен таврăнсан канăçлăх, ачашлăх кирлĕ пула пуçларĕ. Çапла, Маша Громовăн чапĕ вăраха пымарĕ. Кунта куçсан малалла та килте ларнипе чунăм çураçас çуккине кура ĕçшĕн тунсăхлама тапратрăм. Вара çак конторăна директор туса ячĕç. Тупăннă пахчаçă! Вăрлăхсем пирки эп нимĕн те тĕшмĕртместĕп. Эпĕ килте, анне патĕнче, купăста шăварса курман. Ураланнă-ураланман, хĕр ача чухнех, машина çине утланнă, техникăран пуçне урăх нимĕн те пĕлмен. Ну, иртнĕ кунăн çути çук, пулнă — иртсе кайнă. Халь ĕнтĕ писев вырăнне автолпа сĕрĕнме каярах юлтăм пулас, — кулса хушса хучĕ Марья Сергеевна, — пит-куç вараланчăк пулсан упăшка пăхмĕ.

Унтан вăл сĕтел çинелле йăл-ял пăхса илчĕ.

— Мĕн çитмест-ха тата ман кунта?.. Çăкăр хуман, эккей! Чей те пĕçермен. Кил хуçи темерĕн!.. — Вара кухньăна тепĕр хут кĕрсе тухса: — Пўлтĕм эп сан сăмахна, каçар, ху çинчен каласа пĕтереймерĕн, — терĕ.

— Манăн каламалли те питех çук. Хаçатран кунта ячĕç. Разверсткăпа. Пирĕн область малта пыратчĕ. Мĕн чухлĕ çын пачĕç çавăн чух пирĕн облаçа — астумастăп. Эп ĕçленĕ районтан икĕ çынна мана тата тепĕр йĕкĕте, райком инструкторне илчĕç. Мĕне пула лекрĕм кунта — пĕлместĕп. Пĕр юлташ сывпуллашнă чух çапла каларĕ: «Шел санпа уйрăлма, анчах нимĕн тума та çук — чи лайăх кадрсене кўршĕри юлса пыракан область валли суйласа яма хушнă», — терĕ.

Урăхла калакансем те пулчĕç: «Хăтăласшăн санран, Мартынов, — ытла та хытă критиклет хаçату, ху та конференцисенче никама та май шăлма пĕлместĕн», — терĕç. Кунта килнĕшĕн, пĕтĕмĕшпе илсен, ýкĕнместĕп. Пур çĕрте те пурнăç, пур çĕрте те çынсем...

— Йывăр пуль сана Борзовпа? — ыйтрĕ Марья Сергеевна.

— Йывăр...

Марья Сергеевна сĕтел çине чавсаланса Мартынова хирĕç ларчĕ.

— Сана эпĕ мĕншĕн чĕннине пĕлетĕн-и? — Унăн чĕкеç шатриллĕ ырă сăн-пичĕ хавасланчĕ, куç айĕнчи пĕркеленчĕк йĕрĕсем куларах ялтраса тăратчĕç, халĕ вăл улшăнса салхуланчĕ. — Хай райкомра пуçланă калаçава çĕнетес тетĕп... Çырт, Петр Илларионович, — вăл чăкăт турилккине, салат чашăкне тата çăкăр ывăсне хăна патнерех тĕртрĕ. — Сана мĕнлине тултарас? Эпĕ иçĕм çырлиллĕ Дон çинчен, пирĕн типпине ĕçерех параççĕ.

— Мана пурпĕрех. Хăвăн кăмăлна пăх.

Марья Сергеевна икĕ бокал шур эрех тултарчĕ.

— Анлантарса пар, тархасшăн, мĕн мурĕ пур сирĕн Виктор Семенычпа иксĕр хушăрта?

Мартынов çийĕнчен уçса каламарĕ.

— Пысăк калаçу ку, Марья Сергеевна... Анчах пленумсенче, партактив пухăвĕсенче эсĕ ху та яланах пулатăнçке...

— Вăл мана çапла калать: «Мартынов влаçшăн çапăçать, организацие хăй май çавăрасшăн, мана кунтан хĕссе кăларасшăн», — тет.

— Эс ĕненетĕн-и çакна?

— Çук, ĕненместĕп.

— Ахалех ĕненместĕн, — куç хýрипе кулчĕ Мартынов. — Чăн, парти ĕçĕ унăн ĕçĕ мар тесе шутлатăп эп. Çакна обкомра та ĕнентерме тăрăшăп.

— Акă мĕн...

— Ман пирки влаçшăн, авторитетшăн çапăçать тени — пустуй сăмах. Чăн, кунта пĕрремĕш секретарь вырăнне, тен, урăх юлташ кирлĕ? Мĕскершĕн ман унпа та иккĕмĕшех пулса ĕçлес мар? Питĕ те ĕçлесчĕ чăн-чăн этемпе, вĕренесчĕ унран нумайрах. Борзовран тесен — вĕренмелли нимĕн те çук. Кăмăлна йывăр ан ил, Марья Сергеевна...

Мартынов кăштах эрех тутанчĕ.

— Вăтăр саккăрмĕш çулта пĕрлешнĕ тетĕн?

— Паллашнă. Пĕрлешрĕмĕр тепĕр çултан. Вун иккĕмĕш çул пĕрле пурăнатпăр.

— Хăçан куçнă эсир кунта Дон çинчен?

— Вăл вăрçа çак енче ирттерчĕ. Полк командирĕн политзаместителĕ пулсаччĕ. Облаçе тăшмантан тасатсан ăна кунтах хăварчĕç. Кунта эпир унпа виççĕмĕш района çитрĕмĕр ĕнтĕ. Ялан çавăн пек районсем: апла тесен — апла мар, капла тесен — капла мар. Пĕрне те мала кăларса пулмарĕ.

— Ахăртнех, ытти районсенче те ун уринче çав тăллах — юлса пыракан колхозсен тăлли пулнă пуль? Ун пек тăлăпа инçех каяймăн... Кала чăннипе, Марья Сергеевна, мĕн шухăш тытнă-ха капла эс? Пире çураçтарасшăн мар-и? Çураçма — вăрçман эпир, пасар варринче тытăçман.

— Çук, куратăп, сире çураçтарма пулмасть. Ман хамăн ăнланасчĕ: мĕскер çинчен пырать сирĕн тав?

— Мĕн çинчен?.. Эхер те эс ĕлĕкхи Маша Громова пулман пулсан, тен, калас сăмахăма сана каламан та пулăттăм. Анчах та эс ял пурнăçне сĕт сутакан майрасем урлă пĕлсе тăракан хула пики мар. Ху та — колхозран.

— Охо! — кулса илчĕ Марья Сергеевна. — Тупнă пике! Мĕн чухлĕ каланă эп Виктор Семеныча: ларт мана, тархасшăн, тракторсем ремонт пахалăхне тĕрĕслекен комиссине тенĕ. Эп тĕрĕслесе йышăннă трактор çу каçиччен пин гектар сухаламалла!

— Ĕç — эсĕ машинăсене тата ял хуçалăхне лайăх пĕлнинче кăна мар, эсĕ вĕсемпе тăванлă та çывăх пулнинче. Акă мĕн хаклă!

— Ман пĕтĕм хурăнташ колхозра. Анне, асанне, икĕ шăллăм, икĕ йăмăк... Хальчченех хамăр район колхозникĕсем ман пата çыру çыраççĕ, мĕнпур савăнăç-хурлăхне пĕлтерсе тăраççĕ.

— Питех майлă мар капла, — чылай пысăк пауза хыççăн каларĕ Мартынов, — Борзов çинчен хăйсĕрех сăмахлатпăр. Анчах эп ăна куçкĕрет те çакнах каламалла. Каланă та... Ытах та санăн çак каç пирки отчет тытмалла пулсан манăн сăмахсене пĕр пытармасăр йĕркеллĕн каласа пар... сана Борзовпа кун чухлĕ пурăнса, унăн ăсне пĕлсе хăçан та пулсан çакăн пек шухăш пуçна килмен-и: ăнланать-и вăл хăй мĕскер тунине? Акă вăл суйхăнать, ăшталанать, шăн суха тутарать, тырă леçтерет, тĕрлĕрен плансене тултарма тăрăшать, — чĕререн тăвать-и вăл çакна? Ăнланать-и вăл çĕршыва тырă кирлине, питĕ те нумай кирлине? Ăнланать-и вăл этем пĕр кунпа анчах пурăнманнине, тырă тени ăна килес çул та çаплах кирлине, колхозра шăн суха тумасан çитес çуркунне халăха йывăр килме пултарнине? Ăнланать-и вăл пирĕн тĕрлĕ сводкăсем тата цифрăсем

хыçĕнче çынсен пурнăçĕ мĕнешкел пулнине — лайăх-и, усал-и? Тен, вăл хăй çинчен кăна шухăшлать пуль? Кăна тултармасан, çакна кая хăварсан обком умĕнче район та, пĕрремĕш секретарь те ятсăр юлать, служба репутацийĕ паталлă пулать. Тен, çакна анчах ăнланать пуль вăл?

— Хăрушă япаласем çинчен калатăн эс, Петр Илларионович, — терĕ шухăша кайнă Марья Сергеевна.

— Ху чĕртрĕн ку калаçăва, ху итле... Мĕскер пулса пырать-ха пирĕн? Мĕншĕн тавлашатпăр? Ман шухăшпа, эпир чи кирли çинчен тавлашатпăр. Мĕншĕн пирĕн район вăтам шутра? Мĕн, пур колхозсем те пирĕн вăтам-и? Апла пулсан чăтма пулĕччĕ! Çук çав. Пур пирĕн питĕ пуян та çирĕп колхозсем, пур начаррисем те. Çакă икĕ айккинчи икке пĕр çĕре илсе эпир вăтам шут тăватпăр. Ман шутпа, çакăн пек пĕртанмарлăх, ула-чăлалăх ĕлĕк те пулман. Паллах, ялсеренех батраксем вăтамсем пулнă, тĕрли — тĕрлĕ пурăннă, анчах пĕр вулăсрах тăракан тĕрлĕ ялсенче кун пек уйрăмлăх пулма пултрайман: пĕр колхозра виçĕ миллионлă тухăç, тепринче, кӳршĕрех, вунă хут сахал — виç çĕр пин. Çĕр хисепĕ те, пахалăхĕ те пĕр, çанталăк пĕр, пĕр хĕвел çутатать, пĕр МТС машинăсем парать — çапах çавнашкал уйрăмлăх! Хăçан эпир тĕп сăлтавсем патне çитĕпĕр, вара çак пĕртанмарлăха пĕтерĕпĕр? Вăхăт сахал мар иртрĕ, пирĕн колхозсем организациленни чылай пулать. Вăрçă пулчĕ, оккупаци, тустару, анчах вăрçă иртни те пайтах ĕнтĕ. Эпир «юлса пыракан колхоз» тенине Виктор Семеныч юратмасть, «кая юлнă колхоз!» тесе тӳрлетет. Кунпа вăл çакна пĕлтересшĕн: юласси — ăша кайнă чир мар, вăхăтлăх явлени: паян — юлнă, ыран — хуса çитет тесшĕн. Эпир формулировкăна çавăн пек тӳрлетнипе — хĕрĕх виççĕмĕш çултанпа «кая юлнă» колхозри çынсене кăштах çăмăлтарах пулĕ-и вара?

Мĕнле çĕклетпĕр-ха эпир юлса пыракан колхозсене? Акă мĕнле — аркине тататпăр, çаннине саплатпăр. Иртнĕ çул пилĕк колхоз тырри хĕле кĕрсен те капанта ларчĕ, вĕсемшĕн «Совет влаçĕ», «Ĕçчен», «Çĕнтерӳ» колхозсем поставка хыврĕç — «кивçенле» те, «килес çул шучĕпе» те. Тахçан ĕлĕк çакăн пек япалана «тăм пуçла хăтланни» тетчĕç. Кун пек йĕрке малта пыракан колхозсене каялла чышать. Чи лайăх çынсен алли лаш усăнать: мĕн капла — яланах пирĕн çав кахалсемшĕн ĕçлемелле-и теççĕ. Апла мар, ан тив, юлса пыракан колхозсенче тивĕçлине пĕтĕмĕшпех туянччăр. Начар ĕçлерĕр? Апла пулсан сахал илетĕр. Кӳршĕри «Совет влаçĕнче» вара ĕçкунĕ пуçне пилĕкшер килограмм памалла!.. Ан тив, этемсем хăйсен айăпне хăйсем туйса илччĕр. Анчах пирĕн те хамăр йăнăшсене, айăп-чĕрĕпе

ăнланса илмелле. Пирĕн ун пек колхозсем валли хăçан та пулсан чăн-чăн руководительсем тупса памалла-çке! Пур ĕç те председательтен килет! Колхозра чăн-чăн ĕç-пуç çынни пулмасан нимĕнле килен-каян та, нимĕнле васкавлă уполномоченнăй та йĕрке кӳртеймест! Районти вăтăр пин çын çинчен председательлĕх вăтăр лайăх çын тупаймастпăр-и вара?.. Тĕлĕнтермĕш пулса тухать, Марья Сергеевна, — Мартынов сасартăк кулса ярса пукан хыçĕ çине сĕвенчĕ, ахаль те арпашнă çӳçне тата та тăрмалама пуçларĕ. — Кирек те хăш колхозра та, кирек те мĕнле ĕçпе те — пирĕн уполномоченнăйсем. Капла тума пирĕн çын çителĕклĕ. Уйăхшар пурăнаççĕ вĕсем, çу каçаççĕ колхозра. Ĕç райцентрта вĕсемсĕрех хăйĕн юхăмĕпе шăвать, контора çырать. Эхер те эпир çынна уполномоченнăй туса ун çине шанчăк хуратпăр пулсан, ĕçе майлаштарас тĕлĕшпе ăна председательтен çӳлерех картатпăр пулсан хăварас мар-и ăна колхозрах? Юлтăр яланлăха. Телее, унăн контори те унсăр аптрамасть, хăй чухнехи пекех — çырать те çырать... Сăмах май каласан, кăмпа пек ĕрченĕ çав пирĕн конторăсем! «Заготйĕтĕн», унпа юнашарах «Кантăртрест». Юрамĕ-ши вĕсене пĕр сӳс кантрапа çыхса пĕрлештерме?.. Çавă çав, ялсем тăрăх гастрольте çӳреме пирĕн çын çитет, яланлăха ĕçлеме çын тупаймастпăр. Хăш чухне тата пĕр-пĕр çилхăван жулика председатель пулма колхозсене сĕне-сĕне паратпăр. Ун пек çынсен халăх хуçалăхĕ патĕнче шăрши те пулмалла мар!

— Борзов, ахăртнех, кадрсене чухласах çитеймен пуль?

— Çакăнтан кирлĕ те пуçлама! Кун çутинче хăйă çутар та лайăх çынсене шырар! Унсăрăн путса ансах каятпăр. Колхозсенче хăйсенче те шырар, унта та юрăхлă çынсем çук мар. Аслă тата вăтам пĕлӳллĕ специалистсене председатель туса ямалла текен кăтартăва манмасăр, пирĕн тата выдвижени йĕркипе çынсем тупма тăрăшмалла.

Иртнĕ хĕлле колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем ирттернĕ чух эпĕ Борзова пĕр мыскаралла япала çинчен каласа патăм, — тет малалла Мартынов. — Ку мыскара Н. облаçĕнче пĕр районта пулчĕ. Эпĕ область хаçатĕнче ĕçленĕ май çав районта час-часах пулкалаттăм. Пурччĕ унта пĕр чи кая юлнă колхоз — «Акаçă». Аптратчĕç, нимĕн тума пĕлместчĕç çав колхозра. Сахалтан вунă председатель улшăннă унта, анчах пĕри те ăнтарайман. Дисциплина çук, çынсем ĕçе тухмаççĕ, пурте пасара чупаççĕ, тырă тухăçлăхĕ начар, ĕçкунĕ çине çур пус та тухмасть. Колхозри пĕтĕм ирĕк — карма çăвар рвачсен аллинче. Председатель вырăнне çĕнĕ çын килсенех кăшăлах сăрса илеççĕ ăна — е ĕçтерсе суптараççĕ, е пĕр-пĕр жуликла махинацине явăçтараççĕ,

е кулуя кăлараççĕ, — çӳрет вара вăл, шеремет, ĕçрен тарса, çынтан пытанса. Аçта кайнă председатель? Килте те, правлениннче те çук. Арпалăхра çывăрать иккен, шанчăкне çухатнăскер тĕнче çине пĕтĕмпех ал сулнă.

Пĕрре çак «Акаçă» колхоза черетлĕ уполномоченнăй килет, — унăн отчетпа суйлав пухăвĕ ирттермелле. Райком секретарĕ ăна çапла каласа янă: «Пĕлместĕп, кама памалла вĕсене? Хама-и, райисполком пуçлăхне-и? Эпир анчах пулман ĕнтĕ вăл колхозра. Пăхкалăр, тен, вырăнтах йĕркеллĕ çын тупма пулĕ?» — тенĕ.

Пуху яланхи йăлапах пынă, правлени отчетне итленĕ, председателе кăларнă, унтан уполномоченнăйран: «Аçта сирĕн лартса килни? Камшăн сасăламалла пирĕн?» — тесе ыйтнă. Уполномоченнăй çапла хуравлать: «Урăхран сирĕн валли кӳнĕ председатель пулмасть; хăвăрăн колхоз, хăвăрăн пурнăç тумалла, хăвăр шухăшлăр, хăвăр тупăр», — тет. — «Пирĕн ун пек çын çук!» — тесе кăшкăраççĕ колхозниксем. Сасартăк çакăнта такам сас парать: «Мĕнле — çын çук? Авă Куршук Çтаппанĕ. Мĕнрен председатель мар?!» Кулă, ахăлтату. «Куршук Çтапанне! — ахăрашаççĕ çут çăварсем. — Çтаппан, тăр, халăх куртăр!» Анчах кулакансен хушшинче кулманнисем те нумай. Чылайăшĕ чăн-чăнах Степан Горшкова председатель пулма сĕнеççĕ.

Степан тĕпелте урлă сак çинче ларать, уринче çĕтĕк пушмак, пĕр йĕм пĕççи чĕркуççи таран татăк, пуçĕнче милици карттусĕ — тахçан хулана кайса вăл милициннче пурăннă пулнă, унтан каллех колхоза таврăннă. Кутăруçăн вăл трактор бригадинче прицепщик пулса ĕçлет, аван ĕçлет, ĕçкунĕ нумай, анчах колхозра çав ĕçкунĕсемшĕн илмелли нимĕн те çук. Кил-йышĕ пысăк: çичĕ ача тата вĕсен сыв мар амăшĕ.

«Куршук Çтаппанне!» — кăшкăраççĕ каллех. «Куршук-и, чӳлмек-и — пире пурпĕрех!..» Уполномоченнăй пуху ирттериччен çак колхозра икĕ кун пурăннă иккен, чылай килте пулнă, Горшков çинчен те çынсемпе сахал мар каласнă. Уполномоченнăй табельсенчен пуçланă. Курать: Степанăн ĕçкунĕ, ыттисеннипе танлаштарсан, икĕ хут нумайрах. Мĕнле этем? Никам та Горшков çинчен усаллине каламасть: чăн ĕнтĕ, хăтлă çын мар, çĕтĕк йĕмпе çӳрет теççĕ. Çавă çеç. Тен, унăн ялан ĕçре пулнипе пасара тухма та вăхăчĕ пулман пуль?!. Кулакана кулă, анчах пыра киле пухури ĕç сасăласси патнех çитсе перĕнет. Горшков сăмах ыйтать, ура çине тăрать: «Юлташсем, — тет вăл, — ĕç татиччен лайăхрах шухăшласа пăхăр. Мана шанса хапăл тунăшăн тавтапуç сире, анчах халь кая юлман-ха — тата та шухăшлăр.

Кайран ўкёнмелле ан пултăр. Тен, хăшне-пёрне хёсёк те килё, начар пулё». Ларчё. Шăл йёренёсем çаплах чарăнмаççё: «Начар пулас çук! Кунтан начар ăçтан пултăр! — теççё. — Яра пар! Пуçла сасăлама!..» Сасăлаççё. Çапла колхоз председателё Степан Горшков пулса тăрать.

Тепёр кун Горшков правление ёçсене йышăнма пырать. Тумланасса та çаплах тумланнă: çётёк калушпах, йёмне анчах пăртак кив кирёкпе юсакаланă. Умёнхи председатель ёçе хăй мёнле илнё, çавăн пекех питё хăвăрт пама шутланă: «Ак сана пичет, ак пичет çаптаркки — лар, çаптар». Степан ăна хирёç: «Çук, тёплё ревизисёр йышăнмастăп», — тет. «Мён? Пухуччен виçё кун малтан пулни ревизи марим тата?» — ответлеççё ăна. — «Вăрă вăрра тёрёсленё», — тет Степан. Вара, чăнах та, районтан ревизи килет. Икё эрне чакаланать Степан, кёлетсенчи тырра пётёмёшпех виçтерет, бухгалтеринчи кашни хута хăй тёрёслесе тухать, виçё çул каярах пулнă ёçсене çёклет, пёр сăмахпа, колхоза çакăн пек йышăннă хыççăн ёлёкхи правлени тата ревкомисси членёсене, пёр пилёк çынна, августăн 7-мёшёнче кăларнă саккун тăрăх хупса лартаççё. Унтан Степан бригадирсене пуçтарса çакăн пек сăмах калать: «Çитет сире, йытăсене вăрçтарса, кил тăрăх çўреме, ёçе йыхăрма. Кам та кам кăçал та çăкăрсăр юласшăн мар, çав хăех, чёнмесёрех, ёçе тухать». Ял каласать. Килсерен пёр сăмах: çёнё председатель ёçе йышăнни, жуликсене тустарни — çавăн çинчен çеç сăмахлаççё. Колхоз шухăша каять: «Ахăртнех, кун пекех пулсан ёç урăхла çаврăнмалла, вара ёçкунё пуçне те мён чухлё те пулин тухё. Килте ларса йăнăш тăвас мар», — теççё хайхискерсем. Вара çакăн хыççăн колхозниксем ёçе ăмăртмалла туха пуçларёç.

Çавăнтанпа колхоз çёкленнёçемён çёкленчё. Аван сухалаççё, вăхăтра акаççё, тирпейлё пуçтараççё, — тырă, темён чухлё тырă! Пурнăçра сыпăнасси паха — вара каять. Икё çул та иртмерё, «Акаçă» районти малта пыракан колхозсен ретне кёчё. Ят илнё Горшкова халь ёнтё тепёр юлса пыракан колхоза юсама куçарас терёç, анчах колхозниксем — шарт та март, яхăнне те ямарёç! «Памастпăр Степан Егорыча!» — теççё. Мускава çити чупрёç те памарёç.

— Ку вара пирён колхозра пулнă ёç майлах, — терё Марья Сергеевна. — Пурччё пирён лайăх председатель — района илчёç, райкомри ял хуçалăх пайён пуçлăхё турёç. Ун чух, эсир калашле, çавăн пек йăла пурччё: çын председательте лайăх хăйне пăртак палăртсанах ăна кăп-кап района илсе каятчёç. Тепёр суйлавра çёнёрен килнё председатель «шăвăç чуманпа» ларса кайрё — суйламарёç, мёншён

тесен колхоза юхăнтарма пуçланăччĕ; çавăнтах киввине, Иван Романович Шульгана, аса илтĕмĕр, ăна суйласси çинчен йышăну турăмăр. Вăл çав вăхăтра районта ним шухăшсăр ĕçлет, эпир ăна никамран ыйтмасăр суйласа хутăмăр. Çак ĕçпе обкома та çитрĕмĕр. Тăрăшни сая каймарĕ: Иван Романович каялла таврăнчĕ.

— Çавă çав! Колхозран тесен эпир тивĕçлĕ çынсене хăйпăтма пĕлетпĕр, пирĕн учрежденисем хăйсен тивлечĕпе çеç пурăнаççĕ тейĕн. Хăйсемшĕн мар — колхозсемшĕн. Тӳррине тӳрех калас, ан тив, пирĕн райкомăн кашни пайĕнчех профессор е экономика наукин докторĕ лартăр, пурпĕрех, — колхозсенче çав-çавах çăмăл тӳпеттей е ӳсĕр тăрпалтай хуçара юлсан, — район ĕçĕ мала каяс çук.

— Пĕрре эп Горшковпа юри курса калаçрăм, — малалла сăмахлать Мартынов, — мана вăл хăйĕн иртнĕ пурнăçĕ çинчен, колхоз ĕçĕсем çинчен нумай каларĕ: «Çав аскăн вăрăсем колхоза тустарине кура чĕрем суранланса çитрĕ ман, — терĕ. — Колхозсем организациленĕ çулсенче эпĕ те активистра çӳренĕ, кулаксене янă çĕрте ĕçленĕ, пĕрре мана чӳречe витĕр пăшалпа печĕç, çуртăма вут тĕртсе çунтарчĕç, çапах çак тертсем усса тивес вырăнне эпĕ, колхозра пурăнса çарран юлтăм, — терĕ малалла Горшков. — Мĕнпур усал-тĕсел кула пуçларĕ: «Акă вăл, Степка, хайхи çăтмах, — эс ăна пире халаллаттăн, — ху та ав Адам пек тăрса юлтăн!» — теççĕ. Хăйсемех çиеççĕ колхоза, хăйсемех йĕкĕлтесе кулаççĕ. «Эх, — шухăшлаттăм ун чух хам ăшăмра, — влаça илĕттĕм алла! Кăтартăттăм сире!..»

Мĕншĕн каланă тетĕн пуль эп çакăн çинчен Виктор Семеныча? Ахаль мар. Пирĕн те çавăн пек «суранланса çитнĕ чĕреллĕ» çынсем пур. Вĕсене шырамалла. Кам та кам колхоз председательне партирен кăларасран хăраса çеç е район центрĕнче ун валли урăхран лайăх вырăн çуккине курса çеç каять, çавăн пек председательсен хакĕ — çур пус! Ну, вара мĕн? Каласа патăм ăна — вăл хăнк та тумарĕ. Тепĕр кунах «Пирĕн çул» колхоза тухса кайрĕ. Унта вăл отчетпа суйлав пухăвĕ туса ирттернĕ, путсĕр Каменевшăн виçĕ хут алă йăттарнă, аран-аран ăна председателе чиксе хăварнă. Халь çав Каменевăн ĕçĕ судра — колхоз пурлăхне салатнăшăн, выльăх-чĕрлĕхе пĕтернĕшĕн.

Эпир Каменев çинчен ун кандидатурине бюрора сӳтсе явнă чух пĕтĕмпех пĕлмен. Пире ун çинчен çакă çеç паллă пулнă: промкомбинатра ĕçленĕ чух — ăнтарайман, вара çу заводĕнче ĕçленĕ, унтан ăна самоснабжени тунишĕн кăларнă. Мĕн каласçрĕç кун пирки юлташсем? «Иртнĕ ĕç, уншăн вăл ответ тытнă, малашне астăвĕ», — терĕç. Анчах

Виктор Семеныч ирттернĕ колхоз пухăвĕнче вăл кам иккенни йăлтах палăрнă, темĕн чухлĕ çын ăна хирĕç тухатуха калаçнă, çавăнпа та Борзовăн ун пирки çине тăмалла пулман, пуху умĕнче хăй йăнăшĕшĕн каçару ыйтса тепĕр çын çинчен шутламалла пулнă. Каменев çав колхозпа кӳршĕллĕ ялтан иккен, унта ăна пĕлмен çын та çук. Акă мĕн калаçнă ун çинчен пухура: «Трибуна çинче — шăпчăк, ĕçре — шăрчăк». Партизан медальне те ултавпа илнĕ. Урăх районта хурăнташĕсем патĕнче пурăннă, чике тăршшĕ сухал ӳстерсе янă — мĕнпур геройлăхĕ те ун çав анчах пулнă. Тата вăл эвакуациленĕ выльăхпа услам тунă. Çаксене илтсе те Борзов тĕрĕслесси çинчен шухăшламан та, вăл хăйĕн кутăннех пенĕ: «Бюро йышăнăвĕ пур, ăна пурнăçлас пулать. Райком тивĕçсĕр çынсене колхозсене ямасть», — тенĕ. Вара пухăва вăл муритлесе парăнтарать. Кам та кам пирĕн ĕçе тĕрĕс маррине курса тӳрлетме пăхать, çавă, Борзов шухăшĕпе, райком авторитетне тапăнать...

— Тупрăм, тупрăм! — çак сăмах çинче Мартынов сасартăк çуталса кайса пӳлĕм тăрăх хутлама пуçларĕ. — Ялан мана пĕр ыйту канăç памастчĕ: мĕншĕн партактив хушшинче колхозсене ĕçлеме каяс текенсем сахал-ха теттĕм. Пурнăç енчен шухăшласа пăхсан çапла тухать: «Кун пек пĕрĕн-кайăн уполномоченнăй пулса учрежденипе командировкăсен хушшинче хутлашса супиччен ярăр мана колхоз председательне! Лайăхрах пулать!» — темелле. Шалу та пысăк — урăх ĕçрен председателе куçарнисен тивĕçĕпе халĕ ятарласа ӳстерсе тӳлеççĕ. Шултра колхозра ăнăçлă ĕçлекен председатель илме пултарнă чухлĕ райком секретарĕ те илмест. Çапах — хапăл тăвакансем çук. «Районĕ çавнашкал пилсĕр-и кунта?» — теттĕм аптраса. Пирĕн патăрта ку япала проблема марччĕ. Тинех тавçăрса илтĕм хайхи: Борзовран хăраççĕ иккен! Пур пирĕн çынсем, вĕсем паянах мĕнпур кăмăлтан канцеляри ĕçне пăрахса колхозри чăн-чăн ĕçе куçĕччĕç, анчах хăраççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен мĕн чухлĕ ырă тусан та — сая каять. Вăл сана тухăçлăх группипе ура хурать, нимĕн сăлтавсăр выговор парать. Калăпăр, юхтарса çумăр çунă чух комбайнсем ĕçлеменшĕн хăтăру илме кăмăллах мар-çке. Ятласси ĕçлĕ те ĕçшĕн пултăр, йывăр та чăрмавлă ĕçре чăн-чăн пулăшу çывăхра тăтăр, ĕçре пулма пултаракан йăнăшсем этем чарусăр ухмахлăх тата сĕмсĕр пуççăрлăх хурри ан пултăр. Çакна колхоз председателĕ çирĕппĕн пĕлсе, шанса тăтăр. Пĕтĕçтерсе каласан çакăн пек вывод тума пулать: çынна колхоз председателĕ пулма парти дисциплинипе хăратса çеç яма пулать тени, çакăн пирки темĕн чухлĕ ӳпкелешсе калаçни — вырăнсăр. Ку мĕншĕн

çапла — тупсăмне райкомра шырăр. Тен манран: «Ăçтан эс капла колхоз председателĕн психологине пĕлетĕн?» — тесе ыйтăн. Эпĕ хам виçĕ çул колхоз председателĕнче ĕçленĕ, калама маннă сана эп кун çинчен. Унтах эп хамăн малтанхи очерка çыртăм. «Çĕклерĕç» мана та. «Э-э, пирĕн хамăрăн писатель пур-çке!» — терĕç те тӳрех райхаçат типографийĕн пуçлăхĕ туса хучĕç. Çавăнтанпа пуçланчĕ те ман хаçатçăн канăçсăр кун-çулĕ.

— Эс уçнă шухăшсене пула эпĕ, Петр Илларионович, кĕçĕр ыйхă тупас çук, — терĕ Марья Сергеевна. Унтан савăшсăррăн кулса: — Пĕлетĕн-и, мĕншĕн вăл мана юратнă? — терĕ. — Эп хĕр чухне те чиперех пулман. Мода пурччĕ ун чух — чаплă стахановкăсене качча илме. Пирĕн предрик та çавăн пек хĕрех илчĕ: ахаль звеньевая, малтанхи орденлă хĕрсенчен пĕри, ун çинчен те хаçатсем хăй вăхăтĕнче сахал мар çырнă...

— Ку кун пирки — мĕн пулнă унта сирĕн — нимĕн те пĕлместĕп, — хуравларĕ Мартынов. — Ку тĕлĕшпе тĕрĕс выводсем тума сана пулăшаймăп, — хушса хучĕ вăл пирус чĕртсе, унтан сĕтел хушшине вырнаçса чей тултарса пама ыйтрĕ.

— Ĕçе ĕç пек тумасан, ячĕшĕн анчах сивĕ чунпа ыт ахальлĕн аппалансан кирек те мĕнле пуçарăва та тĕп тума пулать, — каларĕ малалла Мартынов. — Халь акă пире ăс пачĕç тейĕпĕр: колхоз председателĕсен вырăнне ял хуçалăх ăстисене лартмалла — агрономсене, зоотехниксене. Тĕрĕс! Тахçанах çав кирлĕччĕ! Акă промышленноçа илер. Заводсенчи цех начальникĕсем — инженер, завод директорĕсем — инженер. Унта кадрсене вĕрентсех, хатĕрлесех тăраççĕ. Халĕ пĕр-пĕр колхоза илĕпĕр. Ĕç калăпăшĕ, пĕлтерĕшĕ — заводринчен кая мар: тем анлăш хир — пиншер гектар, выльăхчĕрлĕх, тĕрлĕрен отрасльсем, мелиораци, вăрман лартасси. Çапах та вырăнти талантсемпех йӳнеçкелетпĕр. Таврари чи лайăх председателĕн Демьян Васильевич Опенкинăн мĕнпур образованийĕ — чиркӳ прихочĕн шкулĕ, ăна та пулсан пĕтереймен. Вĕрентетпĕр-и эпир председательсене? Чăн, вĕренткелетпĕр. Акă колхоз председателĕсен облаçри шкулĕ пур, виçĕ çул вĕренмелли. Пире те икĕ вырăн пачĕç унта, икĕ çын ятăмăр. Мĕнпур председательсене çав шкул урлă кăлариччен алă çул иртет. Паллах, колхозсенчи пуçарулла ĕçсене нумайрах агрономсене лартас пулать. Пыра киле бригадирсен вырăнĕнче агрономсем пулĕç. Анчах мĕнле пурнăçлаççĕ-ха çак ырă шухăша халь пирĕн?.. Акă мĕнле.

Борзов сĕтелли çинче разнарядка выртать — сакăр агронома колхоз председателĕсене ямалла. Ярас пулать! Кама ямалла, мĕнле ямалла — ку вара ăна питех пăшăрхантар-

масть. Ăна тесен задание вăхăтраултарса тата обком умĕнче отчет туса пултăр. Анчах агрономăн председатель ĕçне лайăх туса пырас тесен дипломсăр пуçне организатор пултарулăхĕ кирлĕ-çке. Вăл чăн-чăн пуçаруçă, массăсемпе ĕçлеме пĕлекен, халăха ăс вĕрентекен ăста çын пулмалла. Чи малтан — вăл çак йывăр ĕçре совет влаçĕшĕн чун-чĕререн тăрăшакан çын пулмалла... Çакна пĕле тăркач эпир Аксенова юлса пыракан колхоза ятăмăр. Аксенов таçта, сельхозснаб конторĕнче, çирĕм çул ларса ирттернĕ, хăйĕн специальноçĕпе мар, счетоводра; темĕнле нарядсем çырнă, ăна-кăна тунă, мĕнпур агротехникăна, институтра вĕреннине вăл, паллах, манма та пултарнă. Унта вăл юлашки вăхăтчен колхоз строительствин йывăрлăхĕсенчен пытанса пурăннă. Çав çĕрĕк тункатаран мĕскер кĕтме пулать-ха? Анчах обком умĕнче отчет пама вăл юрăхлă: ун диплом пур, аслă шкул пĕтернĕ.

Усси нумай-и вара çавăн пек çынсенчен? Тепĕр тĕслĕх. Çăлтăр куçлă каччă. Вăл, ачаран кинематографи институчĕ çинчен шухăшланăскер, конкурс чăрмавĕ пирки ял хуçалăх институтне лекнĕ. Унăн колхоз ĕçĕнчи мĕнпур практика — каникул вăхăтĕнче тыр-пул ĕçне пăртак хутшăнкалани. Эпир çакăн пек каччăсене те, икĕ çынна, председательсем туса ятăмăр. Анчах ку ачасем мана кăмăла кайрĕç. Комсомолецсем пĕрре те шикленсе тăмаççĕ. Чăрсăрлăх нумай, эпир тахçанах хăнăхса йăлăхнă япаласем çине вĕсем хăйсем майлă уççăн, чĕррĕн пăхаççĕ, чăнласах тĕлĕнеççĕ вĕсем: «Епле-ха капла, çакăн пек пуян наука пур çинче, çакăн пек механизацип гектартан ик çĕр пăт та пулсан илейместпĕр?..» — теççĕ. Кирлĕ пек пулăшса пырсан вĕсен ĕç ăнмалла. Ытах та малтанхи кунсенчех вĕсем çине сĕтел çапса кăшкăрма пуçласан: «Эсир специалистсем! Эсир ыттисенчен лайăхрах пĕлетĕр! Çичĕ хут тирĕре сўсе илĕп!» — тесе хăтăрсан мĕн пулĕ малашне вĕсенчен — пĕлместĕп...

Ку очерк çакăнпа вĕçленмест-ха, мĕншĕн тесен эпĕ ăна натурăран тенĕ пекех çыратăп. Тен, вăл пыра киле повесть пулса кайĕ, анчах çакна валли пурнăçри ĕçсем малалла аталанни кирлĕ. Эпĕ пĕр районта Мартыновпа Борзов пек çынсемпе хутшăнсах тăратăп, вĕсен тавлашăвĕсене час-часах тăнлатăп.

Çак район пирки мĕнле йышăнусем пулĕç обкомран, кулленхи ĕçсем малашне мĕнле аталанĕç, çак очеркра сăнласа панă çынсен телейĕ-ăраскалĕ мĕнле пулĕ — ўлĕм çакна пурнăçра татах та сăнамалла-ха. Ахăртнех, çавăн çинчен çырăп та çитес очерксенче.

1955

Ян Дрда

ПАН ГРОМЕК ПАТНЕ АННĂ АНГЕЛСЕМ

Калав

— Çавă-çке, — ассăн сывласа ячĕ пан Громек Роус трактирĕнчи халапа хутшăнса, — сирĕн, ырă çынсен, пурте пулнă: «нелегальщина» тетĕр ав, «саботаж». Мĕн кăна хăтланман эсир иртнĕ вăрçăра! Эпир тесен — мухтанаймастпăр вара. Çĕршывĕ пирĕн çавнашкал, — телейне пăх та пасара кай теççĕ, — ун пек пытаруллă пултарулăхпа чапа тухма пирте услови пулман. Радио? Вăл пирĕн таврара жандармсен тытăмĕнче кăна пурччĕ. Вăрттăн листовкăсем ман алла ултă çул хушшинче те пĕрре лекмен. Саботаж? Пĕлесчĕ ман, мĕн тума пултартăр-ха ялти теçетник, вăрман хуралçи, çав пирĕн упалăхра? Тен, йывăçсене хуллентерех хунама хушса тăмаллаччĕ, — çакна эпĕ, каçарăр, хам çине илеймен. Хăрăк турат... вут-шанкă кăна эпир, ўкнине-пĕрне, хамăр хушăра пайласа пынă, нацистсем валли шăрпăкне те хăварман.

Хĕрлĕ Винценц, вăлах пан Громек, хăй каланă тăрăх, — вăрман хуралçи. Вăл Туçи Стршилка çынни иккен, Прага хулине йăмăкĕ патне хăнана килнĕ. Улах вырăнсенчи кирек те мĕнле йĕре те шăршпа пĕлекенскер, кирек те мĕнле çăл куçне шыраса тупаканскер, вăл кунта та, ватă вăрманçă туйăмĕпе, Роус старикĕн трактирĕ патне часах çул тупнă. Роус мучи — трактирçă; ытти трактир хуçисем пекех, вăл пăртак кăнттамрах (профессийĕ çавă!), анчах кăмăлĕ ун тарават та ырă (çапла ĕнтĕ ун пек самăрсен).

Вăл пан Громекăн куркине тултарсах тăрать, лешĕ хĕрлĕ тĕслĕ чармак мăйăхĕсене шăлкаласа ларсан-ларсан хăйма пек кăпăклă сăра çине ўпĕнет, çав хушăрах тĕнчери тĕрлĕ ĕççем çинчен ирĕккĕн, çыпăçуллăн юмахлать.

— Çапла, пирте нелегальщина тавраш пулман темелле. «Хăвăртан килнĕ, хăвăр ун пек шухăша тытман», — тейĕр эсир. Çук, фашистсене хирĕç сăтăр тума эпир кирек хăçан та хатĕр пулнă. Анчах тĕл килмен. Ун вырăнне вара тĕрлĕрен тамашаллă мыскара пайтах пулкаларĕ. Пуринчен ытла пирĕшти мыскари! Чăн сăмахăн суйи çук. Ку мыскара хĕрĕх тăваттăмĕш çулта раштав умĕн тапранчĕ. Лăпкă каç. Çанталăк — янкăр уяр. Тўпере — тулас майне кайнă уйăх. «Громек Винценц, — тетĕп эп хама, — ан ўркен, ут Кăвакал шурĕ патнелле, çав мур илеш браконьер-сунарçăсем çитес уяв валли пĕрер хăлхамас куянне тытасшăн пулаççех».

Çук, çыншăн пулсан вăрманти пĕр татăк какая та хĕрхеннĕшĕн мар, йĕрки çапла: пĕлмелле ман — мĕн хыпар унта, вăрманта, кам мĕнле чĕрчуна персе ўкернĕ? Пыратăп çапла сукмакпа; сехет вун иккĕ çине кайнă; Таркăн ĕшни текен каснă тăрăха çитрĕм, унта пĕлтĕр Оубенц çыннни, таркăн, шăнса вилнĕччĕ. Юр ура айĕнче кăчăрт-кăчăрт тăвать, тавралăх шăп, пушă чиркўри пек. Чăтма çук туртас килет. Чарăнтăм. Чĕлĕм кăлартăм, табак тултартăм, шăрпăк çутрăм, тивертрĕм, пĕрер çăтăм сывласа илсе сурса пăрахрăм, унтан тин анчах вĕтлĕх çуммипе тăвалла хăпарам теттĕм, темĕскер, тепĕр еннелле пăхас мар çĕртен пăхмалла пулчĕ.

Кунта манăн сире лайăхрах ăнланма çакна калама тивет: çав каснă тăрăхра сайра хутра ларакан хырсем — яштака та илемлĕ хырсем — юри кастарман вĕсене, вăрлăхлăх хăварнă. Пăхрăм та хайхи курах кайрăм: ак тамаша! Пĕр хыр тăрринче тем пысăкăш çĕлĕк — юр çĕлĕкĕ выртать. Мĕскер мерекки? Кунта юр пулмалла та мар-çке! Çитменнине, йăшăлтатать тата, чĕрĕ тейĕн. «Винценц, — тетĕп хама хам, — ку япала тем тесессĕн те ахаль мар: нихăш хыр çинче те пĕр ывăç юр çук, кунта ав кĕмĕрккипех». Чупса пытăм хайхи хыр кутне, пăхатăп, ну, ăсу кăна кайĕ! — хыр çинче, чи-чи тăрринче, чĕрĕ çын çакăнса тăрать, ну, каснă лартнă раштав елки çине çакнă пукане. «Кам эс, чĕр шуйттан?» — ыйтатăп эп кăшкăрса. «Ангел эп, шуйттан мар. Пĕлĕтри пирĕшти. Курмастăн-им, тăмана!» — ответлет хайхи. Хăй çав хушăрах пĕрмай аппаланать, çыхланнă кантрисене майлаштарать, пуçĕ тĕлĕнчи шурра хăй çине туртса илесшĕн тăрăшать.

Кунта эп, паллах, мĕскер иккенне часах тавçăртăм. «Ну, ачамушка, — тетĕп, — эсĕ кăштах пăтрататăн пулас, сочельник çитесси тата çичĕ кун!» «Сансăрах пĕлеççĕ, — хирĕçлет вăл мана, — анчах парнесем хатĕрлеме вăхăт кирлĕ-и? Мĕн шухăшлатăн, ял кăркки?» — хушса хурать вăл виртлешсе. «Апла пулсан ан-ха эппин, — тетĕп эпĕ те, — пăхар, мĕн-мĕн парни унта сан!» «Анаймастăп. Кам тăшман тăратса хăварнă кунта, ĕшне варринче, çак тăсланкă шăчăсене! Ма касман вĕсене?!» — тет вăл ятлаçса.

Сăмах-юмах нумай пулĕ, ман кунта кĕскен çеç каламалла. Çакăн пек йĕрсе пуплешсе эпир тепрер минут ирттертĕмĕр-и, çук-и, хайхи ман çўлти тусăм — йăлăхтарчĕ пулас ăна — чăнласах калаçма пуçларĕ: «Итле, пичей, кам эсĕ — чех-и?» — тет. «Чех пулмасăр кам пулас?», — тетĕп эп ăна. «Çук, пĕлесчĕ ман — чăн-чăн чех-и эс?» — тĕпчет вăл мана.

Эп ăна кун пирки нимĕн те сĕмленмелли çук иккенне пĕлтертĕм. «Апла пулсан итле, леçник, — тет вăл мана. — Эпĕ парашютист, ятăм манăн Лойза, паллашар; урăх ан ыйт, хальлĕхе сана ку та çитĕ-ха. Куратăн: эпĕ кунта, хыр тăррине, серепене лекнĕ, пĕр сехете яхăн çакăнса тăратăп ĕнтĕ, ни унталла, ни кунталла, ниепле хăтăлма çук. Халех ак çак шпагатсене касса татăп та çĕрелле персе анăп. Ытах та ал-урам хуçăлсан — кун пек пуласси паллах — сан вара, мучи, мана çурăм хыçне çакса йăтса каймалла. Тен, эсĕ мана жандармсен аллине тыттарăн, анчах асту, кунта çак кунсенче ман юлташсем çитмелле, вара эс ун чух кун курас çук».

Çак еренкĕсĕр сăмахсем мана тарăхтарса ячĕç. Пулать сӳпĕлти. Кам эп: антихрист-и, намăссăр-и, путсĕр çын-и? Кам эп — мана ун пек калама! Кун пек панкав сăмахсемшĕн ăна татах тепрер сехет çакса тытмаллаччĕ те, анчах сивви хаяр, шартлатсах тăрать, кунта, патька, шӳт мар. Çавăнпа эп ăна: «Эсĕ, йĕкĕт, асту, нимĕн те ан кас, пăртак çеç тăхта. Эпĕ халех киле çитсе килем, тен, шăм-шакка ватмасăр та анма пулĕ», — терĕм.

Курăсăрччĕ эсир епле вун пилĕк метрлă чикмеке эпĕ тăвалла, сăрт тӳпине çитех, сĕтĕрттерсе пынине! Çынна çав асапа сунма нихçан та халăм çитес çук. Малтан эп чикмеке хул хушшипе йăтса пăхрăм, чылайччен канат çинчи камитçĕ пек балансласа пытăм, унтан, капла ывăнсан, икĕ пускăч хушшинчен пуçа чиксе хулпуççипе çĕклерĕм, кайран, капла май килмесен, йĕм çăртинчен чĕн пиçиххи салтса илсе çунашка туртнă пек çаклатса сĕтĕрме пуçларăм. Куртăм вара тип шар, чăм шыва ӳкрĕм, шап-шур юр пултăм; утмассерен ура шăвать: е хам чикмек çине чикĕнсе каятăп, е вăл — ман çине. Çакăн хыççăн çур уйăх иртсен те çан-çурăм ман çав-çавах кăвакчĕ. Эпĕ хыр тĕлне мекĕрленсе çитнĕ çĕре йĕкĕт ман кӳтсех кайнă, чĕнейми те пулнă. Хăпартăм эп ун патне, антартăм шеремете, унтан çĕр çăтман парашютпа тем вăхăт ирттертĕм, — аран-аран туратсем çинчен вĕçертрĕм. Хамран пăс тухса тăрать, калăн, пĕччен пĕр шаршан вутă татса, çурса купаланă тейĕн. Унтан эпир чикмеке иккĕн ик вĕçĕнчен тытрăмăр та яра патăмăр анаталла, хамăр пата, хурал пӳртне. Апăрша карчăкĕ, мана çухатса йăлт ăнтан кайнă-мĕн; мăнтарăн, çывăрма выртнăскер, маншăн пăшăрханса пĕр чĕрĕм ыйхă курман.

«Кама эс капла, каласам тархасшăн, çĕр варринче ертсе çӳретĕн?» — терĕ вăл мана вырăн çинчен тапранмасăрах уксус сыптарнă пек йӳççĕн.

Мĕн калама пултарнă эп ăна?

«Ангел ку», — терĕм эп шăппăн. Арăм çакна илтсен куçне чарса пăрахрĕ, ахăртнех: «Йăлтах йŭтенĕ-çке ман старик», — терĕ пуль.

Унтан çапах та хăй мана чылайччен сăнаса пăхнă хыççăн пуплеме пуçларĕ, тăчĕ, юбкипе кофтине тăхăнчĕ, питне-куçне çурĕ, сĕтел çине çыртмалли тата ром лартрĕ. Пирĕн пирĕшти, тăр-тăр чĕппи тытнăскер, хайхи тин йăл илчĕ, сăмахлама пуçларĕ, ваçка, çур çĕр иртсе виçĕ сехеттен пĕр чарăнмасăр каласçрĕ. Мĕн чул хыпар пĕлтерчĕ вăл пире! Вырăссем нацистсене сăсăрлантарса килни çинчен, тăшмана сывлăшра та, çĕрте те кун паманни çинчен каларĕ хайхискер. «Пирĕн туссем, паттăр вырăссем, çуркунне кунта çитмелле, фашистсен пархатар пĕтнĕ, капут, шалчи тулнă; пирĕн республика пулать, кун пирки вырăссем пирĕннисене шантарулла сăмах панă, хăйсен сăмахне вĕсем суя тăвас çук, аçа çапсан та пурнăçлаççех», — тет пирĕн хаклă хăна. Калать те калать, чĕлхи-çăварĕнчен вут тухать. Арăм ман, черченкĕ кăмăлăскер, йăлт çемĕçсе кайрĕ, савăннипе йĕрĕшме пуçларĕ.

Чĕре кирек камăн та чул мар, хамăн та куççуль шăпăртатать. Çапла пулмасăр, кун пек тĕрĕс сăмаха ĕмĕр тăршшĕпе те сахал илтетĕн!

«Эх, тăванăм парашютист, — тетĕп эп ăна, — чăнах та эс ангел. Кун çинчен эп ыран ирех хамăн аслине, вăрман улпутне, кайса пĕлтеретĕп. Савăннипе вăл — ухмаха тухас пур!»

«Улпута каламасан та юрĕ, — ответлет хăна. — Эс луччĕ çакна пĕл: хăвăр таврара татах та çук-и ангелсем? Пулмалла вĕсем. Эпир вуннăн сикрĕмĕр: чехсем — виççĕн, вырăссем — çиччĕн, халĕ пирĕн часрах пĕр çĕре пухăнмалла, унтан пысăк та васкавлă ĕçе пуçăнмалла».

«Рышанек — пирĕн таврари чи чăрсăр браконьер — ĕнер каç кайăка тухнах ĕнтĕ; вăл, йытă, мĕн те пулин пĕлмеллех!» — тесе шухăшлатăп хам.

Ир-ирех çак юрăхсăр сунарçă патне тухса утрăм. Сехет тăххăрсем тĕлнелле çитрĕм ун патне. Арăмĕ картишĕнче аппаланать, хŭме çумне вут чĕртнĕ, темĕскер ĕнтет; мана курсанах куçне мулкач пек вылятма пуçларĕ. Хăй, Рышанек, путсĕр браконьер, çывăрса та тăман, çакăнччен тŭшек çинче мехмĕрленет. Эп ăна: «Рышанек, шуйттан, кала, ан туннă пул! Иртнĕ каç вăрманта пултăн-и?» — тетĕп. Вăл, нимĕн те ăнланман пек, айванла тăсса ответлет: «Пулмасăр, ав Марьянпа çырлалăхра çŭрерĕмĕр!» — тет. «Ан суй, эп сана хам куçăмпа хам куртăм! — кăшкăратăп эп

тарăхнă май каклиш кăтартса. — Пур ман вăхăт санпа, кăнттамаспа, каласа тăма!» — «Çĕр çăттăр, курман эс мана, Громек! Ахăртнех, сан куçу умĕнчен пĕр карта пирĕшти вĕçсе иртнĕ-тĕр!»

Пулчĕ! Çак сăмахсене илтсенех эпĕ сисрĕм: Рышанек хамăр çын. Кирек те мĕн кала, кайăк тесен унран усал сăтăрçă та çук, ытти тĕлĕшпе вăл йĕркеллĕ йĕкĕт, шанчăка нихçан та ултавлă тумасть. «Ну, — тетĕп, — вăл пирĕштисене эпĕ те курнă-ха, Рышанек, çавăнпа килтĕм те сан патна!»

Рышанек вăрт-варт тăрса ларчĕ, тути ун усăнса анчĕ, чĕтĕрет, анчах часах вăл хăйне хăй алла илчĕ, лачлаттарса сурчĕ, унтан арçури пек çухăрашма пикенчĕ: «Пăрахăр ăçтиçук паврама, Громек! Тупнă фантази!» «Мĕнле фантази пултăр! — тетĕп ăна. — Пĕр ангелĕ ман патăмра пытанса пурăнать!»

Пăхасчĕ эсир Рышанек çине! Вăл вырăнĕ çинчен сиксе анчĕ те, халхав сигналĕпе тапраннă драгун пек тӳрех ик урипе ик йĕм пĕççи ăшне сикрĕ, унтан мана курткăран ярса илсе тăрмалама пуçларĕ, кĕç-вĕç пĕр тӳмесĕр тăратса хăваратчĕ. «Итле-ха, Громек, вĕсем ман патăмра пиллĕкĕн, мачча çинче, утă ăшĕнче», — тет хăй хашкаса.

Мĕн кунта нумай калаçмалли? Каç пуличчен эпир Рышанекпа вăрманти чăтлăхра ыттисене те шыраса тупрăмăр. Вунă пирĕшти автоматсемпе, гранатăсемпе, взрывчаткăпа, пĕтĕмĕшле каласан, ангелсене тивĕçлĕ мĕнпур хатĕрхĕтĕрпе! Пиллĕкĕшне хам пата вырнаçтартăм, пиллĕкĕшне Рышанек патне, улах çĕререх. Ырă çыннăмсем, пуçланчĕ вара тамаша! Çав кунтанпа эпĕ хам, леçник пуçăмпа, усал браконьера карсак вырăнĕсене кăтартма пуçларăм, — ангелсене усрама кирлĕ-çке! Йĕкĕтсем, чăнах та, çил пекех çивĕччĕ вара, вĕсен çитмен çĕрĕ пулман, унта та кунта пĕтĕм таврара вашлатса çӳретчĕç, киле кăвак çутла çеç, автансем виççĕ аватсан, таврăнатчĕç. Пĕр ирхине, раштав тенĕ чух, Лойза, хăй хыр тăррине сикеккенни, мана улахрах çĕре кăчăк туртса илчĕ те çапла каларĕ: «Итле, папаша, паян каç эпир парнесем валеçме саланатпăр, анчах асту, кун çинчен шарт та март!»

Манăн ытлашши хĕпĕртенипе куç хуралса килчĕ, ура вăйĕ пĕтрĕ. «Мĕнле парнесем, Лойзик? Елкăсем-и?» — тетĕп. «Елкăсем, — тет. — Тата уяв уяв пек пултăр тесе фейерверк та!»

Тăваттă çурăра, тĕттĕмлене пуçласан, вĕсем килтен тухрĕç. Ыттисенчен каярах юлнă Лойза пăртак кайсан тата тем ăспа каялла таврăнчĕ те мана хăлхаран: «Ытах та кăмăлу

пулсан эсё çав уява аякран пăхса тăма пултаратăн. Çур çĕр çитиччен кăшт маларах Арçури тӳпине хăпар та савăн умран юличчен», — терё. Ну, кăна каламасан та паллă, ман çав каç апат та апат пулмарё. Мулкач какăрне сётеклё юрманпа пуçса кăшласа ларнă чух аллăм сиксе чётрет, куçăм сехет çинчен каймасть. Арăм лăркать: «Çулталăкра пёрре пёр ыр сăмах чёнместён», — тет. Эпё пур — йёп çинче ларнă пек. Вун пёр çитеспе ик кёпçеллё пăшала тытрăм та арăм еннелле тӳртёнрех тăрса: «Ну, — терём, — уяв уявпах, анчах службăна та манма юрамасть. Сыв пул!» — терём. Карчăк çăварне те уçса ёлкёреймерё, эпё пӳртрен вашт! кăна турăм. Каçё, калас пулать, тыт та халех картина ӳкер: тулли уйăх, таса пёлёт, шатăр сивё, юрё утмассерен шăтăршăтăр тăвать. Шăплăх тата, тӳсме çук шăплăх — хăлха ыратать! Хăпартăм эп тӳпен чи çӳллё тăррине — унта ватă бук йывăçёсем çумёпе, шанкав чул хыçёнче, хунав чăрăшлăх ӳсет. Çапă купи çине майлашса лартăм та чёлём кăлартăм; çакăнта ман пуçа сасартăк пёр шухăш пырса кёчё: «Āçта кайрёç пулать-ха çав пирён ачасем?» — тетёп хам ăшра. Килнё шухăша вёçлесе те çитереймерём — илтетёп: буксем патнерех шăтăрт-шăтăрт тутарать... аçа çаптăр! манран пёр виçё утăмра тёнче усалё Рышанек тăрать. Браконьер мар, тăрнаккай! Çӳрет тёлленсе çёр хута! Ана атă мар, кушак ури парăттăмччё, çӳретёр йăпшăнса усал сывлăш пек. Эп тилёрсе кайрăм: «Тасал вăрмантан, — шăл витёр калатăп ăна, — халех çухăнтан ярса илсе çул кăтартса яратăп!» Вăл мана хирёç лăх-лăх-лăх кулать: «Чипертерех калаç, Громек, харкамăн хăйён ёçё...» — тет.

Хăй ман çумах, çапă купи çине, пырса йăтăнать. Ну, тавтапуç, кăмăл турё мана кӳршё! Эхер те улпут курсан пире, туршăн та, месерле палтлатса ӳкет. Шалкăм çапать ăна! Пулнă-и вăл халиччен: вăрман вăррипе вăрман хуралçи пёр кавар пулса çур çёр варринче кайăк сыхласа лараççё! Анчах нимён те тума çук: вăрçас — хирёç чёнмест, айлăмалла çаврăнса ларнă та, панкрут, чармак куçёсемпе каçхи сёмлёхе шăтарас пек тирённё. Ана кура, паллах, эпё те çаплах.

Ларатпăр та ларатпăр — чёмсёррён, шăппăн; чёре ман, пёр суям та çук, кăкăра силлесе тӳнк-тӳнк-тӳнк! тутарать, ахăртнех, ăна Рышанек та илтет пуль. Çур сехет иртет, пёр сехет иртет, эпир çав-çавах ларатпăр-ха; аялта, Гарсицра, Тманевра тата Шурă Тӳпере чансем паçăрах çур çёр çапрёç ёнтё; çанталăк сивётнёçем сивётет, йывăçсем тăрсан-тăрсан пёр шартлатса илеççё; шăп, урăх ним сасчёвё те çук. Эпё ёнтё йăлт пăрланса лартăм. Ырхан Рышанек,

мĕскĕн, хăйĕн кивелнĕ çаралнă курткипе епле чăтать-ши? Анчах вăл хăнк та тумасть курăнать, тилĕ умĕнчи чĕрĕпле çăмха пек хутланнă та нимĕн шарламасăр сӳннĕ чĕлĕмне паклаттарса ларать, сĕлекине çăтнă май пырĕнче темĕскер пăкăл-пăкăл тăвать.

Эпĕ сехĕрлене пуçларăм: е йĕкĕтсем пĕр-пĕр пăтăрмаха лексен? Унта, аялта, кашни ялта гестапо йыттисем, çулсем тăрăх — патруль çине патруль, Бречковици тулли — нимĕç жандармĕсем. Ларсан-ларсан эпĕ хама хам ятлама пикентĕм: вĕсене пĕччен кăларса ямалла марччĕ. Кунта эпĕ кашни сукмака, кашни йывăç тĕммине пĕлетĕп, парнесем валеçнĕ çĕрте эпĕ калама çук кирлĕ пулнă пулăттăм... Сехет çине пăхса илтĕм — иккĕ çине куçни вăтăр минут. Сиксе чĕтретĕп, пĕтĕм ӳт-пӳре пăрлă ток ярăнса чупать. Рышанек çине пăхатăп — каллех хăнк! та тумасть. Пĕр сăмах та пулин чĕнинччĕ, çапах хававрах пулĕччĕ. «Итле-ха, сана чултан чутласа туман пуль-çке?» — тетĕп ăна.

Сасартăк Рышанек мана алăран ярса тытать... мĕн тата?! Куçĕсем хурчăка куçĕ пек. Аякра-аякра, пиртен анатри айлăмра, кăнтăрпа хĕвел анăç хушшинче, пĕр пĕчĕкçĕ вут куçĕ, вут куçĕ те мар — хĕлхем, мĕлтлетсе илчĕ, — пĕр пуслăх çурта чĕлхинчен те пысăк мар. Самант — пĕлĕт тӳпи ялтлатса кайрĕ. Кун чул пулса та ун пеккине курманччĕ: тем пысăкăш вутлă юпа çĕр çинчен сиксе çĕкленчĕ те, — калăн, çĕр минĕн хапхи яр уçалĕ тесе, — ракета пек ярăнса çӳлте-çӳлте саланса сирпĕне пуçларĕ, çав самантра çур пĕлĕт çулăмпа пиеленчĕ. Авал маçаксем çавнашкал вут-юпа çинчен пуплетчĕç, ун пек юпа пĕлĕтре курăнсан вăрçă пуласса тетчĕç. Авалхи юпасем мĕнле пулнă-тăр, — пĕлместпĕр, кăна вара, хальхине, вутлă юпа тесен те юрать! Кăтартасчĕ ăна сире, маçаксем, кутăн кайса ларăттăрччĕ! Тата икĕ хутчен вутлă юпа çапла çĕкленчĕ, çав вăхăтрах таврана хыпса илнĕ çутă сарăлнăçем сарăлчĕ, пĕлĕт талккăшне, пĕтĕмĕшпех тенĕ пек, ярса илчĕ. Чĕрем ман тапах чарăнчĕ, эпĕ чĕлхесĕр пултăм, Рышанека çанăран çатăртаттарса тытрăм. Рышанек сиксе тăчĕ — ун куçĕсем пĕлĕт вучĕ çапнипе ялкăшса тăраççĕ, вăл, çуйхăннă пăлан пек, хашлатса сывлать... Çак вăхăтра таçтан шалтан ухлатсакĕрĕслетсе кайрĕ, вара ура айĕнчи çĕр енчен енне тайăла пуçларĕ.

Астумастăп, мĕн тунă эп çав самантра, анчах Рышанек, хайхи браконьер, мана сасартăк мăйран уртăнса чуптума тытăнчĕ. И-и, шуйттан, ăнсăртран пĕр-пĕрне пăвса пăрахасран чун çук ман. Çапла эпир, ватă ухмахсем, пуçларăмăр, пуçларăмăр чуптăвăшма, хай «Сутнă хĕрти» Еникпа

Маженка пек; çитменнине, ушахлăхри икĕ услап упа пек, ташша ятăмăр. «Парне! Леçник! Парне!» — çуйăхать Рышанек ухмаха ернĕ пек. Эпĕ те: «Фейерверк! Ылтăн йĕкĕтсем, паттăр йĕкĕтсем, чĕтретĕр тĕнчене!» — тесе янăратăп.

Çапла эпир хăшкăлтăка ўкиччен айкашрăмăр, юр хамăр айра тап-такăр пулчĕ, калăн, кунта валашка тавра кĕтў тапăртатнă тесе. Куçсем пирĕн иксĕмĕрĕн те кушаксенни пек чалтăртатса тăраççĕ, анчах вĕсен çути — куççуль. Нимĕн суймасăр калатăп, пĕчĕк ача пек улатпăр вĕт. Савăнăççке: пирĕннисем те Гитлер хурахĕсен умĕнче аптраса ўкмерĕç — сирпĕтеççĕ тăшмана! Маттур вырăс ачисем пире ытарма çук вĕрентўллĕ уроксем параççĕ, тата мĕн калас?.. Ну, пĕр сăмахпа, ирхине ирех пирĕн йĕкĕтсем пурте тĕрĕстĕкел таврăнсан, — Володьăна çеç, вĕсен комиссарне, хулпуççинчен пăртак етре катăкĕ шăйăрса кайнă, — мĕн чухлĕ савăнмарăмăр пуль; савăнăça пула пыра йĕпетме те манмарăмăр паллах. Пулчĕ те-çке аллилуя, тур çырлах, нихăçан манас çук!..

Вара пан Громек, типнĕ пыра пăртакçă йĕпетес тесе, паçăртанпах кĕтсе ларакан кружкине ярса тытрĕ те янк! тутарчĕ. Ку япала ытла та вăхăтра тата вырăнлă пулчĕ пулас: леçникĕн хĕрлĕ мăйăхĕсем киленўллĕн чĕтренсе илчĕç.

— Малалла мĕн пулчĕ вара? — ыйтрĕ пĕри итлесе ларакансенчен.

Пан Громек пурин çине те пăхса çаврăнчĕ те:

— Ну, мĕн пултăр тата? Май уйăхĕчченех пурăнчĕç ангелсем пирĕн вăрман çĕрĕнче; мĕн кăна кăтартмарĕç вĕсем фашиста, çунтарчĕç те хыптарчĕç, пĕр ырă кун памарĕç.

Унтан вăл мăйăхсене шăлса илчĕ те сўннĕ чĕлĕмне пуç тўпине чавкаласа васкамасăр хушса хучĕ:

— Çапла, нелегальщина тавраш пирĕн патăрта пулман, пирте ун валли условисем çук. Анчах тĕрлĕрен мыскара, турра шĕкĕр, пайтах пулкаларĕ.

1955

И.Т. Трофимов

К. В. ИВАНОВПА ПĔРЛЕ ĔÇЛЕНИ

1912 çулччен чăваш ачисене хутла вĕрентмелли пĕртенпĕр кĕнеке И.Я. Яковлев букварĕ пулнă. Ăна хăй вăхăтĕнче пирĕн просветитель Л.Н. Толстойăн «Çĕнĕ Азбука» букварĕнче усă курнă методпа килĕштерсе çырнă. Анчах пыра

киле И.Я. Яковлев букварĕ те, «Çĕнĕ Азбука» та кивелнĕ, вырăссен методики ачасене хутла вĕрентме лайăхрах метод — анализпа синтез меточĕ е, кĕскен каласан, сасă меточĕ — ăсласа тупнă. Çĕнĕ методпа йĕркеленĕ вырăс букварĕсем — Вахтеровăн, Флеровăн т. ыт. те — чăваш букварĕпе унăн хурăнташĕ «Çĕнĕ Азбукăран» чылай паха пулнă, вырăс шкулĕсем пур çĕрте те вĕсемпе ĕçленĕ.

Сасă меточĕпе хутла вĕрентесси, Яковлев меточĕпе танлаштарсан, ăнăçлăрах та ансатрах. Çитменнине, И.Я. Яковлев букварĕнче иллюстраци тавраш пулман, чылай ачасем, ун кĕнекипе вĕренекенсем, шкулта виçĕ-тăватă уйăх ларнă хыççăн та хăш-пĕр сас паллисене асра тытайман, мĕншĕн тесен кивĕ методăн çитменлĕхне пула ачасем хăйсем вĕренекен сас паллисен сăнарне пурнăçри пĕлĕш сăнарсемпе картинлăн шайлаштарса пыман.

1909 çулта, Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренсе пĕтерсен, эпĕ яла учителе кайрăм. Паллах, малтанхи кунсенчех ачасене хутла вĕрентес ĕçре ман ума капланса тухнă йывăрлăхсем çителĕксĕр методран та килнине эпĕ ун чухне ăнкарсах кайман. Пире Чĕмпĕрте хутла вĕрентес ĕçĕн методикине Тихомиров учебникĕ тăрăх паллаштарнă. Ку кĕнеке сасă меточĕ çинчен тĕтреллĕ çеç калатчĕ. Хамăра вĕрентнĕ учительсене илсен вĕсем, Яковлев методне тытса пыраканскерсем, çĕнĕ метод çинчен пĕр сăмах та шарламан.

Ачасене хутла вĕрентес ĕçе лайăхлатасси — çакă тертлĕ ыйту мана çав вăхăтра канăç паман. Вара эпĕ, çамрăк учитель, методика литературине тишкерсе вĕренме пуçларăм, хам тупма пултарнă педагогика журналĕсене нумай вуларăм. Тăрăшни сая каймарĕ: ачасене хутла вĕрентес методсенчен чи лайăххи — вулама та (синтез), çырма та (анализ) пĕр харăс вĕрентмелли сасă меточĕ иккенне эпĕ ăнланса илтĕм.

1911/12 вĕренӳ çулĕнче йышăннă ачасене эпĕ çĕнĕ методпа вĕрентме пуçларăм. Кашни ача валли касса кăлармалли азбука хатĕрлерĕм. Ачасене алфавитпа паллаштарнă чух эпĕ касса кăлармалли азбукăпа усă курнă. Каярах ачасем çĕнĕ сасса унччен паллашнă сасăсемпе сыпăнтарма вĕренсен тата сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса вулама çителĕклĕн хăнăхсан эпĕ Яковлев букварĕ çине куçрăм, унти сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсене вулаттарма пуçларăм.

Манăн çĕнĕ методпа организациленĕ ĕç хăйĕн ăнăçлăхне малтанхи утăмсенчех палăртрĕ: ачасене вулама тата çырма вĕрентесси нумай ансатланчĕ. Эпĕ хамăн уроксем тата вĕсене ирттерес тĕлĕшпе суйласа илнĕ материалсем çинчен малтанхи кунсенчен пуçласах тĕплĕн çырса пытăм, çапла

вара 1912 çул пуçламăшĕ тĕлне пулас букварĕн хура варианчĕ хатĕрленсе çитрĕ.

Сăнавлă ĕçсем ăнăçуллă пулни çинчен эпĕ И.Я. Яковлева çырса пĕлтертĕм. Иван Яковлевич чăваш букварьне çĕнĕрен çырас шухăша ырларĕ, çак ĕçĕн проекчĕпе тĕплĕнрех паллашасшăн пулса мана хăй патне Чĕмпĕре чĕнчĕ. Каламасан та паллă, эпĕ унăн йыхравне мĕнпур кăмăлпа йышăнтăм, вăхăта вăраха ямасăр 1912 çулхи июнь уйăхĕнче букварĕн ал çырăвне Чĕмпĕре çитертĕм. Иван Яковлевич ман ĕçе хапăлласах йышăнчĕ, уйрăм çитменлĕхсене асăрхаса хăй енчен паха шухăшсем каларĕ.

Çакăн чухнех пирĕн ума пĕр питĕ те кирлĕ ыйту сиксе тухрĕ, вăл — букварь валли ўкерчĕксем тума лайăх художник тупасси. Малтан эпир ку ĕçе Н.Ф. Некрасов художника, Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче вĕрентекене, чĕнес терĕмĕр, анчах Некрасова хирĕç пĕр чăрмав пулчĕ: вăл чăваш чĕлхине те, чăвашсен кулленхи пурнăçне те пĕлместчĕ. Вара Иван Яковлевич К.В. Иванова чĕнсе илчĕ, çĕнĕ букваре иллюстрацилес ĕçе пĕтĕмĕшпех ун аллине шанса пачĕ. Иван Яковлевич йăнăшмарĕ, мĕншĕн тесен К.В. Иванов талантлă поэт кăна мар, талантлă художник та пулнă. Çакăнтан вара пирĕн, К.В. Ивановпа иксĕмĕрĕн, пĕрлешўллĕ ĕç — букварĕн ал çыруне пичете хатĕрлесси пуçланчĕ.

Иван Яковлевич пире хăйĕн кабинетне пачĕ. Эпир унта ĕçленĕ, унтах апатланнă, выртса та пурăннă. Çав çул вăл хăйĕн килĕнче пĕчченехчĕ, çемйи аслă ывăлĕ А.И. Яковлев патне хăнана кайнăччĕ. Сăмах май калас пулать, кашни старикĕн хăйĕн «мыскари» пур тенĕ пек, Иван Яковлевичăн та хăйĕн «йăли» пурччĕ: вăл пĕччен çывăрма хăратчĕ. Старик пире çав тери тарават пулни ун чух çак «мыскаринчен» те килме пултарнă.

Пĕрле ĕçлесе тата пĕрле пурăнса К.В. Ивановпа çывăх туслашрăмăр. Ăна букварь ĕçĕ питĕ те килĕшрĕ, вăл хавхаланса, хăпартланса ĕçле пуçларĕ. Сăнавлă эскизсене эпир яланах пĕрле сўтсе явнă, час-часах Некрасов художника та чăрмав кўреттĕмĕр. Вăл пирĕн консультантчĕ.

Константин Васильевич букваре пуянрах иллюстрацилесшĕнччĕ, çак шухăшпа вăл букварьти хрестомати пайĕ валли те паха ўкерчĕксем турĕ. Каллиграфи çыррисене те вăл хăех хатĕрлерĕ. Ўкерчĕксене кирлĕ таран туса çитерсен эпир вĕсене Иван Яковлевич аллине патăмăр. Вăл пирĕн ĕçе пĕтĕмĕшпех пăхса тухрĕ те алфавитпа çыхăннă ўкерчĕксене çеç хăварма хушрĕ, хрестомати пайĕ валли хатĕрленисене ĕçе ямарĕ. Куна вăл ўкерчĕксене тиркенĕрен мар, букварь хаклă пуласран çапла турĕ. Чăнах та, чăваш

шкулĕсем валли кĕнеке туянакансенчен чи пуянни ун чухне земство управисем пулнă, анчах вĕсем те халăха çутта кăларас ĕç валли укçа-тенкĕ хĕссе-пĕссе çеç уйăркаланă. Сăмахран, букварĕн хакĕ икĕ-виçĕ пус çеç ўстĕр — вара ăна земство управисем сахалрах туяннă пулĕччĕç, чăваш ачисенчен чылайăшĕ кĕнекесĕр тăрса юлĕччĕç. Ачасен ашшĕ-амăшсем çине ун чухне ку тĕлĕшпе шанчăк пулман, мĕншĕн тесен чăваш хресчен хуçалăхĕнче кашни çур пус пысăк хака тăнă.

Хрестомати пайĕ валли çырнă статьясемпе пĕчĕк калавсене эпир чылайăшне Яковлев букварĕнчен илтĕмĕр, анчах вĕсене çĕнĕлле — ансатраххинчен йывăртараххи патне илсе пыракан принциппа йĕркелерĕмĕр. Константин Васильевич çав статьясемпе калавсене литература тĕлĕшĕнчен тĕплĕн редакцилерĕ. Кунсăр пуçне вăл букварь валли ятарласах «Çумăр» тата «Урапа» ятлă юрăсен сăввине юсарĕ. «Ласточка», «Времена года», «Репка» сăвăсене чăвашла куçарчĕ.

Çав çу Константин Васильевич букварьпе çыхăннă ĕçсемсĕр пуçне литература произведенийĕсем çырман. Юлташла калаçусенче вăл яланах самана условийĕсем пирки ўпкелешетчĕ: «Çырсан та усси пулас çук, эпир çырнисем хăçан кун курас пур», — тетчĕ, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра патша цензури пусмăрти халăхсен нациллĕ ăнланăвĕ аталанса пынине кăтартакан паллăсене таптаса, хупласа пынă. Патша тўре-шарин русификаторла политики вак халăхсем хушшинче çуралнă культура вăйĕсене илĕхме паман. К.В. Ивановăн вилĕмсĕр «Нарспийĕ» тата ун тĕлĕнмелле куçарăвĕсем çав вăхăтрах кун курнă пулсан, çакăн сăлтавĕ чи малтан И.Я. Яковлев чее ăсĕнчен килнĕ: никам та мар, Иван Яковлевич цензурăн тимлĕхне çывратса пирĕн малтанхи поэтсем çырнă произведенисене халăх хушшинче çўрекен халапсемпе юмахсем пек кăларчĕ. Çакна та манас мар, асăннă сборник 1908 çулта тухнă, ун чухне реакци ахăравĕ каярахри çулсенчи пек чикĕсĕр хаярланса çитмен пулнăха. 1912 çул тĕлне лару-тăру сывлама та май пулман. Ун чух Российăри халăхсен ăс-тăн культурин мĕнпур пурнăçне сĕмсĕр реакционер тата тĕшмĕшлĕх эсрелĕ Кассо министр хăйĕн усал мĕлкипе хупăрласа тăнă. Çавнашкал условисенче тăван чĕлхепе мĕн те пулсан пичетлесе кăларасси çинчен шухăшлама та май килмен. Ахаль мар вăл вăхăтра пирĕн поэт питĕ те пăшăрханатчĕ, калаçура ун час-часах пессимистла чĕлĕхсем те хурлăхлăн сас парса тăратчĕç. Вăл хăйĕн капланса çитнĕ пултарулăх кăмăлĕ валли çул шыратчĕ, каярах вăл çав çула чи малтан живопись искусствинче кура

пуçларĕ. Константин Васильевич 1912 çулта живопись енĕпе чăнах та нумай ĕçлерĕ, ун чух вăл Художествăсен академине кĕме те шухăшларĕ.

Юлташла калаçусенче К.В. Иванов живопись искусствине чылай мала хума тăрăшатчĕ, ку ĕнтĕ, паллах, мана ĕнентерме мар, поэзишĕн ыратакан хăйĕн чунне пăртак та пулсан «улталама» кирлĕ пулнă.

— Акă санăн умăнта икĕ япала, — тетчĕ вăл мана, — сăвăсен тетрачĕ тата илемлĕ картина. Эсĕ, паллах, малтан картинăна пăхатăн, унтан тин сăвăсен тетрадьне асăрхатăн: тен, эсĕ ăна алла та илмĕн. Сăвă вулакансем патне çиттĕр тесен ăна пичетлемелле, — кун çинчен халь пирĕн шухăшлама та хал çитмест. Картинăна çыратăн та — пичетлеме те кирлĕ мар, ăна капла та нумай çын курма пултарать. Çапла ĕнтĕ, эпир хамăрăн ĕмĕт-кăмăла, хамăрăн шухăштуйăма художник сăркăчĕпе анчах калайăпăр...»

Унтанпа хĕрĕх çул ытла иртрĕ. К.В. Иванов шăп çак сăмахсенех калатчĕ теме хăюлăх çитмест ман. Анчах вăл шăп çак шухăшсене калана пирки никам та ан иккĕлентĕр.

Ун чухнехи цензурăн нимĕне те уяман тытамаклă аллине эпир букварь ал çыруне пичете яма ирĕк ыйтнă чух питĕ лайăх туйрăмăр. Хусанта пурăнакан цензор (вăл Çут ĕç министерствине кĕрекен Хусан вĕренӳ округĕ çумĕнчеччĕ) пире темĕнччен тата темĕн чул муталарĕ: хăш-пĕр статьясемпе сăмах çаврăнăшĕсене хурата-хурата пăрахрĕ, хăшне-пĕрне хăйне кирлĕ пек темиçе хут «тӳрлеттерчĕ», çак айкашăва пула пирĕн букварь çĕнĕ 1912/13 вĕренӳ çулне ĕлкĕреймерĕ. Манăн шкул ĕçĕсем пуçланнипе Чĕмпĕртен каймалла пулчĕ, вара эпĕ букварь ал çырăвне Константин Васильевич аллине патăм, цензура хистес пулсан улшăнусене мансăрах тума шанса хăвартăм. Анчах ман хыççăн К.В. Иванов ал çырупа урăхран терт курман: часах цензурăран букваре çапса кăларма ирĕк çитнĕ. Калас пулать, çакă та Иван Яковлевич чеелĕхĕсĕр иртме пултарайман: ĕç пĕр вырăнта чăлханса тăнине кура вăл букварь вĕçне турă кĕллисем кĕртме сĕнет, çакăн хыççăн цензура кăмăлĕ калтах каять.

Çапла пирĕн букварь, эрне хамăр шухăшланă пекех тĕрĕс-тĕкел пулмасан та, çутă кун курчĕ. Букварĕн юлашки страницисем валли хатĕрленĕ методикăлла кăтартусем çапăнмарĕç, вĕсен вырăнне цензура кăмăлне йӳнеçтерме панă кĕлĕсем йышăнчĕç. Хуплашкан 3-мĕш страницинче кăна методикăлла кăтартусенчен илнĕ кĕске сыпăксем тухрĕç. Калавсем валли тунă çапăнман ӳкерчĕксем пирки те букварьте уйрăммăн пĕлтернĕччĕ, вĕсенче çитес кăларăмсенче

пама пулнăччĕ. К.В. Иванов çав паха ўкерчĕксене хăй виличченех усранă пулмалла, вĕсем çухалсан та — кайран кăна çухалма пултарнă.

Кил-йыш архивĕнче манăн чылайранпа К.В. Ивановăн виçĕ çырăвĕ, И.Я. Яковлевăн тăватă çырăвĕ упранчĕ. Константин Васильевичăн çырăвĕсем поэтăн çав вăхăтри шухăш-кăмăлне уçăмлăн каласа паратчĕç. Кунта ман çакна та калас килет: Константин Васильевич çырăвĕсенче, вăл ун чухне çитĕнсе çитнĕ каччă пулсан та, юрату тавраш тĕлĕшпе чăлăм та çукчĕ. Чăнах та, тĕлĕнмелли те пур пек: икĕ çамрăк тус пĕр-пĕрин патне çыру çўретнĕ, анчах яш чĕрене канăçсăрлатса тăракан туйăм-туртăмсем çинчен вĕсен çырăвĕсенче пĕр ытарлă сăмах та пулман. Константин Васильевич чĕри, паллах, ку туйăма та пĕлнĕ, анчах ун çинчен вăл никама та шарламан. Вăл хăйĕн характерĕпе питĕ пытарăнчăк этемччĕ, вăл çынсемпе асăрханса кăна юлташланнă, асăрханса тус пулнă. Поэт хыççăн ун архивĕнче çыруярусем сахал юлни те вăл пурнăçра пытарăнчăк кăмăллă пулнине пĕлтерет.

И.Я. Яковлев ман пата çырнă çырусенче педагогикăлла шухăшсем малти вырăн йышăнатчĕç. Вĕсене вăл акă мĕн пирки янăччĕ. Чăвашла çĕнĕ букварь çапăнса тухнă хыççăн Иван Яковлевич мана чăваш шкулĕсем валли класра вуламалли кĕнекесем хатĕрлес ĕçе пикенме сĕнчĕ. Ку шухăша эпĕ хапăл тусах йышăнтăм. Çак ĕçпе ларнă май чăрмавлă ыйтусем тухас-тăвас пулсан эпĕ яланах И.Я. Яковлев патне канаш ыйтса çыраттăм. И.Я. Яковлев ман çырусене ответсăр хăварман, вăл дидактика тата методика кăтартăвĕсемлĕ çырусем çыратчĕ, çул май вĕсенчех чăваш шкулĕсен кунĕ-çулĕ, халăха çутта кăларас ĕçĕн пуласлăхĕ, чăваш экономики çинчен хăйĕн шухăшĕсене пĕлтеретчĕ. Хĕрарăмсене хутла вĕрентесси çинчен Иван Яковлевич уйрăмах хытă калатчĕ, çакна вăл культурăсăрлăхпа тĕттĕмлĕхе пĕтерес тата чăваш çыннисен кулленхи пурнăçне лайăхлатас ĕçре тĕп мелсенчен пĕри тесе шутланă. Чăвашсен пурнăçне экономика тĕлĕшĕнчен çĕклес пирки Иван Яковлевич ытти мелсен хушшинче çĕр ĕç культурине лайăхлатасси çине те пысăк шанчăк хуратчĕ, ял хуçалăхĕнчи тупăшлăрах йўплешсене — сад ĕçне, хурт-хăмăр ĕрчетессине — лайăхрах аталантарма сĕнетчĕ. Çак тĕллевпех Иван Яковлевич хăйĕн шкулĕнчи вĕренў курсне çĕр ĕç никĕсне вĕренмелли çĕнĕ предмет кĕртет, ăна вăл ял хуçалăх кĕçĕн шкулĕсен программин виçипе тăвать. И.Я. Яковлев шухăшĕпе, Чĕмпĕрти Чăваш шкулне вĕренсе тухакансем учитель пулсан ялти шкулсен çумĕнче кăтартуллă хуçалăхсем уçмалла,

вĕсен урлă çĕр ĕçлекенсемшĕн пур енчен те витĕмлĕ примерсем парса тăмалла пулнă. Çак шухăшсене вăл уйрăм калаçусенче те, анлă çырăвĕсенче те тĕплĕн çутатса пама тăрăшатчĕ.

Юлашкинчен ман çакăнта К.В. Иванов пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе çыхăннă пĕр тивĕçсĕр хахате хирĕçлес килет. Çав хахать тăрăх, И.Я. Яковлев К.В. Иванова «Библи» мăшкăлĕ тунă пулать: вара поэт «Библие» куçарса асапланнипе «Нарспи» хыççăн лайăх япала çырайман имĕш; вăл «Библине» пулах чахуткăна кайнă, пултарулăх ĕмĕтне татнă, пурнăç драмине чĕрре кĕртсе вĕçне çитернĕ... Чăвашсен паллă драматургĕ И.С. Максимов-Кошкинский хăйĕн «Константин Иванов» ятлă пьесинче тĕп конфликт шăп çакă суя хахате илнĕ. Ку хахатĕн никĕсĕ çук. Иван Яковлевич «Библи» куçарма К.В. Иванова нихăçан та хушман, хушма та пултарайман, — мĕншĕнни каярах паллă пулĕ.

Тĕрĕссипе, Константин Васильевич никам хушмасăр, хăйĕн ирĕкĕ тĕлĕшшĕн «Библири» хăш-пĕр сыпăксемпе, вĕсене литература произведенийĕсем пек илсе интерес-леннине лайăх астăватăп. Уйрăмах вăл Соломонăн «Юрăсен юррине» юратса пăрахнăччĕ. Кирек камшăн та паллă, çакă юрату илемĕ çинчен хавхаланса юрланă юрă — художество тĕлĕшĕнчен паха произведени. «Юрăсен юррине» вуласа Иванов çапла калатчĕ:

— Мĕншĕн ку япалана сăвăлла çырман-ши! — тетчĕ.

Тен, Константин Васильевич çак произведение чăвашла сăвăласа куçарас тĕлĕшпе ĕçленĕ те пулĕ, анчах хăй кăмăлĕпе, И.Я. Яковлев пусмăрланипе мар. Ахăртнех, кам та пулсан К.В. Иванова çак ĕç çинче ларнине курнă-и тен — асăннă хахать çакăн пек çеç çуралма пултарнă.

Пĕр-икĕ сăмах «Библие» чăвашла куçарни çинчен тата К.В. Иванов вăл ĕçе хутшăнма пултарманни çинчен. Библие чăвашла куçарасси 1912 çул тĕлне вĕçленсе çитнĕ теме пулать. 1911 çулта «Библин» иккĕмĕш пайĕ — «Çĕнĕ завет» пĕтĕмĕшпех пичетленсе тухрĕ, пĕрремĕш пайĕн («Кивĕ завет») куçарăвĕ вăл вăхăтра юсавраччĕ. Ун чухне «Библи» Российăра икĕ чĕлхепе — славянла тата вырăсла пулнă. Иккĕшне те вĕсене грек чĕлхинчен куçарнă — славянла авалрах, вырăсла каярах. Библин славянла тата вырăсла тексчĕсем хушшинче чылай çĕрте пысăк уйрăмлăхсем пур. Çав текстсен тĕрĕслĕхне тĕпчесе пĕлме — вĕсене грекла текстпа танлаштарса пăхмалла, ку текст питĕ пысăк авторитетра, мĕншĕн тесен грекла Библие тӳрех авалхи еврей чĕлхинчен куçарнă. Çак кăткăс ĕçпе — Библи чĕлхине тĕрлĕ чĕлхесемпе тĕрĕслесе пăхассипе — грек чĕлхине аван пĕлекен

академик-пупсем М.П. Петровпа И.Д. Дормидонтов ларнă. Библие чăвашла куçаракансем те çавсемех пулнă. К.В. Иванов грек чĕлхине пĕлмен, çавăнпа та Иван Яковлевич ăна Библие куçарас ĕçе те, куçарнине юсас ĕçе те хутшăнтарайман.

К.В. Иванов чунĕн драмине урăх çĕрте шырас пулать, вăл Библи çинче ирĕксĕр ларнинче мар, пулсан та урăхчинче — çав вăхăтри ылханлă условисем пирки поэт хăйĕн ĕçне пичетре курма пултарайманнинче, — çавă ĕнтĕ унăн ĕмĕтне-шухăшне, унăн планĕсене тĕвĕленнĕ-тĕвĕленмен пĕтерсе тăнă. Çакна астуса тăрсан мĕншĕн К.В. Иванов «Нарспи» хыççăн çичĕ-сакăр çул хушши пĕр пысăк произведени те çырманни паллă пулать. Иккĕленмелли çук, поэтăн çĕнĕ произведенисем çырас пирки ытарма çук ырă шухăшсем, плансем пулнă, кун çинчен унăн дневникĕсенче тата тетрачĕсенче юлнă кĕске çырăмсем те аван калаççĕ. Тен, унран лайăх произведенисем татах та юлнă пулĕ, анчах вĕсем пирĕн пата çитеймен. Çапах та тӳррине тӳрех калас пулать, К.В. Иванов хăйне хăй пĕтĕмĕшпех поэзие парайман, мĕншĕн тесессĕн вăл хăйĕн произведенийĕсем вулакансем патне çитессе шансах пĕтереймен. Ку вăл чăн-чăн поэтшăн чăнах та калама çук пысăк драма.

1955

ШИЛЛЕР ЧĂВАШ ТЕАТРĔНЧЕ

Искусствăн йăли — йăлăхтармăш. Çапах та унăн тупсăмне эпĕр хамăр ăнланăва тарăнлатнăçемĕн хăюллăн уçса пыратпăр. Аслă искусствăн чăрмавлă тĕрекĕсене çавăрса илесси вăл пирĕншĕн, чăваш ĕç халăхĕшĕн, — вăйлă кĕрешӳ. Ку кĕрешĕве тухма пули-пулми вăй-хал, ăçтиçук хĕçпăшал — айван та шанчăксăр. Ку кĕрешӳре тăвăл пек капланса тăракан кăмăл, çивĕч те тĕреклĕ туйăм тата ĕмĕртен ĕмĕре пиçĕхсе пынă культурăлăх кирлĕ. Виççĕшĕнчен иккĕшĕ пур пирĕн, çĕршыв вĕсене пурнăçра халиччен пулман хаярлă кĕрешӳпе çĕкленсе тăракан тапхăрта туянчĕ, анчах виççĕмĕш тĕлĕшпе эпĕр çамрăк-ха, виççĕмĕш тин çеç аталанать.

Чăваш ĕç çыннин ирĕклĕхĕ вун пиллĕкре тетпĕр пулсассăн, унăн çак ирĕклĕхне тĕрек парса илемлетме килнĕ искусстви те вун пилĕк çул урлă тин çеç каçать-ха. Анчах вун пиллĕкпе вун пиллĕк хушшинче уйрăм уççи пур. Патшан вун пилĕк çулĕ этемĕн вăй-халĕ тата вун пилĕк çул нарастаран (так ахаль) тăкăннине пĕлтерет пулсан, пирĕн кĕске вун пилĕк çул вăл — иртнĕ ĕмĕртен ĕмĕре, ватă ĕмĕрсем нихăçан та парайманнине татса панă çĕнĕ тапхăр. Çапах та эпĕр ăна ача ĕмĕрĕ тетпĕр, мĕншĕн тесен ун малашĕ — ӳсĕм, çак ӳсĕм татти-сыпписĕр ăруран ăрăва çăмиллĕн илĕхсе памалла.

Çак çырура пирĕн Чăваш театрĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ çинчен калама кăмăл пур.

Чăваш театрĕ çамрăк. Унăн ӳсĕмĕ тĕрлĕ сăлтавсене пула сикчĕллĕн çитĕнсе пынă. Çавăнпа та эпĕр унта чăн-чăн театр чĕрçи çинче аталаннă вăйăçсене таяпах шырама тивĕçлĕ мар. Ĕнер-виçĕм кун суха патĕнчен килнĕ уй-хир ачисем — пирĕн артистсем. Уй-хир е вăрман ĕçĕнче эпĕр

пурте — «хамăра хамăр ăста», мĕншĕн тесен аннен кăкăрĕнчен уйăлсанах пире «çак тĕнче» хăйĕн каçарусăр ытамĕпе çавăрса илнĕ. Çак вăрманпа уй-хир ывăлĕ-хĕрĕсене сценăн искусствин йăлисене хăнăхма темрен те йывăр пуласси кирек камшăн та паллă.

Çавăнпа та пĕтĕм Шупашкарĕпех «Чăваш театрĕ: Шиллер — «Хаярлăхпа юрату» тесе çуйăхакан афишăсем чылайăшĕн кăмăлне çÿçентерсе те илчĕç пулĕ. Чăнахах та, искусствăн сĕткенĕпе йăл илсе ÿсмен чăваш ăçтан-ха нимĕçсен тĕнчипех паллă классикĕ енне кармашма пултарĕ? Е тата пĕр-пĕр чăваш ачи, комсомолец, çÿхе туйăмлă Фердинанта ăçтан-ха ÿкерсе илме пултарĕ? Фердинант, XVIII ĕмĕрĕн «чи паха чечекĕ», мĕнпур тĕнчене хăйĕн супинкке ĕмĕчĕсем витĕр çех кураканскер, юрату текен япалана «турă» вырăнне картаканскер, хăйĕн мĕскĕн юратăвĕ урлă çех тĕнчен тасамарлăхне, тÿре-шаран ирсĕрлĕхне хирĕç тăма мĕскĕнле хăтланаканскер, — XX ĕмĕршĕн вăл ытлашши этем. Михайлов — чăваш ачи, комсомолец, хура тăпра ăшĕнчен шăтса тухнă пирĕн ĕмĕр чечекĕсенчен пĕри, нимĕнле çанталăк мăшкăлĕнчен те хăраман ÿсĕм палли, мĕнпур çамрăк ăс-хакăлне, пархатарне ĕç халăх искусствишĕн пама килнĕскер, — çак çамрăк паянхи пурнăçпа Фердинант пек пулас пулсассăн Фердинантăн та хăй вăхăтĕнче Михайлов пек пулмалла пулнă. Фердинант — Михайлов. Паян кун пĕр-пĕрне ăнланса илейми икĕ çамрăк, пĕр-пĕринпе килĕшме пултарайми икĕ хĕç. Ыттисен тĕлĕшпе те çав сăмахах. Пĕр-пĕр Елчĕк ачи Молодовăн ĕлĕкхи президент пулмалла иккен, пули-пулми пьесăра мар ку, авалхи искусствăн мĕнпур çитĕнĕвĕсемпе пиçсе çитнĕ классикла трагединче.

Çавăнпа та тÿрех калас килет: чăваш театрĕ «Хаярлăхпа юратăва» ăмсанса хăй çине калама çук пысăк ответлăх тиенĕ. Чăваш театрĕ аслă искусствăн мĕнпур чăрмавăн тупсăмне хăюллăн уçса Фердинанта Михайлов артист урлă кăтартасшăн пулнă, çак икĕ хирĕçĕве пĕр вăя пăхăнтарса искусствăн паттăрлăхне систересшĕн пулнă.

Чăваш театрĕ хăй ĕçне турĕ! Эпĕр Михайлов комсомолец урлă XVIII ĕмĕрти черченкĕ чĕреллĕ çамрăка куртăмăр. Молодов пире тăрана пĕлми чап туйăмĕшĕн хăйĕн тăван ачине те хĕрхенмен тÿре-шара çыннине кăтартрĕ, Медников ăншăрт чĕреллĕ, чее те намăссăр президент тарçине кÿчĕ. Çак пысăк çĕнтерÿ. Çак çĕнтерĕве искусство ĕçне чĕререн-чунтан юратса, малалла мĕнпур пултарулăха çĕклесе пыракан çынсем анчах тума пултараççĕ. Çак çĕнтерÿ çамрăк артистсен ÿсĕмне, вĕсен кăмăлне тивĕçлĕн майлаштарса ертсе пынипе анчах пулма пултарнă.

Çакна çыраканăн шухăшĕ — чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче пирĕн театр илнĕ çитĕнӳ çинчен кĕскен каласси анчах. Нимĕнле çитĕнӳ те çитменлĕхсĕр пулмасть. Вĕсем çинчен ыттисем калĕç.

1932

«ТАКМАКСЕМ» КĔНЕКЕ УМ СĂМАХĔ

Октябрь революцийĕ чăваш ĕç халăхне панă аслă тивĕçлĕхсенчен пĕри вăл — юрă тивĕçлĕхĕ.

Хăйĕнчен хăй шикленсе тухакан пӳлĕннĕ сасă чăваш ĕç çыннин юрри-сăввинче пĕтрĕ. Сывлăшсăр аптăранă юрă кăкăрĕ уçăлса кайса кăмăл тулли çаврăна пуçларĕ. Авалхи юрă — хăйĕн вилĕмне куçкĕрет курса тăракан халăхăн йăпанчăкĕ çех пулнă пулсан, паянхи юрă — çав вилĕме çĕнтернĕ хыççăн килнĕ савăнăç.

Чăваш ĕç çынни хăйĕн пурнăçри вырăнне шайласа илчĕ, пурнăç тупсăмне тупрĕ — пĕччен-супинккен мар, пĕрерĕн-икшерĕн мар — пĕрле, Октябрь сасси мобилизациленĕ пĕрлĕхпе. Ёмĕр ĕнереймен пурнăç кĕсли килĕшĕве килчĕ: пĕр çуклăхпа мĕскĕнлĕх çинчен çех пĕлтерекен пиншер пăсăк сас вырăнне — пĕр сасă — пин-пин илем паракан янтравлă симфони кĕрлесе кайрĕ...

Акă сирĕн аллăрта пĕр танлĕрех кăна сборник. Кунта чăвашсен хальхи такмакĕсем, сăввисем. Мĕн çинчен кăна юрламасть паян ĕç çынни? Унăн калаш пек пурин çинчен те «пĕрер çавра» юрă пур. Акă Совет самани тухнă. Чăваш ĕç çынни хăйĕн чăн çулне Совет урлă анчах курать — кун çинчен вăл савăнăçлă, паттăр юрласа ярать. Акă класс тăшманĕсем аманнă çуначĕсене сармашкăн пикенчĕç, ĕлĕкхи тивĕçлĕхĕсене каялла çавăрма тăрăшаç, анчах хăйĕн кунне курнă ĕç халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тăшманăн ĕмĕтне илĕхме памасть. Çак вăхăтри кĕрешӳ те юрă-сăвăра лайăх палăрать. Акă революцие пула «çын пулнă» чăваш хĕрарăмĕ, хĕри-праç — вĕсем вĕренеççĕ, советсенче арçынсемпе тан ĕçлеме тытăнаççĕ, кун çинчен те юрăллă илемлĕ сăмах сахал мар. Акă колхоз тапхăрĕ пуçланса каять. 1917 çул ĕç халăхне кӳнĕ ĕмĕтсем нихăçанхинчен ытларах пурнăçланма тытăнаççĕ. Класс кĕрешĕвĕ аçа та çиçĕммĕн тăвăлса тăрать. Кулак, супинкке йăли, тĕн, тĕттĕмлĕх, тĕшмĕшлĕх — нихăçан пулман хаярлăхпа çĕнĕ ĕçе хирĕç чĕвен тăраççĕ. Кунта та хăватлă юрă хăйĕн вырăнне йышăнать, вăл кĕрешӳре чи витĕмлĕ хĕç-пăшалсенчен пĕри пулса каять. Çавăн пек меслетлĕ хатĕрех кулакĕ те тытма пăхать, анчах ĕç çыннин çиллес хĕççи тата та витĕмлĕрех

тивет. Колхоз самани çинчен калакан сăвăсем ку сборникре чăн пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсем пурте пирĕн колхозсем епле ўссе, тĕрекленсе пынине аван каласа параççĕ. Çавăн пекех чăваш ĕç халăхĕ промышленноçшăн, çул-йĕршĕн кĕрешнине ку сборникре курма пулать. Сывлăх юррисем те сборникре чыслă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Сборнике йĕркеленĕ чухне чи малтан Чăваш правительствин пĕлтĕр уйăх çурă хушши ялсенче ĕçленĕ культура экспедицийĕн материалĕсемпе усă курнă. Тўрех калас пулать, сборникри чи витĕмлĕ, илем енчен чăн тулли сăвăсем пĕтĕмĕшпех тенĕ пек экспедици пухнă материалсенчен. Çавăн пекех ку сборнике майлаштарнă чухне тĕпри тата районсенчи хаçатсенче тухнă юрă-сăвăсемпе те усă курнă. Сăвăçсенчен çак юлташсен сăввисем кĕнĕ: Аттайăн, П. Васильевăн, Ваçанккан, Митта Ваçлейĕн, Хутарăн, Красновĕçĕннин, Арсланăн, Хăмачăн (Çĕмĕрле), Блиновăн («Осоавиахим» колхоз старикĕ), Евграфовăн («Хĕрлĕ ялав» колхоз старикĕ), Казаковăн (колхоз каччи) тата ыттисен те.

Çакă сборник чăвашсен хальхи юрри-сăввисене, такмакĕсене пухса кăларас ĕçре пĕрре ярса пусни анчах пек. Чылай çитменлĕх пулма пултарать çакă малтанхи утăмра. Ун çинчен вулакансем хăйсен шухăшне пичет урлă каласса кĕтетпĕр. Çитес сборниксем туллирех, илемлĕрех, тирпейлĕрех тухасси çак сборнике вулакансен кăмăлĕнчен те килет.

Çапах та эпир çакă кĕнеке, унта çырнă юрă-сăвăсем чăваш ĕç халăхĕ хушшинче, çамрăксен вăйăйисенче, уявсенче, хĕрлĕ улахсенче, акатуйсенче — пур çĕрте те тĕпелте пулĕ тетпĕр.

1934

ПОЭТ ТАТА ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ

(Митта Ваçлейĕ Турхан районĕнчи «Коммунар» хаçат çумĕнчи литкружок пухăвĕнче тухса калаçнинчен)

Эпĕр чĕлхе пуянлăхĕ çинчен калаçнă чух яланах вырăс халăхĕн литература чĕлхине аса илетпĕр. Ку вăл вырăссен литература чĕлхи, унăн ўсĕм çулĕ хальтерех аталанма пуçланă нумай-нумай чĕлхесемшĕн чăнахах та кăтартуллă тĕслĕх пулса тăнине пĕлтерет.

Александр Сергеевич Пушкинчен (1799—1837) вырăссен пархатарлă литература чĕлхи пулман. Патшалăх чĕлхи

хăйĕн чăлханчăк формисемпе, асар-писер çаврăнăçĕсемпе — ăнлани-ăнланми патрак чĕлхе пулнă. Вырăс аристократийĕ хăйĕн тăван чĕлхипе калаçман — француз чĕлхипе усă курнă. XVIII ĕмĕрте пăртак йăл илме пуçланă литература чĕлхе тĕлĕшпе е, пĕр енчен, вырăс чĕлхин тĕп саккунĕсене пăсса французла хуçкаланă, е, тепĕр енчен, вартаман-чутламан юман чĕлхе пулнă.

А.С. Пушкин хăй ўсĕме кайнă чух чи малтан вырăс халăхĕн литература чĕлхи çинчен калаçнă: «Пирĕн чĕлхе ытла та çаврăнăçăр, кĕрĕс-мерĕс чĕлхе, — тенĕ вăл. — Пĕр-икĕ витĕмлĕрех сăмахпа тўлесе хурас шухăшшăн темĕн чул сăмах купалама тивет», — тенĕ.

Çавăнпа та Пушкин çамрăклах çивĕч, витĕмлĕ, шалти вăйпа хускалса тăракан ĕç-хĕллĕ литература чĕлхишĕн хăйĕн калама çук паттăр талантне пама тытăннă. Çак аслă ĕçе пурнăçлама вăл ыттисем пек французсем патне кивçене кайман е халăхра манăça юлнă, мăкалнă славян чĕлхине пуç çапман, чăн-чăн пурнăçлă чĕлхепе — халăх чĕлхипе хăюллăн усă кура пуçлнă. Пушкин халăхăн чĕлхе пултарулăхне тивĕçлĕн сăнаса чĕлхен вăйне, унпа мĕнле усă курсан мĕнле хăватлăх, витĕмлĕх тупма пулассине аван пĕлнĕ. Анчах Пушкинăн чĕлхи, ăна хут пĕлекен çынсем пурте ăнланма пултараççĕ пулсан та, вырăс ялĕн чĕлхи мар. Вăл вăхăтри пурнăçпа шухăш ăнлавĕсем тĕлĕшĕнчен тăвăр пурăнакан хресчен халăхĕн чĕлхийĕ мар. Пушкин халăх чĕлхийĕн тĕп саккунĕсене пăхăнса ун çаврăнăçĕнчен чи кирлине, чи ыррине, çивĕччине, ĕмĕр пурăнмаллине, шухăша уççăн татса параканнине илме пĕлнĕ.

Пархатарлă хатĕрсемпе авăрланнă чĕлхене Пушкин çўллĕ культурăн аллине тыттарнă. Урăхла каласан, вырăссен унччен Европа май чылай аталаннă культурине тивĕçлĕ пек тăван чĕлхе панă. Çав чĕлхене культурăн унченхи çитĕнĕвĕсемпе, аталанăвĕпе мĕнле килĕштермеллине, ку килĕшў хăватлă чĕлхе, литература чĕлхи тăвассине хăйĕн паттăр ĕçĕпе хăй аслă сăвăçă кăтартса панă.

Пирĕн тăван чĕлхе — чăвашсен литература чĕлхи, Пушкин суйласа илнĕ майсемпех ўссе пырать. Çуллен-çул чăваш çĕршывĕнче социализмлă культура çĕкленсе пынă май чăваш чĕлхи çĕнĕ сĕткенпе, çĕнĕ вăй-хăватпа тулать, авалхи кив йăптăх-тутăха тăкать, çуталнăçем çуталать, çивĕчленнĕçем çивĕчленет, пирĕн халăх ăна хăйĕн витĕмлĕ хĕç-пăшалне хăйрасах тăрать. Анчах кирек мĕнле хĕç-пăшала та тыткалама пĕлни кирлĕ, унсăрăн вăл хăйĕн чаплă ĕçне тума пултараймасть. Чăваш халăхĕ çакă хĕç-пăшала юрă-сăвăсенче, халап-юмахсенче питĕ те пысăк ăсталăхпа тытать.

Халăх чĕлхи сăвă-юрăра, халап-сăмахра, ахаль калаçура, ĕçре, савăнăçра — ăçта, хăçан мĕнле çаврăнăçсем тăвать, çавсене пурне те тĕпчес, вĕренес пулать. Халĕ эпĕр халăхăн илемлĕ сăмахне пухса вĕренес ĕçпе чылай пысăк ĕçсем пуçласа янă. Ку тĕлĕшпе пирĕн Аслăлăхпа тĕпчев институчĕ ĕçлет, çак ĕçех Шупашкарта нумай пулмасть уçăлнă Халăх пултарулăхĕн çурчĕ илсе пырать. Писательсен союзĕ те ку ĕçе тимлĕхпе тăвать. Октябрь революцийĕ 20 çул тултарнă тĕле ятарласах халăх пултарулăхĕн антологине кăларас тетпĕр. Ку кĕнекере халăх пултарулăхĕн чăн-чăн ахахĕсем, нихăçан хăйсен хакне çухатман юрă-сăвăсем, халап-юмахсем, калавсем пулмалла. Ку кĕнеке пирĕн çамрăксене чĕлхе пуянлăхне алла илес тĕлĕшпе чăнах та пысăк пулăшу парĕ. Антологине кăларас ĕçе сирĕн пурсăрăн та хутшăнма тăрăшмалла. Халăх ăс-тăнне, ун ĕмĕчĕ-шухăшĕсене кăтартакан авалхипе хальхи халап-юмахсене, юрă-сăвăсене пухма тăрăшăр, ку ĕçпеле Шупашкарти Халăх пултарулăх çурчĕпе тачă çыхăну тытăр.

Эпĕ паçăрах А.С. Пушкин вырăс халăхĕн пуян чĕлхине çÿллĕ культурăн аллине панă терĕм. Культурăлла чĕлхе анчах хăйĕн аслă ĕç-хĕлĕпе халăхăн телейне тăвас ĕçре пулăшать. Апла пулсан пирĕн, пулас писательсен, чĕлхене ыт ахальлĕн пăхнипе çех çырлахмалла мар, унпа социализм ĕмĕрĕнчи культурăпа тан тăрса усă курмалла. Чĕлхесĕр культура пулман пекех, культурăсăр нимĕнле литература чĕлхи те пулма пултараймасть, çавăн пекех культура тулашĕнче тăракан çын та писатель пулма шанчăк тытаймасть.

1936

Н.А. ДОБРОЛЮБОВ

— Хăçан килĕ чăн-чăн кун-çул? — çакăн пек пулнă аслă ыйту, историн çÿл ту тăррисем çине улăхма хăват тупнă этемсен чунне-чĕрине, кăмăлне-хавасне çĕклентернĕ аслă ыйту.

— Мĕне кирлĕ мана сирĕн ыранăр, сирĕн пулас кун-çулăр, — пултăр мана сив çу ăшĕнче пиçнĕ, сив çу çинче ăшаланнă самăр телей! — тенĕ мещен, этемлĕх умне тухса тăракан çивĕч ыйтусенчен хăраса мамăк тÿшек ăшĕнче пĕркенчĕкпе пуç çийĕн витĕнсе пытанса пурăннă мĕскĕн мещен.

— Çĕпĕр, каторга пулĕ сан кун-çулу, кун-çул çинчен шухăшлама хăятăн пулсан! — тенĕ жандарм, этемлĕхĕн чи ырă чечекĕсене татса пăрахас ĕçе хăйĕн тивĕçлĕ кун-çулĕ вырăнне шутласа пурăннă шыçмак жандарм.

— Пуç пул та хуçа пул! — тенĕ самодур, тĕттĕм патшалăхăн чăрсăр геройĕ, намăса пĕлмен, кашкăр чĕриллĕ пуçтах самодур.

Тĕттĕм патшалăх пулнă Раççей, пуçтах самодурсем тĕттĕм патшалăхăн çăрттан пуллисем пулнă, чăн пысăк çăрттанĕ тĕттĕм патшалăхăн престолĕ çинче ларакан аслă самодурĕ пулнă.

— Хăçан килĕ чăн-чăн кун-çул?! — тесе самодурсен тĕттĕм патшалăхĕнче, лачака кӳлĕри шапасем пек мещенсен тавралăхĕнче кăшкăрашмашкăн тимĕр касма пултаракан хăюлăх кирлĕ пулнă, çулăмланса çунан вут вăйĕллĕ хăрама пĕлмен хастарлăх кирлĕ пулнă. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен çапла кăшкăрни «хăçан килĕ» этеме тивĕçлĕ пурнăç тенинчен ытларах хальхи пурнăç, паянхи кун чăн-чăн пурнăç мар тенине пĕлтернĕ. Çавăн пек хăюлăх, çавăн пек хастарлăх çĕр çул каялла çуралнă Николай Александрович Добролюбовăн çителĕклех пулнă. Вăл çирĕм пилĕк çул кăна пурăннине аса илсен çавăн пек тан тапса тăракан хăюлăхпа хастарлăх татах тĕлĕнтерет. Тĕлĕнмелле! — мĕншĕн тесен Добролюбов идейисемпе шухăшĕсем Хĕвел анăçри цивилизаци çулĕ çине тăнă патшалăхсенче мар, революциллĕ традици сарлака пулнă патшалăхсенче мар, Раççейре, самодурсен атă кĕлли айĕнче таптанса выртнă Раççейре, тĕттĕм патшалăхра шăтса тухнă. Добролюбовпа пĕр вăхăтрах пурăннă Н.Г. Чернышевские шутламасан, пĕтĕмпех те Добролюбовченхи вăхăтра икĕ çăлтăр кăна çуталса тăраççĕ: В.Г. Белинский, тепри — А.И. Герцен. Тата та — Белинскийĕн шухăшĕсем улшăнкаласа пынă пулсан, юлашки çулсенче кăна вăл демократизм йĕрĕ çине çирĕппĕн тăнă пулсан, Добролюбов — иккĕленессе пĕлмен демократ пулнă, Герцен либерализмпа демократизм хушшинче силленкелесе тăнă пулсан, пĕтĕмĕшле илсен кăна, юлашкинчен кăна демократ пулнă пулсан, Добролюбов — алла пĕр чĕтретмесĕр либерализма хирĕç кĕрешсе пынă. Ытларах та — Добролюбов социализм енне туртăннă демократ пулнă. Энгельспа Маркс ăна социалистла Лессинг тенĕ, Дени Дидропа танлаштарнă ăна. Добролюбов марксизм идейисен çӳллĕшне хăпарайман, наукăлла социализма тинкерсе илеймен вăл, социализмĕ унăн — утопиллĕ социализм пулнă. Анчах социализмĕ утопиллĕ пулнă пулсан та, Роберт Оуенăнни пек, Шарль Фурьенĕнни пек, урасене çат хуçса ларса пуян çынсем хăйсен пурлăхне пырса парасса кĕтсе ларма хушакан социализм пулман, кĕрешĕве, действие чĕнекен, революци ĕçне хутшăнма чĕнекен демократизмла социализм пулнă, хресченсен революцийĕ урлă социализм патне

пымалла тесе калакан вĕрентӳ пулнă, — Добролюбовĕ хăй — хресчен революцийĕн идологĕ пулнă. Çавăн пирки ĕнтĕ ырă ят вырăнне хурса ăшă сăмахпа асăнать В.И. Ленин Добролюбова.

«Халăхусенчен çӳле сикеймĕн!» — тет халап. Добролюбов та марксизм çӳллĕхне хăпарайманшăн хăй мар айăплă, кая юлнă Раççей, жандармсемпе пупсен Раççейĕ айăплă. Вăл вăхăтра Раççейре рабочи класс пулман, Добролюбов та рабочисен класĕ ирĕке тухмалли условисем çинчен калакан вĕрентĕвĕн никĕсне хывакан маçтăр е Хĕвел анăçĕнче вăйланса пыракан марксизма ăнлантарса паракан пропагандист пулма пултарайман. Хăлхасенчен çӳле сикме пултарни мар историлле этемсен тивĕçлĕхне кăтартса тăракан виçе. Мĕн чухлĕ вăл-ку этем хăй пурăнакан вăхăтри прогрессивлă туртăмăн çӳллĕшне улăхма пултарнă — ак мĕнле чăн-чăн виçе. Добролюбов Чернышевскипе пĕрле хăй вăхăтĕнчи обществăллă пурнăçри прогрессивлă туртăмăн чăн çӳллĕ картĕнче тăнă, — ак мĕн аслă тивĕç, аслă ят парать ăна.

Добролюбовăн публицистла ĕçĕ-хĕлĕ литературăлла критика ĕçĕ-хĕлĕ витĕр уйăрайми çыхăнса тăрать. Чаплă публицист анчах мар, чаплă критик та пулнă вăл. Чăн сăмаха тӳррĕн калама, экономикăпа общество ӳсĕмĕн ыйтăвĕсене тӳррĕн татса пама май та пулман вăл вăхăтра. Добролюбов пек публицистсем тӳррĕн калама май çуккипе, художествăллă произведенисене критикленĕ май хăйсен юратнă шухăшĕсене каласа хăварнă. Раççей вăл — «тĕттĕм патшалăх», «самодурсен» патшалăхĕ тесе тӳррĕн калама май пулман, драматург Островскийĕн призведенийĕсене пăхса тухнă май образсене тишкерни урлă каласа пама май тупнă. Çавнашкалах Добролюбов Гончаровăн «Обломов» ятлă романне критикленĕ май Раççейри обломовщинăн тымарĕсене кăтартса парать. Тургеневăн «Накануне» ятлă романне пăхса тухнă май вăл хăйĕн ăс-пуçа касса тăракан ыйтăвне — «Когда же придет настоящий день?» («Хăçан килĕ чăн-чăн кун-çул?») — тăратса хăварать. Добролюбов критики ун чухнехи пуç пулса тăракан самодурсен тытăмне сарлака çупкăпа питрен чантлаттарса çутăлтарса яни пулса тăрать. Пусăрăнмасть Добролюбовăн кăмăлĕ-шухăшĕ. Островскийĕн «Гроза» ятлă драми тухсан, Катерина тавралăхри пусмăра чăтаймасăр шыва сиксе вилнине курса, «тĕттĕм патшалăха та çутă пайăрки çите пуçларĕ» тесе хĕпĕртет Добролюбов. Çутă пайăрки те, протестла шыва сиксе вилни те хĕпĕртеттерет Добролюбова.

Марксизм теорийĕпе хĕç-пăшалланман Добролюбов кри-

тикипе эстетики çитменлĕхсемсĕр мар, анчах хăй вăхăчĕшĕн вĕсем малта пыракан критикăпа эстетика пулнă. Татах та — Добролюбов критикăпа эстетика тĕлĕшĕнчен Белинский картĕнче те чарăнса тăмасть, малалла каять вăл. Белинский критикипе эстетики просветитĕлле пулнă пулсан Добролюбовăн критикăпа эстетика демократизмшăн кĕрешнипе, активлăхпа, ĕç-хĕлле пулнипе уйăрайми çыхăнса тăрать.

Добролюбов публицист тата критик анчах мар, поэт та пулнă. Добролюбовăн поэзийĕ те публицистикăпа критикăн революцилле йĕрĕ çинче тăрать. Добролюбов поэзийĕн ĕнĕрĕвне Некрасовăн поэзийĕннипе çеç танлаштарма пулать.

Чăнлăхшăн, тасалăхшăн, ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ Добролюбов çамрăкла вилсе кайнă пирки чăн-чăн этеме тивĕçлĕ кун-çул килнине анчах мар, чăн-чăн кун-çулшăн чăн-чăн кĕрешӳ тапранса кайнине те курайман. Вун çиччĕмĕш çулхи революципе пĕрле, Совет Союзĕнче социализм никĕсне хывнипе пĕрле Добролюбов пек çынсен çулăмлă ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ. Совет Союзĕ, социализмшăн кĕрешни — ак мĕн чăн-чăн кун-çул. Пирĕн çĕнтерӳре пирĕн умĕнхи кĕрешӳ паттăрсен ĕçĕ-хĕлĕ те курăнать.

Сирĕн, Добролюбовсем, кĕрешӳ кăлăх пулман, çурхи шывпа юхса кайман вăл, кĕрхи çилпе те вĕçсе кайман, сирĕн хăватăр пирте, сирĕн паттăрла кĕрешĕвĕр çунатлантарать, хаваслантарать пире, сирĕн ĕмĕтĕрсене маларах вĕçтерĕпĕр тетпĕр эпир паян.

1936

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ИЛЕМЛĔ СĂМАХЛĂХĔН ПУЛАС АНТОЛОГИЙĔ

Чăваш халăх пултарулăх çурчĕ тата Чăваш писателĕсен союзĕ Октябрь революцийĕ çирĕм çул тултарнă тĕле «Чăваш халăх пултарулăхĕн антологине» хатĕрлеççĕ. Ку кĕнекере ĕлĕкхи саманапа хальхи саманари халăх хушшинче çуралнă чĕлхе пултарулăхĕн чи паха произведенийĕсем — юрăсăвăсем, такмаксем, халап-юмахсем, юптарусем, калавсем, ваттисен сăмахĕсем тата ыттисем те пулмалла.

Чăваш халăхĕн чĕлхе пултарулăхне пухса çырас ĕç чылайранпах пырать, ку ĕçе ăслăлăх çыннисем, писательсем, ялти учительсем, хаçатсен корреспонденчĕсем пайтах вăй хунă. Анчах халиччен фольклор произведенийĕсем — мĕн пухнă пекки — час-часах архивсене, музейсене, редакцисен

«васкавсăр» сĕтелĕсене е урăх çавнашкал «тусан пухакан» вырăнсене кĕре-кĕре выртнă. Чăнах та ĕнтĕ, фольклор ал çырăвĕсене архив «авăрне» пăрахнă чух Пимен ал çыравçă евĕр шанмашкăн та пулĕ:

Хăçан та хăçан пĕр-пĕр ĕçчен манах
Çак ятсăр ĕçĕм-тертĕме тупайĕ,
Вăл ман пекех лампадине çутатĕ,
Вара кивелнĕ хартисем çинчен
Саманан тусанне тасатĕ те
Çак чăн калавсене çырса илейĕ...

А.С. Пушкин. «Борис Годунов»

Çапах йăвашрах каласан кун чул çех шанчăк çителĕксĕр, кă чухне унпала кăна çырлахни сахал, мĕншĕн тесен халăхăн чĕлхе пултарулăхĕ çине эпир урăхларах пăхма вĕрентĕмĕр ĕнтĕ — тахçанах çавă кирлĕ пулнă та.

Халăхăн чĕлхе е музыка пултарулăхĕ — фольклор — авалхи культурăн пирĕн пата çитнĕ калама çук еткерлĕхĕ (наследстви), вăл — алăпа çырман кун-çул çырри, халăх историйĕ, халăхăн мĕн авалтан аталанса пынă ўсĕм çулне кăтартакан, çав çул çинчи тертпе асапсем çинчен, ĕмĕтпе шанчăксем çинчен, усалпа ырă хушшинчи нихçан килĕшĕве килмен аслă кĕрешўсем çинчен калакан кĕнеке. Ку кĕнекене нимĕнле «ĕне те çиме» пултарайман.

Чăваш çĕршывне хĕвел тухăçĕнчен тискер халăхсем килсе çаратни, ун хыççăн вырăс улпучĕсем, тиекĕсем, пупĕсем килсе тыткăна илни, «çичĕ ютсемпе» «килти» тăшмансем темиçе ĕмĕр хушши халăхăн юлашки чĕлне, юлашки ĕмĕтне çисе пурăнни — çаксем çинчен пире чăваш юрри-сăввисем, юмах-халапĕсем ĕмĕрне тĕс кайми сăнлăхсемпе каласа параççĕ. «Уксах Тимĕр Пўлере илни» пек юмахсенче, «Удел хресченĕсен юрри» пек юрăсенче чăваш халăхĕ нумай ĕмĕр тăршшĕ хăйĕн сая кайнă телейĕ çинчен куççульпе пăшăрханса юрланă. Анчах нимле хурлăх та халăхăн кăмăлне пĕтĕмпе хуçайман, унăн ĕмĕтне пĕтĕмĕшпе çухатайман — ку тĕлĕшпе пирĕн халăх чăн-чăн паттăр. Халăхăн ăсĕ, кăмăлĕ Али, Юман, Ту, Шур Упа-хăлха паттăрсене çуратать.

Али паттăр, вырăссен былина пăхаттирĕ Илья Муромец пек, вăтăр çул ытла хĕн-хур курса пурăннăскер, пĕр телейлĕ кун паттăр пулса тăрать, хăюллă шухăшпа çĕклене: асаплă çĕре тепĕр май çавăрса лартма, «çĕрĕн хăлăпне» шырама тухса каять. Темиçе пуçлă çĕленсемпе кĕрешсе çĕнтернĕ хыççăн Али хайхи хăлăпа ярса тытать, мĕнпур сулăмпала çаврăнса илсе çĕре тепĕр май çавăрса лартать.

«Тĕлĕнмелле ырлăх ĕç халăхĕн тивĕçлĕхĕ пулса тăрать, çĕрĕн çĕн енĕпе çавăрса илекен паттăра халăх халĕ те пулин халапра асăнать». (Ку юмаха Бараев Вл. Шăмăршă районĕнче çырса илнĕ.) Тепĕр паттăр — Ту, тĕттĕм патшалăхра çуралнăскер, çĕленсен аллинче тăракан уйăхпа хĕвеле туртса илсе халăх валли парать. Çавăнтанпа уйăхпа хĕвел ĕç халăхĕшĕн çутатса тăма тытăннă тет. (Ку юмаха Хĕрлĕ Чутай районĕнче çырса илнĕ.)

Фольклор иртнĕ вăхăтăн палăкĕ анчах мар, вăл хальхи саманан чĕрĕ сассийĕ те. Ёмĕрхи тыткăнран хăтарнă революци çинчен калакан юрăсем, халап-юмахсем сахал мар пирĕн (сăмахран, «Энтри юмахĕ»). Вун тăхăр çул хушшинче пирĕн çĕршывра мĕнле кăна çитĕнӳсем тунă — малтанхи çитĕнӳсенчен пуçласа паяна — сталинла Конституци кунне çитиччен иртнĕ героикăлла тапхăр халап-юмахсенче, юрăсенче ĕмĕрлĕхех сăнланса юлнă. Килес ăрусем валли халăх хушшинче çуралнă ятсăр пултарулăх истори тĕлĕшĕнчен калама çук хаклă материал пулĕ, мĕншĕн тесен унра пирĕн саманан чăн-чăн хăвачĕ, энтузиазмĕ сăнарланнă.

Çавăнпа та чăваш халăх чĕлхе пултарулăхĕн чи лайăх произведенийĕсене пухса пĕр пысăк кĕнеке туса кăларасси пархатарлă ĕç вырăнĕнче шутланмалла.

Асăннă кĕнеке ăслăлăх сборникĕ пулмĕ, вăл, пирĕн шухăшпа, халăх хушшинче литература произведенийĕсемпе тан çӳремелле, ăна пирĕн колхозниксем килте, клубсенче, улахсенче, пĕр çĕре пухăнса ларакан вырăнсенче тата ытти çĕрте те кăмăла уçса вуламалла пултăр. Халап-юмахсен сюжетлăхĕ, характерлăхĕ, ваттисен сăмахĕсен çивĕчлĕхĕ, юрă-сăвăсен илемĕ, витĕр илекен сатирăн хăвачĕ — пĕр сăмахпа каласан, халăх пултарулăхĕн литературăлла эстетикăлла пахалăхĕ пулас кĕнекене иксĕлми интереспа вулама пулăшĕ.

Халăх пултарулăхĕн çурчĕ аллинче халĕ çĕр ытла халап-юмах, вунă пин ытла йĕрке юрă-сăвăсем тата пайтах ваттисен сăмахĕсем пур. «Колхозник ялавĕ» хаçат ирттерекен конкурс пире çĕр ытла юмах парать. Кунсăр пуçне ăслăлăх учрежденийĕсенче, тĕрлĕ редакцисенче, халăх пултарулăхĕн произведенийĕсем нумай выртаççĕ. Çав материалсенчен чи лайăххисене пирĕн антологи валли суйласа илмелле пулать. Анчах халиччен пухнă материалсем — вăл халăх пултарулăхĕн хулăн сийĕсене хăпăтма пуçлани анчах-ха, шалтан шала шыраса кĕресси — малашне те пĕр чарăнмасăр пулса пымалли ĕç. Антологин редакцийĕ хăйĕн ал айĕнчи материалĕсем çине анчах шансан, пулас кĕнеке хамăрăн кăмăл ыйтнă чухлĕ паха пулаймĕччĕ. Çавăнпа та çак кĕнекене

тăвас ĕçе пирĕн общественность сарлакан хутшăнĕ тетпĕр. Ăслăлăх çыннисем, поэт-писательсем, культура ĕçĕнчи юлташсем, колхозниксем, рабочисем хăйсем пĕлекен интереслĕ халап-юмахсене, юрă-сăвăсене — ĕлĕкхисене те, хальхисене те — антологи валли ямалла.

Пĕр-икĕ сăмах халăхăн чĕлхе пултарулăхне мĕнле çырса илесси çинчен. Халăх сăмахлăхне пухса çырас ĕçе питĕ тĕплĕ тумалла. Ку ĕçе тума кă чухне чылайăшĕ пултараççĕ пулин те, çапах пурте пĕр пек яваплăхпа ĕçлемеççĕ, хăшĕн-пĕрин (çырса илекенсен) хăйĕн «пултарулăхне» ытларах кăтартас килет, халăх пултарулăхне «ревизи» тума чун туртать, вара вĕсен темиçе çĕр çул ĕлĕкрех çуралнă паттăрĕсем (патшасем, вăрăсем тата ыттисем те) юлашкинчен, самани майĕпе, колхоз ударникĕсем, председателĕсем пулса тăраççĕ, «пике патша Иванпа халичченех савăнса пурăнса нумай пулмасть ачи-пăчисем йышлă пирки патшалăхран пысăк пособи илнĕ» тата ытти те.

Ĕлĕкхи юмахсене хальхисемпе ирĕксĕр «авлантарни», сыпăнтарни — килĕшӳсĕр, капла хăтланни вăл халăх пултарулăхĕн ытарма çук произведенийĕсене сиен кăна тăвать. Кун пек каласа çĕнĕрен халап-юмах шухăшласа кăларма тăрăшакансене эпир пĕртте чăрмантарасшăн мар, тăрăшăр, пархатарлă ĕç. Пирĕн сăмах — вульгаризаторсене хирĕç. Пирĕн сĕнӳ: юмах-халапсене халăх хушшинче мĕнле калаççĕ, сăвăюрăсене мĕнле юрлаççĕ, çавăн пекех çырса илмелле.

Çакна та асăрхас пулать: юмах-халап калаканĕ çырса илекенĕ çине-çине ыйтса йăлăхтарнипе анчах ыт ахальтен каласа ан патăр, хăйĕн «екки кайнă чух» мĕнле калать, çавăн пек калатăр, çавăн пек çырса илмелле пултăр, — ун чухне кăна произведенире пултарулăхăн хакĕ йӳнелмест, чакмасть.

Вăрăм халап-юмахсене çырма эртелпе лайăх. Халап-юмах ăста яракан çын вăл — произведенин содержанине ахальлĕн кăна каласа параканскер кăна мар, çав вăхăтрах — артист та, художник та. «Кăмăл кайнипе» каланакан халап-юмаха халапçă мĕнле калана, шăп çавăн пекех кайран ниепле те астуса çырма çук. Çавăнпа та халапçă сăмахĕсене калана вăхăтра виççĕн-тăваттăн çырса пырса çырнисене кайран пĕр-пĕринпе тĕрĕслемелле. Мĕнле калана, çаплах çырăнтăр, çырса илекенсен кăмăлне пула ан улшăнтăр.

Çырса илнĕ япаласен айне камран çырнине, кам çырнине (вĕсен адресĕ, кĕске биографийĕсем пулсан та питĕ лайăх) тĕплĕн çырса хурас пулать, унтан Чăваш халăх пултарулăх çуртне (г. Чебоксары, ул. Герцена, 9) тирпейлесе ямалла.

1937

ЮРАТСА ÇЫРНĂ КĔНЕКЕ

(С.В. Элкер. «Ешĕл хунав». 1952)

Ăслă çын пĕр тĕм касать, —
Пин икел лартса тухать...

П. Хусанкай

Чăваш АССР талккăшĕн виççĕмĕш пайĕ — вăрман. Ку вăл, халавлă чĕлхепе каласан, управлă халăхăн юратнă пурлăхĕ, перекетлĕн тытакан ешĕл ылтăнĕ. Чăнах та, истори пăтăрмахĕсем тĕлĕшпе нихăçан та тĕк тăман çĕршывра çакăн чул пурлăха тирпейлĕ те ĕмĕтлĕ халăх çеç сыхласа тăма тата, сыхланипе сахал, аталантарса пыма пултарнă. Уйрăммăн Сăр массивĕ çинчен каласан, ун пек пуян та пархатарлă вăрман пиртен кăнтăралла та (Атăл тăрăх), явкай еннелле те (Дон çийĕпе) урăх çук. Ун урлăшĕ тĕл-тĕл утмăл километра çитет, тăршшĕ çĕр аллăран та иртет. Мĕн кăна ўсмест, кам кăна пурăнмасть çак аслă вăрманта! Флорăпа фауна тĕлĕшĕнчен Сăр вăрманĕ Совет Союзĕпе чи пехиллĕ кĕтессенчен пĕри. Анчах ку ен пĕрре те упа ушахлăхĕ текен улах кĕтес мар. Кунта республикăн харсăр экономикăллă, çўллĕ культурăллă вунă районĕ вырнаçнă. Промышленноçлă пысăк хуласем, уçланкăсенче ларакан тăтăш ялсем — çĕр ĕç тата ал ăсталăх коопераций ĕсем, вĕсене кал-калăн çыхăнтарса тăракан ям тата авто çулĕсем, вăрман кăларакан юхан шывсем, икĕ çĕртен каçакан икĕ чугун çулĕпе вĕсен юпписем — çаксем пурте кунти пурнăç вăйĕсем хальхинле, коммунизм тăвакан халăхăн саманине тивĕçлĕ шайпа тапса тăнине пĕлтереççĕ. Анчах çак вăрманта мыскаралла контрастсем те сахал мар — авалхипе хальхи, иртнипе пуласси час-часах кунта çума-çумăн пурнаççĕ: те хирĕçўре вĕсем, те мирлĕ кĕрешўре? Ĕшнере çўрекен колхоз ĕнисем патне пăши пăрушĕ пырса тухни; Пасна çинчи хăнтăрсем, вăрман юхтаракансем иртсе каймассерен хăйсен хуралчĕсене çĕнĕрен ятлаça-ятлаça юсани; упа мучи хăйĕн çырлаллă шурлăхĕсене вĕреннĕ хĕрсене туха-туха хăратни — çакă контрастсем вĕсем халап та, чăнлăх та. Контраст мар-и: киремет юманĕ патĕнчен хальчченех шикленсе иртекен сурпанлă ватă кинемей тата унăн ывăлĕ — Атăлçи институтне пĕтернĕ вăрман ăсти, наукăсен кандидачĕ, чăваш юманне çĕнĕ меслетсемпе хунаттаракан ятлă кĕнекеçĕ?

Сахал ĕнтĕ Сăр тăрăхĕнчи вăрманта ал тĕкĕнмен хĕрхальлĕ чăтлăхсем. Пирĕн республика вăрманпа, çакă экономикăра паллă вырăн йышăнса тăракан пурлăхпа, тивĕçлĕ

таран усă курать, вăрман тата унăн промышленноçĕ Чăваш çĕршывĕн чысĕ те, илемĕ те.

Çакна астуса тăрса ирĕксĕрех пирĕн чăваш çыруçисем пирки ўпкелешес килет. Мĕскершĕн тараватлă вăрмантан пăрăнаççĕ вĕсем, ма шалалла кĕмеççĕ, мĕскершĕн романтикăллă вăрман теми пирĕн литературăра хальччене ал тĕкĕнмен хĕрхальлĕ чăтлăх пулса тăрать?

Рехмет Хусанкая, тавтапуç Элкере, — çак тунсăхлă сасса чи малтан илтекенсем çавсем пулчĕç. Хусанкай, ачасем кăмăлне тесе, вăрман çинчен ытарма çук илемлĕ сăвăсем çырчĕ, поэзи техĕмне чухлакан ăстасем ку сăвăсене пĕр сасăпа классикла! тесе хак пачĕç. Чăнах та, вĕсем — ламран лама, ăруран ăрăва, хрестоматирен хрестоматине каймалли çутă пуласлăхлă сăвăсем! Анчах вĕсем пирки эпир сывлăх пулсан тепĕр чух калаçăпăр. Халь — С.В. Элкерĕн очеркĕ «Ешĕл хунав» çинчен. Тўрех калас пулать, кун пек пултаруллă ĕç очерксен жанрĕпе чăваш çырулăхĕнче сахал пулкаланă. Иртнĕ çулсенче пире Леонид Коробовăн «Атăл çинче» ятлă очеркĕ савăнтарсаччĕ, — унта эпир ăрăмлă поэзи мĕнпур чиперлĕхпе ялтăраса тăнине куртăмăр. Чăнчăн поэзи никĕсĕнче, пирĕн шухăшпа, виçĕ пăрăс: чĕлхе илемĕ, чĕре хĕлхемĕ тата çунатлă ăс, — саманана тивĕçлĕ илем, хĕлхем тата малалла чĕнекен пуçаруллă ăс. Çак элементсем пулсан поэзи вара, нимĕнле жюри пиллемесен те, çын çине тухма кăкăр урлă теветсем çакмасан та, пултаруллă пурнăçпа пурнать, халăхăн чĕлхи, чĕри, ăсĕ пулса тăрать. Çак пархатарлă элементсем Элкер очеркĕнче пур.

Очеркăн фабули пур, сюжет схеми, канви питех те ансат. Тарăнвар шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен ачасем, хăйсен учителĕ Павел Петровичпа пĕрле, çывăхри вăрмана колхоз грузовикĕ çине тиенсе экскурсине каяççĕ. Вăрман хуçалăхĕн конторĕнче çак ачасене Рунгш хушаматлă лесничий ырă кăмăлпа кĕтсе илет. Вăл, вăрман çĕршывĕнче ўссе çитĕннĕ нумай вĕреннĕ чăваш çынни, ачасене вăрман тăрăх илсе çўрет, ăнланмалла тата илемлĕ чĕлхепе халăх пурлăхĕ — вăрман мĕнле ырлăх пулса тăни çинчен каласа парать. Çавă анчах. Ачасем лесничий калавĕ хыççăн вăрман хуçалăхĕн опытлă ĕçĕсемпе паллашаççĕ, унтан хавасла çамрăк сассисемпе ешĕл вăрмана янтăратса киле таврăнаççĕ. Капла каланипе очеркра ăмсанмалли ытлашши нимех те çук пек. Анчах вуласа пăхăр-ха эсир кĕнекине! Мĕн кăна курмастăр эсир унта, мĕн кăна илтместĕр, мĕн кăна туймастăр! Çитменнине тата, çакă вăл пĕтĕмĕшпех хамăр патăрта, пире мĕн ачаран хўтлĕх панă Сăр вăрманĕнче!

Лесничин ачасен аудиторийĕ валли чăн-чăн маçтăрла йĕркеленĕ лекцине автор-художник, шкулта проекци аппарачĕпе усă курнă пек, паха иллюстрацисемпе çутатса пырать. Эпир, çак кĕнекене вулакансем, хамăр çĕршывра мĕн тери хаклă усăллă йывăçсем ўснине, мĕнле сив кайăксем тата вĕçен кайăксем пурăннине пĕлетпĕр. Ку тĕлĕшпе писателĕн эрудицийĕ чăнах та халланмаллах вара. Тĕплĕн пĕлетпĕр-и эпир чăваш йывăçĕсем çĕр-çĕр тĕслĕ тавар пулнине, вĕсем хальхи техникăпа авăрланнă пин-пин çын алли витĕр тухса çĕр çĕрелле саланнине? Лайăх пĕлетпĕр-и эпир нумай область ачисемшĕн И.А. Крылов урлă çеç паллă пулса тăракан юптару персонажĕсем пирĕн патăрти вăрмансенче паян кун та пурăннине? Упа, кашкăр, тилĕ, мулкач, пурăш, сăсар, пăши, пакша, юс, шашкă, ăтăр тата ыттисем те. Нумай пĕлетпĕр-и эпир кĕпшĕл, сульха, хуркук, рункăш, улатăпа, карăк, ăсан, пăчăр кайăкĕсем çинчен? Вĕсен ятне автор чăвашла кăна мар, авалтан пирĕн шкулсенче йĕркене кĕнĕ ырă йăлапа, вырăсла та каласа парать. Ку кăна мар, автор хăйĕн натуралиста тивĕçлĕ витĕр куçĕпе асăннă кайăксен уйрăмлăхĕсене ăстан палăртать, — кунăн сасси çапла, ку çавăн тĕслĕ тесе каланипе кăна çырлахмасть, тата хăшĕ мĕнле вĕçнине те кăтартать (пĕри чăмса, тепри парлатса). Экскурсинчи ачасем çаксене пурне те май килнĕ таран хăйсем сăнаççĕ. Питĕ лайăх çырнă автор «ешĕл хунавсен» питомникĕ çинчен калакан пайне. Касăлса тавар пулакан йывăçсен вырăнне, ăслă çынсен хавалĕпе, çĕнĕ ăру кашласа ўсет. Пурнăç сыпăнсах пырать. Паянхи хунав хулăсенчен 100—150 çултан йĕкĕр ытама кĕрейми юмансем çитĕнмелле. Час мар. Çавăнпа шанчăклă пултăр тесе йĕкеллисене аксах тăмалла, шăтнине-пĕрне пăхса ўстермелле. Паянхи хулă вăл пулас кĕреш, ăна упрамалла. Çак шухăша сăнарлас тĕлĕшпе автор çырса кăтарнă туратлă патаксем пирки тухнă тав калама çук вырăнлă, кунта вара Элкер художник кăна мар, педагог та, — вăл чăн сăмаха, суя юлташлăхăн принципĕсене пăхмасăр, тўррĕн (кăрттăн-кĕрттĕн мар!) куç кĕрет калама вĕрентет.

Вырăнлă — автор тăвакан экскурссем те. Вырăнлă — лирикăллă отступленисем те. Çавăнпа та ку очерк прозăпа çырнă поэма пек вуланать, савнă Короленкăна аса илтерет.

Кунта ытлашши, тĕлсĕр, виçесĕр япала ним чухлĕ те çук. Ачасен ушкăнĕ çине кĕтмен çĕртен мулкачпа тилĕ сиксе тухни те чăнласах ĕненмелле.

Çапла ку пĕчĕк кĕнеке илемлĕ те пуян чĕлхипе килентернисĕр пуçне нумай пĕлў парать, ĕмĕтлĕ шухăша ярать.

Чăваш çамрăкĕсем вăрмана тата вăрман ĕçне хавас. Мĕн чухлĕ пирĕн вăрман ĕç паттăрĕсем — Улатăрта, Киряра, Буинскинче, Çĕмĕрлере? Атăл çинчи пĕртен-пĕр вăрман институтĕнче, Йошкар-Олара, вĕренекенсен тăваттăмĕш пайĕ — пирĕн республика çамрăкĕсем. Сăмах май каласан, вăл институтăн директорĕ те чăваш, малтанхи ўсĕмри комсомолец, халĕ палла ученăй, СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ — Данилов. Нумайрах пулччăрччĕ çакăн пек çынсем, вара пирĕн çĕршывăн чапĕ — вăрман хăлхаллă, хир куçлă — тата та лайăхрах сарăлĕччĕ.

Çакăн çинчен калать, çакăн пек шухăшсене çуратать С.В. Элкерĕн «Ешĕл хунав» ятлă произведенийĕ. Ана вăл Тăван çĕршыва юратса, çамрăк чĕресенче амаланакан туйăмсене вăратса, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пурнăç тăвакан совет халăхĕн пултаруллă вăй-хăватне сума суса çырнă. Хавас чунлă ачасем кăна мар, эпир те, шăпчăк юрринчен тахçанах писнĕ хумхавсăр чĕресем, ку кĕнекене халавлăн хапăл турăмăр. Анчах ку кĕнекен Сăр вăрманне илсе кĕрекен малтанхи пионер сукмакĕ çеç темелле. С. В. Элкер, çĕнĕ тема патне кайса килнĕ пирвайхи ходок, Сăр вăрманĕ чăваш писателĕсемшĕн иксĕлми çăл куçĕ пулса тăнине пире çак кĕнекипе лайăххăн каласа пачĕ. Кунта ачасем валли те, ваттисем валли те çырмалăх пур. Çамрăксем пирĕн пушă вырăнта çуралман, вĕсен йĕри-тавра пурлăх, çак пурлăха малалла яма учитель пек ăслă, тăван пек илемлĕ, юлташ пек маттур кĕнекесем кирлĕ.

Рецензи туллирех пултăр тесе кĕнекен çитменлĕхĕсене те кăтартмалла. Ку пиртен тухман йăлана чўклес тĕлĕшпе çакна çеç калăпăр. Кĕнекери иллюстрацисене художник васкаса туни сисĕнет, çул май, икĕ ĕç хушшинче, е ирпе, вут пуççинче, тенĕ пек. Тĕплĕн çырнă кĕнекене тĕплĕн иллюстрацилемелле. Сизов пек пултаруллă художникшăн ку кĕнекере материал пайтах. Кунсăр пуçне, пĕр ўкерчĕк айне те ăнлантарса çырман: те карăк, те ăсан, те тăмана, те услан?

Пихта йывăççисене С.В. Элкер чăвашла яхтă тет. Эпир хальччен пĕлнĕ тăрăх, яхтă тени хырă йывăççин иккĕмĕш ячĕ. Н.И. Ашмаринпа В.Г. Егоров словарĕсем те çаплах калаççĕ. Эрне яхтăпа пихта янтăрав тĕлĕшĕнчен пĕр майлă, ку ĕнтĕ питĕ те илĕртуллĕ, анчах вĕсем пĕр йывăç мар. Пихта — шур чăрăш. Лиственница чăвашла та пур — лиçван. Çĕпĕрти чăвашсем çапла калаççĕ.

1955

ЛЕТЧИКСЕМ

«...1942 çулхи кĕркунне. Икĕ çамрăк летчик, Валентин Александровпа Андрей Барабошкин, вĕçев шкулне пĕтернĕ хыççăн тӳрех полка, Сталинград патĕнчи фронта каяççĕ». Çапла пуçланать чăваш писателĕ Вл. Садай çырнă роман (Вл. Садай «Летчики». Роман. Перевод с чувашского. Чебоксары: Чувашгосиздат, 1955.) Асăннă кĕнеке пĕр авиаполкăн хаяр кĕрешӳри паттăр кунĕсем çинчен каласа кăтартать. Ответлă заданисем, сывлăшри çапăçусем, тăшмана хĕссе, çĕнтерсе пыни, çав вăхăтрах йывăр çухатусем — хаклă юлташсене ĕмĕрлĕхех çухатни. Тĕрĕс те аван каласа парать писатель пилотсен тертлĕ ĕçĕсем çинчен, хăнăху тата характер енчен пĕр пек мар çынсене çирĕппĕн пĕрлештерсе тăракан пĕр аслă вăй — юрату — Тăван çĕршыва чун хавалĕпе юратни çинчен.

Валентинпа Андрей хушшинчи туслăх — романра вĕсем тĕп геройсем — темĕнле йывăрлăха та чăтать. Хăйне хăй хытă тытакан çирĕп тĕллевлĕ Валентин çăмăлçах Андрее ятлать, ăна ачалла хăтланусемшĕн каçармасть. Икĕ тус хушшине хирĕçӳ кĕрет. Нумай та иртмест, Андрей пĕр çапăçура нушана лекет, вара ăна Валентин хăтарать — тусĕ çине тапăннă тăшман самолетне таранпа аркатать. Çакă вăл чăнчăн салтак туслăхĕ, ăна пула пирĕн этемсем пĕр-пĕринпе тăванран та тăван.

Андрей вилес пек аманнă тусне курма санчаçе пырать. «Хурăнташĕ пулатăн-им?» — тесе ыйтать унран медсестра. «Хурăнташран та çывăхрах — тусĕ!» — тесе ответлет Андрей. Чăн-чăн туслăх çинчен, фронтри совет çыннисем мухтавлă та хĕн-хурлă шăпи çинчен, этемсене пĕр паттăр çемьене пĕрлештерсе тăракан таса та пархатарлă хутшăнусем çинчен калать Садай кĕнеки.

Анчах тĕнче хĕсĕкрех туйăнать романра. Салтаксем кăна мар, вĕсен тăванĕсен шăпи-ăраскалĕсем те ялан Сталинград фронтĕпе çыхăннă. Тем анлăш фронтра туссем-тăвансем пĕрĕн-кайăн тĕл пулаççĕ, паллах — час-час ăнсăртран. Акă ăнсăртран çар хирургĕ Самарин хăйĕн ывăлне, вилмелле аманнă летчика, операци тăвать; ăнсăртран Сапунова врач хăй ĕçлекен госпитальте хыпарсăр çĕтнĕ упăшкине тĕл пулать; ăнсăртран Валентин хăй юратнă хĕрĕн ашшĕпе пиччĕшне курать. Ăнсăртран. Çавăн пек автор усă куракан ытти сăнарлу меслечĕсем те пур çĕрте те витĕмлĕ теме çук. Сăмахран, унăн геройĕсем тăрсан-тăрсан пĕр шухăша каяççĕ, тĕлсĕр-йĕрсĕр асаилӳсене путаççĕ, — çакă вăл часах пистерекен прием.

Халлĕхе романăн пĕрремĕш пайĕ çеç тухнă-ха. Вл. Садай

уменче пысăк та ответлă ĕç. Романра илнĕ кăткăс та нумай енлĕ пурнăç автортан малалла художество меслечĕсем тĕлĕшпе лайăхрах шухăшламаллине, уйрăмах — композици енĕпе тĕплĕрех тăрăшмаллине ыйтать.

1955

САХАЛИНТИ ÇУРКУННЕ

Хветĕр Уяр çырнă «На реке Сок» ятлă калавсемпе очерксен кĕнекинче сăмах çиелтен пăхсан нимĕнпе те палăрса тăман ахаль çынсем çинчен кăна пырать пек. Анчах, астусамăр, мĕн чухлĕ çав çынсенче вăй, илемлĕ кăмăл, пурнăçа юратни, пурăнма пĕлни, пултарулăх!

Кĕнекере уйрăмах Сахалин çинчен çырнă очерксем палăрса тăраççĕ.

Автор чăвашсен пысăк ушкăнĕпе пĕрле тинĕс пăрахучĕ çинче пырать: çынсем çĕнĕ çĕре каяççĕ.

Асса-тĕссе мар, çурт пуç çыннилле чиперрĕн шухăшласа куçаççĕ чăваш колхозникĕсен çемйисем. Вĕсем вăрăм çултан хăрамасăр хăнăхнă вырăнсенчен тапраннă, вăхăтлăха мар — яланлăха.

Эпир куратпăр, Сахалин çĕрĕ çинчи малтанхи калаçăвах — чикĕри катер çинче ĕçлекен лейтенантпа калаçни (лейтенант Украинăра çуралнă иккен, халĕ вăл, хăй калашле, чăн-чăн Сахалин çынни, кил-йышне те кунта куçарнă) çынсене савăнтарать, вĕсем портри магазинсене кĕре-кĕре тухаççĕ, пасара çýреççĕ, вара паçăр çеç çыран еннелле иккĕленсе пăхакансен те сăн-пичĕсем илемлĕн çутăлма пуçлаççĕ. Çĕнĕ çынсене темĕн те интереслентерет. «Çиес килмен çĕртенех Сахалин çăкăрне активсе пăхатпăр, ĕçес килмен çĕртенех Сахалин шывне тутанатпăр», — тесе пĕлтерет автор.

Вуланăçем инçе Сахалин çывхарса килет, «паха пуянлăхсен утравĕ» пирĕн ума пĕтĕм мăнаçлăхпа тухса тăрать. «Чăн, çанталăкĕ кунта хăйне евĕр, — Атăл çинчи пек мар. Ула куракĕсем те кунта ула мар, хуп-хурах, çерçийĕсем те курăнмаççĕ, шаписем те йăлтах урăхла кăшкăраççĕ». Анчах юмахри пек пуян кунти çĕршыв. «Вăрманĕ касса пĕтерес çук, улăхĕ-çаранĕ — ятарласа выльăх усрама тунă тейĕн. Пуллине — хăвăрах куратăр, ĕмĕрне те тытса пĕтерес çук».

Çĕнĕ çĕре куçакансемпе пĕрле эпир Сахалинти совет çыннисен чаплă ĕçĕсене куратпăр, кунта вырăссем, украин çыннисем, молдавансем, мăкшă-ирçесем, белоруссем. Вĕсем нумай çулсем хушши яппун пусмăрлăхĕнче хĕн курнă çĕршыва пурнăç пама килнĕ. Автор пире çул май «Ст. Николайчук» тата «Ст. Росляков» ятлă пысăк мар станцисен

историне каласа парать. Çак вырăнсенче украин çынни Николайчук тата вырăс çынни Росляков Кăнтăрти Сахалина яппун тыткăнĕнчен хăтарассишĕн пынă çапăçура паттăрăн кĕрешсе вилнĕ. Кунта та, аякри çĕршывра, телейлĕ пурнăç чечеклентĕр тесе пуçне хунă вĕсем.

Малалла автор пире çамрăк Углегорск (Кăмрăккар) хулипе ертсе çӳрет. Мĕнле пулĕ-ши вăл тепрер вунă-вун пилĕк çултан? Хула Сахалинăн тĕп пуянлăхĕсем патĕнче никĕсленнĕ, кунта — кăмрăк, тинĕс. «Анчах чăн-чăн пуянлăх — совет çыннисем», — тет Хветĕр Уяр.

Килнĕ çынсем çĕнĕ вырăнпа паллашаççĕ. Пĕр çул маларах килнĕ мăкшă-ирçесем чăвашсене хапăлласа йышăнаççĕ. «Атăл çинче пĕрле пурăнатпăр, атьăр кунта та пĕрлех пурăнар...» — теççĕ тарават янташсем.

Этеме юратни, халăхсен туслăхне сума суни — Уяр очеркĕсен пархатарлă енĕ. Тасан илтĕнекен чĕре çуменчи интонацисем — çакă вăл писатель сассине илем кӳрет, произведение хумхануллă тăвать.

1955

АЛЬБЕРТ (АЛЬПĂРТ) КАНАШ

Эпир Октябрьскинче, Альберт Канаш патĕнче. Хăнисем чылай аякран килнĕ пулсан та, хуçи вĕсене хирĕç тухмарĕ... Вăл вунă çул ĕнтĕ вырăнпа выртать.

Пысăк мар чие пахчи. Улмуççисем те пур. Хăмасем тăратса тунă шилĕк. Унта, ирсерен пуçтарма кирлĕ мар вырăн çинче, кăкăр таран витĕнсе çамрăк çын — çăлтăр куçлă каччă выртать. Ăна тăрса ларма та юрмасть. Анчах унăн илемлĕ те хастар сăн-пичĕ, чăлтăртатса тăракан куçĕсем халь-халь çĕкленсе каяс çамрăк ăмăрт кайăка аса илтереççĕ. Шанчăксăр чирпе пăталаннă çын кун пек пулмасть! Ку вăл нихçан та шанчăка çухатман паттăр. Ахаль мар ун юратнă поэчĕ (Çеçпĕл Мишши): «Шанчăк пуррисем телейлĕ», — тенĕ.

А. Канаш, инкекне пăхмасăрах, халăхпа пĕр шухăшкăмăлпа пурăнать. Унăн кулленхи хăнисем — колхозниксем, районта ĕçлекенсем, каникулти студентсем. Кунсăр пуçне райком лартса панă телефон тата радио унăн пурнăç çыхăнăвне чĕртсех тăраççĕ. Вăл активлă ялкор, вырăнти хаçат унăн çивĕч сăмахĕсĕр тухмасть. Çакă ĕнтĕ — пултаруллă пурнăç — этем вăй-халĕн çăл куçĕ... Чăнах та, этем тени пултарулăхра иккен! Пултарулăх пулсан этем сывă.

Иксĕлми пултарулăх сунатпăр сана, çамрăк поэт Альберт Канаш!

1955

ЯКУР АФАНАСЬЕВ ÇЫРНĂ «ТАНТĂШСЕМ» ЯТЛĂ ПОЭМА ÇИНЧЕН

Поэт Якур Афанасьев чылайранпа ĕçлет. Унăн пултарулăхĕ — пирĕн литературăра лăпкăн çеç илтĕнекен сассăн хăйне евĕр çĕнĕ сăмахĕ. Çакă кăшкăравсăр, пысăк претензисĕр сасă пирĕн аталансах пыракан поэзи хорĕнче фон тума кирлĕ сăпатсăр чĕлĕхĕсенчен пĕри кăна мар, вăл сарлака ан (фон) çинче паха тĕрĕсем тĕрлеме пултаракан хăйне сăнарлă сасă та. Çакă сăмахсене поэтăн икĕ кĕнеки тата журналсенче страници-страницип çапăнса пынă сăввисем аван çирĕплетеççĕ. Хавхаланулла пурнăç, хастарлă этем — совет çынни, ăс-кăмăла ăмсантарса тăракан çут çанталăк — çакăнта ăсать хăйĕн пултарулăх хавалне поэт.

Якур Афанасьев ача-пăчасемшĕн çырать. Ача-пăча сăввисенче килĕшӳллĕ темпа тупма пĕлнисĕр пуçне юрăхлă тон илме пĕлни те кирлĕ. Ача-пăча хăйĕнпе ейкеленсе сӳпĕлтетнине юратмасть, ачапа ачалла калаçни селĕппе селĕпле калаçнипе пĕрех. Ача хăйĕн çивĕч интуицийĕпе суя тона часах тавçăрса илет. Ачашăн авторитет — çитĕнни. Çитĕннин ăсĕ те, ĕçĕ-хĕлĕ те, чĕлхи те ачанни евĕр мар — çавă ăмсанулла та ачасемшĕн! Мĕн пĕчĕкрен часрах пысăк пулас кăмăл çĕклет, аталантарать вĕсене. Тĕнчере тĕрлĕрен наци, тĕрлĕрен чĕлхе, анчах ача-пăча нацийĕ те, ача-пăча чĕлхийĕ те çук. «Мемме», «тюттю», «ням-ням» евĕр суррогатлă сăмахсемпе тин çеç чĕлхе кăларакан ачапа та калаçас пулмасть. Ашшĕ-амăшĕн таса чĕлхи — акă вăл çитĕнекен ачана юрăхлă чĕлхе.

Якур Афанасьевăн пултарулăхĕ çак шухăшсен тĕлĕшĕнчен илсен пĕрре те тиркеме тивĕçлĕ мар. Аслăрах юлташ пек, вĕрентекен пек ертсе çӳрет ачасене Афанасьев сăмахĕ. Вăл ачасемпе пĕрле — шкулта, колхозра, хирте, вăрманта, ĕçре, канура, вăйăра, анчах кирек хăçан та, кирек ăçта та хăйĕн ролĕпе вăл — учитель, юлташ. Ку поэтăн ĕçĕнчи лайăхран лайăх ен.

Çакăнтан эпир пирĕн поэт ăсталăх тĕлĕшпе те вăй илсех пырать тесшĕнччĕ, мĕншĕн тесен художествăлла произведенин хăвачĕ, пурнăçлăхĕ автор ăсталăхĕнчен те тӳрремĕнех килет, — анчах унăн «Тантăшсем» ятлă çĕнĕ поэми пире кĕтмен çĕртен йăлтах урăхла материал пачĕ. Ку поэмăна эпир пĕрре те Якур Афанасьевăн ĕçĕ тесшĕн мар. Ун алли мар! Асĕ те, шухăшĕ те унăн, анчах чĕлхи ун мар. Лайăх тема, лайăх идея, композици тĕлĕшпе те сӳрĕк мар, анчах мĕн тери япăх сăвăсем! Нимĕн тирпейлĕхĕ те çук.

Кашни çаврăмрах — е рифми рифма мар, е пусăм вырăнта мар, е грамматика принципĕсене хисеплеменни.

Пĕр задача ун тухмасăр
Кĕç çитетчĕ çур çĕр...

Ку япала — «Чуваш кнеге» саманинчен юлнă карчăк. Чăваш нихăçан та ун пек калаçман.

Ларчĕ, ларчĕ шутлаймасăр,
Ответ пурпĕр — ик çĕр.

Ку пуплев синтаксис тĕлĕшĕнчен те уçă мар, сăвă ĕнерĕвĕ енчен те тиркевлĕ. «Ответ» сăмахра пусăм ирĕксĕр о çине ўкет. Чăн, хорейпа çырнă сăвăсенче ямблă сăмахсем те пулма пултараççĕ, анчах вĕсем сăвăра пытанарах тăмалла, мала тухмалла мар, хорей пусăмне туртса илме вĕсен тивĕç çук, ун пек тусан часах вĕсем хăйсем ютран килнине асăрхаттараççĕ, хăйсене хăйсем тытса параççĕ. Вĕсен сăвăра юлас тесен шăппăн лармалла, сасă вĕсем çине сĕртĕнсе çеç иртсе кайтăр, мĕншĕн тесен вĕсем пуплевре хуçа мар, килĕнтеш сăмах кăна. Эпир илнĕ тĕслĕхре «ответ» сăмах пуплеври тĕп сăмах, логика хистенĕ тăрăх, ăна пирĕн пусса каламалла. Сăвва хорейпа çырнă, вара пирĕн «отве́т» вырăнне «о́твет» тесе вулама килет. Тĕрĕс мар, çакă шухăша уçăмлăрах тăвас пирки тепĕр тĕслĕх илĕпĕр:

Çул май Петĕр кĕрекенччĕ,
Паян ма кĕттерчĕ?

Кунта та хорей хушшине икĕ ямб кĕрсе кайнă (калас пулать, чăваш сăввисене унсăрăн тума хĕн), анчах ку «ютсем» хăйсем кам иккенне лайăх пĕлеççĕ, хăйсене тивĕçлĕ маррине вĕсем хапсăнмаççĕ, пусăм вĕсем çине ўкмест, эпир вĕсем çинчен шăлăнса çеç иртсе кайса тўрех хорейăн виççĕмĕш, пиллĕкмĕш, çиччĕмĕш карчĕ çине пусатпăр.

Çул май Пе́тĕр кĕ́реке́ннчĕ,
Паян ма́ кĕттéрчĕ?

Тўррĕн каласан, çак чăнлăха пăсакансем вуншар çул ĕçлекен поэтсем хушшинче те тĕл пулкалаççĕ. Капла калани çамрăксен çитменлĕхĕсене пĕрре те çырлахтармасть. Эпир, çуллăраххисем, суха кассинчен килнĕ сăвăçсем, хамăрăн ĕç техникине хыпашласа вĕреннĕ пулсан çамрăксем ку тĕлĕшпе урăхла — вĕсен умĕнче малтан килнисен пысăк опычĕ. Пĕр Хусанкай кăна çамрăксемшĕн пĕр пĕтĕм шкул темелле. Халь ĕнтĕ техникăпа авăрланмасăр ĕçе пуçлакан çын самана тулашĕнчи анахорет пек туйăнать. Аслисен опытне тимлĕн вĕренес пулать. Çакă вăл çитĕнў çулне

кĕскетни. Ахаль мар А. С. Пушкин Борис Годунов ячĕпе çапла каланă:

Вĕрен, ачам: васкаварлăн пурнан
Çак пурнăçра — ăспа та сăнавпа
Пире пайтах наука пулăшать.

Рифмăн ролĕ сăвăра калама çук пысăк. Вăл шухăша çапса кăшăллать, пĕр пĕтĕм тăвать, шултăркама памасть. Пĕрне-пĕри йыхравлăн кăчăк туртса тăракан сасăсене пула сăввăн асра юлас витĕмлĕхĕ ўсет. Сăвăри чи илемлĕ сăмахсем — мăшăрлăн янтăраканнисем, рифмăсем. Телейлĕн пĕрлешĕннĕ мăшăр пĕтĕм сăввăн кил-йышне уявлă çутă парать. Анчах рифма тесе сăмахпа сăмаха пусмăрласа мăшăрлантарас пулмасть, вара илем мар, илемсĕрлĕх çуралать.

Якур хăйĕн поэмине рифмăласа çырнă. Анчах çак сăвăсене эпир ниепле те илемлĕн рифмăланă теме пултаймастпăр:

Пăхса илчĕ ик туса вăл
Сив шывпа чаш! сапнăн.
Пурăнасчĕ шăкăл-шакăл
Кулькисем пек туслăн.

———

Ах, ачсем, мĕскер тăватпăр, —
Аллине вăл усрĕ. —
Кĕтерне инке пит япăх,
Пурăнаймасть уколсăр...

———

Ăна хăй тусĕсемех
Хучĕç ят: «механик».
Тахçан вăл хăй ăссĕнех
Çĕмĕрнĕ приемник.

Чăнах та, курăмлă пĕрпеклĕхсем пур кунта (туса вăл — шăкăл, механик — приемник), анчах илтĕмлĕ мăшăр сасăсем — рифмăсем хăйсем пулмалла вырăнсенче пур çĕрте те çук. Рифма — чи малтан илтĕм категорийĕ. Çавна пула пирĕн авалхи ятсăр такмакçăсем, нимĕнле поэтика таврашне пĕлменскерсем, тĕлĕнмелле рифмăсем панă:

Вун ик куккук, пĕр карăш
Авăтаççĕ пĕр харăс.

Совершенство, пулса çитнĕ чăн-чăн ятулăх — акă мĕн çĕклет искусствăна! Улачаран кĕпе çĕлеме те ăсталăх кирлĕ. Этем алли тăвакан япала шăратса янă пек пултăр, ниçта çĕвви-çакки ан палăртăр. Ăс-тăн паракан произведенисене

илсессĕн вара, вĕсенче туса ҫитерменлĕх, пĕлсе туманлăх е «оригиналлăрах» пулам тесе илемри виҫе туйăмне пăхăнманлăх пушшех те пулмалла мар. Сăвă тени хăй хальлĕн ҫуралнă ирĕк сăмах пек курăнтăр. Вăл поэт лаҫҫинче тĕрлĕ материалсенчен шăранса тухнине вулакан ан туйтăр. Вулакана сăввăн метрики те, рифми те, композицийĕ те кирлĕ мар, ăна лаҫри материаллă элементсен ҫӳп-ҫапĕнчен хăтăлнă хăйне хăй янтăраса тăракан пултарулăх вăйĕ кирлĕ. Пĕрремĕш Петĕрĕн палăкне курсан кăмăл ҫунатланса каять, — ăна ĕмĕрлĕх валли чултан-металран тунинчен мар, тĕрлĕ виҫесем илсе тĕрлĕ тăхҫасемпе вартаса чутланинчен те мар, — этемĕн чĕвен тăнă вăй капламне пĕтĕм ăш-чикпе туйса ăнкарнинчен. Ҫак палăка тăвакан ăста чулпа металл кĕмĕрккинчен, авалхи пĕр скульптор калашле, ытлашшине пĕтĕмпех чутла-чутла пăрахнă, этемĕн талпăнса тăракан ҫунатлă шухăшне ҫеҫ хăварнă.

«Тантăшсем» поэмăри сăвăсем хăйсен лаҫăри материаллăхĕнчен тасалайман, кашни ҫаврăмах тĕл пулакан начар рифмăсем шухăша сăвă техники ҫине куҫараҫҫĕ, тĕрĕс мар пусăмсем хăлхана ҫураҫҫĕ, килĕшӳсĕр сăмах ҫаврăнăшĕсем кăмăла тавăраҫҫĕ — тăршшĕпех урлă-пирлĕ выртакан касăккĕсĕк, тăршшĕпех тăхҫа йĕрри, туса ҫитерменлĕх.

«Тантăшсем» поэмăн мастерскойран тухма вăхăт ҫитмен-ха. Ăна искусство произведенийĕ тума чылай вăй хумалла.

1955

КĂСĂЯ ВАҪЛЕЙĔН СĂВВИСЕМ ПИРКИ

Кăсăя Ваҫлейĕ 31 сăвăллă ҫĕнĕ кĕнеке хатĕрленĕ. Сăвăсем вăхăт тĕлĕшĕнчен илсен юлашки 18 ҫул хушшинче ҫырнисем. Ку тапхăр Совет ҫĕршывĕн пурнăҫĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăннине эпир пурте пĕлетпĕр. Хĕн-хурлă вăрҫă, ҫĕнтерӳ, унтан, вăрҫă хыҫҫăн, халăх хăйĕн иксĕлми пултарулăхне коммунизм тăвас ĕҫе парса пыни — Кăсăя Ваҫлейĕ илнĕ вăхăтăн паллă йĕррисем. Анчах, тӳрех калас пулать, самана сăнарĕ поэтăн кĕнекинче — шупкарах. «Поэт яланах халăхăн чĕринче вăркаса тăракан шухăшсене каланă, унăн кĕсле хĕлĕхĕсене самана ҫилĕсем хускатса тăнă» (Ухсай Яккăвĕ). Ҫакă поэзишĕн кирлĕрен те кирлĕ чăнлăха Кăсăя Ваҫлейĕн кĕнекинче эпир ҫивĕччĕн туймастпăр. Поэтăн лирикăлла геройĕ пурнăҫ ҫине ҫиелтенрех пăхать. Чăн ĕнтĕ, ăна пурнăҫ тулашĕнче тăракан ҫын теме ҫук, вăл ĕҫпе те, кăмăлпа та халăхпа — колхозниксемпе пĕрле,

анчах пурнăç ыйтăвĕсем ăна сахал чух шухăшлаттараççĕ, вăл хăйне ялан уявлăн тыткалать, сар кайăк пек юрлать.

Кăсăя Ваçлейĕн сăввисене пĕрерĕн-пĕрерĕн илсен — начарах та теме çук. Вĕсем ăнланмалла, аван янтăраççĕ, техника шăйрăкĕсем, уйрăмах юлашки çулсенче çырнисенче, çукпа пĕрех. Ахăртнех, ку сăвăсем пирĕн пичетре кулленех çапăнса пыракан чылай сăвăсенчен кая та мар. Анчах ку — уйрăммăн-уйрăммăн илсен. Çав сăвăсенех пĕр кĕнекере вуласассăн вара курăм-туйăм йăлтах урăхланать: пĕр юррах пĕр сасăпа темиçе хут юрлани, поэт хăй хăнăхнă пĕр пек мелсемпе тăтăшах усă курни, пĕтĕмĕшлетсе каласан, кĕнеке шалтан та, тултан та чухăнни хытă палăрать.

Кăсăя Ваçлейĕн сăввисен чи пысăк çитменлĕхĕ — фотографилĕх, фактсене çиелтен çеç сăнласа пани. Пирĕн мухтавлă ĕмĕрĕн пархатарĕ чи малтан шалти пуянлăхра, çĕнĕ пурнăç тăвакан этемĕн чунĕ-чĕринче, шухăш-кăмăлĕнче, этем тăвакан ĕç-хĕлĕн аслă пĕлтерĕшĕнче, этем пурнăç çулĕ çинчи йывăрлăхсене çĕнтерсе малтан мала пурăнма ĕмĕтленнинче. Çак çул çинче савăнăçĕ те, хуйхи-суйхи те нумай, пурнăç хŭри пăрнăç теççĕ, ăна питĕ тĕрĕссĕн тытса пыни кирлĕ. Çавăнпа та чăн-чăн поэзи тарăн шухăшсăр, философисĕр пулма пултараймасть, вăл арăш-пирĕш эрешленĕ трафаретлă çаптаркка мар.

Кĕнекери сăвăсенчен улттăш-çиччĕшне («Юмах мар ку...», «Канăç», «Вырмара», «Колхоз хĕрĕ», «Ут çи кĕввисем», «Шăпăрпа турпас») аванах çырнă. Уйрăмах «Юмах мар ку...» тата «Шăпăрпа турпас» килĕшŭллĕ. Кăсăя Ваçлей поэзийĕн ылтăн шăнăрĕ çакăнта мар-и? Шăп çакă вырăнта тарăнран тарăн каймалла мар-и ун? Халăх ăсĕ, философийĕ, юморĕ ку сăвăсенче поэт чунне ытла та çывăх, ытла та килĕшŭллĕ, поэт хăй те ял халăхĕн кулленхи пурнăçĕпе пурăнать, апла пулсан ун хăйĕн поэзи сĕткенне халăх пултарулăхĕн иксĕлми çăл куçĕнчен ăсмалла. Юмахсем, юптарусем, сăвăлла калавсем — халăх поэзийĕн меслечĕсемпе кирлĕ пек усă курса çырнисем — Кăсăя Ваçлейĕшĕн питĕ те ăнăçуллă пулмалла. Унăн ăс та, ăсталăх та, пурнăçа пĕлнипе ăнланни те çитет, анчах хăйĕн вăйне шанни, хăйĕн пултарулăхĕ çине хăй тивĕçлĕ хак хурса пăхни çитеймест-ха. Темĕнле, сăввисене вăл халăх куллен тимлесе ыйтнă тăрăх мар, уявран уява тухса тăракан пĕр стена хаçачĕн редакторĕ хистенипе хăвăртрах кăна çырса пăрахнăн туйăнать.

Уйрăмах асăрханă çитменлĕхсем:

1. **Вăхăтра — тăрать, туйăнать — сад** пек рифмăсем начар. Халăх поэзийĕнчи пек аллитерациллĕ сăвăсенче

начартарах рифмăсем те тиркевлех мар, анчах сăвă аллитерацисемсĕр пулсан йĕрке вĕçĕнчи рифмăсем туллин янтăрамалла.

2. «Кĕмĕл шăнкăрав пек» йĕркере пусăм «пек» çине ўкет. Аван мар.

Пусăм тени хăйсене тĕллĕн тытăнса тăракан сăмахсем çине ўкни лайăх.

3. **Аслă — хаваслă** — юратусăр, ыратусăр çуралнă рифма.

4. «Епле пирĕн сад пуян, мĕн чул тупăш вăл парать» — бухгалтерла проза. «Çутă пĕренесене, пурне те харăссăн йăтса, ўсекен пура çине шап хураççĕ майласа» — каллех сăвă мар.

5. Савнă тусăм салтакран таврăнать-çке,
Çавăнпа ман чун паян савăнать-çке...

Сăвви — тĕлпулун, кĕвви — уйрăлун («Провожала меня мать, провожала»).

6. Ĕмĕрех юратрăм
Эпĕ çав хĕре,
Ăна çĕрĕн-кунĕн
Пытăм сăнаса —

аван мар. Шырав ĕçленçин чĕлхи майлă.

Кĕнеке каплипех юлсан пичете çителĕксĕр. Çĕнĕ, тарăн шухăшлă сăвăсемпе пуянлатмалла.

1955

«КОММУНИЗМ ЯЛАВĔНЧИ» РЕЦЕНЗИСЕМ

Илемлĕ литературăри театр, кино, музыка тата сăнарлу искусствинчи пулăмсене вăхăтра палăртса пырас тĕлĕшпе «Коммунизм ялавĕ» самаях вăй хурать. Кăçал тăватă уйăх çурă хушшинче (майăн 16-мĕшĕччен) хаçатра 26 рецензи пичетленнĕ, вĕсенчен илемлĕ литература енĕпе 13 (шăп çурри), театр енĕпе — 6, кино çинчен — 4, музыка çинчен — 2, сăнарлу искусствипе — 1.

Хаçат пама пултаракан виçе (регламент) иккенне шута илсен, пирĕн рецензентсем хăйсен ĕçне — форма енчен те, содержани тĕлĕшпе те — начарах тумаççĕ темелле: кĕскен те витĕмлĕн çыраççĕ, тĕрлĕ ыйтусемпе сăмахлаççĕ. Уйрăммăнах илемлĕ литература енĕпе çырнă рецензисемпе вăйлăн палăрать, — ĕçе пĕлсе чухласа туни, материала çаврăнăçуллăн тыткалани туйăнать. Ку тĕлĕшпе илсе каласан. Çав вăхăтрах чылай статьясене илсен трафарет тени, йăлăхтарнă тата тĕс кайнă çаптарккасемпе усă курни, схемăлла шухăшлани, çиелтен шăйăрттарни сахал мар.

Искусство трафарета кураймасть, искусство çинчен каласакан сăмах та ахаль çаптаркка ан пултăр, ялан чĕр хальлĕн çиçсе çĕнĕрен илемпе янăратăр. Пĕр шухăшах тĕрлĕ енчен çутатма пулать, çапла тусан çеç унăн чăн-чăн хакĕ, пуянлăхĕ уçăлать. Трафарет шухăша уçаймасть, хупать. Ăçта трафарет — унта шухăш кăларăвĕ, шухăш чухăнлăхĕ.

Сăмахран, ялан çыракан рецензентăн театр çинчен каланă сăмахĕсем пĕр вунă çул хушшинче илсен вĕсем пĕрпĕринчен нимĕнпе те уйрăлса тăмаççĕ, — пĕр кун çуралнă йĕкĕрешсем пекех. Çакă вăл вулакан кăмăлне тивĕçтермест, хирĕçтерет, вулакан нумай пĕлекен, ăслăн вĕрентекен çынна тарават. Çавăнпа та рецензисене çырма шухăшсăр каласакан çынсене мар, ĕçне витĕр пĕлекен, искусство ыйтăвĕсене пултаруллăн ăнланакан пысăк специалистсене памалла. Çак сăмаха çирĕплетсе калама «Коммунизм ялавĕнче» тухнă виçĕ лайăх статья май параççĕ: Герасим Харлампьевăн «Художество галереи пирки пĕр-ик сăмах» (73 №), Ю. Илюхинăн «Кам айăплă?» (84 №), Аркадий Ĕçхĕлĕн «Аптраман таврашĕ» (101 №). Çакă статьясене виççĕшне те хăйсен ĕçне лайăх пĕлекенсем çырнă, вĕсем искусственнăй каланă кашни сăмахĕ вырăнлă, виçеллĕ, пултаруллă, вулаканшăн усăллă.

Хăш-пĕр чухне пирĕн рецензентсем чĕлхе ыйтăвĕсем çинчен сăмахланă чух «хамăр ял» принципĕн капкăнне лекеççĕ. Сăмахран, И. Иванов учитель хăйĕн «Поэтсем хăш-пĕр сăмахсене мĕншĕн пăсаççĕ» ятлă статйинче (11 №) «тулт» сăмаха хирĕç тăрать, вăл пирĕн ялта çук тет. Сирĕн ялта çук пулсан чăваш словарĕсенче пур çĕрте те пур. Çакна «Коммунизм ялавĕнче» пĕлмелле, ачалла çырнă статьясене пичетлеме кирлĕ мар.

Юлашкинчен çакна каламалла. Çурхи уйăхсенче хаçат рецензисене сахал пичетлерĕ, уйрăмах апрель уйăхĕ пушă (виçĕ номерте çеç). Калас пулать, искусство хырăм выççи пек, çанталăк, сезона пăхмасть; вулакан — килте-и вăл е хирти трактористсен будкинче-и — чи малтан искусство хыпарĕсене пăхать. Илем патне яланах кăмăл туртать.

1957

КĔРКУРИ КРАСНОВĂН «АСАМАТНЕ» ВУЛАНĂ МАЙ КИЛНĔ ШУХĂШСЕМ

Юлашки çулсенче чăваш поэзийĕнче пĕр амаклă туртăм уççăнах палăрать: вăл нумайăшĕ пысăк формăсене хапсăнни, хăйне евĕр «гигантомани» чирĕпе аптăрани. Тен, çакă туртăма чылайăшĕ тӳрре кăларма та пăхĕç: «Кунта нимĕн

амакĕ те çук, пачах урăхла, ку вăл — сывлăхлă ўсĕмĕн савăнăçлă палли, паттăррăн аталанни, пĕве кайни», — тейĕç. Чăн, поэзире пысăк формăсем вырăнли çинчен Пĕтĕм Союзри писательсен иккĕмĕш съездĕнче те килĕшўллĕн калаçрĕç: анлă пурнăçа — анлă формăсем! Пурнан пурнăçа сарлакан та тарăннăн сăнама, типлă характерсене ирĕклĕн çырма тата, çул май, шухăша кайма, философилеме, историллĕ, лирикăллă экскурссем тума, паллах, анлă формăсем пире иксĕлми мехел параççĕ. Çакна хирĕç нимĕнле сăмах та витме пултараймасть. Çитменнине, тĕрлĕ халăхсен çырулăхĕнчи вăхăтсен экзаменне пултаруллăн панă, яланлăха наци чысĕ пулса тăракан поэзиллĕ произведенисем — чи малтан — пысăк формăпа çырнисем (Д. Байрон поэмисем, А. Пушкин. «Евгений Онегин», А. Мицкевич. «Пан Тадеуш» т.ыт.те), вĕсене ахаль мар çав-çав халăхăн çав-çав саманари пурнăç энциклопедийĕ теççĕ. Анчах манас пулмасть, асăннă произведенисем — пур енчен те пулса, пиçсе ĕлкĕрсе çитнĕ хăватлă ăс пулăмĕсем, вĕсем хăйсем вăхăтĕнчи пурнăç тупсăмне, чи пархатарлă идейăсен тĕрĕслĕхĕпе уçса **анлăн, тарăннăн, илемлĕн** сăнарласа панă.

Чăваш авторĕсен кăмăлĕ юлассине пăхмасăрах çакна калас пулать: пирĕн поэзири халиччен çырнă вуншар пин йĕркеллĕ сăвă-поэмăсен анлăхĕ, — тем пек калас марччĕ çак сăмаха, — тарăнлăх сахаллинчен килет. Ку вăл — ейў кайни, çамрăк вăй куллен-кун ўссе пынипе, халичченхи ăшăх формăсене шăнăçаймасăр, йĕри-тавралла тапса тухни. Тарăнлатас пулать шыв çулне. Унсăрăн вăй-хала сапаласа яни анчах. Ейў тарăнланнă çырансене каялла хăвăрт кĕмесен пирĕн чечеклĕ улăха нумай сиен парĕ.

Халăхпа, унăн кăмăлĕпе, кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе таччăнрах пулмалла. Пире хальхи этемлĕх ăс-хакăлĕн чи çўллĕ çитĕнĕвĕ пулса тăракан марксизм-ленинизм наукипе çутта тухнă, пур енчен те культурлă, пурнăç илемне анлăн та тарăннăн ăнланакан, мĕнпур пултаруллă вăйпа малалла хапсăнакан художник кирлĕ.

Кичемлĕх — искусствăшăн вилĕм. Пирĕн поэзири пысăк калăплă произведенисем чылайăшĕ кичем. Выртса вуламалла вĕсене. Ку вара поэзи мар. Поэзи тени, пĕр поэт калашле, вырăнпа выртакан çынна хал парса ура çине тăраттăр. Тўррипе каласан, вĕçĕ-хĕрри курăнман вăрăм япалапа пусăрăнса ларма вулаканăн вăхăт та, кăмăл та çук: пĕрре ларса вулас — пĕтмест, темиçе хут ларас — усăсăр, мĕншĕн тесен вулани-пĕр сĕвĕрĕлсе пырать, паян вуланине ыран астăваймастăн.

«Евгений Онегин» та пысăк. Анчах А. Пушкин — вулакансен кăмăлне тупмасса — нумай çула пынă тертлĕ ĕçĕпе асапланман та пулĕччĕ. Хисеплет Пушкин вулакан çынна! Ун калавĕн интереслĕ сюжет: вăл пурăça тĕлĕнмелле ăсталăхпа сăнлать. Мĕнле образсем, мĕнле характерсем, мĕн чухлĕ самана материалĕ, проблемăллă ыйтусем!

«Евгений Онегин» 8 пая уйрăлать. Харпăр пайĕ 500—600 йĕркерен тăракан хăйне тĕллĕн поэма. Пĕрре ларса пĕтĕм кĕнекене вуласа тухаймасан пĕр пайне анчах вула — курăм-туйăм сан пурпĕрех тулли, эсĕ çав вăхăта сая ямарăн, поэзи сиплĕхĕ çăл куçĕнчен чĕрĕлĕх шывне чун каниччен ĕçрĕн. Ку кăна мар. Романăн кашни пайĕ тата 40—50 строфа çине уйрăлать. Харпăр строфа 14 йĕркерен тăракан хăйне тĕллĕн сăвă. Пĕр сăввине вулани теме тăрать! Тăватă стопаллă янтăравлă ямба ăрăмлăн йĕркеленнĕ сăмахсем, пĕрне-пĕри чĕнсе тăракан йыхравлă рифмăсем — мăшăрлисем, пĕрре урлисем, ункăллисем. Пурте вĕсем хăватлă шухăш-кăмăлпа шăранса пĕр пĕтĕм пулса тăраççĕ, эпир вĕсене курми те, илтми те пулатпăр, пирĕн мĕнпур пĕр туйăм — пурнăç! Çут çанталăка, этеме, ăса, илеме туйса тăни. Эпир, пилсĕрсем, ун пек чухне автор çинчен те манатпăр, пирĕншĕн пулсан — вăл хăй те, унăн сăмахĕ те, ăстайлă техники те çук, пирĕншĕн — унăн вилĕмсĕр сывлăшĕ унăн пултарулăхĕ кăна!

Хамăр çырнă мăнттай произведенисене илсен вара эпир чи малтан сăмах купаласа, чăпталаса, кунчаласа ларакан ремесленника туятпăр, пирĕн куç умĕнче — вăй муталанни, аппаланни. Кичем те чуна тăвăр ун пек чух пире. Вара юратнă тăван чĕлхерен писес марччĕ тесе эпир çав кĕнекесене вуласа тухмасăрах алăран ýкеретпĕр.

Çакăн пек канăçсăр шухăшсемпе тытрăмăр эпир Кĕркури Красновăн «Асамат» ятлă пин-пин йĕркеллĕ поэмине. Аюк! Красновăн çак нумай тертлĕ ĕçĕнче ытарма çук илемлĕ çитĕнýсем пулсан та, малта каланă йýçĕ сăмахсене калла тума пирĕн паянах çителĕклĕ сăлтав çук.

К. Краснов хăйĕн çĕнĕ поэмине чăвашсен çичĕ картлă такмакĕпе çырнă. Анчах поэт усă куракан форма сасă пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен авалхи çичĕ картлă силлабикăран нумай пуян. Поэмăра таса хорейпа ĕнернĕ е икĕ стопа ямб çумне пĕр стопа анапест хушса сасăланă сарлакан та илемлĕн янăракан сăвăсем:

Сăхлантарнă сăнĕпе,
Ăмсантарнă пĕвĕпе. (Таса хорей.)

Сăмах-юмах вакласа
Тытать Илеп кĕслине;

Пӳрнисене вылятса
Шăрантарать юррине. (Ямбпа анапест.)

Силлабикла сăвăсемшĕн характерлă ен — пусăм тĕлĕшĕнчен картне ларман йĕркесем К. Красновăн поэминче сайра тĕл пулаççĕ, çавăнпа та унăн сăвви кал-кал та уçă вуланать. Тĕслĕхрен:

Ĕмĕтне татман этем
Вăйлă тенĕ ваттисем.
Аслă Атăл хумĕсем
Юртса иртнĕ вырăнта,
Ăста юрăç шăпчăксем
Кăмăллана вăрманта,
Çĕр çырли, кăмпа, серте
Çитĕнсе ӳсен çĕрте,
Пӳлĕх турă пилĕпе,
Хăйĕн савнă хĕрĕпе
Лартнă тет ӳпле туса
Теветкеллĕ Тал-Мăрса.

Çак сăвва пĕрре те тиркеме çук. Ку вăл — чăваш силлабикинчен çуралнă халавлă хорей (силлабо-тоника). Савăнтарать, епле вăй илнĕ пирĕн авалхи хурăнташăмăр, Çеçпĕлчченхи такмак!

Акă тепĕр тĕслĕх. Кирек те мĕн калăр, кунта вара чăнчăн поэзин асамĕ! Мăнтарăн амăшĕ пĕртен-пĕр ывăлне ӳпкевсĕр-мĕнсĕр хаяр хăрушлăхсен енне пиллесе ăсатать:

Анчах йывăр пулин те —
Ӳт пани ӳпкелемен;
Тем пек йывăр пулин те —
Чун пани чул çĕклемен.

...Пӳрни ăçта, пӳ унта;
Çырни ăçта, пуç унта.
Аслă пул та ăслă пул,
Пурлă пул та тӳрĕ пул.
Çук тесе çĕре ан кĕр,
Пур тесе чĕрре ан кĕр.
Усалшăн та кун иртет,
Ырăшăн та кун çитет.
Ырăпала ырă пул,
Усалпала усал пул.
Çукран ыйтсан — умне хур,
Пуртан ыйтсан — куçне сур.
Ăслă çынтан ăсне ил,
Меллĕ çынтан мелне ил...
Йывăр хуйху пур иккен,
Мĕн калам та мĕн теем?
Кĕл кирĕкне шыв çĕклет,
Йывăр хуйха ĕç çĕклет.
Пырах, пырах, ывăлăм,
Чипер каях, ылтăнăм.

Кĕркури Краснов чăваш халăх творчествин илемлĕх мелĕсенчен пĕринпе — сасăсен шалти килĕшӳлĕхĕпе (аллитераци, ассонанс) — ирĕккĕн усă курать:

Хура халăх хурлăхне
Хура утсем туртайман.

Турă тенин тӳрри çук,
Тӳре тени турри çук.

Анчах малалла эпир Кĕркури Краснов çак мелпе ытлашши алхасни çинчен те палăртăпăр. Халĕ поэмăсен сюжетне кĕскен каласа парар.

Авал пĕр ялта Тал-Мăрса ятлă ватă çын пурăннă. Унăн Катек ятлă хĕр ача пулнă. Катек ӳссе çитсе калама çук илемлĕ хĕр пулать — ашшĕн савăнăçĕ, чысĕ, шанчăкĕ. Катеке Хуриян улпут куç хывать — вăрласа каять, мăшкăл тăвать, тăнне çухатнăскере калла ял патне кӳрсе пăрахать. Шар курнă Тал-Мăрса усал ятран хăтăлас тесе хĕрĕпе пĕрле яланлăха сĕм вăрмана куçать. Паллах, тăхăр уйăхран Катекĕн ача — Асамат çуралать. Ача çут çанталăк чĕрçи çинче ирĕклĕн аталанать.

Хăмла евĕр хăпарать,
Çулçă евĕр ярпаять.
Ентĕ ак вăл çиччĕре —
Çитет çитмĕл çич çĕре.
Кашкăр курать — кăшкăрмасть,
Ют çын курать — ютшăнмасть.

Анчах ачан шухăшсăр савăнăçĕ нумая пымасть. Часах ун кукашшĕне усал Хуриян тытса çактарать. Çамрăк Асамат амăшĕпе анчах тăрса юлать. Ача ӳссе çитет, пурнăçа ăнланакан пулать, хура халăх тăшманĕсемпе кĕрешме пуçлать: хуçасене çаратать, улпутсене çунтарать, чухăнсене пулăшать. Часах Асамат ячĕ пĕтĕм таврана сарăлать.

Вăрă теççĕ пĕрисем.
Йĕкĕт теççĕ теприсем.

Нумай çӳрет-и Асамат, сахал-и — ăна Хуриян тӳре (пирĕн геройăн ашшĕ) тытса хуптарать. Анчах маттурăн шăпи тулман, ăна хăюллă хĕр Тайпи, Асамата тытса килекен Искентер ятлă пинпӳ хĕрĕ, юратса пăрахать, вăл йĕкĕте тартать, унпа пĕрле хăй те вăрмана каять. Улпут хĕрĕ Тайпи хăйĕн упăшкин теветкеллĕ пурнăçне кăмăлламасть, ăна вăл килти телейпе çырлахтарасшăн, хăйĕн юратăвĕпе йăпанса пурăнма ӳкĕтлет. Асамат, паллах, килĕшмест: ăна халăх кăмăлĕ йыхăрать, ăна вăрман чĕнет, ун каллех халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешӳ пуçласа ямалла. Чăнах та, вăл пĕтĕм чăваш çĕршывне патшана хирĕç çĕклет, тӳресем янă çар вăйĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкать, улпут-пуянсемшĕн хăрушă аслати пулса тăрать. Анчах кĕрешӳ чи кризислă сыпăка çитсен пирĕн герой ултавлăн лартнă танатана çакланать — ăна арăмĕ Тайпи васкавлăн киле чĕнсе илет. Çар пуçĕ арăмĕпе савăннă вăхăтра начальниксăр юлнă çар тăшман хурри пулать, пĕтет. Çакăншăн Асамат хăйне каçараймасть, вăл тăшмана хирĕç тан мар вăйпа кĕрешĕве кĕрет, тыткăна лекет. Хальхинче ăна ашшĕ, аслă тӳре Хуриян, палласа илет. Йĕксĕк чунлă çын хăйĕн халиччен курман-пĕлмен ывăлĕ çакăн пек маттур пулнăшăн мухтанма хатĕр. Ăна вăл хăтарма

та шухăшлать, анчах ку çăлăнăç таса мар: Асаматăн халăха хирĕç ĕçлемелле, халăх тăшманĕсен ĕретне тăмалла. Асамат, паллах, ку киревсĕр сĕнĕве пĕтĕм хаярлăхпа сирет. Вăл таса вилĕме мăшкăллă пурнăçран мала хурать. Ашшĕ ывăлне вĕлерет. Тайпин ача çуралать. Çав йăхран хальхи ял, Асаматкасси пуçланса каять. Çакăн пек Кĕркури Краснов поэминчи ĕçсем.

Художествăллă произведенисене вуланă чух пире малтанах пĕр ыйту интереслентерет: хăçанхи ĕçсем? Автор вăхăтне татăклăн кăтартса памасан та, эпир произведенири тĕрлĕрен конкретлă тата характерлă паллăсем тăрăх сăмах мĕнле самана çинчен пынине тавçăрса илме пултаратпăр. Ку кирлĕ, мĕншĕн тесен кирек те мĕнле пархатарлă произведенин те чи малтан хăйĕн вăхăт сăнĕ — самана сăпачĕ пур, произведенире сăнарланнă характерсен пурнăçлăхĕ, ăнăçлăхĕ чи малтан вĕсем самана вучахĕнче, пĕр-пĕр историллĕ обстановкăра шăранса тухнинчен килет. Хăçан пулнă «Асаматри» ĕçсем? Калама хĕн. Тӳресем, пинпӳсем вăхăтĕнче? Капла калани ытла та пĕтĕмĕшле пулĕччĕ. Поэмăра ухăсемпе çапăçаççĕ, анчах çав вăхăтрах çĕр улми çиеççĕ. Ухăсем пăрахăçа тухни темиçе çĕр çул, анчах паранкă кĕрекене ларни çĕр çул ытларах кăна. Пинпӳ хĕрĕ Тайпи хут пĕлет (XIX—XX ĕмĕрсен палли), анчах вăлах улпут хĕрĕ, сертене çӳрет. Çапла «Асаматра» конкретлă вăхăт туйăмĕ çук. Çак çитменлĕх автора ĕçлеме питĕ те кансĕрленĕ, вăл халăх пурнăçĕн пĕр-пĕр историллĕ сыпăкне илсе унăн пултаруллă сывлăшĕпе хăйĕн геройĕсене чĕрĕ кунçул парайман, сюжетра палăртнă интереслĕ ситуацисене, çивĕч хирĕçӳсене художествăллă витĕмлĕхпе сăнарлайман. Çавăнпа та автор шухăшĕсем, пит ырă пулнă пулсан та, вăл ĕмĕтленнĕ характерсем схема хальлĕхĕнчен тухайман. Уйрăм уççи çук: К. Красновăн геройĕсем — те чăн-чăн пурнăçран, те юмах-халапран? Çакă, пирĕн шухăшпа, поэмăн тĕп çитменлĕхĕ.

Тепĕр пысăк çитменлĕх — автор хăйĕн геройĕсен пултарулăхне хăй шанманни. Чăн-чăн художествăллă произведенисенче эпир автор пуррине асăрхасах та каймастпăр, вăл тивĕçлĕ экспозици туса геройсене ĕçе кăларать те вара мĕнпур инициативăна вĕсен аллине парать: пурăнăр, тăрмашăр — хăвăра кирлĕ пек, аслă пурнăç кăтартнă пек! Малалла эпир авторпа сахал тĕл пулатпăр, вăл питрех кирлĕ вырăнсенче кăна вулаканпа пуплешсе илет. К. Краснов поэминче йăлтах урăхла: автор хăй калаçать, автор хăй тăрăшать, ĕнентерет, ӳкĕтлет, ырлать, хурлать, анчах та вулакансен куçĕ умне ирĕксĕртен, автор кăмăлне кăна пула,

тухса тăнă геройсем хăнк! та тумаççĕ, хăйсем схемăра планланă пăлхаварлă шăпи çине ыт ахальлĕн çеç пăхаççĕ. Пурнăç пăлхатнă пултарулăх юнĕ сахал вĕсенче.

Автор калавĕсĕр пуçне, герой хăй хăйне тĕрлĕрен калаçура, шухăшра, ĕçре уçтăр, вăл произведенири событисемпе автор каланă тăрăх кăна мар, хăй тĕллĕн тӳреммĕн çыхăнса тăтăр. Унсăрăн нимĕнле характер та пулма пултараймасть. Пурнăçран килнĕ пурнăç çынни, пурнăç тăвакан пурнăç çынни — акă вăл пирĕн литературăра пулмалли типлă сăпат.

Автор хăйĕн схеминче пĕр ламран тепĕр лама ытла та çăмăллăн сиксе ӳкет (Тайпине çураçни, Асамата хăтарни). Произведенире мĕнле ламсем пурри сюжет схеминчен те паллă, анчах пире чи малтан çав ламсем хушши интереслентерет, мĕнпур драматизм çакăнта — геройсен çулĕ çинче мĕнле событисем пулса иртнинче, пĕр ĕçрен тепĕр ĕç мĕнле тĕвĕленсе тухнинче, геройсен пурнăçĕ мĕнле ламран лама сыпăнса пынинче. Пулăмне мар (ун çинчен сăмахпа каласа иртме те пулать), çав пулăм çулĕ çинчи чăрмавлă, хирĕçӳллĕ хутшăнусене витĕмлĕ сăпатсем урлă кăтартса памалла. Ромен Роллан ахаль мар çапла каланă пулмалла: «...я никогда не заботился о прибытии на место. Меня интересует дорога... Лишь бы она вела в направлении, которое я избрал».

Тата çакăн пек çитменлĕх те пур. Автор хăйĕн геройĕсене кăна мар, вулакансене те шансах пĕтереймест, вăл, ахăртнех, хăйне ăнланаймасран шикленет пуль: пуриншĕн те паллă япаласенех çине тăрсах ăнлантарать, вулакан шырамалли сăлтава хăй тупа-тупа парать, — паллах, кунта авторăн тарават кăмăлĕ пирки иккĕленмелли çук, анчах çакна та манас пулмасть: пирĕн вулакан тахçантанпах чăмлак ыйтмасть ĕнтĕ.

Кĕркури Краснов поэмине халăх поэзийĕн мелĕсемпе усă курса çырнă. Çичĕ картлă сăвă, хăйне евĕр интонацисем, сăнарлăх системи т.ыт.те поэт халăх творчествинчи сасă-кĕвĕсене хăйĕн ĕçне куçарма тăрăшни çинчен калаççĕ. Поэмăра ку тĕлĕшпе чылай лайăх примерсем пулсан та, çапах поэт час-часах халăх поэзийĕн материалĕ айне пулни палăрать. Чун тем чул хапсăнсан та вăйран ытлашши çĕклеме юрамасть. Халăх пултарулăхĕн пуян сĕтекĕпе пахаланнă тăпра çинче ак çакăн пек сăвăсем шăтас çук:

Хĕрлĕ-хĕрлĕ çырлине
Пылакне ĕмеççĕ те
Юлашки-чĕлешкине
Пăрахаççĕ-мĕн сурса.

Мĕншĕн-ши вилĕм сунаç
Хăйсене çапла хăйсем?
Мĕншĕн-ши куççуль тăкаç

Атăл шывне пăтратса?
Мĕншĕн-ши çапла пурнаç
Хăйсене сая ярса?

———

Çак илемлĕ, çак куштан,
Çак мăнкăмăллă хĕре
Пирĕн тӳре Хуриян
Кăмăллана шет, сĕре.

———

Пӳрт хыçĕнчи канавне
Уçса яма кĕреçе çук.
Тулса çитнĕ ăш-чикне
Уçса яма савни çук.
Паттăр йĕкĕтĕн юрри
Янратать сĕм вăрмана,
Паттăр йĕкĕтĕн юрри
Саланать пур таврана;
Паттăр йĕкĕтĕн юрри
Çитет акă хулана.

———

Чупрăм антăм çырмана —
Юхрĕ тухрĕ шерепе...

Çак асăннă сăвăсенче поэзи техĕмĕ сахал. Сулчă рифмăсем, вырăнсăр çаврăмсем, килĕшӳсĕр танлаштарусем халăхла çырнă сăвва вăй пама мар, вăйран яраççĕ. Пушкин та халăх поэзийĕн хăмлине юратнă, анчах ăна ытлашши яман, — хĕрмелĕх, вăй илмелĕх:

Ты, волна моя, волна!
Ты гульлива и вольна;
Плещешь ты, куда захочешь,
Ты морские камни точишь...

Эх, пирĕн те, халăхăн иксĕлми çăл куçĕн симне активсе, çакăн пек янтравлă сасăпа юрласчĕ!

Аллитераци, ассонанс сăвва мĕнле ырăлатнине эпир пĕлетпĕр. Чăваш халăх поэзийĕ çакă традициллĕ мелсемпе сарлакан усă курать, анчах кирек хăçан та вырăнлă, вăхăтлă. Кĕркури Краснов тесен вара, тăварне шеллемест, шаракланталариччен ярать:

Пусса тăран пусмăр пур,
Пусса тăран пусмăр пур, —
Пусса тăран пусмăрне
Пусар-и те хурар-и,
Пуçне пуслăх тăвар-и?

Ку япала хĕве такмакне аса илтерет:

Пуса çинчен пусарать...

Акă тата:

Хаяр умне — хăяр хур,
Хăвăн умна — хăях хур.

Арçын чури пуличчен
Арслан çури пулăп та —
Выльăп та эп, кулăп та.

Пушкин та çак мелсемпех усă курать, анчах хăçан?

Как будто горы грохотанье,
Тяжелое-звонкое скаканье...

Кунта вырăнтан тапранса кайнă пăхăр юланут «тĕнче çĕмĕрсе» пыни çаплах илтĕнет.

Хусанкайăн та пур:

Халăх, халăх тенĕрен,
Хак çĕкленчĕ çĕнĕрен...

Анчах питĕ вырăнлă-çке!

Халăх поэзийĕн мелĕсемпе чиперрĕн усă курма пĕлмен пирки Кĕркури Красновăн паттăр Асамачĕ хăш чух мĕскĕн чунлă çын пек, йăтенĕ юмăç пек калаçать:

Аннем мана пилличчен —
Йыт çурине пиллес-мĕн;
Аннем мана ĕмĕртиччен —
Йыт çурине ĕмĕртес-мĕн;
Аннем мана çуратиччен —
Йыт çурине çуратас-мĕн.
Типсе хăрччăр хулĕсем,
Çĕрсе юхчăр шăммисем.

Хура тăшман хура куçне
Хура çăхан шăтартăр,
Хура тăшман хура юнне
Хура йытă çулатăр.
Тискер, тискер куçĕпе
Тискер кашкăр вылятăр,
Тискер, тискер пĕвĕпе
Тискер çĕлен вылятăр.

Çакă вăл хăй çухатăвĕпе хăй хавхаланса кайнă вĕренсуран старикĕн тьăх-тяхĕ мар, таса вилĕме хирĕç паттăррăн тухакан Асаматăн юлашки сăмахĕ!

Акă тата поэмăри илемсĕр «теттесем» (вĕсем питĕ нумай!):

Икĕ сехет хушшинчех
Тăшман çарĕ пĕтрĕ тет.
Икĕ сехет хушшинчех
Икĕ çĕр çын путрĕç тет.
Тарăн кăлĕ тĕпĕнче
Кĕтмен вилĕм тупрĕç тет.

Çапăçу картинине хумхануллăн çырса парас вырăнне — çакăн пек «Сармантейрен» е «Тиллит-тиллит Микулайран» илнĕ «теттесем» тата та пур:

Нимĕн те чĕнмерĕ тет,
Чĕнме те пĕлмерĕ тет,
Йĕме те пĕлмерĕ тет.
Пăрса илнĕ тутăр пек
Шурчĕ тет те кайрĕ тет...

«Тет» сăмахăн теçетки пĕр пус анчах тет. Вулакан «тет» сăмаха кăна мар, автора та вăл геройсемшĕн ялан хăй калаçсан ĕненми пулать.

Юлашкинчен çакна калас килет. Кĕркури Красновăн «Асамачĕ» тахçан-авал çырăннă япала пулчĕ пулсан эпир унăн çитменлĕхĕсем çине çырлахуллă куçпа пăхаттăмăр,

апла кăна мар — мухтаттăмăр та, мухтанаттăмăр та. Унти хăш-пĕр вырăнсем пире тĕлĕнтерсе те ярĕччĕç, сăмахран, вырăс халăхĕн поэзийĕпе чăваш халăхĕн поэзийĕ тахçан-авалах тăванланнă-çке тейĕттĕмĕр: Асамат амăшĕ Катек хŭхленипе вырăссен Ярославна хŭхлени ытла та пĕр евĕр. Çакна пула: «Ку произведени пирĕн авалхи палăк!» — тейĕттĕмĕр эпир. Анчах... анчах çав, «Асамат» антикварлă япала мар, паян кун çырнă поэма. Апла пулсан ку поэмăна социализмла реализм меточĕпе кирлĕ пек усă курса çырмаллаччĕ. Вара произведенири тĕрĕс мар илнĕ конфликт-сем, ĕненмелле мар положенисем сахалрах пулнă пулĕччĕç.

Чăваш халăх культури, литератури, уйрăммăн поэзийĕ хальхи вăхăтра тĕлĕнмелле ŭсĕмре. Пирĕн халь çирĕп никĕс пур, вăл никĕс çинче Яковлев, Ашмарин, Иванов, Çеçпĕл, Хусанкай сыпăкран сыпăка аталанса пыракан пархатарлă ĕçĕсем. Çав ятсем хыççăн пире тăрăшмасăр ĕçлеме аван мар. «Асамат» — тивĕçлĕ пек тăрăшмасăр, тиркешмесĕр, пултарулăхăн мĕнпур мехелĕпе усă курмасăр çырнă япала. Кĕркури Краснов — талантлă поэт, юлташла ырă сунса каланине хисепе илĕ. Автор хăйĕн поэмине çĕнетме тытăнсан çакă тŭрĕ сăмахсем ăна юлташла вăй паччăр.

1955

«ЯЛАВ» ЖУРНАЛĂН СТРАНИЦИСЕМ ТĂРĂХ

Иртнĕ çулсенче, «Ялав» журналти поэзи продукцине пăхса тухнă чух, час-часах эпир çакăн пек ŭпкевлĕ сасăсем илтнĕ: поэзи пурнăçпа тан ĕлкĕрсе пыраймасть, поэтсен ăсталăх вăйĕ çителĕклĕ мар, пирĕн лириксем, пĕтĕм кăмăлтан пĕтĕм сасăпа юрлас вырăнне час-часах ŭтсĕрмĕнсĕр япаласем çинчен ăша кайнă сасăпа пăшăлтатаççĕ т.ыт.те, т.ыт.те. Калас пулать, журнал, кун йышши сăмахсем малашне ан пулччăр тесе мĕн кирлине пурне те туса çитереймен пулин те, вĕсене шута илнĕ, вăл хăйĕн сассине пурнăçлăрах, витĕмлĕрех тăвасшăн пикенсе ĕçлет. Чăнах та. Пурнан пурнăçпа тан ĕлкĕрсе пырас пирки, Шолохов калашле, прозаиксемшĕн льгота пекки пур та-и тен? Анчах поэтсем çак «çăмăллăха» кĕтме пултараймаççĕ, вĕсем историре яланах малта пыракан трубадур, параппанçă пулнă.

«Ялав» вăй илсех пыни поэзи тематики анлăланнинче те палăрать. Парти, мир, халăхсен хушшинчи туслăх, совет патриотизмĕ, Тăван çĕршывăн кулленхи пурнăçĕ,

ёçё-хёлё, çамрăк ăрусене пăхса ўстересси, социализмла пурнăçри тирпейлёх, ёмёрех çамрăк туйăм — юрату, — çакăн пек кирлёрен те кирлё, ялан çёнелсех пыракан ыйтусем лартать журнал. Вёсем пурте паянхи ыйтусем, парти решенийёсемпе ăспа кăмăл вёççён çыхăнса, килёшсе тăракан ёççен, шухăшсен, туйăмсен сăнарё.

Парти теми — пирён литературăра нихçан иксёлми çăлкуç пулса тăракан, яланах çёнёрен çёнё сăмах калама май паракан аслă тема.

Ку темăпа «Ялавăн» эпир тишкёрекен виçё номерёнче Александр Алкан «Аслă тивёç» ятлă поэми, унăнах юрра хывнă пёр сăвви тата Иван Малкайпа Георгий Ефимовăн сăввисем пур.

Александр Алка юлашки вăхăтра питё те тухăçлă пултарулăхпа ёçлет. Литература историйёнче эпир «Болдинская осень» текен «кёр мăнтăрне» пёлетпёр. Пушкиншăн çавă пархатарлă кёр ўссе, çунатланса, ар пулса çитнё талантăн палăрăмё пулнă. Вăйпитти халпа çырнă «Хамăр ялсем» ятлă сăвăлла (кёр мăнтăрё!) ытлашши пулмё тетпёр.

«Ялавăн» иккёмёш номерёнче çапăннă «Аслă тивёç» поэма тарăн шухăшлă, сарлака ытамлă, паян та, ыран та кирлё идейăпа çырнă илемлё произведени. Ăна поэт чуна кайса тивекен сăмахсемпе сăнарласа çырнисёр пуçне композици тёлёшёнчен те вырнаçуллă — ансатăн та кёрнеклён йёркеленё.

Сергей Ударов, çамрак çын, комсомолец, рабочи, партие кёме заявлени панă. Коммунистсен пухăвё пырать. Таса кăмăллă çамрăк умне, паллах, пёр саккунлă ыйту хăйне хăй тухса тăрать: Иртерех мар-и? Тивёçлё-и эпё аслă партин членё пулма?.. Кун пирки вăл нумай-нумай шухăшланă, хăйпе хăй тахçанах калаçса татăлнă, шанчăклă рекомендацисем те çителёклё ун, çавах та акă халь, парти пухăвё умёнче заявленипе тăнă чух, каллех хай ыйту канăç памасть: тивёçлё-и эп?

Мёншён тесен:

Вăл курнă лăпкă пурнăç илемне çеç,
Ун çўç-пуçне тăпăлтарман çилсем...
Умра тăрать яш çын — Сергей Ударов,
Çамки çине ун тар тапса тухать.

Чăнах та, тарламалăх пур Сергейён. Йёри-тавра çулланнă çынсем, вут-çулăмпа тёрёсленнё паттăрсем йёкёт çине тинкерўллён пăхса лараççё. Сергей пёлет: сахалăшё вёсенчен партие тăнăçлă вăхăтра кёнё. Ёç халăх телейёшён пыракан

вăрçăсен хăвачĕпе шăранса чăмăртаннă тимĕр çынсем вĕсем! Коммунистсен ретне тăнă чух вĕсен пуçĕсенче пĕр шухăш çеç пулнă: вилĕм е çĕнтерӳ! Халь урăхла. Пирĕн парти правительство партийĕ пулнине кура унта кĕме такам та сăхланĕ. Çакăн çинчен В.И. Ленин пĕрре мар асăрхаттарнă. Çавăнпа та хăйĕн таса кăмăлне юлташĕсем тĕрĕс мар ăнланасран пăшăрханать Ударов.

Ан пăшăрхан ытла, Сергей Ударов,
Тĕрĕссине кала йĕркипеле.
Ыран эс партипе ху шăпуна уттарăн,
Асту, ун çăмăл мар çулĕпеле, —

тет поэт, чăтаймасăр поэмăн хумхануллă юхăмне хутшăнса. Çамрăк Ударова партие сĕнекенсем — ватă коммунист Максим Лукич тата вăтам çулхи коммунистка Анна Павловна. Поэт пире çакă тивĕçлĕ çынсен кун-çулĕпе тĕплĕн паллаштарать, вĕсен биографийĕ поэма туллилĕхĕшĕн кирлĕрен те кирлĕ икĕ сыпăк, вĕсем, çак сыпăксем, хăйсем те пысăк произведенине пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса кĕнĕ уйрăм поэмăсем пек. Рабочи класăн тивĕçлĕрен те тивĕçлĕ представителĕсем урлă (пĕри вĕсенчен партие граждан вăрçинче, тепри Аттелĕх вăрçинче кĕнĕ, виççĕмĕшĕ — халь кĕрет) поэт партин ленинла принципĕсем ăруран ăрăва тасан куçса пынине кăтартать. Çак куçăм çулĕ çинче юлашки звено хальлĕхе Сергей Ударов — рабочи, ăслă, ĕçлĕ çамрăк. Вăл пуянран та пуян ĕçпе кĕрешӳ опытне пултаруллăн йышăнмалла, килес ăрусем валли çав паха опыта тата та пуянлатмалла.

«Преемственность — основа прогресса», — тет Леонид Леонов. Çак идея — Алка поэмине вăй парса тăракан тĕп шухăш.

Манмăпăр:

«Чтобы стих был поэтический, не только мало гладкости и звучности, но недостаточно и одного чувства: нужна мысль, которая и составляет истинное содержание всякой поэзии», — тенĕ çĕр çул ытла ĕлĕкрех Виссарион Белинский.

Поэтсем аслă критик кăтартăвĕсене вырăна хурса ĕçлени пире савăнтарать.

Парти çинчен «Ялавăн» виççĕмĕш номерĕнче тата тепĕр лайăх сăвă пур, вăл Георгий Ефимовăн «Асран кайми кунĕ». Алкапа ăмăртмалла пекех, Ефимов та «Аслă тивĕç» поэмăн темипех — партие кĕрекен çамрăкăн кăмăл-туйăмĕсем çинчен çырать. Ефимов та çак темăна уçса пама хăйĕн пысăк мар сăввинче кăмăла хумхантаракан чылай вăйлă сăмахсем тупнă.

Алка поэмипе Ефимов сăввине ырласа эпир Иван Малкай партин XX съезчĕ вăхăтĕнче çырнă килĕшӳсĕр сăвва та аса илмесĕр иртме пултараймастпăр. «Ялавăн» 3-мĕш номерĕнче Малкай хăйĕн «Поэт сăмахне» акă мĕнле пуçлать:

Мĕнпур чĕререн савăнса эп калам:
Алăра аслă парти билечĕ.
Билет илемлетрĕ чуна, кăмăла,
Билет вăй-хала çĕклентерчĕ.
Вăл пачĕ мана питĕ пысăк телей...

«Аслă тивĕçри» Сергей Ударов партие кĕнĕ чух çынсем хăй çинчен çакăн пек шухăшласран пăшăрханнă та ĕнтĕ. Малкайăн пăшăрханас-тăвасси çук, вăл ним хĕрелмесĕр: «Билет илемлетрĕ чуна, кăмăла, вăл пачĕ мана питĕ пысăк телей», — тет. Ку мĕн — пасквиль-и? Е тăрлавсăр персе янă айван сăмах-и?

Эпир кăтартнă йĕркесемсĕр пуçне Малкай сăвви малалла чиперех. Ку сăвă пирки поэт та тĕплĕн шухăшлайман, редакторăн та амаклă вырăна касса пăрахма алли çитеймен.

Историллĕ темăпа çырнă сăвăлла произведенисенчен «Ялавăн» 1-мĕш номерĕнче Ухсай Яккăвĕн «Чапаевпа тĕл пулни» ятлă поэми пур. Чапаев — истори, анчах çак романтикăлла тема хăйĕн актуаллăхне нихăçан та çухатас çук.

Ухсай хăйĕн поэмине Пушкăрт çĕршывĕнче 1919 çулта пулса иртнĕ ĕçсем çинчен ун чухнехи 8—9 çулхи ачан курăм-туйăмĕпе каласа парать. Вăрçăпа тата выçлăхпа аптранă чăваш ялĕ. Çăкăр тутине маннă, серте-пултранпа пурăнакан чăваш ачисем. Ашшĕ-пиччĕшĕсем патша вăрçинче вилнĕ, сывă юлнисем — каллех çапăçаççĕ. Ял шуррисен таптавĕ айĕнче. Акă тăшмансем шуйханса тарма тытăнаççĕ. Яла Чапаев хăйĕн çарĕпе кĕрет. Халăх савăннă. Паттăрсене хирĕç чи малтан ачасем чупса тухаççĕ, вĕсем салтаксем валли çăл шывĕ çĕклеççĕ. Пăртта йăх ачи шăпах Чапаев тĕлне пулать, ăна вăл йывăç ленкесрен алтăрпа шыв ăсса парать. Чапаев тарават ачасене тӳрех поход хуранĕ патне ертсе каять, вара вĕсене «шурă шупăрлă» салтак çуллă пăтăпа хăналать.

Çакăн пек, кĕскен каласан, поэмăн кăткăс мар сюжечĕ.

Хисеплĕ автор хăйĕн поэмине яланхи пекех вăйлă та оригиналлă кумнă, куммилĕх илнĕ материал пуян — ытлашшипех те, анчах тĕртессе вара, тӳррине тӳрех калас пулать, тирпейсĕр тĕртнĕ. Авторăн шухăш хăюлăхĕ те, идея анлăхĕ те, материала пахалăх енчен суйласа илме пĕлни те пур, анчах (каллех анчах!) чĕлхе кĕрнекĕ çук, унăн çыр-

нисенче эпир час-часах чăн-чăн поэзипе янăракан сăмах майлашăвĕсем вырăнне ĕнерĕве килмен сăмах пăтрашăвĕсем тĕл пулатпăр.

Мĕн калăпăр-ха эпир ак çакă тĕслĕхсем пирки:

Кĕпе çине тиретĕп
Хĕрлĕ çăлтăр,
Ем-ешĕл курăк
Шăтнă урама
Тухса
Пӳ-сийĕм ӳснĕ паттăр
Этем пекех
Тытатăп эп хама.

Сăвă тени пур-и çакăнта? Апла пулсан кирек мĕнле калаçăва та чикмеклесе çырсан сăвă теме пулать. Мĕн вăл «пӳ-сийĕм ӳснĕ паттăр?» Мĕншĕн кунта пĕрремĕш сăпатăн аффиксĕ? «Çăлтăр» сăмахпа «паттăр» сăмаха рифмăлани те ятлă поэта тивĕçлĕ хисеп мар.

Унччен çеç йӳлĕ пынă
Чĕлпĕре вăл
Кару туртсан
Лаши чĕвен тăрать,
Пĕрре йăтса та
Антарса çăп-çăмăл
Ура ылмаштарать,
Тăха чăмлать.

Ку строфа тумхах çине тумхах, тирпейсĕр çыракан ачанни пек — çине-çине кăлтăк. «Кару» сăмах хăйне хирĕç «йӳлĕ» сăмаха мар, «сулчă», «лăнчă» сăмахсене чĕнет. «Пĕрре йăтса та антарса çăп-çăмăл ура ылмаштарать, тăха чăмлать», — кам: лаши-и, çынни-и? Лаши пулсан вăл пуçри йĕвенĕн тăхине чăмлама пултараймĕччĕ: йĕвен тăхи лаша çăварĕ тĕлĕнче пулмасть. Лӳппер, кăнттам, тĕрĕс мар пуплев. Тата «чĕлпĕре вăл — çăп-çăмăл», «тăрать — чăмлать» пек састашсем хăйне хăй хисеплекен поэтшăн хăçантанпа тивĕçлĕ рифмăсем пулнă?

Тирпейсĕр вырăнсем поэмăра туллиех. Турă сыхлатăр, Ухсайăн «тумхахĕсем» çине тĕллесе кăтартса эпир унран пĕрре те «яка поэт» тăвасшăн мар. Ухсайăн художество вăйĕ — скульптурлăхра. Ан тив, малашне те çав туртăмах аталантăр ун! Анчах çакна манас пулмасть: скульпторăн тĕп инструменчĕ чула хăртлакан тăхçа мар, типтерлĕ резец-каскăч.

Мĕнрен килет пулĕ тетĕр Ухсайăн çитменлĕхĕсем? Чăтăмлăх текен пахалăх çуккинчен. Талант пуçра кăна мар...

пусăрăнса ларма пĕлнинче те. Пулас ĕçе вартаса тухма, тен, йывăрах та мар-и, анчах ăна малалла чутлама, якатма, кирлĕ пек формăсемпе хитре филигрантлăх пама чăтăм кирлĕ. Художествăллă ăсталăх çакăнта. Пуртăпа ĕçлекен платник — ăста, анчах художник мар. Тăхçапа ĕçлекен чулçă — ăста, анчах скульптор мар. Чул катăкĕнчен хĕрĕх те пĕр илемпе выляса тăракан ахах куçне художник-ювелир çеç тума пултарать.

Ухсайăн та çавăн пек асамлă вăй çук мар. Кам манĕ унăн «Çул» поэминчи пĕтĕм произведенине илемлетсе тăракан пĕр детале: электричество лампине Калля чи малтан çутса ярсан, пĕрене мăкĕ хушшинчи тахçан манăçа юлнă йĕп йăлтăртатса каять! Ку ахаха художник куçĕ çеç тупма пултарнă.

Халь тишкерекен поэмăра та ун пек ахахсем çук мар.

Тӳлек çанталăк,
Хыт-хурана
Çакланнă тĕк те хускалмасть.

Туйăнать! Курăнать! Поэт кунта епле витĕмлĕн калани такамшăн та паллă.

Ак çакă строфана кам савмĕ тата?

Ту шывĕ чăннипех те тутлă ахăр,
Епле савса ĕçеççĕ — куртăр-и?
Салтак туссем пире параççĕ сахăр,
Параççĕ кăмăрт-кăмăрт сухари.

Пĕр-икĕ сăмах нацилле колорит, нацилле техĕм çинчен. Çак ыйтăва, пирĕн шухăшпа, Ухсай тĕрĕсех ăнланмасть, ку вăл унăн юлашки поэминче уйрăмах палăрать.

Нацилле техĕмпе колорита парас тесен çиелти «чăвашлăха» кăтартни кăна çитмест. Нацилĕх вăл — шалта та. Мана халĕ пĕр драматург тата Юман писатель хăтланчăкĕсем аса килеççĕ. Пĕри вĕсенчен «нациллерех» пулас тесе кашни пьесинчех армак-чармак киремет йывăççисем кăтартатчĕ, теприн геройĕ, колхозран тимĕр карта çавăрасшăн, мелке утланса, кусарпа хăмсара-хăмсара çурчĕ тавра сикетчĕ. Чăваш мар, авалхи папуассем тейĕн! Чăнах иккен «чăвашлăха» тавар тăвакан усламçăсем тăван ашшĕ-амăшĕ çине те элеклеме хатĕр.

Ухсайăн юлашки поэмине кĕнĕ: серте, улача, çăпата, чĕре сури, кăшкар ути, ыхра-сухан, шăлапри, йĕрĕх, тĕрĕс мар усă курнă «екки ярса» тата ытти çавăн пек кашни строфарах тĕл пулакан «чăвашлăх атрибучĕсем» çинчен каламăпăр та эпир.

Акă çакă кăна мĕне тăрать:

Çурхи тĕнче, пире хĕрхен тархасшăн,
Эпир ырхан вăя пухатпăр ӳт-тире.
Çакатпăр вилĕме тытса чарасшăн
Мăя таса пилеш пĕтевĕ те.

Çапла ĕнтĕ, 1919 çулта чăваш ачисем амулетсем çакса çӳренĕ. Поэмăн тĕп шухăшне çутатса пама çак мăнтарăн пăру çакки — пĕтев питех те кирлĕ пулнă-ши? Малалла итлер:

Хĕп-хĕрлĕ хăмачран çĕлетнĕ çăлтăр
Ахаль тетте пек туйăнман пире.
Инкек-синкексенчен пире вăл çăлтăр,
Сăвап та ырлăх патăр тĕнчере.

Мĕне кирлĕ пулнă поэта çăлтăртан çакăн пек тĕшмĕш палли тума, ăна пилеш пĕтевпе юнашар тирсе çӳреме?!

Çак суя чăвашлăх пирĕн хăш-пĕр поэтсене мĕншĕн кирлине аван ăнкаратпăр: пасар валли. Экзотика текен тавара тăлмачсем ытларах ыйтаççĕ.

Ытлашши çăмăл çул ку, юлташсем, çăмăл та шуçлак çул, тăрăнса анма пулать.

Эпир, чăваш çыруçисем, чи малтан чăваш халăхĕ валли çыратпăр. Чăваш халăхĕ юратса йышăннă произведенисем кăна ытти чĕлхесем çине куçмалла. Ытти чĕлхесене часрах куçарасшăн хыпаланса чăвашла çырнă «подстрочниксем» мар, пур енчен те пиçсе çитнĕ, чăн-чăн художествăлла произведенисем кирлĕ пире!

«Нацилĕх палли» вăл халăхра ĕмĕртен ĕмĕре амаланса пынă хăйне тивĕçлĕ паха уйрăмлăх, прогрессивлă пахалăх, ăна пула кашни халăх ытти халăхсемшĕн хаклă, тупсăмлă, çак пахалăх халăхсем хушшинчи интернационалла туслăха çирĕплетме пулăшать, пĕр-пĕрин хушшинчи культура хутшăнăвĕсене пуянлатать. Çавăн пек ырă пахалăхсем чăвашсен нумай, вĕсем — пилĕксĕр сăхман тăхăннинче, çăпата сырнинче, серте яшки çининче мар — шалта, ăшра. Вĕсене, мĕнпур ăш-чике, ăс-тăна шăранса ларнăскерсене уйăрса илме, каласа пама йывăр, вĕсене куçпа курни çитмест — çивĕч сисĕмпе туйса илмелле. Ку вăл поэтшăн та, тăлмачшăн та питĕ кăткăс ĕç. Мĕншĕн халиччен пирĕн Шелепие чиперрĕн куçараймаççĕ? Мĕншĕн тесен унăн творчествинчи нацилле элементсем алла çакланмаççĕ, вĕсем çутă пек поэтăн пĕтĕм пултарулăхĕнче ирĕлсе тăраççĕ, вĕсене эпир, чăвашсем, туятпăр, анчах ытти чĕлхесене çав пахалăха пĕтĕмĕшпех уйăрса куçарма тăлмачăн сахалтан та «химик» пулмалла.

Акă Шелепин çакă мерченне илсе пăхар-ха:

Камăн варĕнче ўтленсе пулса
Кам кăкри сĕтне çисе ўсрĕн-ши?
Кам чĕрçи çинче выляса кулса
Хĕвел шевли пек йăлт-йăлт сикрĕн-ши?

Çакă мар-и вăл нацилле поэзийĕн чăн-чăн асамĕ? Куçар-ха ăна хăпăл-хапăл тытса урăх чĕлхене? Куçаркаланă хальччен. Анчах никам та унăн чăн-чăн техĕмне ытти чĕлхене 10 процент та парайман. (Пур пирĕн поэтсем — ытти чĕлхесене икшер çĕр, виçшер çĕр процент таранах куçараканнисем те. Вĕсене чăвашла вулама çук, вырăсла тесен — ытлаванах вуланаççĕ, шăпăрлансем!)

Акă тата Хусанкайăн «Сăпка юрри». Ку сăвва татăккĕсĕкĕн илни пин çул авал тунă хаклă йышши савăта ўкерсе çĕмĕрни пулĕччĕ. Çавăнпа пĕтĕмĕшпех вулар:

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш.
Эс ан суйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

Ăшă çумăр чаш та чаш,
Ўс, калчам, çĕклен эс яш,
Çўлĕрен çўле кармаш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

Юлташпа эс пул юлташ,
Усалпа эс ан паллаш,
Тăшманпа ан пул йăваш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Вырăспа та тăванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте — пирĕн хурăнташ.
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

Малалла утсан — малаш,
Каялла юлсан — каяш,
Чăн çултан эс ан аташ.
Çывăр, Аптраман тавраш!

Çакă мар-и вăл эпир юратса, шанса тăракан чăваш чĕлхи! Çакă вăл Çеçпĕл ăмсаннă чĕлхе! Пĕчĕкçеççĕ сăвăра, мерчен тумламĕ çине хĕвел çути пуçтарăннă пек, — авалтан юлнă пуян еткерлĕх те, паянхи илемлĕх те, пулас ĕмĕтсем те!

Поэт çак сăвва хăй вырăсла куçарнă. Чĕрĕкĕн чĕрĕкĕ те куçман.

Чăвашла лайăх çырнă произведенисенче ытти чĕлхесене тивĕçлĕ пек куçарма пулмасть тесе каласшăн мар эпир. Куçарма пулать. Анчах питĕ те сахал ĕçлетпĕр-çке ку тĕлĕшпе! Çитĕ вăхăт, чăвашла çырнă произведенисем тăрăх чăвашсене тўнтер енчен мар, пур енчен те, чи малтан ăс-тăн пахалăхĕ енчен, творчествăлла пултарулăх енчен лайăх пĕлекен пулĕç.

Ухсай Яккăвĕ «Чапаевпа тĕл пулни» ятлă поэмине ачасем валли ятарласа çырнă пек туйăнать. Çак сăлтав Ухсайăн айăпне тата та йывăрлатать: çитĕнекен çамрăксене кун пек чĕлхепе тăван поэзинчен пистерме çеç пулать.

Сăмах май, ачасем валли çырасси çинчен асăнтăмăр пулсан кĕскен Аркадий Ёçхĕлĕн «Ялавра», иккĕмĕш номерте, пичетленнĕ «Анне», «Пирĕн Коля», «Трамплин» ятлă сăввисем çинчен те пĕтĕмĕшпе илсе калăпăр. Ку сăвăсем начарах та мар-и тен: аван шухăшлă, çирĕп тытăмлă. Анчах, темĕскер, Ёçхĕл сăвăçа сăмах уçăмлăхĕ çитмест пек, чĕлхере çыхланса тăраканни, салтăнса кайманни, чăрмантараканни пур пек. Ку вăл çул çитнĕ поэтшăн аван мар япала.

Кам çунă-тасатнă
Хура кĕпене?
Кам çирĕп çеç лартнă
Пиншак тӳмине?

Сăмах ятулăхĕпе рифмăсен пахалăхĕ çинчен каламăпăр, вĕсем çуккисĕр пуçне кунта тата чĕлхепе тĕрĕссĕн усă курни те çук. «Кам çирĕп çеç лартнă пиншак тӳмине?» тесе хальччен каламан та, калама та кирлĕ мар.

Эпир Аркадий Ёçхĕлĕн публицистикăлла ĕçĕсене вулама юрататпăр. Тарăн та сарлака, анлăн та ирĕклĕн калаçать вăл публицистикăра. Шăп çак тĕлте мар-ши Ёçхĕлĕн «ылтăн шăнăрĕ»?

Халăхсем хушшинче туслăх темипе çырнă сăвăсенчен Украина поэчĕ О. Новицкин «Тăванлăх» сăвви пуян. Ана Стихван Шавли чăвашла пысăк хавхаланупа куçарнă. Çак темăпах «Ялавăн» пĕрремĕш номерĕнче Ефимовăн «Çĕнĕ çул» ятлă сăвви пур.

Георгий Ефимов çинчен уйрăммăн калас пулсан, вăл юлашки çулсенче хăвăрттăн вăй хушса пынине палăртмалла. Çамрăк поэт шухăша илемлĕн чăмăртаса пама пултарать, сăмах пуянлăхĕ тĕлĕшпе те çитĕнсех пырать. «Ялавăн» 3-мĕш номерĕнче тухнă Ефимовăн «Лирика» ятлă ярăмĕнче «Хуркайăк» ятлă пĕчĕк поэма тата «Шупашкарăм, савнă Шупашкарăм» ятлă сăвви лайăх; пĕрремĕш — питĕ те тарăн подтекстлă, иккĕмĕшĕ — хăйне уйрăм интонацисемлĕ.

Стихван Шавли çырнă «Кĕтмен визит» ятлă сатирăллă сăвă пирки ниепле те калаçмасăр иртме çук. Ку произведени пысăк мар, мĕнпурĕ те 60—70 йĕркеллĕ çеç. Анчах ун шалти вăйĕ каплампа тапать, çав вăя ирĕк парсан сăвă çавăнтах поэма калăпăшне çити сарăлса каймалла. Поэт сăмахсене çав тери пăркăчласа çырать, апла тунипе произведенин вăй-халĕ чакмасть, ӳсет, идея пĕлтерĕшĕ пиçĕлĕх тата витĕмлĕх пахалăхĕ тупать. Çакăн пек сăвва вуласан унăн хавалĕ пĕтĕм ăш-чике сарăлать, пысăк проблемăллă произведени пек шухăшлаттарать. Малашне те поэта çавăн пек туйăмлă та сулăмлă пулма сĕнес килет. Шухăша кĕске те

хитре каласа парас тĕлĕшпе чăваш поэзийĕнче Шавлипе танлашакан сахал.

Мир тата сыхлă темисемпе «Ялавăн» асăннă номерĕсенче Аркадий Маловăн, Николай Александровăн, Павел Васильевăн тата Василий Ивановăн сăввисем пур.

Павел Васильев пултаруллă çамрăк поэт. Унăн ăшă та кĕрнеклĕ сассинче çитĕнсе пыракан ар, хăйĕн вăйне туйса ўсекен совет гражданинĕ лайăх палăрать. Çамрăк поэт тĕс кайнă, якалса çитнĕ литературăлла шаблонсемпе усă курма юратмасть, хăйĕнне шырать, час-часах шыранине ăнăçлă тупать те.

Юлашкинчен çакна калăпăр. Чăваш поэзине саманана тивĕçлĕ поэзии тăвас тесе пирĕн, поэтсен, тата та вăйлăрах ĕçлесчĕ. Яланах ўссе пыракан кăмăл, нихçан тулса çитеймен кăмăл позицийĕсенчен çырар. Чун ыратнипе чун юратнине çунса тăракан çуйкăнлăхпа кăтартар. «Пăшăлтатуллă лирика» пире ют. Кăшкăру паллисенчен, Маяковский майлах, пĕрре те хăрас марччĕ. Партилле поэзи урăхла пулма пултараймасть те.

Пĕтĕмлетў вăйĕ, шухăш тарăнлăхĕ, çуйкăнлăх çулăмĕ часчасах çитмест пире.

Поэзи тарăн та хĕрўллĕ, çутă та чăнлăхлă пулмалла.

1956

МИТТА ПЕТĔРĔ. «ПĂЛА ТĂРĂХĔНЧЕ»

Кĕнекере Митта Пĕтĕрĕн «Пăла тăрăхĕнче» ятлă драми паллă вырăн йышăнать. 30-мĕш çулсенче пултаруллăн ĕçленĕ кĕске калавсен ăсти Митта Петĕрĕн еткерĕ пирĕн çырулăхра чылай пысăк. Унăн хăй пурăннă чух хаçат-журналсенче тата уйрăм кĕнекесемпе пичетленнĕ произведенийĕсемсĕр пуçне халичченех ал çыру хальлĕн упранаканнисем те пур. Вĕсенчен паллăраххисем «Крепков» ятлă повесть. «Пăла тăрăхĕнче» драмăна автор асăннă повеçрен илсе çырнă. Митта Петĕрĕ сăнласа панă ĕçсем 1918 çулта Пăва уесĕнчи чăваш вулăсĕсенче пулса иртеççĕ.

Хĕвел тухăçĕнчен Мускав çинелле капланса килекен шурă çар, революцин шалти тата тулти тăшманĕсен вăйĕпе авăрланнăскер, Чăваш чиккине çитсен чыхăнать. Драмăри паттăрсенчен пĕри — чухăн хресчен Капрал çапăçура: «Кăтартăпăр эпир вĕсене Мускав!» — тесе кăшкăрни вырăс пролетариачĕпе пĕр пулса Совет влаçĕшĕн çĕкленнĕ пĕтĕм чăваш ĕç халăхĕ шурă хурахсене юнаса каланă вăл вăхăтри хаяр лозунг пулнă. Уйрăммăн илсен Пăлаçи вăл вăхăтра

совет çарĕсен стратеги тĕлĕшпе питĕ те пĕлтерĕшлĕ коммуникацийĕсене сыхлакан вырăн пулса тăнă. Çак вырăнта Петĕр Крепков хăйĕн паттăр отрячĕпе çýренĕ. Вăл кунта шурă çарăн мобилизаци ĕçне путарнă, ялти пархатарлă вăйсене чухăнсемпе Совет майлă вăтам хресченсене революцин хĕрýллĕ ĕçĕсем тавра пĕтĕçтернĕ, пуянсенчен Хĕрлĕ Çар валли тырă кăларнă. Крепков отрячĕ контрреволюцие хирĕç хĕç-пăшалпа çеç мар, çулăмлă сăмахпа та кĕрешнĕ. Вырăнти халăх наци тĕлĕшĕпе тĕрлĕрен пулнипе отряд тăватă чĕлхепе таса калаçнă (чăвашла, вырăсла, мишерле тата ирçелле), кашни халăха хăйĕн тăван чĕлхипе ĕç халăхĕн пĕртен-пĕр шанчăкĕ — Совет влаçĕ мĕнле хăрушлăхра тăнине, çав хăрушлăха мĕнле майпа сирсе ямаллине ăнлантарса пама тивнĕ. Таса кăмăллă, сарлака тавракурăмлă, культурăллă, çирĕп идейăллă çамрăк коммунист Петĕр Крепков, чăваш учителĕ, салтак-агитаторсенчен тăракан отрядăн тивĕçлĕ командирĕ пулнă. Ăна халăх чунтан юратнă, ун хыççăн вута-çулăма кĕнĕ.

«Пăла тăрăхĕнче» драма чăваш ялĕнчи класлă вăйсем юна ýксе кĕрешнĕ чи çивĕчĕ вăхăта кăтарнă. Пĕр енче кулаксем, усламçăсем тата вĕсене сыхлама хĕç-пăшал çĕкленĕ «шуррисем», тепĕр енче — Совет влаçĕн вăйĕ — чухăнсем, вăтам хресченсем, хĕрлĕ салтаксем, ялан халăхпа пĕрле таса чунлă интеллигенци.

Халăх партипе пĕр пулсан çĕнтерет. Чăваш çĕршывĕ урлă тăшмансемшĕн Мускавалла çул çук.

Çакăн пек ĕçсене кăтартса тата çакăн пек шухăшпа çырнă Митта Петĕрĕ хăйĕн драмине. Чĕлхе лайăх. Образсем — асра юлмалла. Драмăн тивĕçлĕхĕ çинчен пирĕн вулакансем тата критиксем хăйсен сăмахне калĕç тетпĕр.

1956

ХАЛĂХ ХАВАЛĔ

Пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм тĕнче улттăмĕш пилĕкçуллăх — совет халăхĕн паянхи аслă программи çинчен калаçать. Савăнать, хавхаланать социализм тĕнчи. Саламлаççĕ пире тусйышсем. Шăл хăйраççĕ, пăшăрханаççĕ тăшмансем. Икĕ системăн экономикăллă ăмăртăвĕнче саманашăн чăнни, этемшĕн мал ĕмĕтли, пурнăçшăн пархатарли — çĕнни, социализм çĕнтерет.

КПСС XX съезчĕ кăтартса панă тăрăх, улттăмĕш пилĕкçуллăхăн тĕп задачисем çаксем пулаççĕ: йывăр промышленноçа малалла та пуринчен ытларах вăй хурса пынипе

техника хастарлăхне тата ĕç тухăçлăхне пĕрмаях хăпартса тăнипе халăх хуçалăхĕн пур енĕсене те хăватлăн аталантарасси, ял хуçалăх производствине хăвăрттăн ўстересси, çак никĕс çинче совет халăхĕн ырлăх-пурлăхне пур енчен те чылай лайăхлатасси, культурине чылай çĕклесси.

Акă вăл çĕнĕ пилĕкçуллăхăн хăш-пĕр паллисем: хура металл шăратас енĕпе — чукун 53 млн т, хурçă — 68,3, прокат 52,7 млн т туса кăлармалла. Çĕр кăмрăкĕ 593 млн т, нефть 135 млн т тупмалла. 1956—1960 çулсенче 2—2,5 млн киловатт таран атом энергийĕпе ĕçлекен электростанцисем лартмалла. Электроэнерги тăвассине 320 млрд киловатт-сехете, вăл шутран шыв вăйĕнчен илекен электроэнергине 59 млрд киловатт-сехете çитермелле. Çулталăкри тыр-пул тухăçлăхĕ таса шутпа 180 млн тоннăна (11 млрд пăта) çитмелле.

Çапла, çĕнĕ пилĕкçуллăх социализмла йĕркен историллĕ çĕнтерĕвне малалла ярать, коммунизм ыранĕн илемлĕ сăнсăпатне тата та çывăхартать, уçăмлăрах тăвать.

Аслă программа пилĕк çул хушшинче кашни ĕç çыннинех мĕн-мĕн пўрессине уççăн та татăклăн каласа парать.

Чăнах та, мĕн тери тăрăшулăх — этемшĕн, халăхшăн тăрăшни, ун пурнăçĕшĕн, ырлăхĕшĕн таса кăмăлпа çунни çакă самана документчĕ пулса тăракан Директивăсенче!

Наци тупăшĕ пилĕк çул хушшинче 60% яхăн хутшăнмалла. Ку вăл рабочисемпе служащисен тата хресченсен тупăшĕсем чылай ўсмеллине, апат-çимĕç тата промышленность таварĕсем çын пуçне нумайрах тивессине пĕлтерет. Рабочисемпе служащисем илекен ĕç укçин чăн тивĕçлĕхĕ пилĕк çул хушшинче 30% çити хăпармалла, колхозниксем укçа хальлĕн тата натурăпа илекен тупăш вăтам шутпа хальхинчен 40% таран ытларах пулмалла. Патшалăх тата кооператив суттин тавар çаврăнăшĕ хальхипе танлаштарсан тата 50% хушăнать.

Социаллă страховани, социаллă обеспечени йĕркипе килекен патшалăх пулăшăвĕ, нумай ачаллă тата пĕчченçи амăшсене пулăшса тăрасси чылай ўсмелле. Вĕренекенсене стипенди парасси, медицина тўлевсĕр пулăшăвĕ, канмалли çуртсене, санаторисене тўлевсĕр е льготăпа каясси çакă пилĕкçуллăхра нумай лайăхланать. Вăтам шкулти аслă классенче, специаллă вăтам шкулсенче тата аслă шкулсенче вĕреннишĕн тўлесси пăрахăçа тухать.

Ĕç хĕрарăмĕсен, ача амăшĕсен кулленхи пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе Директивĕсенче уйрăмах каланă кăтартусем пур.

Хуласенче, рабочи поселкисенче, ялсенче патшалăх шучĕпе 205 млн тăв. м таран пурăнмалли çуртсем тумалла, ку

хисеп пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхрипе танлаштарсан икĕ хута яхăн ытларах.

Хутла вĕрентес тĕлĕшпе — çакă пилĕк çул хушшинче хулара тата ялта пурне те вунă çултан кая мар вĕрентес ĕçе пурнăçлама пикенмелле.

Пирĕн Чăваш çĕршывне илсен, кунта пилĕкçуллăх вĕçĕнче калама çук пысăк ĕç — 800 пин киловатлă Шупашкар гидростанцине тăвасси пуçланать. Çак вăя пула пирĕн республика тĕпрен улшăнмалла, Атăл çинчи чи пуян çĕр-шывсенчен пĕри пулмалла.

Халăхăн варĕнче ўтленсе çуралнă çакă документ, парти документчĕ, халăхăн шухăшĕ, ĕмĕчĕ, кăмăлĕ, юратăвĕ пулса тăрать. Парти тата халăх! Коммунистсен партийĕ хăйĕн ĕçне халăх ĕçĕ тет, совет халăхĕ хăйĕн ĕçне парти ĕçĕ тет.

Парти шанчăкĕ халăх çинче, халăх шанчăкĕ парти çинче. Парти ертсе пынипе совет халăхĕ малтанхи пилĕкçуллăхсене мухтавлăн вĕçлерĕ. Умра улттăмĕш пилĕкçуллăх — коммунизм умĕнчи тепĕр çутă тапхăр. Аслă Ленин кăтартнă çĕре çĕнтерўллĕн çитес тесе пĕтĕм вăя хурса тăрăшар, пултаруллăн ĕçлер!

1956

ЮРИЙ СКВОРЦОВĂН СĂВВИСЕМПЕ ПОЭМИСЕМ

«Çурхи салам» кĕнекене кăлариччен, 1956 çулта, сăвăç хăйĕн ал çырăвне Митта Ваçлейне кăтартнă. «Физкультурник калавĕ» поэмăн юлашки страници хыçне паллă поэтăмăр кĕскен çапла çырса хунă: «Вăйлă сăвăсем çук мар, анчах пĕтĕмĕшле илсен поэма сăвă янăравлăхĕ тĕлĕшпе карăнса çитмен — тапса тăмасть. Сăмах майлашăвĕсем чылай çĕрте сулчă, рифмăсем начар. Пысăкăшĕ — ытлашши. Кĕскетмелле — çуррине ытла! Иккĕмĕш пайне вăйлăрах çырнă. Юмор тени тĕлтĕл аванах — ăшă, кĕрпеклĕ, çыпăçуллă. Малтанхи поэми «Ваççук» — ача-пăчалла». Эппин, ал çырăва юсаса пичете хатĕрлес ĕçре çак кĕске рецензи те пулăшу кўнĕ теме пулать (юсанă текстсен ал çырăвĕ упранса юлман). Çавăнпах-тăр Скворцов «Ваçук» поэмăна пĕтĕмпех пичете сĕнес темен пулас, кĕске пайне çеç «Манăçми асаилўсем» тесе кăларнă. Оригиналăн малтанхи вариантĕнче тĕп герой амăшĕ те (врач), хăй те (шкул ачи) фронта тăшманпа çапăçма тухса каяççĕ. «Физкультурник калавĕ» поэмăна кĕскетни те паллă: Скворцов унта хăй ятарласа çырнă «Сĕвек кĕперĕ» сăвва та кĕртнĕ пулнă, кĕнекери текстран ăна йăлтах кăларса пăрахнă.

1956

АСРАН КАЙМИ КУНСЕМ

(Çĕнĕ премьерăра пулнă хыççăн)

Иртнĕ шăмат кун, ноябрĕн 12-мĕшĕнче, Чăваш академи театрĕ хăйĕн çĕнĕ спектакльне — С.В. Элкер çырнă «Вун саккăрмĕш çул» поэма тăрăх И.О. Молодов йĕркеленĕ «Асран кайми кунсем» ятлă драмăна пĕрремĕш хут кăтартрĕ. Спектакле лартаканĕ — Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ К.В. Иванов, режиссерĕ — Чăваш АССР халăх артисчĕ И.О. Молодов.

Мĕнпур кăмăлтан калатпăр: лайăх спектакль. Чăн ĕнтĕ, малтанхи курăм-туйăм çинчен асăрханарах каласмалла, ан тив, чи тĕрĕс сăмах ӳлĕм, пыра-киле, вăхăт сăнавĕ калатăр, анчах халĕ те, çак самантра, искусствăн таса хĕрĕвĕпе хăпартланса кайнă чух, калас килнине каламасăр чăтма çук. Тата, тепĕр тесен, пирĕн, хаçатçăсен, ĕçĕ те çавă: пурнăçри пархатарлă пулăм-тăвăмсене çийĕнчех палăртса пырасси, вĕсене паянхи кун ячĕпе хак парса хăварасси. Çавăнпа та сăмах «ăшăлла» пулассине пăхмасăр, театр коллективĕ «куçăхасран» хăрамасăр эпир çĕнĕ спектакле çĕнĕ çитĕнӳ тетпĕр, ăна ырă сунатпăр, вăл малашне ĕмĕтлĕ, вăрăм кун-çуллă пуласса шанатпăр.

«Вун саккăрмĕш çул» поэмăра кăтарнă аслă пулăмсем, çав пулăмсемпе çĕкленнĕ тата çав пулăмсене çĕклекен хăватлă этемсем искусство асăмĕпе чĕрĕлсе хăйсен мухтавлă пурнăçне тепĕр хут пурăнма сцена çине тухрĕç. Чăнах та, асран кайми, яланах асра тытмалли мĕнешкел тапхăр!

Драма тăршшĕпех пирĕн саманари пултарулăх теми: халăх, революци, социализм çĕнтерӳллĕн янăраса тăрать. Аслă вырăс халăхĕпе тапраннă Чăваш çĕршывĕ историллĕ ĕçсем тăвать. Ĕнтĕ ĕлĕкхи чăваш кĕтесĕ — упа ушахлăхĕ çук халĕ кунта, 1918 çулта, пĕтĕм Россия телейĕшĕн кĕрешӳ пырать, вăрçă çулăмĕ уласа, мĕкĕрсе явăнать, вăрçă урапи юнланнă çĕршыв урлă аслати пек кĕмсĕртетсе каçать. Кам пăшал йăтма пултарать, çав революцие хӳтĕлеме каймалла. Революци салтакĕсем хушшинче пин-пин чăваш паттăрĕсем: Левенсем, Миххесем, Никантăрсем. Вĕсемпе пĕрле Исси (Лиза) пек хĕрсем те сахал мар. Вĕсемшĕн революци ĕçĕ — тăванран тăван! Октябрь чăвашсене, çĕрсĕр тĕкĕнсе пурăннăскерсене, çĕр панă, ятсăр, тивĕçлĕхсĕр пулнăскерсене наци тивĕçлĕхĕ панă. Анчах çак ырлăха чăваш такамăн «милăçлă» аллинчен йышăнман, ăна вăл хăй аслă вырăс халăхĕпе пĕр харăс тăрса, ытти тăван халăхсемпе пĕр пĕтĕм пулса çапăçура туртса илнĕ. Чăваш çĕршывĕ вырăс революцийĕсенчен пĕринчен те юлман, вăл революци науки-

не, пролетариатăн ăсне, кĕрешӳ меслечĕсене ăнăçлăн вĕренсе пынă, ахальтен мар 1917 çулхи Октябрь тĕлне чăвашсем хушшинче те революцилле лару-тăру ĕлкĕрсе çитнĕ. Ытла та ăнланмалла пулнă революци задачисем! Революци ĕмĕрхи ĕмĕтсене çитернĕ. Кунсăр пуçне революцие пуç пулса ертсе пыракансем те, революцие çар пуçĕ пулса сыхлакансем те чăвашсемшĕн ытла та çывăх çынсем пулнă. Аслă Ленин, пирĕн культурăшăн çамрăк чухнех ĕмĕр манмалла мар ĕçсем тунă çын, халĕ те, тĕнче ĕçĕсене ертсе пынă чух, чăваш халăхне асăнмасăр тăман; паттăр Чапаев, чăваш ачисемпе выляса ӳснĕскер, хăйĕн çарĕнчи чăваш салтакĕсене маттур янташсем тесе саламланă. Чăвашсем çакă юлташлăха, ĕмĕртен амаланса пынă туслăха нихçан та манман, ăна вĕсем яланах ĕçпе çирĕплетнĕ. Илер-ха çакăн пек тĕслĕхе.

Питĕрти рабочисем çур чĕрĕк çăкăрпа пурăннă чух, халтан кайса çапăçакан Хĕрлĕ Çар çăкăр ыйтнă чух, 1918 çулта, чăваш уесчĕсем Етĕрнепе Çĕрпӳ иккĕшĕ кăна пилĕк миллион пăт ытла патшалăха тырă панă; ку хисеп пĕтĕм Хусан кĕпĕрни ун чух тăратнă тырăран 70 процент пулать (И.Е. Петров. «Чувашия в период иностранной интервенции и гражданской войны»). Çак çăкăр сая кайман. Капитализм пусмăрне çĕнĕрен кӳрес текенсене Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕршывран ĕмĕрлĕхех шăлса тасатрĕ; кунсăр пуçне — çăкăртăвар хире-хирĕç тенĕ пек — 1921 çул Чăваш çĕршывĕ нихçан пулман хăрушă выçлăха кĕрсе ӳксен ырă кăмăллă вырăс пролетариачĕ (чи малтан — Мускав) хăй çиес çăкăра чăваш ачисене парса тăчĕ.

Мĕнле йывăрлăхпа тухнă ун чух çавă миллион-миллион пăт тырă! Шалчи тулман чăваш буржуазийĕ, кулаксем, усламçăсем, куштансем, паллах, хăйсене пĕтерме çуралнă паттăра — совет влаçне — çăкăр парасшăн пулман. Анчах тĕнчене çăлма килнĕ ачан харсăр пăхаканĕсем çывăрман. Пĕр Етĕрне уесĕнчи комбедсем кăна 1918 çулхи сентябрь-ноябрьте пуянсенчен 953770 пăт тырă туртса илнĕ, 180899 пăтне вырăнти чухăнсен хушшинче салатнă, ыттине патшалăха панă (И. Е. Петров. Çӳлте асăннă кĕнекеренех).

Çак тапхăрта пуçланаççĕ драмăра кăтартнă ĕçсем.

Ял. Классен кĕрешĕвĕ. Пĕр енче — Левен большевик, унта — чухăнсем тата совет енне куçса пыракан вăтам хресченсем. Тепĕр енче — Каврук, çĕрме пуян ачи, патша офицерĕ, унпа — ялти пуянсем тата совет влаçĕ пĕтессе халланса тăракан тăшманла элементсем.

Анчах тĕнче асапĕпе çуралнă, тĕнчене çăлма килнĕ паттăр пĕтме шухăшламасть, вăл куллен улăпла вăй илсе

пырать, хăйĕн тăшманĕсене ярса тытать, вара урăм-сурăм çапăçу пуçланать. Этем чунлĕ çын çак çапăçăвăн тулашĕнче юлма пултараймасть — пĕтĕм ял вĕресе тăрать, çаврăнса пăтранать. Юнлă тытăçусем, перу́, вĕлеру́ пĕчĕк ялта пуçланса вăрçă аслă хирĕсене куçаççĕ, пĕтĕм çĕре чĕтретеççĕ. Çакăн çинчен калать эпир курнă драма.

Ахăрса хускалнă халăх тинĕсĕ, социаллă хирĕçу́сем, уйрăм çынчен пурнăçĕнчи, йăлинчи тавлă хутшăнусем тытамаклăн кисрене-кисрене илсе, акăш-макăш драмăллă конфликтсем, коллизисем пулса, ĕмĕр асран кайми сăпатпа у́тленсе сăнарланаççĕ. Кунта курмалăх та, пăлханмалăх та, вĕреннелĕх те пур. Хумхантарать, шухăша ярать.

Чăвашсен авалхи «тамаша» сăмахĕ историн тĕрĕсмарлăхне пула кайттă пĕлтерĕш туянман пулсан эпир çак спектакле курнă хыççăн акă вăл тамаша тенĕ пулăттăмăр.

Икĕ каччăн пĕр шухăш — пĕр хĕре юратаççĕ, анчах пурнăçра вĕсен икĕ тĕрлĕ тĕллев. Пĕри — Левен, ĕç халăх ачи, учитель, салтак, командир, хăйĕн телейне вăл халăх телейĕшĕн кĕрешес ĕçре курать. Левен шухăш-кăмăлĕ таса, илемлĕ, вăл ача пек çепĕç — юратнă чух, арăслан пек хаяр — курайман чух. Унăн çамрăкранпах пĕр шухăш:

Инкеклĕ чухăна курсан
Хам выç юлам — пулăшмалла.
Пулăшмасан чун пушă ман.
Таса чĕреллĕ ту́рĕ çын.
Инкек курсан — пĕрле ту́сеп.
Вăл савăнсан — эп хĕпĕртеп.
Мăнаçлă çын е вăрă çын
Усал ĕçсем тăвать пулсан
Ăна çапас килет пуçран.
Юратнă халăх хушшинче
Пулминччĕ чир-чĕр,
мĕскĕнлĕх;
Тăван çĕршывăм çийĕнчен
Часрах сирлинччĕ тĕттĕмлĕх.
Курасчĕ ман тĕнче тени
Çурхи кунсем пек тăнине.
Курасчĕ пур чăваш çынни
Культурлă, чыслă пулнине.
Эп çавăншăн вăя хурап,
Пĕр çавăншăн эп тăрăшап.

Çакă вăл ахаль такмаклу мар, Левенĕн пурнăç тĕлĕ, йĕрĕ. Куç уçăлнă чăваш çамрăкĕ, вăл халь ĕнтĕ тĕнче çине ăнланулăн пăхма пуçланă, вăл хресчен тавракурăмĕн тăвăрлăхне çĕнтерсе тĕнчене улăштарма, тĕнчене хăйĕн йĕрне хăварма килнĕ çĕнĕ Сетнер. (Сетнер тенĕрен, ку ят чĕлхе çине ăнсăртран килнĕ тесе ан шутлăр. «Вун саккăрмĕш çул» поэма енчен «Нарспие» аса илтерет. Элкер геройĕсем çĕнĕ условисенче мĕнпур вăйпа пурăнма тытăннă Иванов çыннисем пек туйăнаççĕ: Нарспи те, Сетнер те, Михетер те, Тăхтаман та пур унта, анчах пурнăç малалла кайнине пула вĕсен шăписем халĕ урăхла — пĕрисем тĕрĕссипе çиеле тухаççĕ, теприсем **тĕрĕссипе** историн çĕр минне анса пыраççĕ, тĕп пулаççĕ. Çакă япала икĕ аслă поэзи хушшинче тачă хурăнташлăх (преемственность) пуррине пĕлтерет. Çапла,

Ивановăн тĕрĕс традицийĕсем ламран лама куçса пырса чăваш çырулăхĕн тĕп шăнăрĕ пулса тăраççĕ.)

Драмăри тепĕр герой — Каврук. Пуян ачи. Офицер. Вĕренкеленĕ çын пулсан та, унăн, Тăхтаман пиччĕшне кайса хунăскерĕн, чĕрере пĕр ырă кăмăл, чĕлхере пĕр ырă сăмах çук. Таса ĕмĕтлĕ, илемлĕ шухăшлă халăх интеллигенцийĕ чунпа-чĕрепе Ленин партийĕ енне тăнă чух Каврук çапла калать:

Мĕскер пире тахçан пуласлăх?!
Ăçта вăл сан илем пахчи?
Хресченшĕн пултăр халь хаваслăх!
Пире аван — вĕлтрен пахчи.
Эпир саватпăр, кăмăллатпăр
Çуталнă лăпкă ялсене.
Анчах коммунсăр. Юрататпăр
Асаттесен йăлисене.

Анчах кив ял Каврукшăн «мемме», уншăн пурнăç тĕрекĕ — кивви, киввишĕн вăл урнă кашкăр пек тилĕрсе кайса кĕрешме пуçлать. Юратăвĕ те ун — юрату мар: аçалăх, çара физиологи. Вăл, революцие пула хуларан яла тарнăскер, ĕлĕкхи аскăн пурнăçĕ пирки тунсăхлать, хула пикисене асăнать, ăна чăваш хĕрĕсен мораль хытлăхĕ тарăхтарать, вăл, ним тăвайман енне, авланса яма та хатĕр. Ун куçĕ тĕлне кӳршĕ хĕрĕ Исси — хĕр хальлĕхĕн чăн-чăн илемĕ, тасалăхăн чи çӳллĕ виçи — тухса тăрать. Тен, кам пĕлет, çакă илеме курсан унăн таçта питĕрĕнсе, тăхăр хут пĕркенсе çывăракан этемлĕхĕ йăшăлтатма пăрахма та пуçларĕ пулĕ, тен, выльăхантроп чăн-чăнах юратса та хатĕрччĕ-и, анчах та вăл хĕр хирĕçнине кура:

Пĕрре алла çавăрсанах
Тупаттăм-ха ун кăмăлне;
Пĕлеттĕмĕр — çураçсанах
Ăна мĕнле тытмаллине... —

тесе татăклăн евитлениннче эпир ним иккĕленмесĕрех Тăхтаман ятлă упăтене куратпăр. Унăн ăшĕнче юрату тĕвĕленмен те. Ку çын пурнăçа татулăх тата юратулăх пама килмен, ылхан яма килнĕ. Ватă Тăхтаман аллинче — саламат, кун алинче — пистолет. Вăл — этемлĕхе хирĕç хĕç-пăшал çĕкленĕ усал.

Поэмăри, çавăн пекех драмăри, чи пуян та паха сăнар — Исси. Калас пулать, пирĕн чăваш литературипаттăр хĕрсем тĕлĕшпе телейлĕ «тĕс» парать. Исси — Нарспин йăмăкĕ. Анчах мĕнле мала кайнă вăл кантăр варĕнче канлĕх тупнă хăйĕн пăлхавлă аппăшĕнчен! Исси тăван ялне, тăван килне, ачаран хăнăхнă йăласене, ялăн поэзиллĕ тăнăçлăхне

юратать. Анчах ниçта та канăçлăх та, тăнăçлăх та çук, чун пăшăрханать, асаплă вăрçă пырать, ял илемĕ — каччăсем акă тăватă çул ĕнтĕ юнлă хирсенче «ака» тăваççĕ. Телейсĕр те кичем иртет хĕр ĕмĕрĕ, «ватта» юласси те инçе мар.

Левен таврăнать. Вăл хĕрлĕ командир. Иссишĕн тĕнче уçăлсах каять. Йывăр шухăшсем пулманпа пĕрех! Анчах Левенпе Исси хушшине Каврук тата кивĕ тĕнче тăрать. Хăрушă чăрмав. Çĕннин шăпи ун чух ытла та иккĕллĕн туйăннă. Исси кил-йышĕн кăмăлĕ теветкел чунлă Левеншĕн мар, пуян Каврукшăн. Энтри, Исси ашшĕ, Левен çинчен илтесшĕн те мар. Хăш чух Исси те:

Атте-çке вăл... Итлес пулать.
Вăл калани саккун пекех, —

тесе спектакль пăхакан хальхи çамрăксене тарăхтарать. Анчах Исси, ашшĕн тĕрĕсмарлăхне кура тăркач, ку сăмахсене йăлашăн çеç калать темелле, вăл хăйĕн ăнланăвĕпе тахçанах ял йăлисен кивĕ хуппине çĕмĕрсе тухнă. Вăл, Иванов поэмине пăхмасăр пĕлекенскер, Нарспи аппăшĕн пурнăç шăпине асра тытса ахальтен мар хутла пĕлет, ăна шкулта Российăри чи лайăх шкулсенчен вĕренсе тухнă учитель ăс панă. Исси тĕлĕнмелле сăпайлă. Каччăпа ларнă чух ашшĕ курасран тем пекех хăрать вăл. Çав вăхăтрах, хирĕçýллĕ самант çитсен, вăл пĕрре те чăрманса тăмасть: ашшĕ хапхине шаплаттарса хупса савни патне тухса каять. Исси шăй-шайран, ятлаçу-харкашуран хăрать, вăл çуйханнă пуху çине чýречерен пăхма та шикленет, çав вăхăтрах, хирĕçýлĕх тулса çитсен, савнă тусне сыхлама пăшал айне хăй тăрать. Юлашкинчен Иссипе Левене эпир Чапаев çарĕнче куратпăр. Çĕнĕ тĕнче телейне мĕнпур ырă вăйсем хýтĕленĕ чух Нарспипе Сетнер — Иссипе Левен урăх çĕрте пулма пултарайман.

Чăваш академи театрĕ «Асран кайми кунсене» лартса, тепĕр хут калатпăр, пысăк çитĕнý турĕ. Вăйпитти коллектив хăйĕн çуллен-çул тĕрекленсе пыракан иксĕлми пултарулăхĕпе пире тепĕр хут савăнтарчĕ. Каламăпăр — малтан пуçласа вĕçне çитичченех хастарлăхпа тата ăсталăхпа çĕкленсе выляна И. Молодов-Левенпе А. Ургалкин-Каврук çинчен. Çумми рольсене выляканcем те асра юлмалли образсем пачĕç: А. Долгова-Марфа (урăхла евчĕ пулма пултарĕ-ши тĕнчере!), Г. Александров-Сантăр (мĕн чухлĕ курман пулĕ эпир ун пек çавăрлан пулăсене!), Д. Столярова-Тарье (сахал мар хĕр ĕмĕтне татнă çакăн пек якатмăшсем), Г. Фадеев-Ассун (чĕрĕлсе тăнă юн ĕçен, уншăн пулсан мĕнпур вăй укçара, мулра: тĕнчере пурне те сутма тата сутăн илме пулать). Аван Е. Никитин-Никантăр, аван И. Степанов-Миххе.

Чи йывăр, чи кăткăс тупсăмлă роль драмăра — Исси сăнарĕ. Вăл хăйĕн ăшĕнчи тата таврари хирĕçўсене çĕнтерсе, куç умĕнчех ўссе, действирен действие паттăрланса пырать. Паллах, Исси-Еруслановӑна ку спектакльте такамран та йывăр килнĕ. Артистка хăйне пўрнĕ образа тĕрĕс ăнланать, нумай ĕçленĕ вăл Исси сăнарне чун кĕртес тесе, анчах çапах та хăй шыранине пĕтĕмĕшпех алла илеймен-ха вăл, хăйне ирĕккĕн, чăн-чăнла тыткалани çитмест ăна, теменле, ун вăййинче пулса çитменлĕх, тăкăскăлăх, ларма хĕр хăюсăрлăхĕ пур-ха. Шанатпăр, малашнехи спектакльсенче Исси сăнарĕ уçăлнăçем уçăлса пырĕ.

Чапаев образĕ пирки. Поэт ăна питĕ кăмăллăн, юратуллăн çырнă. Поэма тăрăх Чапаев хăй хура халăхран тухнине те, хăй пысăк çар пуçлăхĕ пулнине те пĕр самант та манмасть. Унăн ĕçĕ-хĕлĕ, хăйне тыткалани çак ăнлануран килсе тăрать. Пирĕн шухăшпа, Борис Алексеев поэмăра кĕскен те витерўллĕн панă герой образне çителĕклĕ туллин, çителĕклĕ тĕрĕссĕн сăнарлаймасть. Алексеевăн геройĕ хăй çар пуçлăхĕ пулнине час-часах манать, вăл хăйĕн пысăк чапĕпе мухтанса илме те хатĕр. Эрне, Алексеев тунă образра пире ĕлĕкренпех пĕлĕш геройăн илемлĕ енĕсем нумай: сăнран пĕр пекки, ытарма çук хăюлăх, тапса тăракан çутă энерги, чуна пăхăнтаракан уçăлăх — çаксем пурте пур, пĕр сăмахсăрах, ку вăл Алексеевăн тăрăшăвĕ сая кайманнине пĕлтерет. Анчах, кирек те мĕн калăр, Борис Алексеев тунă герой темшĕн вăхăчĕ-вăхăчĕпе янкăс тумланнă пĕр-пĕр грузин княçне аса илтерет. Поэмăра Чапаев ташламасть, спектакльте ура хуçса «ислетет». Артистăн тĕлĕнмелле ăсталăхне кăтартас тесе çар пуçлăхне ташлаттарма кирлĕ пулнă-ши?

Асăннă спектаклĕн вăйлă енĕ — революциллĕ пафос, кĕрешў романтики. Геройсем çĕкленсе каланă сăмахсем чуна кайса тивеççĕ, хавхалантараççĕ. Левен вилес пек аманнă савнине:

Эх, чунăмçăм, куçна уçсамччĕ,
Хĕвеллĕ кун кĕтет сана! —

тесе чĕре хавалĕпе чĕнни пĕрре те суян илтĕнмест.

И. Молодов драматургăн пайĕ ку спектакльте калама çук пысăк. Хăш чух гениллĕ хăватпа çырнă драмăллă произведенисем те сцена çинче ăнăçлăх кураймаççĕ (А. Пушкинăн «Борис Годуновĕ»), Элкер «Вун саккăрмĕш çулне», ăна вăл драмăллă поэма тесе ят панă пулсан та, сцена валли çырнă теме çук, анчах пирĕн поэт драма ăсталăхĕ мĕн иккенне пĕлекен çыншăн калама çук пархатарлă материал

кӳнĕ. Молодов поэмăна драма виçисемпе виçсе, чухласа, майлаштарса кирлĕ пек йĕркеленĕ, авторăн шухăшĕсене, сăмахĕсене тивмесĕр, поэмăри конфликтсене чикке çитиччен çивĕчлетнĕ, çĕнĕрен тупнă килĕшӳллĕ эффектсемпе пуянлатнă, пайпа пай пĕр-пĕринпе çыхăнса, пĕр-пĕринчен килсе тăрать, драма хумхануллăн амаланса пырать. Чи вăйлă пай — Иссине çураçни. Молодов драматург ку пайра хăйĕн пултарулăхне чăннипех кăтартнă.

Драма тем анлăш, тем тарăнăш. Паллах, этем шухăшĕн çак улăпла капламне сцена çинче çĕклеме, пурнăç пама калама çук йывăр пулнă. Анчах спектакле тăвакан коллектив — поэтран, драматургран, режиссертан пуçласа сăмахсăр артиста çитиччен — пысăкран та пысăк вăй кӳнĕ. Лавçă-Маштанова пĕр сăмах кăна калать, вăл та пулин (сăнĕ, сăпачĕ, пĕртен-пĕр сăмахĕ) асра юлать.

Драмăн чĕлхи — сăвă. Ана силлабо-тоника метрикипеле йĕркеленĕ, анчах янтравĕ ун чăвашсен авалхи сăвă виçине питĕ те çывăх. Çак обстоятельство — драмăна сăвăлла çырни — пире малтан шиклентеретчĕ те: ян кайĕ-ши теттĕмĕр тăршшĕпех тенĕ пек пĕр виçепе çырнă тирпейлĕ сăвă? Ахалех пулчĕ. Ургалкинпа Ерусланова калаçма тытăнсанах артистсем ку тĕлĕшпе тĕрĕс тон илнине сисрĕмĕр: вĕсем сăввăн куммине ытлашши пусăмламасăр, ураççине лайăхрах палăртма тăрăшаççĕ, урăхла каласан, сăввăн чĕлхи калаçу чĕлхи патне çывхарать. Уйрăм пафосла вырăнсенче кăна сăввăн янăравлă фонĕ хăватлăн кашлама тытăнать.

Çитменлĕхсем çинчен каланă чух çакна асăрхаттарас килет. Каврук капитан фронтри салтаксене кун памасть, хĕнет, мăшкăллать, калăн вăл фронтри офицер мар, тылри пĕр-пĕр унтер тесе. Чăн, Каврук çын мар иккенне эпир малтанхи пайсенчех куртăмăр, анчах вăл, мĕнле пулсассăн та, фронтра ун пек хăтланас çук: пуля ун пеккисене умран кăна мар, хыçран та тивет. Тата тепĕр ĕненмелле мар вырăн пур. Шуррисемшĕн чи-чи кризислă вăхăтра офицерсем çапла калаçса чакаççĕ:

Вăтам хресчен пиртен вăл тарчĕ.
Аван — Антанта пулăшать!
Пĕр ун çинче çеç пысăк шанчăк.
Тен, юлмăпăр-ха кулăша.

Мĕне кирлĕ çакăн пек «политграмота» вĕрентекен резонерсем! Кун пеккисем поэмăра татах та пур, драмăна та куçкаланă вĕсем. Авторсем хăш чухне ытлашши чăмласа пама тăрăшаççĕ. Калас пулать, пирĕн вулакансем, çавăн пекех куракансем те чăмлак ыйтма пăрахни чылай пулать ĕнтĕ.

Сцена çинче пуху хыççăн пуху кăтартма тытăнсан спектакль «каçхи кĕлле» тухас хăрушлăх патне çитсе перĕнет. Çак айăп та çук мар драмăра. Çакна та калас килет. Çамрăксен рольне вылясси — чи малтан çамрăксен тивĕçĕ. Хăюллăнрах çул парăр çамрăксене. Тиркешместĕп, вăйлă вылять Молодов-Левен те, калама çук вăйлă Ургалкин-Каврук та, анчах ўте кайнă пилĕк-çурăма нимĕнле писевпе, нимĕнле гримпа пытарма çукки ку «çамрăксене» чылаях кансĕрлет.

Спектаклĕн вĕçĕ сулчă пĕтет. Хăватлăн янăракан юлашки аккорд çук темелле. Парад пырать, анчах çарсем курăнмаççĕ те курăнсах та каймаççĕ. Тен, поэт палăртнă пек, Иссипе Левене драма вĕçĕнче каллех уйăрмалла мар-и? Поэмăра вĕсем вăрçăн хаяр хистевне пăхăнса пĕри пĕр енне, тепри тепĕр енне каяççĕ. Ку шухăшра пысăк тупсăм — вăрçă вĕçленмен, 1919 çул пырать, телее, çĕнтерсе илес тесен татах вăй хумалла, татах кĕрешмелле...

Çўлте асăннă çитменлĕхсем, паллах, тулли хăватпа пыракан спектакле чăрмав кўреймеççĕ, çапах та вĕсем пур, вĕсенчен хăтăлмалла.

Çапла, Чăвашсен государство академи театрĕн активĕнче тепĕр туяну — идея тĕлĕшĕнчен пуян, илем тĕлĕшĕнчен паха спектакль: «Асран кайми кунсем».

1956

ПУРНĂÇ ЧĂНЛĂХĔ

Критиксем, сире кĕтетпĕр!

Александр Алкан «Хамăр ялсем» ятлă çĕнĕ поэми пичетленни çулталăк иртрĕ. Нумаях пулмасть çакă произведени поэтăн тата виçĕ поэмипе пĕрле пĕр кĕнеке пулса тухрĕ («Пирĕн вăхăтра», 1956 ç.). «Хамăр ялсем» пирки сăмах чылай çўрет, хаçатсем те ун çинчен çыркаларĕç, анчах пирĕн журналсем тесен, «Ялавпа» «Тăван Атăл», литература пурнăçĕнче нимĕн те пулман пекех, чĕнмесĕр тăраççĕ, вĕсенчен, каларăш, салам та, чалам та çук.

Мĕнрен килет?

Критика ĕлкĕрсе пыраймасть. Критиксем сахал. Атьăрха шутласа пăхар: тăван çырулăха хăйсен пурнăçĕ, сывлăшĕ, ĕмĕчĕ туса литература критикин хастарлă ĕçĕнче ĕмĕр ирттерекен çынсем нумай-и пирĕн? Ваçлей Долгов тейĕпĕр, тата Михаил Сироткин. Ыттисем кам? Ыттисем хальлĕхе — ыйту палли(?). Писательсемпе нумайранпа алла-аллăн пыракансем, ăслă канаш çыннисем, вулакансемпе çыра-

кансем хушшинче кирлĕрен те кирлĕ евчĕсем, асăннă ятсемсĕр пуçне, ахăртнех, çукрах та-и? Чăн, юлашки вăхăтра пирĕн критикăна тата икĕ сас, эпир тахçантанпа тунсăхласа кĕтнĕ вăйлă сасăсем — Иван Кузнецовпа Гурий Титов — хутшăнчĕç. Иксĕлми пултарулăх сунатпăр вĕсене. Пур пирĕн Исевет Паймина, пур ытти çамрăксем те, вĕсем куç умĕнчех ўссе, аталанса, вăй илсе параççĕ. Анчах вĕсен ĕçĕ — малаш, хальлĕхе ку вăй чуна саванăтаракан хунав кăна-ха.

Çапах критикăн сиплĕ çумăрĕ сайра çукалать пулин те, пирĕн тырă-пулă поэзире те, прозăра та, драматургире те аван ўсет. Мĕншĕн тесен тымар вăйлă, çĕр çутă, кун ăшă.

Пĕр «Тăван Атăлра» кăна иртнĕ икĕ çул хушшинче 3 роман, 2 повесть, 22 калав, 10 очерк, 6 поэма, 93 сăвă, 17 куçарнă сăвă, 7 пьеса, 1 опера либретти çапăнса тухнă.

Тухăç сахал мар. Писательсем ĕçлеççĕ. Анчах ăçта — хăш хаçатра, хăш журналта курнă пуль эсир çак тăвăма пахалăх енчен тĕплĕн тишкерсе тухнине? Паллах, писательсен пухăвĕсенче хăш-пĕр произведенисем пирки кăшткашт сăмахсем пулкаланă, хутран-ситрен хаçатсем те стереотиплă асăнкалусем тукаланă, — тавтапуç, кăна эпир ырă кăмăлпа палăртатпăр, çав вăхăтрах ку вăл эпир ăмсанса кĕтекен критика мар-ха тетпĕр. Чăн-чăн критика литература пурнăçĕнчен каçарусăр юлса пырать. Çак ăнăçусăр лару-тăрăва пула юлашки çулсенче пирĕн чылай ятлă писательсемех ĕçлес кăмăла пушатрĕç, ĕç пахалăхĕшĕн çине тăми пулчĕç, ăсталăх хистевне чакарчĕç, çунтармаллине ытлашши хĕссе-пĕссе тыткалакан сухалавçă пек, çиелтен шăйăрттарма пуçларĕç. Малашне те çавнашкал пулма пултараймасть. Ятлă критиксем, йышĕ сахал пирки, пирĕн ўссех пыракан кăмăла йўнеçтереймеççĕ пулсан атьăр хамăр пĕр-пĕрин ĕçне тишкерер, çăкăр пиçиччен пашалу тенĕ пек, атьăр хамăр «критиксем» пулар: пĕр вăхăтлăха «хăвна ху йўнеçтер» (самообслуживание) текен меслетпе те пулин çырлахас пулать. Нуша кулач çиме вĕрентнĕ теççĕ. Амалçă, хăвна ху сипле тенĕ авал. Ахальтен мар ĕнтĕ юлашки вăхăтра пирĕн писательсем (С. Шавли, А. Ĕçхĕл, А. Артемьев т. ыт. те) «Ялавра» тата «Тăван Атăлра» критикăлла статьясем пичетлеме пуçларĕç. Лайăх пуçару. Çавăнпа пĕрлех Писательсен союзĕ çумĕнчи пултарулăх секцийĕсем хăйсен ĕçне чĕртсех, амалантарсах пыни республикăри çамрăксен пичечĕ тата хăш-пĕр районри хаçатсем тавра литпĕрлешўсем активлăн ĕçлеме пуçлани — унта пултарулăх ыйтăвĕсене конкретлă произведенисем тăрăх уççăн, ирĕккĕн,

хавхалануллăн сӳтсе явни — пире савăнтарать, литература пурнăçĕ вăй илсех пынине пĕлтерет, малашне писательсен, уйрăмах критиксен йышĕ ăнăçлăн аталанса пырасса шантарать.

Паянхи чăваш ялĕ

«Хамăр ялсем» поэмăра сăнарланнă вăхăт — паянхи тапхăр. Юлашки çулсенче ял хуçалăхне хăвăрттăн хăпартса пырас тĕлĕшпе кăларнă ăслă йĕркесен тивĕçĕпе çĕкленнĕ халăх хальччен нумай сиен кӳнĕ культ тĕшмĕшлĕхĕнчен хăтăлса пырса пултарулăх вăйĕсене уçăлтарса пĕтĕм кăмăлтан ĕçлет, пурнăç тăвать. Пурнăç çынни, çурт-пуç çынни — кам илтмен пиртен çак нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене? Александр Алка çĕнĕ поэмин геройĕсем шăп ĕнтĕ çавăн пек çынсем — халăх хавалĕпе çĕкленсе коммунизм тăвакансем, социализм йĕркелĕхĕн хуçисем — çурт-пуç çыннисем.

Мĕн тери тупсăмлă, ĕмĕтлĕ, теллевлĕ пурнăçпа пурăнать ку чухнехи ял çынни! Пĕр шухăшлă колхоз кил-йышĕнче кирек камшăн та хисеплĕ вырăн пур, ĕçлеме кăна ан ӳркен, харсăр пул, халăх кăмăлне уя, пĕрлешсе пухакан пурлăха ӳстернĕçем ӳстерсе пыр — çавă социализмла пуянлăхăн никĕсĕ. Çамрăкки вĕренет, вăйпитти ĕçлет, ватти ăс парать. Анчах вĕренессишĕн кăна вĕренни, ĕçлессишĕн кăна ĕçлени этем тенишĕн çитеĕклĕ мар. Эпир пурăнасшăн ĕçлетпĕр: туллин, пултаруллăн, илемлĕн пурнасшăн. Пурнăçăн çăл куçĕ — ĕç, çĕршыври мĕнпур ырлăх-пурлăх тарлă ĕçе пула пухăнать, ăна этем хăй валли савăнса пурăнма тăвать. Çакăн пек шухăшлаççĕ «Хамăр ялсем» поэма паттăрĕсем.

Лайăх пурăнать Мăньял — поэт сăнарласа панă Юмановсен, Степановсен, Улькасен, Сантăрсен, Санюксен ялĕ. Эпир астăвакан ĕлĕкхи чăвашлăхран кунта нимех те юлман темелле, анчах халĕ те Мăньялта мĕнпур пекки пурте чăвашла — ĕçĕ те, чĕлхи те, йăлисем те — çĕнĕ пурнăçпа, социализм сывлăшĕпе çĕнелнĕ чăвашла. Ĕçченлĕх, тирпейлĕх, сăпайлăх, чăтăмлăх, мал ĕмĕт — тахçантанпах пирĕн халăхăн нацилле пахалăхĕсем пулнă, социализм йĕркеленĕ çĕнĕ условисенче çав ĕмĕрхи пахалăхсем калама çук пысăк вăй пулса тăчĕç, чухăн Чăваш çĕршывне ырлăх-пурлăх тата культура тĕлĕшпе малалла ячĕç. Александр Алкан çĕнĕ произведенийĕ шăпах ĕнтĕ çакăн пек чăваш ялĕ çинчен, мирлĕ вăхăтра ĕмĕтлĕ ĕçпе пурăнакан ĕçченсем çинчен калать.

Анчах пирĕн паянхи ĕçсем хăйсен характерĕпе темĕн чул

мирлĕ пулсан та кĕрешӳсĕр ăнăçса пыраймаççĕ, вĕсем, алă вăйне илнисĕр пуçне, чун-чĕре тата ăс вăйне нумай-нумай ыйтаççĕ. Пуян колхоз.

Анчах кам тунă.
Кам хутшăнтарнă пурлăха?
Тав аслă, вăйлă халăха!
Тусем, хирсем, шывсем — йăлт унăн,
Пурнăçĕпе вăл хăй хуçа...
Кам хăйĕн чапĕшĕн, мухтавшăн
Этемĕн кăмăлне хуçать,
Вăл ют пире. Кам хăй пуясшăн
Элек сарать, суять, тунать,
Вăл — ют пире...*

Çапла калать поэт хăйĕн поэминче. Çакăнта пулĕ тетпĕр эпир унăн тĕп шухăшĕ.

Çак шухăша сăнласа парас тесе поэт халăх хушшинчен чи тĕслĕхлĕ, хальхи вăхăтшăн чи паллă характерсене суйласа илет, вĕсен хушшинчи хирĕçӳсене çутатать.

Акă Юмановпа Степанов, иккĕшĕ те вăйлă, пултаруллă çынсем, анчах пурнăçăн тĕп ыйтăвĕсем çине вĕсем иккĕшĕ те икĕ тĕрлĕ пăхаççĕ; паллах, вĕсен хушшинче тав тухса каять, çакă тав поэма сюжечĕн йĕрĕ пулса тăрать, ун тавра ытти çынсем хăйсен ĕç-хĕлне, кăмăлне кура пĕрисем Юманов май, теприсем Степанов май ушкăнланаççĕ. Поэмăра тата тепĕр йĕр пур — Санюкпа Сантăр йĕрĕ, ăна поэт композици енчен сюжетăн тĕп йĕрĕпе лайăх килĕштерсе вырнаçтарнă, ку йĕр тĕп йĕре хал парса пĕтĕм произведение çамрăклăх сĕткенĕпе шăварса тăрать.

Поэт калавне пуçласа пире хăйĕн геройĕсемпе чи малтан хăна сĕтелĕ хушшинче паллаштарать.

Асран кайми туссем! Ларсамăр.
Тулли сĕтел кĕтет сире.
Хăвăр çинчен кĕрекере
Хавассăн каласа парсамăр.

Кунта Йăван Юманов, хуларан тин таврăннăскер; кунта Якур Степанов, колхоз председателĕ; кунтах Ольга Алексеевна, колхоз агрономĕ.

Пĕрле ӳссе, пĕрле выляна,
Пĕрле вĕреннĕ, пĕр шкулта,
Ĕмĕтсене вĕçтернĕ яна
Инçе, инçе... Унтан... унтан
Хăрушă çулăм витĕр тухнă,

---

* Сăвăлла илевсем пурте «Пирĕн вăхăтра» кĕнекерен. (Автор асăрх.)

Ăçта кăна çитсе курман!
Танккана, вĕçнĕ, шунă, юхнă —
Вутра çунман, шывра путман:
Вăрçи иртсен канса тăмасăр
Ĕç тытнă çанă тавăрса, —
Умри çулсем пулмарĕç ансăр,
Вĕçне тухаймăн калаçса.

Автор поэмăн экспозицине ăстайлăн тăвать, геройсен ячĕсене каласа тухнисĕр пуçне вĕсен портречĕсене ўкерет, вĕсен кăмăлĕсенчи хăш-пĕр паллă штрихсене малтанах палăртса хурать.

Акă Юманов:

Çамки пĕрмеллĕ, куç — хура,
Алли те хурçă евĕр унăн,
Хул сарлака, патвар...

«Ўпкевĕм çук — чăн-чăн Юманов» — тет ун пирки ашшĕ — ватă Иван, çамрăк чух çилленес-тăвас пулсан ĕмĕр ларнă юман юпасене тўнтерме пултарнăскер.

Çамрăк Юманов хăй яла яланлăхах килни çинчен пĕлтерет, анчах унăн сăпайлăхне пула вăл мĕншĕн таврăннине юлташĕсем чылайран тин пĕлеççĕ: МТС директорĕ пулма! Вара Степанов, Мăньял колхоз председателĕ, сиксе ўкет:

Ну, Ольга Алексеевнăмăр, савăн:
Халь хамăр çын МТСра!

Маларах эпир Якур Юмановсем патне килсе кĕнĕ чух унăн сăнне курсаччĕ:

Якур Степанов
Тăрать умра, хĕл çулăм панă
Тĕс-питпеле. — Салам!.. Салам!

Халĕ акă «хамăр çын МТСра» текен репликăпа Степановăн шал енĕ пĕр самантлăха уçăлса илчĕ.

Акă Улька — Ольга Алексеевна:

Кăвак куçсем хĕлхем тăкмасăр
Çунаççĕ явлăк айĕнче.

Унăн сăн-питĕнче — пысăк хуйхă хыççăн юлнă салхулăх мĕлки. Степановăн «хамăрлăхĕ» Ольга Алексеевнăна килĕшмест. Вăл ăна тўрех пўлсе хурать:

— Ялан пĕр юмахху çак санăн,
Пĕр «хамăр çын» кăна асра.

Анчах пулас конфликт кунта тĕвĕленмест-ха, вăл — каярах. Тав Йăван Юмановăн тўрĕлĕхпе Якур Степановăн

кутăнлăхĕ пурнăç чăнлăхĕн çулĕ çинче çапăна-çапăна илнипе тухса каять.

Халĕ поэмăри тĕп сăнарсене тата вĕсен тавралăхне пăхса тухăпăр.

Йăван Юманов

Вăл коммунист. Вăтăрсем урлă каçнă çын. Унăн Мăньяла пырачченхи пурнăçне эпир сахал пĕлетпĕр. Çамрăк чухне вăл, ялти комсомолец, Улькана юратнă, вăрçă вĕсене уйăрнă. Тантăшĕнчен сас-хура пулманнине кура пурнăç çине ытлашши романтикла пăхман хĕр тивĕçлĕ мăшăр тупăнсан качча кайнă.

Йăван вăрçă асапĕсене чăтса ирттернĕ хыççăн яла тавраннмасть, пĕр хулари пысăк завода ĕçлеме кĕрет. Халĕ вăл парти чĕннипе, чĕре хушнипе ял хуçалăх ĕçне куçнă.

МТС директорĕ пулса тăван районĕшĕн вăй хурса ĕçлесси унăн малтанхи утăмĕсенченех паллă. Кунта вăл хăш-пĕр «тысячниксем» пек ĕçлемене мар, парти шанса янă вăтăр пинтен пĕри пулса ĕçлеме килчĕ. Шухăшлă та ăслăскер, пурнăçра нумай тӳссе курнăскер, парти ĕçĕн тĕрĕслĕхне чунпа чĕререн шанаканскер, вăл çĕнĕ вырăнта эпĕ кунта тин килнĕ-ха, малтан пăхкалам тесе чăрманса тăмасть, тӳрех ĕçе пикенет. Ĕçĕ нумай вара, мĕншĕн тесен цифиркинсем ура хурса пынипе МТС хĕл варрине çитсе те тракторсен ремонтне чиперрĕн пуçлайман.

Салхуллă çӳрет Юманов МТС картишĕнче:

Машинăсем лараççĕ авă
Юр айĕнче. Çил шăхăрать...
Çур акине мĕнле эс тухăн?
Сар ылтăна мĕнле эс пухăн?..

Хула аса килет:

Лерех аванччĕ, заводрах.
Цехра мĕн тумалли йăлт паллă.

Кунта та мĕн ĕçлемелли, мĕнрен пуçламалли паллă. Анчах та питĕ йывăр-çке юхăннă ĕçе çĕклесе яма! Акă вăл сивĕ мастерскойне кĕрет:

Вĕркĕç вĕрмест, млатук чĕнмест.

Çыннисем:

...пĕр кĕтесрен хăпмаççĕ:
Пĕр пĕчĕк кăмака умне
Кукленнĕ те çине-çине
Махорка тĕтĕмĕ çăтаççĕ.

Ку — механизаторсем. Вĕсене халĕ ĕнтĕ, патшалăхăн çĕнĕ постановленийĕ тăрăх, яланлăх рабочисен хисепне илнĕ, халĕ вĕсен заводри рабочисен çирĕп йĕркисемпе ĕçлемелле. Юманов асăрхать: çĕнĕ рабочисен ĕçлес кăмăл сахал. Пĕр енчен, вĕсене ĕлĕкхи хăнăхусем чăрмантараççĕ — Хĕллехи Микулана каймалла, ача шыва кӳртмелле т.ыт.те, т.ыт.те; тепĕр енчен, цифиркинсем ĕç укçине вăхăтра тӳлесе пымаççĕ, — ун пек пулсан камăн ĕçлес килĕ?

Çак çынсене чăн-чăн рабочисем тума Юмановăн нумай тăрăшмалла. Чăнах та, вăл çирĕп алăпа МТСра йĕрке кӳме пуçлать, ĕç дисциплинине хăпартать, Цифиркин пек сиенлĕ çынсене, МТС хуçалăхне хăйсене валли тупăш çăлкуçĕ туса хунăскерсене, аппаратран тасатать.

Вăл Мăньял колхозĕ мĕнле майпа малта пынине пĕлет. Районти колхозсем валли патшалăхран килекен пулăшу тӳрех Степанов патне çул тытать-мĕн: çĕнĕ машинăсем те. Çакă «ылтăн пĕрхĕмне» çăтсах тăнипе ним хуйхăсăр пурăнать Степанов, кая юлнă колхозсем çине, ĕлĕкхи çĕрме пуянсем пек, куç хӳрипе çеç пăхать. Колхозсен ĕçĕнчи кунашкал киревсĕр практикăна Юманов сивлет, вăл çак ыйтупа районри актив пухăвĕнче тухса калать. Степановпа ун хушшинчи конфликт çапла тĕвĕленет. Тӳрĕ чунлă Юманов «Телей» колхоз председателĕ хăй çине вĕчĕ тытса çӳренине малтанласа асăрхамасть те, вăл ĕçлет, МТС хуçалăхне вăй кĕртесшĕн ырми-канми тăрăшать. Анчах пĕр япала темшĕн пăшăрхантарать-çке ăна? Юманов пăхать-пăхать те: Улька — Ольга Алексеевна Якурпа ытла та çывăх пек туйăнать. Ан тив, пултăрах! Çапах та этем чĕри! Нимĕн те тăваймăн! Вăхăт таптавĕ айĕнче те вилме пĕлмен ĕлĕкхи юрату каллех тапранать, çак сăлтав ĕç мотивĕсемпе пуçланса кайнă икĕ çын хушшинчи конфликта, паллах, чĕрре кĕртме пултарать. Анчах Йăван çăмăлттай çамрăк мар, вăл, чи малтан халăх ĕçĕ çинчен шухăшлама вĕреннĕскер, хăйĕн супинкке телейне каллех ырана хăварать, чуна йывăр килсен те чăтать.

Эк-кей чĕре! Сана халь намăс
Вун çиччĕри пек нăйкăшма.
Пире халь кирлĕ парăнман ăс.
Кулянăç — пирĕншĕн тăшман.
Пулин, вăл тепĕрне юраттăр,
Телей вăл куртăр унпала.
Эс пур — ут çирĕппĕн те паттăр
Ăсу суйланă çулпала.

Йăван Юманов — чăн-чăн ĕç-пуç çынни. Вăл хăйĕн хастарлăхĕпе, тӳрĕлĕхĕпе, халăхпа калаçма тата халăхшăн

тăрăшма пĕлнипе рабочисен кăмăлне тупать; малашне ĕнтĕ МТСра унăн сăмахĕ кирек камшăн та авторитет. Рабочисен ыйтăвĕсене йĕркеллĕн тивĕçтерсе пынипе механизаторсен ĕç кăмăлĕ çĕкленет, МТСри пурнăç вĕресе тăма пуçлать. Халĕ ĕнтĕ кунта рабочисем ĕçе тухасси проблема мар, вĕсене вăхăтра ĕç тупса парасси — проблема. Уй-хир ĕçĕсемпе пĕрлех строительство ĕçĕсем пуçланаççĕ. Йăван Юманов руководствăра хăйĕн ăсĕ, хăйĕн вăйĕ, хăйĕн авторитечĕ çине кăна шанмасть, вăл ĕçе коллективпа килĕштерсе тума тăрăшать, ку тĕлĕшпе ун шанчăклă юлташ пур — промышленноçран килнĕ тепĕр çын: Павел Веселовский, парторганизаци пуçлăхĕ. Веселовский рабочи, вырăс çынни, вырăнти халăхпа çывăхрах пулас тесе ватăлмалăх кунра чăвашла вĕренет. Вăл — Юмановăн тивĕçлĕ юлташĕ, ăслă канаш çынни. Вĕсен хушшинче чи ырă туслăх, пĕрпĕрне вĕсем çур сăмахран ăнланаççĕ, пĕр-пĕрин хавалне хăпартлантарса пыраççĕ. Ĕçре вĕсем пĕр-пĕриншĕн директор та, парторганизаци пуçлăхĕ те мар, ăна-кăна туймаççĕ вĕсем, пĕр-пĕриншĕн вĕсем — пĕр ĕçре тăракан икĕ коммунист.

Анчах ĕçшĕн кăна çунмасть-çке этемĕн чунĕ. Чун ыратать, чун юратать, пăшăрханать, хумханать. Улька, «Телей» колхозăн мĕнпур пек чăрмавне хăй çине тиенĕ хĕрарăм-агроном (Степанов ытларах — «хисеплĕ председатель»), Юмановăн шухăшне сисет пулсан та — васкамасть. Вĕсен сукмакĕсем — те ăнсăртран, те юриех — часчасах пĕр-пĕрин патне çывхараççĕ, чи улах, чи илемлĕ вырăнсенче тĕл пулаççĕ вĕсем, анчах, тĕллевĕсем ниепле те килĕшеймен пек, каллех уйрăла-уйрăла каяççĕ. Пăшăрханать Юманов, вĕчĕхме тытăнать. Улькан шухăшне шахвăртса пĕлесшĕн пулнă пекех, мухтава тивĕçлĕ мар Степанова каçса кайса мухтать, анчах хĕрарăм хăйĕн кăмăлне пурпĕрех палăртмасть. Чĕре таврашне хальччен çирĕп тытма пĕлнĕ хусах чăтаймасть: хайхи тĕрлĕ сăлтав тупса Ольга Алексеевнăна хăй патне, МТСа куçарма пăхать, ăна Степанов «вăйăмĕнчен» (влиянинчен) тартма тăрăшать, анчах Улька яхăнне те ямасть, вăл колхозрах юлать. Çав вăхăтрах кĕвĕç чунлă Степанов ниçта кайса кĕреймест, ĕçме тытăнать, путсĕр Цифиркин ун чĕре суранне пăрăçласах тăрать.

Юмановăн мĕнпур йăпанăçĕ, савăнăçĕ ĕçре. Шухăшĕнче — ĕç, тунсăхлă ĕмĕтĕнче — Улька. Çавна пула вăл хăйне пĕр çамрăк хĕр юратса пăрахнине те сисмест, кун кăна мар, «суя мăн кăмăлла» Степановпа йĕксĕк чунлă Цифиркин ун валли паçăрах шăтăк алтаççĕ — çавна та туймасть. Анчах

ку «сисёмсёрлёх» пирён геройăн сăнарне пёрре те чухăн-латмасть, йăлтах урăхла: вăл хăйне пӳрнё çулпа паттăррăн пырать, унăн унталла-кунталла шăршласа тăма вăхăт та, кăмăл та çук, унпа пёрле халăх, ăна вăл-ку пулсан халăх мăшкăла хăварас çук.

Утăмран утăма уçăлса пырать Юмановăн — поэмăри тёп геройăн сăнарё. Эпир ăна ёçре те, уявра та, пёччен чухне те, халăхпа пёрле те, килёшӳре те, хирёçӳре те, савăнăçра та, хуйхă-суйхăра та куратпăр, унăн пуян та таса чунне туятпăр. Унăн, пурнăç çыннин, ёç-пуç çыннин, ёçё-хёлё ăнса пырать, лайăх организациленнё коллектив тăрăшнипе, патшалăх пулăшнипе МТС хуçалăхё пёр çулталăк хушшинче самай улшăнать.

Ав çёнё гаражсем лараççё
Ёнтё йёрки-йёркипеле.
Мёнпур машин чипер хёл каçё,
Тек çийёнмё шух çилпеле.
Кёрет мастерскойне — таса та
Çап-çутă аслă пӳлёмсем:
Мастерской мар, пёр пысăк садăн
Уçланкине куратăн тем.
Цехсем мăн заводри пек тейён,
Мёнрен кая вăл заводран?
Кунта ёçлекенсем телейлё
Тесе хёпёртесе тăран.
Чёнсем çёлен пек ярăм-ярăм,
Вăлт çеç тăваççё вылянса;
Çынсем çаврăнкалаç вăр-варрăн,
Ёçё пырать вёсен ăнса.

Çак сăвва чăвашлах çырнă-çке! Мухтав чăваш чёлхине!

Якур Степанов

Юманова хирёç антитеза меслечёпе илнё сăнар — Якур Степанов. Вăл поэмăра чи хирёçӳллё, чи кăткăс, пурнăçăн тимёр аллине хёнпе парăнса пыракан этем. Илемлё те вăйпитти çын. Асран катăк мар. Хăюлăхё те, тăрăшулăхё те пур, анчах хăйне юратни, хăйне çеç ёненни, хăйён чапшăн-мухтавшăн çунни ун ăшёнче хуçа пулсах ларать. Вăл республикăра паллă «Телей» колхозăн пуçлăхё. Акă:

«Телей» колхоз начар-им унăн?
Пырать районёпе малта.
Мён кирлине пурне те тунă,
Хăй чи хисеплё çын ялта.

Ялтан тухсан чĕрешĕн ырă
Хирсем выртаççĕ таврара;
Çуллен-çул йăтăнать çеç тырă!
Çаран мĕн чухлĕ улăхра!
Хăш председатель халь сăхланмĕ
Пăлан пек ун ĕнисене,
Ун урхамах лашисене!
Кам тĕлĕнсе пуç сулкаламĕ
Мăнаç сыснисене курсан!
Мĕн чухлĕ пуснă, сутнă, панă —
Мул хутшăнсах пырать...
Степанов,
Чăнах та, телейŭ пур сан.
Никам патне те мар, примерлă
Ĕççем çинчен çырас пулсан
Пĕр ун патне, кунта, вĕçтернĕ
Корреспондент Шупашкартан.
Унта хăвăн каяс пулсассăн
Ларусене е хăнана,
Мăн çуртсене кĕрен хавассăн,
Унта министрсем сана
Йăл-йăл кулса параççĕ алă.

Мăньял колхозĕ чăнах та пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнать. Председателĕн ячĕ те çŭлте, анчах Степановăн тивĕçĕпе мар. Якур эпир турăмăр тесе калас вырăнне ахалех эпĕ турăм тет. Вăл колхоза хатĕрри çине килсе кĕнĕ çын, халĕ те хатĕррине, янттине юратать. Вăрçă вăхăтĕнче паттăр улькасен вăйĕпе тĕрекленнĕ колхоз вăрçă хыççăн Степанов аллине лекет:

— Кайран вăл çитрĕ, пирĕн халăх
Ĕçе майлаштарса ярсан.
Канмарĕ вăл. Çине тăрса
Пикенчĕ, салтакла, вăй-халлăн.
Мана та çăмăл пулчĕ пек.
Колхозăмăр мала та тухрĕ,
Вăл çулсерен тыр-пулă пухрĕ
Ĕмĕтринчен ытлашшипех.
Степанов мухтанма пуçларĕ:
«Районĕпе пĕр эп малта!»
Нимех те мар ăна çын тарĕ,
Вăл хăй кăна иккен ялта.

Пыра киле Степанов руководство ĕçĕ çине çапла пăхма тытăнать:

Тĕрĕслесси кăна...

Паллах, тăрăшакан бригадирсем пур, опытлă агроном пур, уй-хир ĕçĕ вăхăтра пулса пырать, фермăсем лайăх

ĕçлеççĕ, колхозăн тупăшĕ çуллен-çул ўсет, апла пулсан Степановăн хуçалăхри хура ĕçе хутшăнмасан та юрать, унăн ав районта пулмалла, республика центрне çитмелле, хăш çĕрте йăпăлтатса, хăш çĕрте хăратса колхозсем валли пăхнă патшалăх фончĕсене чи малтан хăй патне сĕтĕрмелле. Сăмах витет ун — вăл чаплă колхоз председателĕ. Ăна — вăрман, ăна машина, ăна — хаклă удобренисем, ăна — укçа. Çакăн пек йĕркене вăл, хăйĕн ăсĕпе, тĕрĕс тесе шутлать. Колхозсен хушшинчи танмарлăха — пĕри «ама çури», тепри юратнă «пепкем» пулнине пĕтерме тытăнсан, колхозсене шалти вăя пула, пĕрлешӳлĕх мехелсене пула çĕклес тĕлĕшпе район чăнласах кĕрешме пуçласан çакна хирĕç чи малтан Степанов тăрать. Вăл парти политикине тĕрĕс тытса пыракан Юмановпа хирĕçĕве кĕрет. Пĕрле ўснĕ, ача чухне туслă пулнă юлташĕ çинчен кĕççе пит Цифиркин ăсĕпе усă курса элеклеме пикенет. Ача чухнех Якурăн натуринче темĕскер, кашкăрла кăмăл пулнă. Акă, автор аса илсе каланă тăрăх, икĕ юпах ача — Йăванпа Якур — арман пĕвинче шыва кĕреççĕ. Эккей! Хăйсем ишме вĕренни те нумаях пулмасть-ха, анчах ачапча мар-и? — вĕсен калама çук пĕве урлă ишсе каçас килет. Малтан Юман Йăванĕ ишсе каять, ун хыççăн — Якур.

Акă Йăван каçса пырать. Чим, капла пĕве урлă чи малтан ишсе каçнин чысĕ ăна пулма пултарать-çке! Унччен те пулмасть — Якур Йăвана ураран тытать, шыва путарать. Мĕскĕн Йăван аран çеç вилĕмрен хăтăлать.

Çакă вĕчĕх чунлă кашкăр çуринчен малашне, эхер те капитализм тĕнчи пăчланман пулсан, ватă кашкăр тĕнче çăткăнĕ, пурнăçра хăйĕн кăмăлĕнчен пуçне нимĕн те курман сĕмсĕр куштан, Атăлçи чăвашĕсене пăчăртаса пурăнакан мул аçтахĕ тухма пултарнă. Çапла калама сăлтавĕ сахал мар, ан тив, вăл, Якур Степанов, паянхи кун колхоз председателĕнче ларать тейĕпĕр. Халĕ те вăл, социализм пĕрлешӳлĕхĕн тытăм нормисене сулчăрах ярсан, хăйĕн ăшчикне акăш-макăш кăтартмалла, анчах ăна иртĕнсе каясран çаварлăхласах тăраççĕ: е юлташсем хушшинче сăсăрлантарса илеççĕ, е райкома чĕнсе ăс параççĕ.

Степанов халăхăн пултарулăх вăйне шанмасть, пурнăç мала каясси, прогресс, ун шухăшĕпе, хăй пек «ĕçлĕ çынсенчен», «тупма пултаракансенчен» килет. Акă вăл Юманов тăрăшуне те укçа çине куçарать, укçапа хаклать:

Эппин, тăватăн, — тет Степанов. —
Ĕçӳ сан вĕресе тăрать.
Мĕн кирлине пурне те панă
Çапла, укçа вăл чул касать.

Çакăн пек профанацилет çынсен хавхаланăвне Якур ятлă циник. Вăл пурнăç çине урăхла пăхасшăн мар. Ун пĕтĕм пултарулăхĕ «хамăр ял» текен блат принципĕпе çыхăннă. Пыра киле Якур Степанов халиччен хăйне вăй панă суялăх мăкалса пынине кура, чи ирсĕр хĕç-пăшала ярса тытать — ĕмĕр-ĕмĕр этем тăшманĕ пулса тăракан элеке хăйĕн пулăшаканĕ тăвать, Цифиркинпа пĕрлешсе Юманова путарма тăрăшать, районта ĕçлекенсене Шупашкарпа, Мускавпа хăратать. Чăнах та, унăн демагогине пула Юмановпа Степанов ыйтăвĕ районра чăрмавлă ыйту пулса тăрать. Райком ку ыйтăва ятарласах сӳтсе явать.

Çакăн пек Степановăн халăх хушшинчи сăн-сăпачĕ.

Халĕ ăна тепĕр енчен — супинкке пурнăçĕ енчен илсе пăхăпăр. Вăл, Юманов пекех, çулланнă хусах. Салтакран арăмпа таврăннă, анчах çемье тăвайман: арăмĕ пăрахса кайнă. Паллах, чурăс чунлă çынна çемье чăмартама йывăр. Унăн арăмне, вырăнти чĕлхене, вырăнти йăласене пĕлменскере, упăшка килĕнче пурăнма терт пулнă. Чăнах та, мĕн чухлĕ факт пĕлместпĕр-ши эпир çакнашкаллине? Аякран лайăх-лайăх хĕрсене илсе килеççĕ те, нумай та вăхăт иртмест — майра кирлĕ мар! тесе çуйăхакан амăшне, ватă аппăшĕсене пăхăнса ытлаван килĕштерсе пурăнас çынна, кил-йыша илем кӳрес çынна кулуя кăларса каялла ăсатаççĕ. Çакăн пек йĕкĕтсенчен пĕри — Якур Степанов. Чăнчăн юрату тени унăн чунне нихăçан та хумхантарман. Вăл сăран чунлă. Унăн пурнăçне хавхалантараканни юрату туйăмĕ мар, суя мăнкăмăллăх туйăмĕ, ыттисене таптаса иртсе каяс туйăм, хусах хĕрарăмсăр пурăнмасть, çут çанталăк киреметне пуççапасах пулать, анчах çак япала ун ним кĕрешӳсĕр, тăрăшусăр, хумхану-пăлханусăр, хăйне хăй пулса пырать. Çăмăлттай хĕрсем ялта пĕтмен чух ним шухăшсăр пурăнма пулать Якура. Чăн, автор çакăн çинчен уççăнах çырмасть, ăна такт туйăмĕ ямасть, анчах пире паллă: Якур пурнăçра, Шăпчăк тус калашле, лăп та шăп çавăн пек, вăл хальччен урăхла пулайман-ха.

Эсир, поэмăна вулакансем: çук, Якурăн тем тесессĕн те чунĕ пур, вăл Ольга Алексеевнăна юратать тейĕр. Чăнах та, пĕрре вăл Улькана хăйĕн арăмĕ пулма сĕннĕ-çке. Кун çинчен Улька çапла каласа кăтартать:

Мана качча илесшĕн пулчĕ:
«Мĕскершĕн, тет, вăйна хуçан?
Халь сансăрах ĕç кайĕ ман,
Киле илем кĕртмешкĕн юлччĕ».

Анчах çак сĕнĕве Степанов чĕрипе хумханмасăр, чунĕпе пăлханмасăр тунă. Улька уншăн хĕрарăм кăна. Ольга Алек-

сеевна хăйĕнчен таçта малта иккенне, унăн чун пуянлăхне, шалти илемне вăл асăрхамасть те. Ку кăна мар, вăл тирпейлĕ колхоза кам аллинчен илнине те тахçанах маннă, мĕншĕн тесен, Степанов шухăшĕпе, пурнăçра урăхла пулма та пултараймасть, — пĕтĕм тĕнчипе те Степанов кăмăлĕ çеç тĕрĕс, ыттисем... ыттисем вара ун кăмăлне тăвакансем пулмалла.

Юманов Ольга Алексеевнăна МТС аппаратне илме пăхсан Степанов кăтăрса каять, — тен, Улькана юратнипе тетĕр пуль? Çук, лайăх хĕрарăм тепĕр çынна лекме пултарать, çавăншăн çеç пăшăрханать вăл. Лайăх япала ялан унăн пулмалла, хĕрарăм тени уншăн пулсан япала кăна. Çавăнпа та кайран, калав вĕçĕнче, Улька унăн пулмассине пĕлсен те, вăл çакăнса та вилмест, шыва та сикмест, «усал тăшманĕпе» хире-хирĕç тăрса пăшалпа та перĕнмест, хăйĕн шăпине лăпкăн çеç йышăнать. Унччен нумай пулмасть кăна вăл Улькана çавăрас шухăшпа лирика паттăрĕ пек хăйĕн туйăмĕсем çинчен йĕрсе, сăмахсене куççулĕпе тата эрекпе юрса кăтартнăччĕ:

— Юман вăл хăйшĕн çеç тăрать.
Пăрах ăна. Мĕне вăл кирлĕ?
Паян — кунта, ыран — таçта.
Ăнман упа пек хулăн тирлĕ,
Сана чунтан-и юратать?
Сан пеккисем ун çитмĕл пур-тăр
Таçти-таçти хуласенче...
Пĕркун сире пĕрле курсассăн
Эп çывăраймарăм çĕрĕпе.
Çавăнтанпа вара манасшăн
Çупма пуçларăм ĕçкĕпе.
Анчах нимле те манаймарăм.
Пуçна пĕксе ална çеç сул!
Улька! Пулсамччĕ эс ман арăм,
Шуса çеç пырĕччĕ кун-çул!

Ăнăççăр юрату пирки ĕçме пуçланă пулать Степанов. Çук, вăл нихăçан та никама та юратса курман. Степановсен ĕмĕрĕ иртет, чапĕ çухалать, тен, çавăншăн ĕçме пуçланă пулас? Мал ĕмĕтлĕ çын — хăйне те, çынсене те сума сăвакан çын — нихăçан та ирсĕр ĕçкĕ ытамне кĕрсе ўкмест.

Лайăх тунă «Телей» колхоз халăхĕ: çĕнĕ суйлавра колхоз ĕçне чăрмантарса пыракан Степанова та, унăн хўрешки Цифиркина та «шуç чуман» çине лартса янă, председатель пулма çĕнĕ пурнăçшăн мĕнпур хастарлăхне паракан Улькана суйланă.

Улька — Ольга Алексеевна

Ытарайса илейми сăн-сăпатпа тухса тăрать пирĕн ума колхоз агрономĕ Ольга Алексеевна. Чăваш хĕрарăмне çут çанталăк мĕн пӳрнĕ, мĕн пилленĕ, çавă пĕтĕмĕшпех тенĕ пек Улькара сăнарланнă. Ырă кăмăл, ĕçченлĕх, сăпайлăх, çутă ăс, юратуллă чĕре, аннелĕх туйăмĕ, юлташлăха тата халăх ĕçне нимрен мала хуни, Тăван çĕршывшăн çунни, унăн тăшманĕсене курайманни — çакă этем чунне пуянлатакан, этеме этем тăвакан пахалăхсем Улькан сăнарĕнче, хĕвел çутин элеменчĕсем тырă пĕрчинче пуçтарăнса ӳсĕм вăйĕ тунă пек, пултаруллăн пĕрлешнĕ.

Улькан нумай енлĕ пурнăçне сăнласа парас тесе автор ăна кулленхи ĕçсенче, халăх çинче, кăмăл-туйăм хутшăнăвĕсенче — тĕрлĕ вырăнта, тĕрлĕрен лару-тăрура кăтартать.

Иртнĕ хăрушă вăрçă пирки алăри ачапа тăлăха юлнă çамрăк хĕрарăм инкеке пула хуçăлмасть. Унăн хуйхи — тĕнче хуйхи, халăх хуйхи, апла пулсан ăна халăхпа пĕрле чăтса ирттермелле. Çак шухăш хĕрарăма чун тĕреклĕхĕ кӳрет, пурăнма вăй парать. Яла юлнă хĕрарăмсем тата ватăсем Улькана колхоз председательне суйлаççĕ. Арçын аллисĕр, туртăм вăйĕсĕр, кирлĕ пек ĕç хатĕрĕсĕр тăрса юлнă колхозсенче ун чух йывăртан йывăр пулнă. Акă мĕнле асăнать çав вăхăта Ольга Алексеевна:

Эпир кунне-çĕрне пĕлмесĕр
Ĕçлерĕмĕр. Машинсăр-мĕнсĕр.
Сĕт паракан ĕнесене
Вĕрентрĕмĕр плуг сĕтĕрмешкĕн.

Улька поэтăн хавхаллă ăсĕнче пĕр телейлĕ самант çуралнă сăнар мар, унăн прототипĕсем пирĕн пурнăçра нумай. Гварди полковникĕ Прохор Трофимов «Чăваш çĕршывĕ Аслă Отечественăй вăрçи кунĕсенче» ятлă пуян тулăмлă статйинче пире çакăн пек факт илсе кăтартать:

«Т.И.Иванова Комсомольски районĕнчи «Трактор» колхоз председателĕнче ĕçлесе вăрçă йывăр çулĕсенче колхоз производствин чăн-чăн организаторĕ пулса тăчĕ. Вăл ĕçлекен колхоз акакан çĕр талккăшне чылай ӳстерчĕ, тырă тухăçлăхне хăпартрĕ, выльăхсен шутне хутшăнтарчĕ, патшалăх умĕнчи парăмсене яланах вăхăтчен татса пычĕ. Ĕçри паттăрлăхшăн Т.Иванова Ленин орденĕ илме тивĕçлĕ пулчĕ» (Тăван Атăл, 1955, 2 (55)№).

Çакă чăнласах та пысăк, вăхăтне кура питех те чăрмавлă ĕçсене лайăххăн йĕркелесе пыма ăслă та хастарлă, йывăрлăхсене парăнман çирĕп кăмăллă çын кирлĕ пулнă. Мĕн чухлĕ хурлăх пулнă пулĕ пирĕн Улькана ача-пăчаллă, выçлă-тутлă

хĕрарăмсене ĕçе кăларма?! Мĕн чухлĕ кăна ларса йĕмен пулĕ пирĕн хĕрарăмсем лаша вырăнне ĕçлекен ĕшеннĕ ĕнесемпе çул çине тухсан?! Чăтнă, шăла çыртса чăтнă. Çавăнпа çĕнтернĕ те.

Çавăн чул йывăра тӳссе ирттернĕ, пурнăçăн хĕрхенӳсĕр аллинче асапланнă хĕрарăмсен чĕре хытмалла пек, вĕсем чун илемне çухатмалла пек, арçын вырăнне ĕçленĕскерсем açатукана тухмалла пек. Çук, чăн-чăн чĕресем асап вутĕнче шăранса ылтăн пулаççĕ иккен, хальччен пулман илем, асам, пуянлăх туянаççĕ. Çавăн пек пирĕн хĕрарăмсем. Çавăн пек «Телей» колхоз агрономĕ Ольга Алексеевна та.

Улька Степанов Якур вăрçăран килнĕ-килменех хăй нумай вăй хунă, ялпа пĕрле майлаштарса янă колхоз ĕçне нимĕн турткаланмасăр-тăмасăр унăн аллине — арçын аллине парать. Вăл тĕрĕс турăм тет, ӳкĕнмест, мĕншĕн тесен Якур чăнах та малтанласа пикенсех ĕçлет, халăх ĕçне çирĕп алăпа тытса пырать, çуккине тупать, пуррине ӳстерет. Агрономпа председатель иккĕшĕ те пĕр ĕçрине пула час-часах курнăçаççĕ, калаçаççĕ, пĕр-пĕрне ăнланма, хак хума вĕсен вăхăт та, ытти майсем те пур. Урçа çынни, паллах, маттур хĕрарăм çине тинкеререх пăхма пуçлать. Улька хăй те çамрăк, телей пулсан мĕншĕн арсăр пурăнас? Арсăр пурнăç — халсăр пурнăç. Анчах — ĕмĕр сакки сарлака. Ĕмĕр ирттересси ана пӳне утса тухасси мар. Улька васкамасть, тата унăн çухату суранĕ те чĕп-чĕрех-ха. Телейлĕ хĕрарăмсем упăшкисене кĕтсе илчĕç, вăл пур — каçсерен ачине ытала-ытала йĕрет. Васкани çитермест, кĕтни çитерет. Чăнах та, пыра-киле Степанов Улькашăн мая килменни уçăлнăçем уçăлать, — ку пирĕншĕн те, Улькашăн хăйĕншĕн те паллă. Хĕр-паттăр умне Юманов, вăйлă та мал ĕмĕтлĕ, ăслă та кĕрнеклĕ çын, тухса тăрать. Эпир калатпăр: Улька, акă сан валли каччă тетпĕр. Ольга Алексеевна çĕнĕ çын енне тинкерӳллĕн пăхса пирĕн сăмах çине хуравланă пекех çапла калать:

Анчах эсир-çке темшĕн култăр?
Чăн тĕрĕсне калам эппин:
Хавассăн çитĕнет ман ывăл,
Ав çывăрмашкăн выртнă тин.
Вăл ун сăнарлă. Ырă-сывă...
Кайран-и, тен, хальхи суранăм
Сӳнсе ларсан (ку пулмĕ мар),
Чуна, тен, чĕртĕ çĕн кăвар;
Унччен никампала та манăн
Выляс килмест туй тумалла.
Хĕрсем кулса йĕреççĕ — ăссăр,
Эпир хĕр пулнă, халĕ — арсăр...
Пит ăслă шухăшламалла.

Çакă вăл — пурнăçа пĕлекен, хăйне хăй хисеплекен ăслă çын философийĕ. Кун хыççăн эпир Ольга Алексеевнăпа калаçнă чух пули-пулми сăмах вылятма пултаймастпăр.

Улька тĕлĕнмелле сăпайлă. Вăл хăйĕн пултарулăхĕн виçине, — çынсем, ан тив, кирек те мĕн калаçчăр, — хăй пĕлет, вăл хăйĕн ятне нихăçан та çынран мала хурасшăн мар. Акă ăна пысăрах ĕçе куçарма ыйту лартсан вăл çапла хуравлать:

— Куçмастăп эп, Иван Иванччă.
Хăратăп пултараймасран.
Хам пĕчĕк ĕçĕмрех аванччĕ
Çын кăмăлне хăвармасан...
Мĕскер вăл пирĕн пек... хĕрарăм!

Çĕнĕ ĕçрен мар, хăйĕн пултарулăхĕ çитмесрен мар шикленет Ольга Алексеевна. Чăн-чăн сăлтав — урăххи, анчах ун çинчен каласа пама вăхăт çитмен-ха унăн. Каярах вăл калать. Цифиркинпа çыхланса кайнă Степанов «Телей» колхоза каялла яма пуçласан Улька пĕтĕм ответлăха туйса илет: çав тери тăрăшса тунă пурнăçа епле чакармалла?

Епле хăйĕн ĕçне, тăван ял-йышне, тăван колхозне юратать вăл, Улька! Тепĕр хут калатпăр, мĕнле ответлăх туять вĕсемшĕн хăйĕн ăшĕнче? Юманов хистесех хистенине хирĕç акă мĕн калать:

— ...Колхозран,
Тăван ялтан епле эп кайăп,
Çак йĕркене кура тăра?
Вăл пулĕччĕ пит пысăк айăп
Ял-йышăм умĕнче. Çак вăхăтра,
Анлан, кунта пулмалла манăн...

Юратура, чĕрен тивĕçĕ çеç пулса тăракан кăмăл-туйăмсенче мĕнле илемлĕ Улька! Паллах, çамрăк чухнех юратнă Юманова вăл халĕ те кăмăллать, ку туйăм унăн аталансах пырать.

Чиелĕхре утса пыруçăн
Юманов чарчĕ Улькана.
Ĕнтĕ тăраççĕ куçа-куçăн,
Сас çук, чĕре таппи кăна.
Улька курмасть, туять: ик алă
Выртать ик хулпуççи çине.
Унтан: «Эп юрататăп. Халăм
Çитмест ман сансăр», — тенине
Илтет. Вăл вăранать сасартăк.
— Çук, халĕ мар. Куçа хупсан,
Эп урăх çывăх сăн куратăп,
Мана йăлт ăнланасчĕ сан!

Юмановпа унăн хушшинче — чĕрене ĕмĕрлĕхе йĕр хăварнă таса çын ячĕ. Çакă ята хисеплемелле — хăвăн умăнта, халăх умĕнче, пулас упăшку умĕнче. Ку — ăс енчен пăхсан. Анчах туйăм сĕмĕпе пăхсан та, ача ашшĕ унăн чĕринчи хăйне тивĕç вырăнне никама та парасшăн мар-ха:

Хыпар илни миçе çулталăк,
Çапах чунра вăл пурăнать.
Хăш чух шутлатăн та — кĕç алăк
Уçса кĕрессĕн туйăнать.
Ăс вылянать пулсан та шухă,
Çулăмлансан та юн вара,
Чĕре сасне илтсессĕн — шухăш
Хăй вырăнне кайса ларать.

Эпир пĕлетпĕр: Юманов Улькашăн çуралнă, Улька — Юмановшăн. Вĕсем пĕрлешмеллех. Анчах пĕрлешӳ умĕн вĕсен илемлĕ те хавхаланулла, чуна пуянлатакан, ăса çирĕплетекен çул утса тухмалла. Çав çул — юратупа мухтавлă ĕç çулĕ. Çавăн пек пулмалла та пирĕн романсен ырсемĕ.

Улька çинчен, ху юратнă çын çинчен калаçнă пек, вĕçĕмсĕр калаçма пулать. Ун ăсĕнчен, вăл чи çивĕч хирĕçӳ саманчĕсенче те çухалманнинчен тĕлĕнетĕн. Юмановпа Степанов хушшинчи конфликт тулса çитсен халĕ ĕнтĕ Улька та чăтса тăмалла мар пек, вăл камăн майлă та пулин — пĕрне сивлесе, тепĕрне ырласа — яр уççăн тăмалла пек. Çук, хăйĕн çине икĕ енчен икĕ вăйлă хум çапнине пăхмасăр вăл тĕреклĕн тăрса хирĕçĕве лăплатать. Вăл хăйĕн «кăтăклăрах положенине» пула Юманова та уççăн хӳтĕлеме пултараймасть, тĕрĕс мар хăтланакан Степанова та тӳрех хирсе пăрахаймасть. Степанов çинчен райкомра ыйту лартсан Улька акă мĕн калать:

Кам мĕнлине курать вĕт халăх,
Ĕç мĕнлине пĕлет вăл лайăх,
Çав калĕ татăклă сăмах...

Поэмăра чăн-чăн художникăн вăйĕпе çырнă гротескла картина пур. Вăл — Шупашкартан яла пынă пĕр çурмаккай çинчен. Автор çав çурмаккайăн лекцине «стенограммăласа» парать. Чăвашла маннă Шупашкар тиекĕ кукуруза акма вĕрентет, Айзман Картошкинĕ пек ейкеленсе, пĕр сăмах чăвашла, виçĕ сăмах темĕскерле калать. Халăх кулать. Йĕрĕнсе çапла тĕртсе илекенсем те пур:

— Чăваш та мар, тутар та мар вăл?
— Эппин кам пултăр-ха — Шапа!

Пухăва пăсас мар тесе Шупашкар «ученăйĕ» хыççăн Ольга Алексеевна тухать:

Куратпăр, сцена çийĕнче
Улька тăрать. Тумланнă лайăх.
Хĕвел çиçет пек питĕнче!
Шур хут татки çине пăхмасăр,
Вăл кукуруза çинченех
Йăлтах каларĕ такăнмасăр
Тăван чăваш чĕлхипелех.

Паллах, Улька пек хĕрарăмсем сывă чухне пире «шапа çăварлă картошкисен» хумĕ хăруш мар. Вĕсем халăх ўчĕ çинчен йăптăх пек, лĕкĕ пек, кирĕк пек тăкăнса пыраççĕ. Йăптăх тăкни организм çĕнелсе пынине пĕлтерет.

Хăйсем камне маннă этем ланчашкисене кăмăла каять-и ку, каймасть-и, — Улькасем пур çинче пирĕн халăхăмăр — сывă, чĕлхемĕр — хăватлă!

Нарспи мăн акка тепĕр йăмăкĕпе мухтанма пултарать. Чăваш çырулăхĕнче Улька çуралчĕ. Салам сана, Силпи çĕршывĕ! Эсĕ хăрхăм мар, эс хĕсĕр мар!

Цифиркин

Поэмăри тепĕр паллă персонаж — Цифиркин. Бухгалтер. Унăн поэт çырса паракан ĕççенче чылай пысăк, анчах тĕп роль мар. Колхоз пуçланнă çулсем çинчен çырас пулсан, паллах, Цифиркина эпир тĕп рольсенчен пĕрне панă пулăттăмăр, халĕ ак, ку сăнарăн социалла никĕсĕ ваннипе, Цифиркин класс тĕлĕшĕнчен пĕтĕçсе тăракан сий пулма пăрахнипе, ăна ирĕксĕр, тĕпре мар, пичевре çўретес пулать. Çапах пичеври вăйран та питĕ нумай килет, вăл тĕп вăя çыхлантарса, чăлхантарса пыма пултарать. Çавăн пек чăрмантаруллă вăй пулса тăрать те ĕнтĕ ĕç тĕлĕшĕнчен чăхăмăç, шухăш тĕлешĕнчен шанчăксăр, кăмăл тĕлĕшĕнчен таса мар Цифиркин.

Цифиркинсем пирĕн пурнăçра — каснă чĕл, вĕсем пурнăçăн тути-масине çухатнă, вĕсем идеалсăр-мĕнсĕр, çулсăрйĕрсĕр тăрса юлнă çынсем. Çул пур вĕсене — ут та ут коммунизм тăвакан халăхпа пĕрле; кутăн ăсу тĕрткелесех тăрать пулсан та ялан ырă çинчен шухăшлама тăрăш, чипер пурăн, халăх кăмăлĕпе, халăх ĕçĕпе хирĕçĕве кĕр! Анчах Цифиркин ун пек çулпа усă курма тăрăшсах каймасть-ха, ашшĕ-аслашшĕ акса хăварнă харпăрлăх вăлчи ун ăшĕнче вĕчĕлтетсех тăрать, ăна пĕтерме унăн чун вăйĕ те, шухăш туртăмĕ те çук. Истори Цифиркина мĕн те пулин вĕрентнĕ

пулсан чи малтан — асăрханма. Ăсĕ, кăмăлĕ унăн пĕрре те улшăнман, кивĕ тĕнчерен вăл мĕнле туртăм-тĕртĕмсем туяннă, халĕ те çавăнпа пурăнать, хăйĕн йĕксĕк пырĕшĕн кăна антăхать.

Акă вăл Юмановчен МТС хуçалăхĕнче аванах тымарланнă пулнă:

Вăл ларнă ним пăшăрханмасăр
Пĕр тăвăр çеç кабинетра.
Анчах та хăйшĕн пулнă харсăр:
Çапла тăп ларнă хушăрах
Тем пысăкăш шатрун çурт лартнă.
Усранă пĕр кĕтӳ сысна.
Хур-кăвакал... — вăл пурлăх тытнă,
Халь мĕн кăна çитмест ăна!
Анчах ăçтан, мĕнле çитернĕ?
Тарпа-и? Çук, чеелĕхпе.
Хăшне ĕçтернĕ те çитернĕ.
Алла ал çунă теприпе;
МТСа вăл хамăн тенĕ
(Сасăпа мар, хăй ăшĕнче),
Куç умĕнче чĕнми ĕçленĕ,
Йăл кулнă çурăм хыçĕнче.

Çакă шĕкĕ МТС пурлăхне кăшланă та кăшланă. Унăн тавраpи тимсĕрлĕхе пула сăтăр туса пурăнма май та, вăй та пулнă. Чапшăн, ятшăн кăна хапсăнса ĕçлекен степановсемшĕн кун пек этем, паллах, ылтăнран та хаклă. Пĕчĕкçĕ шĕкĕ патмар йывăçа сывмарлатать.

Рабочисене ĕç укçи вăхăтра парса пыманнипе тата ĕçшĕн ĕçе кура тӳлессине пăтратса янипе МТСра ĕç кăмăлĕ сӳнсе ларать, хавасланса ĕçлес çынсем ăçта килчĕ унта саланса пĕтеççĕ.

Ĕç кăмăлне шĕкĕлчес сăтăрла туртăм Цифиркинăн МТСра ĕçленĕ чухне юриех пулнă-и, юри мар-и — пĕлместпĕр, анчах каярах, Юмановпа хирĕçĕве кĕрсе кайсан, вăл вара колхоз ĕçне сиенлесе пырас çул çине тӳрременех тăрать. Политика ăнланăвĕ енчен панккав Степановпа усă курса Цифиркин «Телей» колхозри ĕç кăмăлне те наркăмăшлама тытăнать — ăçта çитет унта колхозниксен хастарлăхне сĕвĕрĕлтерме пăхать.

Акă вăл витесем тунă çĕре, каскалакансем патне пырать:

Чăн-чăн начальник пек мăнаçлăн
Тек пăхкалать йĕри-тавра:
Çĕрте мĕн выртнине сăнасшăн,
Тем критиклемелли тупасшăн —
Ахаль килмен пулас ара.

Акă вăл çынсен кăмăлне тапăнать:

— Мăраланатпăр! — терĕ. —
Асаттесен мелĕпелен,
Кăвапасем татăличчен
Йăтма-вăйма халь намăс мар-и?
Машина ĕмĕрне çын тарĕ
Пит килĕшсех каймасть те вăл —
Мĕн тăвăн! Ялăмăр хула-им?
Хула çынни пиртен кулайĕ!
Аçта пыран — унта хăвăл...

Çакăн пек кăшласа çӳрет те ĕнтĕ Цифиркин ятлă шĕкĕ. Пыра киле вăл ĕçке ернĕ Степановăн чи çывăх çынни пулса тăрать, Юмановпа Улькана вăрттăн йĕрлет, сăмах вăрлать, çăхав çырать, элек парать, Юмановпа Степанов хушшинчи хирĕçĕве ĕçертсе, чĕртсе пырать.

Цифиркин пек шĕкĕсем пирĕн сахал мар-ха. Шĕкĕ хăрăк-харăк йывăçсенче, хăртнă вырăнсене лайăх тасатман çĕрсенче ĕрчет, çĕрĕкрен сывă йывăça куçма пултарать. Шĕкĕ ан ĕрчетĕр тесен ӳсекен вăрман таса пулмалла. Çакăн çинчен калать эпир тишкерекен поэмăна сатира планĕпе кĕнĕ Цифиркин сăнарĕ.

Варвари

Поэмăра тепĕр сăнар — лара-тăра пĕлмен çамрăк Варвари пур. Ку сăнарпа поэт лайăх усă курать, тĕп персонажсене сăпатлас çĕрте Варвари хăйĕн ĕçне чипер тăвать. Е вăл, МТС кантурĕнче машинистка пулса ĕçленĕ чух «Ева аппăшĕн кĕç чирĕпе» аптăранăскер, çĕнĕ пуçлăх алăкĕ çумĕнчен хăлхине илмест, е акă Степанов патне пырса Юманов çинчен элек сарать, е хăй тракторпа ĕçлеме тытăнсан Сантăрпа Санюк хушшинчи туслăха пăсма хăтланать, е, çăмăлттайскер, хăйĕнчен икĕ хут аслă Юманова юратса пăрахать, унтан, çавăн пек çӳресен-çӳресен тин, мĕнлетлĕ ăс тытать: Çĕпĕре çерем пăсма тухса каять. Паллах, çынсен хушшинчи илемлĕ çыхăнусене пăсса çӳриччен хастарлă çамрăксемпе пĕрле çерем пăсма кай! Йĕркеллĕ пурăнма вĕрен. Поэт тем тесессĕн те Варварие пăрахăç тумасть, пăрахăçлама мар, вăл ăна юратать те. Апăрша хĕрĕ, ури çине ĕне пусманскер, хăш чухне хăй мĕскер тунине хăй те тавçăраймасть Варвари, анчах ун ăш-чикĕ таса, вăл, чăрмавлăн пулсан та, совет çамрăкĕсемпех аталанса пырать. Варвари Цифиркинпа пĕрле каймасть.

Санюкпа Сантăр

Поэмăри чи илемлĕ, чи хавхалануллă сăнарсем — икĕ çамрăк, Санюкпа Сантăр. Тĕлĕнмелле ăсталăхпа çырнă автор вĕсене. Мĕн чухлĕ вăй, хастарлăх, чăрсăрлăх тапса тăрать çамрăклăхра. Çак вăя йĕркелеме пĕл, вара унпа сăрт-тусене çавăрса лартма пулать.

Санюкпа Сантăр — пысăк поэмăна кĕртсе лартнă хăйне пĕр поэма. Сюжечĕ кал-каллăн аталанса пынипе, лару-тăрусен çивĕчлĕхĕпе ку икĕ çамрăкăн йĕрĕ поэмăри тĕп йĕртен нумай ирттерет, лере час-часах ăс калаçать пулсан, кунта çамрăклăх хăй ялтăраса тăрать. Ку йĕре эпир хăйне поэма терĕмĕр пулсан та ăна тĕп йĕртен уйăрма çук. Санюкпа Сантăрсăр поэмăн сĕткенĕ нумай çухалĕччĕ, юмановсен, улькасен пурнăçĕ чухăнланĕччĕ, вĕсен идейин тупсăмĕ уçах пулмĕччĕ: коммунистсем (Юманов, Улька т. ыт. те) чи малтан çамрăксен телейĕшĕн ĕçлеççĕ, çамрăксем телейлĕн ÿсен халăх та телейлĕ. Çак телее пĕр шухăшпа, пĕр кăмăлпа пурăнни, пĕрлешсе кар тăрса ĕçлени, Ленин партийĕ вĕрентнине куллен пурнăçласа пыни — акă мĕн парать.

Санюкпа Сантăрăн сăнарĕсем пирки хăйне уйрăм статья çырма пулать, вĕсем поэмăра утăмран утăм ытарма çук ÿссе пыраççĕ, анчах кунта эпир хальлĕхе вĕсем çинчен çапла каланипех те çырлахăпăр.

Çавăн пекех поэмăри тата тепĕр сăнар — автор сăнарĕ çинчен уйрăм статья кирлĕ. Поэт кăмăлĕ, шухăшĕ, ĕмĕчĕ, философийĕ поэмăра хăйне пысăк вырăн йышăнать, вăл — калама çук ăста çырнă лирикăллă ярăмсем. Вĕсем пулса иртекен ĕç çине автор мĕнле пăхнине, авторăн кăмăл-туйăмне палăртса тăраççĕ. Автор вулаканпа калаçсах, канашласах пырать, çакă япала, поэт хăйĕн тивĕçлĕхĕсемпе питĕ те ăстайлăн, виçеллĕн, вырăсларах каласан — пысăк тактпа усă курнине пула, пĕтĕм произведение ăшă та уçă колорит парать.

«Хамăр ялсем» поэма — социализмла реализм меточĕпе çырнă произведени

«Хамăр ялсем» поэма — кун çинчен маларах та каласаччĕ эпир — хальхи пурнăçăн чăнлăхне нумай енчен çутатса парать, ку чăнлăхра тутли çеç мар, йÿççи те пайтах, анчах çак чăнлăх, мĕнле пулсан та, революци çулĕпе аталанса пыракан пурнăç. Социализмла реализм меточĕ лакировкăна хирĕç, мĕншĕн тесен пурнăçа тивĕççĕр эреветлесе кăтартни çыннăн ăс-тăнне тĕтрелетме, вăй-халне шĕветме

çеç пултарать. Пурнăçри чăн-чăн тĕрĕслĕхе, социализм çулĕ çинчи хирĕçýлĕхсене ним пытармасăр кăтартни этемĕн кĕрешý вăйне хăпартать, хавхалантарать. Хурине курсан хурах кăшкăрни, аслине курсан асан кăшкăрни мар кирлĕ литературăра, марксизм-ленинизм куçĕпе пурнăç мĕнлине тата мĕнле пулмаллине курса, художникăн çутă ăс-тăнĕ, хăватлă кăмăлĕ витĕр шăранса тухнă произведенисем кирлĕ. Чăн пурнăçа пурнăç чăнлăхĕпе çутатса памалла. Çакă вăл чĕлхе çине ăнсăртран килнĕ сăмах вылявĕ мар, социализмла реализм меточĕн чăвашла каланă тупсăмĕ.

А.П. Чехов марксист пулман, анчах вăл реализмăн тупсăмне хăй вăхăтĕнчех паян кирлĕ пек тавăрни пире тĕлĕнтерет: «Вспомните, что писатели, которых мы называем вечными или просто хорошими и которыми пьянят нас, имеют один общий и весьма важный признак: они куда-то идут и Вас зовут туда же, и Вы чувствуете не умом, а всем своим существом, что у них какая-то цель... Лучшие из них реальны и пишут жизнь такою, какая она есть, что каждая строчка пропитана, как соком, сознанием цели. Вы, кроме жизни, какая есть, чувствуете еще ту жизнь, какая должна быть, и это пленяет Вас».

Эпир «Хамăр ялсем» поэмăна социализмла реализм меслечĕпе çырнă произведени тетпĕр. Кун пирки иккĕленмелли çук. Нумайрах пултăрччĕ пурнăçа çакăн пек тĕрĕс, çакăн пек ĕмĕтлĕ кăтартса пыракан произведенисем. Алка халăха юрăхлă пысăк ĕç турĕ, мĕншĕн тесен вăл халăха юратса çырнă поэма пачĕ. Чуна ăшăтакан, ĕмĕт паракан, хумхантаракан, савăнтаракан произведенисем ĕмĕрех халăха юрăхлă пулнă, вĕсен пахалăхĕ — вĕсен халăхлăхĕнче.

«Хамăр ялсем» халăхлăхне тепĕр пахалăхран уйăрма çук — нацилĕхрен. Ытарса илейми чăваш чĕлхипе çырнăскер, ку произведени Чăваш çĕршывне, чăваш халăхĕн пурнăçне, йăлисене, психикине калама çук пуян илемпе сăнарласа парать, çакă нацилле илем социализм ĕçĕнчи халăхăн интернационализм туйăмĕпе — халăхсен хушшинчи аслă туслăха туйса тăнипе шăранса янăрать.

Поэма илем пахалăхĕсем тĕлĕшпе

Эпир каларăмăр: «Хамăр ялсем» — хальхи ял пурнăçне тарăн та анлăн çутатса паракан произведени терĕмĕр. Коммунизм тăвакансен кулленхи пурнăçĕ, шухăш-ĕмĕчĕ, этем çĕкленĕ пултаруллă ĕçсен сарлака картинисем, çут çанталăк илемĕ, автор философийĕ — çакăн чухлĕ мате-

риала хускатиччен малтан поэтăн, паллах, произведени структури çинчен сахал мар шухăшламалла пулнă. Поэмăра 4000 ытла йĕрке сăвă. Тăватă пай. Кашни пайĕ çулталăкăн пĕр вăхăчĕпе килĕшсе тăрать: пĕрремĕш — хĕллепе, иккĕмĕш — çуркуннепе, виççĕмĕш — çуллапа, тăваттăмĕш — кĕркуннепе. Кунсăр пуçне, пысăк пайсем пĕчĕкрех пайсене, пĕчĕкрех пайсем çирĕмшер йĕркеллĕ сыпăксене пайланнă.

Калас пулать, кашни çирĕм йĕркеллĕ сыпăк ытти сыпăксемпе хăй тĕллĕн тытăнса тăракан сăвă пек çыхăнса пырать, çак япала пысăк поэмăна сывлăш çавăра-çавăра вулама май парать, тăна илме, астуса юлма ансатлăх кӳрет. Сыпăкри сăвăсем тăватă йĕрке хутлăхĕнче рифмăланаççĕ, унта ар рифмăсем те, ама рифмăсем те, ылмашлисем те, ытамлисем те пур.

Автор поэмăна вĕçĕ-хĕррисĕр каласа панă пек мар, вулаканпа калаçса ларнă пек илсе пырать. Çапла тума ăна сас чĕлĕхĕсем енчен калама çук пуян тăватă пусăмлă ямб пулăшать. Çакă сас чĕлĕхĕсенче лăпкăн каласа пани те, сасса хатарлăн хăпартса яни те, шӳтлесе илни те, рехетленсе савăнни те, тунсăхлăн шухăша кайни те, шăкăл-шăкăл каласни те — пурте пур. Ытла та пуян-çке Пушкин юратнă тăватă пусăмлă ямб! Вăл чăваш чĕлхишĕн те шăпах иккен. Чĕлхе пирĕн, ятарласах ямбпа çырма ĕнерĕннĕ пек, хăйне хăй сас парса тăрать. Кунта эпĕ кăна мар, чи малтан чăваш чĕлхине мухтатăп. Маттур пирĕн чăваш чĕлхи!

1937 çулта Мускавра, Союзсен çурчĕн колоннăллă залĕнче, Пушкин юбилейĕ ячĕпе пухăннă чаплă каçра, Пушкин пилĕк чĕлхепе пушкинла янăрарĕ. Çав чĕлхесенчен пĕри чăваш чĕлхи пулчĕ. Ытти чĕлхесем аслă поэта тĕрлĕ виçесемпе, хăйсен мехелне кура, куçарнăччĕ.

«Хамăр ялсем» рифма енчен те питĕ пуян. 4000 ытла йĕрке хушшинче темиçе хут таврăнса йăлăхтаракан рифмăсем çук та темелле. Тата, кунсăр пуçне, рифмисем те рифмăсем, пĕр евĕр флексисемпе тунă пушă янăрав мар. Çакă япала сăмах пуянлăхĕнчен, чĕлхе пиçĕлĕхĕнчен килет. Хăшпĕр чĕлхесем кайри рифмăсене юратсах каймаççĕ, час-часах малти тата шалти рифмăсемпе, аллитераци-ассонанссемпе усă курма тăрăшаççĕ. Пирĕн поэзире тесен — кайри, малти, шалти рифмăсем проблема мар, вĕсемпе пуринпе те ирĕккĕн усă курма пулать.

Пирĕн литература чĕлхин хăвачĕ лексика пуянлăхĕнчен тата фонетика пиçĕлĕхĕнчен килет. Сăмах пуянлăхне анатрисем панă, сăмах янăравлăхне — вирерисем. Чăваш çырулăхĕн аталанăвĕнче эпĕ пилĕк вăта юпа куратăп: Яков-

лев — Иванов — Ашмарин — Çеçпĕл — Хусанкай. Малтанхи иккĕшĕ анатри чĕлхен сăмах пуянлăхне уçрĕç, тепĕр иккĕшĕ çав пуянлăха анлă ĕнерӳ пама вирьял чĕлхинче май тупрĕç, Хусанкай вара хăйĕн тантăшĕсемпе тата Çеçпĕл нормисене нимĕн иккĕленмесĕр йышăннă çамрăксемпе пĕрле чăваш сăввин сассине Европа культурин çӳллĕхне çити çĕклерĕ.

Çакăн çинчен калать Стихван Шавлин хурçă сунтал пек янăраса тăракан поэзийĕ, çакăн çинчен калать Алка аллинче оркестр пек илтĕнекен чăваш кĕсли.

«Хамăр ялсем» — чăваш поэзийĕнчи çĕнĕ шкулăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ. Çын алли тĕкĕнмесĕр, тарсăр-тертсĕр хăй хальлĕн çуралнă ирĕк сăмах пек янăрать «Хамăр ялсен» сăвви. Çакă вăл — пулса çитнĕ чăн-чăн ятулăх. Техника! Ахальлĕн çеç майлашăнса пыран хумханулла сăмахсен хыçĕнче вулакан туйман, вулакана кирлĕ мар, анчах çыраканăн тинкине илнĕ, çыраканăн чун тарне кăларнă чăн-чăн техника!

«Хамăр ялсем» поэмăн çитменлĕхĕсем çинчен калас пулсан чи малтан композици йăмшаклăхне палăртмалла. Произведенинчи характерсене ăнăçлăн уçса парасси чи малтан произведение чипер йĕркеленинчен килет. Сюжет çулĕ çинче пĕр япала тепринчен килсе тăтăр, логикăна хирĕçле ăнсăртран пулусем, ĕненме çук хăвăрт сиксе тухакан конфликтсем, вĕсене çăп-çăмăл йӳнеçтернисем тата ытти çавăн пек пули-пулмисем произведенин капламлă юхăмне ан чăрмантарччăр. Сюжет чĕлпĕрĕ пурнăç аллинче пултăр, унсăрăн автор хăй енчен темĕн чул тăрăшсан та, тĕрлĕрен комментарисемпе талпăнса тĕртсен те калав лавĕ малалла каяс çук, тĕрлĕрен лирикăллă ярăмсемпе кĕлтусан та калав геройĕсем, сăмах хуппи ăшĕнчен тапранса тухса, хăйсем тĕллĕн пурăнма пуçлас çук.

Паçăрах каларăмăр, «Хамăр ялсен» лайăх экспозици пур, конфликт аван тĕвĕленет, ăнланма хĕн пулусем поэмăра çук темелле. Тĕп геройсен сăнарĕсем литература сарлакан усă куракан хирĕç тăру (антитеза) меслечĕпе аталанса пыраççĕ. Анчах ку хирĕç тăру класлăх никĕсĕ çинче мар, урăх сăлтавсем пирки. Поэма геройĕсем пĕр халăхран, пĕр йышран, пĕр ĕçре пурăнакан çынсем пулсан та хăйсен шухăшкăмăлĕ, чунĕ-чĕри тĕлĕшпе пĕр пек мар. Кашни герой пурнăçа хăй майлă ăнланма пăхать, хăй майлă ĕçлет, хăшĕ тĕрĕс, хăшĕ йăнăш — ăна пурнăç кăтартса парать.

Поэмăн пĕрремĕш пайĕ тав çивĕчленсе пынипе пĕтет. Иккĕмĕш пайĕнче тав малалла каять, анчах тулсах çитместха. Виççĕмĕш пай тĕп конфликта малалла чĕрре кĕртме нимех те параймасть, вăл тĕрлĕрен пейзажсемпе, ĕç карти-

нисемпе, автор сăмахĕсемпе, иккĕмĕш йĕрĕн мыскарисемпе тата калав ĕçне питех пулăшман тĕлпулусемпе тулнă. Тав тăваттăмĕш пайăн пуçламăшĕнче тулса çитет, вăл — Якур Степанов элекне райкомра сӳтсе явни. Халĕ ĕнтĕ калав мĕнле вĕçленесси палла — икĕ туй: Сантăрпа Санюкăн, каярах Юмановпа Улькан. Председательтен кăларнă Юманов туйра кĕреке пуçĕнче ларать.

Хивререх, карурах илмелле пулнă сюжет куммине, вара калав кал-калрах кайнă пулĕччĕ.

Çапах та эпир, поэмăри сюжет тытăмĕ сулчăкраххине пăхмасăрах, автортан килнĕ ытти тивĕçлĕхсем пахаран та паха пулнипе, калав уçăлса пынăçемĕн тĕрлĕрен характерсемпе çителĕклĕн паллашрăмăр. Юратмаллине юратрăмăр, курайманлăха тивĕçлипе курайми пултăмăр, хăйĕн кăмăлне пула йăнăш çул çине тăнă Степанова вăрçрăмăр та, ятларăмăр та, анчах вăл пирĕн ӳпкеве шута илмерĕ, суя мăнкăмăллăхне пула элекçе çити ахăрса кайрĕ. Анчах авторпа пĕрре те килĕшес килмест: çак путсĕр элекçе, çиллине шăнараймасăр кăтăрса кайнă эгоиста райкомра пĕрре калаçсах лăплатаççĕ. Питĕ те ансат пулĕччĕ пирĕн пурăнăç — çакăн пек кăткăс конфликтсене райком секретарĕн пӳлĕмĕнчех татма май пулсан. Паллах, эпир Юмановпа Степанов тавне дуэльпе пĕтересшĕн мар, ун пекки пирĕн саманара çук, анчах пĕр-пĕрне çисе ярас пек курайманнипе кĕрешӳн чи киревсĕр мелĕсемпе усă куракансем пирĕн пайтах. Ку мелсенчен пĕри — суя элек. Степанов, эпир ăнланнă тăрăх, район авторитечĕпе килĕшес çын мар. Вăл «Шупашкар, Мускав!» тесе кăшкăрашни пушă сăмах мар. Степанов — хăйĕн юнавне пурнăçламалли çын. Ăна райком секретарĕн вăйĕпе тытса чарнине ниепле те ĕненме çук. Степанов вăл тахçанах район ирĕкĕнчен тухса кайнă, унтан министерствăсенче чĕтресе тăраççĕ, хăш-пĕр степановсем республикăри аслă тиексене хăйсен кăмăлĕпе улăштараççĕ. Акă мĕнле çын вăл Степанов. Унăн конфликтне сахалтан та республика масштабĕнче татса памалла пулнă. Çавăн чухне произведенин вăйĕ тата çӳлерех пулатчĕ, палăртнă характерсем хăйсен логикăлла вĕçлевне туянатчĕç.

Çапла, характерсене вĕçне çитиех туса çитерес тĕлĕшпе Алкан хăюлăх çитмест-ха.

Алка «Хамăр ялсем» поэма çырса чăваш поэзинче пысăкран пысăк çитĕнӳ турĕ. Поэтăн халь шăп кăна вăйпитти вăхăт. Алка — тутар сăмахĕ, чăвашла каласан «малалла» тенине пĕлтерет. Чăнах та, Александр Алкан маттур таланчĕ çуллен-çул малалла.

1956

ПЕТЁР ХУСАНКАЙ

Чăваш АССР халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай Сиктĕрме ялĕнче (Кузнечиха районĕ, Тутар АССРĕ), чухăн хресчен çемйинче, 1907 çулта, январĕн 22-мĕш кунĕнче çуралнă.

Çут çанталăкран çивĕч те тинкерӳллĕ ăс, илемлĕх туйăмĕ тата сăнав хастарлăхĕ туяннă ача мĕн кĕçĕнрен пултарулăх шухăшĕпе ӳсет. Юрă-сăвăран, халап-юмахран питĕ те пуян Ёнчĕ тăрăхĕ çамрăк таланта хăйĕн сĕткенĕпе шăварать, «Нарспи», «Хитре Чĕкеç», «Арçури» поэмăсем унăн поэзиллĕ кăмăлне çунатлантараççĕ. Хусанкай ачаллах сăвăсем çырма пуçлать.

1923 çулта çамрăк Петĕр Хусанти чăваш педтехникумне вĕренме кĕрет, унта литература кружокĕн ĕçне хутшăнать, вырăс тата тутар поэзийĕпе паллашать.

1924 çулта Шупашкарта тин уçнă «Сунталăн» пĕрремĕш номерĕнче Хусанкай виçĕ сăвă пичетлет. 1925 çулта «Сунталăн» 3 (9) номерĕнче поэт пултарулăхĕнчи паллă сăвă — «Ирĕк тимрĕç» тухать. Çак çулсенчен пуçласа çамрăк поэтăн сасси чăваш çырулăхĕнче уçăран уçă янăрама тытăнать. Октябрь революцийĕ ирĕке кăларнă чăваш халăхĕ çинчен хавхаланса çырнă сăвăсем, илемлĕ сасăпа çĕнĕлле каланă сăмахсем вулакансен чĕрине хумхантараççĕ, чуна кайса тивеççĕ, — Хусанкай часах чăваш ĕç çыннисен юратнă поэчĕ пулса тăрать.

Иртерех килнĕ ăнăçу çамрăкăн пуçне çавăрать, вăл, шкула пăрахса, 1925 çулта пуçĕпех литература ĕçне куçать, унччен яр уçă сассине хăйĕнчен килмен, хăйне килĕшмен ют шухăшсемпе тĕтрелетет. Çакă йăнăш утăм поэтшăн питех те шалкăмлă пулма пултарнă, анчах ĕçчен те вăйлă Хусанкай хăйне хăй çирĕп алла илет: вăл, пурлă-çуклă пурнăçне пăхмасăр, литература ăсталăхне çине тăрса вĕренет, нумай вулать, нумай чухлать, ку кăна мар — çĕршыв тăрăх тухса каять, нумай-нумай çĕре çитсе курать. Çамрăк Хусанкай, 20 çулхи поэт, малтанхи çӳревренех хăйĕн пултарулăхĕнче паянччен паллă вырăн йышăнакан «Çирĕм улттă» поэмине илсе килет. Ку произведени чăваш литературине çĕнĕ сывлăш кӳртет. Хавхаануллă романтика, революци çулăмĕнче шăранса туптаннă туслăх, партилле юлташлăх, тăван çĕршыва чунтан-вартан юратни, социализм идеисене ĕненсе вĕсене юлашки сывлăшчен хӳтĕлени — çакă этемле этем тăвакан чун пахалăхĕсем «Çирĕм улттă» поэма геройĕсен — Баку комиссарĕсен сăнарĕнче тĕлĕнмелле хăватпа сăпатланнă. Иванов таланчĕпе амаланнă, Çеçпĕл хаваленĕпе

çунатланнă чăваш поэзийĕ. «Çирĕм улттă» поэмăран пуçласа тепĕр хут вăй илет, пирĕн çĕнелнĕ юрă-сăввăн хăвачĕ чиксĕр анлă иккенне пĕлтерет. Çав çулсенче чăваш критикинче Çеçпĕл Мишши шкулне хирĕç çĕкленнĕ шав анлă анапестпа сасăланă «Çирĕм улттă» чанĕ кĕрлесе кайсан яланлăха йăмса ларать.

Асăннă поэма Хусанкая чăваш сăвăçисен хушшинче тивĕçлипе пĕрремĕш вырăн парать.

1927 çулта Хусанкай Хĕвел тухăç педагогика институтне (Хусан) вĕренме кĕрет, анчах вĕренсе тухаймасть, каллех литература ĕçне парăнать. 1931 çулта вăл Мускавра тухса тăракан чăваш хаçачĕн — «Коммунарăн» тухса çýрекен корреспонденчĕ пулать, ку ĕçре 1934 çулчченех ĕçлет. Хаçат хушăвĕсене пурнăçласа поэт пирĕн çĕршыври çĕнĕ стройкăсене курса çýрет, Горькине, Донбаса, Магнитогорска çитет, рабочисен пурнăçĕпе паллашать. Çак вăхăтра вăл «Магнитту» поэмине çырать.

Чăваш халăх пултарулăхĕн пуян тăпри çинче шăтса Иванов, Çеçпĕл сывлăшĕпе йăл илнĕ Хусанкай поэзийĕ вырăс культури илпеклĕн паракан хăватпа аталанать. Поэт вырăссен тата ытти халăхсен çырулăхне тĕпчесе вĕренет, тĕнчери классиксен произведенийĕсене чăвашла куçарать.

30-мĕш çулсенче поэт В. Маяковскин чи лайăх поэмисене, А. Пушкинăн «Евгений Онегинне», В. Шекспирăн «Ромеопа Джульетта» трагедине куçарать. Тăлмач ĕçĕ Хусанкая хайĕн талантне ýстерме пулăшать, уншăн пысăк шкул пулса тăрать.

30-мĕш çулсенче поэт колхозлă ялти çĕнĕ пурнăç çинчен калакан произведенисем çырать («Инспектор», «Элтиван», «Тантăшсем» т.ыт.те).

Совет патриотизмĕн теми Хусанкай пултарулăхĕнче уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче пулса, салтак нушине тýссе поэт фронтра та хăйĕн ĕçне манмасть: йывăр çапăçусем хыççăн, пăшалĕ каннă вăхăтра, юратнă калемне тытать.

Хусанкайăн вăрçă вăхăтĕнче çырнă лирикăлла сăввисем, «Таня» поэми тата «Аптраман тавраш» романĕ — чăваш литературине ĕмĕрлĕхе вăй илтернĕ пуянлăх.

Вырăс халăхĕпе пĕрле Тăван çĕршыва çич ютран сыхласси — Аптрамансен ăруран ăрăва пыракан йăла. Авал Аптрамансем туркăсемпе çапăçнă, Параппан (Бонопарт) патшана вырăс çĕрĕнчен хăваласа янă, Парижа çитнĕ, каярах яппун тата ярман вăрçинче пулнă, халĕ акă Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче совет салтакĕ Аптраман Энтри вырăс çыннни Виктор Басовпа юнашар фашистсене хирĕç кĕрешет.

Çакăн çинчен калать Хусанкайăн чи пысăк произведенийĕ — «Аптраман тавраш».

Халăхсен хушшинчи туслăх, Тăван çĕршыва чунтан парăнни, тăшмансене хаярăн курайманни, фронтпа тыл пĕр пулса совет халăхĕ ирĕклĕхшĕн çапăçни — çакă поэзишĕн ялан пархатарлă темăсене чăваш аптраманĕсем хăйсен маттур сăнарĕсемпе çĕклеме чăнахах та тĕрĕс тивĕçлĕ. Эпир, Россия халăхĕсемпе пĕрле чух, аптăраман, аптăрамастпăр, аптăрас çук! «Аптраман тавраш» романăн тĕвви çакăнта.

Вăрçă хыççăн Петĕр Хусанкай ачасем валли нумай çырчĕ. Унăн «Тăван çĕршыв» поэми тата «Вăрман юрлать» ятлă сăввисем — чăваш ачисемшĕн мĕн пĕчĕкрен пĕлмелли, асра тытмалли, хавхаланмалли тăван сăмахсем.

Юлашки çулсенче поэт философилле сăвăсем нумай çырать. Унăн тарăн шухăшлă сăввисем — халăх кăмăлĕ-туйăмĕнчен илнĕ ăс. Поэтăн кун йышши сăввисенчен В.И. Ленин çинчен шухăшласа çырнă поэми — «Горкăри çурт» уйрăмах паллă вырăн йышăнать. Ахаль мар ку произведени пĕтĕм Совет Союзĕпе сарăлчĕ.

Хусанкайăн вăрçă хыççăнхи тепĕр пысăк ĕçĕ — «Тăван сасăсем». Ку кĕнекере тĕрлĕ çĕршывран тата халăхран тухнă 60 поэт сăввисем. Вĕсене пурне те чăвашла Хусанкай куçарнă.

Иртнĕ çул (1957) чăваш халăхĕ Петĕр Хусанкай 50 çул тултарнине чысларĕ. Юратнă поэтăн юбилейĕ пĕтĕм чăваш культурин савăнăçлă уявĕ пулса тăчĕ.

1956

АЛЕКСЕЙ ТАЛВИР

Алексей Филиппович Башкиров (Талвир) — чăвашсен паллă писателĕ. Вăл Юхма Патăрьелĕнче (Чкаловски район, Чăваш АССРĕ) 1909 çулта мартăн 21-мĕшĕнче çуралнă. Талвирăн ашшĕ — Пушкăрт Хĕлипĕ — çĕр ĕçĕпе пурăннă, начар мар ўнерçĕ пулнă — тимĕр шакканă, анчах ĕлĕкхи саманара темĕн чухлĕ тăрăшсан та чухăнлăхран тухайман. Пулас çыру ăсти тăван кил-йышне мĕн пĕчĕкрен пулăшса ўснĕ. Унăн ачалăхĕ тав-шавлă тапхăрта иртет, аслă революци çĕкленĕ класлă кĕрешў тырăллă Юхма таврашĕнче уйрăмах çивĕч пулнă. Каярах Талвир кун çинчен хăйĕн пĕтĕм Совет çĕршывĕпех ят илнĕ «Пăва çулĕ çинче» ятлă кĕнекинче лайăххăн каласа парать.

Алексей Талвир — малтанхи ялкорсенчен çитĕннĕ пи-

сатель. Вăл ялта вĕреннĕ чухнех республикăри пичет ĕçне активлăн хутшăнать, комсомолта ĕçлет, литература кружокĕсем организацилет, вĕсене ертсе пырать.

1928 çулта А. Талвир Аслă Арапуçĕнчи (хальхи Первомайски) вăтам шкула пĕтерсе тухать, çав çулах Мускава каять. Мускавра вăл малтан СССР халăхĕсен Тĕп издательствин чăваш секцинче ĕçленĕ, каярахпа Ломоносов университетне вĕренме кĕнĕ.

Аслă шкултан вĕренсе тухсан А. Талвир Хĕрлĕ Çарта пулнă, унтан Мускавра тухса тăракан хаçатсенче, ВЛКСМ Тĕп комитетĕнче ĕçленĕ. 1941 çулта, вăрçă пуçлансан, А. Талвир «Комсомольская правда» хаçатăн çар корреспонденчĕ пулса фронта каять.

А.Талвирăн малтанхи кĕнеки «Хĕллехи сивĕре» ятлă, вăл 1929 çулта Тĕпиздатра пичетленсе тухнă. Ку кĕнекере автор тăлăхсен пурнăçĕ çинчен çырать. Патша саманинче тăлăхсен хутне никам та кĕмен, вĕсем ыйткаласа çÿренĕ. Революци хыççăн усравсăр ачасем валли шкулсем, ача çурчĕсем нумай уçăлаççĕ, унта вĕсем çын тивĕçлĕ пурăнса, çĕршыва юрăхлă çынсем пулса ÿсеççĕ. Автор тĕнче çине тинкерÿллĕн пăхни, ăна тĕпчесе ăнланма тăрăшни, пурнан пурнăçăн тĕп туртăмĕсене уйрăм сăнарсем урлă ĕненмелле сăпатласа пани «Хĕллехи сивĕре» калавра, ку вăл çамрăк çыравçăн вĕреннмелле тытнă малтанхи ĕçĕ пулсассăн та, лайăх палăрать. Асăннă пахалăхсем А. Талвирăн малашнехи кĕнекисенче ламран лама ÿссе, вăйлăланса пыраççĕ.

1930 çулта А.Талвирăн ялти комсомол ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă «Йăваш» повесть тата «Пĕр сăмах» ятлă калав пичетленсе тухаççĕ.

1934 çулта çамрăк писатель «Трактор» альманахра «Ылтăн ту» ятлă романăн сыпăкĕсене пичетлет. Ку пуçласа хунă, анчах хăй вăхăтĕнче çырса пĕтермен произведени нумай енсемпе пулас «Пăва çулĕ çинче» повесть евĕрлĕ.

Тăван çĕршывăн аталанăвĕпе пĕрле ÿссе пынă, унăн хăватлă сывлăшĕпе сывласа пурăннă писатель хăйĕн пултарулăхне çуллен-çул хăпартать, унăн тематики анлăланать, пуянланать, вăл социализм тăвакан хастарлă çынсем çинчен çырать, вĕсен шухăшĕ-кăмăлĕсемпе, паттăр ĕçĕсемпе хавхаланать. Çапла «Эсĕ инженер пулатăн» ятлă çĕнĕ повесть çуралать. Совет саманинчи çынсем иксĕлми телейлĕ. Пирĕн пархатар — ĕçре, кĕрешÿре. Совет çынни йывăрлăхсенчен хăрамасть, вăл тĕнчери хальччен никам тытман ĕçе хăй аллипе тăвать, çĕнтерет. Çакă вăл «Эсĕ инженер пулатăн» повеçĕн тĕп шухăшĕ. Ку произведенисенче писатель

хăй чылай çул хушши сăнаса тĕпченĕ чугун çул транспортĕнчи рабочисен, интеллигенцин пурнăçне сăнласа панă.

А.Талвир çырнă ытти произведенисенчен 1948 çулта тухнă «Харсăр çынсем» ятлă калавĕсене, 1950 çулта кăларнă «Манăн завод» кĕнекине тата 1951 çулта уйрăм кĕнекепе пичетленнĕ «Кĕмĕл тĕпренчĕк» повеçне палăртмалла.

А.Талвирăн чи паллă произведенийĕ — «Пăва çулĕ çинче» ятлă повесть. Ку кĕнеке юлашки çулсенче вырăсла та, чăвашла та чылай хут пичетленчĕ, Мускавра кăна тăватă хут тухрĕ.

«Пăва çулĕ çинче» повеçре чăваш халăхĕн аслă революцири кĕрешĕвне сăнласа панă. Халăх кăмăлĕ, шухăшĕ, пултарулăхĕ, чăнлăхĕ ку произведенире иксĕлми çăлкуç пек тапса тăрать. Халăх çинчен ытарса илейми нацилле илемпе калани — асăннă кĕнекен пахалăхĕ.

1956 çулта А. Талвир «Ялав» журналта хăйĕн тепĕр пысăк произведенине — «Никĕс» ятлă повеçне пичетлерĕ. «Никĕс» повесть Чăваш çĕршывĕнче социализмла промышленность мĕнле никĕсленсе пыни çинчен, партипе Совет правительстви наци кадрĕсене вĕрентсе ӳстерни çинчен калать. Ку произведени те, «Пăва çулĕ çинче» повесть пекех, пултаруллă писателĕн çитĕнсе çитнĕ талантне тивĕçлĕ ĕç.

Алексей Филиппович Талвир — Чăваш писателĕсен союзĕн председателĕ, СССР писателĕсен союзĕн правлени членĕ. Вăл чăваш çырулăхĕн çыхăнăвĕсене Совет Союзĕнчи тăванла халăхсен тата демократилле çĕршыври халăхсен хушшинче сарассипе активлăн ĕçлет.

1956

ĔÇХĔЛ ЮЛТАША ПАНĂ ХУРАВ

Нумаях пулмасть Аркадий Ĕçхĕл «Коммунизм ялавĕнче» (62(10021)№) чăваш поэзийĕн пĕлтĕрхи ĕçĕсем çинчен «Аслă çулпа уллах сукмаксем» ятлă статья кăларчĕ. Асăннă статья самай тавлашуллă, анчах кунта эпир сăмаха ытлашши тăсмасăр Ĕçхĕл тăратнă ыйтусенчен пĕрин пирки кăна калаçса илесшĕн.

Вырăнлă-и *асамçăсем* тата *тухатмăшсем* çинчен тĕшмĕшле сӳпĕлтетни? Паллах, вырăнсăр. Тĕшмĕше чăнласа йышăнни пирĕн этем хăйĕн саманинчен чăтма çук кая юлнине пĕлтерĕччĕ.

Вырăнлă-ши авалхи тĕнсем, тĕрлĕ тĕшмĕшсем хăварнă хăш-пĕр сăмахсемпе усă курни? Паллах, вырăнлă, мĕншĕн тесен çав сăмахсем хăйсен малтанхи пĕлтерĕшне тахçанах

улăштарнă, вĕсенчен чылайăшĕ поэзилле сăнарсем пулса тăнă. Тĕслĕхрен:

Кăвак хуппи уçăлчĕ,
Çут çанталăк çуталчĕ...

Эпир кайăпăр уттарса,
Çĕр кăкăрне таптаса.

(*Д. Месарош.* Чăвашсен авалхи тĕнĕн палăкĕсем. 1906)

Е тата:

Çĕрĕн кăкри перекетлĕ, пирĕн *пысăк анне — çĕр,* пире çав тăрантса усрать.

(*Н.И. Ашмарин.* ЧСК. XIII. 93 с.)

Хĕвел выляса çӳл тӳпене хăпарать. *Хĕвел кулать. Çил улать. Çĕр сывлать. Вут ташлать. Вут чĕрĕлет.*

(*Н.И. Ашмарин* словарĕнченех.)

Çак сăмахсене тӳрремĕн илсен вĕсем — чăн-чăн тĕшмĕш! Сĕм-сĕм авал, этем кирек мĕне те чунлă тенĕ чух, çуралнă çав сăмахсем. Пыра-киле анамизм вăхăчĕ иртнĕ, Дерсу Узала усал-тĕселтен тасалнă, анчах çав сăмахсем юлнă, хăй ĕнтĕ никам та «вут чĕрĕлет» тенине тĕшмĕшле ăнланмасть.

«Хĕвел кулать, çĕр кăкăрĕ сывлать» — мĕн чухлĕ поэзи çак сăмахсенче! Мĕн чухлĕ асам, мĕн чухлĕ тухатуллă вăй! Унсăрăн поэзи пулма та пултараймасть.

Вырăссем *священная война* теççĕ. Чăвашла вăл *сăвапла вăрçă* тенине пĕлтерет. Вырăссем *алтарь отечества* теççĕ. Чăвашла мĕнле? Тархасшăн, сехрĕре ан хăпартăр: *аттелĕх киремечĕ* тени вăл. Аттелĕх — тăван çĕршыв, киремет — парнесем кӳрекен таса вырăн. Чăн ĕнтĕ, *алтарь отечества* сăмаха халĕ эпир ун пек куçармастпăр, анчах авалхи чăвашшăн *алтарьпе киремет* пĕрех пулнă. (Кире — турă, мет — вырăн. Грекла: *кирие элейсон.* Чăвашла: *турă çырлах!*)

Çапла, авалхи тĕнсен тĕшмĕшлĕхĕнчен юлнă сăмахсем совет патриотизмĕн чĕлхинче те хăйсен «асамлă» ĕçне тăваççĕ. Çавăнпа та «асамçăсемпе тухатмăшсем» хăварнă сăмахсенчен пĕрре те хăрамалла мар, вĕсем халĕ урăхла пĕлтерĕшпе çӳреççĕ, вĕсем тĕшмĕш планĕнчен тахçанах тухса ӳкнĕ.

Уйрăммăн Митта Ваçлейĕ çырнă «Инçе хăват» сăвва илсе пăхсан унта «çамрăксен шухăшне пăтраштарма» пултаракан нимĕнле тĕшмĕшлĕх те çук. Çамрăксен пĕлмелле: «чĕлхен чăн илемĕ»-сĕр, «чун-чĕрен хĕвеллĕ хĕлхемĕ»-сĕр, «çунатлă ăс»-сăр поэзи çук. Шел, эпир, сăвă чăпталакан-

сем, çакă виçĕ сăпатлă аслă чăнлăха час-часах манатпăр. Асăннă виçĕ хăват поэзишĕн — ĕмĕрхи категорисем. Паянхи поэзире те хăват паракан *халăхлăх*, паттăрлăх кӳрекен *партилĕх* çавă виçĕ хăватсăр пулма пултараймасть. Виçĕ хăватран:

Пĕри этеме
Маттурлăх парать;
Тепри çĕнтерме
Чĕнет, йыхравлать;
Леш, виççĕмĕш пурлăх —
Çунатлă хăват,
Сĕм авăрсем урлă
Çутта çул хывать.

Акă ăçта ямалла çав хăватсене, Аркадий! Эсĕ ку строфана асăрхаман иккен, унсăрăн, автора ятласа: анчах çав хăватсене ăçталла ямалли тĕллеве те манмалла мар темĕттĕн, сăввăн вĕçне татса илсе ăна: акă вăл тĕшмĕшлĕх! тесе тĕллемĕттĕн. Ĕне туянакан ĕне хӳри вĕçне çеç пăхмасть, сĕт çулĕсене те тĕрĕслет. Çак элементарлă чăнлăха пирĕн критиксен те йышăнмалла мар-ши? Унсăрăн пасартан яла култарса ĕне вырăнне вăкăр çавăтса килме пулать.

Пĕлесчĕ, *тухатмăш* тени *карчăк* сăмахран мар, *тухат* сăмахран тухнă. Авал, сĕмсĕр вăтам ĕмĕрсенче, пуп таврашĕсем чи-чи илемлĕ хĕрсене тухатмăш тесе вута пăрахнă.

Юлашкинчен çакна калас килет: асамсăр, тухатусăр поэзи — халтура, макулатура.

Салампа *Митта Ваçлейĕ*

P.S. Вулакан юлташсем! Çак çырушăн каçару ыйтатăп. Кунта каланă чăнлăхсем никамшăн та çĕнĕ мар. Анчах мĕн тăвăн? Вырăнсăр ӳпкеве сăмахсăр çăтма çук.

М.В.

1957

НАУМ ЛЮБИМОВ ÇЫРНĂ «АСЛĂ УЛШĂНУ» РОМАН ÇИНЧЕН

Колхозсем пуçланнă тапхăр совет литературишĕн тин çеç уçма тапратнă çерем мар. Аслă улшăну çулĕсем çинчен çырнă кĕнекесем нумай, тата та нумай пулĕç, мĕншĕн тесен çавă паллăран та паллă вăхăт истори асĕнчен нихăçан та каяс çук. Çавăнпа та пирĕн çыравçăсем юлашки çулсенче шухăш тимлĕхне çак пархатарлă тема енне тепĕр хут çавăрни пире савăнтарать: 30-мĕш çулхи ĕçсен хавхалануллă сывлăшĕ пирĕн чуна паян кун та хумхантарать.

М. Шолоховăн «Уçнă çеремĕ» асăннă тапхăра сăнласа

парас тĕлĕшпе классикла произведени пулса тăчĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ — унăн сăнарлăх вăйĕнче, пурнăç чăнлăхне диалектикăлла тĕрĕслĕхпе кăтартса панинче. Кивви, ватăлни, чăрмавли арканать; çĕнни, пултарулли, мал ĕмĕтли çĕкленет, çĕнтерсе пырать. Çакна эпир этем характерĕсен илемĕ, вăйĕ, хавалĕ урлă йышăнатпăр. Ахаль мар «Уçнă çерем» роман тăрăх пирĕн çамрăксем ăруран ăрăва вĕренсе пыраççĕ, ялти пĕрлешӳллĕ пурнăç хăçан, епле тата мĕншĕн пуçланса кайни çинчен партин паттăр çынни Давыдов, вĕри чунлă Нагульнов, ĕçчен хресчен Майданников тата Половцев пек, Островнов пек хура тăшмансен сăнарĕсем урлă пĕлеççĕ.

Паллах, пирĕн литературăра «Уçнă çерем» пек тепĕр произведени пама йывăр, çакна такам та пĕлет, анчах Шолоховпа ăмăртса çырни пăсăклă пулас çук, вăл — писателĕн мĕнпур пултарулăхне мобилизацилени. Шолохов каламаннине калас тени пулĕччĕ. Уйрăмах пирĕн, чăваш писателĕсен, хамăр республикăн нацилле спецификине шута илсе çак темăпа калама çук пархатарлă япаласем çырма пулать.

Çакнашкал ырă шухăшпа тытрăмăр эпир Наум Любимовăн хулăн алçыруне (330 с.).

Тӳррине малтанах калар: писатель хăйĕн мĕнлетлĕ кăмăлне пурнăçлайман, пысăк ĕç ăна парăнман, çакă ал çыруне вуланăçем палăрсах пырать.

Роман çинчен пĕр пуплевпе: ку вăл колхоз туни çинчен калакан произведени теме пулать, анчах унăн сюжетне каласа пама хĕн, унăн пĕр каплампа уçăлса пыракан юхăм çук, композици тытăмĕ хавшак, геройсем пĕрин хыççăн тепри, пуш хире лекнĕ çăл куçĕсем пек, çухалсах пыраççĕ. Çакă сăлтав вулаканăн тимлĕхне сапалать, интересне мăкатать, кăмăла кичемлетет. Кичемлĕх тени, калас пулать, илемлĕхĕн пĕрремĕш тăшманĕ, кичемлĕхе илемсĕрлĕх кăна çуратма пултарать.

Камсем Любимов романĕнчи тĕп геройсем? Çак ыйту çине те хурав пама çук. Тен, автор: «Манăн тĕп герой — халăх», — тесе калĕ. Юрĕ. Çак сăмах тĕрĕсси-тĕрĕс маррине каярах курăпăр.

Любимов романĕнче 30-мĕш çулсемшĕн палла фактсем нумай. Çав фактсене тĕрĕссĕн пĕтĕмлетсе пани те пур. Анчах кун евĕр ĕç романист ĕçĕ мар, историк ĕçĕ. Илемлĕ произведенисем çыраканăн ĕçĕ, пирĕн шутпа, пурнăç факчĕсемпе çыхăннă кăмăлсен палăрăмне пĕтĕмлетсе çутатасси. Çак енчен илсен Любимов романĕнче истори пур, роман çук.

Колхоз тăвас ĕç вĕтĕр-шакăр пăтăрмах ĕç пулман. Вăл — тĕплĕн шухăшласа тунă тарăн улшăнусемлĕ революцилле ĕç. Çак ĕçе Мускавран пуçласа яла çитичченех çирĕп кăмăллă, паттăр ăслă, маттур çынсем илсе пынă. Çак ĕçе хирĕç тăракансем те кулăшла айвансем мар, вăйлă характерлă этемсемех пулнă. Çавнашкал çынсене эпир романра курмастпăр. Любимов çырса кăтартакан ĕçсем такамăн алли ăнсăртран хускатса янă тамашалла пăтăрмах пек туйăнаççĕ. Пуху çине пуху. Кăшкăру. Ахăру. Юну. Вĕлерӳ. Мĕншĕн, мĕн сăлтавпа — никам та чиперрĕн пĕлмест (эпир те, вулакансем, курмастпăр, пĕлместпĕр), чăнах-и çакă, чăнах мар-и — никам та чиперрĕн ĕненмест (эпир те, вулакансем, ĕненместпĕр), мĕншĕн тесен 30-мĕш çулхи ĕçсем çинчен писатель пире тĕлĕнмелле вăйлă хусканăва кĕнĕ характерсен чĕлхипе мар, ĕмĕр циркулярсем çинче типнĕ тăлмач чĕлхипе хыпарлать.

Сăмахран, Сурский Кĕркури, хуларан яла çирĕм пилĕк пин шучĕпе килнĕ рабочи, ашшĕпе çапла калаçать:

«Паллах, иккĕленмеллисем нумайăшĕн пулма пултараççĕ, пирĕн çул çинче йывăрлăхсем те сахал мар пулĕç, — пурпĕр эпир вĕсене çĕнтерме тивĕç, атте, мĕншĕн тесен эпир — большевиксем...»

Акă упăшкипе арăмĕ калаçни:

«Çыннисем вĕсем пулĕç, анчах эсир те, хĕрарăмсем, питĕ кирлĕ пулатăр пире, — терĕ те Митрофан тарпа йĕпеннĕ çамкине кĕпе çаннипе шăлса илчĕ. — Акă мĕн, тусăм, санăн хамăр ял хĕрарăмĕсем хушшинче ĕçлеме тытăнас пулать. Хĕрарăмĕсем пĕрлешӳллĕ пурнăçран хăраса ӳкме пултараççĕ, çавăнпа та вĕсем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе — революциллĕ ĕçе туса пыни питĕ кирлĕ...»

Мĕн чухлĕ тĕрĕслĕх çак сăмахсенче! Анчах ку вăл çын чĕлхи мар, хут чĕлхи. Калаçа пĕлмен чĕлхепе чăнлăха таптама çеç пулать. Тарла-тарла арăмне агитацилекен Митрофан Павловский — чĕрĕ çын мар, вилĕ инструкци, юлашки циткуляр. Унăн чĕлхи килте те, çын çинче те пĕр. Павловский, ял совет пуçлăхĕ, коммунист, роман пуçламăшĕнчен тытăнса вĕçне çитиччен пухусем ирттерет, шав калаçать, ахăртнех, вăл, автор шухăшĕпе, произведенин тĕп геройĕ пулас, мĕншĕн тесен Сипеккассинчи мĕнпур çĕнĕ ĕç ун ячĕпе çыхăннă, ытти паллăрах геройсем е ют яла ĕçлеме куçаççĕ (Сурский Кĕркури), е, райком секретарĕ Лютеров пек, чи хĕрӳллĕ вăхăтра Крыма вăй илме каяççĕ. Юлашкине автор юриех тунă пулĕ тетĕн, мĕншĕн тесен лайăх руководитель ятне рафонра пулнă киревсĕр перегибсемпе вараласшăн пулман вăл.

«Человек-инструкция» (инстукци хăрахxи) Павловский тавра Аркадий Капитоныч — çурмаккай этем, Хурăн Хĕветĕрĕ — çăмăлттай каччă т. ыт. те çаврăнаççĕ. Вĕсем произведенинче позитивлă планпа илнĕ геройсем. Вĕсем колхоз ĕçĕшĕн, автор шучĕпе, чуна пама хатĕр çынсем.

Тӳнтерле планри тĕп герой Вăрăм Хурадаров — хура биографиллĕ халăх тăшманĕ. Ун тавра пупсем, кулаксем, тĕшмĕшлĕ йăх-яхсем явăнаççĕ.

Пуху çине пуху тăвать Павловский, ялан инструкцисем вуласа-каласа парать, Совет влаçĕшĕн, колхозшăн виçшер аршăнлă решенисем йышăнтарать.

Пуху çине пуху тăвать Хурадаров, ялан Совет влаçне хирĕç вĕрентет, коммунистсене хирĕç урнă постановленисем йышăнтарать, алă пустарать, алă пусманнисене пăшалпа хăратать, юнать, пусмăрлать.

Чăннипе, колхоз пуçланнă çулхи ĕçсем пĕрре те çакăн пек схемăпа пулман. Паçăрах каларăмăр, колхозсене Митрофан Павловский пек «инструктивлă» çынсем туман, колхоза хирĕç тăраканнисем те Вăрăм-Хурадаров пек айван çапкаланчăк пулман.

30-мĕш çулсем тĕлне вăтам хресчен кăмăлĕ пĕтĕмпех Совет влаçĕ майлă, колхозсем майлă çаврăннă. Кулакăн хресчен массисен хушшинче тĕрек пулман. Çакна кулаксем хăйсем те лайăх туйса тăнă, вĕсем калама çук асăрханса пурăннă, Любимов романĕнчи пек кĕпĕрленсе çӳремен, тĕр-тĕр кайса пухусем туман, кулакăн çилли ăша кайнă пулнă, шалта йӳçĕхсе тăнă. «Аслă улшăнури» хура вăйсем (кулаксем, пупсем, кулак çуммисем) хăйсене хăйсем калама çук чăрсăр тытаççĕ, 18—19-мĕш çулсенчи пек, шуррисемпе хĕрлисен хушшинче «кам кама» текен ыйту татăлман чухнехи пек хăтланаççĕ. Çакă вăл тĕрĕс мар. 30-мĕш çулсенче Чăваш республикинче кулаксем организациленĕ пĕр паллă хускану та пулман. Çакă вăл асăннă тапхăр тĕлне кулакăн никĕсĕ политикăра та, экономикăра та хавшаса çитнине, чухăн хресченсемпе пĕрле вăтам хресченсем Совет правительствин шухăшĕсемпе ĕç-хĕлĕсене ним иккĕленмесĕр кăмăлланине пĕлтерет. Паллах, кулаксем енчен Совет влаçне хирĕç уйрăм тăшманла актсем пулман мар (активистсене вĕлерни, вут-кăвар яни, колхозсен пурлăхне сăтăр туни т.ыт.те), анчах ун пек-кун пеке власть çиййĕнчех путарса пынă, чĕрре кĕме паман.

Вăрăм Хурадаров, акăлчан разведкин шпионĕ, питĕ те асăрхануллă пулмалла пек, хăйĕн тăшманла ĕçне чее тумалла пек, ун пеккисем çын аллипе кăвар туртма юратаççĕ. Çавăн пекех Онуфий пуп та, нумай вĕреннĕ çын (ун

чухне, хальхи пек, вĕренмен пупсем пулман), хăйне хăй вăрттăн тытмалла пек. Вăл пур — чĕрре кĕрсе ялти активпа кĕрешет, хупнă чиркĕве калла уçтарать (ун чухне алчăраса кайнă пупăн чиркӳ шухăшĕ пулнă-ши?!), вăл хĕтĕртнине пула ялти мĕнпур йăх-ях, правлени суйлавĕ умĕнхи пирĕн хăш-пĕр писательсем пек, пĕр-пĕрин патне хĕвĕшсе çӳреççĕ, теветкеллĕ пухусем тăваççĕ. Ун чухне онуфрисен çавăн пек организациленсе ĕçлеме май пулман, вĕсен ури айĕнче «юр çуннă».

Ĕненмелле мар Никон ятлă кулак хăйне ыран ир тустарассине пĕле тăркач кинĕпе çывăрни те, Калистрат, кулак ачи, хăйшĕн тата кил-йышĕшĕн çав тери инекеклĕ вăхăтра авланасшăн кастарса çӳрени те. Ут шухăшĕ пулнă-и вĕсен ун чухне?!

Ĕненмелле мар ханшаçă Укахви яла пăтратма пултарнине те. Ял, тем тесессĕн те, ун пек кăйттă хĕрарăм агитацийĕ хыççăн çӳреме пултарайман. Çавăн пекех Етĕрнерен килнĕ хор кружокĕ те ĕçе сасартăках юсама пултарайман.

Ĕненмелле мар Нина, педтехникумра вĕренекен хĕр, айван Калистрата качча кайма килĕшни те. Вĕренекен хĕрсем ар ыйтăвĕ тĕлĕшпе яланах ирĕк пулнă (кулак хĕрĕ-и вăл, чухăн хĕрĕ-и — пурпĕрех), вĕсем кирек хăçан та, уйрăмах совет саманинче, хăйсен кăмăлĕпе качча кайнă.

Ĕненмелле мар Тăртти хăйĕн айăпне сасартăках йышăнни те. Марш арăмĕ Тăртти çине сиксе ӳкет те, вара лешĕ: «Санăн упăшкуна вĕлертĕм, лаша урисене эпĕ Никонпа касрăм», — тесе тăкса парать. Конфликтсем пурнăçра ун пек час сӳтĕлмеççĕ, апла пулсан пурнан пурнăç ытла та ансат килĕччĕ. Калас пулать, роман тăршшĕпех тав тĕввисем çавăн пек çăмăл сӳтĕлсе пыраççĕ.

Ĕненмелле мар вырăнсем, илем витерӳлĕхĕ тĕлĕшпе çиелтен илнĕ лару-тăрусем ку произведенире тата та нумай. Вĕсене май килнĕ таран эпир ал çырăвĕнче паллă туса пынă.

Романра юрату çук, юрату çинчен юратусăр калаçкаланисем кăна (Сурскипе Нина тата Хурăн Хĕветĕрĕпе Верук). Романăн юрми юрату пулмалла, унсăрăн çырни сĕтексĕр.

Автор чĕлхе тĕлĕшпе начар ĕçлет. Тупа та туршăн, ак çакă илемлĕ литературăна юрăхлă чĕлхе мар:

— «Сивĕ шывпа сапăр! — кула-кулах канаш пачĕ урамра лаç кĕтесси тĕлĕнчи хӳме шăтăкĕ витĕр шалалла вăрттăн пăхса тăракан хĕрарăмсенчен пĕри кил хушшинче çамрăк инкесем тавра нимĕн тума пĕлмесĕр çаврăнкаласа çӳрекен Сурскине».

Акă тата геройсем мĕнле сăмахлаççĕ:

«— Апла эсё Нинăна ачасене вĕрентме тытăниччен каникул вăхăтĕнче кăштах канса илме те срук парасшăн мар курнать? — тавăрчĕ ăна Хĕветĕршĕн Верук».

Романра çын нумай, ытлашши нумай. Геройсенчен чылайăшĕ хăйсен ĕçне туса калава малалла ярас вырăнне пĕр вырăнта тапăртатса, чăрманса, аптăраса тăраççĕ, часчасах вĕсем хăйсен кăмăлĕпе мар, автор çавăтнипе утса çýреççĕ.

Геройсен ячĕсем мыскаралла: Никон, Илларий, Калистрат, Онуфрий, Митрофан, Африкан, Харитон, Пахнутий, Капитон т.ыт.те. Илтнĕ-и эсир чăваш ялĕнче çавăн пек ятсене? Илтессе илтнĕ те, çапах кунашкал пысăк çыхăпа мар. Ку букет мана талла пиçен чечекĕсен çыххи пек туйăнать.

Романра чăвашлăхăн шăрши те çук. Чĕлхе, паçăрах каларăмăр, тăлмач чĕлхи. Вульгаризмсем нумай:

«Тата хырăмунта ан чакăртаттăр...»

«Йĕм тĕпне тултарам та — малашне ун пек хăтланмăп...»

«Карта хыçне пысăк нушапа тухсан çăпати пăрлак хăма çинче шуса кайрĕ те, Мараски хăйĕн вараланчăкĕ çине çара ýчĕпе шаплатса анса ларчĕ...»

Çак япаласене чăвашлăх колоричĕшĕн илнĕ пулсан — питĕ те шел. Ялти çынсен ахальлĕхне çакăн пек тýнтерле сăрлани илемсĕр.

Романра Павловский каланă пĕр лайăх шухăш пур:

— Юлашки вăхăтра эпир кулленех пухусем тăва-тăва ирттертĕмĕр, çавна пула, тен, вĕсем йăлăхса та çитрĕç пулĕ, — ответлерĕ ăна Митрофан.

Тĕрĕс, çакă сăмах автора хăйне те тивет. Илемлĕ литература произведенийĕнче пуху çине пуху тума, геройсене килте те пуху чĕлхипе калаçтарма юрамасть. Кичем.

Романра писатель аллипе çырнă пĕр вырăн пур — 29-мĕш глава. Çăткăн чунлă карьерист, принципсăр йĕксĕк Капитон Хамкин, райкомăн вăхăтлăх секретарĕ, вулаканăн умне вăйлăн та тасамаррăн тухса тăрать. Храмкин — сăнар, эпир пурнăçра пĕлекен, паллакан, пире сахал мар тарăхтарнă, хур кăтартнă кĕççе пит этем сăнарĕ. Автор ун çинчен анкетăлла каласа мар, ăна художник мелĕсемпе кăтартса парать, çак сăнар вăйлă хирĕçýçенче шалтан палăрать. Ытти геройсем çинчен, шел те, çак сăмаха калама çук, вĕсем пулса çитнĕ сăнарсем мар, эпир вуласа пынă май е вĕсен анкетисемпе паллашатпăр, е вĕсен çиелти палăрăмĕсене çеç асăрхатпăр.

Пирĕн шухăшпа, романа çĕнĕрен çырмалла.

1957

ÇАПА ПЁЛМЕН ПУШĂ

Кăçал, апрелĕн 6-мĕшĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Тăван Атăл» альманахăн пĕрремĕш кĕнекинчи ум статья пирки ятсăркка çыру çапăнса тухрĕ. Суя кăмăлпа çырнă çырусем пирки калаçса çăвар кӳтнине те сая ярас марччĕ: вĕсен хакĕ паллă, анчах «шикли шикленнĕ — кĕрĕк пĕркеннĕ» авторăн пуплешĕвĕнче принцип тĕлĕшпе **асăрхамалла**, ĕç-хĕл тĕлĕшпе **пăшăрханмалла** вырăнсем пур. Çавăнпа та асăннă çырăва кĕскен те пулсан тишкерни усăллă пулма пултарать.

Ятсăр автор альманахри ум статьяна мĕншĕн тиркет?

1. Альманах редколлегийĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ панă директивăсене пăсса куçарнă пулать.

2. Альманах редколлегийĕ XX съездăн ĕçĕсемпе «пачах паллашман, унăн материалĕсене вуласа тухман пек туйăнать», мĕншĕн тесен ум статьяра улттăмĕш пилĕкçуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсем çинчен кăна çырнă, ытти пысăк ыйтусем çинчен «пĕр сăмах та каламан».

3. «Статьяна ăнланмалла мар чĕлхепе çырнă. Статьяра *вырăс сăмахĕсене кирлĕ-кирлĕ мар çĕртенех «чăвашлатма» тăрăшни* (курсив пирĕн. — *М.В.*), литература чĕлхинчен пăрăнни, ытларах диалектизмсемпе, жаргонсемпе усă курма тăрăшни палăрать»-мĕн.

4. «Çав вăхăтрах чăвашла калама май килекен сăмах майлашăвĕсенех вырăнсăр хуçкаласа, çурри вырăсла, çурри чăвашла çырнă» имĕш.

5. «Хăш-пĕр ыйтусене журнал пачах тĕрĕс мар çутатать» иккен.

Çыру юлашкинчен çапла вĕçленет: «Тăван Атăл» альманах редколлегийĕ уйрăм фактсене тĕрĕс çутатманни, чĕлхе ыйтăвĕсем çине çакăн пек пăхни, чăваш литература чĕлхинче *пулса тăнă нормăсемпе йĕркесене çакăн пек пăсни* (курсив каллех пирĕн! — *М.В.*) тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет».

Альманах директивăсене пăсса куçарнă-и?

Асăннă ум статьяра директивăсен проектне кĕскен те тĕрĕс ăнлантарса çырнă, — куçарман. Апла пулсан çыру авторĕн куçарни çинчен мар, ăнлантарса пани çинчен каласмалла пулнă. Автор хăйĕн сăмахне тӳрре кăларма пирĕн

издательствăра халь кăна çапăнса тухнă XX съезд директивисен текстне илет. Çавă паха документа лайăх куçарассишĕн пăшăрханакан çыннăн танлаштарусем тунă чух тата «Коммунизм ялавĕн» куçарăвĕсене илмеллеччĕ. Чĕлхе норми пире те интереслентерет, çавăнпа автор асăннă вырăна «Коммунизм ялавĕ» тăрăх илер-ха:

«СССР халăх хуçалăхне аталантармалли улттăмĕш пилĕкçуллăх планăн тĕп задачисем çаксем пулаççĕ: йывăр промышленноçа пуринчен ытларах аталантарнă, техникăна пĕрмаях малалла аталантарса пынă тата ĕç тухăçлăхне ўстерсе пынă никĕс çинче халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене хăватлăн малалла аталантармалла, ял хуçалăх производствине хăвăрт вăйлатмалла, çавна май совет халăхĕн материальнăй пурнăçне чылай лайăхлатмалла тата культурине чылай ўстермелле («К. я.», 13№, (9692)).

Альманахра çакă вырăна ăнлантарса панă (цитатăламан!):

«...улттăмĕш пилĕкçуллăхăн тĕп задачисем çаксем пулаççĕ: йывăр промышленноçа малалла та ыттинчен ирттеререх пынине, техника ўсĕмне тата ĕç тухăçлăхне пĕрмаях хăпартса тăнине халăх хуçалăхĕн пур енĕсене те хăватлăн аталантарасси, ял хуçалăх производствине хăвăрттăн çĕклесси, çав никĕс çинче совет халăхĕн ырлăх-пурлăхне пур енчен те чылай лайăхлатасси, культурине чылай малалла ярасси».

Çакă вырăнах съезд хыççăн Чăвашгиз кăларнă «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕн резолюцийĕсем» брошюрăра çапла куçарнă:

«СССР халăх хуçалăхне аталантармалли улттăмĕш пилĕкçуллăх планĕн тĕп задачисем çаксем пулаççĕ: йывăр промышленноçа пуринчен ытларах аталантарнипе, пĕр вĕçĕмсĕр техника прогресĕ тунипе тата ĕç тухăçлăхне ўстерсе пынипе халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те малалла хăватлăн ўстермелле, ял хуçалăх производствине хăвăрт çĕклемелле, çавна май совет халăхĕн пурлăхлă пурнăçне чылай лайăхлатмалла, культура шайне чылай ўстермелле».

Халĕ танлаштарса пăхăр ĕнтĕ: альманах ăнлантарса панинче пăсăкки пур-и? Çук. Хаçатри куçару шайĕнчен — ăнланмалларах та, лайăхрах та. Çавăн пекех, издательство варианчĕ те хаçатăннинчен самайрах, мĕншĕн тесен хаçат редакцийĕ вырăс чĕлхинчи тĕрлĕ сăмахсене чăвашла пĕр сăмах вĕççĕн çырса кайнă. «Развитие» те — аталанни, «прогресс» та — аталанни, пĕр пуплеврех тăватă *аталанни.* Кĕнекере çав сăмахсене ăрасналатса куçарнă, — тĕрĕс тунă. Хаçатпа альманах «культурный уровень» тенине пĕр сăмахпа

«культурине» тесе каланăччĕ. Ăнлантарса çырнă чух апла туни айăплă мар, анчах куçарнă чух — «культура шайне» тени, лăп та шăп пулин те, текста çывăхрах. Пирĕн шухăшпа, «культура çӳллĕшне» тенĕ пулсан ăнланмалларах та, тĕрĕсрех те пулнă пулĕччĕ.

Эппин: куçару тĕлĕшпе кăлтăк пеккине альманахра мар, пирĕн хисеплĕ хаçатăмăрта шырамалла пулнă.

Тишкерӳçĕн «вăхăт факторĕ» пур иккенне те манмалла мар

Автор альманахри ум статьяна XX съезд хыççăн çырнă пек туса кăтартать. Куçлă çын альманахăн «Тупмалли» страницинче çакăн пек справкăсем курать: «Сдано в набор 31/1 1956 г. Подписано к печати 25/II 1956 г.». Çавна кура тăркач, куçлă-пуçлă çын нихăçан та «альманах редколлегийĕ КПСС XX съезчĕн ĕçĕсемпе пачах паллашман...» тесе каламĕччĕ.

Вырăс сăмахĕсене чăвашлатни тиркевлĕ ĕç-и?

Çакнашкал ыйтăва лартма хальхи саманара аван та мар. Авал кун пек ыйтупа Кушкă пупĕ Смелов сиксе тавлашнă. Анчах çыру авторĕ Агаковăн Солнышкин ятлă паттăрĕпе пĕр тату калаçать пулсан эпир те пĕрер сăмах чĕнер эппин.

Солнышкин чĕлхене çакăн пек «нормăласа» калаçать:

«Хам вуламан, *конешнă*, мĕншĕн тесен манăн кĕнекесемпе ларма вăхăт çук, эп *деловой* çын, тата *чăвашла вулаймастăп* та эпĕ — йывăр чĕлхе вăл маншăн...» (Л. Агаков, «Кулас килет», 23 с.)

Апла пулсан вырăсла çырнине чăвашла сăмахпа ăнлантарса пама юрамасть иккен. Кама кăмăллă ку? Солнышкин евĕр нигилистсене кăна! Мĕншĕн тесен чăвашла вулакансен масси, паллах, «прогресс», «отрасль» тенине «ӳсĕм», «юппи е енĕ» тенипе ăнлантарса панине тиркес çук. Чăваш чĕлхине манса пыракан Солнышкиншăн пулсан — тарам, анчах альманаха эпир солнышкинсен «нормипе» шайлашса кăлармастпăр.

Çурри вырăсла, çурри чăвашла сăмахсем пирки

Автор альманаха «специаллă вăтам шкул» тата «санаторисене тӳлевсĕр е льготăпа каясси» тенĕшĕн тиркет. Ну, юрĕ, чăкăлтăш автор кăмăлне курса «специальнăй вăтам шкул» тейĕпĕр. Ĕнтĕ капла «çурма вырăсла, çурма чăвашла»

пулмарĕ-и? Уйрăмлăх кунта мĕнпурĕ те çакă кăна: «нăй» вырăнне «лă» çырни. «Тăван Атăл» шухăшĕпе, çакăн пек форма грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕсрех.

«Льготăпа каясси» тенине пуплеврен татса илсен, паллах, ăнланмалла мар, анчах «санаторисене тӳлевсĕр е льготăпа каясси» тенине кирек кам та ăнланать.

Ятсăр автора «йывăр промышленноçа малалла та ыттинчен ирттерех пынипе» тени килĕшмест. Анчах XX съезд резолюцинче шăпах çапла каланă: «Коммунистическая партия считает безусловно необходимым и впредь обеспечивать *опережающий рост тяжелой промышленности...*» (Резолюция XX съезда, с. 16.) Çурма вырăсла, çурма чăвашла сăмахсене тиркекен автор «реальнăй ĕç укçи» тенине кăмăллать, «ĕç укçи чăн тивĕçлĕхĕ» тенине йышăнмасть. Хăй калашле, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнмелле!

Ыйтусене тĕрĕс çутатасси çинчен

Хăш ыйтусене альманах тĕрĕс мар çутатать-ши? Статьяра — Шупашкар гидростанцине пилĕкçуллăх вĕçĕнче тума пуçлаççĕ тени пур, ун вырăнне, автор асăрхаттарнă тăрăх, «пилĕкçуллăхра пуçлаççĕ» темелле пулнă. Йышăнатпăр. Анчах сăмах çумне сĕмсĕр талмудистла тăрăнмасан çакна та пĕлме пулать: пилĕкçуллăхăн малтанхи пайĕнче Шупашкар гидростанцине тăвас тĕлĕшпе хатĕрлев ĕçĕсем пыраççĕ, пилĕкçуллăх вĕçĕнче (юлашки çулĕсенче) тĕп ĕçе — Атăл пĕвине хывассине пуçлаççĕ. Кун пирки чĕрре кĕме те кирлĕ пулман.

Апла — мĕнрен тĕлĕнмелле?

Çапа пĕлмен пушăран — тĕлĕнмелле. Пушши, чăнах та, пушă ĕнтĕ. Çапла вăл сулчă явнă япала.

Эккей, пирĕн редакцисен çавнашкал ятсăркка çырусене пичетличчен (çырăва çыраканни тем тесессĕн те, пĕрпĕр Солнышкин, — хăлхи курăнать!) усăллăрах ĕçсем çинчен шухăшласчĕ. Калăпăр, тишкерӳре Ленинла чăнлăх, принципăх пулмалли çинчен. Час-часах çав çитмест-çке пире...

1957

ÇЫРУСЕМ

П.П.Хусанкай патне (1—14).

1. *1926 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕ, Чĕмпĕр.*

Юлташ Хусанкай!

Эпĕ санпа курса калаçасса, иксĕмĕр лайăх паллашасса кĕтсе тăмарăм, тӳрех çыру ярас шут тытрăм, мĕншĕн тесен сана хăна курмасăрах лайăх пĕлетĕп, ăсна-пуçна таçтан инçетренех сисетĕп, эсĕ пирĕн лайăх юлташ иккенне аван тавçăратăп!..

Кангин каланă тăрăх, эсĕ ман çинчен унпа калаçкаланă иккен тата малашне те çырмашкăн ыр суннă пулас. Вăл сăмахсемшĕн, манăн таса ĕçе ыр суннăшăн, эпĕ сана питĕ хытă тав тума тивĕçлĕ. Чăнахах та, сăмах паратăп, эпĕ çавă ĕçе, чăваш халăхне малалла ярас йĕркене, нихăçан та, хамăн ĕмĕр иртсе каймасăр та пăрахас çук! Эсĕ тата манăн сăвăсене кӳртме тăрăшакансем çук пирки кĕреймĕç тесе каланă тет. Вăл йĕркепе эпĕ санран, ман сăвăсем юрăхлă пулсан, тархаслас-ӳкĕтлес, вĕсене кӳртме ыйтатăп. Манăн унта сăвăсем тата та нумай, вĕсене эпĕ сан патна юриех, вăхăт пулсан, ярăп-ха. Тата çырмалли япаласем те пур-ха.

Эсĕ манăн пурнăçăма, мĕнле çын ачине ыйтса пĕлесшĕн пулнă тет. Эпĕ Аслă Арапуçĕнче, Турхан вулăсĕнче, Патăрьел уесĕнче 1908 çулта нарăс уйăхĕн 23-мĕш кунĕнче çуралнă. Сакăр çултан пуçласа халичченех шкулта çӳретĕп. 1922 çулхи пуш уйăхĕн 21-мĕш кунĕнченпе комсомолта тăратăп. Атте-аннесем манăн — ялта чи начар пурăнакан хресченсем. Чĕмпĕре пĕлтĕр вĕренме килсе кĕтĕм. Сăвă çырма эпĕ 14 çултан пуçланă. 16 çулта (1924) çырнă пĕр сăвă «Çуралнă çĕршыв» çапăннă.

Çак ĕçсене тума ман шухăш тата вăйлăланса кая пуçларĕ. Çавăнпа уроксене пĕртте вĕренес килмест, хама хам та ĕнтĕ ытти хам юлташсенчен урок вĕренес тĕлĕшпе кая юлнине сисе пуçларăм.

Кунта эпĕ сан патна «Ленина асăнса» ятлă паян çырнă

сăвва чиксе яратăп. Вăл сăвă майлă пулсан эсĕ ăна епле те пулсан çапма тăрăш-ха.

Çак çырăва илсен, вăхăту пулсан, мана çырма ыйтатăп. Паян кунтан эпĕ сан çыруна хапăл туса кĕтсе тăратăп!

«Канаш» союз членĕ *Митта Ваçлейĕ.*

Манăн адрес: г. Ульяновск, Чувпедтехникум пов(ышенного) типа, слуш(ателю) II курса Василию Митта.

2. *1926 çулхи çурлан 24-мĕшĕ, Аслă Арапуç.*

Тантăш Хусанкай!

Санăн чĕрӳнти сăмахусене эпĕ нихăçан та манас çук! Епле эс мана ăс парса вĕрентнисем халь те çамрăк чĕреме, пуçăма çĕмĕрсе тăраççĕ.

Ан пăшăрхан, тантăш! Малашне... сана юлташ каллех хĕрӳ чĕреллĕ чăваш... ывăл-хĕрĕсем сиксе тухĕç! Ăна эс шанса тăр!

Акă эпĕ сан патна хамăн чĕрери сăввăма яратăп. Çак сăвă çеç манăн пăртак техника тĕлĕшĕнчен килĕшет пек. Ку килĕшет пек пулсан, малашнехисем тата лайăхланĕç, шанчăк пур пек туйăнать. Çак сăвă мĕнлине пăртак çырса пĕлтерсен аван пулĕччĕ.

Сывă пул!

Митта Ваçлейĕ.

3. *1927 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕ, Чĕмпĕр.*

Петĕр!

Эпĕ саншăн йĕнĕ чухлĕ, сан çинчен чĕререн шухăшланă чухлĕ ахăрне никамах та йĕреймен пуль, никамах та шухăшлайман пулас! Ахаль, тӳрех çапла калама пултаймастăн тесе те калăн эс, ыттисем те мана ырă ятпа асăнаççĕ пуль тейĕн. Капла калатăн пулсан — вăл чăн! Эп чылай чăвашсен паллă çыннисенчен, «Канаш» корреспонденчĕсенчен çыру илтĕм. Вĕсем те сан пирки чылай хуйхăраççĕ иккен. Сан çамрăк ĕмĕрӳ илемлех килменнине туяççĕ иккен. Акă пĕр корреспондент Таньков сăмахĕсем:

«Шупашкарта маншăн пур енчен те пурнăç аван. Анчах тăван атте вилнĕ пекех (тăван атте вилсен те ун чухлĕ хуйхăрас çук), тăван çĕршывран хаклă тăван уйрăлса кайни ăша çунтарать. Вăл — Хусанкай!..»

Сан çинчен тата та нумай çырать вăл.

Çапах та тӳрех калап: сан çинчен эпĕ пуринчен те ытла чĕрери куççуле тăкапах!.. (Ку сăмахсенчен ан кул эс,

юратуллă хĕр çырăвĕ пек ку тесе ан кала! Ку — ман çамрăк чĕрери сăмахсем!)

Тăтăшах мана санăн ак çак сăмахусем аса килеççĕ:

Чăваш пулас тесессĕн
Юта тухса ан кай! —
Çакна ĕнентересшĕн
Асамăç Хусанкай...

Ку сăмахсене çырнипе ку мана усалласа тĕртет тейĕн эсĕ. Çук, ку сăмахсене тĕртсе çырмастăп эп. Сана çак сăмахсемшĕн татах та эп шеллетĕп. Мĕншĕн тесессĕн çак ырă сăмахсене ирĕккĕн вырăна кĕртмелле пулаймарĕ çав саншăн. Хуйхăрасах мар ĕнтĕ, апла пулсан та! Телейĕмĕр çапла пулĕ çав ĕнтĕ...

Эпĕ те ĕнтĕ «начальниксенчен» нумай наказани чăтнă. Арк. Золотов тӳрех çапла тăрăхласа çырса ячĕ:

«Сан юлашки сăввусенче, Митта, кирлĕ мар нотăсем туйăнаççĕ. Есенин хыççăн кайни палăрать. Çав Хусанкайсем илĕртмерĕç-и сана?» — тет.

Тата урăх та ятланă пек тăрăхласа çырнă.

Тавах сана, Петĕр! Эс вĕрентнĕ тăрăх анчах эпĕ сăввăмсен чĕлĕхĕсене ĕнертĕм. Халь манăн кĕслем те ĕнтĕ кĕвве илет. Техника тĕлĕшĕнчен малашне аптрамăпăр-ха!

Петр Григорьевич Григорьев пирĕн ялта. Вăл та ман сăввăмсене хурласах каймарĕ. Хусанкай кĕввисене вĕренен пулас тет. Унпа эпĕр питĕ нумай сан пирки калаçрăмăр. Ун патĕнче сан сăнусем пур. Вĕсене тытса пăхмасăр, сан çинчен тарăн шухăша каяймасăр ниепле те чăтма çук! Хăш чухне юриех çавсемшĕн каяттăм. Шел, анчах мана хупа пĕрле ӳкернĕ карточка яраймарăн.

Петр Григорьевич сан пурнăçунти тĕрлĕ аванах мар япаласем те кăтарткаларĕ. Сана вăл питĕ шеллет.

Халь ман сăвăсене çапсах каймаççĕ. Комсомол тенинчен сирпĕтсе кăларчĕç. Мĕншĕн сирпĕтнине хăвах та, кирлех пулсан, тавçăрса илме пултаратăн. Халь ун çинчен калама вăхăт çук теме пулать, мĕншĕн тесен — вăл маншăн пĕчĕк ĕç анчах!

Эсĕ халь те чăвашла нумай сăвăсем çыратăн пуль тесе шухăшлатăп. Хам та чылай çырса тултартăм ĕнтĕ. Пĕрер сăввине сана та çырса пĕлтерме тăрăшăп.

Анчах ман сăвăсем кăмăла кайĕç-ши вара? Ман сăввăмра илемлĕ, хĕрӳллĕ сăмахсем çук, йĕрекен чĕренĕн йынăшĕвĕ анчах...

Ăçтан Рсайсем пек пулас ĕнтĕ! Унăн уйăхĕ те ула, хĕвелĕ те — кум, хĕлĕ те — урнă ула йытă!..

Есенин «Пою и взываю — Господи, отелись!» тесе çырсассăн, тӳрех Орешина çапла каланă: «Клюеву и Блоку никогда так не сказать!» — тенĕ. Рсайăн та çаплах калас пулать ĕнтĕ: «Хусанкайсем, Миттасем нихçан та хĕвеле кум тăваймĕç!» — темелли кăна юлать.

Ачи вăл пултармалла çав! Ăçтан ун пек пулас! Пĕр сăввинче «кистене çухатрăм, кĕсле тупрăм» тесе çырать те, анчах та кистенĕ çухалас çук-ха ун! Хăйĕн умĕнчех тата пысăкланса, вăй хушса выртать ун кистенĕ! Кĕслин вара çинçе сассисем татăлса пĕтнĕ!..

Ну кун çинчен лапăртатма çитĕ. Çапах та çакна калам-ха. Рсая тăрăхласа çапнăшăн Ваçанккана пит юратрăм вара. Эсир унта «Сунтал» илсе тăратăр пулас, Ваçанккан Рсая çапакан сăвви «Сунталăн» 12-мĕш №-че.

Çакна та калам-ха тата. Эсĕ вĕт кăçал кĕркунне кунта килме пулнăччĕ. Эпĕ ун çинчен кунти ачасене каласа пĕлтернĕччĕ, вĕсем те пит хавасчĕ. Пĕрре çапла пĕр юлташ мана: «Хусанкай килнĕ вĕт, сана шырать!» — тесе пĕлтерчĕ. Эх, эп сана шырама тытăнтăм вара! Пĕтĕм техникума çавăрса пĕтертĕм. Хамăр хĕрсене те «Хусанкай килнĕ» тесе пĕлтертĕм. Вĕсем тирпейлене пуçларĕç, урайсене шăлаççĕ, çӳçĕсене якаткалаççĕ Анчах вăл суя пулнă иккен... Пурте ахăлтатса кулма тапратрĕç. Унтан кайран «Хусанкай Асхапата кайнă» тенине илтрĕм. Алăмсем вара лаштах кайрĕç...

Эсрел поэт та кунта вĕренме килнĕччĕ. Анчах вĕренсе пырайман пирки — кăларса сирпĕтрĕç. Шав сăвăсем çыратчĕ. Мĕскĕн вара ку мулкачне те йĕркеллĕ тытаймарĕ, лешне те тартрĕ.

Урăх нимĕнех те çырмалли çук. Епле те пулсан çыру çырма пулах ĕнтĕ. Эс те çыру ямасан шăлт пĕтеп вара эп. Хам та тахçанах ямалла, адресне тин тупрăм.

Сан тусу — *Митта Ваçлейĕ.*

Сывă пул!.. Эх, хам сăвăсене вуласа парăттăм та сана!.. Анчах çук!.. Кала, хăçан таврăнан эс тăван çĕршыва?

Вас. Митта.

4. *1927 çулхи çăвăн 20-мĕшĕ, Чĕмпĕр.*

Темрен те хаклă тантăшăм Хусанкай!

Эс килнине илтсен, санăн çыруна алла илсен темиçе çул тухман вĕри куççулĕм шапăртатрĕ. Эх, тантăшăм, епле эс килнине илтсен çамрăк чĕре çĕнелмелле мар-халĕ!.. Çав каç пĕртте çывăраймарăм. Пăрахут çинче пĕрле каласса

килнĕ чăваш ачисенчен пĕрне юри сан çинчен ыйтса пĕлмех хам пата çывăрма илсе килтĕм. Çĕрĕпе каласса выртрăмăр. Тĕлĕнтернĕ эсĕ вĕсене!.. Эс вуланă сăвăсенчен хăшне лайăхах астуса тăрать. Эс вĕсемпе каласнине веçех каласа пачĕ.

Эх, тантăшăм, эс кайни мана питĕ нумай хурлăх курмалла турĕ. Эпĕ питĕ аташса кайнă çын вĕт. Пĕрре унталла, тепре урăх çĕрелле çапкаланса çынлăхран тухрăм ĕнтĕ эп. Çамрăк чĕре (пурте мар!) вăл тăм евĕрлех иккен. Çемçе тăмран темĕн те — лаша та, урапа та, йытă та тума пулать. Çавăн пекех ман чĕрене те тăма кăларчĕç. Çамрăк чĕреме имретсе пĕтерчĕç.

Çак йĕркепе эпĕ санăн умăнта питĕ айăплă пулса тăратăп. Санăн куç умне те курăнма хăратăп.

«Савни парни» мĕн вăл? Вăл мана çынлăхран кăларакан япала пулчĕ!

Эх, Хусанкай, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ... Мĕншĕн эп санăн пек йĕркеллĕ çын пулман-ши? Мĕншĕн манăн çамрăк шухăшăм, чĕрем усал ĕне хŭри пек çапкаланать-ши? Хамран хам тĕлĕнетĕп...

Тата та ман йăнăшсем нумай та, вĕсем çинчен халь каласма та хăратăп. Съезда пырсан чылайтарах каласăпăр. Пачурасем, Хутарсем ман çинчен чылай каласа кăтартрĕç пулĕ ахаль те. Ну юрĕ ĕнтĕ çапах та.

Сан Вăтам Азире çырнă çыруна илсессĕн чылаях хуйхăрса çŭрерĕм. Пĕр сăвă та вăл йĕркепе çыртăм, анчах ху адресна кăтартса яманнипе сана çыру яраймарăм. Халĕ вăл сăвва сана çырса яратăп. Тепĕр енне пăх.

Ку çырупах тата тепĕр сăввăма çырса ярам. Ăна эсĕ Тăван çĕршыва таврăнсан çырнă, вăл вара савăнăçлă.

Ку çырупа çакăн пек сăвăсем çырса ярас терĕм ĕнтĕ сана. Темĕнле, те санăн кăмăлна кайĕç ĕнтĕ.

Сăвăсен техники мĕнле? Çуллахинчен эпĕ пăртак та пулсан вăл тĕлĕшпе малалла шунă-ши? Ман шухăшпа, чылаях пек туйăнать. Ритм енчен те, рифма енчен те эпĕ чылай мала кайнă. Ман хальхи сăвăсенче глаголлă рифмăсем çуккă ĕнтĕ. Сан шухăшпа темĕнле?

Ну кусем çинчен съезда пырсан каласкалăпăр-ха. Усал ятпах мана ан кĕт. Сана курасшăн вилсе тăратăп.

Сывă пул!

Сан тантăшу — *Митта.*

P.S. Ку çырура сана, Хусанкай, «Петĕр» тесе чĕнмерĕм ĕнтĕ, мĕншĕн тесен апла чĕннине эсĕ юратмастăн теççĕ. Эп хам та «Ваçлее» пăрахатăп ĕнтĕ. Митта луччĕ аванрах.

Танькова салам, Рсая та пысăк салам.

Митта.

5. *1927 çулхи утăн 17-мĕшĕ, Аслă Арапуç*

Ытарайми тăванăм Петĕр!

Эпĕ сан çыруна илтĕм. Эсĕ Ылтăн Микулипе Пӳлере кайса килнине те пĕлтĕм: çавна пĕлтернĕ хыççăн хамăн та Пӳлере кайса килес шухăш кĕрсе кайрĕ. Хам ĕмĕрĕмре пурпĕрех Пӳлере кайăпах-ха.

Сана эпĕр Арапуçне Петр Григорьевичпа пит кĕтрĕмĕр. Санăн Есенин кĕнекисем П[етр] Гр[игорьевич] патĕнче.

Малашне хамăн пурнăçăм çинчен пĕр-ик сăмахпа пĕлтерем.

Эпĕ халĕ аван пурăнатăп. Сăвăсем те хушшинчен çыркаласа илетĕп. Халĕ «Асамат» ятлă поэма пекки çырма тытăннă-ха. Йĕркеллĕ çыпçăнса пырсан «Асамата» санăн ырă ятупа çаптарăп.

Утă çулма çӳрекелерĕм. Эх, Петĕр, халь эпĕ утă çулассипе пĕр маттур чăваш çыннинчен те юлас çук ĕнтĕ. Питĕ аван утă çулма вĕренсе кайрăм.

Кăмăл юххи пĕр манерлĕ кĕрлет-ха. Ахаль пит кичем пулмалла та — юлташсем пур. П[етр] Гр[игорьевич] Шупашкара кайса килчĕ. Вăл кайсан питĕ кичемччĕ, халĕ аван ĕнтĕ.

Хĕрсемпе çӳрес ĕç халĕ майлах мар. Вĕренекенсем саланса пĕтиччен вăл ĕç аван эмеллешсе пыратчĕ, халĕ майлах мар; тата çимĕк те иртсе кайрĕ.

Шупашкара кĕркуннесĕр пыма пулаймасть пулĕ, Чĕмпĕре кайнă чухне çеç хăпарса анас тетĕп. Вăхăту пулсан сана та Чĕмпĕре илсе кайăп, вечерсем тăвăпăр, вĕт унта сана ачасем пурте кĕтсех тăраççĕ.

Пĕр-ик сăмах санăн «Çирĕм улттă» çинчен. «Çирĕм улттă» кунти вĕренекенсен кăмăлне питĕ кайнă. П[етр] Гр[игорьевич] вăл поэмăран тĕлĕнсе кайрĕ. Анчах вĕренмен çынсем ăнлансах каймаççĕ. Эпĕр, Петĕр, иксĕмĕр чăваш интеллигенчĕсемшĕн ӳтленетпĕр пулмалла çавă.

Хусанкай, эсĕ (Аслă) Арапуçне халех, епле те пулсан, пĕр-ик эрнене килсе кай. Эпĕр П[етр] Гр[игорьевич] сана кĕтсе кăна тăратпăр. Пирĕн (Аслă) Арапуçĕнче çут çанталăк питĕ аван. П.Григорьевич питĕ аван хваттерте пурăнать. Çавăнта пурăнăн. Эсĕ кунта килсе кайсан питĕ те аван пулĕччĕ. Епле те пулсан кил. Йĕпреç станцине лашапах пырса илĕпĕр. Халь лашасем пушаннă. Ман çырупа пĕрле П[етр] Гр[игорьевич] вăл йĕркепе сана çырса ярать. Килех.

Урăх нимех те çырмалли çук. (Аслă) Арапуçне килсен калаçăпăр. Килех!

Сана хисеплекен тăвану — *Ваçлей.*

Сывă-и, шакла пуç!

Епле шеллемерĕн Иран пурçăнĕ пек вĕл-вĕл вĕçекен çÿçне? Хам та темĕн чул кулянтăм. Ну юрĕ ĕнтĕ. Студент пурнăçĕ çÿçпе пурăнма хушсах каймасть çавă. Вĕреннĕ чухне вăхăчĕпе çÿçе тирпейлеме мар, кута хыçма та вăхăт пулмасть.

Мĕнле пурăнатăн? (Аслă) Арапуçне, пирĕн пата, пырса кайма вăхăту пулаймарĕ пуль ĕнтĕ. П[етр] Гр[игорьевич] Комакадемине каясшăнччĕ те — илмерĕç пулас. Халĕ (Аслă) Арапуçĕнчех юлать ĕнтĕ.

Эсĕ Хĕвел тухăç институтне кĕнĕ иккенне илтсен питĕ хĕпĕртерĕм. Килес çул хам та пыратăп пулас, кăмăл унталла туртать. 2-мĕш курса илсен пырапах. Сана мĕнле илчĕçĕ — экзаменсĕрех-и? Çавна пĕлтерсе çырса яр.

Эпĕ Чĕмпĕре Хусан урлă килтĕм. Эсĕ Хусанрине пĕлнĕ пулсан шыраса тупаттăмах ĕнтĕ. Вера Афанасьева сан çинчен калакаласа пачĕ. В[ера] Аф[анасьева] халĕ пирĕнпе вĕренет.

Çырас-тăвас тĕлĕшĕнчен ĕç халĕ аванах пымасть. Çулла та ĕç питех пымарĕ. Хĕрсем хыççăн чылайтарах чупрăм пулас. 7—8 сăвăран та ытла çырман.

«Асамат» ятлă поэмăна çырса пĕтереймен-ха. Темĕнле пĕртте алă çитеймест, хăш чухне вăхăт çук пек туйăнать, хăш чух наянланап та пулас.

Çакăн пек пулать пулĕ ĕнтĕ. «Асамат» тени питĕ хыттăн илтĕнет те ĕнтĕ, чипер тухсан кÿренместĕн пулĕ.

Вĕренме 2-мĕш сентябрьтех тытăннă. Шупашкара каяймарăм, чун туртмарĕ.

Кăçал техникума пĕтерсе тухатпăр. Тухиччен эсĕ килеймесессĕн ăсату каçне сан килмеллех пулать, маншăнах килмелле. Кун çинчен калаçмасан та юрать-халĕ.

Урăх нимех те çырмалли çук пек. Темĕнле ку çырăва та кăмăл юххисĕрех çыртăм, хăш чухне çапла пулать вĕт вăл.

Çыру çыр.

Тантăшу — *Митта Ваçлейĕ.*

P.S. Халĕ эпĕ вулама тытăннă-ха. «Колокола» ятлă роман [Ив[ан] Евдокимов çырнине] вуласа тухрăм. Питĕ майлă. Тата çулла вуланисенчен паллăраххи — Малашкинăн «Луна с правой стороны или необыкн[овенная] любовь».

7. *1928 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ, Каша.*

Хош-и, Петĕр?!

Эпĕр пĕр-пĕрне манса та кая пуçларăмăр пулĕ ĕнтĕ. Иксĕмĕр хушшăмăрта хальхаççăн сас-чĕвĕ пулни-туни туйăнмарĕ çав. Такамра айăп? Пĕлсех тăр: манра ĕнтĕ. Эп сан сăн-сăпату умĕнче пуç таятăп пулсан манăн çырас пулатчĕ. Тата «ыттисем» патне çырнă пулсан — сан пата та çырасах пулатчĕ. Эпир хамăр малтан çырмасассăн хисеплĕ çынсем малтан сĕкĕнмеççĕ çавă. Ваçанкка ăна, ухмах, ман айванлăхăмран виртлешсе тăрăхласа çырса яма чарăнмасть. Тата ман хамăн та çав хвальшлă самолюби пурах иккен.

Çук, тăван Петĕр, эп çыру çырма меслетлейменни çак малта çырнă «пăтăран» килмест, ун çинчен калас пулсан нумай йĕрсем варламалла, чылай кăмăла хуçкаламалла. Сана çырмастăп вĕсене, вĕсем иртнĕ вăхăт ĕнтĕ. Иртнисем хăш чухне тутлăн та пулмаççĕ. Хуть те мĕн каласассăн та вĕт эпĕ те «çапăçу» витĕр сирпĕнсе тухрăм. Кашана та çав çапăçăвах персе ýкерчĕ. Çапăçура тăвана манмалла мар теççĕ. Манман эп! Сана манас та çук. Анчах пирĕншĕн ытла диссонансла йынăшусем кирлех те мар вĕт. Çапăçура та вĕт манăн сассăм пушă хирте йынăшакан диссонанслă сасă пек çехчĕ. Çавăнпа çавă сасса сана пĕлтерме кăмăл тумарăм. Кашана килсессĕн те çав йынăшупах чылайччен пурăнтăм.

Халĕ кăмăл юххисем чиперленсе пыма тытăннăччĕ, анчах сисетĕп — каллех манăн çапăçăва кĕмелле пулать. 20-мĕш числара (çак уйăхра) ман кунта вĕрентмелли вăхăт тухать. Каллех Чĕмпĕре каймалла. Пире вĕт кĕркуннеччен шкулран кăларса янă. (Икĕ ачана кăларчĕç.) Эпĕ халĕ кайса парти ячейки умĕнче хамăн «йăнăшсем» пирки вăхăтлăха çылăх ыйттарасшăн. Парти ячейки умĕнче вĕт. Пире парти тăрăшнипе политик тĕлĕшĕнчен шанчăклă этемсем мар тесе кăларса ячĕç. Вĕрентекенсем пурте пирĕншĕнччĕ, нимĕн те тăваймарĕç, мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра парти диктаторланни лайăхах сисĕнет, ăна ху та лайăх туйса тăратăн ĕнтĕ.

Хальхи вăхăтра пит çырсах кайман. Çырнисенчен те çав «Сĕрĕмре» çех. Ана та пăсса пĕтернĕ. Корректура тĕлĕшĕнчен йăнăшсем нумай (пĕр çĕрте «пулхăр» тенине «тулхăр» тесе вуламалла), тата поэзи тĕлĕшĕнчен аван тавçăракан редакцисенчен чылай сăмахсене улăштарнă, вĕçлевсене пăснă.

Тепĕр мăшкăл тата. «Эмигрант» тенĕ тахçан пĕлтĕр кĕркунне çырнă сăвва халь пичетре куртăм. Вăл шăп мăшкăлах ĕнтĕ. Поэт тени вăл, сăмах илемлĕхĕ тĕлĕшĕнчен

кăна мар, тата идеологи тĕлĕшĕнчен те улшăнса пынине пĕлмеççĕ-им-ха вĕсем? Мăшкăл, мăшкăл! Пĕлтĕрхи сăвăсене «Канашра» та нумай çапрĕç ĕнтĕ. Ваçанккана ун çинчен çырса ярсан йĕкĕлтесе çырусем ярать.

«Хури» пит аван. (Ехрим Иванĕ тиркет пулсан та, — кĕçĕнрех-ха ача!) Есенин сана пит нумай усă кӳчĕ. Есенин илемлĕхне эсĕ çех пирĕн хушăмăрта лайăх ăнлантăн.

Кӳр аллуна! Сĕве станцинчилле чуп тăвăпăр. Мана халь çыру ан çыр-ха. Ăçта пулассине хам та пĕлместĕп. Шкула калла илмесен Шупашкара Çут ĕç Комиссариатне те кайса килесшĕн-ха.

Сывă пул. *Ваçлей.*

P.S. Ан айăпла, çыру çырма эп пĕлейменнине ху та лайăх туятăн.

Ваçлей.

8. *1928 çулхи кăрлачăн 26-мĕшĕ, Чĕмпĕр.*

Петĕр!

Пуç янă çĕртен таврăнтăм. Техникума каллех вĕренме илчĕç. Паян (Аслă) Арапуçне тухса каятăп. 15-мĕш нарăсчен педпрактикăра пулмалла. (Аслă) Арапуçне çыру çыр — тен ĕлкĕрĕ те. П[етр] Г[ригорьевич] унтах вĕрентет. Ман «пĕчĕкçи» мĕнле пурăнать? Вĕсем патне кайкалатăн пулас. Сывă пул.

Митта Ваçлейĕ.

9. *1928 çулхи пушăн 28-мĕшĕ, Чĕмпĕр.*

Петĕр!

Чылайранпа пĕр-пĕрин хыпарне пĕлейместпĕр. Пĕркунах çырасшăн, шав алă-ура çаврăнаймасть, укçа та [çырулăх та] çук теме пулать. Никам патне те хальхаççăн çырсах кайман, хама та сана паллă çынсенчен питех çырмаççĕ. Ваçанкка пăртакçă çыркалать. Ваçанккан çырăвĕсене лайăх паллатăн ĕнтĕ эс, пурин патне те пĕр пекех çырать пулмалла: «Пурнаххайĕм, витĕр курнаххайĕм. Малашне мĕнле пулатьски — неснайски».

Хальхаççăн çĕмĕрттеркелеп-ха. Вĕренес ĕç пĕр майлă шукаласа пырать. «Прохвессăрсем» заданисемпе пит аван тăрантараççĕ, юлса пырас мар тесен пĕр самант та кута хыçса тăмалла мар. Çак каланă йĕркесем тăрăхах сăвăланас кăмăлсем те сӳнсе пыраççĕ. Çук, вĕсем пирки те мар

пулас, халь вĕт эпĕ, Петĕр, йăлтах улшăннă çын та пулĕ. Юлташсемпе тавлашма пăрахрăм ĕнтĕ. Вĕсем «çук» тесен — «çук» теп, «пур» тесен — «пур» теп. «Шурă» япалана «хура» тесен — «хура» тесе каланă вырăнсем те пулĕ. Ак мĕнле çухатаççĕ çамрăкăн мăнкăмăллăхне. Çав мăнкăмăллăхран кирлĕ япала кĕтме пулать вĕт, анчах «пулас кирлĕхе» эпĕр асăрхаймастпăр (калмăк нихăçан та ыранхишĕн тăрăшмасть теççĕ). Тата ĕнтĕ путлăхра пурнасси, лачакара çăрăласси виçĕ уйăха яхăн çеç юлчĕ, епле те пулсан шăла çыртса чăтасах пулать. Ну вара, путлăхăн леш енне каçсан, типĕ çыран çине тăрсан, шыв качакисене кирлине кăтартмассăм çине — ан та пурăнам!

Пĕркун илнĕ сан çырăву çинчен. «Нарспи» çĕршывне кайăпăр тетĕн. Каясчĕ. Унти çĕршывран кунта вĕренекенсем те пур. Силпи ялĕ çинчен каласа параççĕ. Вăл, Силпи ялĕ, халĕ пĕтнĕ тет иккен, ун вырăнĕнче авалхи чулсем çеç выртаççĕ тет. Тăхтаман ялĕ Хушăлка пурăнать тет-ха. Хушăлкаран пĕр ача вĕренет, К.В. Ивановăн хурăнташĕ. Иванов çинчен пит нумай каласа парать. Ивановăн туман ĕç пулман тет: алăсти, художник, поэт! Табак пит туртатчĕ тет. Унăн кабинетĕнче тĕтĕмпе чыхăнса вилмелле пулнă имĕш. Пичетлекен машина тума тытăннă имĕш, анчах туса пĕтерме вилĕмĕ чарнă. Тата та нумай каласа парать Хушăлка ачи — поэт хурăнташĕ. Пит каясчĕ вăл çĕршыва. Укçатенкĕ тĕлĕшĕнчен хĕнтерех пулас пек те, çапах та пĕр шухăш тытсан унăн пек вак-тĕвексем çине пăхса тăмалла мар.

Эсĕр кĕнеке кăларатăр иккен. Унта сăвăсем эпĕ пит ярасшăнччĕ те. Анчах йĕркеллисем курăнкаламарĕç, çĕнĕрен çырсах кайман.

«Асамат» ятлă поэма çырап тенĕччĕ сана, халĕ те вăл йĕркепе ĕçе хута яраймарăм-ха. Вĕренсе тухиччен «Асамата» пĕтерме шухăш пур. Вĕренсе тухсан «Асамат» ятлă кĕнеке кăларасси çинчен Шупашкарта каласса пăхасшăн та, тепле пулать ĕнтĕ. Кăлармĕç çав мурсем. Кĕнекесем пирĕн вырăссенни пек пĕр-ик кунтах 15000 саланса пĕтмелле мар çав. Хăй ĕнтĕ хамăрăн «интеллигент» та пур вĕт те, вĕсем каллех Пуян Карукла пăхĕнчен ылтăн тăвĕччĕç. (Ăçта-ши вăл пурнăç тутине, сĕткенне, илемне чухлакан çамрăклăх, Хусанкай, Чăваш хушшинче пур-ши пĕр вунă çамрăк, вунă идеаллă çамрăк! Çук пулмалла. Хăйсем çапах «эпĕр пултаратпăр, эпĕр — комсомолецсем, сирĕн пек çамрăклăх хŭри вĕçĕнче явăнса пымастпăр» теççĕ. Çапла пирĕн адреспе калакансем сахал мар. Вĕсене мĕнле хак памаллине ху та пĕлетĕн ĕнтĕ.)

Ёнер Рсай кёнекине курма тивёç илтём. Нимён те çук! Ун пек поэт пулас пур — пулмастăп та. Ан тив, мана кайрисенчен те кёçённи тетчёр — пёртте кўренместёп.

«Сунталри» критика çинчен (санпа ман çинчен) калаçасшăнах мар. Ан тив, аташчăр! Укçа вёсене уншăн.

Укçа тенёрен — укçа аса килсе кайрё. Ман халь пёр пус укçа та çук. Калуш илмелле, калушсăрах çётёк шиплетёмпе çўретёп. Редакци ямасть. ...ли çавăн ăçтиçук сăввисемшён укçа сая ямалла теççё пуль, — Лаша пăшалёсем!

Çыр! Кўр аллуна.

Ваçлей.

Петров Хёветёре салам. Çыру çыртăр. Полоруссова эпё пит «майлă» çыру янăччё. Меценатова та салам. Ачасенчен хăна салам.

Ваçлей.

10. *1928 çулхи акан 17-мёшё, Чёмпёр.*

Петёркке!

Çырăву çине уç çырупа çеç хуравланăшăн ан ўпкеле. Акча юк!

Пёр манўрлё çёмёрттеретёп-ха. Кăмăл юххисем аван шавлаççё, ахăрнех вёренсе тухассине туяççё пулмалла.

Мускава ВАПП съездне чёнеççё. Кайма пулаймасть те-и тен, мёншён тесен каллех укçа çукки пётерет; çул укçине вёсем тўлеççё те, кунтан кайма çукрах. Тепёр енчен диплом тени съезда ярасшăнах мар — чарса тăрать, тахçан çырса пётерес мура.

Çырав тёлёшпе ёç начар, алă çитейместех — кăна та тытмалла, ăна та туса хумалла; ответлă вăхăт мар-и.

Сан «Уяртсанна» сарма тăрăшап. Туянас текеннисене 30 ытла тупрăм ёнтё. Чăвашгиза «Уяртсан» 35 экземпляр ярăр тесе çырса ятăм, те ярайёç ёнтё? Укçине кайран ярăпăр тенёччё. Ямасан укçа пухса ямалла пулать пулё ёнтё. «Уяртсан» пирки пит вирлё рекламăсем çапа-çапа çўрерём.

К.В. Иванов çинчен баллада çырма тытăнтăм.

Ваçлей.

11. *1929 çулхи çăвăн 29-мёшё, Чёмпёр.*

Кўр аллуна, Петёр!

Мён çёмёрттеретён? Çыру яраймарăн-çке.

Хам аван пурăнатăп-ха. Сан кёнекўне Чăвашгиз 35 экз. ячё; куçа та курăнмарё, пурте интересленеççё.

15-мĕш июньре эпир шкул пĕтерсе каятпăр. Ачасем сана çав числана çитме ыйтаççĕ. Май килсен Чĕмпĕрелле хăпарха. Ун хыççăн пĕрле Шупашкара шартлаттарăпăр. Çуллана Шупашкарта ĕç те тупса парайĕç ĕнтĕ? Ахаль шанчăк пит сахал ĕнтĕ.

Ан айăпла лапăртаттарнăшăн. Пуштăрах çыратăп. Ман тавра пĕр хýре явăнса тăрать, ручка кĕтеççĕ. Чĕмпĕре каланă вăхăта килмесĕр ан юл, кĕтеççĕ.

Ваçлей.

12. *1929 çулхи пушăн 8-мĕшĕ, Аслă Патăрьел.*

Петĕр!

Кă чухне хамăр енче. Пĕр Тикеш ятлă яла учителе ăсатаççĕ. Паян кун — Патăрьелĕнче. Учительсен конференцинче ларатăп. Ман тавра пĕтĕм чĕр виле шапăлтатса ларать (те хам та чĕр вилех?). Шупашкартан киле таврăннăшăн ýкĕнсех каймастăп. Тен, учительре лайăх та пулĕ-и?

Çыру çыр. «Питтăпай» мĕнле пурăнать?

Уç çырупа калаймăн нимĕн,
Уç çырури сăмах кĕске.
Тен, çакăнпах мана асилĕн,
Асилĕн терĕм йĕксĕке.

Пурнап çаплах. Пурнап тумтирсĕр.
Çýçсем ýсеççĕ лупас пек.
Ĕçме пăрахрăм. (Ваçлейĕр, Миттăр
Примерлă каччă пулас тет.)

Çитет, тăван. Çырма çук урăх.
Кăмăл пулсассăн çырса яр.
Тен, Витяна унта эс курăн —
Салам хăйматлăх Ăрсая.

Митта.

13. *1929 çулхи юпан 17-мĕшĕ, Хутар.*

Петĕркке!

Хушшăмăрсем инçеленеççех-им ĕнтĕ? Пĕри те пĕр сăмах чĕнместпĕр. Пĕр енчен — эпĕ те айăплах-тăр çав. Халиччен те хам çинчен сана пĕр сăмах та шарлаймарăм. Хальхи вăхăтра Хутарти хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче пуçлăх вырăнне картăнса пурăнатăп. Ĕç «эсремет» чухлех. Таçта тарасса çитнĕ ĕнтĕ. Шкула юсаттармалла, ĕçлекенсемпе ниепле те килĕшме май çук. РИКран пĕр йĕксĕк евĕрлĕ смета

тыттарчĕç те — хуть те çакăнса вил. Паян телефон тăрăх РИКпа лайăхах ятлаçрăм-ха. Техника яратпăр терĕç ĕнтĕ.

Ялан чуп, ялан чуп! Кута хыçма та (чăвашла каласан) аран-аран вăхăт вăрлакалатăп пулĕ. Хăть те мĕн кала та — вĕренесси вĕрентессинчен пин хут лайăх!

Сăвă çырма пăрахсах пăрахман-ха. Анчах сăвăсем урăхла тухаççĕ ĕнтĕ ман. Ун çинчен уç çырупах пĕлтерме çук-ха. Кайран. Çыр.

Ваçлей.

14. *1929 çулхи чӳкĕн 21-мĕшĕ, Хутар.*

Кӳр аллуна, тусăм!

Шупашкара çитсе килтĕн пулĕ. — Мĕн хыпар? «Çилюткă» пирки ĕç мĕнле тăрать? Унтан «воопче» мĕнле ĕçсем?

Манăн кунта пĕр манерлĕ. Те физик эп, те чăваш чĕлхиç — хам та пĕлместĕп. Кашни урокрах опытсем «шăршăнтаратпăр» (кавычка нумай пулчĕ-ха кунта) опытсем хыççăн сăвăсем калатпăр. Шĕлепкесем тăватпăр (изопа та хамах вĕрентеп). Эрнере мĕн пурĕ 14 сехет вĕрентетĕп (ку кив эрнепе). Халĕ эпĕр çĕнĕ эрнене куçрăмăр. Пирĕн эрнере 5 кун çеç хисепленсе тăрать.

Хĕветуçран çыру илтĕм. Çуркуннесĕр пулмастех тет. Çуркунне Марттынпа иксĕр аттесем патне пырăр тет. Тепле чăтас?

Чипер юл.

Ваçлей.

P.S. Хĕлле килĕрех ĕнтĕ. Тепĕр Петĕре салам.

Митта.

В.И. Краснов-Асли патне янă çырусем (15—17).

15. *1931 çулхи çăвăн 31-мĕшĕ, Аслă Патăрьел.*

Василий Иванович!

Санăн уç çыруна илтĕм. Хальлĕхе хам та уç çырупа çех ответлетĕп-ха. Кайран пĕр пысăк çырăвах çырса яма питĕ пысăк шухăш пур. Çырмалли нумай. Чылай ыйту кăмрантарать, чĕрене ыраттарать. Уйрăмах чăваш литературин ыйтăвĕ. Юлашки вăхăтра пĕтĕмпех эпĕр, чăваш литераторсем, çич çĕр минне анса кайрăмăр пулмалла. Пĕтĕмпех пĕтнĕ темелле вĕт. Пирĕн писательсен I съезчĕн йышăнăвĕсем ăçта çĕрсе выртаççĕ-ши?

А.Талвирпа
Митта Ваçлейĕ.
1929 ç.

Митта Петĕрĕпе Митта Ваçлейĕ.
1930 ç.

Митта Ваçлейĕ.
1928 ç.

Митта Ваçлейĕ.
В.Мясников ўкернĕ. 1934 ç.

Митта Ваçлейĕ, Г.Пласкин, М.Трубина, М.Романов çыравçăсем.
1956 ç.

«Хама çеç тивĕçлĕ» ыйтусем тĕлĕшпе те хальхи вăхăтра йĕркеллĕ пурăнаймастăп-ха. Икĕ телейсĕрлĕх пулчĕ: пĕри — аттесем çунса кайрĕç, тепри — уç çырура калама юрамасть, хупă çырура пĕлтерĕп.

Çыр, ĕçле! Чăваш литератури пурпĕрех пĕтмест, вăл чечекленмелле.

Митта.

16. *1931 çулхи утăн 3-мĕшĕ, Аслă Патăрьел.*

Василий Иванович!

Санăн маншăн пăртакçах пăшăрханса илмелле те пулнă иккен. Вăрнар районĕ ман çинчен кирлĕ мар хыпар сиктернĕ теççĕ. Санăн хăвăнах шухăшласа илмелле: ун пек ĕçе чи малтан сана пĕлтермесен — эпĕ тăвас та çук.

Сборник çырăнса пĕтет. Тӳрех калатăп: чăвашсен сăвă кĕнекисенчен начарри пулмасть. Эх, сана çеç вуласа кăтартăттăм! Июлĕн 13-мĕшĕнче Шупашкарта пулап — ĕç ялкорсен канашлăвĕ. Эсĕ те вăл вăхăта пымашкăн май тупаймăн-ши?

Аллуна чăмăртатăп.

Вăçилей Митта.

17. *1935 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕ, Малеевка.*

Мĕн çĕмĕрттеретĕн, Василий Иванович!

Пĕр-пĕринчен пĕртте инçе пурăнмастпăр ĕнтĕ, çапах та кăмăл киленичченкурса калаçма пулмарĕ. Айăпĕ пĕтĕмпех манра.

Иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ Малеевкăра (писательсен канмалли çурчĕ). Кунта килни калама çук усăллă пулчĕ. Каламăп — нумай туянтăм тесе, анчах питĕ нумай вĕренмелле иккенне эпĕ çакăнта чи пирвай пĕтĕмĕшпех туйса, чухласа илтĕм. Мускавра Горький институчĕ уçăлать кăна, епле те пулсан — кĕреп-кĕрепех. Ку тĕлĕшпе те санăн пархатарлă примеру маншăн паянхи хапсăну пулмалла. Чăнах та, сана паллакан профессорсем санран питĕ те тĕлĕнеççĕ, калама çук пысăк хастарлăх, упорство теççĕ. Проф. Тимофеевпа сан пирки чылай калаçмалла пулчĕ, вăл сана питĕ хисеплет. Сана кунта пĕр-икĕ куна чĕнсе илес тесе те сăмах хушрăмăр, курса вĕренекен чăваш (вĕсем кунта манпа иккĕн) тата тутар çамрăкĕсемшĕн питĕ усăллă пулăн терĕмĕр. Вăл ыйтăва писательсен правленийĕнче лартма пулчĕ. Кăмăлу пулсан тата вăхăту килĕшсен — кил. Чăнах та, вăхăт

юлмарĕ ĕнтĕ, тата икĕ эрне, çапах та правлени ыйтăва пирĕншĕн татса парĕ тесе шутлатăп.

Ĕнерхи кун маншăн икĕ енчен палла пулчĕ. Пирĕн пата Пастернак килсе кайрĕ. Тĕлĕнмелле этем. Пастернак — хăйĕн поэзийĕ пекех, ăнланма хĕн, тупсăмне тупма йывăр çын. Çав вăхăтрах унра тем пысăкăш, урăм-сурăм кăмăл тапса тăрать. Мĕнле вăй, мĕнле кăмăл — ăна сăмахпа каласа пама çук, ăна туйса илме çех пулать.

Ĕнер Шупашкартан лайăх колхозсем çинчен çырнă очерксен кĕнеки çитрĕ. Хытă, илемлетнĕ хупăлла, пысăк форматлă кĕнеке. Пуян иллюстраци. Унта манăн та виçĕ очерк пур. Мускава çитсен пĕрре лайăх кăна ларса вулăпăр.

Санпа тата икĕ эрнесĕр курнăçаймастпăр пулмалла. Унччен пĕрер пĕчĕкçĕ те пулсан çыру çырса пĕлтер. Панферов Горькине панă ответ пирки Мускавра мĕн калаçаç, ху мĕн шухăшлатăн?

Мĕнпур кăмăлпа курнăçасса кĕтсе, хĕрӳллĕ салампа

Ваçлей.

Н.К. Еремеева-Митта патне.

18. *1944 çулхи авăнăн 10-мĕшĕ, Горький облаçĕ.*

Асран кайми юлташăм!

Тин çеç ĕçрен ĕшенсе таврăнтăм, алăран кăранташ ӳкет, анчах май килнĕ чух тахçанах каламалли сăмахсене каламасăр хăварас мар тетĕп. Каçар, ку çырури сăмахсем сана кăмăлла пулас çук, мана та çавăн пекех вĕсем, — мĕн тăвас, пурнăçăмăр пирĕн çавнашкал пулчĕ.

Эпĕ санăн умăнта тата иксĕмĕршĕн чи çывăх чунсем — пирĕн ачасем умĕнче ĕмĕрне çырлахайми айăпа кĕтĕм. Эпĕ санăн çамрăк ĕмĕрне, чи лайăх ĕмĕт-шанчăксемпе пиçсе çитнĕ вăхăтра, пăсрăм. Эпĕ хамăн ачасене, вĕсем кун çути курнă-курманах, выçлăхпа çуклăх аллине патăм. Çакăн хыççăн эпĕ саншăн упăшка та, юлташ та мар, çакăн хыççăн мана «атте» ятне илтме те йывăр. Манччăр, пĕтнĕ тесе шутлаччăр терĕм, çавăнпа сирĕн пата та, урăх çĕре те сас памасăр нумай çул пурăнтăм, анчах пĕр случай — юлташ патне тăванĕсем килсе, вĕсем Шупашкара ман çинчен хыпар çитерни манăн решение пăртак урăхлатрĕ. Нарспи çырăвĕ çине эпĕ ответ памасăр тăма пултараймарăм, пĕтĕм ăш-чик хускалса кайрĕ, хаклă хакпа тупнă чун канăçлăхне эпĕ каллех çухатрăм. Çичĕ çул... вĕсем маншăн пĕр усал хура кун пек, ниепле вăранаймасăр куран асаплă тĕлĕк пек. Çав вăхăтрах эпĕ сирĕнтен ĕнер çеç уйрăлса тухнă

пек, тин çеç, ĕнер çеç пек. Вăл ĕнтĕ манăн пурнăçăм пулăм тĕлĕшĕнчен пушă иккенне пĕлтерет, ирĕкре кашни кунăн хăйĕн туйăмĕ, творчествăллă содержанийĕ пур, кашни кун — пархатарлă çыншăн пултаруллă ĕç этапĕ, кунта вара йăлтах урăхла, вăхăт калама çук тăрлавсăр иртет, пĕр кун — тепĕр кунăн копийĕ, эпир кунта, выльăхсем пек, вăхăтлăх туйăмне çухатнă, çавăнпа та сиртен уйрăлни ĕнер çеç пек туйăнать. Анчах вăл апла мар иккен, хамран пилĕк çулта юлнă Нарспи паян çитĕнен çын сассипе каласать, вăл ĕнтĕ ăраскалсăр ашшĕне хăш чухне питлесе илмелĕх те пулнă.

Нонна, ну мĕн сана çырам? Эпĕ санпа каласма та тивĕçлĕ мар. Çын-и вăл айăпсăр пула тăркач хăйĕн айăпсăрлăхне кăтартса пама пĕлмен çын, çын-и вăл? Халь ĕнтĕ урăх ун çинчен тапратмăпăр, кая юлчĕ. Эпĕ айăплă! Эпĕ айăпсăр тесен мана тăван анне те ĕненес çук. Эпĕ айăплă — хам айăпсăрлăх çинчен çынна ĕнентерме пултарайманнишĕн, çавна пула çакă çичĕ çул хушшинче тăван чăваш халăхĕшĕн пĕр шăрпăк та усă кӳрейменнишĕн, сире çакăн пек телейсĕр тунишĕн, юлашкинчен — тăватă тăванăм пек çак ахăр саманара пуçа хурайманнишĕн. Мĕн чухлĕ калас сăмах, мĕн чухлĕ тăвас ĕç çухалчĕ, мĕн чухлĕ çутă ĕмĕт сая кайрĕ ман çак çичĕ çул хушшинче!

Таврăнăп эп вăрă-хурах пек, ĕмĕрлĕхе чун канлĕхне çухатнă çын пек, çын çине тӳррĕн пăхма пултарайманскер, хастарлăха, хăюлăха çухатнăскер. Çакăн пек çын упăшка пулма пултараймасть, пулсан та — кил-йыша телейлĕ тума хăват çитереймест. Ун пек çынпа çемье канăçлăх мĕнне пĕлес çук, ун пек çыншăн ыран куна нимĕнле гаранти те çук, астăватăн пуль 1937 çул апрель уйăхĕнчен пуçласа иксĕмĕр мĕнле пурăннине. Пĕр каç та асаплă кĕтӳсĕр иртместчĕ вĕт. Сана тата ăса кĕре пуçланă ачасене çакăн пек шанчăксăр пурнăç парасшăн мар эп ӳлĕм. Çавăнпа та вăрçă хыççăн мĕнле пулмалли çинчен халех шутласа хурăпăр (чăнах ĕнтĕ, эпир Думбартон Оксри ăслисем мар та).

Паллах, вăрçă хыççăн пире кунта тытас çук. Эпир таврăнăпăр. Хам валли эпĕ пĕр-пĕр кĕтес суйласа илĕп, чăваш тĕпелĕнче мар, кĕтмен тата паллă мар хăнасем ларакан çĕре вырнаçăп, ятсăр тарçă пек кунĕн-çĕрĕн ĕçлĕп, анчах хамăнне тăвăп! Манăн çакă çичĕ çул хушшинче мĕнпур тĕллевсем те — потенцие епле те пулсан çухатас марри, сыхласа упрасси пулчĕ. Çак задачăна пула эпĕ хамăн нумай слабăçсене пăрахрăм, нервăсене çирĕплетрĕм, чуна хаярлатрăм, çăмăлттай çынсенчен аякка тăма пуçларăм, туртма пăрахрăм — виçĕ çул туртмастăп, физически ĕçе тиркеми пултăм, в результате — халĕ эпĕ сывлăх тĕлĕшĕнчен

тĕреклĕ, вăйпитти кĕре çын. Тăнлавсем кăвакара пуçланă пулсан та, мана 30 çулхи çын тесе никам та каламасть. А ведь всего три года назад я чувствовал себя весьма скверно, в осень 1941 года открылись каверзы обоих легких, и я, не в силах дышать, хватал воздух руками.

Çапла, киле эпĕ сывлăх тĕлĕшĕнчен тĕрекленсе, мораль тĕлĕшĕнчен тасалса таврăнăп. Анчах çын ăна пĕлес çук. «Вăл унта пулнă, унта пулать!» тейĕ. Чи усалли, чи хăрушши — çав çын сăмахĕ тĕрĕсси. Тĕрĕс-çке, каçарусăр тĕрĕс çав сăмах. Çавăнпа та хам ирĕке тухнине творчество командировки пек йышăнатăп эпĕ, выçса-антăхса кайиччен ĕçлĕп, çичĕ çул хушшинче тума пӳрменнине пĕр-икĕ çул хушшинче компенсацилеме тăрăшăп. Эпĕ телейлĕ пулăп, мĕншĕн тесен манăн хыçран ватă аннесĕр пуçне никам та кăшкăрса-макăрса юлас çуккине пĕлĕп.

Ку вăл эпĕ урăхла ĕçленинчен, урăхла пурăннинчен мар пулĕ, эпĕ ĕçлессе те, пурăнасса та ыттисем пекех ĕçлĕп те, пурнăп та, анчах çав вăхăтрах урăх карт çинче шутланăп. Уяр аçа çапмассерен ман енне çаврăнса çиллессĕн пăхĕç, — ох, лайăх пĕлетĕп эпĕ халăх кăмăлне — çумăр çумасть, кам айăплă? Çавсем венчетсĕр пурăнаççĕ — çавсем айăплă, вĕсене пĕвене тыта-тыта пăрахмалла... Çапла вăл пурнăçăн меслечĕ, Нонна.

Ачасемшĕн сана та, мамăна та тем пекех тав тăватăп. Нумая чăтнине сахала епле те пулсан чăткалăр. Мĕн ĕçлесе тупни, мĕн упрани-пухни манăн пĕтĕмпех вĕсемшĕн пулĕ. Ан йĕр, Нонна, вĕсен малашлăхĕ тĕттĕмех пулмĕ-ха. Часчасах эпĕ хама çакăн пек ĕмĕтсемпе йăпататăп. Акă эпĕ таçти аякри вăрман ялĕнче пурăнатăп. Эпĕ учитель. Хĕл кунĕсем ман çамрăк ачасемпе çапăçса иртеççĕ. Çулла — çут çанталăк ырлăхĕпе киленетĕп. Манăн пĕчĕкçĕ утар пур, унта пĕчĕкçеççĕ пӳрт. Эпир ватăлса çитнĕ аннепе анчах. Асламăшĕ кулянса калаçать: паян Нарсписем çитмеллеччĕ-çке, мĕншĕн халĕ те çук-ха вĕсем? Тен, поезд кая юлса килчĕ пулас, тен, машини çул çинче пăсăлчĕ пуль? Пăшăрханать карчăк. Çав вăхăтрах ачасен уçă сассипе вара чечеклĕ уй янăраса каять. Нарсписем — çитĕнсе çите пуçланă пирĕн Нарсписем — асламăшне ыталаса илнĕ.

— Атте килте-и? Мĕн ĕçлет. Сывлăхĕ мĕнле? — тесе пĕр-пĕрне пӳлсе тĕпчеççĕ. Ашшĕ васкамасăр пĕчĕк пӳртĕнчен хирĕç тухать, унăн куçĕсем çутă савăнăçпа шывланнă, мĕншĕн тесен вăл чăнах та килте, килте, килте иккен, таçта çичĕ ютра мар. Çакна вăл хăй те, ачисем те чи малтан асра тытаççĕ. Ашшĕ хăйĕн ачисенчен амăшĕн сывлăхĕ çинчен ыйтать. Амăшĕ аван пурăнать иккен, вăл

мана ăшă салам янă, ырлăх-сывлăх сунать, ĕçре пултарулăх сĕнет. Унăн ĕçĕсем аван пыраççĕ, вăл хулара ятлă учительница. Ачасен ашшĕпе амăшĕ пĕр-пĕрне курманни нумай-нумай çул, вĕсене сĕмсĕр хаярлăх уйăрнă... вĕсене халĕ те пĕрле пулма юрамасть. Анчах вĕсем яланах пĕрле, пĕр ĕçре. Вĕсен мĕнпур юратăвĕ ачисем çинче, вĕсен пуласлăхĕ çинче. Вĕсене пула вĕсем хăйсен супинке пурнăçĕсем çинчен шухăшлама та пăрахнă. Вĕсем хальхи вăхăтра пĕр-пĕрне ырă сунса тăракан юлташсем анчах. Çав вăхăтрах пĕр-пĕрне вĕсем чи-чи хаклă, чи-чи çывăх çынсем. Ашшĕ чунĕ амăшĕ урăх çук тенине чăтаймĕччĕ, ашшĕ ачисем телейне амăшĕ пуррипе анчах курать, мĕншĕн тесен ашшĕ хăйĕн телейне шанса пĕтереймест — вăл паян кунта, ыран таçта. Амăшĕ яланах ачисемпе, ачасен тĕп тĕрекĕ, телейĕ чи малтан амăшĕнче. Акă ачисем ашшĕне хăйсен вĕренӳри çитĕнĕвĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Кĕтесре ватă пианино, Нарспи аслă композиторсен концерчĕсене вылять...

Эй турă! Чăнах та çитĕç-ши çав кунсем? Эпир турра та, шуйттана та ĕненместпĕр. Анчах хамăрăн пĕчĕкçĕ телее ĕненме пăрахас марччĕ. Кам ĕненекеннисем — чи малтан эсĕ, мама, Нарсписен кукамăшĕ, çав кунсем часрах çитчĕр тесе турра кĕлтăвăр. Унсăрăн йывăр, йывăр, йывăр.

Çакăн пек ĕмĕтсемпе час-часах тĕлленетĕп эпĕ.

Нонна тата мама! Манăн сирĕн пирки претензи пур. Мĕншĕн халĕ те Нарспи чăвашла пĕлмест? Ку сирĕн айăп. Чăвашлăха тиркекен кăмăлпа ӳстерес пулмасть ачасене. Нумай-и, сахал-и — чăвашăн пур, çавă пур пеккине хисеплес пулать, ăна малалла çитĕнтерес пулать. Ку тĕлĕшпе Шупашкарти неомещенсем хыççăн кайни — килĕшӳсĕр япала. Астăвăр, ку çитменлĕхе халех, çине тăрсах пĕтерĕр, унсăрăн çакă япала пирĕн хушăмăра чылай илемсĕрлĕх кӳртме пултарать.

Ну, çитĕ. Калас шухăшăмсене, кирлĕ пек уççăнах пулмасан та, каларăм пулас, эсĕ ăслă çын, Нонна, ăнланăн.

Сирĕн Ваçлей.

С.А. Шавли патне.

19. *1950 çулхи нарăс уйăхĕ, Красноярск крайĕ.*

Сире, Çтихван Шавли, аякри чăвашсем «Хутар шкулĕшĕн» саламлаççĕ.

Ульянов — Яковлев ыйтăвĕ чăваш çырулăхне çитĕнтерекенсемшĕн яланах пархатарлă тема пулĕ, унăн тупсăмĕ —

авалтан амаланнă туслăх, аслă чĕреллĕ вырăс халăхĕпе хăйĕн пуласлăхне шанакан тымарлă чăваш хушшинчи тăванла çыхăну.

Çав туслăхăн ăшши-çуттинче пулас Ленин аталаннă, кам пĕлет, каярах, социализмла революци наци программине çырнă чухне, ăна ашшĕпе хреснашшĕн ытарайми çывăхлăхĕ, Российăри тем чул халăхсен аслă пĕрлешĕвĕн символĕ пулса, сахал мар хавхалантарнă пуль.

Çакăн пек аван шухăша ярать Сирĕн «Хутар шкулĕ». Художество енчен витерӳллĕ, чуна кайса тивет. Чăвашла тулăм, вырăсла сулăм.

Хумхантăм! Шанчăклă талантăр
Хунав юман пек аталантăр;
Чăвашăн илемне йăтмалăх
Вăл пулĕ йăванми юпалăх.

Ваçлей.

Нарспи, Сильпи, Илемпи хĕрĕсем патне.

Н., С. и И. Митта
20. *7 мая 1950 г., Красноярский край.*

Здравствуйте, дети!

Получил ваш последний очень удачный снимок, все вышли прекрасно — бодро, энергично, жизненно. Нарса пытливо смотрит вперед, что вполне понятно ввиду ее близких экзаменов; хороша в своей как бы стартующей позе немного тяжеловатой физкультурницы; премила и Элла-Илемби, но была бы она еще милее, если б не испортили ей настроения перед самой съемкой, отчего дитя вышло несколько капризным, что внесло небольшой диссонанс в целом прекрасно слаженный ансамбль.

Обо мне, дети, особенно не беспокойтесь, как говорит мать: «Одна голова не бедна, если и бедна, так — одна». Живу затворником. Вот моя хижина:

«Эпир пулсан тĕнчерє —
Тĕтĕм вылять мăрьерє».

Так пел дедушка.

Она, как ласточкино гнездо, висит на крутом карнизе береговой горы и единственным оком своим смотрит на величаво-суровый Енисей.

Дни мои проходят в труде (землерой и лесоруб) и святых молитвах (читаю запоем Пушкина и твержу любимых чуваш).

Иногда приходят вести из далекой Чувашии, получаю и кое-какую литературу. Радуюсь расцвету молодых дарований (Артемьев, Евстафьев) — далеко пойдут. Самому мне сейчас не до литературы, но мысль о ней никогда не покидала меня. Приму все меры, чтобы не позже предстоящей зимы вернуться к любимому делу, — пусть поздно, но лучше, чем никогда; пусть в ущерб моей затворнической свободе, которую я успел полюбить, но лучше тягостные узы, чем скорбное молчанье Музы (так, должно быть, говорил когда-то поэт).

Аннĕр пишет о каком-то севере. Живите на месте. Там хорошо, где нас нет. Курманнин курас килнĕ, курнин тарас килнĕ. Думаю, самое плохое у нас позади, а то, что впереди, вселяет пока уверенность: буду больше работать — больше помогать.

Сами тоже будьте более расторопнее в жизни. Обязательно обработайте участок — да побольше — под огород, заведите поросят (один уже растет в Арабузях — Сармантей). Питайтесь так, чтобы было сытно и дешево. Я в последнее время перешел на овсяной кисель (думаю, зубы мои пропали? Прошу не беспокоиться), так дешевле — çăкăр хутне кĕрет, тутă тытать.

Всего за все время я вам перевел 725 руб. — непростительно мало! Стыдно мне. На последний заем подписался на 250 руб. (Это при моей высокой сознательности!), отсюда делайте вывод, сколько я зарабатываю.

Кстати, о моих облигациях. Они до последнего времени оставались в Чебоксарах и только недавно поступили в Мурту. Скоро я их получу и раздам вам, дети. Вĕсем ман 800 т. яхăнах (кăçалхисĕр).

Скоро у Нарсы экзамены на аттестат зрелости. Незабываемые, неповторимые дни в жизни человека. Что я могу сказать тебе, дитя мое, по этому поводу. Я далек от школьной жизни, от педагогической практики и едва ли сумею дать тебе какой-либо дельный совет. Скажу одно: экзамены не спортивное состязание, а государственная проверка знаний. Не горячись, медаль — не самоцель. Спокойствие, равновесие, разумное хладнокровие, творческое возбуждение. Я как-то однажды записал в свою тетрадь: «Три У создают четвертое У: умение + уравновешанность + уверенность = успех». Это верно. А вы, арсюрисем, будьте к Нарсе в эти дни особо внимательны, не растраивайте ее, не приставайте к ней с пустяками. Желаю победы тебе, дочь моя, как венец всем тяжким трудам твоего многотрудного детства.

Независимо от исхода экзаменов держать курса на медицину. Святое дело. Служение народу. Кроме этого, еще в древности говорили: «Знание врача возвысит его голову, а между вельможами он будет в почете» (И. Сираков). На учебу я тебе гарантирую не менее 200 руб. (Приблизительно с августа.) За модной одеждой не гонись, пока пойдет и в телогрейке.

Привет маме, пусть она сильно не ругает меня — обстоятельства (конечно, не в грамматическом понимании) сильнее наших желаний. Привет бабушке — желаю ей доброго здоровья, многих дней жизни. Пĕрле пурăнса пулмарĕ, мĕн чухлĕ кĕнеке çырнă пулăттăмăрччĕ иксĕмĕр, анне. «Фома Гордеева» пĕрле куçартăмăр.

У нас весна на полном ходу. Ледоход на Енисее начался 2-го мая. Лед все еще идет, но уже не такими массивами, как в первые 3—4 дня. Скоро пойдут пароходы. На реке сейчас масса птиц: утки, гуси, лебеди. Они садятся на воду целыми стаями совсем недалеко от нас, играют, плещутся, шумят. Царственно красивы лебеди.

Погода здесь до сегодняшнего дня стояла отвратительная — снег, дождь. Первая гроза была позавчера (аслаттĕр, малтанхи аслати авăтсан, хăмла шалçи кăларса лартатчĕ: хăмла вăйлă пулать). Сегодня первый по-весеннему хороший день. Высокое качество погоды немедленно сказалось на количество сегодняшнего нашего труда — с товарищем на пару я напилил сегодня 5,5 м^3 дров и заработал 18 руб.

Ну, будьте здоровы. Не поминайте лихом.

Аттĕр. 7/V — 50.

Илпек Микулайĕ патне.

21. *1954 çулхи пушăн 21-мĕшĕ, Красноярск крайĕ.*

Хаклă Миккулай!

«Мунчу» лайăх. Ăшши питĕ тутлă. Кун пек калав айне Чехов та пĕр иккĕленмесĕр алă пусмалла.

Айвансен теми — чăваш литературишĕн çĕнĕ пусу: кăкла, ал, ак. Ытах та ĕçŭ ăнăçлă пулсан вăл пусса вара, ваттисем калашле, «Илпек хăртни» тейĕç.

«Ялав» çĕнĕ çултан пуçласа вĕлкĕшме мар, ялкăшма пуçларĕ. (Куçăхтарас марччĕ!) Мĕн чухлĕ аван япала. Тунсăхпа тахçан кĕтсе тăнă Элкер ячĕ, Ефимовăн ăслă, ятуллă сăвви, Шавлипе Уртемейĕн маттур куçарăвĕсем, унтан... Унтан Хусанкайăн асамлă очеркĕ. Çĕр çывăраймарăм ăна

Митта Ваçлейĕ. Арестленĕ хыççăнхи сăнӳкерчĕк. 1937 ç.

Митта Ваçлейĕ (сулахайран пĕрремĕшĕ) ссылкăри тусĕсемпе. Красноярск крайĕ, Мурта поселокĕ. 1949 ç.

Здравствуйте, дети!

Получил ваш последний пакет удачных снимков, все вышли прекрасно — бодро, энергично, жизненно. Нарса гордо смотрит вперед, что вполне понятно в виду ее будущих обязанностей; хороша Сильва в своей как бы старушечьей позе немного пожилой фрикушечницы; прелестна и Элла. Или бы, пожалуй, была бы она еще милее, если б не кокетливо-капризное выражение перед самой съемкой, отчего лицо вышло несколько капризным, что внесло небольшой диссонанс в цело прекрасно сложенный ансамбль.

Обо мне, дети, особенно не беспокойтесь, как говорит мать: «Моя голова не бедна, если и бедна, как-одна». Живу заповедником. Вот моя хижина:



Она, как ласточкино гнездо, висит на крутом карнизе бесчетной горы и единственным окном своим смотрит на величаво-суровый Енисей.

Дни мои проходят в труде (землеуроб и лесоруб) и святые молитвах (читаю знаком Пушкина и иногда любимых чувств).

Иногда приходит весть из далекой Чувашии, получаю и кое-какую литературу. Недуг

Митта Ваҫлейӗ хайӗн хӗрӗсем патне 1950 ҫулта Красноярск крайӗнчен янӑ ҫырури ӳкерчӗк.

вуласан. Акимов, Сорбоннăри чăваш несĕпĕ, макăрса ячĕ (мĕншĕн? — сăлтавне каламарĕ). Астăватăп, Алка «Çăкăрĕ» пит савăнтарнăччĕ пире, пирĕн тымар таçта та çитет тесе калас килетчĕ ун чух. Халĕ ак Архимед чĕлхипе: «Парăр тĕрев пăнчине — пирĕн Изотовсем çĕр чăмăрне тепĕр май çавăрĕç», — тесен те ытлашши пулас çук.

Çапла коммунизм тунă çĕрте пирĕн ят та, сас та, вăй та, ăс та пур. Турра шĕкĕр, никамран та катăк мар.

«Ялавăн» харпăр номернех çавăн пек шухăша яракан, хăват паракан пархатарлă произведенисем — пĕрер те пулсан — парса пымалла. Ан тив ыттисем чĕрĕрех, йăмшакрах, пиçсех çитменнисем пулччăр, пĕри çех чăн-чăнни, пĕтĕм ăс-хакăла çунатлантараканни пултăр, вара Ĕçхĕлĕн ĕç-хĕлĕ тӳрре тухать, «Ялав» ялкăшать. Хăш чух ним мар сăвва пĕр ăнăçлă сăмах янăратса ярать, кунта та çавăн пекех.

Сывă пулăр. Тымара тарăнран тарăн кайăр. Тен, эпĕ те, ăраскалăм пулсан, текех каснă чĕл вырăнĕнче тăрса юлас çук. Тăрăшăр!

Митта Ваçлейĕ.

А.Ф. Талвир патне.

22. *1954 çулхи авăнăн 25-мĕшĕ, Красноярск крайĕ.*

Элекçей, хаклă янташăм!

Салам. Çур министр портфельне тивĕçлĕ пултăн — хытă тыт. Паллах, ку вăл — чи малтан Пăлаçи патриочĕсемшĕн — кăмăллă факт. Юхма çăлĕ иксĕлми, хунавĕ хуçăлми тенĕ ваттисем.

«Çутăлсанна» килсенех вуларăм. Ярмуша, Шуркин арăмне — майра инкене, çĕр валеçнине т.ыт.те вăйлă художник аллипе çырнă, пĕтĕмĕшпе илсен те — авалхи ӳнерçĕсен тăн-тăн ăсталăхĕ туйăнать: калав лăпкăн, тарăннăн уçăлса пырать, ун чухнехи чăваш тĕнчи, паха картинăсен галерейине лекнĕ пек, йĕркепĕррĕн сăнласа, куç умне тухса тăрать.

Çапла, чăваш литературин шухăшсăр ачалăхĕ, шухăлăхлă çамрăклăхĕ те кая юлать пулмалла. Ĕнтĕ пăс мар, ăспа опыт тата ăсталăх пирĕн çамрăклăх хăватне çĕклет. «Çитменнине çитерĕр, ытлашшине каçарăр» тени кивелчĕ. Çавăнпа та, ытлаван япаларах ăнсăртран тĕл пулакан кăлтăксем тарăхуллă. Кăна эпĕ санăн ытлашши ăслă «упа çурисем» çинчен каласшăн. Ача-пăчашăн та ача-пăчалла çырмалла мар.

Çак кунсенче Чăваш çĕршывне таврăнатăп. Вунă çул лашманта, пилĕк çул чалтуна çýрерĕм — çитет, чăвашаллах чун тапать.

Пулни-иртнисем çине философла çырлахуллă пăхар, мал ĕмĕтпе пурăнар.

Шухăшласа пăх, ман валли издательство таврашĕнче алпатлĕрех ĕç тупăнмасть-и (калăпăр — тăлмач ĕçĕ)? Унти тиексемпе калаçкала — шанатăр пулсан — шанчăкăр харама каймĕ.

Чухăн, анчах сывлăхлă (пур енчен те!) таврăнатăп. Турра шĕкĕр! Хапăл тусамăр.

Ваçлей.

Г.И. Ильин патне.

23. *1955 çулхи пушăн 21-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хисеплĕ Г.И. Ильин юлташ!

Сирĕн К.В. Ивановпа Тайăр Тимкки çинчен çырнă асаилĕвĕре «Тăван Атăл» редакцийĕ хапăл тусах йышăнчĕ. Эсир фактсемпе тирпейлĕ усă курнине палăртас пулать, кунсăр пуçне çĕнни те, халиччен эпир Ивановпа Тайăр пурнăçĕсенчен пĕлменни, Сирĕн ĕçĕрте сахал мар.

Уйрăмах пире Тайăр Тимкки Чĕмпĕрте вĕренни интереслентерет. Кун пирки халиччен татăклă сăмах çукчĕ-ха. Тен, Сирĕн çак питĕ те кирлĕ факта çирĕплетес тĕлĕшпе витĕмлĕ материалсем тата та пулĕ — ярса парăр, пĕлтерĕр. Ивановпа Тайăр Тимкки çинчен калакан чĕрчĕлĕхсен кашни сăмахĕ пирĕн çырулăхшăн калама çук хаклă.

Сирĕн ĕçĕре «Тăван Атăл» альманахăн иккĕмĕш кĕнекинче пичетлĕпĕр. Алçыруне, савса упраса пурăнма, хăвăр пата каялла ярса парăпăр.

«Тăван Атăл» редакцийĕ.

Ф.Е. Лисина патне.

24. *1955 çулхи акан 5-мĕшĕ, Шупашкар.*

Лисин амăшĕ!

Каçарăр, ку çырупа эпĕ сире кĕтмен çĕртен чăрмантаратăп.

Нумай пулмасть эпĕ сирĕн Геннадипе паллашрăм. Савăнтарчĕ мана вăл! Пултаруллă, тарăн ăслă, витĕр курăмлă, мал ĕмĕтлĕ ача. Ун пек маттур çамрăксене курсан мĕнпур кăмăлтан: «Хĕсĕр мар Чăваш çĕршывĕ!» — теес килет.

Анчах ытла та шухăшсăр пăхать Геннадий хăй сывлăхĕ çине. Кăçал вăл хĕл хута сивĕ плащпа çýренĕ, апат-çимĕçĕ — кайăкла. Ку çитменлĕх ун çуклăхран кăна килмест, тирпейлĕхсĕртен те. Туртать — вĕçĕмсĕр. Кунта ăна союз пăртак пулăшкаларĕ, малашне те, вĕреннĕ чух, пулăшĕç. Çапах çакна калас пулать: этем тени пулăшăва чи малтан хăйĕнчен кĕттĕр, хăйне хăй упратăр. Кун пирки калаçрăмăр эпир Геннадипе, вăл малашне пĕлсе пурăнма, сывлăхне сыхлама пулчĕ. Çав шухăшах ăна тата сирĕн каласан аван пулĕччĕ, эсир — амăшĕ, сирĕн сăмахăр витĕмлĕрех. Кунсăр пуçне, хăвăра тем чул хĕн пулсан та, ăна вĕреннĕ чух, мĕн вăй çитнĕ таран, пулăшкаласа пырсан питĕ аван. Сывлăхĕ çеç пултăр, вăл час чăн-чăн çын пулмалла, ывăлăр сирĕн пултарулла пурнăçшăн çуралнă. Ун çинчен эсир пĕр самантлăха та ан манăр, хальлĕхе, питĕ кирлĕ чух, ваттисен калашле, хăш чух кăмăлпа, хăш чух кĕмĕлпе тенĕ пек пулăшса тăрăр.

Сире ырă сунакан Арапуç çынни.

М.М. Романов патне.

25. *1955 çулхи акан 5-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Мефодий!

Эпĕ ытлашши манăçса тата каçăхса кайиччен ĕçлесе ларакан çын мар, çавăнпа та, мĕн те пулин кирлĕ пулсан, кирек хăçан та хушма пултаратăн, — вăл чăрмантарни пулмасть. Ку малтанхи çырăвăнти ыйту пирки.

Пĕр-икĕ сăмах санăн пултарулăхăн перспективисем çинчен. Эсĕ халь — çулсем тĕлĕшпе — чи-чи пиçĕ вăхăтра. Çыруçăсем чăн-чăн тăвас пеккине санпа манăн çулсенче тунă. Сухалар, Мефодий! Халех хăйăр юхмасть-ха пирĕн.

Малтанлăха — уçăлмалла, куннă вăйсене, пăртакçă çĕнĕ çĕпре ярса, хăпартмалла, — алтанлĕрех ĕç сĕнесшĕн сана эп. «Ялавра» номертен номере Чĕлĕм Кавĕрли (коллективлă автор) калавĕсем тухса пыраççĕ. Хальлĕхе пирĕн Кавĕрле питех çыпăçуллă юптараймасть-ха, тýррипех каласан, ăна хамăрьял Калля пичей (Хĕрлĕ Калля) хăйĕн çумне те лартас çук. Ярса пар-ха çак Кавĕрле ячĕпе мĕн те пулсан. Малтан халиччен тухнă Кавĕрле калавĕсемпе паллаш, ĕнерĕн ун шухăшĕпе, кур ун куçĕпе, калаç ун чĕлхипе. Анчах ĕнерĕнесси те, курасси те, калаçасси те малалла пултарулăхăн çýлерех виçипе пулмалла. Сан вăй-хална шанатăп. Çырнă пеккисене тýрех ман пата ярса тăр, — хам редакцилĕп, — çитменнине çитерĕп, ытлашшине каçарăп тенĕ пек (мал-

танлăха, паллах, — каярах хытăрах кăмăлпа пăхăпăр). «Ялав» редакторĕпе эпир пĕр пӳлĕмрех, тĕлме-тĕлех ларатпăр. Çавăнпа та эс çырнисем питех çанталăк кĕтсе выртас çук.

Сывă пул. Çак çыру çине ĕçпе ответлессе кĕтетĕп. Арапуçсене салам, чи малтан аннӳне, йăмăкна. Çулла курнăçăпăр-ха.

Ваçилей.

Сиваш патне.

26. *1955 çулхи акан 21-мĕшĕ, Шупашкар.*

Сиваш юлташ!

«Хурпа унăн çăмартисем» ятлă юптару литератрура пахалăхĕсем тĕлĕшпе йăвашрах. Юптару чĕлхи хăйне хăй вылянса тăмалла. Крылова, Михалкова тата ытти лайăх юптаруçăсене вуласа вĕренĕр.

Салампа *«Тăван Атăл» секретарĕ.*

Самандеев патне.

27. *1955 çулхи акан 21-мĕшĕ, Шупашкар.*

Самандеев юлташ!

Чĕлхене тата литература теорине вĕренмесен пархатарлă сăвăсем çырма çук. Сирĕн сăввăрăн çитменлĕхĕ шăп çакă сăлтавран килет. Литература ĕçĕпе чăн-чăнах интересленетĕр пулсан унăн ăсталăхне пусăрăнсах вĕренĕр.

Салампа *«Тăван Атăл» секретарĕ.*

Ш. Мударрис патне.

28. 1956 çулхи çăвăн 5-мĕшĕ, Шупашкар.

Хаклă Мĕтерис!

Ку çырупа Сирĕн пата «Тăван Атăлăн» иккĕмĕш кĕнекине яратăп. «Шупашкарта» çитес номерте пулать, ăна наборласах хунă. Чăвашла Мусана пăхса тухăр, хăвăр шухăшăра калăр. Паллах, вырăсларан куçарни, тӳрех тутарларан куçарманни палăрать. Тутарла Джалиле ярса парăр. Тата, тархасшăн, тутарла-вырăсла словаре ярассине ан манăр.

Сире хисеплекен *Митта Ваçлейĕ.*

И.Д. Кузнецов патне.

29. *1955 çулхи çĕртмен 6-мĕшĕ, Шупашкар.*

Салам-аликкĕм, Йăван-паттăр!

Шупашкара янă хыпару çитрĕ, вăл халь çăвартан çăвара çӳрет. Юлташу-тантăшусен савăнăçлă шавĕнче манăн сассăм та пур, эпĕ те сана тунсăхлă кăмăлпа кĕтсе тăратăп.

Иртнĕ кунăн çути çук тенĕ чăвашсем. Манăça тивĕçлисене эпĕ Енисей авăрĕсене ярса хăвартăм. Унашкал парнесене санăн Печору та тиркесе тăмĕ тесе шанатăп.

Сывă пул. Пур пул. Партишĕн, тăван çĕршывшăн, тăван халăхшăн эпир пĕтнĕ çын мар. Таврăн, пĕтĕм ыр кăмăллă Шупашкар сана кĕтет.

Кĕскен — çĕнĕ хыпарсем, вĕсен тĕллевĕ — санăн çунатланнă ĕмĕтӳсене часрах кил енне вĕçме тата тепĕр тĕк хушса парасси.

Ив. Анисимов, Осипов (улатăрсем) каллех партире. Çитес кунсенче Е. Чернов, А. Васильев, Хрисанфов ĕçĕ татăлать. В. Краснов, И. Ефимов, Г. Титов ĕçĕсем тӳресен аллинче. Хамăр телейлĕ çынсенчен тата Павăл Иванова (редактор пулни) куркалатăп, вăл юлашки çул вак касса кашни кун Атăлта шыва кĕнипе чапа тухрĕ. Хăй вара, чăнахах та, чугунтан шăратса янă пек пулса кайнă. Нумай пулмасть А. Золотовăн тата Зефировăн реабилитацийĕсем килнĕ (иккĕшĕ те çук).

Сирĕн корреспондентăр çинчен каласан, вăл кăçалхи март уйăхĕнчен вара «Тăван Атăл» тиекĕнче ĕçлет. Чăвашра чи малтан тӳрре тухаканни эпĕ пултăм (çак уйăх вĕçĕнче çулталăк тулать), мухтанатăп: манăн ура йывăр мар иккен!

Шупашкар — тĕнчере нимĕнле хула та урăх кирлĕ мар! Каçса кайса пурăнатпăр. Хăвăртрах таврăн.

Ваçилей.

Ку çырăва çырса пĕтернĕ тĕле Гурий (Титов) персе çитрĕ. Унран сана пысăк салам. Малашне сăмах Паймене паратăп.

Михайлов патне.

30. *1955 çулхи çĕртмен 13-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хисеплĕ Михайлов юлташ!

Çырăвăрсем çитрĕç, иккĕшне те пысăк интереспа вуласа тухрăмăр. Аван, чĕлхе тасалăхĕшĕн хĕрсе каласни питех те аван! Эсир илемлĕ сăмахлăха юрататăр, чĕлхе тирпейсĕрлĕхĕ сире тарăхтарать. Çапла пулмалла та.

Анчах çак хусамăрăн паха шухăш-кăмăлăра çирĕплетсе пама Эсир ăнăçлă тĕслĕхсем тупайман. *Ан манăр, чĕлхе вăл — историпе пĕрле пулнă япала.* Хальхи чăвашсен литература чĕлхине тăвас процесра, чăваш чĕлхисĕр пуçне, нумай халăх чĕлхи ĕçленĕ: вырăс, тутар, эрмен, араб, иран, китай т.ыт.те. Çакă ĕмĕрхи пархатарлă процесс халĕ те пырать, ăна эпир чăваш çырулăхĕн аталанăвĕ тетпĕр. Çавăнпа та *флора, фауна, фабула, контраст, эрудици* сăмахсем пирки, вĕсемпе чăваш чĕлхинче вырăнлăн усă курнă пулсан, тиркешмелли çук, вĕсем пирĕн чĕлхене вырăс ăслăлăхĕ урлă кĕнĕ пĕтĕм тĕнче культурин сăмахĕсем. Çавăн пекех *мал ĕмĕт, тав, нехĕм, пăрăс, техмет, хăнтăр* сăмахсем пирки те тиркешмелли çук, вĕсем, эрие пур чăвашшăн та паллă пулмасан та, пирĕн чĕлхере авалтанпа пурăнакан сăмахсем. Ку сăмахсем, чăвашсен уйрăм диалекчĕсенче кăна мар, словарьсенче те тахçанах пур, вĕсене литература чĕлхинчен, ĕлĕкрен тымарланнăскерсене, ниепле те кăларса пăрахма çук, апла тума кирлĕ те мар.

Литература чĕлхи «хамăр ял» чĕлхи мар, вăл халăхăн мĕнпур диалекчĕсене кирлĕ пек асра тытса тунă чĕлхе, вăл самана шайĕпе танлашса аталанакан чĕлхе. Çакна пĕле тăркач ку сăмаха пирте каламаççĕ, ку чăвашла мар тени чылай чухне вырăнсăр та пулать.

Ют чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсене пĕлме тата тăван сăмахсен пĕлтерĕшне тĕплĕн ăнланма — словарьсем пур. Сăмахран, «Русско-чувашский словарь» — Н. Дмитриевăн, «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» — Н. Ашмаринăн тата «Чăвашла-вырăсла словарь» — В. Егоровăн сире пысăк усă кӳрĕччĕç. Нумай-нумай вĕреннĕ çынсем те словарьсене алă айĕнчен ямаççĕ. Этем ăнĕ, темĕн чул çирĕп пулсан та, пурне те асра тытаймасть, ăн тенине çĕнетсех, пуянлатсах тăмалла. Пĕлменнине пĕлекенсенчен те ыйтма пулать; ыйтни ыйткалани мар, ан вăтанăр.

Эсир ӳссе аталанса пыракан çын. Кĕнеке — ăслăлăх кĕнекисем, классикăлла литература тата пирĕн нумай нацциллĕ совет литератури — сире пурнăçра калама çук пысăк пĕлӳсем парĕ, «Юратăр кĕнекене, вăл пĕлӳсен çăлкуçĕ», — тет М. Горький. Ăнланса вулăр. Çăмăллисенчен майĕпен йывăртараххисем патне куçса пырăр. Йывăртараххи пуçа лайăхрах ĕçлеттерет, ăса тарăнрах вырнаçать, ăна тĕртсе ан ярăр. Ăнланма тăрăшăр. Апла пулсан тăрăшса вулас пулать. Хусамăр тишкерекен статьяна эсир тĕплĕн вуласа тухман. Астăвăр, статья авторĕ *Сăр вăрманĕн пуянлăхĕ* çинчен çырать, сăмах, эсир каланă пек, пуян кĕтес çинчен мар, *пуян вăрман* çинчен кăна пырать, çавăнпа та эсир: автор

Тăван çĕршыври ытти пуян кĕтессене курмасть тени тĕрĕс мар. Авторăн тĕллевĕ Сăр вăрманĕн пуянлăхĕ çинчен каласси пулнă. Тинкерсе вуланă пулсан, асăннă статья сирĕн пĕлӳсен çумне тата тепĕр пĕлӳ хутшăнтаратчĕ: Сăр массивĕ пек пуян та пархатарлă *вăрман* пиртен кăнтăралла (Атăл тăрăх), кăнтăр-хĕвел анăç еннелле те (Дон çийĕпе) урăх çук.

Çавăн пекех, ăнланса çитеймен сăмахсене, уйрăммăн çырса илсе, май пур чухне словарь тăрăх пăхса тухмаллаччĕ. Вара сире хăвăр тишкерекен статья тарăхтарма мар, нумай енчен усăллă пулма пултаратчĕ. Ĕçе пикенсен чăрмав тесе йывăрлăхран нихăçан та ан пăрăнăр.

Ку — эсир Митта Ваçлейĕн «Юратса çырнă кĕнеке» ятлă статйине тишкернĕ пирки.

Тепĕр çырăвăр сирĕн Ю. Скворцовăн сăвви çинчен. Кунта та эсир йăнăшатăр.

Калла — каяллан кĕске форми.Литература чĕлхи ун пеккине сивлемест.

«Йăл-йăл çунать кантăксем» сăвăлла пуплевре подлежащипе сказуемăй хисеп тĕлĕшĕнчен килĕшменни пăсăклă мар. Халăх юрри-сăввисенчен тата «Нарспире» те ун пек «кăлтăксем» пур, анчах вĕсем халăх юррисемшĕн мĕн авалтан саккунланнă норма.

Ĕçлĕр. Вĕренĕр. Эсир илемлĕ çырулăхпа пикенсе интереслении сирĕн пурнăçăрта пархатарлă вăй пултăр.

Г.М. Титов патне (31—33).

31. *21 июля 1955 г., Чебоксары.*

Здравствуй, Г[урий] М[акарович]!

Просьбу Вашу исполнил с большим опозданием, но зато с перевыполнением: вместо одной книги послал две! Условие: на временное пользование. С первой же Вашей оказней к нам — захватите их с собой.

Мы — турра шĕкĕр! Нонна все добреет и добреет. Старшие (Нарспипе Сетнер) прожили у нас всего три недели, сегодня они уехали обратно в Москву. Оба кончили с отличием: оба оставлены в Москве.

Велогон, конечно, усиленно эксплуатируется и, кажется, уже требует основательного ремонта, — арсюри буквально не слезает с него. Особой тесноты не чувствовали, т. к. жили на «два дома» — А[нна] И[вановна], уезжая к родным, оставила нам свою комнату. Ей хлопочут пенсию (союзную) за В[асилия] И[вановича].

Приезжал наш чувашский чудодей-химик [Н.А.] Алексеев. Он будет работать здесь, в с[ель[хоз]институте. У него огромное количество изобретений, одних патентованных около 20!

Вот, пожалуй, пока все новости. Скучно без П[етра] П[етровича]! Он на днях должен приехать, но, к сожалению, приедет с тем, чтобы вскоре же уехать в Москву, учиться. Гулкая пустота! Сывă пул, пур пул. До свидания! Не бросай старика Стасова.

Василей.

32. *1955 çулхи çурлан 29-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Гуриян!

Ыран Кăкшăм уттине вунă куна канма каятăп. Кĕскен хыпар-хăнарсем: ĕçӳ çитрĕ («Нарспи» çинчен). Çеçпĕл çинчен çырни тупăнчĕ. Тупаканни — Арлан Ваçлейĕ (Долгов В.А.). Маттур — кам япалине çеç сыхласа усраман вăл! Ехрем Ноннăсен шкулĕнче — завуч. Петĕр — Мускавра. Таврăнсанах ĕçӳсене хута яратпăр.

Сывă пул, пур пул.

Ваçилей.

33. *1955 çулхи юпан 1-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Гуриян!

Каçар, нумай кĕттертĕм. Учрежденисенче пыракан ремонт халиччен тытса тăчĕ, тин кăна çынсен майлă ĕçлеме пикентĕмĕр. Сан ал çырусене аран-аран çаптаркаларăм, (ремонт пиркиех), паян пĕрер экземпляр хăвăн патна пакетласа яратăп. Машинистка хыççăн тепĕр хут вуласа тухрăм — каçса каймалла. Вуланă чух ялан пĕр шухăш йĕкĕлтесе тăчĕ: худо не без добра, вырăссем калашле, — эс кун пек пулман пулсан сана чăваш литератури кураяс та çукчĕ, таçта çӳлте, Мускавсенче, лармалла.

Ну, ку сăмах майĕн кăна. Пĕрне-пĕри комплиментсем калар мар. Ĕç çинчен. Халех кирлĕ çынсене вулаттаратăп. Куçарас пирки калаçса татăлатпăр (Талвир килсен — халĕ вăл кăнтăрта). Эрхипчă хирĕç мар, анчах Мускав решенине кĕртесшĕн. Вăрăма кайсан обкомра калаçса татăлатпăр тет. Профессорсен шухăшне çак кунсенче пĕлетĕп, сана та ун çинчен çийĕнчех хыпарлăп. Çак уйăхăн вуннăмĕшсем тĕлĕшĕнче килелле кайса килесшĕн, çул май сан пата кĕрсе тухăп.

Салам аçу-аннӳне. *Ваçилей.*

П.П. Хусанкай патне.

34. *1955 çулхи юпан 7-мĕшĕ, Шупашкар.*

Питрав! Петĕр! Петр Петрович!

Тем-тем каласа та чĕнме хатĕр халь эпĕ сана — çав тери тунсăхланă! Шупашкар сансăрăн — хăмли те каламан, йŭççи те çитмен.

Тинис ачи урлă янă саламна илтĕм. Тавтапуç. Хам çийĕнчех хирĕç яраймарăм. Каçар. Малашне пĕр-пĕрин тĕлĕшпе тимлĕрех пулма тăрăшасчĕ.

Тăваттăмĕш кĕнекене йĕркелесе çитеретĕп. Паллах, унта санăн паю та пĕчĕккĕ пулмасть. Чĕлхеçĕсем çинчен çырнисем пурте каяççĕ. (Шăпах тата çак кунсенче Н.И. Ашмаринăн юбилейне палăртаççĕ. Тинис ачи «С[оветская] Ч[увашин]че», Павлов Ив[ан] «К[оммунизм] я[лавĕн]че» ун çинчен статьясем те кăларчĕç.) Виççĕмĕш кĕнеке çак уйăхăн вĕçĕнче тухать — ярса парăп. Унта санăн — «Тăван Тутарстана» тата куçару (Шпортăран).

«Ялаври» пирки («М. çуркунне») кунта темĕн те пĕр лăркаççĕ. Петроний пек шахвăртса каласан, чăнах та, ун пеккине пĕр-пĕр Виргилий те çырма пултарнă, *Цезарьтен вăйлăраххине ыйтаççĕ.* Ку ман шухăш — пĕр тиркешмесĕр, кĕвĕçмесĕр («Ялава» панишĕн кĕвĕçмесĕр). Манри «Тутарстан» вара — шедевр, перл! Уншăн редколлеги членĕсем те каççах кайрĕç.

Хачă хăйĕнне турĕ-турех — сонетсем касăлчĕç. Кун пирки Ĕмпиччe çапла каланă: «Айăплав сăмахĕсем унăн ытла та пĕтĕмĕшле, тĕллесех кăтартмаллаччĕ», — терĕ тет. Кĕнекен халĕ урăх ум çакки пулать. Кăмăлна ытлашши йывăр ан ил, юрла та яр хальхи юррăна — Аптраман таврашĕн юпи валли хатĕрлесе хунине.

Иван паттăра кăмăллăн ăсатрăмăр, çул курки çĕклесе атте-аннесен йăлипе: «Кайма çăмăл, килме çывăх пултăр», — терĕмĕр. Вăрăм Ваçлей çыру илчĕ унтан — кил шухăшне пăрахмасть Иван, Сидоров, Дубровский т.ыт. çине шанчăк хурать.

Элекçей таврăнмарĕ-ха, унсăр пушшех те кичем.

Пŭлĕме халĕ те тавăрса параймарĕç-ха, каллех аптăратма тытăнас пулать пуль. Мĕн пулать те мĕн килет — пĕрре Мăн çурта Мăнакка патне кĕрсе тухмалла пуль. Тен, пулăшĕ.

Литература хыпарĕсем сахал, литература таврашĕнчи хыпарсем нумай. «Т[ăван] А[тăл]» çĕнĕ çултан 6-шар тухмалла. Пĕр каласнă сăмах тĕрĕс пултăр: альманах малашне те сансăрăн тухмалла мар.

Театрта — «Çĕмĕрт çеçки», «Юрату вилĕмсĕр», «Ялти каçсем». «Çĕмĕрт çеçкинче» Вера-ханума куртăм (партнертан), алă çупрăм, сана тепĕр хут — галлюцинацие çитиех — хамăр çывăхра туйрăм.

Паттăр пул.

Ваçлей.

А.Ф. Талвир патне (35—36).

35. *1955 çулхи юпан 8-мĕшĕ, Шупашкар.*

Тантăшăм Элекçей!

Сирĕнсĕр, Петĕрпе иксĕрсĕр, Ш[упашкар]та кичем. Часрах таврăнăр.

А. Фадеев савăнтарчĕ. Тĕнче çине чăнласах та тухатпăр иккен! Чăваш ывăлĕ-хĕрĕсен ĕçĕсене çине-çине асăна пуçларĕç.

Шупашкар пĕр майлă пурăнать. Театр сезонĕ пуçланчĕ: «Çĕмĕрт çеçки», «Юрату вилĕмсĕр», «Ялти каçсем»... Петĕрĕн Т[ăх]ти валли ум сăмахне катернĕ, литературăллă Шупашкар халĕ çавăн çинчен чылай калаçрĕ. Калюков сучĕ, хăй пусахласа ыйтнă тăрăх, тепĕр вăхăта юлчĕ, ахăртнех, эсир таврăниччен пулмасть пулĕ. Ремонт чăрмавсем иртсе пыраççĕ — пӳлĕмсем çап-çут та чап-чакăр. Рехмет сана куншăн. Секретарь пӳлĕмне тапăнакансем татах килсе кайрĕç. Мăн çуртран Энтри ачи пулчĕ. Вăрăм Ваççа пирĕн хăнк та тумасть, çаплах хăй вырăнĕнчех ларать-ха.

Виççĕмĕш кĕнеке çак кунсенче тухать. Тăваттăмĕшне эс киличчен туса çитересчĕ. Вара манăн та пĕрер уйăх çурра ăçта та пулсан кайса килесчĕ.

Надежда Ивановнана пысăк салам. Сывă пулăр. Çул ăнăçлă пултăр.

Ваçилей.

36. *1955 çулхи юпан 25-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Элекçей!

Тăваттăмĕшне кăлартăмăр — паллаш. Пĕр майлă пурăнкалатпăр, анчах эс çукки касать. В.А. Д[олгов] ăшталанать, йывăр килет ăна, шеремете. Часрах таврăн, сансăрăн йĕрке çитмест кунта.

Н. И-на пысăк салам. Иксĕре те ырлăх-сывлăх сунатăп.

Ваçилей.

P. S. Çыруна илтĕм. Рехмет.

В.

П.П. Хусанкай патне.

37. *1955 çулхи юпан 26-мĕшĕ, Шупашкар.*

Тăванăм-тантăшăм, салам!

Виççĕмĕш кĕнекемĕр тухрĕ — хапăл ту. Сана куç пек кĕтетпĕр, уяв тĕлнелле çитетĕн пуль. Нумаях пулмасть сирĕн пата кĕрсе тухрăмăр (Анна И[ванов]на, Альтук, эпĕ) — карчăк ĕхĕм те тумасть. Аннӳ пире иçĕм çырлипе хăналарĕ, хай — эсĕ Атнер менельник кунне янипе. Вера-ханăма куркалсах тăратăп: маттур, илемлĕ, чипер! Нонна-ханăм, калама та аван мар, кĕпер патĕнчи пульницара выртса тухрĕ: ача амакĕпе! Йăкăнат Молодов, Микита Романов юбилейĕсенче ташлăрăмăр. Çапла Шупкашкар хыпарĕсем: иртеççĕçке пирĕн ĕмĕрсем саванăçпа хурлăх хушшинче.

Пуху çинчен юриех çырмастăп, ун пирки сана нумай тата тĕрлĕ май пĕлтерчĕç пулĕ. Çакна кăна калам: тусусем ăслă, вăйлă, ĕмĕтлĕ — пирĕн çĕршыври ленинла чăнлăх пекех! Çавăнпа — пуранăçем пурнас килет. Тăван халăхшăн хур шăмми тытакан хур хурас çук.

Геннадие салам. Тăваттăмĕшне пĕр сăввине яратпăр. Гурий те, Асли те, Шупуççынни те, т.ыт.те тӳрре тухрĕç. Пит аван.

Аллăна чăмăртатăп.

Ваçлей.

P. S. Ярослав Шпортăна та ярса паратăп.

Кĕнекӳшĕн — тав. Ĕнер ун çинчен радиопа вырăсла пĕлтертĕмĕр. Диктор, витĕмлĕрех пулма, чăвашсене тивекен йĕркесене (Яковлев çинчен) ятарласах вуласа пачĕ.

В.А. Андреев патне.

38. *1955 çулхи чӳкĕн 11-мĕшĕ, Шупашкар.*

Пысăк салам сана, Ваçилей!

Ыйтнине ярса паратăп. Çапăнса тухсан ăна эс кунта калла çитер — тен, çитес номерсенче усă курăпăр. 4-мĕш №-ре Атăлăн «Ирхи тĕлпулу» ятлă миниатюри кайрĕ. Питĕ аванскер, пирĕн лирика пайне илем кӳретех.

Уявсене аван ирттертĕмĕр. Салам. Ыран театр С.В. Элкерĕн çĕнĕ пьесине лартать («18-мĕш çул») — премьера.

Мăшăрна пысăк салам. Ырлăхлă-сывлăхлă пулăр.

Ваçилей.

П.П. Хусанкай патне.

39. *1955 çулхи чӳкĕн 21-мĕшĕ, Шупашкар.*

Вирьялсем калашле, ман килес, Петĕр!

Пар аллуна, салам ватăла пĕлмен харсăр Шупашкартан.

Элекçей çитрĕ — чун уçăлсах кайрĕ.

Калюковпа Шаккур шăлĕсене шарт çыртнă. Кăткă упи мăртăхса çӳрени те хальхаççăн курăнмасть, ахăртнех, ăна арăмĕ сăнчăртах тытать пулмалла.

Шупашкарти чи пысăк хыпара эсĕ илтнĕ ĕнтĕ: сан пата касу ятăмăр терĕç.

Тĕрĕслĕх тени марафон чуппипех çывхарать — ай, куçăхтарас марччĕ!

Исаак çырни çапăнмасть-ха. Васкамаççĕ. Тĕрĕс тăваççĕ. Хахать тухнă тăрăх, тиркени тӳрре тухмалла теççĕ.

Эс кайнăранпа урăхран нимех те пулман пек. Шел, «Асран кайми» премьеринче пĕрле пулаймарăмăр, рецензине те пулсан вуласа пăх — ярса паратăп.

Пиняев ирçене кайрĕ. Унăн çуртне Элекçей Йăван валли сыхласшăн. Çырса яр-ха çав Пичура патне, ăна анлă Атăл кĕтет, Шупашкар шухăшне тархасшăн ан пăрахтăр, ху та пĕлетĕн, питĕ кирлĕ вăл кунта. Тĕрткеле, канăç ан пар ăна, Петĕр.

Çамрăксене салам.

Ваçлей.

И.Д. Кузнецов патне.

40. *1955 çулхи чӳкĕн 21-мĕшĕ, Шупашкар.*

Вăй патăр, Йăван-паттăр!

Çырăву çитрĕ. Бирма сăвви пырать пек, усă курасчĕ. Шухăшу, кăмăлу, ĕмĕтӳсем мĕнле — çырмастăн. Эрхип Ваçлейĕ патне çырнисенчен кăна сан çинчен кăлт-калт пĕлкелесе тăратăп.

Епле чăтатăн эсĕ! Хăвăнтан килмест пулсан, ним тăвайман енне, тур тӳсĕм патăрах сана! тейĕттĕм. Анлă Атăл пур çинче çав таçти-мурти Печора çинче пурăнатăн-çке!

Пирĕн Атăл пĕрре те тĕк тăмасть, ялан хумханасси вара ун — эккей, канăççăр чун! Чăн, хама эпĕ сăнчăрласах çырантан аяккарах тытатăп пулсан та, кунта пурăнма — Раççей (атте калашле...). Сан хыççăн темĕн те пĕр пулса иртрĕ. Тимахвине çак кунсенче вĕренме ячĕç. Ун вырăнĕнче Симун. Шупашкар ăна питĕ кăмăллать.

Петĕр пирки тĕр-тĕр пулса иртрĕ, анчах ĕç пĕтмеллипех пĕтмен-ха. Кун çинчен сана çырса пĕлтернĕ пуль. Каллех ĕлĕкхи шăй-шая çĕклеме пăхрĕç (литературăри шаккурсем тата калюковсем). Шăп вăл вăхăтра хальхи асли те, Элекçей те, курортраччĕ, вĕсем пулсан, ахăртнех, нимех те пулмĕччĕ-и? Ку ĕç çинчен пĕлместĕн пулсан тепрехинче тĕплĕн çырăп. Элекçей таврăнчĕ. Ваçлей те, Элекçей те сана кунта кӳрес шухăшпа пурăнаççĕ. Анчах Эрхип Ваçлейĕн шухăшĕ ĕмĕрне те çунатлă пулман. Вăл сана кунта материаллăх тĕлĕшĕнчен начартарах пулĕ тет. Кăптăрмăш чăваш каласать ун чĕлхипе! Хăваттир сана пулать. Астăватăн-и, Дм[итрий] Дан[илович] пурăнатчĕ, Ярославски урамĕнче. Вăл хваттер халь пушанчĕ, хăйне уйрăм йывăç çурт, пăртак ремонт тумалла, хамăр çурт пуличчен лайăхах пурăнма пулать. Элекçей çав çурта сан валли сыхлать. Дубровский рекомендацине куртăм — савăнтăм. Часрах пĕтересчĕ ку ĕçе. Çынсем, çынсем кирлĕ Шупашкара!

Сан халĕ пĕр шухăш анчах пулмалла, çав шухăш сана ир те, каç та канăç памалла мар, ыйхăсăр, аппетитсăр хăвармалла, вăл шухăш — Шупашкар!

Ачусене тата савнă мăшăрна салам кала. Нонна та, Анна пекех, выртса тухрĕ.

Ваçилей.

P. S. Хамăр тулли пурнăçпа пурăннине пĕлтерме сана пĕр касу яратăп. Вула, Павăл ĕçне ыран бюро пăхать. В. Гурие реабилитацилерĕç.

Эсĕ кăçал та таврăнмасан сана вара çĕнĕ хушамат — Пичура (Печора) Йăванĕ паратпăр.

Уйăп Мишши патне.

41. *1955 çулхи раштавăн 20-мĕшĕ, Шупашкар.*

Салам-аликкĕм, Мишша!

Тен, ку çыру сан пата ĕлкĕреймĕ те (эсĕ унта, Боткин патне, нумайлăхах кайман пуль-ха), çапах çырас, каламаллисем нумай, чăтма çук.

Кунта улшăнусем пулкаларĕç. Мирун Чăвашгиза куçрĕ. Ун вырăнне — Якур (Ефимов). Якур ĕçне Кăлкан тата эпĕ тукаласа пыратпăр. Пирĕн çинчех «Тăван Атăла» хатĕрлесси. Халĕ çак материалсемпе ларатпăр: Сатайăн «Летчикĕсем», Митта Петĕрĕн «Пăва таврашĕнче» (пьеса), Шавли сăввисен пĕр ярăмĕ, Ĕçхĕл очеркĕ, Денисов статйи, (Т.С. Кривов çинчен), Кузнецовăн статйи («Шурча таврашĕсем»

пирки) т.ыт.те. Эсё килсе çитсен кёнекере мён-мён пуласси çинчен татăклăн тёвё тăвăпăр. 1-мёш номере çёнё çулччен хатёрлесе парасчё. Пиелесе, пиллесе яма çитетён пулё тетёп. 4-мёш номер машинара. Пирён тата çутта вуламалла.

Шупашкар хыпарёсене пёлсе тăма паянхи хаçатран касса илнё информацилле пёлтерӳ яратăп. Хаçатра çуккисенчен: Асли тата (Г.М.) Титов партине таврăнчёç. Пирён Петёрён ёçё те ăнăçлăн вёçленчё. Мана тепёр пӳлём (ёлёкхине) тавăрса пачёç.

Часрах чёрёл. Пульницасем тăрăх çӳреме пирён халё вăхăт çук, «Тăван Атăла» сиктермесёр кăларса тăмалла. Пурте сывă пулăр. Савнă мăшăрна салам. Ырлăхлă-сывлăхлă таврăнасса кётетпёр.

Ваçилей.

P. S. (Г.) Ефимов сана салам ярать.

Т.И. Иванов-Таçук патне.

42. *1956 çулхи кăрлачăн 11-мёшё, Шупашкар.*

Салам, Таçук юлташ!

Пирён пата янă виçё сăввуна хаваслансах вуласа тухрăм. Сирён çырмаллах! «Талант» тата «Шухăш» сăввăра пичетлес пулать. Халех, вăхăта вăраха ямасăр, вăл сăвăсене тепёр хут пăхса тухăр, çитменнине çитерёр, ытлашшине катертёр. Çитменлёхсем — чи малтан техника енёпе. Çăмăллăн çăрхаланса юртакан ямб пырсан-пырсан пёр ухсахласа илет. Калăпăр:

Ман çывăх тусăм Мёкёте
Пёрре, кёмесёр ӳкёте,
Экзаменсем çывхарнă чух,
Вёренме пăрахрё, шухă чун.

Малтанхи виçё йёрке таса ямб, пушкинла янăрать. Тăваттăмёш йёрке ямб кăшăлне шăнăçмасть, саланса каять. Кун пеккисем тата та пур: тёслёх мар, тёслёх кирлё, çавăн мар — çавăн, орден мар — орден, камăн мар — камăн, пирён мар — пирён. «Вёренмен каччă — пит имшер» каллех ямба пăсать. Начар рифмăсем пур: лауреат, самант, ку яхăн — юлаймăн, качака — маччана, ёмёрте — хёпёртемен. Çак çитменлёхсене пётерёр. «Чăваш чёлхи» вырăнне «Чёвёл чёлхе» е мён те пулин урăххине калăр (унсăрăн тăван чёлхене тёртсе илнё пек тухать).

Хўрине татнă качака
Таки пек сикрĕ маччана —

тени сăвă мар.

«Шухăш» аван. Анчах каллех кунта та сăвă техникине уяман вырăнсем пур. «Тухăç çунать» ямбпа çырнă сăвва шăнăçмасть. (Астăвăр: Пушкинăн «Горит восток» пуплевĕнче икĕ сăмахĕ те ямблă виçепе.) Тухăç мар — тухăç, çамрăк мар — çамрăк, тăвăр мар — тăвăр. «Эрешлĕ» сăмах сăвăра вырăнсăр. «Пĕрле пĕрлешнĕ» тени чĕлхе тĕлĕшĕнчен килĕшӳсĕр.

«Редакцине» ятлă сăвва ытла шӳтлесе çырнă пек туйăнать, анчах унта та кирлĕ вырăнсем сахал мар. Малтанлăха «Талантпа» «Шухăша» пĕтерсе ярăр. Çырăр, тăрăшăр. Сирте пархатар пур.

Пысăк салампа *Митта Ваçлейĕ.*

Н. Петров патне.

43. *1956 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Николай Петров!

Кирек те мĕнле ĕçĕн те хăйĕн йĕрки пур. Ĕç йĕркине пĕлнине ăсталăх теççĕ. Сирĕн сăввăрсенче ăсталăх çук. Вĕренĕр. Шкул программинче поэзи ăслăлăхĕ çителĕклĕ вырăн йышăнать. Кунсăр пуçне, литература кружокĕ тăвăр, алăпа çырнă журнал кăларăр, пĕр-пĕринпе канашласа, хăвăр çырнисене юлташла тишкерĕр. Çырулăх ăсталăхне юлташсемпе пĕрле вĕренме лайăх.

Салампа *Митта Ваçлейĕ.*

Н. Перинов патне.

44. *1956, çулла пуçламăшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Перинов Николай!

«Çут уйăх тухсассăн» ятлă сăввăра вуласа тухрăм. Сăвă мĕн иккенне туятăр эсир, сăввăн техникине те чухлатăр. Анчах сăмаха епле те пулсан илемлĕрех калас тесе эсир хăш чухне логикăна кӳрентерме пăхатăр. Сăмахран, хура куçа тин çеç, уйăхлă каçпа усă курса, хире уçăлма чĕнеттĕр, унтан, хир çинчен манса кайса, сада йăхăрма пуçларăр.

Сан сăнасчĕ, тусăм,
Йĕпкĕн çĕмĕрт куçăм,
Каçăн илемне —

тени мĕскĕннĕн ӳпкелешсе калана пек илтĕнет. Савни тухмасть пулсан ăна хаваслăн йăхăракан сасăсем кирлĕ. «Ĕмĕр савнă чунăм» тесе калама ватăсем çеç тивĕçлĕ. *Каçĕ— шурăм пуçĕ, тусăм — чунăм* рифма мар. Сирĕн çырнисем тата та пулĕ. Ярса парăр, пăхса тухăпăр.

Сывă пулăр, пултарулла пурăнăр.

Саламп*а Митта Ваçлейĕ.*

А.В. Лукин патне.

45. *1956 çул пуçламăшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Аркадий Лукин!

Консультацине янă сăввăрсене вуласа тухрăмăр. Сирĕн малашне те çырас пулать, ĕç тухас пек туйăнать. «Кӳршĕ хĕрĕ» ятлă сăввăр та аванах, анчах ăна «Савни тума самай пике», «Эп те сисеп, савать чĕре» евĕрлĕ лӳппер пуплевсем чылаях пăсаççĕ. Поэзире самана сасси янăрарах патăр. Лирикăллă герой мĕн ĕмĕт-кăмăлпа пурăнни, мĕншĕн тăрăшни, мĕне савни, пурнан пурнăçа ахаль мар килни, хăйĕн обществăлла пĕлтерĕшне туйса тăни сирĕн лирикăллă сăввăрсенче сăнарлантăр. Схемăллăн çырса кайнă сăвă шухăша яраймасть, вулаканăн ăшĕнче хумханаллă туйăмсем çуратаймасть. Асран кăна мар, чунтан-чĕререн калама тăрăшăр, чи вирлĕ, чи вырăнлă сăмахсем суйласа илĕр. «Аслати кĕрлесен хар-хаяррăн» аван мар. «Хӳхĕм пухнă тулăх пурлăха» пуплевре «хӳхĕм» вырăнсăр.

Кăвак пурçăн лентă пек
Явăнса выртать мăн Атăл.
Ал çупса ташланă пек
Хумханать вăл çăтăл-çатăл.

Кун пек танлаштарусемпе эсир «мăн Атăлăн» ятне çеç яратăр — начар.

Пăшăлтатрĕ утнă чух
Ватă хурама —

кулăшла тухать.

Эп ларсаччĕ çума-çумăн
Пĕр хĕрпе плащ пĕркенсе —

сăпайлă мар.

«Мир» — ача-пăча хушшинчи лару-тăрăва пĕлтерекен сăмах мар, ун пĕлтерĕшĕ урăх.

«Пĕрре — темлерен», «терĕмĕр — çĕр ĕмĕр» рифмăсем вăйсăр.

Эсир çамрăксен канашлуне килмелле. Канашлу семинарийĕсенче çамрăксен произведенийĕсене конкретлăн сӳтсе явĕç. Эсир те хăвăр юратнă сăввăрсене хатĕр тытăр.

Пысăк салампа, Сире ыр сунса

Митта Ваçлейĕ.

А.Г. Канаш патне.

46. *1956 çул пуçламăшĕ, Шупашкар.*

Салам Альпăрта!

«Ялава» янă ярăмна вуласа тухрăм Темĕскер тăлланса, чăлханса, çыхланса пыраканни халĕ те сисĕнет-ха сăввусенче. Уçăлăх, ирĕклĕх чĕлĕхĕсем килĕшӳллĕн янăрани çитмест. Çăмăллăнрах, ансатрах, ахальтерех калаç. Илем çавăнта. Уйрăм сăмахсем кăна мар, сăмахсен майлашăвĕ, маттур ĕнерĕннĕ ансамбль пек, юрласа тăтăр. Шухăшна витĕмлĕрех, илемлĕрех каласа парас тесе, çĕр тĕрлĕ сăмах суйла, чи лайăх майлашу шыра. Ан васка, никам та сасартăк поэт пулман. Талант тени — ĕç, вĕренӳ, тăрăшу. Ан тив, вунă сăвă вырăнне пĕрре кăна пултăр, анчах çав пĕр сăвă «хĕрĕх те пĕр» илемпе ялтăраса тăтăр.

В.А. Долгов санăн афоризмна (этем чунлĕ инженерсем çинчен каланине) питĕ те юратрĕ. Хăрташсем çинчен калаçса çăвар тутине сая ан яр (ку сăмах манăн та, Долговăн та).

Халех çамрăк авторсен канашлăвĕ валли кĕске сăмах çырса яр. (Канашлу февралĕн 13-мĕшĕнче уçăлать.) Кун пирки Деферанпа килĕштер.

Якур Ефимов икĕ сăввуна, пĕр кунтах ырланисене, виççĕмĕш номере ярать. Ку тĕрĕс, — Якур юмах-сăмаха иккĕллĕ тăвакан йĕкĕт мар.

Ырлăх-сывлăх, иксĕлми пултарулăх сунатăп сана.

Митта Ваçлейĕ.

В.В. Иванов патне.

47. *1956 çул пуçламăшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Василий Васильевич!

Пирĕн ятпа янă япалусене вуласа тухрăм. Юмахушăн сана савăнсах саламлас пулать. Сюжечĕ интереслĕ, шухăшĕ аван, вуланасса — ярăнса çеç пырать. Çитменлĕхсене палăртас тĕлĕшпе çаксене каламалла. Конфликтсем ытла та çăмăллăн йӳнеçĕнсе пыраççĕ. Юмахра пулсассăн та, паттăрăн

кун-çулĕ ансат мар иккенне, вăл ăс тата кăмăл харсăрлăхне пула асапа, йывăрлăхсене çĕнтерсе пынине сăнласа парас пулать. Хăш-пĕр диалогсем сулчă, карăнса тăмаççĕ (6-мĕш стр.) «Çук мĕнле кăна тавар!» — чăвашла мар. «Пристане кӳмепеле çитсе тăчĕç çиçĕмле» — ытлашши. «Сирпĕнет часрах тухса», «Кăшкăрать кăна пĕри: Ку сан мар вĕт, ку хĕç ман!», «...хĕç пăрахса», «Кулянать Иван мăшри», «Çырма пек юхать чĕр юн», «Лешĕн çук та хуть йĕрри» — аван мар. «Иван — аван» темиçе хут рифмăланать. (Улăпсем — халăх юратнă паттăрсем!) Паттăра мухтантаратăн: «Парăр чаплă урхамах, çĕнтеретĕп эп хамах!» Çакна та калас килет. Рифмăсене сикчĕллĕн тунă пулсан тата ама рифмăсемпе ар рифмăсене ылмаштарса пынă пулсан — лайăхрахчĕ. Капла, пуçласа вĕçне çитиех, ар рифмăсем юнашаррăн янăраса пыни йăлăхтарма пăхать, тĕл-тĕл ахаль такмака тухса каять. Анчах ку çитменлĕхе (вăл чăнах та çитменлĕх пулсан!) халь сирме çук ĕнтĕ, ан тив — çаплипех юлтăр. Уйрăм кăлтăксене юса. Юмаха çырнăранпа вăхăт чылай иртнĕ, халь вăл ĕç хĕрĕвĕнчен сивĕннĕ ĕнтĕ: автор хăйĕн çитменлĕхĕсене хăех курма пултарать. Тепĕр хут юлташ пек (автор пек мар) вуласа тух, кăмăла кайман вырăнсене тӳрлет.

Çамрăк литераторсен канашлăвĕ февралĕн 13-мĕшĕнче пуçтарăнать. Райкомолпа калаçса татăл — кил. Обкомолăн списокне сан ятпа кӳртме ĕлкĕреймерĕмĕр. Райкомол тăрăшсан килме пултаратăн. Ытти сăввусем пирки канашлу семинарĕсенче калаçăпăр.

Ырлăхлă-сывлăхлă пул, пултаруллă пурăн.

Салампа *Митта Ваçлейĕ.*

В.П. Орлов патне.

48. *1956 çул пуçламăшĕ, Шупашкар.*

Хаклă юлташ Василий Орлов!

Сирĕн икĕ калавăр Уйăп Мишши патĕнче, — вĕсем пирки çитес кунсенчех çырса пĕлтерĕпĕр. Сăввăрсене пăхса тухрăм. Туса çитермен. Тĕл-тĕл вăйлă сăмахсем пур, анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, техника тĕлĕшпе — сулчă, шухăшсем тĕлĕшпе оригиналлăх сахал. «Шавларĕ пуль сан тинĕс пек талант» — аван мар. «Мулпа суя — тĕнченĕн çур тивлечĕ» — ăнланмалла мар. «Эс перуна çап — ут хĕç пек хăйранă касса татмашкăн пусмăр сăнчăрне» — ытлашширех.

Икĕ сăввăра та ямбпа çырнă, анчах ку виçене пăснă вырăнсем те сахал мар, сăвă пырсан-пырсан пĕр такăнса ӳкет.

Рифмăсене хисеплеместĕр: салхуллăн — пултăр, хуйхăрса — тутăрпа рифма мар.

Сирĕн сăввăрсенче вулакана шухăша яраканни — подтекст текенни сахал. Çак кунсенче Мускавра çамрăк çыракансен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу материалĕсем «Лит. газетра». Вулăр. Ăна илĕр. Вĕсем сирĕншĕн питĕ те усăллă.

Пысăк салампа *Митта Ваçлейĕ.*

Е. Теветкел патне.

49. *1956 çул пуçламăшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Теветкел!

Сана пурсăмăртан та салам. Куçару ĕçĕ пирки Илпекпе калаçса пăхрăм, — вăл халĕ Чăвашиздатра пысăк редактор. «Кăçал валли çук, килес çул валли пулма пултарать», — терĕ Илпек. Вăл сана астăвать. Эсĕ ун валли кăтартмалăх мĕн те пулсан куçарса яр: калăпăр, Пушкин прозинчен пĕр-пĕр сыпăк (пĕрер страница), вара ĕç шанчăклăрах пулма пултарать.

Хам енчен эпĕ сана очерксем çырма сĕнĕттĕм. Хаçатсем валли те, журналсене те хальхи пурнăç çинчен çырнă витĕмлĕ очерксем питех те кирлĕ. Эсĕ чаплă колхозра пурăнатăн, материал унта нумай, суйласа илме çеç пĕл, — тытăнха пĕр си. Халь ĕнтĕ пирĕн çулĕсем те çамрăках мар, пĕтĕмĕшпе прозăна куçсан та пăсмасть пулĕ. Ку жанрăн акипе тарăнрах яма пулать. «Ман чĕре» сăввуна вуласа тухрăм, ăна мана Талвир пачĕ. Темĕскер, чуна кайса тивекенни сахалрах пек, халь мар, 30-мĕш çулсенче çыраттăмăр ун пеккисене. Вăл тапхăрта риторики те пăсман, техника çитменлĕхĕсем те ытлашши тиркештермен, подтекст текенни çинчен те ун чух калаçсах каймастăмăр. Халь йăлтах урăхла. Чăваш поэзийĕ таçта çити кашласа ўссе кайнă, пăхсан — çĕлĕк ўкмелле. Вуласа тух-ха эсĕ пĕр Хусанкая кăна!

Мĕн ĕçлетĕн? Мĕнле хаçат-журнал çырăнса илетĕн? Кулленех вĕренсе пырассине ан ман. Унсăрăн «ĕш чăкми» теççĕ тутарсем. Мускавра нумай пулмасть çамрăксен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Ăна илсе вула-ха, çав канашлăвăн материалĕсене («Лит. газета» тăрăх), — питĕ усăллă. Пирĕн республикăри çамрăк литераторсен канашлăвĕ февралĕн çурринче пулать, унта çамрăксене анчах чĕнеççĕ. Çулла Шупашкара килсе каятăн пулĕ-ха. Унччен санран очерксем, калавсем кĕтетĕп. Тўрех хам пата ярса пар.

Ырлăх-сывлăх, иксĕлми пултарулăх сунатăп.

Митта Ваçлейĕ.

П. Степанов патне.

50. *1956 çул, Шупашкар.*

Хисеплĕ Степанов Петр!

Сирĕн «Елка» ятлă сăввăр пичете юрăхлă мар. Вĕренĕр. Художествăллă произведенисем çырма пысăк культура кирлĕ. Поэзи ăсталăхĕ çинчен шкул программинче пур. Кунсăр пуçне, шкулта литература кружокĕ тăвăр, алăпа çырнă журнал кăларăр. Литература ĕçĕ пысăк ăслайлă, ăна тăрăшса вĕренмелле.

Митта Ваçлейĕ.

Ямкин патне.

51. *1956 çул, Шупашкар.*

Ямкин юлташ!

Ĕçлĕ вырăнсене пули-пулми çырусем çырас пулмасть. Конвертсем тата открыткăсем хăвăр патăртах илме пултаратăр, çавăнпа та 3 тенкĕ укçăра ку çырупа каялла яратпăр.

Сăввăрсем пулсан — ярса парăр, анчах вĕсен пахалăхĕ тĕлĕшпе малтанах иккĕленмелле, мĕншĕн тесен çырăвăрсене ытла та хут пĕлменле çыратăр. Чĕлхен тути-масине сыхлайман çын сăвă çырма пултараймасть.

Саламп*а Митта Ваçлейĕ.*

Урзай патне.

52. *1956 çул, Шупашкар.*

Салам сире, Урзай юлташ!

Пĕр сăввăра вуланипех сирĕн пултарулăхăр çинчен каласма хĕн. Пур пек ĕçĕрсене ярса парăр. «Хĕллехи ир» пулсах çитеймен, анчах тĕнче çине эсир художник куçĕпе пăхни ку сăвăра палăрать. «Пас тытнă йăмра кĕмĕлпеле пĕркеннĕ» — тĕрĕсех мар, кĕмĕл — металл, унпа пĕркенме çук. «Шап-шур юр» каламасан та *шурă*. «Тăрап постра» мар. «Тăратăп постра». *Йăмрана — юра, пĕччен — ир те* — рифма мар. Рифмăллă сăвва вĕçне çитиех рифмăлас пулать.

Сире сума суса *Митта Ваçлейĕ.*

Андреев патне.

53. *1956 çул, Шупашкар.*

Юлташ Андреев!

Сăввăрсене пăхса тухрăмăр. Рифмăсем те пур вĕçĕнче, ритм тени те чиперрĕн сасăланса пырать, анчах чи-чи кирли — чуна кайса тивекенни сахалрах. Сирĕн сăввăрсем риторикăллă — рифмăланă, ритмланă лозунгсем евĕрлĕ. Конкретлă сăнлăхсем çук. Поэт-художник хăй курăмне образсем урлă уçать, пурнан пурнăçа, этем шухăш-кăмăлне поэзи меслечĕсемпе сăнласа парать. Сирĕн çав меслетсене пĕлес пулать. Малашне те çырасах тетĕр пулсан литература теорине тĕплĕн вĕренĕр, пурнăçа лайăх сăнăр.

Салампа *Митта Ваçлейĕ.*

Кузьмин патне.

54. *1956 çул, Шупашкар.*

Кузьмин юлташ!

«Саваланчăк» тата «Чипполино» пирки ыйтса янă çырăвăра илтĕмĕр. «Саваланчăк» пьесăпа Колхоз театрĕ интересленчĕ, — мĕнле, ку тĕлĕшпе ĕç татăлнă-и Сирĕн? Пире пьесăн театр варианчĕ юрарах парĕччĕ.

«Чипполино» çинчен çакна калас пулать. Чи малтан эпир оригиналлă япаласене яратпăр. Альманахăн виççĕмĕш, тăваттăмĕш тата килес çулхи пĕрремĕш кĕнекисемшĕн чăваш авторĕсем çырнă пьесăсем пур. «Тăван Атăл» çитес çул улттă тухмалла. Çакна пула малашнехи вăхăтра, тен, куçарнă япаласем те ал çыру хальлĕн выртмĕç.

Салампа *«Тăван Атăл» секретарĕ.*

П.П. Хусанкай патне (55—58).

55. *1956 çулхи пушăн 1-мĕшĕ, Шупашкар.*

Петĕр, тăван! Салам-аликкĕм!

Çырăву çитрĕ. Ăшă сăмахусемшĕн — рехмет. Юлашки сăвву пирки кунта тав пырать: эпир те ярасшăн, коммунизм ялавĕсем те. Вара çакăн пек тĕв турăмăр: вĕсен те ямалла, пирĕн те!

Халь кăна — Морсков патĕнчен. Канаш кĕтессине вăл пăртак анлăрах тăвасшăн. Капла — пĕр евĕртерех сăвăсем

тет. Ялан пĕр сăмах юрату çинчен, Канашшăн ку характерлă-ши? тет. Тата тепĕр ик сăвă, урăх темăллисенчен, парас терĕмĕр. Миккулай Евстафьев çак кунсенче «Сов[етская] Чувашине» калла таврăнать, çавна тытмалла пулать пулĕ. Морсков кĕтесе портретпах парасшăн, вăл «Ялавра» тухнине кăмăллать. Сан шухăшу? Ман патăмра поэтăн тепĕр сăн ўкерчĕкĕ те пур — ларса тăраканни. Çакă эс пуçарнă шухăш çывăх кунсенчех пурнăçланма пултарать, мĕншĕн тесен хаçат халь съезд материалĕсенчен пушанса пырать ĕнтĕ.

Йăван Тимрясовпа пĕр пўлĕмре ларатпăр. Сантăр Хутар патне тухса тарчĕ — пўлĕмре, калăм каç тухатмăшсене хăвалама кантăр шăмми çунтарнă пек, тĕтĕм йăсăрланать. Эп аптăрамастăп, ман — иммунитет. Пиллĕкмĕш кун икĕ çăварпа (Гурий те кунта, хăнара) мăкăрлантараççĕ — хăнк та тумастăп. Ĕнер чăтаймарăм вара — табак тĕтĕмне мар, «акăш» шăрш-маршне. Йăван ăна халь тишкерсе вулать, ларсан-ларсан пĕр ахăрса ярать, мана пусмăрласах такмакласа парать. Тўсеймерĕм — упа шăрш-маршĕсем тасаличчен — Ваçлей Архипăч (Долгов) патне куçрăм... Мĕскерле япала ку? Йăван — хырăмшăн çырнă «палан кукли» тет (унта палан кукăли çинчен — темĕн чул иккен), эпĕ — тăван чĕлхене хирĕç тунă черетлĕ диверси тетĕп.

Хăш чухне пирте çакнашкал мыскарасем те пулкалаççĕ: пĕрре — юри тусан апла пулас çук — пирĕн пўлĕмре пиллĕкĕн пĕр çĕре пухăннă: Йăванпа эпĕ, Г[урий Титов], В[асилий] И[ванович Краснов-Асли] тата [В.В.] Тюмеров старик. Çакна пиртен пĕри асăрхаса илчĕ те: «Ну, — терĕ, — баланда час пулать-и паян, курссак пит выçрĕ-çке», — терĕ. Паллах, пурте ахăлтатса кулса ятăмăр.

«Ылханлă йăх» ăнăçлă пуçланчĕ. Вера-ханум пассажĕсене итлесе савăнтăм. Вăл унта — вăйă хĕрĕ. Ну — пхай! Пхай! Йăванран салам. Ноннăран та.

Çырнă пеккине ярсах тăр. Хам халĕ Джалильпе ларатăп. Вăйлă!

Ваçлей.

56. *1956 çулхи пушăн 8-мĕшĕ, Шупашкар.*

Салам, ачамăр та маттур Петĕр пур!

Рехмет — кăмăл турăн, мана кăна мар, пĕтĕм çĕршыва! Ăш-чикĕм хаваслăхпа, мăнаçлăхпа тулчĕ — саншăн, чăвашшăн, пуласлăхăмăршăн.

Тĕрĕс! Çитет ĕнтĕ, именекен илемлĕ тесе тута çине тутăр

вёçё тытса тăни. Пире Атăлçи иудейсем теççё пулсан ку ята тӳрре кăларас пулать. Пирён именӳпе вёсен ёненӳне (хăйсене хăйсем ёненнине) сиплештерсен, ман шухăшпа, тёнчене чыс кӳрекен вырăс сăпайлăхё евёр çёнё пахалăх çуралмалла. Мускавра пурăнни сан сая каймасть — çавă тем пекех савăнтарать.

Кунта çённи, иртнё çыру хыççăн, нимех те çук-ха. Ёнер парти вёренёвё енёпе пухăнса лартăмăр. Ертсе пыракани — Йăван Тимрясов. Заняти питё интереслё иртрё. Парти решенисене кунти кулленхи задачăсемпе çыхăнтарса вёренетпёр.

«Ленин çулёпе» çак кунсенче «Ком[мунизм] ялавёнче» тухрё — илтён пуль. Анах «Т[ăван] Атăлăн» иккёмёш кёнекине ятăмăр (иккёмёш кёнеке унпа уçăлать). Союзра майёпен йёрке çирёпленсе пырать, ёлёкхи шăй-шайсем тамалчёç.

Поэзи секцийён отчетлă пухăвё пулчё. Малашне ёçлесе пыма Алкана тата мана хушрёç.

«Весеннее» кăмăла кайрё. Нонна-ханумпа иксёмёр вырăн çине ыталанса ларса итлерёмёр.

Ну, çырсах тăр. Пхай, пхай!

Ваçлей.

P.S. Салам Йăванран, Элекçейрен, Давыдовран.

57. *1956 çулхи пушăн 29-мёшё, Шупашкар.*

Петёрсен Петёрё!

Эс те çыраймарăн, эп те çыраймарăм. Пёр-пёрин çине кăмăлсăр пулмалли çук: пуçма пуç!

Пёрремёш кёнекене ярса параймарăм — типографи чăрмавёпе ыран-тепёр кун тин тухать. Иккёмёш кёнекене авторласа ларатăп. Пёркун каланă пек, вăл санăн сăввупа уçăлать («Ленин çулёпе»).

Шупашкар пёççе çапа тăрать: ЦК çыруне вулаççё. Пире, ёлёкех пăртак пёлкеленёскерсене, ытлашши тёлёнмелли нимех те çук пек. Çакна кăна калас пулать: ку куна кётни! ку куна кётни! Тёнчери мёнпур турăсене пётерсен те, Чăнлăх туррине пётерме çук иккен!

Виçём кун писательсен аслă пухăвё пулса иртрё: литература çулён итогёсем. Иртнё çулшăн юман кăшăлне пёр сасăпа Алкана патăмăр («Хамăр ялсемшён»). Пуху аван иртрё. Талвир — Долгов алли тёрёс те сулмаклă иккенни тепёр хут палăрчё. Тимрясов, Гурий, Вёркёч тата ыт. те, тур çавăрнисем, ахăртнех, сăмах илемёпе тата витёмёпе пурин-

Илпек Микулайĕ, Митта Ваçлейĕ, Нонна Еремеева-Митта, Петĕр Хусанкай, Вера Кузьмина, И.Д.Кузнецовпа мăшăрĕ. В.Кузьмина фотоўкерчĕкĕ. 1957 çулхи çу уйăхĕ.

Краснов-Кĕçĕннипе Митта Ваçлейĕ (сулахайран 2-3-мĕшĕсем) Аслă Арапуçĕнчи çынсем хушшинче. 1957 çулхи çĕртме уйăхĕ.

чен те ирттерчăç пулмалла. Ку япала, паллах, хăшне-пĕрне кăмăллах та пулмарĕ: Шаккурпа Калюков бардакне вĕреннĕскерсем, çырулăх килĕнче тирпей килсех пынинчен хăраççĕ.

Сывă пул. Мускав хыпарĕсене пĕлтерсех тăр. Ноннăран салам. Унпа эпир — çĕнĕ çынсем пек. Вера-ханума хальхаççăн курман.

Ваçлей.

P. S. Кӳршĕре хупă пуху пырать. Уйăппа Ĕçхĕл çинчен кĕрлени илтĕнет.

В.

58. *1956 çулхи акан 17-мĕшĕ, Шупашкар.*

Петĕр тăвана салам

Верук-ханум таврăнчĕ, ăшă сăмахусем çитрĕç. Ĕрехмет. Вырсарни кун юлашки çыруна илтĕм. Тепĕр хут ĕрехмет!

Сăввусем — шедевр. Уйрăмах — «Ывăç тăпри». Вуланă чух çан-çурăм сӳлетсе тăрать. Элекçее кăтартрăм — мухтать. Ирĕкӳ пулсан — çырса пĕлтер — ку сăвăсене виççĕмĕш кĕнекене вырнаçтарассишĕн çапăçатăп. Эпиграммăсене эпĕ те, ху каланă пекех, хальлĕхе «ял сăмахĕ» хальлĕн çӳреттересшĕнччĕ. Анчах Ваçлей (В[асилий] А[рхипович] Д[олгов]) яхăнне те ямасть: çапмаллах тет! — Тупата, каçса кайрĕ, хăй валли çырса илчĕ. Элекçей те хирĕç мар. Сантăр Кăлканпа калаçса пăхман-ха, анчах вăл та ырлас пирки сĕмленӳ çук. Элле тем тумалла ĕнтĕ? Пуçлăхсене хирĕç пыраймăн çав — çаптарасах пулать пулмалла.

«Румынсем» хушшинче хускалу çук-ха. Хăçан тухса каясси паллă мар. Ку ыйтупа ятарласах Элекçейпе калаçрăм.

Шупашкарта халĕ те Атăл тапранман-ха, 14 паçăрах çапнă. Упапа Убиха та тăван йĕннине таврăнчĕç, — çуркунне пулатех пуль, тем чул тăхтаса тăрсан та.

Тавтапуç ман пирки чăрманса çӳренĕшĕн. Анчах тӳрех калас пулать: кăçал Мускава пыраймастăп. Никĕс çук. Малтан пăртакçă никĕс çавăрас, вара шухăшлама пулать.

Йăванăн энергийĕ савăнтарать. Куçăхтарас марччĕ.

Салам сана пурсăмăртан та. Уйрăмах Ултутти-Альтук аппаран, вăл халь ман çумра «Советская Чувашия» валли асаилӳ çырса ларать. (В.И.Ленина курни çинчен.) Ырлăха мар пулĕ — шăп çырса пĕтерес чух калемре чернил пĕтрĕ, урăххипе вĕçлетĕп.

Ваçлей.

Курман пулсан, тархасшăн, «Путешествие по Аргентине» кайса кур.

В.

И.П. Павлов патне.

59. *1956 çулхи çăвăн 22-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хисеплĕ Иван Павлович!

Сирĕн сăвăлла çырнă калавăра вуласа тухрăмăр. Ахăртнех, сăвă ĕçне эсир тинтерех кăна пуçаннă пулмалла: вĕренни, пĕлни, пĕр сăмахпа каласан — ăсталăх çитеймест.

Сирĕн калавăн хапи пысăк — 2000 йĕркене яхăн, анчах çак «пысăклăхра» пурнăç ытла та пĕчĕккĕн сăнарланнă. Хĕрпе кăччă юратăвĕ витĕр пурнăç курăнмасть. Астăвăр-ха пирĕн ытарма çук «Нарспине». Пысăк та мар поэмăра Константин Иванов ĕлĕкхи чăвашсен пурнан пурнăçне ĕмĕрне тĕс кайми сăнарласа панă. Нарспипе Сетнер юратăвĕ, халăх кун-çулĕн варĕнче ўтленсе, халăх телейĕпе, хурлăх-савăнăçĕпе çыхăнса тăрать. Саманине кура икĕ çамрăк юратăвĕ трагедипе пĕтет. Çакăн çинчен автор питĕ те ĕнентермелле сăнласа парать, эпир вара чăн-чăн юратăвăн шăпи ĕлĕк урăхла та пулма пултарайман тетпĕр. Икĕ вăй куратпăр эпир «Нарспире» сăнарланнă сăпатсем урлă, пĕри — Нарспипе Сетнер; ку вăй мал ĕмĕтлĕ вăй, вăл этем тивĕçлĕхĕшĕн, этем чысĕшĕн, çынсене тĕнчере илемлĕ те пархатарлă пурнăç туса парассишĕн кĕрешет, çак кĕрешўре, çиеле тухаймасть пулсан та, хăйĕн чун хавалĕпе, ĕмĕчĕ-кăмăлĕпе ытти çынсемшĕн малашне кĕрешме тĕслĕх пулса тăрать. Кĕскен каласан, Нарспипе Сетнер урлă Иванов ĕлĕкхи чăвашсен мал ĕмĕтне сăнарласа панă. Тепĕр вăй — Михетерпе Тăхтаман. Çакă кутăн, чăхăмçă, çăткăн çынсем ĕлĕкхи чăвашсен тĕттĕм тĕнчине сăнарласа тăраççĕ. Вĕсем вăйлă, анчах этеме юрăхлă мар, вĕсем пуласлăхра пулмалла мар, пусмăр тĕнчипе пĕрле тўнсе каймалла. Кашни ĕмĕтлĕ çын — Сетнерсем май, Михетерсене хирĕç. Хăйĕн илемĕпе килентернисĕр пуçне, çакăн пек ырă шухăша ярать «Нарспи» поэма.

Сирĕн калавăр урлă эпир ĕлĕкхи саманан паллă енĕсене курмастпăр, сирĕн Курпат хуçа та, Маруç та, Мишша та пурнăçлă типсем мар. Вĕсем пурнăç сĕткенĕпе сăнарланман, картинланман, вĕсен сăнĕ-сăпачĕ çук, сирĕн калавра вĕсем çинчен ахаль çеç каласа кайнă.

Сăвă техники енчен илсен, эсир калавăра ялан пĕр саспа ĕнерлесе тăракан çичĕ саскартлă такмакпа çырнă. «Нарспине» те çичĕ саскартлă сăвăпах çырнă. Анчах ун сăвви авторăн çитмĕл те çичĕ илемпе вылянса тăракан шухăшне пула кĕввине (интонацине) улăштарсах тăрать: е юмах пек юхать, е тăрна куç пек тăрă çăл шывĕ евĕр шăнкăртатать, е хура вăрман пек кашлать. Сирĕн сăввăр ялан пĕр саслă.

Ĕçлĕр. Тăрăшăр. Ĕçлесен — ĕç тухать. Сирĕн сăввăрта та поэзи илемĕпе сасартăк çуталса каякан вырăнсем пур, анчах ун пеккисем хальлĕхе сахал-ха. Халăх юрри-сăввисенчен сăнарлăн калаçма-çырма вĕренĕр. Халăх творчествине лайăх пĕлнĕ поэтсем нихăçан илемне çухатман произведенисем çырнă (М. Федоров, К. Иванов, Н. Шелепи т.ыт.те). Хальхи поэтсем те: С.В.Элкер, П. Хусанкай, А. Алка, С. Шавли халăх пултарулăхĕпе ăнăçлăн усă кураççĕ. Малтанлăха пĕчĕкрех япаласем çырăр. Поэзи вăл — илемлĕн ĕнерĕннĕ чĕлхе. Çитти çитнĕ сăвăра пĕр сăмах ытлашши пулмалла мар, унсăрăн калас шухăш витĕмлĕ, вырнаçуллă пулмасть. Пĕчĕкрех япаласене (юрăсене, сăвăсене) кирлĕ пек тума вĕренсе çитсен вара поэмăсем çине куçма пулать.

Сывă пулăр, пултаруллă пурăнăр.

Сире ырă сунакан *Митта Ваçлейĕ.*

Е.Я. Орлова патне.

60. *1956 çулхи çĕртмен 15-мĕшĕ, Шупашкар.*

Аппа!

Кайрăн та — мантăн. Сансăрăн Шупашкар кичем. Часрах таврăн, пире «Алтюкиада» кĕтет.

Ыран, шăмат кун, Йăвана чыслатпăр. Шел, Эсĕ пулаймастăн. Телеграмму çитрĕ — юбиляра пит савăнтарчĕ. «Çыр, — терĕ мана Йăван, — питĕ пăшăрханатăп — Альтук ĕлкĕреймест», — терĕ. Петĕр те, ахăртнех, çитеймест пулмалла. Унран та халавлă телеграмма пур.

Асаилĕве йĕп çăрти витĕр кăларчĕç. Хуçа (ĕмпичче) хăй вуларĕ. Вырăсла куçарттарасшăн. Аслă редактор Д[аниил] С[еменович Эльмен] ятне хуратнăччĕ, ĕмпичче калла тутарчĕ. Вуланă чух астăвăн — пăртак мăкатнă вырăнсем пур: [А.] Кăлкан алли.

Ноннăпа иксĕмĕр сана ырлăх-сывлăх сунатпăр, çулу ăнăçлă пултăр тесе кĕлтăватпăр. Йăванран салам.

Ваçилей.

И. Д. Кузнецов патне.

61. *1956 çулхи çĕртмен 16-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Иван Данилович!

Кăмăлна йывăр ан ил, шел, пыраймастăп: иккĕмĕш кун чирлĕ. Мĕн калам сана çак халавлă кун, юлташăм, тантăшăм, ĕçтешĕм!

Тӳрре кăларар — хамăр ыррăн-сыввăн таврăннине тӳрре кăларар! Халăх умĕнче, парти умĕнче.

Тата аллă çул пурăнсан та — пире ватăлма юрамасть!

Митта Ваçлейĕ.

В.С. Семенов патне.

62. *1956 çулхи авăнăн 1-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хисеплĕ Василий Семенович!

Шел, Паснапуçне çитсе те — Сирĕнпе ларса калаçма тĕл килмерĕ. Çапла ĕнтĕ вăл: тунсăхласа çитнĕ чунпа тăвансен тыткăнне тексен ĕç çинчен йăлтах манса каятăн.

Мана Паснапуç «пантеонĕ» — Сирĕн пархатарлă ĕçĕр интереслентерет. Унта эпир çул май кĕрсе тухрăмăр. Чăнчăн канăçлăх вырăнĕ. Çут çанталăк çитĕнтернĕ йывăç пахчи. Ял хăйĕн аслашшĕсен тата вăрçăра вилнĕ ывăлĕсен ячĕпе лартнă юман палăксем. Ваттисене çурта çутса асăнмалли, шухăша кайса тăмалли таса вырăн — алтарь тейĕпĕр. Питĕ те кăмăла кайрĕ. Çакна культура теççĕ. Пысăк культура. Сирĕн ырă ĕçĕр çинчен, сывă пулсан, эпĕ çырса пĕлтересшĕн.

Палăк çинчи çырусене эпĕ астуса юлма тăрăшрăм, анчах çырса илеймерĕм. Май килсен, вăхăта вăраха ямасăр, тархасшăн, мана ак çакă ыйтусем çине ответлĕр:

1. Паснапуç Шупашкар уесĕнчи хăш-хăш ялсенчен куçнă?

2. Юлашки вăрçăран миçе çын таврăнман? Вăл вăхăтра ялта миçе кил, миçе çын пулнă?

Ыттисене — ял хăçан пуçланса кайнине те, ăна камсем-камсем пуçласа янине те астăватăп.

Сире ырă сунса, кăмăлăршăн малтанах тав туса, ку çыруран юлать

Митта Ваçлейĕ.

М.И.Ильин патне.

63. *1956 çулхи авăнăн 6-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Михаил Ильич!

Чăваш çĕршывĕнчен Сире пысăк салам. Çырăвăр çитрĕ. Евдокия Яковлевна Орлова ырлăхлă-сывлăхлă пурăнать. Парти енĕпе пенси илет. Ватăласшăн мар. Чăваш çамрăкĕсене пичет урлă та, радио урлă та хĕрӳллĕ сăмахсемпе хавхалантарса тăрать.

Сирĕн çырăвăра ăна патăмăр. Адресне сире хăй пĕлтерĕ.

Хыпарлăр пире: сирĕн патăрта чăвашсем татах пур-и? Шупашкар хаçат-журналĕсене вуласах тăраççĕ-и? Унти пурнăç тата чăвашсем çинчен хăвăр ятăрпа пĕрер очерк çырса яма вăхăт тупаймăр-и?

Тепĕр хут салам Сире.

«Тăван Атăл» редакторĕ *Митта Ваçлейĕ.*

P. S. «Тăван Атăлта» çапăннă «Ленина курни» ятлă очерка Е.Я. Орлова Писательсен союзĕнче каласа панă тăрăх çырнă, çавăнпа хыçалта «Митта Ваçлейĕ çырса илнĕ» тенĕ. Митта Ваçлейĕ çав пухура секретарь пулнă.

Митта Ваçлейĕ.

М.Д. Михайлов патне.

64. *1956 çулхи авăнăн 5-мĕшĕ, Шупашкар.*

Дорогой Максим Дормидонтович!

Русское спасибо Вам и чувашское тавтапусь за Ваш прекрасный и содержательный концерт.

«Песню о павших героях» в Вашем исполнении нельзя слушать без слез. Какая скорбь! Какое мужество! Впечатление такое, будто вместе с Вами пел вчера весь наш народ.

Открылось небо надо мною,
Я слушал пламенный...

Чудесен Ваш Даргомыжский, русские народные песни.

Максим Дормидонтович! Как бы нам хотелось услышать в Вашем исполнении лучшие песни чувашского народа. Наш народ любит Вас и гордится Вами. Есть такая песня — «Асран кайми», застольная, чувашская. Она бы в Ваших устах зазвучала по-настоящему, — так много силы и мудрости в этой песне. Подошла бы Вам шуточная — «Ух-ах-ах!» и, полная лирической печали, мужественная «Çăлтăр витĕр» (рекрутская).

Порадуйте нас, Максим Дормидонтович! Чувашские композиторы и музыканты (Васильев И.В., Лукин, Хирбю, Лебедев) должны помочь Вам в этом благородном деле. Обратитесь, пожалуйста, к ним, а то, весьма возможно, они сами и не догадываются.

Салам и многие лета Вам, великий наш земляк. Савăнатпăр, Сирĕн пек çынсене çуратнă пулсан Чăваш çĕршывĕ хĕсĕр мар! (Значит — не бесплодна Земля чуваш(ей), коль она породила таких сыновей.)

Учитель *В.Е.Исмуков.*

А.Г. Канаш патне.

65. *1956 çулхи авăнăн 22-мĕшĕ, Шупашкар.*

Салам-аликкĕм, Али паттăр!

Каçар, ку хушăра сан пата çыраймарăм. Пăла тăрăх — хам çуралнă, ўснĕ, çамрăклăха ирттернĕ çĕрсенче çўресе кулленхи хистевлĕ, ырана хăварма юраман ĕçсене те манса кайнă. Тăван, юлташ, пĕлĕш-тантăшсем патне çырасси вăл яланах паян тумалли хистевлĕ ĕç пулмалла. Пĕр-пĕрин сывлăшне пĕлмесĕр пурăнма йывăр тĕнчере.

Эсĕ пĕркунах ыйтни халĕ те ман пуç çинче-ха. Епле те пулсан майлаштарса ярăп. «Виçĕ сăввупа» усă куратпăр. Сассу уçăлсах, тĕрекленсех, металлансах пырать. Сăввăн ĕнерĕвĕ, мусăкĕ, кĕвви, рифмăсем тата сăвва тăвакан ытти атрибутсем те пур ĕнтĕ халь сан. Малашне сăнлас, сăпатлас, картинлас ен çине тимлĕрех пăхасчĕ. Сăмах-сасăсем кăна çителĕксĕр, тата сăмах-сăрăсем кирлĕ.

«Тинĕс! Тинĕсрен» малтанхи пилĕк строфи тата юлашки пĕр строфи лайăх — каять. Варри — калаçусем — кĕвве килнĕ япала мар. Калаçу сăвăра калаçу пулмалла, санăн сăввунта — такмаклу. Калаçури интонацисем, сас чĕлĕхĕсем, сăмах çаврăнăшĕсем ытла та такмак-сăвăлла. Сăвăлла калаçтарма пулать, — анчах ахаль, ансат, çыпăçуллă, кĕрнеклĕ, естественно — пурнăçри пек кирлĕ. Кунта сан сцена çине тухнă «артистла» такмакланни сисĕнет.

Сăввусене виççĕшне те «Çамрăк коммуниста» паратăп. Актуаллă япаласем, хальтерех усă курсан лайăхрах. Пурис Тихоновпа калаçса татăлтăм.

Ильин — юлташу Виталий — сан çинчен ытарма çук очерк çырса янă. Вăл — художник. Саламла ăна. Литература ĕçне пикенсех пикенмесен Виталий пысăк йăнăш тăвĕ, айăпа кĕрĕ... Вăл очеркне те «Çамрăк коммуниста» ярасшăн. Ытах та усă курмасан хамăр яратпăр.

Паян Элекçейпе (Талвир) сан çинчен калаçрăмăр. Вăл сана Союза илесшĕн.

Тухас кĕнекене халех хатĕрлеме пуçла. Ан тив, пысăк мар пултăр, пĕр 15—20 сăвă тейĕпĕр. Кĕнекў çитес çулшăн планра пур. Чи-чи хăвăн кăмăла кайнисене, ыратса-юратса, чун тарĕпе çырнисене пуçтар. Василий Иванчпа, ху тенĕ тус-тантăшусемпе кашни йĕркине çĕнĕрен виçсе-касса тух. Пулсан — пултăр!

Шанатăп.

Куртăн-и, «Комс[омольская] правда» мĕн çырать сан çинчен!

Ку — пуçламăшĕ кăна-ха. Ырă ĕç, ырă кăмăл пархатарлă çĕршывра нихçан та сая каймасть.

Влаççи пиччӳне (Паймена) манран салам çыр.

Тата та паттăр пул.

Аннӳне, аппу-йăмăкусене салам.

Ваçилей.

P. S. «Кăмăлтан» тепĕр икĕ уйăхсăр тухас çук — чăрмантараççĕ. Прозăпа та çырассине ан ман.

Митта.

Л.В. Таллеров патне.

66. *1956 çулхи авăнăн 27-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Лаврентей!

Калавăра вуласа тухрăм. Якур пек айвансем çинчен çырни кирлĕ. Кун йышши япаласем тата çук-и Сирĕн? Ик-виçĕ калав пĕрлештерсе — ярăмпа ярсан аван пулĕччĕ: вулаканăн курăм-туйăм туллирех юлма пултарать.

Вĕçĕ пирки. Автор вĕрентсе калани кирлех-и? Айван Якур пурнăçран татăлса кайни, вăл ял кулли пулса тăни ахаль те паллă. Эсир ăна лайăх сăнласа панă. Шухăшласа пăхăр-ха: пасара тухнă Якура ял енне калла çавăрма урăхла сăлтав тупмалла мар-и? Ёненмеллерех, витĕмлĕрех, пурнăçлăрах пултăрччĕ.

Сывă пулăр. Сире пултарулла кун-çул сунса

Митта Ваçлейĕ.

П.П. Хусанкай патне.

67. *1956 çулхи юпан 7-мĕшĕ, Шупашкар.*

Чунăм утравĕ Петĕр Питравĕ, салам-аликкĕм!

Кайрăн та йăмрăн, Салам та, чалам та çук. Çырса та, курса та калаçмалли нумай. Паян сана Али паттăр хыпарне яратăп. Ача çĕнтерсех пырать. Савăнатпăр.

Мукусев статйи патне тин алă çитрĕ. Шĕвĕ. Хусанкай çинчен çапла кăна çырас пур — ан та çыр. 6-мĕшне каять. Уяву тĕлне, çав номер валлиех, тепĕр статья тума тăрăшăп — Сироткина çыртарас. Халех 6-мĕш валли пĕр ярăм хатĕрлесе яр — 150—200 йĕрке таранах. Кунтисенчен хăшне-хăшне илес? Çĕннисене тавай.

Хамăнне те ку номерте пĕр ярăм паратăп: çитет авланайман урçа пек турткаланса тăни.

«Кăмăлтан» айне тар хума пăхрĕç — ĕç тухмарĕ. Кăткă Упипе Шаккур юри редсовет пухтарчĕç. 40—50 çын пулчĕ — икĕ пӳлĕм туллиех. Каларĕç вара мĕн каламаллине. Упа çав каçах ман пата пĕр кушил эрехпе пычĕ: мир! Паллах, ĕçкĕçикĕ пулаймарĕ, эпĕ тиркешни пĕтерчĕ, тен, ĕçкĕ ăннă пулсан пĕр-пĕрне ыталаса чуп тăваттăмăр-и? Правленире мана Минский байрамне ярасси çинчен калаçса татăлнăччĕ — çав муршăнах каймарăм: эпĕ те пыратăп тет, аптăратса çитерчĕ.

«Кăмăлтан» декабрьсĕр тухаймасть пулмалла, тарăхнă енне тата тепĕр пай хушрăм — хальхаççăн çырнисем. Пырать пек.

Овечкина тĕл пулсан чăвашсенчен салам та браво! Пĕлевленсе, пӳрленсе ларнă бюрократизма Ленин ланцечĕпе тасатать. Акă ăçта вăл культ киремечĕн юлашкийĕсене çунтарни. Пурăннăçем пурăнас килет!

Канаш çинчен — Николаев (Элекçей Студенецкий) статйин касăкне яратăп. Вăйлă.

«[Тăван] Атăлăн» 4-мĕшĕ пур-и сан? Унта Ухсая уртарса янă статья — çавăн хыççăн мĕнпур пăтăрмах.

«Сар Иван» тухрĕ. Кăлкана тата ытти хаклă янташсене салам. Аллуна чăмăртатăп.

Ваçлей.

В.А. Андреев патне.

68. *1956 çулхи чӳкĕн 16-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Ваçилей!

Пар аллуна. Пăшăрханса çырнă çырăву çитрĕ. Тĕрĕслесе пăхрăмăр та, пăшăрханмалли çук та иккен. Паян «Çамрăк ĕмĕтсен» сигналлă экземплярне алă пусса янине хам куçпа хам куртăм. Солодовников, производство пайĕн пуçлăхĕ, хăй чĕлхипе хăй каларĕ: кĕнеке 3—4 кунтан çутта тухать терĕ. Çапла, çак кунсенче Ваççук кĕнеки тантăшĕсем патне çитет. Автор экземплярĕсене (10 экз.) илме ху килместĕн-и? Сывлăху мĕнле? Мутсем мĕнле? Килсе кай.

Литпĕрлешӳ пирки мĕнпур шанчăк сан çинче. Вăйсем пур унта сирĕн, килĕшсе, ăмăртса ĕçлесе пырасси çеç кирлĕ.

«Тăван Атăлта» хăвăнне кăçал мĕн те пулсан ярасчĕ.

Манăн кĕнеке декабрьсемсĕр тухаймасть-ха. Чăрмавсем пулчĕç. Таньăна пысăк салам кала.

Ырлăх-сывлăх сунса *Ваçилей.*

Уйăп Мишши патне.

69. *1957 çулхи кăрлачăн 28-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Мишша!

Каçар, ку çырăва пĕркунах çырмаллаччĕ. Шупашкарта темĕн чул хыпар: Тукташсăр юлтăмăр. Пытару питĕ *чаплă* (ку сăмах ку тĕлĕшпе килĕшет пулсан) иртрĕ. Хĕрлĕ площадь урлă каçнă чух халăх уйрăмах нумай пулчĕ — темиçе пин, милицисем йĕрке кӳрсе тăчĕç. Партпрос çуртĕнче икĕ кун траур музыкĕ хӳхлерĕ, хурал кашни пилĕк минут хушшинче улшăнса тăчĕ, йĕри-тавра теçетке-теçетке чечек кăшăлĕсем. Уйрăмах хăйĕн юррисене («Шурă кăвакарчăн», «Белый лебедь» т.ыт.те) каланă чухне хурлăхлă пулчĕ.

Хуйхă саванăçсăр çӳремест. Диалектика. Пурнăç чăнлăхĕ. Хусанкай юбилейĕ çитрĕ. Кун пеккине Шупашкар халиччен курманччĕ-ха. Уява Советсен Çуртĕнче ирттертĕмĕр. Саламсем. Парнесем. Зал тулли халăх. Ислюков хăй пысăк сăмах каларĕ. Ăстакасси колхозĕнчен сăрапа, хуплупа килчĕç, — тухьяллă, хушпуллă хĕрарăмсем. Аякран килнĕ хăнасенчен: С.Смирнов, Ю.Лаптев, Н.Андриевская, Ш.Мударрис т.ыт.те. Банкетсем çинчен ху килсен каласа парăпăр.

Тăванăм, эсĕ унта кил адресĕпе пурăнатăн теççĕ. Кам мурĕ тытса пачĕ? Хăçан хăтăлатăн? Калаву пирки калаçасчĕ кунта. Пĕрремĕш кĕнекене каяймарĕ ĕнтĕ. Нумайййăн вуларăмăр: Алентей те, Алакĕр та. Аван. Чĕлхи — Уйăп чĕлхи, прозăпа та. Эсĕ ăна вăрттăн ятпа янă пулсан та — пурпĕр палласа илнĕ пулăттăмăр. Хула курса çӳрени, сĕтелтенкелсем шырани калав сюжечĕшĕн ытлашши пек туйăнать. Кун пирки Алакĕр те каларĕ. Калава иккĕмĕш кĕнекене яратпăрах.

Сывă пул. Пултаруллă пурăн. Лидия Андреевскаяна пысăк салам. Пурнăçу ытла хĕсĕк пулнипе ху çине ху алă ан хур.

Ваçлей.

Ш. Мударрис патне.

70. *1957 çулхи кăрлач, Шупашкар.*

Савнă тусăм, Мĕтерис!

Прости, что задержался с ответом. Я тоже болел. Это, видимо, послепраздничная реакция — макмыр — мухмăр, как говорят татары и чуваши.

«Пробы» твои замечательны. Читал самостоятельно —

раз, читал с преподавателем татарского языка — два. Продолжай в таком же духе. Отдельные мои замечания — на полях твоей рукописи, при доработке ты их — если возможно — можешь учесть.

Давно я говорю, татар нужно переводить только с татарского, чуваш — с чувашского. Твоя работа — подтверждение этой мысли. Ты прав, не все поэты и не все стихи легко переводятся. Не скромно говорить о себе, но, имея в виду, что наш разговор о деле, скажу: лично я много внимания уделяю музыкальной структуре стиха. Музыка стиха — это самый капризный элемент в передаче на другой язык, тем более что татарский язык еще не полностью пользуется силлабо-тонической системой. Например, «И мён пуян» держится на звуковых окончаниях «ян». Как это передать по-татарски? Мне кажется, эту задачу ты решил довольно оригинально: полностью сохранив народную манеру стиха, звонкость окончаний заменил тонкостью логических переходов. Иначе и нельзя работать. Неуверенный, робкий, скажу более, рабский подход к оригиналу ничего не дает. Перевод — это соревнование двух поэтов, так, кажется, говорил когда-то Жуковский. Творческая свобода, взаимопонимание, взаимоуважение — так я представляю твою и мою работу по взаимному переводу наших стихов.

Для полноты цикла возьми еще: «Вун тăваттă çапсан», «Мишавай юрри», «Анатри юрă», «Çӳресе çинçелмен...» и «Тăван чĕлхем» — это все из поэмы «Тайăр» (поэма о нашем революционере 1905—1907гг.). Возьми «Çĕнĕ çул — çĕн пултарулăх...» (104 стр.), «Виçĕ хăват» (95), «Кĕрхи илем» (97), «Атăл юрри» (100). Из старых: «Сиктермерĕн мана...» (5 стр.), «Атăл çинче» (76 стр.). Пока — достаточно.

Из твоих я перевел (пока вчерне): «Кĕмĕл çăлкуç», «Ылтăн валак», «Пирĕн янташ». На днях вышлю, — критикуй беспощадно.

С удовольствием сообщаю тебе, что с прошлой пятницы начал работать у нас кружок татарского языка. Занятиями руководит студентка русско-чувашского отделения педагогического института Рая Давлетшина, очень способная девушка, татарка. Будем заниматься по 2 часа в неделю, по пятницам.

Привет и самые добрые пожелания Туфану. Заранее радуюсь за вашу декаду. А ну — блесните! Привет Лябибе и вашим детям.

Ваçилей.

P. S. Пишу в Казань, а не в Шуни. Думаю, ты уж вернулся. Еще раз прости, задержался с ответом. Твоя потеря («Пăва çулĕсем») отдыхает у меня — посылаю.

В.

М.И.Данилов патне.

71. *1957 çул, Шупашкар.*

Хисеплĕ М.И.Данилов юлташ!

Эсир питĕ те кирлĕ ĕç тунă. Чĕререн саламлатпăр. Алла илнĕ шеппех эртелпе вуласа тухрăмăр. Тайăр çинчен каламан сăмахсем, пĕлмен хыпарсем нумай.

Ĕçĕре вăхăтлăха историксене — Кузнецов И.Д.-па (Чăвашгиз пуçлăхĕ) Денисов П.В. юлташсене патăм. Вĕсем Сирĕнпе вăхăта вăраха ямасăр çак кунсенчех çыхăнĕç. Ĕçĕрпе усă куратпăрах. Чи хаклă документсенчен пĕри — Сирĕн аллăрти Алексеевăн дневникĕ. Ăна питĕ те упрас пулать. Хусаин Ямашевпа Т[айăр] Тимкки çыхăнăвĕсем çинчен калани питĕ интереслĕ. Тайăрăн Çĕпĕртен янă сăвви — фурор тумалли факт (чăнах пулсан!). Тайăрăн фотокарточкисем çук-и унта? Çук пулсан унăн портретне сăмахпа та пулсан çырасчĕ. (Эсир ăна тума пултаратăр. Ваттисем ялта ун сăнарлă çынна кăтартма пултараççĕ, — çавăн ачи майлăрахчĕ теме пултараççĕ т.ыт.те.)

Тайăрăн ашшĕ ăста пулнă тетĕр. Мĕн ăсти? Каскалакан-и? Çĕвĕ çĕлекен-и?

Хальлĕхе, ăшăлла, çакăн çинчен çеç çыратăп-ха.

Малашне çыхăну тытăпăр. Кăçал эпĕ хам та июльте пырса каясшăн. Тайăр теми маншăн питĕ те çывăх. Тен, ман «Кăмăлтан» Сирĕн пата çитрĕ пуль. Унта «Тайăр» поэмăран сыпăксем пур. Поэмăна çырса пĕтерме мана фактсем çителĕклĕ марри касать. Çавăнпа эпĕ Тайăр Тимкки çинчен каланă кашни сăмахшăн савăнатăп.

Сывă пулăр. Статйăр чĕлхе тĕлĕшĕнчен те лайăх. Эсир çырулăхшăн çуралнă çын пек туйăнать. Ĕçлĕр. Пултарăр.

Митта Ваçлейĕ.

Питрав Ибасов патне.

72. *1957 çул, Шупашкар.*

Хаклă Питрав!

Ку çырăва пĕркунтарах çырмаллаччĕ — пушанса пулмарĕ. Калавусене юратсах вуларăм. Хаçат çинчи критикла

асăрхаттарусене пула художникăн чăн ĕçĕ çинчен манса ан кай. Агаковăн çырмалла ун — мĕн те пулсан çырмалла, ăна хаçатра вырăн панă, çав вырăна тултармалла. Эс ăна ан пăх. Çавна пĕл: писатель — художник, ментор мар. Паллах, ачапăча писателĕн çамрăк вулакансене пĕлӳсем парас пирки те тăрăшмалла, анчах — художникле, учителле мар.

Эсĕ (Ишлĕ-) Шетмĕне куçнăшăн хам та хĕпĕртерĕм. Хăвна та, кил-йышна та халĕ çăмăлрах ĕнтĕ. Пурсăра та сире салам яратăп. Мана тараватлăн кĕтсе илсе ăсатса янăшăн чунтан тав тăватăп.

Пеття, ман пата, тархасшăн, çав пулас кирпĕч савăчĕ çинчен пĕр-икĕ сăмах çырса яр. Унăн пулас хăвачĕ? Кам тăвать? Кам валли? т.ыт.те. Тăм мĕнле? Кĕп-кĕскен. Очеркра ăна хăварас килет.

Тепĕр ыйту. Эсир халь пирĕн Венгрпа пĕрле ĕçлетĕр. Ăна литература ĕçне явăçтарсан, çырулăха ертсен начар пулмĕччĕ. Ачан пархатар пур пек туйăнать.

Ваçилей.

П.П. Хусанкай патне.

73. *1957 çулхи пушăн 16-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Петĕр!

Пĕрремĕш номер тухкаларĕ. Анна Николаевна кăмăлне кура Алентейĕн пĕр-ик çĕрте тĕрткелесе илмелле пулчĕ, — вулаканшăн вăл, тен, паллах та пулмĕ, авторшăн тесен — паллах!

Нумай çырмастăп. Хăвăн час килмелле (сессине), калаçмаллисем пайтах. Иккĕмĕш номер час тухмалла. 3-мĕшне хатĕрлетпĕр, унта санăнне пĕрер ярăм парăпăр.

Çак кунсенче «Хĕн-хур айĕнче» каять, паян унăн йышăну спектаклĕ.

Союз çумĕнче тутар чĕлхине вĕренмелли кружок аван ĕçлет, 4 заняти туса ирттертĕмĕр, вĕрентекен тутар хĕрĕ — чăвашла, вырăсла лайăх пĕлет. Вĕренме çӳрекенсем чылаях.

Ваçлей Долгов пульницара (чĕрепе). Вăл кайнăранпа ӳсĕрсен кĕрчĕ ашкăнма пуçланăччĕ, ĕнер ĕç вăхăтĕнче юриех пуху туса ирттертĕмĕр, ӳсĕрсене ним çырлахусăр хăвалама тĕвĕ турăмăр. Пуху протест митингĕ пек иртрĕ, тĕп лозунг: «Ӳсĕр вăл — пӳсĕр, ăна ан тӳсĕр!» пулчĕ. Паян лăпах-ха, ĕçлеме кансĕрлекен çук. Кĕрте ертсе çӳрекенни, паллах, Кăткă Упи.

Сывă пул. Алентейрен салам.

Ваçлей.

Чăваш çыравçисем Митта Ваçлейĕпе сывпуллашаççĕ. 1957 ç.

Питер Франс поэтпа (Англи) чăваш çыравçисем
Митта Ваçлейĕн вил тăпри умĕнче.

Митта Ваçлейён вил тăпри çĕрĕ Шарль Бодлер вил тăпри çинче. Париж.

Митта Ваçлей çырнă тата куçарнă хăш-пĕр кĕнекесем.

23. Митта Ваçлейĕ.

В.П. Митта патне.

74. *1957 çулхи пушăн 22-мĕшĕ, Шупашкар.*

Венгр!

Ашмарина аран-аран хатĕрлекелерĕм. Суйланчăксем кăна юлнă. Тепрер çултан 1000 т. парса та тупас çук. Усă кур.

«Кавказ» кăмăла йăнеçтерсех çитеймерĕ. Пĕрле калаçнисене эсĕ шута илсе кайман. Малтанлăха юрĕ. Малашне тирпейлĕрех тăвăпăр. Кăна васкамалла. 3-мĕш кĕнекене вырнаçтарас шухăш пур. Хатĕрлен. Экзаменсем пулаççĕ — Клементьевпа калаçрăм.

Пиччĕ.

А.Г. Канаш патне.

75. *1957 çулхи пушăн 30-мĕшĕ, Шупашкар.*

Салам, Альпăрт!

Çул май Хрулев юлташпа пĕр-икĕ сăмах çырса ярас терĕм. Вăл мана сан çинчен каласа пачĕ, хастарлăхушăн савăнтарчĕ.

Эпир те кунта пурăнатпăр-ха, чăваш çăкăрне ахаль çиесшĕн мар.

Паян «Тăван Атăлăн» иккĕмĕш кĕнекине корректура тытрăмăр, унта сан пĕр сăвву пур. Малашне те ярсах пырăпăр, çырса кăна ĕлкĕр.

Ашăтсан, çул уçăлсан Талвирпа иксĕмĕр сан патна çитес кăмăл пур. Пенсийĕ пирки çак кунсенче ĕç татăлать, пур çĕрте те саншăн сăмах калани палăрать.

Сывă пул. Шупашкарти тусусене ан ман, çырсах, калаçсах тăр.

Митта Ваçлейĕ.

Шавлирен салам.

В.О. Максимов (Ахун) патне.

76. *1957 çулхи çăвăн 14-мĕшĕ, Шупашкар.*

Валентей шăллăм!

Çыруна илсе вуларăм та чунтанах хĕпĕртерĕм. Шупашкарта иксĕмĕр тĕл пулса калаçнине аса илтĕм. Пархатарлă ĕçе пуçăннă эсĕ. Тайăр пурнăçĕпе пултарулăхĕ пире, çыравçăсемпе тĕпчевçĕсене, ĕлĕкренех кăсăклантарнă, вăй-хал

панă. Тайăр ячĕ чăваш литературинче, И.Я.Яковлевпа К.В.Иванов ячĕсем пекех, сăваплă пулмалла. Ун пурнăçĕпе пултарулăхне пирĕн çанăсене тавăрсах тĕпчес пулать. Тăвансем, тантăшсем каласа панисене çыра-çыра илмелле, архивсенче ĕçлемелле.

Çапла, тусăм, ĕçле, ан ўркен, комсомол ĕçченĕн ятне ан яр! Çывăх вăхăтра Пăва таврашне пырса тухма шутлатăп. Сĕве тăрăхĕ, И.Яковлевпа И.Юркинăн, Тайăр Тимккин ĕлккен çĕршывĕ тахçанах кăмăла туртать. Хăçан пырассине пĕлтерсе, ятарласах хыпар яратăп. Çырăва çакăнпа вĕçлетĕп. Хăвăнпа пĕрле ĕçлекен юлташусене манран хĕрўллĕ салам кала.

Вас. Митта.

P. S. В.И. Аслинчен каласа янă саламушăн чĕреренех савăнтăм. Тавтапуç.

В.А. Андреев патне.

77. *1957 çулхи çĕртмен 7-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Ваçилей!

«Пыратăп-пыратăп» тенипех иртсе пырать ман кăçал. Пурпĕрех халь-халь тухса каймалла тесе çыру та çыраймарăм. Каçарăр, — эс те, Таня та. Халĕ ĕнтĕ паллă — июль вĕçĕсемсĕр çитейместĕп. Ваççан «Шĕнерпуçĕ» ман патăмра — Кузнецов И.Д. пачĕ. Аван. Ача шухăша кайса çырни пире, ваттисене те, шухăша ярать. «Тăван Атăлăн» 4-мĕш номерне каятех.

Шупашкарти хыпарсем пур. «Çеçпĕл çеçки» пурин кăмăлне те кайрĕ. Ун çинчен нумай калаçаççĕ, малашне çав ятпах альманах пек, хушран хуша, кăларса пымалла теççĕ. Элекçей Мускавран пысăк çитĕнўсемпе таврăнчĕ. «Тăван Атăлран» уйăхра пĕрре тухакан журнал тăвас шанчăк пур, ку ыйтупа Талвир ЦКра каласнă.

Ĕçле. Пултар. Ĕçсĕр, пултарусăр Йĕпреçре пурăнма хĕн — кичем пулĕччĕ, чуна тăвăр килĕччĕ. Шĕнерпуçĕнчен пĕр тĕтхĕм вăй — чăрсăр çамрăксене çĕклерĕн. Йĕпреç çеремне те тапрат, унта та пархатар пулмалла. Никам туман ĕçе тăватăн эс. Сахал мар çын — пултарулăх çыннисем — тав тăвĕ сана.

Сывă пул. Çырса тăр. Таняпа иксĕре те салам.

Митта Ваçлейĕ.

И.А. Алексеев патне.

78. *1957 çулхи çĕртмен 7-мĕшĕ, Шупашкар.*

Хаклă Иван Алексеевич!

Каçарăр, айăплă: халиччен те Сирĕн пата çыраймарăм. Çырмалли темĕн чухлех, анчах — те ытлашши ӳркеве кайнă эпир, те ĕнерхи ĕнтĕркӳрен тасалсах çитеймен — çырмастпăр.

Сана виçĕм çул питĕ те кĕтсеттĕмĕр, — килеймерĕн: Ученăй совет урăххине суйланă терĕç. Паллах, тăмсай пултăр та таса биографиллĕ пултăр.

Епле капла, чăваш тулашĕнчех ĕмĕр ирттерес тетĕним? Питĕ шел. Ĕç тупăнĕччĕ-çке сана кунта та. Республика хĕсĕр мар, аталансах пырать, пултаруллă çыншăн епле вырăн çук!

Калаву мана çырлахтараймарĕ — шалтан та, тултан та. Саншăн вăл ытла та пĕчĕккĕ. Пысăк ята — пысăк ĕç. Çырха хăвăн пурнăçу тата ĕçӳсемпе ĕмĕтӳсем çинчен. Пĕтĕмпех çыр. Тĕлĕнмелле çыр. Тĕлĕнмелле, ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалла словарь пулĕччĕ. Çырас тесен, тархасшăн, вак-тĕвекпе ан аппалан, пули-пулми халь пирĕн иксĕмĕрĕн вăхăт çук, вăйхал та сахалтарах, пирĕн вăй пысăкрах, сулмаклăрах ĕçсем валли кăна юлнă. Чăвашла çырас килсен — чăвашла, вырăсла çырас тесен — вырăсла çыр, анчах çыр, çыр, çыр. Паллах, санăн тĕп ĕçӳ изобретательство, пĕри тепĕрне ан кансĕрлетĕр.

Эпĕ таврăннăранпа чылай ĕçлерĕм, кĕнекесем кăлартăм, санран ку çыру çине хурав илсен хăшне-пĕрне ярса парăп — чăвашла ан мантăр, чунĕпе яланах пирĕнпе пултăр тесе.

Шăллу, вĕренекенӳ *Ваçлей.*

Я.Л. Зверев патне.

79. *1957 çулхи çĕртмен 9-мĕшĕ, Ишлĕ-Шетмĕ.*

Якку!

Кайрăн та çухалтăн. Шухăшне тытнă чухне те мана нимĕн те каламарăн, кайран та, шухăшне пурнăçласан, шарламастăн.

Каçар, ĕçкĕ-çикĕ хушшинче çеç çыратăп. Эпĕ халь, çак самантра, (Ишлĕ-) Шетмĕре, сирĕн тĕп çуртра, Лявкка куккасем патĕнче — Арапуçне пĕр кунлăха акатуйне килнĕ. Манпа пĕрле Краснов-Кĕçĕнни тата П.В.Денисов. Сан çин-

чен Шупашкарта та тăтăшах калаçатпăр. Акă сана манăн сăмах: унта мая килмесен, санăн çуралнă çĕршыву пур, унти юлташусем, тăванусем пур. Чăваш тĕнчи хĕсĕр мар. Шупашкарта санăн пултарулăхупа ĕç тупăнатех. Шухăшла. Пĕл, пурнăçра юлташ çукки — пурнăç çуккипе пĕрех.

Тĕнче касса çӳрерĕмĕр,
Эп — ирĕксĕр, эс — ирĕкрен.
Алай-палай телейĕмĕр
Аçта кайсан та пĕр иккен, —

тенĕ авал пĕр чăваш. Хăратăп, халĕ те юрăхлă ан пултăр çав сăмах.

Эпĕ халĕ те «Тăван Атăлта». Кĕркури — Союзри литконсультант. Талвир тĕреклĕ, çав вырăнтах (В.И.) Краснов-Асли — пирĕн парторганизаци секретарĕ. «Тăван Атăл» уйăхри журнал пулать. Кĕнекесем тухсах тăраççĕ, тăрĕç те. Тепĕр хут каçару ыйтатăп, ку çырăва тĕплĕн çыраймарăм — ĕçкĕ! Хамăн юлашки кĕнекесене ярса парăп. Явтука лайăх пăх. Ноннăпа эпир пыл та çу пурăнатпăр. Ишлĕ-Шетмĕ чечекре. Гришăн кăмăлне сирĕн ял питĕ те килчĕ. Сывă пул, пултаруллă пурăн. Çĕнĕ çĕртен пушă алăпа ан таврăн. Çыр. Çыр. Çыр. Пархатарлăхна сая ан яр.

Ваçилей.

КУН КЁНЕКИ

1956 çул

Январён 3-мёшё. Салам, Çёнё çул! Иккёмёш çёнё çул! Тухăçлă, ăнăçлă, тăнăçлă пул! Юрату тата ырă тату!

Иртнё çул маншăн ытларах ăнкару çулё пулчё. Кăна — пултару çулё тăвасчё.

Каçхине Петёр Х[усанкай] арăмёпех килчё. Калаçса тăранма çук.

Ыран амăшёпе Мускава каятпăр. Nonna ку дневнике пуçланăшăн вăрçать. Ан хăра, ку чухнехи кун кёнекисенче ытлашши çырмаççё.

Январён 4-мёшё. Мускава кайма тухрăмăр. Шупашкар юр айне путнă. Хула хёрри — Урал сăрчёсем пек. Канашран ачасем патне телеграмма çаптартăм. Арапуçне çыру ятăм. Вакун чаплă — Мускава çитиех. Шупашкартан 11^{20} сехетре тухнă. Купере тăваттăн. Кунне икё хут чей. Çумри купере экс-премьер Афанасьев. Паллашас кăмăлăм çук: Жиганова тарăхтарни аса килет.

Январён 5-мёшё. Мускава 10^{05} сехетре çитрёмёр. Кётсе илекенсем: Силпи, Талвир тата пăртак каярах — кёрӳ. Элекçей сăмахё: «Дипломатсене те пур чухне те кун пек кётсе илмеççё».

Салам, Мускав! Курманни 18 çул. Çёнё çуртусем — пăхсан çёлёк ӳкмелле. Мускав та юрпа кёрешет. Пётём тиев транспорчё юр турттарать. Кунти юр — хуп-хура.

Нарсписем патне — «Текстильщике» çитме 40 тенкё сăптăрса илчёç (таксипе! Ирёксёрех Петтян мăшăр сăвви аса килчё!). Нарспи кайман. Савăнса кайрё. Вăл — йывăр çын, мал ёмётпе тăрать. Ывăл пулсан Сетнер хуратпăр, тӳрех Шупашкара илсе каятăп терём. Кулать.

Илемпи патне кайрăмăр. Чирленё. Çёрёк каç 40,1° пулнă. Халь — чиперех. 8-мёшёнче ун — экзамен: сопромат.

Ноннӑна Мускав кӑмӑла каймарĕ. Хĕвĕшӳ, хĕвĕшӳ, хĕвĕшӳ! Тата Шупашкар пек шурӑ та мар. Урамсем урлӑ каçнӑ чух сехри хӑпать. Маншӑн чунĕ çук тата хӑйĕн. Хӑш чух юри çынсен хушшинерех пытанатӑп — шырать, шырать, куçĕсем чарӑлса кайнӑ. Тӑваттӑн çӳрерĕмĕр: Нарспи, Силпи, эпир — икĕ кӑптӑрмӑш провинциал.

Эпир таврӑннӑ çĕре кĕрӳ килте. Хӑналантмӑр. Нимĕн илмен, укçа шывпа юхать.

Январĕн 6-мĕшĕ. Мускав çынни вӑхӑт тĕлĕшĕнчен хĕсĕк пурӑнать. Куллен çул çине 2—3 сехет каять. Çавӑнпа кунта хаçат тата юлашки новинкӑсене çул çинче (трамвайра, метро пусми çинче) вулаççĕ.

Нарспипе амӑшĕ магазинсем тӑрӑх кайрĕç. Эпĕ — Элекçей патне «Москва» хӑна килне. Маттур — çурт тӑвас пирки (чӑваш писателĕсем валли) ĕç тухнӑ. Ыран Кремле кайма пропусксем пулаççĕ. Талвир тӑрӑшрĕ. Союзпа калаçса татӑлчĕ.

Илемпи патне кĕрсе тухрӑмӑр. Вӑл паян сывах, сопроматпа ларать.

Январĕн 7-мĕшĕ. Раштав кунĕ. Хулана паян Nonnапа иксĕмĕрех кайрӑмӑр. Хамӑр тĕллĕн çӳресе нумайрах куртӑмӑр. Краснопресненски райĕçтӑвкомра Кремле тата Мавзолее кĕме пропуск туянтӑмӑр. Документсем те ыйтмарĕç. Мавзолее 5 сехетсĕр кӳртмеççĕ. Пресняри пысӑк-çӳллĕ çуртра тата зоопаркра пултӑмӑр. Nonna каççах кайрĕ.

Кремле Боровицки хапхаран кĕтĕмĕр. Ертсе çӳрекенни хамӑрӑн чӑваш хĕрех тата (И. Трофимов хĕрĕ, Афанасьев кинĕ). Успенски, Благовещенски, Архангельски соборĕсенче пултӑмӑр. Авалхи живопись. Андрей Рублев. Реставраци тĕлĕнтерет. Патшасен тата патриархсен тупӑкĕсем.

Мавзолейра пултӑмӑр. Ура салтса кĕрес килчĕ. Мӑнтарӑн Ленин!.. [...]

Каçхине çĕнĕ хӑтана кайрӑмӑр. Халиччен хӑтапа тӑхлача курманччĕ-ха. Паллашрӑмӑр. Хӑналантмӑр. Кĕрекере чӑвашсем çинчен каласа патӑм. Хваттер лайӑх. Çĕр выртрӑмӑр.

Январĕн 8—9-мĕшĕсем. Хӑтапа тӑхлач пире хула кӑтартса çӳрерĕç. Тӑхлач мана костюм илме пулӑшрĕ. Ӑшӑ кӑмӑлпа уйрӑлтӑмӑр.

Çула май Екатерина 3-на патне кĕтĕмĕр. Мана курсанах макӑрса ячĕ.

Каçхине, 11 сехетре, столицӑна пӑрахса кайрӑмӑр. Ӑсатма Саша (кĕрӳ) тата Илемпи пычĕç. Сывӑ пул, Мускав!

Канашра нумай ларас мар тесе 72-мĕш №-пе тухрӑмӑр.

Ахалех: вакун таса мар, туртса тултарнă. Çул тăрăх тенĕ пек Мускав таварĕсене сыхласа пытăмăр (ылмашăнса).

Январĕн 10-мĕшĕ. Киле тĕрĕс-тĕкелех çитрĕмĕр. Тавсье, хĕрт-сурт! Ĕшеннĕ çинчен пăртак выртса кантăмăр. Кăтăш пулнă. Тĕлĕкре те — Мускав, метро, электричка, Кремль. Каç кӳлĕм ĕçе тухрăм. Юлташсем Мускав хыпарĕсене ыйтса пĕтереймеççĕ. «Тăван Атăла» халĕ те подписчиксем патне çитермен.

Январĕн 11-мĕшĕ. Авторсен çырăвĕсем пирки ĕçлерĕм. Хăш-пĕр ал çырăвĕсене пăхса тухрăм. Исавет «Кулас килет» çинчен критикăлла статья çырнă. Çиелтен шăйăрттарнă. Ун пек çырни — йĕкĕлтешни анчах.

Долгов пырса ларчĕ. Ульяновпа Яковлев çинчен питĕ илемлĕ калаçу пулчĕ. Вăл ку темăпа статья çырсаччĕ. Халĕ статйине чылай çĕнетнĕ, пуянлатнă, ман шухăшсене те шута илнĕ. «Автор пурри» халĕ лайăх палăрать. Сăмах Кăткă Упи çине куçрĕ. Долгов ăна çак кунсенче хытă ятланă иккен.

Каçхине Альтук аппапа Анна аппа килсе ларчĕç. Мускав çинчен сăмах ярса кăтартрăм. Карчăксем каçсах кайрĕç. Силпипе Илемпие моральлĕ çырусем ятăм.

Январĕн 12-мĕшĕ. Кăлканăн «Сар Иванне» вуласа тухрăм. Силлабикăна пăрахăçа кăларас пулмасть. Поэмăн çитменлĕхĕ — чăнлăхпа чăнмарлăха пăтраштарни. Ĕненмелле мар.

Январĕн 13-мĕшĕ. Петĕр ĕçе шăнкăравларĕ, килме пулчĕ — килеймерĕ. Обласра — партконференци. Пиртен унта — Талвир. Ваçлейĕн «Ĕмĕрех пархатарлă туслăх» (ячĕ ман) статйине редакцилерĕм. Тĕпчев институтне Максимов, Любшин, Кривоносов статьи пирки чĕнчĕç.

Январĕн 14-мĕшĕ. Декабрьшĕн тухнă «Коммунистра» «Проблема типичности» ятлă статья пур. Вирлĕ.

Ухли паян Павел Иванча тапăннă — «Пиçнĕ-пиçмен калавсемшĕн». «Эсĕ аманнă тискер кайăк, çыртасшăн çеç çӳрен», — тенĕ вăл Павăла.

Элекçей конференцинчен питĕ пăшăрханса таврăнчĕ: асли вăл тухса каланине тиркенĕ. Пленума ăна та, Любимова та суйламан (иккĕшĕ те культура фронтĕнчи ыйтусемпе калаçнă).

Январĕн 15-мĕшĕ. Элекçей патĕнче пултăм. Лăпланнă. Философла пăхать. Вăл конференцинче «Тăван Атăла» журнал тума, «Капкăна» кĕртме ыйтнă. Атăлçи (чăвашсем)

вырăссемпе пĕрлешни 400 çул тултарнине паллă тума сĕннĕ (1957 çул). Наци мăнаçлăхне кӳрентерекен шавсем çинчен тĕрткелешсе илнĕ. ЦКна çитесшĕн.

Каçхине Петĕр Хусанкай пулчĕ. 11 сехетчен ларчĕ. Хăйĕн юбилейĕ тĕлне вырăсла пĕр 20 листа хатĕрлет. «Аптрамана» Потапова куçарать.

Январĕн 17-мĕшĕ. «Тăван Атăл» редколлегийĕ пулчĕ. Уйăп мана ӳпкелешсе илчĕ — вăл каласа хăварнă статьяна яманшăн. Хăй айăплă, ун редакцийĕсĕр вăл статьяна (Тинис Петĕрĕнне) яма çук. Т[инис] Петĕрне тăлмачпа усă курнăшăн «тылласа» илтĕмĕр. Ман сăмах: Ашмарин профессор чăвашла çырнă, Сироткин профессор чăвашла çырать, Хусанкай чăвашла çырать — эсĕ çырасшăн мар (Хусанкайпа Сироткин каçса кайса кулчĕç).

Кĕçĕнни ман патăмра çывăрчĕ. Василий Иванович Краснов-Асли çинчен чылай калаçрăмăр. Пулăшас пулать. Вĕсем иккĕшĕ пĕрлешсен — пĕр лайăх писатель пулать. Пĕринче çукки — тепринче пур.

Январĕн 18-мĕшĕ. «Атăлăн» пĕрремĕш номерне производствăна патăм. Унта — Петтян «Крепковĕ» (пьеси).

Январĕн 19-мĕшĕ. [...] Аслине хваттер кирлĕ пирки Яковлевпа калаçрăмăр. Шанчăк пур пек. Петĕрпе «Мещенсем» (чăвашла) курма каясшăнччĕ — иксĕмĕрĕн те пуç ыратать, сунас. Каçхине Мускавпа (тăхлачсемпе) калаçса илтĕмĕр. Нарспи халĕ те çăмăлланман. Валерик кĕрсе тухрĕ.

Январĕн 20-мĕшĕ. [...]

Февралĕн 18-мĕшĕ. Çак кĕнекене тытман тапхăрта çырмаллисем чылаях капланчĕç. Кутăн Илемпи каникула килсе кайрĕ. Эпĕ ăна, хамăр Мускава кайса килнĕскерсем, тăкакланса çӳреме каламанччĕ. Пĕр ирхине — эпир çывăрса та тăман — каттăршнăй хĕрĕ, кăштăрт! килсе кĕчĕ. Зачет-экзаменсене хăй аванах паркаланă тата.

Январĕн 28-мĕшĕнче Нарспи аслă ывăлне — Михаляна — çуратса панă. Савăнăçлă телеграмма çитрĕ. Хамăр та çакăн пек ответ патăмăр: «Предки беспредельно рады. Дед просит назвать Сендимером, что значит по-русски Владимир». Пире итлеççĕ-и — Михала ятлă хунă...

Çак кунсенче Йăван Кузнецова кĕтсе илтĕмĕр. Талвир, Хусанкай, Долгов, эпĕ станцăнах кайрăмăр. Хальлĕхе Союзра консультантра ĕçлет. Ку ĕçе эпир икĕ уйăх хушши Кăлканпа иксĕмĕр туса пытăмăр. Кузнецов ыйтăвне Союз правленийĕнче лартсан Шавлипе Алка урса кайрĕç. Марье

[...] вĕсене хĕтĕртсе лараканни. Çав çăкăрлă вырăна хăйсем ярса илесшĕн — ним ĕçлемесĕр шалу илсе пурăнĕччĕç. (Хальччен çапла пулнă та вĕсен!) Долгов Марьене хăваласах кăларса ячĕ. Тепĕр кун хĕсĕкрех правленипе ку ыйтăва Кузнецовшăн татнă.

Йăвана Краснов ыйтăвĕ пăшăрхантарать, Краснова — Йăван ыйтăвĕ. Эпĕ вĕсене иккĕшне те каларăм: мир! Килĕшеççĕ. В[асилий] Архиповичпа калаçса татăлтăмăр: иккĕшне те тытса пымалла. (Тытса памалла мар (ĕлĕкхи пек), тытса пымалла.)

Февралĕн 13—14-мĕшĕсенче çамрăк сыракансен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлу питĕ йĕркеллĕ, ăслă, çӳллĕ шайра иртрĕ. Ку — Талвир руководствин çĕнтерĕвĕ. Халиччен пĕр совещани йĕркеллĕ иртмен теççĕ [...] (çапăçнă, пĕрпĕрне мăшкăл кăтартнă).

Поэзи семинарĕн пĕр ушкăнне эпир Г. Ефимовпа иксĕмĕр ирттертĕмĕр. Пирĕн ушкăнра 15 çын пулчĕ.

[...]

Тĕнчене кисретсе XX съезд ĕçлет. Акă вăл хăçан чăнчăн коллективлă ăс-хакăлăн уссине курма пуçларăмăр. ЦКан доклачĕ — çĕнĕлле руководствăн триумфĕ. Пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм тĕнче халĕ ун çинчен калаçать. Эпĕ те виçĕм кун «Тăван Атăл» валли ум статья çыртăм. Шухăшланă-и эп пĕр 3 çул каярах çакăн çинчен! Тавтапуç. Туррăмăр пур иккен-ха.

Ноннăпа питĕ килĕштерсе пурăнатпăр: чап-чап уйăхĕнче те кун пек илемлĕн пурăнман пулĕ.

Февралĕн 19-мĕшĕ. «Нам велено трудиться, но завершить труды наши нам не дано» (Талмуд) «Автобиографие» каçса кайса вулатăп. «Ни один человек, сколь бы велик он ни был, не должен стоять вне критики» (Неру). Икĕ кĕнекинче те Неру çав шухăша ăслăн пурнăçласа пырать: Гандине те, хăйне те уямасть.

Февралĕн 20-мĕшĕ. Ваçлей Долгов ман валли Хусантан Джалиль кĕнекине илсе килнĕ. Вăл Хусанта Муса юбилейĕнче пулчĕ. Герой юбилейĕ чаплă иртнĕ. XX съезд материалĕсене тĕлĕнсе вулатăп. Сывă пултăр шанчăклă ыранлăх! [...]

Февралĕн 21-мĕшĕ.

[...]

Кунĕн-çĕрĕн «Тăван Атăл» корректурипе лартăм (к печати). Каçхине Йăкăнат килсе ларчĕ. Чăваш театрĕ çинчен каласа савăнтарчĕ. Халăх йышăнать. Хăш-пĕр каç (нумай чухне) залра çапса хĕстернĕ пек. Мускавран килнĕ Блок

тĕлĕнчĕ: «Публика у вас весьма патриотическая», — тесе каларĕ тет. Петтян «Крепковĕ» вуланăçем пуянлансах пырать. Вăл «Тăван Атăлăн» пĕрремĕш номерĕнче тухать.

Февралĕн 23-мĕшĕ. «Асран кайми кунсене» Ноннăпа тепĕр хут куртăмăр. Шолоховăн съездра калана сăмахне вуласа тухрăмăр (Кузнецов, Титов). Чăнах та, яла каяс пулать. Йăванпа интереслĕ калаçу пулса иртрĕ. Наци ыйтăвĕ çине проказа шăнкăравне çакнăччĕ — пырса тĕкĕнме хăратпăр. Халĕ ку чир иртсе каяс паллăсем пур. Ку юлашки кунсем (съезд) ыранлăх шанчăкне нумай тĕреклетрĕç. Муса Джалиле куçартăм. [...]

Февралĕн 25—26-мĕшĕсем. Гурий иккĕмĕш каç çывăрать. «Янтрак янтравĕн» йĕркепĕрлĕхне тăвать. Петĕр çыру ячĕ. Сăвви маттур. Мусан икĕ сăввине куçартăм. Гурие пĕри питĕ кăмăла кайрĕ, вырăслинчен вăйлă тет. Мускавпа ултă минут хушши калаçрăмăр — пурте сывă, Сентимерĕн кăна сунас.

Кăнтăрла Валясем патĕнче пултăмăр. Иван Ефимович вĕсене питĕ хытă тытать. Çавă кирлĕ те. Унсăрăн пурте вĕсем кунтан ача йăтса каймалла.

Февралĕн 27-мĕшĕ. «Ылханлă йăх» премьерине куртăмăр. Аван сценăсем пур. Драматизм енчен сулчăрах, тĕп образсем çителĕклĕн аталанса пыни çук. Çапах коллектив маçтăрлăхĕ çĕклеме пултарнă ку спектакле. Сăнавлă лартура виççĕмĕш пьесăна ырласах кайман. Авторĕ уншăн тарăхса кайнă-мĕн: виççĕмĕш ăна хăй патне калаçма чĕнсен — к ... матери янă. Кун çинчен Йăкăнат каласа пачĕ. Каç Петр Николаевичран хăйĕнчен ыйтрăм — чăнах та иккен. Халăх спектакле лайăх йышăнчĕ. П[етр] Н[иколаевич] сцена çине тухмасăр алă çупма пăрахмарĕç. Юлташсенчен пирĕнпе Иван Ефимович арăмĕпе тата икĕ карчамас — Акнипе Альтук аппа пулчĕç. Спектакльти чи лайăх сценăсем — çĕнĕ хăта тата çветкă.

Куçару ĕçĕ пирки ман шухăш çапла: куçару вăл — икĕ авторăн ĕçтешлĕхĕ. Куçару айне икĕ авторăн хушаматне те лартма пулать. Чăвашла «Евгений Онегин» — Пушкинпа Хусанкай произведенийĕ. Пултару ĕçтешлĕхĕ — ирĕклĕ ĕçтешлĕх пулмалла. Муса Джалиль хăйĕн сăввисене чăвашла вулас пулсан, «Тĕрме хуралçи» тата «Урасăр» айне пĕр турткаланмасăрах [Митта] ятне лартĕччĕ тесе шутлатăп — эрне ку сăвăсенче тăлмач хăйне ирĕккĕнрех тытсассăн та.

Февралĕн 28-мĕшĕ. «Муса таврăнни» ятлă поэма çырас шухăш çуралчĕ. Ăнсăртран Гурипе Йăвана каласа патăм.

Вĕсем шухăша ырласа темĕн чул детальсем сĕнчĕç. Хама ытла та çывăх тема. Анчах туман тиха пилĕкне хуçас мар. «Мать» кинокартинăна кайса куртăмăр. Вăйлă.

Мартăн 3-мĕшĕ. «Тăван Атăлăн» пĕрремĕш кĕнеки пичетленсе пĕтрĕ, сигнальнăй экземплярсене хăпартрĕç, паянах иккĕмĕш кĕнекене пĕтерсе патăмăр.

Йăван ир кӳлĕмсем Тĕпчев институтĕнче ларать: Магницкий фончĕпе ĕçлет. Чăваш аваллăхĕ çинчен чылай интереслĕ материалсем тупнă. А.С. Пушкин çинчен паха материалсем пур. Чăваш историйĕ çинчен чылай калаçрăмăр. Тĕлĕнмелле, ман концепци пĕтĕмĕшлех унăннипе килĕшет, историк пулмасăрах эпĕ чăваш историйĕн тĕп ыйтăвĕсене тĕрĕс ăнланнă. Уйрăммăнах — тутарсем çинчен. Хальхи тутарсем — мусульманланнă чăвашсем (булгарсем). Ку прогресс Ибн Фадлан вăхăтĕнчен пуçласа XX ĕмĕре çитичченех пынă. Пĕр факта историксем халичченех тивĕçлĕ хак памаççĕ... Мари (çармăс) халăхĕ халĕ те тутарсене «суас» тет. Ку вăл мари халăхĕ чăвашсем тутара тухнине хальчченех де-юре йышăнманнине пĕлтерет.

Мартăн 5-мĕшĕ. Алла çитме тата икĕ çул юлчĕ. Çаплах ĕмĕр те иртсе каять, нимĕн тăваймасăрах. Çĕрĕк каç 11 сехетре саламлă телеграмма çитрĕ — кӳршĕ Русовсенчен. Вĕсемпе эпир питĕ килĕшӳллĕ пурăнатпăр. Нонна ман ятпа пĕр кĕнеке (Достоевскин «Преступление и наказание») тата тĕрлĕрен ăçтиçуксем илнĕ.

Поэзи секцин пухăвĕ пулчĕ. Мана секци секретарьне суйларĕç. Пуçлăхĕ — Алка.

Мартăн 6-мĕшĕ. Ялавин [...] ĕçе кĕресси çинчен калаçмасть. Пирĕн пата апатланма ерсе килесшĕнччĕ: паранкă та пулсан çитер тет. Нонна çине ятăм: юратмасть сана терĕм. Кăшкăрашма пуçларĕ, çынсем ырă пулманшăн Еремей пророк пек питлеше пуçларĕ. Вара эпĕ ăна çапла каларăм: çыннăн чи пысăк ĕçĕ — çынна ырă тăвасси мар, çынна усал тăвасран хăйне хăй чарасси. Эпĕ кирек мĕнле çынна та çапла каласшăн: эсĕ мана ырă ан ту, анчах мана усал тăвасран та хăвна ху чар. Çынсем çак йĕркене çирĕппĕн пăхăнса пурăнсан тĕнче йăлтах урăхла пулĕччĕ. «Арцыбашев философийĕ ку!» — терĕ Çеркей кăшкăрса. «Ан тив, Куттакбашевăн пултăр, анчах çак чăнлăха пăхăнсан пире чухах пулĕччĕ», — терĕм.

Мартăн 8-мĕшĕ. Хусанкай Мускавран радиопа калаçрĕ — «Весеннее» вуларĕ.

Никитин тухтăр патĕнче пултăм — сăмса ыраткалать. Тухтăр пăхрĕ — нимĕн те тупмарĕ: çăмăлтарах шăнкартмалла тет.

Альтук аппа килсе ларчĕ. П. Михалчăн трагедийĕ çинчен каласа пачĕ. Çав пурнăçа хам курман пулсан çуç-пуç вирелле тăмалла...

Ноннăна шкул ачисем уяв ячĕпе темĕн чул парне панă. Уйрăммăнах лайăххисем — çыруллă кĕленче кăкшăм тата шкатулка (юлашкине пĕр ача тунă).

Хусанкая çыру ятăм.

Мартăн 10-мĕшĕ. Кĕтмен çĕртен, каçхине 9-мĕш сехетре, Хусанкай килсе кĕчĕ. Пăлханать. Аш-чик вырăнта мар. Юрласа ячĕ. Халăх юрри — Пăрмас хĕрарăмĕ юрласа панă (пĕр хĕре улталанă Хăмăк (?) çинчен). Нумай каласса лартăмăр — Мускав, Шупашкар хыпарĕсем. Пĕтĕм Мускав хупă лару çинчен каласать иккен.

Юлашки вăхăтра Петĕрĕн кăмăлĕ уçă мар. Ялан çын финалĕ çинчен калама пăхать. Чаратăп.

Мартăн 12-мĕшĕ. Тĕпчев институчĕн ларăвĕнче пултăм. Икĕ хыпарлу — «Хыпар» çинчен тата Магницкий ĕçĕсем çинчен пулчĕ. Улатимĕр Канюков кандидат чăваш культурипе вырăс культури хушшинчи яланхи хутшăнусем çинчен доклад турĕ.

Иван Кузнецов каланă тăрăх, «Хыпар» халăх хаçачĕ пулнă, чăваш халăхне революциленме пулăшнă. Унăн юбилейне сарлакан ирттермелле. Хусанкай та çак шухăша хĕрӳллĕн ырларĕ. Директорпа секретарь хăраса ӳкрĕç: Кузнецов ытлашши каламарĕ-и? «Хыпара» халăх хаçачĕ теме юрать-и, ун юбилейне тумалла-и? — аптăраса ӳкрĕ Димитриев. Кун пирки эпир кирлĕ çĕрте каласа пăхăпăр терĕ çăварне уçи-уçми Любимов.

[...]

Мартăн 13-мĕшĕ. Паян мама вилни 4 çул тултарчĕ. Яковлев вĕрентсе хăварнă малтанхи чăваш хĕрĕсенчен пĕри (1877—1952). Пурнăçĕ çăмăл пулмарĕ. Хăй вăхăтĕнчи çынсем çине ӳкнĕ йывăрлăха никамран ытлашши тӳсрĕ. Тăпру çăмăл пултăр, хура-шур курма çуралнă чăваш хĕрарăмĕ.

Радио Болеслав Берут вилни çинчен пĕлтерчĕ.

Композиторсен съезчĕн ларуне кĕрсе тухрăм. Пентатоника çинчен хĕрсе калаçаççĕ. Вырăнлă, пурнăçлă, кирлĕ система теççĕ. Ĕлĕкрех ун çине тӳртĕн, улпутла тиркешсе пăхатчĕç.

Ваçлей Долгова куртăм. Чылай [япала] çинчен тӳррипе калаçрăм. Кăмăлĕ пăсăкчĕ. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн, тусăм?

Хам тенĕ çынсене пыллантарнă пилюля парас килмест, ан тив, йӳçĕ пултăр та, тĕрĕс пултăр.

Тĕпчев институтĕнче паян кунĕпех калаçу ĕнерхи лару çинчен пырать тет. Улатимĕре тата ученăй секретарьне Кузнецов кăмăла кайман. [...]

Мартăн 14-мĕшĕ. Алтаккин кунĕ. Шыв паян алтан ĕçмелĕх кăна мар, аслă урампа шавласах юхать. Çак кунсенче Ноннăна хăйсен парторгĕ чĕнсе ятланă — Сталин ятне асăннăшăн. Нонна класĕ самодеятельность йĕрĕпе темĕскер кăтартнă, материалне ĕлĕкхи калăпсем тăрăх хатĕрленĕ, пĕр-ик çĕрте унăн ятне асăннă. Юрамасть. Авал чăвашсем шуйттана ятне каламасăр асăннă. Кăна та малашне çапла асăнас пулать. Турăран шуйттана тухрĕ. Облаçри партактив пухăвĕнче те ун çинчен нумай калаçнă, майĕпен манса пыма кăтарту янă. Мĕн чухлĕ айăпсăр çын, пултаруллă çын пĕтнĕ! тесе каланă асли. Петров, Никитин, Токсин ячĕсене уйрăммăн асăннă.

Мартăн 15-мĕшĕ. Ир кӳлĕм Кĕнеке палатинче пултăм. «Çамрăк хресчен» хаçатăн кивĕ комплекчĕсене пăхса тухрăм (1927—1928 çулсем). «Чĕлĕм Мĕкĕти» (прозăпа) интереслĕ.

Валемпипе Пинерпине пальтосем илсе патăмăр (иккĕшне те 110-шар тенкĕлĕх). Ашшĕн укçи тата 1500 т. юлчĕ.

В. Рсай пирĕн патăрта çывăрчĕ. Вăйлă этем.

Мартăн 16-мĕшĕ. Паян та ир кӳлĕм Кĕнеке палатинче «Çамрăк колхозник» комплекчĕсемпе лартăм. Хам манса кайнă япаласем чылай тупрăм. Сборнике кӳртмеллисем пур. Ман проза начар пулман. Ĕçленĕ çĕре Çинахви Воробьев кĕрсе тухрĕ: юри сана курас килнипе кĕтĕм тет. Вăл ман Юхмари пĕлĕш. Мĕскĕн, пĕлтĕр пушарта çунса аманнă — пичĕ, уйрăмах — аллисем. Павел Щипцов калавĕсем пирки авторĕпе калаçрăм, вăл колхоз председателĕсен канашлăвне килнĕ; Мартынов хăй калавĕсене, Ильин юптарăвĕсене кăтартса кайрĕç. Пуç иккĕмĕш кун ыратать.

Мартăн 17-мĕшĕ. А. аппа килсе ларчĕ. Актив пухăвĕн хыпарĕсене пĕлтерчĕ. Ислюкова питĕ мухтать — ăсĕшĕн. Ку ыйтупа эсир чĕрĕрсене ирĕк ан парăр, ăс витĕмĕпе пăхăр тесе каларĕ тет. Пурне те пĕр шухăш канăç памасть: 1937 çул урăх ан килтĕрччĕ. Ун пек ан пултăр тесен влаça пĕр çын аллине памалла мар. Руководствăна çамрăк вăйсемпе çĕнетсех тăмалла, партине Ленинăн «вĕтĕ турипе» вăхăтран вăхăта «хырчăкласах» пымалла (тасатусем), «партмаксимума» тепĕр хут çирĕплетмелле. Çавăн чух парти чăн-чăн революциллĕ

элементсенчен кăна тытăнса тăракан пулать, тĕрексĕр çынсем, ăнсăртран çыхланнă çўп-çапсем хăйсемех тасалаççĕ.

Мартăн 18-мĕшĕ. Ноннăпа уçăлма тухса Атăл леш енне çитсе килтĕмĕр. Виçĕ ачаллă чăваш хĕрарăмне куртăмăр. Хăйăр çине пўрт лартнă. Пурнăçĕ те унăн пĕтĕмпех «хăйăр çинче». Упăшки ачисене пăрахса юта чупать. Грузчикра ĕçлесе илнĕ укçине ĕçсе, алхасса салатать. Ачисем — выçăллăтутăллă. Сахал тухса çўретпĕр, сахал куратпăр эпир «çын хуйхине». Ачисем икĕ чĕлхепе те лайăх калаçаççĕ.

Мартăн 19-мĕшĕ. Тĕпчев институтĕнче пултăм. Денисов докладне итлерĕм: этнографи ыйтăвĕсем. Докладсене проблемăллăн лартма хăнăхсах çитеймен-ха. Тарăнрах яни, пĕтĕмлетме пĕлни, çунса калани (партийность) çитмест.

Мартăн 20-мĕшĕ. Паян Академи театрĕнче культура работникĕсен республикăри канашлăвĕ. В. Яковлев доклад тунă. Пире те, аякран таврăннисене, ятран асăннă. Каçхине Ноннăпа «Кремлевские куранты» куртăмăр. Пьеса вăйлă, анчах тĕл-тĕл лешĕн кăмăлне курса çырни курăнать, çавă аслă Ленинăн сăнарне пăртак сиенлет. Авалхи пĕлĕшсенчен спектакльте Сакмар Матвине куртăм. Роза ЦК çырăвĕн содержанине мана каласа пачĕ. *О, чăнлăх саманчĕ! Сана курасса шанманччĕ!*

Мартăн 26—27-мĕшĕсем. Писательсен пысăк пухăвĕ пулчĕ. Эпĕ — пуху секретарĕсенчен пĕри. Доклад: «Литература çулĕн итогĕсем» (В. Канюков). Талвир — Долгов руководствин çĕнтерĕвĕ. Пуху идея тĕлĕшĕнчен çўллĕ шайра иртрĕ. Чи интереслĕ выступленисем — «Таврăннисем» (Титов, П. Иванов, Кузнецов). Эпĕ те тухса каларăм. Тезис — юрату-ырату. Уссе пыракан кăмăла ĕмĕрне тулман кăмăл позицийĕнчен çырмалла. Паян та нумайăшĕ çавăн çинчен калаçаççĕ, çынсене, уйрăмах çамрăккисене, килĕшнĕ пулас. Пухусем вăйлăланса пынине пурте сисеççĕ. Шаккурпа Канюкова çак япала килĕшмест. Вĕсем калаçмарĕç.

Долговпа Шавли дуэлĕ питĕ интереслĕ пулчĕ. Алка пăшăрханать, хăйне хăй тытма пĕлмест, организаци çирĕпленни ăна килĕшмест, таврăннисем пĕр харăссăн тата ыттисенчен вăйлăн тухса каланинче вăл «талвирсем» çирĕпленнине çеç курать. Пуху ытларах чăвашла калаçрĕ.

Аниссаран çыру пур. Пирĕн пĕчĕк посылкăна илнĕ. Ашшĕ çынлăхран тухнă. Амăшĕ сыв мар. Начар пурăнаççĕ.

Силпи амăшне чĕнет, чирлет.

Вырсарни кун Атăл леш енче, Кĕркури патĕнче, пул-

тăмăр. Çук çын хăнашăн юлашки чăххине пусса панă тенĕ пек, Кçинккана эрех илме чуптарчĕ, Атăл урлах ăсатса ячĕ. Нумай çырнă, анчах пĕтернисем çук.

Мартăн 28-мĕшĕ. Çакă çуркунне епле те пулсан Пăла тăрăхĕнчи ялсенче пулатăп: Шетмĕрен Патрĕккел таран. «Пăла тăрăхĕ» ятлă очерксен ярăмĕ пулать. Кашни ялпа çыхăнтарса хăйне уйрăм проблемăсем: хуçалăх, культура т.ыт.те. Шетмĕ — Аслă Арапуç — Кĕçĕн Арапуç — Еншик — Тăрăн — Патăрьел, Ахпӳртсем, Туçасем, Тимеш т.ыт.те. Аваллăх, хальхи, пуласси.

Мартăн 29-мĕшĕ. Унăн кĕлеткисене кăларса пăраха пуçларĕç. Пĕрремĕш шкулти техничка, чăваш хĕрĕ, çапла каланă: «Тем те курса тăрăпăр, Сталина та сарайне кăларса пăрахрăмăр та», — тенĕ. Пĕтĕм актив ЦК çырăвне вулать. Шупашкар пĕççе çапа кăна тăрать. Нонна мана пророк тет. Мĕншĕн тесен таврăнсанах эпĕ ăна çакăн çинчен каласа хунă. Петĕрсен Петĕрне çыру ятăм. Çинавирен çыру килчĕ — кичем ăна, мăнтарăна.

Мартăн 30—31-мĕшĕ. «Сарпике» кайса куртăмăр. Артистсем лайăх тăрăшаççĕ, анчах литература материалĕ[...]. Сăвă — сăвă мар, проза тесен — проза мар. Халап. Ыррипе усалли кĕрешни. Шуйттансем, упăтесем, тухатмăшсем. Халăх халапĕнче — кĕлĕ, кунта — юрă. Шуйттансем юрăран хăраççĕ — килĕшмест.

Спектакль хыççăн сӳтсе явнă. Василий Яковлевич Яковлев: «... шуйттансем нумайрах...», — тесе каларĕ тет. П.Н. Осипов ăна хирĕç çапла калать: «Шуйттансем сцена çинче мар, хамăр хушшăмăрта нумай, çавăнтан хăрамалла», — терĕ тет.

Юлашки кунсенче Марфа аппан «Ача чухнехипе» тертленсе ларатăп. [...]

Е.Я. тата А.И. килсе ларчĕç. Мăнтарăн карчăкĕсем, юлашки улшăнусемшĕн çав тери хавас, анчах вĕсен савăнăçĕ куççуль витĕр. ЦК çырăвне вуланă чухне А.И. тăршшĕпе йĕрсе ларнă. Гурий пĕр çыхă сухан янă.

Йăван «Хыпар» çинчен çырса пĕтерчĕ. Тĕп шухăш: «Хыпар» — революциллĕ хресченсен хаçачĕ. Хыпар — революциллĕ тăвăлсен йыхравçи. Кун пирки пысăк пуху туса ирттересшĕн. Çитет ĕнтĕ хăравçăсене пăлханма. Каллех «айĕсене» яраççĕ...

Иртнĕ вырсарни кун Ноннăпа сăн ӳкерттернĕччĕ. Аван тухнă. Пĕрне Мускава, Михалясем патне, çакăн пек асăнуллă çырупа ятăмăр: «Московской ветви нашего дерева. Да будет она плодовита!»

Апрелĕн 1-мĕшĕ. Вырсарни кун. Ноннăпа уçăлма тухрăмăр. Богдан Хмельницкий урамĕнче пĕр ушкăн ача темĕскер шавлаççĕ. Пĕри манран ыйтать: «Эсир, пичче, милиционер мар-и?» — тет. «Мĕн кирлĕ?» — теп. «Ав çав ача Сталин портретне çурса пăрахнă», — тет. Ачи: «Эп мар ăна, атте çурчĕ», — тет. Эпир каларăмăр: «Эсир шкул ачисеми? Апла пулсан кун çинчен хăвăр учительницăран ыйтса пĕлĕр...» Ачасем пиртен темиçе татăк тунă портрета пуçтарса юлчĕç.

Пинерписем патĕнче пултăмăр. Микулая куртăмăр. Тем пекех хавас: иксĕмĕр Енисей çинче калаçни пĕтĕмĕшпех тĕле килсе пырать тет.

Апрелĕн 2-мĕшĕ. Тĕпчев институчĕн ăслăлăх сессийĕнче пултăм: «Культура и культурное наследство чувашского народа». Чăваш культури çинчен вилнĕ халăхăн культури çинчен калаçнă пек калаçаççĕ. Макаров, çут ĕç министрĕ пулнăскер, ачасене мĕнле чĕлхепе вĕрентес шухăша каланă чух Кушкă пупĕ Смеловпа пĕр канаш пуласси патнех пырса çапăнчĕ. Чухламасть — хăш вăхăтра тата мĕнле условисенче И.Н. Ульянов ĕçленине. Чĕрĕ те мал ĕмĕтлĕ шухăшсем Канюков докладĕнче анчах палăркаларĕç.

«Тăван Атăлăн» кĕнекин «авторскине» вуласа патăмăр.

Апрелĕн 3-мĕшĕ. Партире тăман писательсем Хрущев çыруне вулама пухăнтăмăр. Тин çеç пуçланăччĕ — Ялавин пырса кĕчĕ. Долгов: «Сире эпир чĕнменччĕ», — терĕ. Вара Ялавин çĕхĕрсе кайрĕ: «Кам эпĕ — негр-им? Сĕтĕрĕр — тухмастăп!..» — тет. Эпĕ ăна кăмăл тума сĕнӳ патăм. Ман шухăша Долгов та хирĕç пулмарĕ, анчах Ржановсем (унпа Ялавин нумай пулмасть сутлашнă) яхăнне те ямарĕç. Ялавин хăйĕн кăмăлĕ юлни çинчен Ислюков патне тата горкома шăнкăравларĕ. [...]

Каç кӳлĕм ăслăлăх конференцийĕнче пултăм. Йăван «Хыпар» çинчен хыпарлани (сообщение) питĕ интереслĕ пулчĕ. Халăх ăна чылайччен алă çупрĕ. Паянтан пирĕн 1906—1907 çулхи «Хыпар» чăваш культуринче аслă улăпсенчен пĕри пулать.

Волковăн чăваш халăхĕпе педагогика çинчен каланă сăмахĕ кăмăла кайрĕ. Ача паттăр аталанать. Димитриев (ученăй секретарь) сăмахĕнче И. Яковлев шкулĕ вырăс чĕлхине мĕнле вĕрентни çинчен асăнни питĕ вырăнлă пулчĕ. Ачасем чĕлхене творчествăллă меслетсемпе вĕреннĕ: вырăсларан чăвашла куçарса, чăвашларан вырăсла куçарса. Ку шухăш çине уйрăмах акцент тумалла, мĕншĕн тесен çавăн

пек пулсан кăна эпир тăван чĕлхен авторитетне çĕклетпĕр, вырăс чĕлхине лайăхрах вĕренетпĕр.

Ялавин П. Григорьева И. Яковлев ятне тивĕçлĕн хисеплеменшĕн çунтарса илчĕ. Пултарать, мур илесшĕ! Ним мар кăна кăнтăрмăш чăваш, трибуна çинче — кӳлсе тăратнă урхамах пек.

Апрелĕн 4-мĕшĕ. «Çынна çын пуççапнин сиенĕ» çинчен XX съездра тунă Хрущев докладне вуларăмăр. Паян Ялавин килсе чăрмантармарĕ. Нумайăшĕ ахлатса ларчĕç: маншăн, ĕлĕкех ахлатса ирттернĕскершĕн, тĕлĕнмелли сахал пулчĕ. Çапла пуласса эпир Енисей çинчех витĕр курса, витĕр пĕлсе тăнă. [...] Хирĕнчĕклĕ, чăнкă вырăнсенчен тормозсене çирĕп хытарса иртет: çуйхавсăр, пăлханусăр; лăпкă, тĕреклĕ. Докладри ыйтусем пурте эпир Николай Акимовпа икĕ-виçĕ çул каярах сӳтсе явнисем. Турра шĕкĕр! Уçăлать, çутăлать, уяртать. Çакă шанчăк сая ан кайтăрччĕ.

Макаров виçĕм кун тунă хыпарлăвĕ пирки эпĕ мĕн шухăшланă пирки Йăван манпа килĕшет. Макаров халĕ те хăйĕн халăхшăн намăс шухăшне сĕтĕрет. Мĕн чул сиен кӳмен вăл министрта ларнă чухне!

«Коммунизм ялавĕнче» [М.Р.] Федотовăн тăван чĕлхе çинчен çырнă статйи тухнă. XX съездчен кун пек статьяна çырма чăвашра никамăн та хăю çитес çукчĕ. В. Димитриев шухăшĕпе, вăл статьяна эпĕ редакцилесе янă. — Çук, — тетĕп. Ĕненмест, анчах хăй нимĕн те чĕнмест. Кайран, Канюков каласан çеç (вăл статьяна малтан Тĕпчевре редакциленĕ иккен) эпĕ вăл статья пирки тĕкĕнменнине ĕненчĕ. [...]

Апрелĕн 5-мĕшĕ. Парти вĕрентĕвĕ. Эпĕ те çӳретĕп. Паянхи ыйту — «Ял хуçалăхĕ» (Хрущев доклачĕ тăрăх). Василий Иванович Краснов-Асли тухса каларĕ, мухтанчĕ. [...] Пример вăйĕ çинчен каларĕ. Ку япала вăл вăрçăра лайăх: малта пыраканни чи хаклине — хăйĕн пурнăçне — шеллемест. Колхозра мĕнле? Унта чи малтан ĕçлекен çынна пăспа мар, çăкăрпа, материаллă пурлăхпа çĕклентермелле. Сан пусупа пĕр кун пурăнма (ĕçлеме) пулать, çăкăр кашни кун кирлĕ. Парти халĕ çапла тăвать те (ежемесячное авансирование). Эпĕ те тухса каларăм: ĕçкĕ колхозниксен пурнăçне епле хавшатни, сăтăр туни çинчен... Кукуруза çынсене нумай шухăшлаттарать, калаçтарать. Уççăнах каламаççĕ те, ахăртнех, ку культура пирĕн еншĕн, лайăх примерсене пăхмасăрах, чăн-чăн культура пуласса шанмаççĕ пек туйăнать! Ӳстерсе çитĕнтерме те йывăр, чăкăлтăш. Тата ӳстерсе çитĕнтерсен те алла илме хĕн — тăм пĕтерет. Чее халăх çавăн пек калаçать (вăл май та, май та мар).

Апрелĕн 6-мĕшĕ. «Коммунизм ялавĕнче» «Тăван Атăлти» ум статья пирки çыру пур. Çырăва алă пусман. Пĕлекенсем каланă тăрăх — Агаковăн. [...] Редакторпа унăн çумми [...], тĕрĕс маррине пĕле тăркачах, çырăва пичетлеме май панă. Йăван аркатуллă ответ çырчĕ. Вĕсем пичетлемесен хамăр патăрта тухать. «Атăлти» ум статья манăн, ăна çыраканни те, çырăва яраканнисем те лайăх пĕлнĕ. «Радио-тамашана» «Ялав» йышăнчĕ.

Элекçейпе татнă телефон пирки калаçу пулчĕ. Ятлаçма пăхать. Мĕншĕнне каласа патăм.

Нарспирен çыру пур — Михаля çинчен çырса пĕтереймест.

Апрелĕн 7—8-мĕшĕсем. Партире тăраканнисем асли патне кайса килчĕç: калаçу — 37-мĕш çулшăн вĕчĕ хывса çŭремелле марри çинчен. Шаккур ŭкĕнĕçлĕ сăмах тухса каланă. Тимрясова Йăван «Коммунизм ялавне» альманаха хирĕç çырнă статьяшăн хирнĕ.

Вырсарни кун ниçта та тухман. Альманаха «к печати» вуларăм. Йăван статйине («Çапа пĕлмен пушă») редакцилесе тухрăм.

Апрелĕн 9-мĕшĕ. «Çапа пĕлмен пушша» редакци членĕсем пурте алă пусрĕç. Кăнтăрла иртсен Тĕпчев институтĕнче пултăмăр. П. Григорьев Хусан архивне кайса килнĕ хыççăн Тайăр Тимкки çинчен чылай интереслĕ хыпарсем пĕлтерчĕ. Каçхине, 6 сехетре, поэзипе проза секцин пухăвĕ пулчĕ. Проза антологийĕ (вырăсла) тата Муса Джалиль сăввисене (чăвашла) сŭтсе яврăмăр. Эп Джалилĕн икĕ сăввине («Урасăр», «Двина, Двина!») вуласа патăм.

Апрелĕн 10-мĕшĕ. Куллен 6—7 сехетре тăрса хулана уçăлма тухатăп. Васкамасăр Атăл хĕрринех çитетĕп. Çеçпĕл Мишши урамĕнче пĕр каскăн йытта пăшалпа печĕç. Лайăхах лектереймерĕç пулмалла — йынăша-йынăша тарчĕ. Атăл хĕрринче Павăла куртăм — шыва кĕме анать. Вăл тин çеç Упнертен (Вăрнар р-нĕ) таврăннă. Фермăра ĕне сăвакан çиччĕн, çиччĕшĕ те «Ялав» çырăнса илеççĕ. Чăваш литературине лайăх вулаççĕ. Вырăсла вуламаççĕ (начар пĕлеççĕ). Павăл уçă вак патне пырса малтан шыва ăскăчпа вĕтĕ пăрсенчен тасатрĕ, унтан салтăнса чылайччен хуçкаланчĕ (физкультура турĕ), вак урлă пăрахнă ăскăч аврине тытса пилĕк-ултă хут чăма-чăма тухрĕ, вара ал шăллипе нумай вăхăт сăтăрăнчĕ. «Ну, халь лайăх ĕнтĕ! Аппетит уçăлса кайрĕ, çакăн хыççăн апат лайăх анать», — терĕ. Çурăмĕ çинче йĕтре ванчăкĕ хăйăрса кăларнă евĕр тŭрленнĕ суран — Колыма палли (Йынга вырăнĕ).

Киле пасар урлă таврăнтăм. Тĕрĕк çыннисем açтăрхан мăйăрĕ тата сар мăйăр сутаççĕ. Тул çăнăхĕ, вырăнти вальцовкăпа авăртни — 4,5—6,00. Çăмарта 13 т., ĕне ашĕ (пит лайăх) — 25 т., типĕтнĕ хĕвелчамăш — стаканпа — 1,00. Пасар пуçтарăнса çитменччĕ-ха.

Апрелĕн 11-мĕшĕ. Ĕнер Йăван «Коммунизм ялавне» хирĕç çырнă çырăва обкома ятăмăр. Редакци — манăн, тата (пăртак) хушнисем. Паян пĕлтĕмĕр: нимĕн те туман-ха, яраканнисенчен пĕри — стационарта (редактор), тепри — курортра (заместителĕ).

Хусанкайран сăвăсем, эпиграммăсем илтĕм. Верук пачĕ (вăл çак кунсенче Мускава кайса килнĕ). [...] Çтихван паян кунĕпе пирĕн патăрта (ĕçре) кансĕрлесе ларчĕ. Темшĕн — кăмăлсăр. Ваççана юратмасть, шав хирĕçесшĕн. Эпĕ лешĕн хутне кĕтĕм те — мана «дипломат» тет.

Чирлекелетĕп. Шăм-шак йывăр.

Апрелĕн 12-мĕшĕ. Радио чăвашла çамрăксен ташшине калать. Нонна́па яра патăмăр ташша. Нонна ташшине йăлтах Ярдыковăран ýкерсе илнĕ — хăтланкаларăшĕ йăлтах çавăн: хуçкаланни, силленни, сăпайлăхшăн уттине тытни т.ыт.те. Пырать — пире никам та курмасть.

Каçхине политзаняти пулчĕ. Калаçрăм. Колхоз председателĕ ялта — тĕп фигура (ĕлĕк — райком секретарĕ пулнă). Çамрăк ăру ашшĕ-амăшсен ĕçĕсене хисеплеме вĕренесси, вĕсен ĕçĕсене малалла хăват парса пырасси çинчен каларăм. Шкула политехнизацилес ĕç çинчен калана́ чух И. Яковлевăн ĕлĕкхи опычĕ çинчен аса илтĕм (мастерскойсем, ял хуçалăх ферми). Пĕр майра мана вырăсла калаçтарасшăн. Вара эпĕ: «Мана тăван чĕлхепе калаçма çăмăлтарах, кунсăр пуçне, маншăн чĕлхе обществăри хутшăну хатĕрĕ çеç мар, чун-чĕре хистевĕсене йýнеçтерекен хатĕр те, — терĕм. — Тăван чĕлхепе калаçнă чух, турра кĕлтума лартнă çын пек, эпĕ канса каятăп», — терĕм. Ман шухăша юлташсем (пурте чăваш!) сивлемерĕç. Кýреннĕ майрана Василий Иванович Краснов-Асли ман сăмахсене куçарса пачĕ.

Çитес уйăхра парас сăвă сборникне «Кăмăлтан» ят хурас.

Апрелĕн 13-мĕшĕ. Поэзи секцине пухса Шавлин сатирăлла сăввисене пăхса тухрăмăр. Бюрократизма, улпутлăха, йăпăлтатнипе юп курса пурăнакансене, наянлăха, çăткăнлăха, куштанлăха питлет. Сăввисем — вăйлă. Сасси — хăйĕн. Аталанса çитнĕ поэт.

Паймен килнĕ. Пухура пулчĕ. Пуху чăвашла калаçрĕ.

Апрелĕн 14-мĕшĕ. Йăван хăваттирне туса пĕтерчĕç. Паян ăна куçма пулăшрăмăр. Çĕнĕ пӳрт ĕçки — çитес вырсарни кун.

Алка творчести çинчен тăвас докладра çак шухăша уçса памалла: В основе чувашского литературного языка — *словесное богатство* низового наречия и *фонетическая гибкость* верхового наречия. Чăваш сăмахĕсенче хăйне евĕр пусăмсем (ударенисем) пурри çинчен Н.В. Никольский хăйĕн революциччен тухнă словарĕнчех каланă: лаша, карăк, çаврăнăттăмăрччĕ (мы обернулись бы).

Апрелĕн 15-мĕшĕ. Петĕртен (Хусанкай) тата Нарспирен çыру пур.

Апрелĕн 16-мĕшĕ. «Путешествие по Аргентине» кайса куртăмăр. Тимĕр чӳречe уçăлсах пырать. Тавтапуç. Тĕнчене кура пуçларăмăр. Мĕнле çĕршыв! Эх!.. Тĕнче çутине сая ярса пурăнатпăр эпир!

Каç кӳлĕм, ĕç пĕтсен, Марье Ухсайпа Атăл хĕррине тухрăмăр. Марье Талвир çине ӳпкелешет: ман çула Мускавра питĕрсе çӳрет тет. «Кăра çилсем» Мускавра вырăсла тухас пек калаçать (Мусатов куçарать).

Эрик Мольнар кĕнекине куртăм («Проблемы этнографии и древней истории венгерского народа»). Чăвашсем çинчен нумай. Çынсем ĕçлеççĕ!

Апрелĕн 17-мĕшĕ. П. Хусанкая çыру ятăм. Унăн юлашки эпиграммисем Долгова питĕ те килĕшрĕç, хăй валли çырса илчĕ.

Ĕç хыççăн Николай Хромова тĕл пултăм — ача чухнехи юлташ. Халь вăл Козловка пуçлăхĕ. Сăра заведенине кĕрсе пăртак, курнăçнă ятпа, ĕçкелерĕмĕр. Аван иккен вăл ачалăха асăнса ларма. Иксĕмĕр те каçса кайсах тахçанхи мыскарасене пурнăç хунă, лап-лап сийсен айĕнчен турта-турта кăлартăмăр. Хăваттире те килсе курчĕ. Сăвăсен пуххине часрах кăларма сĕнет. Нумай çĕрле Ноннăпа Микулай Ильпексем патне çитсе килтĕмĕр...

Тутар каллех пуять. Çĕр кăмрăк тупнă. Сийĕ 15 м таран!

Апрелĕн 18-мĕшĕ. Р. хăйĕн пирки тĕлĕнмелле хыпарсем пĕлтерчĕ. Ахазова критикленĕшĕн ачана кĕçех пĕтермен. Партирен кăларнă — халĕ каялла илнĕ. [...]

Апрелĕн 19-мĕшĕ. Парти вĕрентĕвĕ. Тема: наци ыйтăвĕ. Заняти тăван чĕлхепе иртрĕ. 1937 çулта пулсан Уйăпа çавăнтах тытса хупмалла: Ленинăн наци политикине пирĕн республикăра пăсни çинчен акăш-макăш сăмах каларĕ.

Эпĕ Ленин патшалăхшăн йывăр вăхăтра Чĕмпĕрте чăвашсем валли икĕ семинари, каярах институт уçни çинчен каларăм. Фермăна тавăрса панă. 1919 çулта чăвашсен виçĕ уесĕ кăна (Шупашкар, Етĕрне, Çĕрпӳ) 6 мĕльюн пăт патшалăха тырă панă. Ку вăл ун чухнехи Хусан кĕпĕрни панă тырăран 75%. Выçлăх пулсан Ленин чăвашсене манман: выçлăха çемçетес тĕлĕшпе кунта Крупская ĕçленĕ. 1921 çулхи Мускав пулăшăвне чăвашсем чăн тивĕçлĕ пулнă, вĕсем ыйткалакансем мар, пур чухне хăйсем панă. Граждан вăрçинче (Хĕрлĕ Çарта) арăслан пек кĕрешнĕ.

Юлташсем пурте хăпартланса, ирĕклĕн калаçаççĕ. Çакăн пек уçă сывлăш паракан сăмахсене илтсен тăван çĕршыва чăн-чăнах таврăннăн туятăн.

Апрелĕн 20-мĕшĕ. Профсоюз пухăвĕ — Ленина асăнса. Ленин идейисене пирĕн кулленхи ĕçпе çыхăнтарса Йăван питĕ ăста доклад туса пачĕ. Альтук Орлова Ленина икĕ хут курни çинчен, унпа сăн ӳкерттерни çинчен каласа кăтартрĕ. Ун калавĕ пире каçăхтарса ячĕ. Пултарать. Мĕнле чĕлхе, мĕнле ăс, культура! Акă И. Яковлева тивĕçлĕ унăн ученици! Дать (обязательно) литературную запись этой речи! «Альтукиадăпа» ĕçлеме халех пуçлас пулать. Чăваш пурнăçĕнчен мĕн чухлĕ тата мĕнешкел пĕлет...

Апрелĕн 21-мĕшĕ. Пăр кунĕпех каять, Атăл тасалса пырать. Петĕр Денисовпа Атăл хĕрринче уçăлса çӳрерĕмĕр. Унăн грипп.

Апрелĕн 22-мĕшĕ. Вырсарни кун Йăван патĕнче çĕнĕ пӳрт ĕçкинче пултăмăр. Пиртен парне — электрочейник. Мăшăрсем чылай: пурте чăваш йăлипе мĕн те пулин илсе пынă. Эпĕ самаях ӳсĕрĕлнĕ. Йăвансем патĕнчен Ноннăпа тӳрех Атăл хĕррине тухрăмăр.

[...]

Апрелĕн 23-мĕшĕ. Матэ Залка 60 çулĕ. Союзра лару. Талвир, Тимрясов, Ваçанкка, Долгов аса илӳсемпе тухрĕç. Тĕнчепе çыхăну тытас шухăш-кăмăл чăмăртансах пырать.

1.30та «Тăван Атăл» конференцийĕ пуçланчĕ — Горький ячĕпе тăракан Тĕп библиотекăра. Вулакансем чăвашла кĕнекесем нумайрах ыйтаççĕ. Çырса ĕлкĕреймесен вырăсларан куçарăр теççĕ. «Капкăн» тата «Хатĕр пул» чĕрĕлессе питĕ кĕтеççĕ. «Тăван Атăлта» çапăнса тухнă произведенисенчен (пĕлтĕрхисенчен) Алка, Трубина Марфи, Аслан, Харлампьев çырнисене ырларĕç. Чăвашла вуласшăн, вуласшăн, вуласшăн. Пирĕн çырмалла, çырмалла, çырмалла.

Апрелĕн 24-мĕшĕ. Агаков пырса ларчĕ. Вăрçасшăн та, килĕшесшĕн те. К[узнецов]па манран этемсен сехрисем хăпнă. Т[алвир]па Д[олго]в эпир пуррипе вăйлă тесе шутлаççĕ. «Эпир вăрçма мар, сирĕнпе пĕрле ĕçлеме тавраннă!» — терĕм.

[...]

Апрелĕн 25-мĕшĕ. Пединститут директорĕн кабинетĕнче ученăйсемпе писательсен канашлăвĕ. Пичет ĕçĕнче ĕçлекенсем нумай. Кун йĕрки — Сироткинăн çĕнĕ кĕнекине («Чувашская литература советского периода») çапма йышăнчĕç. Н. Андреев докладне («Перевод относительных прилагательных на чувашский язык») итлерĕç. Доклад нумай шавлаттарчĕ. Эпĕ те тухса каларăм. -лă(-лĕ) аффикссене хŭтĕлерĕм: кирлĕ, анчах пĕлсе усă курмалла. Доклада чăвашла туманшăн Пинерпе Якимов (редактор) Андреева ятларĕç. [...]

Апрелĕн 26-мĕшĕ. Шатров патĕнче пултăм — Петтян тата хамăн унри архив пирки. Венский хăй кабинетне чĕнсе кŭртрĕ. Следстви вăхăтĕнчи илемсĕрлĕхсемшĕн каçару ыйтрĕ. «В исходе Вашего дела был лично заинтересован Митряшов, — терĕ. — Сире ун чух арестлемелле те пулман, каласма кăна илсе кŭртнĕ, хăвăр Митряшовпа каласса татăлнă пулсан кăларса яратчĕç», — терĕ. Ку тĕрĕс, мĕншĕн тесен мана аяла антарса яриччен çŭлте пĕр сутка ытла муталарĕç, çăхав çырма хушрĕç. Эпĕ килĕшменнине пула Митряшов вара мана тем те пĕр каласа хăртнă хыççăн Алексеев прокурортан санкци илет. Митряшовпа ман хушшăмри тавлашуллă каласăва Кавал ачи (халĕ кам вăл унта — пĕлместĕп) итлесе тăчĕ. «Вы до сих пор не отказались от ваших кр-их взглядов, — терĕ вăл эпĕ çăхав çырас çуккине курса, — в тюрьму его!» — «Пожалуйста, — терĕм эпĕ ăна тарăхса кайнă енне, — лучше в тюрьме, чем с вами». Çакă сăмах санкци илме сăлтав пулчĕ пулмалла.

Каçхине Йăванăн «Хыпар» çинчен доклад пулчĕ. Трактор пек алтать Йăван. «Хыпар» çинчен йăлтах çĕнĕлле, ленинла шухăшсем. Аргументсем — мĕнле! Историксенчен хирĕç калас текенсем пулчĕç, анчах вĕсен сăмахĕсем — детский лепет. Чăтаймарăм, тухса каларăм. Пуху пĕтĕмĕшпех чăваш чĕлхипе иртрĕ. Нихăçан чăвашла каласманнисем амăш чĕлхине аса илчĕç.

Апрелĕн 27-мĕшĕ. Ĕнерхи доклад çинчен каласу халĕ те пырать. Ман танлаштару — Кузнецов трактор пек алтни — Пăкă тенине тата Çĕрпŭел ачине кăмăла кайман. «Мĕн, эпир — сухапуçсем-им?» — тесе ыйтаççĕ тет. Эсир сухапуç-

сенчен те усал хатĕр, сирĕн хыççăн çум курăкĕ çеç шăтса кашлама пултарать.

Романов Ислюковпа каласнă чух мана аса илнĕ, мухтанă. Ислюков каларĕ тет: «Кристалланнă çын, асапран тасалса тухнă çын, ытлашши, çынна пăсаканни, унран пĕтĕмĕшпех тасалнă», — тесе каларĕ тет. Тавтапуç ыр сăмахне. Тĕрĕс. Этем тимĕр пулсан — вутра ун тутăхĕ анчах çунать, варри хурçă пулать.

Апрелĕн 29-мĕшĕ. «Огонекра», Ленин номерĕнче, чăваш çинчен харăсах икĕ статья. Ватă большевик Т.С. Кривовăн статйи савăнтарать. Чăваш телейĕ çинчен каланă чух Ленина асăнмасăр иртместпĕр, çавăн пекех Ленин çинчен каланă чух ытти халăхсем те чи малтан чăваша аса илеççĕ. [...] Мускавра та Ленин кунĕсенче Кривов тухса каласнă, Попов пьесине (Охотников çинчен калакан сыпăка) панă. Хусанкай поэмине вуланă. Каллех çын ăшне кĕретпĕр.

Петĕрсен Петĕрĕ çитрĕ. Тӳрех Надежда Константиновна пахчине кайрăмăр. Темĕн чул хыпар пĕлтерчĕ. Уйрăмах Грузи хыпарĕсем интереслĕ. Чăнах та, наци тени форма кăна мар иккен.

Апрелĕн 30-мĕшĕ. Уяв ячĕпе телеграммăсем илетпĕр, яратпăр. Ман сăвва («Ăртиван мучи Ямаша кайса курнă радио-тамаша») вуларĕç. Никитин артист маттур вуларĕ.

Ноннăна çуллахи пальто, хама пушмак туянтăмăр.

Пирĕн пуçлăхсем — Хрущев, Булганин — акăлчансем патĕнчен çитрĕç. Çул ăнăçнă. Ленин стилĕ пур çĕрте те хăйĕн пахалăхне кăтартать.

Ĕçке-çике чĕнекенсем нумай. Кайма тумарăмăр. Хирĕç парасси. Ачасене Мускавра вĕрентни çавă ĕнтĕ. Уявне те çын пек тума çук.

Лешĕн сăнĕ хулара пĕр çĕрте кăна — М. çурчĕ çинче. Эккей, ниепле пăрахаймаççĕ. Как же, хăйсен чăн-чăн патронĕ пулнă-çке.

Майăн 1-мĕшĕ. Демонстраци Шупашкарта вăйлă иртрĕ. Халăх, халăх, халăх. Хусанкайпа пĕрле пултăмăр; Долгов, Кузнецов, Талвир, Шавли пĕр ушкăнра çӳрерĕмĕр. «Асапçă» пĕр сăмах та чăвашла кăшкăрмарĕ. Петĕр кăмăлĕ уçă, ялан анекдотла япаласем çине куçать. Майăн тăваттăмĕшĕнче чăваш делегацийĕпе Румыни çĕрне тухса каять.

Майăн 6-мĕшĕ. Мункун. Ноннăпа апи тăпри çине кайрăмăр. Пĕлтĕр тирпейлени — çаплах. Пуç вĕçĕнчи йӳç улми

чӗрӗлет. Вилесен хули таҫта ҫитиех ӳссе кайнӑ. Воробьевсен тӑпри ҫинче те пултӑмӑр. Тимӗр карта, обелиск.

Масар ҫине кайнӑ чух пӗр ӳсӗр чӑваш хыççӑн утса пытӑмӑр (юриех). 65—70 ҫулхи ватӑ, хула евӗр тумланнӑ. Юрларӗ, сӑмахсем каларӗ — ялан пӗр юрӑ, пӗр сӑмахсем:

Пурри пуршӑн кулянать,
Ҫукки ҫукшӑн кулянать.
Пирӗн мӗншӗн кулянас —
Эпир хамӑр хут укҫа!

Унтан пырать-пырать те: «Рахмат атте-аннене ҫут ҫанталӑка ҫуратса янӑшӑн — хурлӑх курма». Каллех пырать-пырать те: «Маншӑн паян та коммунизм, маншӑн ыран та коммунизм!» Татах пырать-пырать те: «Эх, тӗнче — хӑрах айккинче!» — тет хашлатса. Унтан каллах асӑннӑ юрра юрласа ярать, ун хыççӑн ҫав сӑмахсенех калама пуҫлать.

Старик хыçӗнчен эпир ҫухрӑм ытла пытӑмӑр — ялан пӗр юрӑ, пӗр сӑмахсем. Хӑйӗн ӗмӗрӗнче нумай курнӑ-тӳснӗ этем пулмалла.

Каҫ кӳлӗм Давыдовсемпе Атӑл хӗррине тухрӑмӑр.

Майӑн 7-мӗшӗ. Петӗре ӑсатрӑмӑр — Мускава. Вуннӑмӗшӗсенче Румыние каять. Ҫынсем ӑсанса пӗтсен те иксӗмӗр нумайччен урам тӑрӑх уҫӑлса ҫӳрерӗмӗр. Час таврӑнаймасӑр Ноннӑна каллех пӑшӑрхантартӑм.

Майӑн 8-мӗшӗ. Пинерпи килсе ларчӗ. Арапуҫ хыпарӗсене чылай пӗлтерчӗ — вӑл Май праçникне ялта ирттернӗ. Ҫинкка акки ма́нка илмелӗх 30 т. укҫа янӑ. Эпӗ ҫав-ҫавах «Альдюкиадӑн» пуҫламӑшӗпе ларатӑп. Йывӑр ҫырӑнать. Хавал сахал. Пӗр пӗчӗк япалашӑн Ленинӑн икӗ томне (29,30) вуласа тухмалла пулчӗ. Мӗн чухлӗ ӑс, мӗн чухлӗ вӑй. Тапса, капланса, тулхӑрса тӑрать. Вулама тытӑнсан — татӑлма ҫук. Леш ӑçтиçук, йӗксӗк, каюкла, питсӗр, путсӗр, пилсӗр ҫакӑ Улӑппа танлашасшӑн пулнӑ вӗт! Э-э-э-эй, шӑмурчак! Тӗнче мӑшкӑлӗ.

Кӗркури Краснова куртӑм. Джалиле куçарнине ырлать, мухтать (кам куçарнине пӗлмесӗр — шӑп эпӗ куçарнисене).

Майӑн 9-мӗшӗ. Радиопа Огинский вальсне параççӗ. Чуна кайса тивет. Тахçан пулни-иртнисене аса илтерет. Çакӑн пек вӑйлӑ произведени музыкӑра эпӗ сахал пӗлетӗп.

Паян Якурпа, вӑл ыран Румынине тухса каяс умӗн, Атӑл хӗрринче уҫӑлса ҫӳрерӗмӗр. Пирӗнпе Çерахви те пулчӗ. Альтук аппа пулчӗ. Васкатать. Ун ҫак кунсенче канма каймалла. Нонна хытӑ ывӑнать. Вӗренӳ ҫулӗ часрах пӗттӗрччӗ.

Радиопа паян пенси çинчен çĕнĕ положенисем пачĕç. Ăнланса пĕтереймерĕм. Халăх тахçанах кĕтетчĕ. Тата çĕнĕ УК кирлĕччĕ, партмаксимум йĕркине каялла тăвасчĕ. Вара пирĕн авторитет нумай хăпарĕччĕ.

[...]

Майăн 12-мĕшĕ. А.И. пулчĕ. К-на историне каласа пачĕ. Тĕлĕнмелле. Талейраннăн Шупашкарсенчен вĕренмелли нумай пулнă. Ай да Семерамида Чувашская!

Майăн 13-мĕшĕ. «Ленина курни» очерка пĕтертĕм. Хамăн кăмăла каять. Нумай тăрăшрăм. Ленинăн икĕ томне (29—30) çула май пĕтĕмпех вуламалла пулчĕ. Евдокия Яковлевна савăнса кайрĕ.

Майăн 14-мĕшĕ. Редактор [...] çивĕч, сулмаклă вырăнсене йăлтах мăкатса, якатса тухрĕ. Хăравçă. «Кăвак хуппине» мистика тет. «Алтарь отечества», «священный долг» мистика мар-им?» — терĕм. Вĕсем поэзи категорийĕ пулсан «Кăвак хуппи» те çавах. «Эрне пурнăçăм тикĕс пулмарĕ» тенине те хуратнă. Каларăм: «Çавăнпа Альтукăн сăнарĕ интереслĕ те — пурнăçĕ унăн тикĕс пулман. Çавăн пек çынсем — тимĕр, хурăç», — терĕм. Тата Абашева вулама пачĕç — ыран мĕн калĕ. Эльмен çинчен асăннине хуратрĕç.

Паян иртенпе (халĕ 11 сехет, каç) чĕрĕслетсе çумăр çăвать, урам урлăшпех асфальт çийĕпе шыв юхать. Кăçал çуркунне те кун пек пулман. Çапла пĕр эрнене яхăн (шăп эрне ĕнтĕ!) çумăр çăвать.

Паян пирĕн çурт çинче Шелепи хăмине уçрăмăр. Халь тин Ноннăпа Шелепи каçĕнчен, Советсен çуртĕнчен, килтĕмĕр. Çумăр пирки халăх нумаях пулмарĕ. Студентсем поэтăн сăввисене вуларĕç. Оркестр (симфонический) чăваш кĕввисем вылярĕ. Петров, Пикулина юрларĕç. Алка сăвви — Шелепи çинчен — чи лайăххи. Аслă, илемлĕ, хĕлхемлĕ сăвă. [...]

Майăн 17-мĕшĕ. «Ленина курнине» аслисем кăранташпа вуласа тухнă. Ислюковăн паллисем уйрăмах интереслĕ, тимлесе вулани курăнать. «Чăваш» çине ытларах пусăмланине асăрхаттарнă. Тата (тĕлĕнмелле) 1918 çул икĕ чăваш уесчĕ патшалăха 5 млн. пăт тырă панине ĕненмеççĕ! Эпир халĕ те, мĕнпур республика, унтан ытла параймастпăр тесе каласçĕ иккен. Çавăн пек фактсене пирĕн аслисем пĕлсе тăрсан хамăр çинчен урăхларах шухăшлĕччĕç вĕсем. Çав тĕллевпе кăтартнă та эпĕ вăл факта. 1921 çул Ленин хăй выçăхакан чăвашсен положенине çăмăллатас тĕлĕшпе çав

тери тăрăшни (юри кунта Н.К. Крупскаяна т. ыт. янă) ахаль мар, патшалăх чи йывăр вăхăтра чăвашсен умĕнче парăма кĕнĕ. 1918 çул, революцишĕн чи-чи хăрушă вăхăтра, Мускава, революци чĕрине, никам та мар (Украина та мар, Грузи те мар т.ыт.те), чăваш пулăшнă. Ленин çакна лайăх астуса тăнă. Çавăнпа хам очеркра çак факта акцентларăм та эпĕ. Тĕлĕнтерет, тарăхтарать — питĕ начар пĕлеççĕ пирĕн пуçлăхсем хамăр историе!

Очерка «Коммунизм ялавне» ыйтаççĕ иккен (Кăлкан пĕлтерчĕ). «Тăван Атăлра» çапăнса тухмасăр парас мар. Ислюков Мускав валли вырăсла куçарма хушнă.

[...]

А. Артемьевран илтнĕ афоризм кăмăла кайрĕ: «Написанное пером нельзя редактировать топором, написанное топором нельзя редактировать пером».

В.И. Краснова 900 тенкĕ пенси тухать.

[...]

Политзаняти хыççăн уçăлмалла тесе масар çине Йăван, Ваçилей кайрăмăр. Эльмен тĕлне Ваçилей манран лайăхрах пĕлет. Эхмин тĕлне те кăтартрĕ, анчах, паллах, приблизительно. Пур çĕрте те — çул, сукмак, автомобиль лапăртаттарса çýренĕ йĕрсем — тăмлă йăрансем. Кстати, Ислюков ман очеркра Эльмен çинчен каланине хăварма хушнă, халĕ унăн тăприне тирпейлеме шутларăмăр тесе калать тет.

Çула май, Йăван Слупике ятлă чăваш хĕрĕ çинчен питĕ илемлĕ калав ярса пачĕ (историллĕ факт, Разинсен вăхăчĕ).

«Кăмăлтан» вĕçленсе пырать.

Пирĕн политкружок пирки пĕр-икĕ сăмах. Коммунистсем питĕ сахал çýреççĕ. Нумай çухатаççĕ. Калас пулать, пирĕн кружок пекки хулара вăй тĕлĕшпе сахалтарах та пулĕ. Ялан калаçусем çýллĕ шайра иртеççĕ. Составра: икĕ çын — ĕлĕкрех Обком агитаторĕ пулнă çынсем, пĕр çын — хальхи Обком членĕ. Çýрекенсем пурте тенĕ пекех аслă шкул пĕтернисем.

Майăн 18—19-мĕшĕсем. Томасова куртăм. Облаçран республика (1925 çул) туни çинчен каласа пачĕ. Вăл ун чухне Обком секретарĕ пулнă. Чăвашсен требованийĕ: «Облаçран республика тумалла, центрĕ Чĕмпĕрте пулмалла. ЦИКра ĕç тухмасть, Калинин умĕнĕнче «Чувашия» кĕнеке касăлмасăрах выртнă. Томасов хăйĕн сăмахĕнче çакăн çинчен каларĕ. Михаил Иванович кăтăрса каять. Политбюро комиссийĕнче те ĕç тухмасть. Вара Томасов Сталин патне каять. Мехлис (Сталин секретарĕ) çапла калать: «Приму вас по любому вопросу, но только не по вопросу преобразования». Вара

Томасов экономика ыйтăвĕсемпе тет. Виçĕ минутранах Сталин йышăнать. Томасов Чăваш çĕршывĕнчи хуçалăх тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк йывăрлăхсем çинчен каласа парать.

— Где выход? — тет Сталин.

— Республика тусан самайрах пулĕччĕ, — тет.

— А все же протащил, — тет Сталин.

— Иначе у меня выхода не было, с кем ни говорю, все спрашивают Вашего мнения, — тет Томасов.

— Ну, говори, боюсь что ли, — тет Сталин.

Юлашкинчен, Томасов тĕплĕн каласа парсан: «Действуй, мешать не буду», — тесе каларĕ тет кавказла акцентпа.

Вара Томасов Политбюро ытти членĕсем патне çýрет, ýкĕтлет. Нумайăшĕ килĕшеççĕ.

Смирнов: «Салатса пĕтертĕр Российăна. Комиссарсенчен те вырăсран пĕр эпĕ кăна», — тесе каларĕ. Бухарин ун çине сиксе ýкет: «Эсĕ хăвна кăна вырăс тесе ан лар, эпир те вырăс».

Политбюрора нумай-нумай тавлашаççĕ. Зиновьев, малтан Томасова хýтĕлеме пулнăскер, компромисла решени парать: «Голосовать за республику с включением Алатыря». Ун сĕнĕвĕпе килĕшеççĕ. Варейкис, Гусев Ульяновскине пире питĕ парасшăн пулнă (Варейкис чăвашсене хăй Чĕмпĕрте ĕçленĕ чух лайăх пĕлнĕ), ыттисем е хирĕç (Молотов та), е хăйсен шухăшĕсене палăртман. Калинин политбюрора пулман (юрать-ха вăл пулмарĕ тет Томасов). Сталин çур сехет ытла сăмах каланă (теоретическая речь).

Майăн 20-мĕшĕ. Ларионовкăна (Çĕнĕ Салана) Екатерина Пименовна патне кайса куртăмăр. Тин кăна вĕренсе тухнă учительница пек пурăнать — нимĕн те çук. Çула май Петĕр Денисов патне кĕтĕм. Ун юлташĕпе — геологпа паллашрăм.

Майăн 21-мĕшĕ. Виçĕм кунах Комитета тупнă япаласене илме чĕнтернĕччĕ. Кайрăм. Нимĕн те тупманпа пĕрех. Икĕ карточка (фото), справка об освобождении (1947 год) тата свидетельство — вĕренсе тухни çинчен (Чĕмпĕр, 1928). Петĕрĕн — çук, нимĕн те тупман. Обыск протоколĕ тăрăх та нимĕн те çук теççĕ. С-ов унăн приговорне тата хăй çырнă кассацине вуласа пачĕ. Ачана нимĕн айăпсăр пĕтернĕ. Паллах, маншăн.

Кунĕпех паян ученăйсен сессинче лартăм. Ыйту — происхождение чуваш.

Майăн 23-мĕшĕ. Паян ир кýлĕм писательсем патĕнче Н.В. Никольский проф. пулчĕ. «Хыпар» историне каласа пачĕ.

Пухăвăн официаллă мар протоколне эпĕ çырса пытăм. Писательсем старике тем пекех тĕпчерĕç. Вăл каласа панă тăрăх, «Хыпар» кун-çулĕ революциллĕ чăвашсен эпопейи. Юлашкинчен хăйĕн интереслĕ биографине каласа пачĕ.

Ĕнерпе паян «Тăван Атăлăн» виççĕмĕш номерĕпе (авторская корректура) лартăм.

Майăн 28-мĕшĕ. Ĕнерпе паян Ăслăлăх институчĕн конференцийĕ. Ыйту: чăвашсем пулса кайни. Ку ыйтупа Смирнов проф. (археолог) тата Серебренников (лингвист, Наукăсен Академи член-корреспонденчĕ) доклад туса пачĕç. Тухса калакансенчен В. Димитриевпа И. Кузнецовăн (уйрăмах — кайранхин) сăмахĕсем витĕмлĕ пулчĕç. Шăп ман шухăшсенех калама çывăхарчĕç. Ман тезис: пулхăр (суаз) — чăвашсем (хальхи тутарсем пирки). Тутарсем хăйсене пĕртен-пĕр пулхăр ачисем тесшĕн, чăвашсене финсем патне ярасшăн. Кун пирки вĕсене Кузнецовпа Димитриев питĕ çапрĕç. Пĕтĕм аргументсем пулхăр теорине çирĕплетеççĕ. Импотентсем шухăшласа кăларнă автохтонлă теори пĕтрĕ. Халĕ ăна, тутарсемсĕр пуçне, никам та хŭтĕлемест. Час вăхăт çитет. Паянхи тутарсем — ĕнерхи чăвашсем тезиса йышăнаççех. Ахаль мар çармăссем вĕсене паян кун та суазсем теççĕ. Гамиди (эпĕ унпа каласăм), ĕнерхи чăваш паян — Сĕве тутарĕ, çакна пĕлмене перет. Пĕлсен те унăн пĕлтерĕшне шута илесшĕн марри курăнать.

Майăн 29-мĕшĕ. Поэзи çинчен ĕнерпе паян Правлени валли доклад çыртăм. Правленин сарлака ларăвĕ доклада ырларĕ. Ыйтусене хирĕнчĕклĕрех лартнипе доклада çырни тăрăх вуламалла пулчĕ. Вулама пуçличчен çакăн пек ум сăмах каларăм (шŭтлĕрех тонпа):

«Ĕçкĕри юлташлăха пайташлăх теççĕ, ĕçри юлташлăха ĕçтешлĕх теççĕ (Н.И. Ашмарин, çавăмĕш том, çавăмĕш страница).

Пайташлăх йăпăлтатнине юратать, ĕçтешлĕх критикăна юратать. Эпир ĕçри ĕçтешлĕхшĕн, сывлăхлă конфликтшăн. Юратать пулсан — ыратать, ыратать пулсан — юратать. Ман сирĕн умăрта тăвас докладра хирĕнчĕклĕ вырăнсем нумай. Çитменнине çитерĕр. Ытлашшине каçарăр. Йăнăшсене тŭрлетĕр...»

Йăван: «Чисти мăн кĕрŭ такмакĕ пекех», — тесе ларать.

Доклад пирки ырласа калаçакансем чылай пулчĕç. Пичетлемелле терĕç. Кăткă Упи хăйшĕн ырри нимех те пулмассине сиссе доклад пуçлансанах тухса кайрĕ.

Çак кунсенче сăвăсен сборникне пĕтерсе паратăп.

Майăн 30-мĕшĕ. Паян кунĕпех корректурăпа лартăм (к печати!). «Советская Чувашия» хаçатра Сироткинăн статйи пур. Ман ята та асăннă.

Халĕ — çур çĕр иртсе иккĕмĕш сехет. Икĕ хĕрарăм, пĕр арçын, ўсĕрскерсем, чăвашла юрласа иртсе кайрĕç. Ялти пек. Чунăм савăнса юлчĕ.

Июнĕн 7-мĕшĕ. Ĕсмеле кайма машина кĕтсе ларатăп. Ирхине 7 сехет. Шавлипе каймалла. Районти литпĕрлешӳ вырăнти типографинче альманах кăларать. Çавна пăхса тухмалла.

Иртнĕ вырсарни кун Ноннăпа Атăл леш енне каçрăмăр. Пирĕнпе Давыдов Ваçлей арăмĕпе пулчĕç. Унта парка кĕрсе тухрăмăр. Ыхрути, пултăран татса килтĕмĕр. Ваççапа иксĕмĕр пĕр пĕчĕк мыскара туса илтĕмĕр. Пристаньрен Ноннăпа Маруç кăвас ĕçме кайрĕç. Катер çитрĕ те, эпир Ваççапа ларса кайрăмăр, леш енне çитсе çав катерпах Ноннăсене илме каялла каçрăмăр. Вĕсем пристаньре çук та — пирĕн хыçран леш енне кимĕпе каçнă иккен, вара темчченех пире йăлăмра шыраса çўренĕ. Пире курсан Нонна ман пата çур çухрăмран чупса пычĕ, питĕ çилленнĕ, ман кĕсьерен çăраççисене туртса кăларчĕ: киле каятăп тет. Аран-аран лăплантартăм.

Виçĕм кун поэзи çинчен тунă доклада «Коммунизм ялавне» патăм.

Июнĕн 9-мĕшĕ. Ĕнер каçхине, 6 сехетре, поэзи секцине пухрăмăр. Халăх 20 çын ытла пулчĕ. Ыйту: «Акăш кўл». Авторсăр сўтсе явас мар терĕç. [...] Виççĕмĕш хут пуху пулаймарĕ ĕнтĕ. Уйăп демократи çине ярать. [...] Пуху çапла каларĕ: демократи кирлĕ, анчах дисциплинăна манмалла мар. Дисциплинăсăр демократи — анархи. Капла пăхсан, терĕм эпĕ, Речь Посполитая панĕсен демократийĕ патне çитме пулать: пĕри не позволим! тесе калать те — ĕç тухмасть, ыттисем нимĕн те тăваймаççĕ.

Сехет ытла тавлашнă хыççăн салантăмăр. Шухăшлатăп-шухăшлатăп та: пирĕн хушăмăрта тăван литературăшăн çунакан пит сахал. Пухура хăйсен шухăшне ĕненсе калаçакансем çаксем пулчĕç: Талвир, Алка, Шавли, Ефимов, Тимрясовпа Вăрăмми дипломатланчĕç. [...] Шел, Шавли хатĕрленĕ доклад питĕ лайăхчĕ: ырă кăмăлпа, юратупа, ыратупа çырнă! Докладри вăйлăрах сăмахсем: пире ăшă юмор ăшă çумăр пекех кирлĕ... Çитет пире сăсăл пашалăвĕсем çитерме (парашют — пашалу çинчен тата лайăх вăрлăхпа пĕрле çум курăк вăррисем акакан çинчен).

Ирхине, 7-мĕш сехетре, Атăл хĕррине çитрĕм. Художе-

ство училищинче вĕренекенсен — пленэр: хăшĕ Иванов палăкĕ патĕнче, тепĕр ушкăнĕ Ахлаткин тăпри тавра, виççĕмĕшĕсем Çеçпĕл сăмсахĕ çинче. Кун лайăх пуçланчĕ. Художниксем ирхи тикĕс çутăпа усă кураççĕ. Хĕритун, пединститут студенчĕ, художник, поэт, пăрахут çинчен анчĕ — Горькинчен художество музейне курса таврăнать. Художниксем çинчен нумай каласа пачĕ. Овчинников чăвашăн картинине Третьяковка туяннă.

Июнĕн 10-мĕшĕ. 6 сехет тĕлне Атăл хĕррине çитрĕм. Тĕлĕнмелле илемлĕ ир. Атăл урлă чалăшшăн хĕвел çулĕ ўкнĕ. Фонтан патне пĕр ушкăн ял хĕрĕсем пырса тăчĕç. Пĕри, аслăраххи, фонтан мĕнле ĕçленине хăй пĕлнĕ пек ăнлантарать. Фонтантан ывăçпа шыв ĕçсе пăхрĕç. 12 хĕр (чăвашсем) бульварти чечексене сапаççĕ, вĕсемпе пĕрле автоцистерна çўрет.

Тĕрме чўречисен çўлти куçĕсене çĕкленĕ. Халĕ вĕсем козырексăр. Турат куç витĕр 9-мĕш камерăран Степан Максимовичпа иксĕмĕр черетлĕн Атăл çине пăхни аса килет.

Чăваш кĕллине кĕрсе тухас килчĕ. Паян çук иккен. Собор кĕрлесе тăрать. Паперть çинче темĕн чул ыйткалакан — суккăрсем, алăсăр-урасăрсем, юхан-шăтанлисем. Пĕр старик ман çине пăхса йăл-йăл кулса илчĕ: «Ха, епле уткалать», — тет. Эп унăн умĕнче чарăнса тăтăм, 20 пус кĕмĕл патăм. Хăлхасăр иккен. Чĕнсе те чĕнмест. Асран та катăк тĕслĕ.

Кунĕпех сборникпе лартăм. Ыран машинисткăна парас.

Нонна ачисемпе костера кайса килчĕ. Каçхине иксĕмĕр Атăл хĕррине тухрăмăр. Çанталăк ăшă. Эпир — кĕпе вĕççĕн çеç. 12 сехетчен (çур çĕрччен) çўрерĕмĕр.

Июнĕн 11-мĕшĕ. Сборнике машинистка аллине патăм. «Обзора» «Коммунизм ялавĕнчен» каялла илтĕм. Редактор вуласа тухнă — ун шухăшне пĕлместĕп. Заместитель П.Н. хам умра вуласа тухрĕ. Ырлам пек тăвать, анчах кĕске (пĕр подваллăх) кирлĕ тет. Сăлтавĕ урăх. Пирĕн правленине кураймаççĕ, вĕсен шухăшĕпе, статьяна правлени позицийĕнчен çырнă.

Июнĕн 19-мĕшĕ. Шăмат кун сборнике патăм. 2300 йĕрке. Йăван юбилейне кайса пулмарĕ — иккĕмĕш кун пуç ыратать. Ильбеков урлă салам хучĕ тата пĕр бутылка шампански ятăм. Ильбекова халь çапăнас романĕ валли ят тупса патăм — «Хура ыраш». Савăнса кайрĕ.

Арапуçсем — Макаров И.Н. пулчĕ. Краснов учитель çывăрса кайрĕ.

Вырсарни кун ниçта та тухман. «В лесах» вулатăп. Мĕн чухлĕ материал! Шăп эпĕ тертленсе çӳренĕ вырăнсем.

Ĕнер, тунти кун, Василий Ивановичпа иксĕмĕре Писательсен союзĕн членне куçарчĕç. [...]

Июнĕн 20-мĕшĕ. Паян кунтан Ноннăпа куллен шыва кĕме тĕвĕ турăмăр. 7-мĕш сехетре кайрăмăр. Шыв лĕп, тултинчен ăшă. [...] Пристань патĕнче Атăл хĕрри тулли — паранкă, Анат Атăла ăсатаççĕ. Таврăннă чух Агаков хирĕç пулчĕ, мана курсан урам урлă чупса каçрĕ.

Ĕнер Р.В. килсе ларчĕ. Канăççăр чун.

Июнĕн 22-мĕшĕ. Ирсенче-каçсенче шыва кĕме çӳретпĕр. Ĕнер Чăвашгизпа договор тăвасшăнччĕ — ĕç тухмарĕ, кĕнекен калăпăшĕ тата хакĕ пирки калаçса татăлаймарăмăр (план тăрăх ытла та сахал пăхнă). Культура министрĕ патĕнче пултăм. Вăл ĕçе Чăвашгизра пăхса тухма каларĕ, Александрова кăтарту пачĕ. Пралека каçхине Атăл хĕрринче куртăм, чылай пĕрле çӳрерĕмĕр. Юлашкинчен, хам тапратмасăрах, ĕçе положительно туса парассине каларĕ. Паян ирхине Атăл хĕрринче Артемьевпа Евстафьев та пулчĕç — шыва кĕме аннă. [...]

Ноннăна ĕнер пурçăн кĕпе илтĕмĕр. Сăн ӳкерттертĕмĕр. Нарспирен çыру пур.

Йăван çак кунсенче çĕнĕ ĕçе куçмалла — Чăвашгиз пуçлăхĕ. Хăй хирĕç мар.

Июнĕн 25-мĕшĕ. Виçĕм кун Чăвашгизпа договор турăм — хам палăртса хунă пек. Икĕ уйăхлăха отпуска кайма заявлени патăм.

Ĕнер каçхине вăйлă çумăр (аслатипе) пулчĕ. Уй-хирсем типсе кайнăччĕ, халĕ самайланаççĕ ĕнтĕ. Паян ирхине каллех çурĕ. Ноннăна ĕçе кайма çăмăлланчĕ, мĕскĕн — кашни каç шкул пахчине сапса супатчĕ.

Ленин садĕнче ĕнер — шкул ачисен фестивалĕ. Чăвашла ташлани (Чутай хĕрĕсем) кăмăла кайрĕ. [...]

Хула тулли ял интеллигенцийĕ.

Июнĕн 27-мĕшĕ. Ĕнер Уярăн шăрттансем çинчен çырнă статйи «Коммунизм ялавĕнче» çапăнса тухнă. Тахçанах каласмалли, пурнăçламалли ыйту. Кун пирки 1937 çулта эпĕ Лука Черновпа (наркомснаб) калаçса татăлнăччĕ, Лука савăнсах килĕшнĕччĕ. Кайран, пĕр-ик уйăхран, тĕрмере тĕл пултăмăр, асăнсаултăмăр. Энтузиастчĕ мăнтарăн ачи! Томасинлагра вилнĕ.

«Тăван Атăлăн» тăваттăмĕш номерĕ хатĕрпе пĕрех. 3-мĕшне

халĕ те типографинчен кăлараймаççĕ-ха, касасси кăна юлнă. Типографи учебниксемпе пӳлĕнсе ларнă. Ĕнер Чулкаç «Ленина курни» очерка радиона панă.

Илпек Виçпӳрте туя кайса килчĕ. Çумăр пирĕн енче те вăйлă çунă. Халăх кăмăлĕ хăпарчĕ тет.

Хусанкай халĕ те çук. Таçта — салам та, чалам та ямасть. Тăваттăмĕш кĕнекене унăн та сăвви каять — пит лайăх-скерсем.

Паян Шатрова урамра куртăм. Алă тытрăмăр. Ал çырусене лайăхрах шыраттарма пулчĕ. «Тайăр» патне тата тепĕр сăвă кайса патăм — Ильбекова кăмăла кайрĕ: «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем...» Çак кунсенче çырнăччĕ. Çамка, сăмса тăпси патнерех, каллех ыратать.

Июнĕн 30-мĕшĕ. Тумтир шкапĕ туянтăмăр. 1000 т. Нонна савăнса кайрĕ.

Каç кӳлĕм Петĕр килсе чылайччен ларчĕ. Вăл Т.С. Кривова илсе килнĕ — хăйĕн шучĕпех. Мĕрĕш çинчен чылай каласа пачĕ. Мускав хыпарĕсем. Çĕнĕ анекдотсем. Кавказ мыскарисем. Кĕнекене кӳртнĕ хăш-пĕр сăвăсене вуласа патăм. Çĕнĕ сăвăсемшĕн савăнчĕ.

Июлĕн 1-мĕшĕ. Юрă праçникĕ. Акатуй. Юманлăхра, Лакрей катинче. Тĕп эстрада — питĕ лайăх çĕрте — тарăн вар тĕпĕнче. Хирĕç çыран çинчен темиçе пин çын йывăçсен айĕнчен пăхса ларать. Тем аслăш амфитеатр пек. Йывăçсен айĕнче лараççĕ, тăраççĕ, таянса выртаççĕ; ĕçеççĕ, çиеççĕ, никам та никама кансĕрлемест; сцена çинче ташлаççĕ, юрлаççĕ; усилительсем сасса пур çĕре те çитереççĕ. Эллада! Чĕрĕлнĕ Эллада! Кривов макăрать тет. Унăн фотоаппарат пур, шав ӳкерет. Хусанкайпа пĕрле пултăмăр. Кузнецов — ачасемпе. В. Давыдов Марьепе. Первомайскисем сăн ӳкерттертĕмĕр. Кăçал юрă кунĕ питĕ те йĕркеллĕ иртрĕ. Хусанкай... тӳрре кăларма пăхать. Ч-ль. Т. кĕнекисем çине ссылка тăвать. Ипась каçхине ман пата пĕр литр эрех илсе килчĕ, хăна тăвасшăн. [...] Ĕçмерĕм...

Июлĕн 3-мĕшĕ. Ĕнер Кривов писательсем патĕнче пулнă. Ленин, Горький çинчен каласа панă. Питĕ шел, пулаймарăм. Пĕлмен. Килте ремонт, çавăнпа аппаланса иртертĕм...

Нонна, ухмахскер, мана хăратас тесе икĕ сехетчен кравать айĕнче пытанса выртнă. Эпĕ ăна çухатрăм. Икĕ сехетре хăйă çутса ятăм, шырама кайма тăтăм. Вăл кравать айĕнче ахăлтатса кулса ячĕ.

Çаваç килнĕ. Сада кайса пĕр çур сехет лартăмăр. Мĕс-

кĕнĕн хăрани халь те иртсе кайман, унталла-кунталла пăхсах ларать. Унăн ĕçĕпе пирĕн Пеття та свидетель пулнă иккен — ун май каланă, кастарса тăнă. Çаваç виçĕ çултан тасалса тухнă.

Карл Маркс Энгельс патне çырнă пĕр çырăвĕнче «урлăпирлĕ» сăмах пур, вырăсла ăна «вверх дном» тесе куçарнă. Иван Кузнецов кăтартрĕ. Маркс чĕлхинче ăçтан ку сăмах?

Мускава 7-мĕшĕнче каятпăр, броньсем илтĕм — пĕрне Тимофеевран (Верховный Совет), тепĕрне Зайцевран (профсовет).

Ноннăн кăмăлне пăсакан Арапуç хĕрĕ паян пирĕн патăрта çывăрать. Тĕлĕнмелле. Ман çинчен элек парать, пирĕн патăртах çывăрать, хăна пулать. Нравы!

Июлĕн 5-мĕшĕ. Давыдовсемпе Атăл хĕрринче çŭрерĕмĕр. Таврăннă чух Никольский профессора тĕл пултăмăр. Старик чарăнчĕ, калаçăва кĕрсе кайрĕ. Вăл Шăмата канма каять. Алă çул ытла ĕнтĕ вăл ялта канать, курорт пĕр хĕрринче тăтăр тет. Хусанкайпа Кривов иртсе пыраççĕ. Вĕсем те чарăнчĕç. Кривова: «Чăваш паттăрне салам», — тесе алă тытрăм. Урамрах хĕрŭ калаçу пуçланса кайрĕ. Хусанкай паян уйрăмах хавхалануллă, сăвăсем вулать. Кривов çĕнĕрен тăван çĕршывне тупнă çын пек, чăваш çинчен калаçса тăранаймасть. Хам вăйра чухне республикăна тивĕçлĕ таран çывăх пулаймарăм, пулăшаймарăм тет. Ўкĕнет те.

Июлĕн 6-мĕшĕ. Ивана кайса саламларăм. Кирлĕрех кĕнекесене пĕр уйăхра кăларса яма май пур тет. Каçхине каллех Давыдовсемпе Атăл хĕрринче çŭрерĕмĕр. Ыран — Мускава.

Июлĕн 11-мĕшĕ. Мускава шăмат кун тухса (7-мĕшĕнче) вырсарни кун (8-мĕшĕнче) çитрĕмĕр. Мыскарасăр-мĕнсĕр. Чŭречерен курăнакан кукуруз хирĕсем — чăл-чал, тĕл-тĕл çум пусса кайнă. Ахăртнех, ирĕксĕртен анчах аккалаççĕ. Юратман тата канăççăр ачана кам пăхтăр. Да, пĕр командăпа кăна нимĕн те тăваймастăн. Чăтăмлăн, тŭсĕмлĕн ĕçлени кирлĕ, çĕнĕ япалана вăраххăн ĕçлесе илĕхтермелле. Ленин çапла вĕрентнĕ те. Ниепле çĕнĕ ĕç те хăпăл-хапăл тунине юратмасть — ăсласа, шухăшласа ĕçлемелле.

Станцине пире хирĕç Илемпи тухрĕ. Нарсписем патне чĕрне вĕççĕн утса, пĕрне-пĕри тише! те тише! тесе пакăлтаткаласа кĕтĕмĕр — ачи çывăрать. Михаля вăранчĕ. Мăн кукашшĕ (ман атте) саслăн кăшкăрса ячĕ — йĕмест, ахаль выляса кăшкăрать. Алăра тытса чарма çук. Çап-çутă, хытă — услам çу чăмăркки пек. Ўсерех парсан Шупашкара илсе каяс.

Кĕрӳ вырсарни кун та ĕçре — Мускав пурнăçĕ тата çемье. Ятларăм. Нарспи ача пирки тивĕçлĕн ĕçлеймест, çавăнпа кĕрӳн уншăн та ĕçлеме тивет иккен. Ачана иккĕшĕ те вилсе юратаççĕ. Кукамăшĕ те савăнса кайрĕ, Илемпи те пĕчĕк шăллĕне алăран ямасть.

9—10-мĕшсенче ял хуçалăх выставкинче çӳрерĕмĕр. Чăнахах та курмалăх пур. Хули кăна мĕне тăрать: пĕлĕтлĕ, илемсĕр кун тĕссĕрлĕхне çĕнтерсе ялтăрать. Анчах хĕвеллĕ кун тепре (виççĕмĕш хут) килсе курас пулать.

Пултăмăр: СССР, РСФСР, Çĕпĕр, Узбек, чăвашла марисем, тутар, пушкăрт, карелпа финн, Молдави т.ыт. павильонĕсене, чăваш сыснисене куртăмăр. Сĕтлĕ ĕнесем, маттур лашасем. Кӳлĕ тулли пулă. Чайхана. Поплавок. Акăшмакăш фонтансем. Чăвашсен хăйне уйрăм павильон çуккине тарăхса палăртас пулать. Çĕр тĕслĕ чĕлхе, çĕр тĕслĕ халăх — экскурсисем. Вĕсем хушшинче — чăвашсем те. Пĕр чăваш хĕрарăмĕ йĕтĕн сӳсне сурчăкпа йĕпетсе туртса пăхрĕ — тĕреклĕ-и? Нонна ывăнать, час-час ларса канмалла. Выставкăра кун иртни сисĕнмест. Апат çиес килни те çук. Ларса канма та кăмăл çук. Шав утатăн-утатăн — вĕçне тухаймастăн. Икĕ кунĕнче те Нарсписем патне сĕм çĕрле çеç таврăнтăмăр. [...]

Ленин сăрчĕ çине, университет çуртне курма кайрăмăр. Тавтапуçах мана ирĕк паракансене — çак çурта курасси чун çуменчи ĕмĕтчĕ. Çуртĕнчен ытла таврашĕ лайăх. Авалхи Афинăри пек — йывăç пахчисем. Сократ хăйĕн вĕренекенĕсемпе юмансем хушшинчен тухассăн туйăнать. Çыран хĕрринчи кивĕ чиркӳ питĕ илемлĕ. Унăн тавра тайăлнă йывăç карта ăшĕнче чул палăксем. Кунтан Мускав таçта çити курăнать. Пултаруллă этемĕн ячĕпе мухтанас кăмăл каплана-каплана килет. Ура айĕнчех — аялта-аялта — Мускав шывĕ: унта кимĕсем, катерсем ярлатса çӳреççĕ. Кунта пирĕн чăвашсен пайĕ те пур. Ав çав çырана Нарспи проекчĕ тăрăх тикĕсленĕ.

Ленин сăрчĕ çинчен питĕ ăнăçлă килтĕмĕр. Каç кӳлĕм. Кунти илеме кăнтăр çутипе те, каçхи çутăсемпе те куртăмăр. Тĕттĕм пулса çитсен аллейăсенчи электричество хунарĕсем ялтăрах çутăлса кайрĕç. Тавралăха асамлă тĕс çапрĕ, чуна канăçлăх анчĕ.

Укçа шывла юхать. Çӳресех темĕн чул тăкăнать. Эпир виççĕн çӳрерĕмĕр: Илемпи тата амăшĕ. Билет хакĕсем: автобуспа электричка станцине çитме 0-40, электричкăпа Курски вокзалне — 1-45, метро — 0-50, троллейбус — Калужское — Ленинские горы — 0-80 = 3-15. Каллĕ-маллĕ пĕр çынна — 6-30.

Ир кӳлӗм çывăхри библиотекăна кайса «Коммунистăн» 9-мӗш номерне вуларăм. Ленинăн хальччен çапăнман документчӗсем. Ав мӗншӗн лешӗ пытарса усранă вӗсене! Наци ыйтăвӗпе çырнисем мана уйрăмах тӗлӗнтерсе ячӗç. Лешӗ пӗтӗмӗшпех Ленина хирӗç ӗçлесе пынă, пӗтӗм тӗнче умӗнче пирӗн ята янă. Партин халь мӗн чухлӗ тӳрлетмелли, çӗнӗрен тытса тумалли. Пăсма çăмăл, тӳрлетме хӗн. «Вырăсланнă бюрократсем» пирки Ленин мӗнле калать?! Халь пăртак шухăшларӗç-ши пирӗн Шупашкар панккавӗсем?! Çакă темиçе теçетке çул пытарса тăнă чăнлăха эпир чунпа-чӗрепе туйнă, уншăн хыпса çуннă, хӗн курнă. [...]

Июлӗн 12-мӗшӗ. Кӗрӳпе йӗркеллӗ калаçаймарăм та: ирех ӗçе каять. Каçхине, эпир килнӗ çӗре, канма выртать. Ачине юратать, арăмне хисеплет. Малашне мӗнле пулӗ? Хуçалăх тӗлӗшӗнчен тăн-тăнах пурăнаймаççӗ-ха — вун иккӗрен пӗри çитмест. Иккӗн икӗ пин ытла илеççӗ, çитмест. Çулшăн кăна 200 т. ытла тухать. Хваттер начар. Аялти хутра. 8—9 кв. м...

Венгра епле те пулсан Ломоносов университетне вӗренме кӳртесчӗ.

Июлӗн 16-мӗшӗ. Паян, пӗр эрне хăналанса пурăннă хыççăн, Мускавран тухса каятпăр.

12-мӗшӗнче каçхине хăта-тăхлачсем патне кайрăмăр. Питрав кунӗ. Хăтан менелник. Унтах выртнă. Тепӗр кун тăхлач, Настасья Георгиевна, пире Новодевичье монастырьне ăсатрӗ. Кӗлӗре пултăмăр. Пӗр карчăка пытараççӗ. Лужникинче тата магазинсенче çаврăнса çӳренӗ хыççăн Новодевичье масарӗ çине таврăнтăмăр. Денис Давыдов памятникӗ, декабристсен тăприсем. Плещеев чулӗ. Вун икӗ сехетрен çӗнӗ масар çине кӳртеççӗ. Шадр скульптурисем вăйлă (Сталин арăмӗ, Дудов чулӗ, Немирович-Данченко палăкӗ). Пирӗн, Ноннăпа иксӗмӗрӗн, çул ăнчӗ: пӗр старик, Мускава тата Мускав интеллигенцине (писательсене, артистсене) пӗлекен çын, ертсе каласа çӳрерӗ. Фадеев тăпри çине пӗр шур çӳçлӗ çын кăшăл хучӗ. Пӗр хӗр, 16—17 çулхискер, Фадеев тăпри çинче нумайччен ларчӗ, пиртен те юлчӗ.

Дмитрий Ильич Ульянов палăкне (мăнастир тӗп стени çумӗнче тем пысăкăш хура гранит лаптăкӗ, ун çумӗнче бюст) йӗркелесе пӗтернӗ. Пирӗн умра пӗр çамрăк ăста-ылтăнçă палăк çинчи датăсене ылтăн шывӗпе çырчӗ.

Тӗлӗнмелле, ку масар çинче пӗрре те вилӗм çинчен шухăшламастăп. Ахăртнех, кунта чылайăшӗ вилӗмсӗррисем выртнăран пуль: Гоголь, Чехов, Станиславский, Качалов, Ермолова т.ыт.те. Булганин ашшӗ, амăшӗ тата хуньăш тăпри

çинче хура чул хĕрессем. Хĕрес — вырăссен авалтан килекен традицийĕ, ханжа чĕреллĕ çын анчах тиркешсе ятлаçса хирĕçлеме пултарать. Кунта та вырăс пулнăшăн пирĕн премьера мухтассăм килет.

Июлĕн 14-мĕшĕнче Илемпи киле кайрĕ, пире кĕтсе тăраймарĕ. Ăна вокзала амăшĕ ăсатрĕ. Нонна, укçа çителĕклĕ чиксе кайманскер, каялла таврăннă чух Курски вокзалран Текстильщикине çуран лапăстатнă. Эпĕ вăл кун кунĕпех Выставкăри чăваш залĕнче пултăм. Очерклăх питĕ лайăх материал тупăнчĕ. Нумайччен пĕр кĕтесре çынсем мĕн илеççĕ (репликăсем) иртнине итлесе лартăм. «Ворошилов» тата «Гвардеец» колхозсен тĕслĕхĕсене çырса илтĕм. Павильонри Чăваш Республикине тивекен отзывсене тата сĕнӳсене çырса илтĕм. Хам та *пăри тĕслĕхĕ* кирли çинчен сĕнӳ çыртăм. Чăвашсем чăваш павильонĕ çуккишĕн ӳпкелешеççĕ. Кун çинчен хыттăнах çырас пулать. Чăваш залĕнче Чăвашран руководитель çук. Эпĕ выставкăна хальхинче пĕччен кайнăшăн Нонна çилленнĕ.

Июлĕн 15-мĕшĕнче выставкăна тепĕр хут каясшăнччĕ, пулмарĕ. Хăтасем-тăхлачсем килчĕç. Вара Горький паркне кайрăмăр. Халăх, халăх. Тĕрлĕрен аттракцион. Виçшер тенкĕ парса автомобильпе тата мотоциклпа çаврака стена тăрăх кустарса чупнине куртăмăр. Пуç çаврăнмалла. Темĕн те хăтланаççĕ хăюллă çынсем: пĕр çамрăк хĕр тата çулланнăрах арçын.

Нескучнăй садра канма лартăм. Пĕр çамрăк хĕрарăмăн урине асăрхарăм, илемпе киленсе кайни çинчен сасăпа пĕлтертĕм. Сисмен те — Нонна тарăхса кайнă. Темĕнччен çилленсе тăчĕ. Çĕр хăтасем патĕнче каçрăмăр. Лужникирен килекен 8-мĕш номерлĕ автобус пире Шарикоподшипник завочĕ патне çитерчĕ, унта хăта патне магазина кĕрсе тĕрлĕрен çимелли тавар туянтăмăр, унтан 17-мĕш номерлĕ автобуспа Текстильщикине çитрĕмĕр. Çапла пĕтĕм Мускав урлă каçрăмăр темелле (Кремль патĕнчен иртсе).

Нарспи «Капкăн» валли пĕр шӳт пачĕ: урду чĕлхипе лапăрту чĕлхи çинчен.

Ача пăхакан патне кайса килтĕмĕр. Михаля, патша ывăлĕ пек, илемлĕ кӳме çинче выртать. Йĕри-тавра çамрăк çăкасем, топольсем. [...]

Пирĕнпе пĕрле Шупашкара Нарспи пултăр хĕрĕ, Эля, хăнана пырать.

Июлĕн 17-мĕшĕ. Кăнтăрла иртсен Канаша çитрĕмĕр. Мускавра, Казански вокзалта, В.В. Зайцева куртăм, хăйĕн ятне каласанах пирĕн пата васкавлăн утса пычĕ. Ана эпĕ сăнĕнчен

(портретсем тăрăх) тата ылтăн медальпе Верхсовет палли тăрăх пĕлтĕм. Уççăн каласать. Выставка пирки сăмахларăмăр. Хама эпĕ: Арапуçсем, учитель терĕм. Пире ăсатма, поезд çине ларма тухсан кĕрӳ, хăта тата тăхлач çитрĕç.

Канашра 14 сехет лармалла. Пĕр çын алăкпа ал пӳрнине таттарчĕ. Поезд чарăнсан вăл тамбур çинче аллине уçă алăк хушăкне чиксе тăнă. Поезд тапранать, алăк хăйне хăй шалтлатса хупăнать, пĕр пӳрни пуртăпа каснă пек татăлать. Часрах станцăна врач патне чупрĕ, пӳрни платформа çинче выртса юлчĕ.

Канашра Валемпине тĕл пултăмăр: Улатăра практикăна каять. Инкĕшĕ (Нонна) пĕр мăшăр босоножки тата çуллахи кĕпе пачĕ (Мускавра илнĕччĕ). Пинерпи ыран Шупашкартан целина тыррине вырма тухса каять иккен. Киле кайса килейменрен макăрать тет. Ун валли те кĕпе тата босоножки пур.

Пирĕнпе пĕрле Мускавран Сергач тутарĕсем нумай тухрĕç — Курбан-байрама яла таврăнаççĕ. Ытла та пĕрлĕхлĕ халăх. Çула май кукуруза кашласа ӳснине куртăмăр. Пĕр тутарпа ун çинчен сăвă хыврăмăр:

Эпĕ: Байлар тарта папирус.

Тутар: Бĕс ашипăс кукуруз.

Ман соавтор пирĕн купене хунă ещĕкне манса хăварнă. Уçса пăхатăп — папирос, хура тул кĕрпи, икĕ пуç купăста, бубликсем. Манма та йывăр мар — унăн сахалтан та 10—15 çыхăччĕ. Мĕн тăвас? Хамăрăнах илсе каяс пулать пулмалла: пурпĕр çухалать. Уçă кăмăллă тутар пиччене асăнса çийĕпĕр.

Июлĕн 18-мĕшĕ. Шупашкара ирхине çитрĕмĕр. Целинана каякан çамрăксем станци тулли. Вĕсемпе — Пинерпи, вăл пире шыраса çӳрет, эпир — ăна. Тупрăмăр. Ача сĕлкĕш. Çамрăксемпе тулнă машинăсем килсех тăраççĕ, çĕнĕ çĕр юррисем янăраççĕ. Пинерпине 100 т. укçа патăм (хăйĕн юлнăччĕ), инкĕш Мускавра илнĕ кĕпе тата босоножки пачĕ. Пĕр-пĕрне ырлăх сунса, чуптуса уйрăлтăмăр.

Такси тытрăмăр. Пире хирĕç ял хуçалăх институчĕн студенчĕсем стройпа, музыкăпа пыраççĕ...

Çул çинчен мунча кайса кĕтĕм. Пайраш арăмĕ Матĕрне Союза васкавлăн кайма килсе каларĕ: Хусанкай чĕнет — Кривовпа сăн ӳкерттермелле. Кайрăм. Иванов палăкĕ патĕнче ӳкерттертĕмĕр. Кривов ыран Шупашкартан каять.

Килте инкек. Каç кӳлĕм анчах палăрчĕ. Илемпи пирĕнсĕр çурт-йĕре йĕрке кӳрем пекки тунă, шывĕпе пĕрле ачине те тухса тăкнă. Мăшкăлтăк шăтăкĕнче пĕр купа хут саланса

выртать. Шывпа, çумăрпа исленнĕ. Унтах ман Сибирь портфелĕнчи тетрадьсем. Илемпи вĕсене портфелĕпех кăларса пăрахнă, портфельне ачасем илсе кайнă, хучĕсене çĕре силлесе хăварнă. Амăшĕпе иккĕшĕ пуçтарчĕç, электроплитка çинче типĕтрĕç, анчах нумайăшĕ çухалнă: сăвăсем, пуçа килнĕ шухăшсем, эпиграммăсем т.ыт.те...

Хусанкайпа Долгова выставкăри хамăн курăм-туйăмсем çинчен каласа патăм. Çырма хистеççĕ.

Евдокия Яковлевна килсе чылайччен ларчĕ. Çамрăк писательсем (Артемьев, Садай) пирĕн очерка мухтани çинчен каласа патăм. Агаков йăпăлтатать иккен: Орлова материалĕсем ăна илĕртеççĕ. Мĕншĕн ĕлĕк агаковсем Орловăпа интересленмен? Карчăка йăлт кулуйран кăларнă пулнă. Халĕ йăпăлтатса çýреççĕ [...].

Июлĕн 20-мĕшĕ. Писательсен организацинче уçă партпуху пулчĕ. Долгов культ çинчен доклад туса пачĕ: хăракаласа, унта-кунта пăхкаласа тунă доклад. Ялан В. Яковлев доклачĕ çине таянса пычĕ.

Тухса калаçакансем (Ржановпа Герасимов, Евстафьев) пакетсене, уйрăм стационарсене пĕтерме ыйтрĕç. Ашăм тăвăлса-тăвăлса килет. Часрах яла тухса каяс пулать, унсăрăн, апрелĕн 10-мĕшĕнчи пек, чăтаймăп.

Сталин кульчĕ вăл — чулланса ларнă бюрократилле система. Пурнăçа ленинла çул çине чăн-чăннипех тăратма нумай-нумай çулсем кирлĕ, партин хăйне хăй çĕнĕрен çуратмалла. ЦК тĕрĕс çул çинче. Шанатăп: темĕн чул йывăр пулсан та Ленин принципĕсем çиеле тухмалла, çĕнтермелле.

Июлĕн 21-мĕшĕ. Илемпипе хăна хĕрне Ноннăпа иксĕмĕр Кувшинкăна икĕ эрнелĕхе ăсатрăмăр. Катер кĕтсе тăрасси тесе Атăл леш еннипе çуран утрăмăр. Тĕл-тĕл ура пакăлчакĕ таран хăйăр. Пĕр çĕрте — Атăл пырĕ, çарамасланса каçма тиврĕ. Илемпи çари-çари çухăрать. Ачасене пĕчĕк пýлĕме вырнаçтартăм. Савăнса юлчĕç. [...] Каялла катерпа килтĕмĕр. Хусанкай — Атăл хĕрринче, вăл та Кувшинкăна кайма тухнă. Ĕнер Петĕр Арапуçне (пирĕн яла) кайса килнĕ иккен, халăха Румыни патшалăхне кайса килни çинчен каласа панă. Вырăсла каланă, пĕр-иккĕшĕ ирĕксĕрлерĕç тет. Çемçе хăлхаллă пулнăшăн ятларăм, Конституцине пăсатăн терĕм. Чăваш апат-çимĕçне те тиркекен пулнă иккен Петĕр. Ытлашши тиекленместпĕр-и?

«Советская Чувашия» хаçатра В. Димитриевăн аван статьи: «Происхождение чуваш».

Чăвашгизран Сизов килсе кайрĕ (виçĕм кун). Кĕнекен

хуплашкисене кăтартрĕ. Килĕшрĕм. Ăна кунта ман сăна кĕнеке валли ўкерме янă (тахшин?). Килĕшмерĕм.

Июлĕн 25-мĕшĕ. Правленин анлă ларăвĕнче пултăм. Элекçей Талвир Мускава кайса килни çинчен каласа пачĕ. Ытлашши çĕнни нимех те çук. Кооперативное издательство пуласси çинчен сасă пур тет.

Драйзер редакторпа ĕçлет. Пирĕн Краснов-Аслине çавăн пекки кирлĕ.

Ĕнер Йăван патĕнче пултăм. Мускаври шăй-шай çинчен каласа пачĕ. Вĕсен уçă пухăвĕнче пултăм. Каллех культ ыйтăвĕ. Йăван тухса калани кăмăла кайрĕ: халăхсем хушшинчи туслăха чипер ăнланасси çинчен. Танлă, ăс-тăнлă, пултаруллă халăхсен пĕрлешĕвĕ. Хальччен тĕрĕс мар ăнланнисем пулнă: вырăс халăхĕ, унăн тавра вĕтĕннĕ, пĕтме пулнă ытти тĕкĕнсе çитнĕ халăхсем (папуассем — Ухсай калашле). Тĕрĕс мар.

Июлĕн 26-мĕшĕ. Ыран çўреве (Пăва тăрăх) тухса каятăп. Пĕрер эрнене Нонна та пырать. Литфондран 1500 тенкĕ пачĕç. [...]

Июлĕн 27-мĕшĕ. 11 сехет те 15 минутра Ноннăпа иксĕмĕр Арапуçне тухса кайрăмăр. Çула май Шайдуков Илле (Ястук ывăлĕ) хăйĕнпе паллаштарчĕ. Вăл халь салтак (моряк), унччен колхоз театрĕнче купăсçă пулса ĕçленĕ иккен...

Пахчасен хыçĕпе килтĕмĕр. Кĕркури арăмĕ, куçран вăйсăрскер, пире вăрçать: мĕншĕн карта урлă çўретĕр тет, пахчана таптатăр тет. Хăй пирĕн ĕлĕкхи пахча çинче çўрет. Эпĕ: «Эсĕ пирĕн пахчана таптатăн, эпир сана нимĕн те каламастпăр, сирĕнне таптама юрамасть иккен». Палласа илчĕ (сасран), кулса ячĕ.

Атте пур чухне çакăнта ботанический сад пекчĕ. Вăрман пек хăмла, паранкă пахчи, хăяр, купăста. Пĕчĕк кўлĕ. Пралукра йăмрасен аллейи. Халĕ икĕ пахчи те — пирĕн те, Нямми пиччесен те — шап-шур хăйăр, çуркунне капланса анакан хăйăр шăлса лартнă. Ку вырăна Суттай Каракум тет.

Венгр пире аякранах курнă, хирĕç тухрĕ. Ман киле килсен яланах кăмăл чўхенет. Часрах пит-куçа çума тухса кайрăм. Пит çумалли умĕнче те шывпа, те куççульпе çăвăнтăм. Малтан йысна, пăртак тăрсан аппа килчĕç. Чылай çĕрлеччен каласса лартăмăр. Венгр хăй Кавказра курса çўрени çинчен интереслĕн каласа пачĕ. Сасси — пулнă пĕтнĕ Петтянни пекех. Сăнĕ те пурăннăçемĕн ашшĕнни пекех пулса пырать. Пире хирĕç тухса сăмах чĕнсенех ашшĕ каласса янă пекех

пулчĕ, кăна Нонна та асăрхарĕ. Хĕрарăм пулсан эпĕ çавăнтах кăшкăрса макăрса ямалла...

Июлĕн 28-мĕшĕ. Паян тăвансем патĕнче (Çинкка тата Санюк) кучченеç валеçсе çÿрерĕмĕр. Çумăр кунĕпех çăвать. Санюк, мĕскĕн, кунĕпех колхоз ĕçĕнче — тырă вырать, кăкăр ачине 10—12 çулхи хĕрĕ Нюра пăхать. Ун аллинчех тата икĕ пĕчĕк йăмăкĕ. Кĕлентĕр-печенисемшĕн савăнса кайрĕç. Çинккасен ватлăхĕ лăпкă та пурлăччĕ: Суттай пĕччен тенĕ пек пĕтĕм Арапуç хирне сухалать. Вĕсен халь икĕ пÿрт. Икĕ пÿрт тулли ача-пăча. Килĕшÿллĕ, мирлĕ пурăнаççĕ.

Каçхине Санюкпа Анисса килсе кайрĕç. Нонна вĕсене хамăр ачасен кивелнĕ, пĕчĕкленнĕ тумтирĕсене нумай пачĕ. Санюка хамăн Çĕпĕр аттине (керза) патăм. Каçхине Çинккасем патне мунча кайса кĕтĕмĕр. Тăвансем питĕ кăмăллă. Чей. Шăрттан. Аншарли. Йысна ярать кăна, анчах ÿсĕрĕлни туйăнмасть. Кĕреçе сухала силлесе çеç ларать. 1904 çулта çуралнăскер, унăн кăвапа таран кăвак сухал, хăй юман юпа пек. Çамрăк чухне те питĕ вăйлăччĕ, никам икĕ алăпа хускатайман укçа ещĕкне (вĕсен патĕнче потребкооперацин правленийĕччĕ) хăрах алăпа йăтатчĕ! Çак кунсенче аттеанне тата Якку тăпри çине юпа тата чартак лартасси çинчен калаçса татăлтăмăр. Ку ĕç валли эпĕ пĕлтĕрех йысна патне 300 тенкĕ укçа ярсаччĕ.

Июлĕн 29-мĕшĕ. Пасар кунĕ. Халăх сахал — ĕçре. Хăмла çырли стаканĕ 50—75 пус. Хура çырла 75—100 пус. Çăмарта 8 т. Какай çук. Пасартан анса апатланнă хыççăн масар çине атте-анне патне кайрăмăр. Карта валли виçсе илтĕмĕр. Якку хĕресĕ ÿкнĕ. Аттенне, ÿкнĕскере, каялла лартнă. Анненне те çавах. Ем-ешĕл курăк. Аттепе Якку çуммăн. Анне урипе Якку пуç вĕçĕнче — çурçĕр еннелле. Çавăнпа карта пысăк пулать. Атте пуç вĕçĕ — ирĕк, унта ларма тенкел тăвас пулать. Тен, вăл вырăн пушă мар пуль, анчах тăпра пулни палăрмасть. Яла кив масар урлă таврăнтăмăр. Ăна пăрахни 50 çул ытла, анчах унта хĕрессем тата чартаксем юлнине эпĕ лайăх астăватăп. Халь унта колхоз витисем, йĕри-тавра тислĕк куписем. Çапла хисеплетпĕр эпир ватăсене. Унта ман мăн асаттесем — Митта тата Исмук.

Прасук аппасем патне кĕтĕмĕр (Нонна, Венгр, эпĕ). Аппа хуран кукли (тăпăрчпа) çитерчĕ. Йысна кăçал Питравра 80 çул тултарнă (1876), аппа 71-ре (1885). Йысна виçĕм çулхипе танлаштарсан чылай йăвашланнă. Аппа паттăр-ха. 1944 çултанпа ман вĕсене 100 тенкĕ памалли пурччĕ. Патăм. Йысна 56 çул учительре ĕçленĕ. Унăн Ленин орденĕ. Миша кăçал арăмĕпе, Капа упăшкипе килсе кайнă.

Арапуçсене асăнса чылайччен лартăмăр. Йыснасем патĕнчен килсен виçсĕмĕр те тӳрех Хырайне кăмпана кайрăмăр. 7 сехетчен çӳрерĕмĕр. Арапуçсем пире ăшшăн саламлаççĕ, кăмпа лăнках татса килтĕмĕр: кăрăç, мăнтăр кăмпа (белый гриб), тунката кăмпи, майра кăмпи (сыроежка) т.ыт.те. Халĕ Ноннăпа Венгр Анюç ĕçрен килессе кĕтмесĕр пикенсе яшка пĕçереççĕ.

Ыран, кун юлсан, виçсĕмĕр те Тикеше, хула вырăнне (халĕ унта археологические раскопки) каятпăр.

Июлĕн 30-мĕшĕ. Кун питĕ лайăх. Уяр. Лĕп. Нонна, эпĕ, Венгр Тикеше археологсен ĕçне курма кайрăмăр. Çула май Хырай тата Именкасси пĕвин илемĕпе савăнтăмăр. Хăйăр çинче ларакан ял, Кĕçĕн Арапуç, хула пек. Сăрлă пӳртсем, хапхасем.

Хула вырăнне çитрĕмĕр. Ĕçлекенсене: «Аваллăха тĕпчесе малашлăха пĕлекенсене салам!» — тесе саламларăмăр. Виçĕ çĕрте чаваççĕ. Рабочисем — 25. Чăваш тата Мускав студенчĕсем, ученăйсем. Ĕçсене ертсе пыраканни Смирнов Алексей Петрович профессор. Ăна эпĕ Шупашкарта, этногенез конференцийĕнче, курсаччĕ, итлесеччĕ. Жокей пек çăмăл та тăп-тăп тумтирпе. Аллинче — щуп, хыпашламалли пăшатан. Эпир пынă чухне студентсем хушшинче çерем çинче тăсăлса выртать. 50 çула сывхарнă сывлăхлă, илемлĕ, кăмăллă, уçă сăнлă çын. Пысăкрах сăмса. Сарăрах. Эпир ăна: «Исследователям нашего края привет!» — тесе саламларăмăр. Профессор сиксе тăчĕ, порывисто мана тата Венгра, Ноннăна алă тытрĕ. Эпĕ хама: «Представитель местной прессы, — терĕм. — Сирĕн ĕç интереслентерет. Результатсемпе кăмăллă-и?» — тесе ыйтрăм. «Результатами весьма и весьма довольны», — тет профессор.

Виçĕ валлă Тикеш крепоçĕ (кунти чăвашсем ăна «хула вырăнĕ» теççĕ) çаврака, ун талккăшĕ 2 га.

Крепость X—XII ĕмĕрсенчи сооружени, вăл — пулхăрсен пулнă. «Хăй вăхăтĕнчи техникăпа танлаштарсан, Тикеш крепоçĕ чи вăйлисенчен пĕри пулнă, — тет профессор Смирнов. — Кунта, ахăртнех, вырăс пленнăйĕсене ĕçлеттерсе усранă пуль», — тет. Паллах, хан, пысăк феодал, çар пуçлăхĕ пурăннă. Пулхăрпа Вырăс çĕр чикки çакăнтан иртнĕ пулĕ. Валсен хушшинче Пăла юхса выртнă, халь Пăла кунтан чылай инçе, ик-виç ана-пӳ. Ку крепость пулхăрсен пулни (вырăссен марри) çакăнтан та паллă: сысна шăммисем çук. Пур: лаша шăммисем (нумай), сурăх, чăх, ĕне шăммисем. Сысна шăмми пĕрре те çук, чӳлмек катăкĕсем çинчи тĕрĕсем — хальхи чăвашсенни пек (чăваш

тӗррисемпе пӗрпеклӗх нумай). Ухӑ сӑннисем (тимӗр, шӑмӑ) чылай тупнӑ. Кӑнтӑр енчи хапха тӗлне чавнӑ чух йывӑҫ юпа тӗпӗсем тухнӑ, пӗри — хыр, диаметрӗ 70 см. Ҫӗрнӗ, тытсан патӑлтатсах саланать. Юман тухать. Крепость варринче пӗр тӗлте пӳрт тӗпӗ тухать. Халь ҫӗрӗн культурӑллӑ сийне пӗр кӗреҫе ытларах илнӗ. Пӳрчӗн пысӑкӑшӗ 49 кв. м. Ҫуннӑ пӗренесем. Вучах, кӑмака тӗпӗ пысӑкӑшех. Тӑм. Пӗр енче вырӑнти чул купи (шурӑ чул) — кӑмака никӗсӗ. Ку вырӑна тата чаваҫҫӗ, материк сийӗ таранах. Хула вырӑнӗнче укҫасем тупӑнаҫҫӗ, анчах вӗсем XVII, XVIII, XIX ӗмӗртисем. Кунта Киремет пулнӑ пулмалла: Киремет укҫисем хула вырӑнӗнчен 2 ҫухрӑмра. Еншик ялӗ патӗнче авалхи масар пур. Унта ҫырулла чул памятниксем. Ҫамрӑк ученӑй-арабист (пире унпа профессор кӑмӑллӑн паллаштарчӗ, темӗнле тӳрккесрех ҫамрӑк, хулӑн, сарӑ ҫын) вӑл ҫырусемпе интересленнӗ, анчах вулайман, «чувашизмсем» пулмалла тет.

Чӑвашсем пуҫланса кайни ҫинчен калакан ҫӗнӗ шухӑшсем ҫинчен чылай калаҫрӑмӑр. Паянхи Хусан тутарӗсем в основной массе ӗнерхи чӑвашсем текен шухӑшпа (манӑн тата Кузнецовӑн) Смирнов килӗшесшӗн мар, хӑй ҫав вӑхӑтрах: «чӑн, ун пек шухӑшлама май пур» тет (ҫармӑссем тутарсене халӗ те «суассем» тени, пулхӑр памятникӗсен 99%-тах чӑвашла ҫырни т. ыт. те). Чӑвашсем саланнӑ половецсенчен пуҫланса кайнӑ текен шухӑша (А.И. Яковлев) Смирнов пӗлмен, вӑл А.И. ашшӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗнекине вуламан. Пӗлтернӗшӗн тав турӗ, тупса вулама пулчӗ. Петрарка библиотекинчи половецсен словарӗ пирки Смирнов пӗлет.

Тата тепӗр ыйту патӑм профессора: ӗлӗкхи ӗҫӗрсемпе танлаштарсан, сирӗн хальхи ӗҫӗр ҫӗннине мӗн парать? Профессор ҫӗнни нумай терӗ. Анчах ку сӑмаха тӗплӗнех расшифровка памарӗ-ха. Раскопка ӗҫӗ пӗтмен, пӗтӗмӗшле выводсем тума иртерех хальлӗхе, ҫавӑ лайӑх паллӑ: профессор хӑйӗн ӗҫӗ ӑнӑҫлӑ пулнине курать, уншӑн савӑнать.

Прфессорпа питӗ кӑмӑллӑн уйрӑлтӑмӑр, Шупашкарта курма пултӑмӑр.

Тикеше, хамӑн ӗлӗкхи хуҫасем патне, кӗрсе тухрӑмӑр. Ӗлӗк ҫамрӑк арӑмччӗ, вылякалаттӑмӑр та таса кӑмӑлпа, халӗ — карчӑк. Палласа илчӗ, савӑнса кайрӗ (29 ҫул курманни!). Чылайччен тинкерсе тӑчӗ (паллаймасӑр), унтан Ваҫҫаҫке! тесе кӑшкӑрса ячӗ (воскликнула). Апат (сӗт) лартрӗ. Ҫӑкӑр пӗҫернӗ. Ҫӑкӑрӗ икӗ питлӗ пулнӑ, хуйхӑрать. Ывӑлӗ Алтайра, унтан 90 пӑт тырӑ (тулӑ) илнӗ.

Еншике каҫрӑмӑр. Гаврилов В.Я. (эпир ҫамрӑк чухне райӗҫтӑвком секретарӗ пулнӑскер, халӗ колхоз ӳсӗркки)

авалхи масар патне çул кăтартса ячĕ. Виç-тăватă лутра хыр. Пысăк мар площаде (пĕр 3—4 сотка) карта тытнă. Тăватă чул. Виççĕш çурма çаврашка. Иккĕшĕн çине арабла сас паллисемпе касса çырнă (илемлĕ çырнă). Пĕрин çинче ултă кĕтеслĕ çăлтăр, çăлтăр тавра çур уйăх: мăсăльмансен палли. Ку вырăна халичченех тутарсем хисеплеççĕ, шет кĕлтума çӳреççĕ. Чулсем — арман чулĕ йышши (ташла чулĕ), вĕсене сарă сăрпа сăрланă пулнă (охра), паллах — кайран, нумай пулмасть, хальхи тутарсем. Ун пек сăрăпа вĕсем пӳрт пĕренисене тултан сăрлаççĕ.

Каялла Хырайĕн çӳлти çулĕпе таврăнтăмăр. Ытла та хитре пирĕн хырлăх! Парк пек. Тап-таса. Уçă сывлăш. Креозот шăрши.

Июлĕн 31-мĕшĕ. Виççĕн — Нонна, Венгр, эпĕ çӳреве тухса кайрăмăр. Маршрут: Арапуç — Упамса — Кив Эйпеç — Паснапуç — Арапуç. Юриех çуран çӳрес тетпĕр. Шолохов калашле, вăкăрпа çӳресен нумайрах курма пулать. Шелепшур тăрăх тырăсем вăйлах мар. Çăл Артăкĕнче çиçĕм çăлтавçисем. Тăрмăшра пĕр старик: «Вы, наверное, из города?» — таса вырăсла ыйтса юлчĕ. Пырса каласса лармаллаччĕ. Турханта шăналлă столовăйĕнче хăмла çырлипе чей ĕçрĕмĕр. Байбатырево çыннисем Упамсаналла машина кĕтсе лараççĕ. Турхан Энтри ялĕ иккен («Интернационала» французуз чĕлхинчен чăвашла çав куçарнă). Турхантан вăрмана кĕриччен машинăпа ларса кайрăмăр. Унтан, çурран пăртак утсан, каллех машина пулчĕ. Нонна кăмăлне курса каллех техникăпа усă курас пулчĕ. Упамса хирне тухсан машина вăрманалла пăрăнчĕ. Упамса тыррисем вăйлă — ыраш та, ытти тырри те. Килĕренех тенĕ пек çĕнĕ çурт. Пĕр начар çурт курăнмасть. Ял вăрманпа тата уй-хирте лайăх ĕçленипе пуйса кайнă. Пĕлтĕр тырăсем 4 килона яхăн, укçан 7 т. панă. Колхозниксем ĕçшĕн çунса тăраççĕ. Ĕç тупма ĕлкĕрсе тăма çук. Председателе юратаççĕ, анчах япăх кăмăллăрах теççĕ. Председатель ĕçмест. Хирте машина сасси çук. Пăрça турттараççĕ, пăрçи питĕ лайăх, хутаçлă. Упамса чăвашĕсем ачана юратаççĕ пулас: пăрça турттаракансем лав тулли (ĕртăван тулли) ачасем лартса çӳреççĕ, хăшĕсен çӳçĕсем пăрça урапи пек. Хвиляна (двоюродный брат) куртăмăр, вăл та пăрça турттарать, каçхине пыма пултăмăр.

Августăн 2-мĕшĕ. Илем кунĕ. Колони кунтан 6 çухрăмра. Тăвансен, юлташсен (Иванов В.И., Леонтьев Ст.Л.), Медиков (артист), пĕрле ларнă Марпосад р-н старикĕ — Алексеев («Хыпар» редакторĕ) масарĕ çинче пуласшăнччĕ. Йĕпе.

Çумăр. Сывă пулсан — тепĕр чух. Чăн çĕртисем, асап курса вилнĕскерсем, каçарăр.

Йысна хăй патне илсе кайрĕ. Вăл казарма пек пӳртре пĕр-пĕччен пурăнать: кĕçĕн хĕрĕ, Татюк, Арапуçĕнче больницăра — ăш кастарнă. Тимук çемйинче, пӳртĕн тепĕр пайĕнче (уйрăм алăк), пурăнать. Пире вĕсем пĕрле, ашшĕ патĕнче, йышăнчĕç. Ĕçсе çирĕмĕр, ваттисене асăнтăмăр. Кламук арăмĕ те, Тимук арăмĕ те питĕ сăнарлă калаçаççĕ. Тата тепĕр çĕр выртгарасшăн. «Капла мĕнле, уçса хупнă кĕнекери картин пек анчах курса юлтăмăр-çке сире», — тет Тимук арăмĕ — Чĕкеç. Сывпуллашрăмăр, тăвансем пире чылай инçе ăсатса ячĕç. Калас пулать, Эйпеçсем тырăна питех ăнтарайман пулсан та (ĕмĕрех çапла!), пӳрчĕ-çурчĕсем хула пек. Вăрман вĕсене нумай çĕклет. Сăрласа пĕтернĕ крыльцаллă тем пысăкăш пӳртсем. Хуралтăсем çинче — хăма, курăс хуппи (сахал). Улăм ниçта та çук.

Йысна пире Паснапуçне ăсатнă май хăйĕн пчельникне илсе кĕчĕ. Тĕлĕнмелле илемлĕ ĕшне. Вĕллесем. Карас кӳлли. Кăрчама ĕçрĕмĕр.

Çама йысна çеç пĕлекен çулпа тухрăмăр. Çула шăршпа пĕлет тейĕн. Темиçе сукмакран кирлине суйласа илет. Малта пырать. Ăна утса çитме çук. Ӳсĕрскер, такăна-такăна ӳкет. [...] Сиксе тăрать, каллех малалла таплатать.

Паснапуçпе Çам хушшинчи çул питĕ начар, пылчăклă, лакăмлă. Уя тухрăмăр. Тăпăл-тăпăл ял курăнса кайрĕ. Хирте кĕтӳсем (ĕне кĕтӳ — хăйне, сурăх кĕтӳ — хăйне) çӳреççĕ. Вĕсене — ирĕк, курăк мăй таран. Сурăхсене Атак (çăл Атакĕ) ачи кĕтет. Асран кайми Пасна. Чи хĕрринче — Кириллов керменĕ. «Кам улпучĕ пурăнать кунта?» — тесе ыйтатăп. Улпут мар, учитель теççĕ. Аслă урампа пынă чух хăйне те, учительне, куртăм. Лутра, хулăн ишĕлнĕ хырăмлă çын, 50-ран иртнĕскер. Хырăнман. Кипкепе. Икĕ кĕсйинче хутпа пăкăланă икĕ кĕленче. Пиччĕшне, чухăн пурăнаканскерне, уяв ячĕпе кăрчама ĕçтерсе килет (хăй каланă тăрăх). Хăнана чĕнчĕ. Ун çумĕнче аслă ывăлĕ, яштака илемлĕ çын, 24—25 çитнĕскер. Кукамайсем патне çитетпĕр. Чун хурланать. Кукка пӳрчĕ халĕ те ларать (1947 çулта сипленĕскер). Пеття (П.А. Кузьмин, учитель, манăн икĕ сыпăкри тăван) чупса тухрĕ. Чӳхенет. Ыталаса чуптурăмăр. Арăмĕпе (Шăхаль хĕрĕ, Васса), ачисемпе паллаштарчĕ, ытти тăвансем патне тухса чупрĕ. Эрхип кукка арăмĕ инке çитрĕ. Мана — палли-паллами. Хăй ĕлĕкхи майлах, шӳтле тинкерсе хăяккăн пăхать. Аннене, аттене аса илчĕ, вĕсем ăна Эрхип кукка тыткăнра чух нумай пулăшнă. Паснапуçне кайсан, эпĕ вĕсем патĕнчен тухман. Ачисемпе выляна,

кĕрлешнĕ, çапăçнă. Инке мана пĕрре вĕрентсе илни çинчен каласа патăм. Кулаççĕ. Тăвансем (Миккуль, Пеття арăмĕсемпе) çитрĕç. И.А. патĕнче пăртак ларнă хыççăн Эрхип куккасем патĕнче пултăмăр. Унтан Ваççа арăмĕ патĕнче. Тепĕр ирхине Микулай илсе кайрĕ, Иван арăмĕ патĕнче пултăмăр. Каç Н. А-ч патĕнче, кукаçи килĕнче, чаршавра çывăртăмăр. Кунта эпĕ каç выртманни 30 çул ытла. Паснапуçпе Эйпеç ĕмĕрех поэзилле, артистла ял. Пурнăç йывăрлăхĕсем çинчен вĕсем нихăçан та хашлатса шухăшламан. Пур чух — пушкăртла, çук чух — калмăкла тенĕ пек. Халĕ те ав епле ĕçеççĕ. Кĕçĕн Пеття, Эрхип куккан юлашки ачи, чăн-чăн артистах. Çăмăл, уççăн, путишле ташлать. Арăмсене чылай улăштарнă. Ĕçлетĕп, ĕçетĕп — унăн девизĕ. Арăмсем, уйрăмах Миккульăн — юрра ăста. Эпир килнĕ ятпа темĕн чул юрă юрларĕç. Эпĕ халиччен илтмен сăвăсем, кĕвĕсем. Кĕрекере эрех, ханша шывла юхать. Çĕнĕ кăмпа, çăмарта. Иван арăмĕ ятарласа чăх пуснă. Пур тăван та (во главе с инге) пире ялтан юрласа ăсатса ячĕç. Масар урлă кайрăмăр. Кун пек илемлĕ масар эпĕ сахал курнă. Вăрмантан юлнă йывăççем, курăксем, чечексем. Часовня. Кĕрсе çурта çутрăмăр. Кукаçи, кукамай, Эрхип кукка тата Энтруш куккапа арăмĕн тăпри çинче асăнса çирĕмĕр, лартăмăр. Ватă инке Эрхип кукка тăприпе çумăн выртса кăтартрĕ: акă ман вырăн! тет. Масарăн тепĕр илемĕ Кириллов В.С. учитель ларттарнă памятниксем. Масар картин икĕ юпи çине вăл Паснапуç историне чăвашла çырнă. Ял 1795 çулта пуçланнă. Шупашкар уесĕнчи Воскресенски вулăсран куçнă. 9 кил. Кирилловсен йăхне пуçлаканни Сарпай, пирĕн аннесен йăхне пуçлаканни — Муçан. В.С. Кириллов çинче тепĕр юман палăк, ун çинчен Сарпайсен йăх йывăççи (родословная). Çырусене хут çинче, юман юпа ăшне касса вырнаçтарнă, хулăн кĕленчепе нӳр-çумăр каймалла мар витнĕ. 1951 çулта лартнăскерсен, çырăвĕсем çине пĕр тумлам нӳр те ларман. Ырă ĕç тунă учитель, чăн ĕнтĕ: ахаль мар йышăнайман масар çĕрне (пĕр 25—30 сотка) вăл клевер акса тăрать.

Тăвансем Чемен çулĕ çине тухса вăрмана кĕриех ăсатрĕç. Инкепе масар çинче уйрăлтăмăр. Илемлĕ Чемен çулĕ. Ларса кантăмăр. Унтан уйрăлтăмăр. Çул çинче крахмал машини хăваласа çитрĕ, чарчĕ, лартса кайрĕ. Митя Тарасĕ арăмĕпе Паснапуçĕнчен таврăнаççĕ. Иккĕшĕ те ӳсĕр. Тарас — ним пĕлми, каска пекех выртать. Арăмĕ шав юрлать, колхоза тем тусан та кĕменскер, вăл колхоз пурнăçне мухтаса юрлать. Шофер маттурлăхне те юрă-такмакпа чыс тăвать. Эпĕ те юрла пуçларăм. Тарас арăмĕ пуçлать (импровизацилесе),

эпĕ пĕтеретĕп (импровизацилесех). Çулташсем кулаççĕ. Çапла ăмăртмалла юрласа Чакка çитрĕмĕр. [...]

Июлĕн 4-мĕшĕнче Ноннăпа район центрне кайрăмăр. Çинкка (аппа) эпир çÿреве кайсан чирлесе ÿкнĕ (чĕрепе — астма), пульницара выртать. Унта кучченеçпе пултăмăр. Çинккасăр пуçне, Эйпеçри Тямука куртăмăр. Хăмăр сăнлă. Операци хыççăн выртать. Икĕ уйăх мунча кĕмен, çăвăнман. Больницара мунча та, ванна те çук. Чирлисене çумасăрах хураççĕ. Тĕлĕнмелле. Хуртланса кайăн.

Редакцинче пултăмăр. Вера патĕнче хăна пултăмăр. Мĕскĕн Вера савăнса кайрĕ. Астăватăп: мана лагерьтен тавраńсан вăл банк çуртĕнче (унта малтан курнă) макăрса ыталаса илсеччĕ.

Вырсарни кун, 5-мĕшĕнче, Мария Ермолаева илсе кайрĕ. Хăна турĕ. Упăшки йĕркеллĕ çын — Т.М. Михайлов, биолог. Арапуç енче аçа çапнисем тăтăшланни çинчен калаçрăмăр. Вĕсен пÿртне те çапнă, халĕ — умĕнче çÿллĕ громоотвод. Шкул пахчи калама çук пуян та илемлĕ. Шкул — пахчашăн ял хуçалăх выставкин участникĕ. Çырас пулать...

3-мĕш сехетре Шетме тухса кайрăм. Йысна кăмпана пырать. Шкул валли сÿс тиенĕ машина. Завроно Кудряшов ăсатать. Кудряшовпа сÿс çине лартăмăр, кĕлте лавĕ çинчи пек пыратпăр. Татăлса анасран чун çук. Йысна — ватти, ăна кабинăна лартрăмăр: пыр сухала каçартса. Таврара тырă вăйлă мар, куккурус — çаран çинчи кикенрен те сайрарах. Виндойăрпа вырнă тырăсем шăтса кайнă — кĕлте çыхаканcем ура тапса туртаççĕ, аран çĕр çинчен уйăраççĕ. Çитрĕмĕр. Наçтуксем патне чарăнтăмăр. Пите-куçа çусан эпĕ Питрав Ибасов патне кайрăм. Пире кĕтнĕ иккен. Эрех кăларчĕ. Пÿрт тулли кăтра пуçлă илемлĕ ачасем. Арăмĕ те, вунă ача амăшĕ, мать-героиня, хĕр пекех халĕ. Вăл 13 ача çуратнă. Антонина Федоровна — Çăкалăх хĕрĕ. Питравпа иксĕмĕр Пăла пуçламăшне кайрăмăр. Шетмĕрен 5–6 çухрăм вăрманта. Упа ушахлăхĕ. Айлăм вырăнта унтан-кунтан çăлсем пуçтарăнаççĕ. [...] Люба Викторова упăшкине тĕл пултăмăр, утă тиенĕ, Çăкалăха каять. Илемлĕ ятсем: Пахча ĕшни, Ишлĕ ĕшни, Тавар çырми т.ыт.те.

Каçхине хăш-пĕр тăвансем пухăнчĕç. Ёçкĕ. Манран ĕçменшĕн тĕлĕнеççĕ. «Ёçкĕ усал манăн, тайкаланатăп», — тетĕп. Чăтса ларса пулмарĕ, çывăрма кайма ыйтрăм. Çÿлти этажа, светелка çине сарса пачĕç. Уçă, лăпкă, улах. Шыва кĕртнĕ ача пек çывăрса кайнă.

Августăн 6-мĕшĕ. Паян Ноннăпа Венгр Шупашкара кайрĕç. Канаша каякан крахмал машинине кăна кăнтăрла иртсе

пĕр сехетчен кĕтсе тăмалла пулчĕ. Вăхăта ирттерме Мефоди патне кĕрсе лартăмăр, ханша кăларчĕ. Ĕçтересшĕн, мăнтарăн, амăшĕ те тарават.

Ку эрне пĕтĕмĕшпех çýревре те хăнара иртрĕ. Июлĕн 31-мĕшĕнче Упамсара Евгения Андреевна патĕнче чарăнтăмăр. Вĕсем Ноннăпа питĕ туслă — Нонна хистемен пулсан вĕренейместĕм тет. Ĕçтерчĕ, çитерчĕ. Каç та ун патĕнчех, картишĕнче, лупас айĕнче, утă купи çинче çĕр каçрăмăр. Каç питĕ ăшă пулчĕ. Тутлă шăршлă утă çинче çывăрма питĕ лайăх. Ирхине автансем авăтса, чăхсем какаласа аптăратрĕç (вĕсем те ют çынна туяççĕ. Эпир, виççĕн, кĕпер пек выртатпăр).

Иртнĕ каç Тарье аппана кайса куртăмăр. Вĕсем патĕнчен кýрĕше, Такана Куçми патне, каçрăмăр. Шăп 25 çул ĕлĕк пирĕн Ноннăпа иксĕмĕрĕн пĕрлешýллĕ пурнăç çакăнта, Такана Куçми килĕнче, пуçланнă. Кĕмĕл туй. Пýлĕмри асăнуллă вырăнсене пăхса, ĕмĕр çапла час иртсе кайнăшăн ассăн-ассăн сывларăмăр. Куçма вилнĕ, карчăкĕ пурăнать, пире аран-аран палласа илчĕ.

Тарье аппа ватăлнă, шăп кукамай майлă пулса кайнă: ырхан, пĕчĕккĕ, начар куçлă. Çамрăк чух вăл питĕ пысăк куçлăччĕ (пирĕн Пеття пек, Иван пек, Силпи пек).

Тепĕр кун ирхине каллех Тарье аппа патĕнче пултăмăр. Ĕлĕкхине аса илтĕмĕр. Мана вăл: «Эсĕ питĕ те шухă ачаччĕ, час-часах сана манран патак ленккелетчĕ», — терĕ. Анне аттене качча пыни çинчен те мыскараллăн каласа пачĕ. Карчăк шýтлешсе калаçма юратать. Аттене юратса калаçрĕ: уçă кăмăллăшăн, шýт тума юратнăшăн. Сĕтел çинче пыл, хăмла çырли. Каллех ханша, шурă эрех (лавкка эреххи). Женьăпа (Евгения Андреевна) аппа пире çухрăм ытла ăсатса ячĕç. Ку июлĕн 1-мĕшĕнче пулчĕ.

Упамсаран Эйпеçе вăрман урлă 12 çухрăм. Çул начар, шывлă, пылчăклă. Машинăсемпе мар, лашасемпе çýреме те йывăр. Мăй таран курăк, çумăр çăвать, лачкам пултăмăр. Хăмла çырли — каснă плассара, кăмпа (кăрăç) — хура вăрманта. Аташнă пулсан та, хамăра хамăр йăпататпăр, чăвашăн вăрман аташмалăх та пур тетпĕр.

Çама трактор сассипе тухрăмăр. Упамсара Эйпеç çул тăрăх каснă вăрман нумай çĕрет. Турттарса пĕтерес çук — мĕншĕн касас? Варварство. Мĕн чул пурлăх çĕрет (çăка, хурăн, ăвăс — купи-купипе)...

Çама тухрăмăр. Поселок. 50-мĕш çулсенче пуçланнă. Пысăк завод — вăрман завочĕ. Чăвашсем ĕçлеççĕ. Чăвашла пĕр лозунг çук. Пĕр работницăран ыйтрăм: «Çакна вуласа парха», — терĕм. «Ăна вырăсла çырнă, вулаймастăп», — терĕ.

Казенщина. Бюрократи. Культăн юлашки. Чăвашсемпе чăвашла калаçасшăн мар. Кам? Чăваш кутĕнчен тухнă бюрократсемех.

Лавккара шурă çăкăр сутаççĕ. Çапса хĕстернĕ пек халăх. Чăваш, тутар, вырăс, ирçе. Çул тăрăх çырла, халь Эйпеç хирне тухрăмăр. Пасна çинче çăвăнтăмăр, кантăмăр. Халăх ыраш вырать. Çаранĕ çаплах канса выртать. Паллах, ку ял ĕçе ĕлкĕрсе пыраймасть. Пасна çыранĕсем хĕрринче таçта çитичченех çĕрнĕ кантăр çурăмĕсем. Паснинче тата нумай теççĕ. Мĕн чухлĕ пурлăх çĕртнĕ!

Йысна пчельникре. Килте Тимук хĕрĕ çеç. Паллаштартăмăр. Хĕрĕ — çитĕннĕскер, Еля ятлă, Çамра грузчикра ĕçлет. Кламук патне Алтшавкассине кайрăмăр. Вăл та килте çук, кĕçĕн хĕрĕ кăна, Лидя, — ыран илем кун — урай çăвать. Паллашрăмăр. Амăшĕ çитрĕ. Илемлĕ, кăмăллă, пирĕн çулхи хĕрарăм. Пĕр-пĕрне эпир нихăçан та курман. Эпĕ кунта пулманни 30 çул ытла. Венгр кунта пулкаланă, ăна палласççĕ. Час Кламук çитрĕ, ыталаса илчĕ. Мĕн тери ăшă кăмăллă чăваш! Ача чухнех хĕр пекчĕ, усал сăмах каламан, Турра питĕ ĕненетчĕ. Вăл мана палласа илчĕ. Хăй ватăлать, илемсĕрленет, анчах ача чухнехи пекех юлать. Эпĕ тахçан курман Кламука ăçта курсан та палламалла.

Ашшĕ çитрĕ. Палласа илтĕм, чуптăвашрăмăр. Старик тĕреклĕ мар, анчах çамрăк пек çăмăл. 84 тултарнă. Чеен пăхапăха илет, «ну-ка подбодрюсь немножко!» тесе мăйăхне пĕтĕркелет. [...] Мана вăл тахçанах кĕтнĕ. Пенси пирки ĕçе татасшăн, вăл вăтăр çул ытла вăрман ведомствинче ĕçленĕ, кукаçие, куккана юратсах калаçмасть. Кукамая, аппана питĕ ырă ятпа асăнать. «Кукаçи усал кăмăллă çын пулман пулĕçке, — терĕм, — никама та вăл усал тунине каламаççĕ», — терĕм. «Çынна усал тума ун вăй пулман», — тесе кĕскен каласа хучĕ старик.

Çывăрма пӳрт умне (пӳртпе кĕлет хушшине) вырнаçрăмăр. Унта уçă. Çĕрĕпе çумăр çурĕ, хăма çи витти тăпăртатсах тăчĕ. Ун пек чух çывăрма аван, çумăр ташши, çумăр кĕвви.

Августăн 7-мĕшĕ. Ирех Наçтук упăшки Федор Зверев илсе кайрĕ. Каллех çĕр çăтман ханша. Çăмарта, тăварланă кăмпа. Кĕрекере йысна, объездчик — ирçе çынни. Кунти пушă вырăнсене хыр мар, юман акасси çинчен каласрăмăр.

Питрав патĕнчен çĕнĕ шкул курма кайрăмăр. Районта çук икĕ хутлă çурт. Тимĕр витнĕ. Йĕри-тавра 3 га пушă çĕр — вăл пахча пулмалла. Шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕр пулмалла. Рабочисем (ирçесем) ĕлкĕретпĕр теççĕ. Директор —

Макаров, Çăкалăх ачи. Политехнизаци çинчен калаçрăмăр. Трактор, автомашина, картофелекопалка пулать. Шкул пахчинче пасека — Арапуç ачи Фроловăн.

Çула май Исаак куккасем патне кĕтĕмĕр. Инки Константин Васильевич тата Иван Яковлевич çинчен нумай каласа пачĕ. Вĕсем Чĕмпĕр шкулĕнче ĕлĕкхи вăрçăччен 2 çул ытларах пурăннă. Карчăк (70 çулта) нимĕн те манман. Ун чухнехи учительсене, вĕренекенсене нумайăшне лайăх астăвать — Максимова Галина халĕ пĕтĕм тĕнчипе палла музыкçă тесен савăнса кайрĕ. «Ашшĕ-амăшне хунă», — тет. Карчăк сывлăхлă-ха, тăп-тăваткал питлĕ, чап-чакăр куçлă. [...]

Алексей Степанович Фролов килсе кайрĕ. Ачисем тăваттă. Арслан çуртĕнче пурăнать. Шăна нумай, салтак нушисем çинчен каланă май хăваласах ларать. Вăхăтсăр ватăлса килекен çын. Кукша. Сухал пусать. Кăра чĕрелли туйăнать. Шухăшĕсене тӳррĕн калама юратать. [...]

Виççĕн — Питрав, Фролов, эпĕ хире кайрăмăр. Хĕрсем пăрça çулаççĕ, пухаççĕ. Пăрça турттаракансемсĕр пуçне (вĕсем те ачасем) пĕр арçын çук. Пăрça питĕ начар. Кашни курланкăра (вăл та пулин сайра) ик-виç хутаç, хутаçра иквиçĕ пĕрчĕ. Вăрлăхĕ тухать-и? Упамса пăрçипе ниепле танлаштарма çук. Çулса пулăшрăмăр.

Утă çулакансем патне çитрĕмĕр. Хамăр та çулса кăтартрăмăр. Домна Тарасовна çĕнĕ председателе критиклет. Атьăр-ха писателе пурин çичен те каласа парар теççĕ. Капла пулсан выçса вилетпĕр текен те пур. Шербинин тӳрккес, колхозниксемпе калаçма пĕлмест. [...]

Яла таврăннă чух правлени умне чарăнтăмăр. Партин уçă пухăвĕ пулать иккен. Апатлансан эпир те пытăмăр. Те эпир пынипе, аслăраххисем вăрттăн калаçса илчĕç, вара пуху хупă пуласса пĕлтерчĕç. Тĕлĕнмелле, уборка çинчен хупă пуху! Тухса кайрăмăр...

Каллех хурăнташсем пырса çитрĕç (Зверев Вл. Л., Якку пиччĕшĕ). Каллех ĕçкĕ. Çĕр тĕпне лăнкăртатса анса кайтăрччĕ. Володя хăй икĕ упа тытни çинчен каласа пачĕ.

Августăн 8-мĕшĕ. Ирех Коля Зверев пычĕ. Вăл кунта уполномоченнăй. Колхоз çинчен каласа пачĕ. Хăйсем патне илсе кайрĕ (ашшĕ килне). Каллех ĕçкĕ. Тытса кăна паратăп. Колхоз пуласлăхĕ çинчен каларăмăр. Ашшĕ — Вл. Л. килсе кĕчĕ. Яккулла калаçать. Арăмĕ: тархасшăн йăвашрах калаç-ха тет (пахчаран, садран).

Федя килсе кĕчĕ. Машина Арапуçне кайма хатĕр. Сывпуллашатпăр. Председатель каять. Ман унпа калаçмалла.

Щербинин Макçăмпа район центрĕнче калаçрăмăр. Кăçал 1,5 çурă тухать пуль тет (едва ли). Ĕлĕк начар ĕçлени çине тиет, çавăнпа колхозниксен ĕçлес хаваслăх çук тет. Райкома, Николаев патне, кĕтĕм. Районти лозунгсенче чăвашлăх çуккине палăртрăмăр. Çитес кунсенчех кун пирки калаçатăп терĕ. П.А. Степанов редактор ыран, кăнтăрла иртсен, манпа Арапуç колхозĕ тăрăх çӳреме пулчĕ.

Августăн 10-мĕшĕ. Ĕнер Степанов килессе кĕтсе иртертĕм. Килмерĕ. Каллех çумăр пулчĕ. Çанталăк хир ĕçне ĕçлеме питĕ те чăрмантарать. Паян Мефодий Романовпа МТСа кайрăмăр. Директор аван йышăнчĕ. Чее сăнлă тутар. Çăмăллăн калаçса кĕрсе кайрăмăр. Малта пыракансенчен Суттай Степанова мухтать. Уй хĕрне машинăпа илсе кайма пулчĕ, килĕшмерĕмĕр: пире çуран çӳресен лайăхрах терĕмĕр. Директор хушамачĕ Алимов. Ĕçкĕ-çикĕ дисциплинăна çирĕплетес ĕçре кансĕрленине калать.

Суттай Степанов патĕнче пултăмăр. Мальцев меслечĕпе — сурпан хăмисĕр сухалать. Кăçал та пĕрремĕш вырăна тытма шанать. Тухăçлăх трактористсенчен çеç килмен пирки пăшăрханать. [...]

Колхоз правленийĕнче пултăмăр. Анчах ĕçлĕ çынсене тĕл пулаймарăмăр. Те вырмара? Те выртмара?

Августăн 14-мĕшĕ. Малтанхи спас. 7 сехет. Ир. Патăрьелĕнче, килен-каянсен çуртĕнче, çыратăп.

Виçĕм кун, пасара тухса çӳрекеленĕ хыççăн, Мефодипе иксĕмĕр район центрне почтăна кайрăмăр. Шупашкара, Нонна патне, шăнкăравларăм, анчах килте никам та пулмарĕ. Кайран тин таврăннă Венгртан пĕлтĕм: Нонна, Эля тата хăна хĕр кăмпана кайнă. Кĕнеке сутти магазинне кĕрсе ручкăна авăрласа тухрăм, урăх çĕрте чернил ниçта та çук. Чакă урлă пынă чух пирĕн çине вĕлле хурчĕсем тапăнчĕç. Мефодине сăхрĕç, эпĕ плащпа чĕркенсе ĕлкĕртĕм, анчах пĕр каттăршнăйĕ çапах çӳç ăшне чăлханма ĕлкĕрчĕ. Нерсе ĕшлин! Пĕр çывăх пӳрте кĕрсе кайрăмăр. Çыннисем хамăр хуласемех (Янаславсем енчен, Атраç ачи) пулнă. Ханша туртса кăларчĕç. Хуçа ĕçтересшĕн — хуртран ытла сăрăнчĕ. Аран тухса тартăмăр. Кунтан тӳрех Çĕньяла, Хĕлип Сергеев патне, тухса утрăмăр, çула май çамрăк поэт, Тăрмăш учителĕ Иванов В.В. патне кĕтĕмĕр. Пĕрле Çĕньяла кайрăмăр. Сергеевăн кукуруза вăрман пек. Хушшинче — кабачки пур. Юлташсем мана эрех ĕçме лавккана чĕнеççĕ, кĕмерĕм, стариксемпе калаçса алăк умне юлтăм. Пĕр старик: «Ку чухне колхозра ĕселенсе ĕçлеççĕ, эпĕ ĕлĕк 100 лавран капан тума ĕлкĕреттĕм, халĕ 50 йышăнса ĕлкĕреймеççĕ», — тет.

Сергеева сушилкăра [...] тупрăмăр. Улшăнман, ĕлĕкхи пекех йĕркеллĕ, сăмаха чăсарах калаçать. Йĕтем çинче каласса ларнă чух Киргизов (зоотехник) килчĕ. Ăна сысна амантнă (сăмсине, хăлхине): хăшĕсем ўсĕр йăванса кайсан теççĕ, хăшĕсем тытса пăрахсан теççĕ. [...] Киле каça юлса таврăнтăмăр. Венгр таврăннă, килте çук. Валя Улатăртан хăна хĕрĕ илсе килнĕ.

Ĕнер ирех (7 сехетре) Атак чăвашĕ Ильметов Леонтий Федорович кĕчĕ. Вăл Патăрьелне суда каять. Ĕнер эпĕ унпа Патăрьелне пĕрле кайма пулсаччĕ. Тăрăна çити Ильметов хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ. Германи вăрçин полный Георгиевский кавалер. Граждан вăрçинче — комбат. Кутузов генерал юлташĕ. Халĕ платникре, Арапуç пĕвине тунă çĕрте ĕçлет.

Археологин Тикешри ушкăнĕ халĕ Именкасси патĕнче чаваланать. Каçса кураймарăмăр — Пăла. Ильметова Каçал колхозĕ улталанă. Унта вăл гараж тунă. Договор тăрăх 56 пăт тырă илмелле пулнă (ĕçшĕн). Лешсем (председатель Наперсткин) тырă вырăнне укçан, закупочнăй хакпа, панă. Халĕ старик суда каять (виççĕмĕш хут).

Тăрăнри агроном — Архипов, ман авалхи пĕлĕш. Арăмне куртăм. Палласа илчĕ. Карчăк. Акă вăл пирĕн малтанхи юратусем. Куçĕ кăна ĕлĕкхи — ăшă, тарават.

Хĕветĕре Йăлăм Патăрьелĕнче, колхоз правлениннче, куртăм. Унтан апробацине комисси килнĕ (Асанов, вырăнти район агрономĕ). Паллашрăмăр. Хĕветĕр патне кайрăмăр. Çула май унăн выставкăна каяс экспоначĕсемпе паллаштарчĕç (пăрça, тулă). Çĕнĕрен суйлаттарма хушрĕç. Асанов Хĕветĕрсем патĕнче юлмарĕ, алă тытса, кăмăл туса çеç тухрĕ. Надя ханша кăларчĕ, хăй тунă иккен. «Кунта унсăрăн нимĕн те тăваймастăн», — тет Хĕветĕр. Амăшĕ, Татьяна Андреевна, çĕнĕ пылпа хăналарĕ, вăл паян хурт пăхать. Хĕветĕр лаша кўлтерчĕ, хире тухса кайрăмăр (подробности в блокноте).

Çĕрле пулсан Хĕветĕрпе арăмĕ мана Патăрьелне çитиех ăсатса ячĕç. Николай Петров патне кĕтĕмĕр. Каллех ĕçкĕ. Авалхисене асăнса чылай ларнă. Çывăрма хăварасшăн. Юлмарăм. Хĕветĕрĕн те, Колян та çуртсем питĕ лайăх. Паян «Гвардеец» колхозне тухса каятăп.

Ман чўречерен Патăрьел больници курăнать. 25 çул ĕлĕк кунта Якку вилчĕ. Халĕ те чун ыратать.

Туça. 8 çурăра Туçана тухса утрăм: васкамасăр, кана-кана, таврара курни-илтнине блокнот çине ўкере-ўкере. Кив Ахпўрт колхозне кĕтĕм. Кукуруза çинчен, пĕве тăвасси çинчен, аça çапнисем çинчен ыйтса тĕпчерĕм. Документ ыйтрĕç.

Кăтартрăм. Эсир иккен тесе документсене каялла тавăрчĕç (шатра питлĕ шутĕçлевçĕ — Хутров). Чĕлхисем уçăлса кайрĕç. Румянцев арăмĕ, Валерий Петтяев аппăшĕ, пырса кĕчĕ. Паллаймарĕ. Ята каларăм — ахлатса ячĕ. Тепĕр кану Тури Туçара пулчĕ. Савье çинчен ыйтса пĕлтĕм. Алма-Атара. Ахпăрт йăмрасăр ял пулсан, Туçасенче ешĕллĕх нумай.

Анат Туçара Геннадий Пласкин шăллĕне, Германа, шыраса тупрăм. Хальлĕхе вĕсем патĕнче. Тĕлĕнмелле, кунта эпĕ 25 çултан тепре таврăнтăм: ун чух тустарма, халĕ — хăна пулма. Пласкинсене, Торговцевсене Йĕпреçе ăсатаканни эпĕ пулнă ĕнтĕ. Астăватăп, виçĕ ача, амăшĕпе пĕр лав çинче ларса пыраканскерсем (кĕçĕнни ун чух тăваттăра пулнă), Йĕпреç вăрманне кĕрсен амăшĕнчен: «Анне, ку йывăçсене кам лартса тунă?» — тесе ыйтрĕç. Хирти ачасем — унччен нихăçан та вăрман курман. Çав ачасем Пласкинсем пулнă. Эпĕ килнĕренпе çумăр чашлаттарать. Халĕ ултă сехет. Чарăнасси пĕрре те паллă мар.

Августăн 15-мĕшĕ. Ир те пулчĕ. 9 сехет. Ĕнерхи çумăр халĕ те чарăнмасть-ха. Пласкинсем патĕнче, Анат Туçара, хупăнса ларатăп. Таня ятлă çулталăкран иртнĕ хĕр ача урайĕнче ашшĕпе (шофер) выляса выртать, чĕкеç пек чĕвĕлтетет. Ним тума аптăрамалла. Выставка путеводительне вулатăп. Чаплă колхозсем («Гвардеец», «Ворошилов») хам умрах. Тухма çук. Тухман çын тухсан тăман тухать тесе ахаль каламан иккен.

Туçасем илемлĕ. Ял çуммипе Пăла юхса выртать. Ворошилов пĕвин таппи кунтах çитет. Тимĕр витнĕ çĕнĕ пăртсем нумай. Çĕнĕ пăртсене цементланă чул юпасем çине лартаççĕ. Йăмра, ешĕллĕх нумай. Çырма-шырлансенче ялта та, хирте те — йывăç. Колхоз чикки тавра пĕр кас вăрман лартса тухнă, ашкăрса ўсет, нумай çўлелле кайнă (пăртрен çўллĕ). Ку вăл Долгов шухăшĕпе тупнă ырлăх, председатель вăрмана юратать. Ĕçлĕ çемье: ачисем шкултан медальсемпе пĕтерсе тухаççĕ, пирĕн Шупашкар министрĕсенни пек, панккав мар, ĕçе юратса ўсеççĕ.

Кăнтăрла иртсе пĕр сехет те çитет. Çумăр çаплах чашлаттарать. Урамра — талккишпех шыв. Нерсе ĕшлин! Шăп кăна куçпа курмалли колхозсем патне çитсен çанталăк çакăн пек урса кайрĕ.

Çумăр чарăнасса пăхмасăр... Теветкел çитрĕ, мана курма ятарласа Патăрьелĕнчен килнĕ.

Августăн 16-мĕшĕ. Çумăр чарăнасса пăхмасăр ĕнер кăнтăрла иртсен урама тухса утрăм. Хура Тутар Тимеш çеремĕ. Ку тĕлте Пăва кукăрăлса илет, кукăртан пуçласа хĕвел ан-

ăçнелле аслă çерем пур. Кунта чăваш писателĕ Сергей Ялавин Аттелĕх вăрçи кунĕсенче хур кĕтӳ кĕтнĕ. Пăла тăрăх колхоз пахчине курса çӳрерĕм. Шыв ăсмалли армансем авалхи Египетри пек. Юшкăн лартмалли шăтăксем — çырансем тăрăх, вăл юшкăнран саман кирпĕчĕ çапаççĕ. Пăла çинче пĕр тăлăх кимĕ — чавса туни мар, хăмасенчен туни.

Чĕркуççи таран пылчăк ашса урам тăрăх колхоз правленине кайрăм. Пĕр хырăм сарлăхласа кăкарнă сысна çĕнĕ методпа (сурпан хăмисĕр) урама сухалать. Колхоз правленине пылчăк пирки малтан мар, хыçалтан — çеремпе — пырса кĕтĕм. Икĕ хутлă çурт. Сăкăт мечĕтĕнчен тунă. Аялта — клуб. Çынсем шахмăтла выляççĕ, хаçатсем вулаççĕ. Лозунгсем, плакатсем ытларах чăвашла. Паян каçхине кино пулмалла: «Девушки с площади Испания». Хаçатсем вулакаларăм. Çӳлти хута хăпартăм. Колхоз пуçлăхĕсем, бухгалтерсемсĕр пуçне, никам та çук. «Пирĕн колхоз кăçал мĕншĕн кĕрешет» плакатран даннăйсем çырса илтĕм. Çынсене пылчăкра аптăратас килмерĕ — икĕ чуллă шыв арманĕ курма кайрăм — пĕччен.[...]

Канашран автолавка килнĕ. Пылчăкра сут тăвать. Колхоз тăватă ĕретлĕ ĕне вити тăвать. Кирпĕчрен. Шлак-бетон. Завод корпусĕ пек. Унтах пысăк мар кӳлĕ. Хăвасем. Топольсем — ял хуçалăх выставкинчи кану зони тейĕн. Çавăнтах — пĕве хĕрринчен тытăнса — Уласар. Кайсах пăхрăм. Тăпрасем çинче чиелĕх, çырлалăх. Çĕнĕ масар та çавăнтах. Хам телейлĕ çыннăн — В.А. Кузнецов учителĕн тăпри. Лайăх пĕлĕшчĕ. Чул палăкĕ умĕнче пуç тайрăм. Йĕри-тавра тем анлăш сад. Хисеплеççĕ туçасем ваттисене. Илемлĕ, тирпейлĕ. Пархатарлă этем хырăмшăн кăна мар, илемшĕн те пурăнать.

Августăн 17-мĕшĕ. Паян каллех çĕр хута çумăр çунă. Урам хушши ĕнер типшĕре пуçланăччĕ. Халĕ каллех тинĕс пек. Ĕнер Туçари «Гвардеец» колхозпа паллашрăм. Теветкелпе пĕрле Михаил Герасимович Долгова шыраса тупрăмăр. Вăл пире ертсе çӳреме Никитин зоотехнике хушрĕ. Яштака çамрăк çын. Яр-яр пусса тăн-тăн утать, пичĕ хĕвелпе йĕсленнĕ, сахал мар çӳренĕ пулас, ахăртнех, уй-хирсем тăрăх. Чи малтанах симĕс конвейер çине кайрăмăр. Çичĕ çулхи пĕр кас топольсем хашакĕнче вырнаçнă пыллă пуçлă тата люцернăпа шур утиллĕ хирте ĕне кĕтĕвĕ çӳрет. Хăлха таран курăк. Мăшлатса çеç çиеççĕ ĕнесем. Икĕ енчен икĕ кĕтӳçĕ. Чылайччен сăнаса тăтăм. Васкамасăр, лăпкăн, çăвар тулли ява-ява çиеççĕ выльăхсем. Инçе мар лаша кĕтĕвĕ. Сысна кĕтĕвĕ — ялăн, колхозăн. Ку вырăнта килес çул тулă пулать, сентябрьте сухаламалла.

Малалла силос шăтăкĕсем патне кайрăмăр. 25 тоннăлăх шăтăксем, стенисене бетонланă. Хĕрсем, каччăсем (икĕ ушкăн: хĕрсем хăйне, каччăсем хăйне) çĕнĕ шăтăксем чаваççĕ. Сысна ферминче пултăмăр. Чĕчĕ пăрахтарнă çурасем, çăвăрлă амасем. Çурисем амăш чĕччисене массаж тăва-тăва лăскаççĕ. Амăшĕ вилнĕ пек выртать. 350 килограмлă аça, Лафет ятлă. Сысна пăхакан хĕрсен пŭртĕнче пултăмăр: таса, çутă. Кĕнекесем, хаçатсем. Чăваш литературине питĕ вулаççĕ, ыйтаççĕ.

Хура тилĕсен фермине кайрăмăр. Тимĕр (ала) решеткеллĕ зона. Питĕрнĕ. Хапха урлă çеç пăхрăмăр. Нумай пулмасть ферма валли вырăнти сунарçăсем пурăш тата енот (йытă) тытса килсе панă. Председатель ун пеккисемпе питĕ те интересленет.

Сад — 27 гектар. Пĕлтĕр пан улми нумай пулнă. Кăçал сивĕпе йывăçсем кăштах пĕтеймен, çулçăсем питĕ кая юлса кăларнă. Хăрнă тесе чутах касса тăкман.

Пăла хĕрринче питомник. Пан улми, хурлăхан, крыжовник, хăмла çырли, тополь т. ыт. те. Нумай усă парать. Чĕмпĕр таран сутаççĕ. [...]

Чи малтан ку колхозра илем тĕлĕнтерет. Пурне те чун техĕмĕпе шайлаштарса тунă. Хирсем, садсем, шывсем, çуртсем — этемпе çут çанталăк çуратнă илемĕн килĕшŭллĕ ансамблĕ.

М.Г. Долгов патĕнче пултăмăр. Ултă кĕтеслĕ сăпайлă çурт. Тултан сăрă тивертмен. Мунча, лаç, столярная мастерская. Хуçа каскалама юратать. Ачисем (пĕри Шупашкар студенчĕ) вутă татаççĕ. Пŭрт ăш-чикки тирпейлĕ, сăпайлă. Хуçа тарават. Колхоз ĕçĕсем çинчен калаçнă май хуллен арăмне апат пирки распоряжени пачĕ. Ман тантăш Владимир Долгов çинчен калаçрăмăр. Вăл чăвашран тухнă чи малтанхи летчиксенчен пĕри. 1938 çулта Китайра японецсемпе çапăçнă чух вилнĕ. Маттур ачаччĕ. Вăйлă, тĕреклĕ. Председатель тăванĕ сăнарлă калаçни те, хăйне хăй тыткалани те. Вăл Володьăран аслăрах (1904). Инке сĕтел çине шурă çăкăр тата çăмарта хăпартни лартрĕ.

Урамра каллех çумăр. Председательпе сывпуллашса шкула кайрăмăр. Кунта çичĕ çул вĕренмелли шкул. Выставкăн участникĕ. Директора тупаймарăмăр, пылчăк ашса шыраса çŭрес темерĕмĕр. Теветкелпе сывпуллашрăм. Тутар Тимешне çăмарта илме каçрăм. Çумăр витĕрех Ялавин çеремĕ çинче уткаласа çŭрерĕм. Пĕр хĕр килнине куртăм. Çŭллĕ те илемлĕскер çăмăл пальто тăхăннă, тăп-тăр пылчăк — чĕркуççи таранах. Чăвашла чĕнтĕм. Тутар хĕрĕ. Чăвашла тап-таса калаçать. Шупашкарти пединститут студентки, Патăрьелĕнчен, практикăран таврăнать.

Кĕçĕр каллех Пласкинсем патĕнче çывăртăм. Калас пулать: ялти çынсем (Пласкинсем патĕнче) пире пырсантусан ялан тарават, эпир, хуларисем, епле тӳрккес — хăваттере кӳртместпĕр.

Пăла Тимешĕ (Янтиково). 10 сехетре тарават Пласкинсемпе сывпуллашса Аслă Пăла Тимешне тухрăм. Унта — чапа тухнă Ворошилов колхозĕ. Тутар Тимешĕнчен тухсанах пĕр ушкăн чăваш хĕрарăмĕсем тĕл пулчĕç. Арăмсем, хĕрлĕ тăхăннă хĕрсем. Туçана магазина каяççĕ. Хăвăр патăрта лавкка çук-и тесен: «Açтан пирĕн яла тавар çиттĕр, ĕнер Канашран автолавка килчĕ, 70 пинлĕх тавар наччас тасалчĕ», — терĕç. Халĕ кăна вĕсем аванс илнĕ иккен: ĕç кунĕ пуçне 5-шер тенкĕ! Хăшĕ-пĕри 4—5 пин илнĕ теççĕ.

Сылтăмра колхоз кантăрĕсем: çынран нумай çӳллĕ. Сулахайра пралукпа карта тытнă колхоз çамрăк сачĕ пуçланчĕ. Ак сылтăмра хăмла, сулахайра яла çитиех иккĕмĕш хут çулмалли люцерна. Хăмла хĕрринче ларакан рельс юпасем, варринче чăмăр тимĕр юпасем çине-çине каркаланă пралуксем тăрăх ӳсет. Хăмла хыççăн колхозăн пысăк сачĕ. Шĕтĕрнекпе тытнă. Шĕтĕрнек тăрăх çӳллĕ ӳсекен йывăçсем. Яла кĕрес умĕн Максютов Александр ятлă старике куртăм. 73 çулта. Сысна валли мăян çулма каять. Колхоза, колхоз председательне мухтать. Чи малтан: ĕçмест терĕ. Ахăртнех, ĕçмест тени вăл председательшĕн чи малтан кирлĕ качество пулмалла. «Ĕçмест» — ку сăмаха вăл хăй тĕллĕн, эпĕ ыйтмасăр каларĕ. Яла кĕтĕм. Урам тулли ешĕллĕх (палисадниксем) йĕркепĕрĕн лартса тухнă топольсем. Çуртсем лайăх. Ял Михеев кĕнекинчи пĕр салтак çĕнетсе янă ял пек туйăнать. Пура, пура, пура — лайăх çуртсем умĕнчех. Пура пуракансен умĕнче лартăм. Калаçрăмăр. Колхоза сăпайлăн, ытлашши вĕрмесĕр мухтаççĕ. Çăкăр çитерет, укçа парать, çавăнпа çуртсем лартатпăр та теççĕ. Кăçал колхозра 40 пура ытла. Ĕнесем кунта (колхозник ĕнисем), Туçари пек, алă вĕççĕн çӳремеççĕ иккен, вĕсене ятарласа курăк акнă вырăнсем уйăрса панă.

Колхоз правленине çитнĕ чух каллех çумăр яра пуçларĕ. Акă иккĕмĕш сехет, çаплах çăвать. Колхоз председателĕн заместительне куртăм — çамрăк çын. Çирĕп калаçать. Хам мĕншĕн килнине пĕлтертĕм. Хваттере ярасшăн. Каярах кайăпăр терĕм. В.В. Зайцев курăнчĕ. Йĕркеллĕн саламлашма ĕлкĕреймерĕм: бюрона кĕрсе кайрĕ. Бюрона çынсене нумай чĕнтернĕ. Черетлĕн чĕнсе калаçаççĕ. Хыттăн калаçни те илтĕнет.

Счетовод хăяр çитерчĕ.

Çумăр, çумăр, çумăр.
Урамăрсем тăвăр, тулта çумăр,
Епле ашса, епле тухам-ши?!

Тата виçĕ-тăватă ял юлать, вара Пăлана Тутар патшалăхне ăсатса яратăп.

Кăна колхоз правлениненче çыратăп. Кăнтăр енче, пахчара, çамрăк сад, сад айĕнче ем-ешĕл акнă курăк.

Çумăр пăртак лăпланнă пек пулчĕ. Урама тухрăм. Пылчăк шапăртаттарса Пăла еннелле антăм. Тулли пĕве Атăл пырĕ пек çуталса выртать. Çыран хĕрринче пĕчĕк хуралтă — аммонал хумалли лаç иккен. Ун тăрринче пĕр ушкăн ача, 5—10 çулхисем. Вырăсла каласма пуçларăм, чăр-р пăхаççĕ, никам та пĕр сăмах чĕнмест. Чăвашла чĕлхе кăлартăм — уççăн кулса ячĕç. «Вара кунта эсир сывлăша сиксе каятăр вĕт», — сехрене хăпартса ыйтнă пек тăватăп эп. «Унта нимĕн те çук», — теççĕ ачасем. Каллех çумăр пуçларĕ, эпĕ «Атăл» еннелле аммонал склачĕн çивитти айне тăтăм, ачасем чăлпар саланса пĕтрĕç.

Кушкă Петĕр йытти (пахча хуралĕ) леш енче хурсене хăвалать — Пăланалла хŭтерет. Леш енче хĕрарăмсем çумăра пăхмасăрах кантăр хутаççĕ. Суллине тĕртсе янă чухне: «Айта, инке, вăрмана... Ой, ишшо!» — тесе такмакласçĕ. Тахçан авалхи юрă. Халĕ те пурăнать чаплă колхозра. Ана çĕр çул ытла ĕлĕк Фукс г(оспо)жа çырса илнĕ пулнă. Хĕрарăмсем патĕнче виçĕ ача кŭми, хăшне çумăртан клеенка витнĕ, хăшне — улăмпа. Вĕсен урлă, аслă кĕпер урлă каçса пытăм. Хайхи кĕперпе çуммăн бетонран çĕнĕ кĕпер хываççĕ. Йĕп-йĕпе çамрăк арăмсем ют çынна кăмăллăн йышăнчĕç.

— Мĕн сире çав тери çумăр витĕр ĕçлеттерет?

— Тытăннă ĕçе туса пĕтермелле... Укçи пысăк.

— Ачасене ма яслине памастăр?

— Пĕчĕккисене (çулталăк таран) йышăнмаççĕ.

— Кунне мĕн чухлĕ сулă хутмалла?

— Гектартан.

Пĕве тăрăх анаталла кайрăм. Сылтăмра — кантăр пусси çынран нумай çŭллĕ, тĕлĕ-тĕлĕпе 3 метра çитет теççĕ... «Южно-русская» текенни. Ŭчĕ пулать, вăрри ĕлкĕреймест. Пăва хăш тĕлте улăха тымарланса кĕрет (залива). Эпĕ чĕркуççинчен те çŭллĕрех йĕп-йĕпе. Паçăр пылчăклă ура халĕ Пăла хĕрринчи йĕпе курăкпа тап-таса тасалчĕ. Кантăр пуссинче пысăк, вăйлăн сарăлса кайнă хурама — ăçтан ку хир енче? Ял вĕçнелле çитес чух Пăла кăнтăралла пăрăнса илет (хĕвел тухăçнелле юхаканскер). Кукăр леш енче тем пысăкăш пĕлтĕрхи кантăр ури, икĕ çил арманĕ (армансене çуркунне шыв илет теççĕ).

Кукăр каллех хĕвел тухăçнелле авăнса кĕнĕ çĕрте ГЭС пĕви — чулпа, бетонпа пĕвенĕ (2 миллиона ларнă теççĕ).

Сылтăмра — кукуруза: вăрман пек. Кайран акнă хĕвелчамăш... Сылтăмра колхоз пчельникĕ. Пĕве хăлхи тимĕр чавсасем çинче тытăнса тăрать, вĕсем çуммипе пăр кайнă чухне, çĕрелле хуçланаççĕ иккен. ГЭС çуртне кĕтĕм. Икĕ генератор ылмашăнса ĕçлеççĕ. Ватă хуралçă — Сорокин. Унпа, тулта çумăр пынă чух, ларсах калаçрăм. [...] Сорокин мана ăсатсах ячĕ. Хăйĕн хурал пýртне, мастерскойне кăтартрĕ, çĕнĕрен тунă юман пичкесем. Пăшал сасси. Пăла çине килти кăвакалсем хушшине кайăк кăвакалĕсем лараççĕ иккен. Çавсене переççĕ. Хуха куписем. Вĕсене колхозниксем вутă вырăнне çунтараççĕ. Çăкăр пĕçерме те пулать. Колхоз фермисем патнелле хăпартăм. Тирпейлĕ çуртсем. Çĕнĕ стройка — тем пысăкăш тымар çимĕçĕсем валли тăвакан подвал, ун çинче тырă хумалли — шлако-бетонран тата кирпĕчрен тăваççĕ. Силос шăтăкĕсем умĕнче пĕр ушкăн çамрăк. Вĕсенчен пĕри хĕр — зоотехник Кузьмина. Хĕрсем силос кăлараççĕ. Çýллĕ резина атăсемпе. Илемлĕ те сывлăхлăскерсем. Килĕшýллĕн ывăтаççĕ, 4 метр аялтан. Йĕкĕчĕсем çýлтен пăхса тăраççĕ. Пĕр шăтăкран кăларса тепĕр шăтăка тýпелеççĕ.

— Капла тăвиччен мĕншĕн çĕклемпе тултармастăр?

— Çанталăк памасть.

Силос кăçалхи. Йýççи çитнĕ. Тутлă шăршă персе тăрать (кукуруза).

Пĕр çур сехетлĕхе хире кайрăм. Çичĕ ĕретлĕ пĕр кас вăрман çурçĕрелле каять. Хурăнсем хушшинче сукмак. Кайрăм. Кукуруза пуссине тухрăм. Ĕретĕн машинăпа акнă. Пĕр çеремлĕ варта ĕнине çавăтса çýрекен старике куртăм. Председателе критиклет. Хальччен Зайцева критиклесе калаçакана илтменччĕ-ха. Ку — малтанхи. «Ваттисемпе калаçмасть, вĕсене итлемест, — тет. — Ялан хăй тунă пек тăвать, — тет. — Вăрçă вăхăтĕнче пире минигитлă* лашасем ура çине тăратса хăварчĕç, — тет. — МТС пулăшнипе мар, хамăр лашасен вăйĕпе ĕçленĕ. Минигитлă тесе лашасене вăрмана ĕçлеме те яман, салтака та илмен. Обкомри пулăшнă. Арăмĕ мăнтăрланса кайрĕ, ялан ĕçре. Шăмалак хĕрĕ, упăшкине питĕ хытă тытать, ниçталла пăркаланма памасть». Тата та нумай каларĕ старик. Анчах председателе хирĕç мĕн те пулин ĕненмелли нимĕскерринех те калаймарĕ. Ахăртнех, Зайцев ăна кýрентернĕ пулмалла. Старик авал шахтăсенче подрядчик пулса çýренĕ, кунти чăвашсене ĕçлеме иле-иле кайнă. «Республика пĕр-икĕ çутă кирлĕ çав, унсăрăн юрамасть», — тет старик. Çумăр каллех чашлаттарать. Эпĕ

* Менингит чирĕпе чирлекен.

лачкам. Дояркӑсен, свинаркӑсен дворецне çитсе ўкрĕм. Чăнах та дворец. Варринче тем пысăкăш вулав пўлĕмĕ. Икĕ айăккинче — общежитисем. Кĕрсенех столовăй, шалалла çывăрмалли. Пурин те çутă краватьсем: кравать, матрас — колхозран, ытти — хăйсенчен. Питĕ те тирпейлĕ вырăнсем. Урамра пылчăк пулсан та кунта таса — ура салтса кĕреççĕ. Алăк çинче, кĕнĕ чух, Иванов портречĕ. Символлă. Хальхи çамрăксем, 7—10 çул вĕреннĕскерсем. Вăхăт сахал. Ялан ĕçре теççĕ хĕрсем.

Кузьмина, зоотехник, Ёнел хĕрĕ, сыснасем патне илсе кайрĕ. Апат çитернĕ вăхăт. Кунта йĕрў те, шăл шатăртаттару та пур, çуйăху. Хăлха çурăлать. Вите тап-таса. Выставкăринчен кая мар. Тимĕр карлăксене белилăпа сăрланă. Хĕрсем сыснасем çинĕ çĕрте кĕпесем çуса çакнă (тулта типмест — çумăр). Ёне витине кайрăмăр. 100 ĕне пĕр витере. Хĕрсем сĕт сăвакан аппаратсене вĕри шывпа чўхеççĕ (витрере), хăшĕ ĕне çиллисене тасатать. Электрицăпа сĕт сума пуçларĕç. Калаçу. Алă канать. Халĕ 11 ĕне вырăнне çирĕм ĕне сумалла. Чи лайăх ĕне — Лента, 29—30 литр сĕт парать. Халĕ вăл пăрахтарнă — час пăруламалла...

Августăн 18-мĕшĕ. ...Клуба кайрăм. Чăвашла лозунгсем. Иккĕн-виççĕн хаçат вуласа лараççĕ. Колхозăн показателĕсене çырса илтĕм. Зайцев патне кайрăм. Пĕр хĕрарăмпа калаçать. Фермăра ĕçлекенскер. Тирпейлĕ. Сăпайлă. Хăйĕн хакне пĕлекенскер. Куçра чеелĕх тени те пур. Калаçу сĕт чакарас хăрушлăх çинчен.

Парторг, Железов, патне кайрăм. Чылай калаçса лартăмăр. Ўпкелешет: Ислюковсем килсен ман пата килсе те пăхасшăн мар тет, Зайцевпа çеç калаçаççĕ тет. 48 коммунист, пурте производствăра çавăнта тăраççĕ. Интеллигенцийĕн хăйне организаци. Овчинников колхозник патне кайрăмăр. [...] Машина — Первомайскине. Малалла каймасса ĕнерех шухăшласа хунăскер, май килнĕ чух усă курас терĕм.

Çул çинче Бариновпа паллашрăм. Çул тăрăх хăйĕн çул мыскарисем çинчен каласа пачĕ. Чăваш писателĕсем çинчен анекдотсем (Тукташ, Агаков, Чулкаç çинчен). Грузинпа чăваш тавлашни. Кадр проблеми. Сăвăр заповедникĕ.

Августăн 19-мĕшĕ. Спас кунĕ. Ялти шăл йĕренсем ăна сыпас кунĕ теççĕ. Кун паян уяр. Усă курасчĕ. Анчах пĕтĕм ял урамра — уяв тăвать.

Çинккасем, Санюксем патне кайса лартăм. Оля амăшĕнчен сахăр ыйтать. Амăшĕн сахăр çуккине пĕлет, вăл ĕнтĕ аннене калам та — кукка илттĕр тет. Анчах ачасем валли

лавккасенче нимĕн те çук. Хăçан ача-пăчана тăраниччен кăмăл тăвайăпăр-ши? Суттай килсе ларчĕ. Венгрăн Кавказ карточкисене пăхрăмăр. Каç пулсан Романов патне кайрăмăр — çывăрнă. Çумăр яра пачĕ. Çĕрĕпех çунă.

Августăн 20-мĕшĕ. Арапуç колхозĕпе паллашса çÿрерĕм. В. Шаржанов юри лаша кÿлчĕ. Чакă хирĕсенче, фермăсенче, Арапуç шыв станцинче, колхоз фермисенче пултăмăр. Пирĕн колхозăн мухтанмалли сахал. Ĕç сÿрĕк пырать. [...]

Район центрне кайрăм. Ноннăпа калаçрăм. Кÿрентерчĕ. Касать чĕлхи: «Пире эс кирлĕ мар, укçу кирлĕ», — тет. Епле ача-пăча умĕнче çапла калаçмалла (Илемпи телефон патĕнче тăчĕ), ан тив, шÿт туса пултăр, çапах Илемпи пирĕн шÿте ăнланакан ача мар! Çав тери хурлантăм. Вара, продмагра Алексей Иванович Шестакова курсан, нихăçан ĕçменскер, иккĕн 100-шер грамм ятăмăр. Çапла, нумайăшĕ чун тарăхнипе ĕçме пуçлаççĕ тет. Эпĕ — чун ыратнипе...

Райкома, Николаев патне, кĕрсе лартăм. Эпĕ ăна пĕркун лозунгсене чăваш чĕлхипе çырасси çинчен каласаччĕ. Абашев пулнă — вăл та çав сăмахах каланă. Чылай каласса лартăмăр. Илья Макаров та пулчĕ.

Каçхине пирĕн патăрта Романов тата трактор бригадирĕ Смирнов пулчĕ — материалсем парса хăварчĕ, Яков Кузьмич килнĕ — кунтан куçмаллах. Ытла шапăлкка çын. Ун пек юрамасть.

Августăн 21-мĕшĕ. ...Ирхине паян Яков Кузьмичпа аппасем тата Санюксем патне кайрăмăр. Сывпуллашрăмăр. Йысна аттесен палăкне юлашки спасра тăвансемпе пухăнса лартма пулчĕ. Ачасене пăртак конфет патăм. Санюк йĕрсе юлчĕ. Хам та чăтаймарăм.

Венгр тата Я[ков] К[узьмич] ăсатса ячĕç. Атюст Нонна валли ятарласа ял çăкăрĕ чикрĕ. Кун паян уяр тăрать. Йĕпреç çулĕ вăрманта калама çук илемлĕ. Аслă, хĕвеллĕ, тикĕс. Пĕр çĕрте анчах, Эптĕлмен картунĕнчен иртсен, Кĕтне лаппинче пылчăклă.

Августăн 24-мĕшĕ. Чирлĕ. Варвитти. Те апат улшăнни юрамарĕ, те Аслă Пăла Тимешĕнче тупрăм — хваттер хуçи арăмĕ çавăнпа аптăраса выртатчĕ.

Йĕпреçрен Канаша таксомоторпа çитрĕмĕр. Силлет — ăш-чиксĕр тăрса юлаттăмăр. Канаша çитсенех Шупашкар автобусĕ (7 сехетри) пулчĕ. Ман çумра Муркаш районĕнчи пĕр ÿсĕр çын — колхоз председатель çумми («Калинин» колхозран). Çул тăрăх мухтанса пычĕ, унтан тĕлĕрсе кайса

урайне персе анчĕ. Вăл пĕлтĕр «Ворошилов» колхозне курма пынă: колхоз председательне тата Шупашкартан пынă будкăна (автолавка) анчах куртăм тет.

Тепĕр кун, августăн 22-мĕшĕнче, Чăвашгизра, правлениннче пултăм. «Кăмăлтан» наборĕ пĕтнĕ. Сатай, ман вырăна юлнăскер, ĕçрен ĕçкĕпе тухса кайнă. Талвир Франко уявне Киева каять. Тинис Петĕрĕ патĕнче институтра пултăм, чылай калаçса лартăмăр. Ман çинчен «Советская Чувашия» хаçатра Няманован тиркевлĕ статья пур тет. Тупса вулаймарăм. Ням-ням! ...

Каçхине Ваçлейпе арăмĕ килсе ларчĕç, хулана тухрăмăр. Хусанкай килмерĕ-ха — пĕлмен пулас. Анатолий Петров ĕнер чылайччен ларчĕ. Ĕнер ниçта та тухман — вăй çук. Паян ир мунчана кайса килтĕм. Ним те ĕçлейместĕп. Бомаршен «Тартюфне» вуласа тухрăм. Мĕнле илем!

Сентябрĕн 2-мĕшĕ. Августăн 27-мĕшĕнче Илемпипе хăна хĕрне ăсатрăмăр. Виçĕм кун Силпи каллех хăна хĕрĕпе çитрĕ.

Ленинăн 35 томлă изданине (4-мĕш) туянтăм, халь пĕтĕм ĕçе пăрахса каçса кайса вулатăп. Çак кунсенчех Тагорăн «Гори» ятлă романне вуласа тухрăм. Чăн-чăн индуизмăн тупсăмĕнче — этем, этеме юратни, хисеплени. Анчах активлăхсăр, теориллĕ, ўтсĕр-мĕнсĕр юрату. Ленинизм, ман шухăшпа, йăлтах урăхла. Кунта та тĕпре юрату, этем, анчах хастарлă, тăрăшуллă, кирлĕ пулсан — ăс парса кўпкесе те илекен юрату. Паллах, Сталин практики ленинизмпа этем тĕлĕшĕнчен ним чул та çыхăнса тăмасть.

Хусанкайпа тĕплĕн курса калаçаймарăм, урамра кăна.

Шавлин «Шав малалли» чăтма çук лайăх. Пултарать. Хамăн «Çўрев кĕнекине» те унран кая тăвас марччĕ.

Ĕçхĕл «Тăван Атăлти» (№ 4) статьяшăн тутине тăснă, нимĕн те ăнланаймарăм тет. «Тепĕр хут вуласа тух», — терĕм.

Çак кунсенче «Капкăн» çĕнĕрен тухрĕ. Пирĕн петтясем, ивансем мĕнле-мĕнле савăннă пулĕччĕç.

Ĕнер отпускран ĕçе тухрăм. Патман сборникĕпе лартăм.

Сентябрĕн 3-мĕшĕ. Ĕнер каç кўлĕм Тинис Петĕрĕ килсе ларчĕ. Ача кăмăлсăр. Ыран Ученăй советра ун çинчен калаçмалла. Коллективпа килĕштерсе пурăнманшăн ятларăм. Хăйне мĕнле чармаллине каларăм: ăнлантарса пар, анчах тўрре тухма ан тăрăш. Петĕр хыççăн Альтук аппа пулчĕ. Унпа Йăван патне кайрăмăр. 1832 çулта кăларнă чăвашла катехизиса куртăм. Вырăссем чăвашла калаçнă пек çырнă. Уйрăм терминсем интереслĕ, хăшне-пĕрне халĕ те хута яма пулать. Тинис çинчен калаçрăмăр. Ачана пулăшмалла.

Каçхине Ноннăпа Тинис патĕнче пултăмăр. Ачана йăлтах пăрахăçа кăларнă. Ятне туртса илмелле тунă, ĕçрен кăлармалла. Тĕрĕс, унăн хăтланчăкĕсене тӳрре кăларма çук, анчах ăнланма пулать — вăхăтран килнĕ: злое порождение времени. М. Сироткинăн та абзацĕ-абзацĕпе çынран сăптăрса илнисем пур, Тинисĕнни пекех, нимĕн кавычкăсăр. Ку вăл 40—50-мĕш çулсенче наукăна килнĕ çынсемшĕн система пулнă. Тинисе мар пăрахăçламалла, çав системăна пăрахăçлас пулать. [...]. Тепĕр пилĕк кунтан Ученăй советăн ку ыйтупа тепре пухăнмалла, юри — Петĕрĕн ăнлантарăвне итлеме.

Петĕрĕн арăмĕ питĕ маттур, мĕскĕнĕн тем пекех ăшĕ çунать пулĕ, çапах упăшкине ăслă сăмахсем каласа лăплантарать.

Сентябрĕн 4-мĕшĕ. Каç кӳлĕм Мария Степанова килсе ларчĕ. Хемите йăлтах тулласа пăрахнă. [...] Чунăм тăвăнса çитнĕ енне Макçăм Михайлова итлеме кайрăм. Нонна тата Гурий — пĕрле. Театр лăк тулли. Çӳремелли вырăнсене те пукансем лартнă. Фрак тăхăннă мăнтăр питлĕ старик. Кăкăр çинче лауреат паллисем. Кăлкан пек шурă çӳçлĕ. Кулкаланă чух — чăвашах. Питĕ те тулли саслă, таçтан кĕрлесе тăракан сас. Халăх юррисене («Степь да степь кругом», «Дубинушка» т.ыт.) ытарма çук лайăх юрлать. Пĕр çын юрланипе пĕтĕм театр тулса тăрать. Бас, ахраматлă бас.

Аса илтĕм: чи малтан эпĕ Михайлова 1935 çул пуçламăшĕнче Мускавра Пысăк театрта итлесеччĕ. Бельэтаж. Пирĕн ложăра тĕрлĕ çĕртен Маливка курсне килнĕ çамрăк çыравçăсем. Тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăх. Çумри ложăра акăлчансем. Вĕсемпе — сап-сар илемлĕ хĕр, яштак та çинçескер. Михайлов «Кончак» арине çĕмĕрттерсе пачĕ. Эпĕ кăтăрса кайрăм: Салам Михайлова! Чăвашсенчен салам! Аслă чăваша салам! (Ун чух эпир Михайлова чăваш пулĕ тенĕ). Таврари çынсем ман çине ухмаха ернĕ çын çине пăхнă пек пăхаççĕ. Гусейн Натик, азербайджан поэчĕ, ман çине уртăннă — лăплантарасшăн! Эпĕ ăна: «Хăçан сирĕн, азербайджансен, çавăн пек аслă юрăçă çуралас пур», — тетĕп. «Çуралать, — тет Натик, — каларĕ тесе калăн — çуралать!..» Чăнах та, тепĕр 10 çултан азербайджансен те Рашид Бейбутов палăрчĕ.

Унтанпа Михайлов та нумай ватăлнă. Эпĕ те ун чухнехи кăтăрса каякан çамрăк çын мар ĕнтĕ. Çапах та, юрă асамĕпе ĕнер хама хам тепĕр хут çамрăкăн туйрăм. Михайлов: «Ну, землячки, давайте напоследок споем вместе, затянем родную «Дубинушку», — тесен эпĕ те театрти халăхпа пĕрле хаваслансах юрларăм. Нонна манран кулса ларчĕ.

Тепре килсен Михайлова чăвашла юрлаттарасчĕ. Ăна «Алран кайми» питĕ те юрăхлă пулĕччĕ. Çавăн пекех «Ухахах!» килĕшĕччĕ. Кун пирки ăна паянах çыру çыратăп. Саламлас старике, тен, ўкĕте кĕрĕ.

Сентябрĕн 6-мĕшĕ. Ĕнер Михайлов радиоинформацинче пулчĕ — унăн концертне пленка çине çырса илнĕ — çавна тĕрĕслеме. Ман çырăва ăна Мальцев Н. тыттарчĕ. Икĕ хут вуласа тухрĕ. Куçма Чулкаça кăтартрĕ. Куçма ăна юлашки чăвашла фразине куçарса пачĕ. Тухса кайнă чухне пире пурне те алă пачĕ. Куçма ман çырăва палламан — эпĕ ăна «Исмуков учитель» тесе алă пуснă.

Мария Степанова патĕнчен Ст[епан] Максимчăн «Акасуха юррине» илсе килтĕм (вырăсла-чăвашла, Мускавра тухни), Чемоданова çырса илме патăм. Чемоданов ĕлкĕртсе Михайлова пама пулчĕ.

Ĕçленĕ çĕре Кăткă Упи килчĕ. Лашмана (вăл манпа каласça ларатчĕ) авкалана-авкалана алă тытрĕ, пăртак тăрсан ман çине пăхрĕ те: «Мана эсĕ алă та парасшăн мар-и?» — терĕ. «Эпĕ сан пата пыман, эсĕ ман пата килнĕ, этикет вĕçне тăрса юлтăмăр пулсан, ун тăрăх, килекенĕн алă тăсмалла», — терĕм. Йăлт-ялт пăхкаласа илчĕ те тухса кайрĕ.

Тимрясов патне кĕрсе тухрăм. «Куштансемшĕн» пăшăрханать, пĕтерсе пулмарĕ тет. Тинис çинчен тарăхса тата шеллесе калаçрăмăр.

Альтук аппа пулчĕ. Нонна темĕншĕн урса кайрĕ. Альтук хăйĕн 44 çул ĕлĕк пулнă романне каласа пачĕ. Роман халĕ те татăлман. «Ленина курни» очерк тăрăх тĕп герой ăна каллех шыраса тупрĕ, Барабинскран çыру ячĕ. Унта вăл Альтук пирки 44 çул ĕлĕк тухса кайнă. Ава мĕнле вăл этем чĕри! Малтанхи юрату.

Сентябрĕн 7-мĕшĕ. Ĕнер Чăвашгизра редсовет пулчĕ. Кун йĕркинче: Ухсай монографийĕ — К.В. Иванов çинчен. Тиркерĕç. М. Романов редакцилесе пĕтернĕ — очерк, авторне калла тавăрса пачĕç (тĕпрен юсама). Гурий (рецензент) хăйĕн маттурлăхне: пĕлўне, ăсне, çивĕчлĕхне — нихăçанхинчен лайăх палăртрĕ. Çĕнĕ положени пачĕ: чăваш литературипи И.Я. Яковлевран пуçланать. Чăваш илемлĕ литературипи реалистла литература пулса çуралнă. Иванов — классик. Нумайăшĕ — килĕшрĕç. Ухсай манран ыйтрĕ (кайран, пуху пĕтсен): «Эсĕ мĕн шутлатăн кун пирки?» Хурав: çĕнĕ шухăш аргументсем тĕлĕшĕнчен вăйлăрах.

«Кăмăлтан» корректурине алла илтĕм. Альтук аппан авалхи тусне Барабинскине çыру çыртăм.

Сентябрĕн 8-мĕшĕ. Ĕнер кунĕпех тенĕ пек хамăн корректурăпа лартăм. Каç кӳлĕм ĕçе кайса Пушкай сăввисене пăхса тухрăм. Каярах поэт хăй те пычĕ. Эпĕ ăна кӳрентертĕм пулас. Сăввисем пĕрре те кăмăла каймарĕç.

Тинис Союза кĕрсе тухрĕ. Çӳлтисем, вăл калана тăрăх, Учсовет решенине сивлеççĕ. Ачана пĕтересшĕн мар. Ахăртнех, ĕçне ВАКа çитермеççĕ пулмалла. Любимов та халь урăхларах калаçать тет.

Паян ир усал кăмăлпа вăрантăм. Каллех тĕлĕкре чиркӳсем, кивĕ масарсем курнă. Тĕк тăнă çĕртен Ноннăна кӳрентерсе пĕтертĕм, йĕртрĕм. Аван мар. Очерксене халĕ те йĕркеллĕн пуçлаймарăм-ха. Темĕскер, алă çĕкленмест.

Сентябрĕн 10-мĕшĕ. Тунти кун. Шăмат кун Мускавран Литература фончĕ енĕпе 5211-78 укçа илтĕм. Почтăри перекет кассинче Нонна кĕнекине уçса унта 5 пинне хутăмăр. Çавăн пекех, мансăр пуçне, çавăн чухлех А.И. Золотов, Н.К. Патман, И.Я. Яковлев илнĕ.

И.В. Васильевпа урампа пĕрле утса пытăмăр. Старик Михайлова юратсах каймасть. Дьякон ролĕнче вăл лайăхрахчĕ тет. ... Иван Васильевич концерта пыман. Тен, кĕвĕçет вара юрă ăсти? Тен, чăнни те çук мар? Эпир чăн-чăн юрă ăстисене сахал курнă вĕт. Тем каласан та Михайлов Шупашкара пăтратса хăварчĕ.

«Кăмăлтана» корректорсем вулаççĕ. Çавăн пекех пĕр экземплярне Тимрясов хăй патне илнĕ, вулать. Татах кĕскетмесен тем пекчĕ.

Тимрясов Ленинăн юлашки, хальччен çапăнман документчĕсене куçарнине кăтартрĕ. Кузнецов тата Долгов куçарнă. Тиркешрĕм, Ленина тăм чĕлхепе мар, вут чĕлхепе куçармалла, Кузнецов куçарнă тĕлсем самайтарах. Сăмах техĕмне сахал чухлаççĕ пирĕн тăлмачсем.

Ĕнер Илемлĕх галерейинче пултăм. Хĕвел анăçĕнчи графиксен выставки. Домьен наркăмăшлă ĕçĕсем кăмăла кайрĕç. Рембрантăн пĕчĕк выставки пур. Ачана ăмăрт кайăк йăтса кайни тĕлĕнмелле. Çарамас Даная аван.

Сентябрĕн 11-мĕшĕ. Каçхине, 11 сехет. Халь кăна партвĕрентӳ çуртĕнчен килтĕм. Унта Геннадий Волковăн калаçăвĕ пулчĕ — 20 кун Францире. Чăваш çĕршывĕ хĕсĕр мар иккен: çав тери ăслă, нумай вĕреннĕ, тем чул пĕлекен çамрăк çын. Ăна эпĕ мĕн чул çывăхрах пĕлсе пыратăп, çавăн чул нумайрах юрататăп. Тема — калама çук теветкеллĕ. Сăмах вăрлакансем, шăршлавçăсем — эпĕ паллакансемех 2—3. Çав тери тактпа, виçеллĕ, çав вăхăтрах мĕн кирлине ним пытармасăр, тĕрĕс каласа пама пултарчĕ Волков. Халăх нумай

мар, тен, çавăнпа та шпиксем ытларах та куçа тăрăнса ларчĕç пулас. Лайăх, кăмăллă итлерĕç, калăн, питĕ ăшă юмор (вăл, Шавли калашле, ăшă çумăр пекех кирлĕ), ача питĕ те юмор нормине юратать. Пуху салансан киле пĕрле кайрăмăр, чылай утса çÿрерĕмĕр, пухура калама юраманнисене нумай пĕлтерчĕ. Çак кунсенче хăй çырса пынисене «Тăван Атăла» парать.

Паян «Кăмăлтана» (авторски) антартăмăр, вырăн ытларах пулнипе «Элегине» хутăштартăмăр (Кузнецовпа Илпек ырларĕç).

Пултăр А. Кирилч ĕнер пирĕн пата çитрĕ. Ватă хусах. Оригинал. Тĕнчерен тарса çÿрекен çын. Ĕмĕрне вăрмансенче йывăр ĕçре ирттерет. Халь Енисей çинчен вăрман хатĕрлевĕнчен килнĕ. Аçта каять малалла — хăй те пĕлмест. Тĕлĕнтермĕш этем.

Сентябрĕн 12-мĕшĕ. Кузнецовăн чăваш национализмĕ çинчен çырнă ĕçне вуларăм, кăшт-кашт сĕнÿсем патăм, И.Саламбек хăйĕн чăваш историйĕпе çырнă ĕçне вулаттарчĕ. Оригиналлă япала. Пăртак юркинлăх пур. «Чукал» çинчен каласа патăм. «Киремет» сăмаха хам ăнланнă пек каласа патăм. Кирия — турă, грек сăмахĕ, мет — таса вырăн (резиденция бога — священное место).

Ман «Кăмăлсем» тавра Чăвашгизăн литература пайĕнче паян та шав пулса иртнĕ. Давыдов: «Акă курăр, çакă вăл чăн-чăн поэзи!» — тесе ман кĕнекен авторски экземплярне Ухсая тыттарать. Лешĕ сурчăкне сирпĕтсе тиркешме тытăнать. «Политика йăнăшĕсем» тупать. Ана Ĕçхĕл пулăшать. Ÿсĕр М. Романов пырса кĕрет — вăл та вĕсен майлă. «Мĕншĕн поэзи секцийĕ урлă кăларман?» — тесе калаççĕ тет. Ухсай Илпеке: «Мĕн, сан партбилету ытлашши-им?» — тесе каларĕ тет. Провокацисем пулма пултараççĕ, кĕтсех тăр. Курăпăр.

Сентябрĕн 18-мĕшĕ. Ĕнер пĕлтĕм: ман кĕнекене редсовет пăхса тухмалла. Кăткă Упипе Шаккур А. Янташ патне пырса пăлхатнă. Янташ патĕнче пултăм. Ун сăмахĕ: «Кăмăлтана» юратса, пĕтĕм кăмăлтан вуласа тухрăм. Ку кăмăла эпĕ редсовета та пĕлтертĕм. Ухсай çырнисене эпĕ нихăçан та кăмăлпа вуламан. Унăн килентерекенни, савăнтараканни çук». Курăпăр, мĕнле тыткалĕç хăйсене «Кăмăлтана» çураличченех мухтакансем? Халех выводсем тума çук, анчах ку провокаци йĕрĕсем питĕ те шалтан килеççĕ пулмалла.

Патман сборникне паян туса пĕтеретĕп. Силпи пирĕн калама çук йĕркеллĕ, ăслă, илемлĕ хĕр ача. Юратса пăрахрăм.

Ыран мар тепĕр кун каять. Мĕскĕн, ашшĕ-амăшĕ килĕнче кăмăл тăраниччен те пурăнаймасть.

Сентябрĕн 19-мĕшĕ. Шăратса çитернĕ сăвăра металл сасси пур. Çав сас пулсан — сăвă лайăх вара. Ёнер Пушкай сăввисене пăхса тухрăмăр. Металл сахал. Пĕр вуннăшне «Тăван Атăл» валли хăвартăмăр. Кăткă Упи унта та (поэзи секцинче) хирĕçесшĕн. Паян «Кăмăлтана» пичет валли вулама илтĕм. «Кăмăлтан» — Митта металĕ. Тем пекчĕ вулакансем çав сасса туйса илсен!

Сентябрĕн 23-мĕшĕ. Вырсарни кун. Хурине ăсатма кайрăм. Таврăннă чух юр çăва пуçларĕ. Тăвăл тухрĕ. Кивĕ масар çинчи хурăнсем хуçăлас пек авăнаççĕ. Хурăнсем айĕнчен иртме хăрушă тесе аякран пăрăнса кайрăм. Условнăй рефлекс — лесовалта тăвăл тухсан уçланкăсене тухаттăмăр. Кун пек ытла та ир юр курăннине астумастăп.

Сентябрĕн 26-мĕшĕ. Ёнер Хумма Çеменне асăнса ирттертĕмĕр. Вилни 20 çул тултарчĕ. Лукка Эрхипĕ, Лашман, Ваçанкка т. ыт. те ăшă сăмахсем каларĕç.

[...]

Сăвă çырасси механикăлла чăкăлтăш ĕç-хĕл анчах мар, асамлăн юмлани те. Поэт хĕрӳ хавалпа çунатланса каять, хăш чух хăй мĕн каланине чухлайман шаман пек кĕлтăвать.

Сентябрĕн 27-мĕшĕ. Кăткă Упи ĕнер хăйĕн кăмăлĕ ман пирки çаврăннине пĕлтерчĕ. [...]. «Атя иксĕмĕр пĕр журнал тăвар», — тет.

«Журналсене пирĕнсĕрех тунă», — терĕм. «Сан чĕлхӳ питĕ лайăх», — тет. Ку хисепшĕн тав турăм. Киле таврăннă чух ман çума явăçрĕ. Чылай утса çӳрерĕмĕр. Ман çинчен астунисене кала-кала пачĕ. Хусанкая, Талвире юратмасть. Ятларăм. «Сирĕн виççĕрĕн те Чăваш республикине шăнăçайман ятсем, тахçанах эсир чăваш чикки урлă каçса Раççей ирĕклĕхне тухнă: мĕн çитмест сире — çакăн пек пĕр-пĕрне кансĕрлесе пурăнма», — терĕм. Мăк-мак тăвать, çамкине мăкăртнă, куçĕсене [...] пытарать, айăплăн кулкалать — уççăн нимĕн те калаймасть.

Ыран курăпăр: çаврăннă-и, çаврăнман-и ун кăмăлĕ? Ыран — редсовет, «Кăмăлтана» пăхса тухаççĕ.

Такам ĕнер Алакĕре: «Митта Çеçпĕлтен 3—4 хут иртсе кайнă», — тенĕ (ман сборнике вуланă хыççăн). Кам вăл мана çав тери хаклакан — ыйтмарăм.

Ёнер Вăрăм Ваçлейпе магазинсем (кĕнеке), бибколлекторсем тăрăх çӳрерĕмĕр. Пасара çитрĕмĕр. Мана чикан майрисем юмăç пăхасшăн тапăнчĕç. Пăхтартăм — укçине

кивçен Ваçлейрен 2 тенкĕ илтĕм. Пĕри: «Эпĕ питĕ хăруша тухатмăш, хŭреллĕ çуралнăскер», — тет. Хăй куçĕпе çисе ярать.

Ваçлейпе чылай калаçса çŭрерĕмĕр. Китайри компарти съезчĕ çинчен калаçнă чух: «Кам кăна тухса каламасть — философ. Философи шухăшĕ пиртен чăн-чăнах тарчĕ, Китая кайрĕ пуль», — тесе пăшăрхануллăн каларĕ. Габдрахман Минские чыслама Талвир мана ярасшăн. Каяс. Хусанта пулманни пĕр ĕмĕр. Юлашки хут эпĕ унта 1939 [çул] пуçламăшĕнче, крепость тĕрминче пулнă — Горькине (лагере) этаппа кайнă чух. «Бокс» текеннине те чи малтан çавăнта курнă, активнĕ.

Сентябрĕн 28-мĕшĕ. Тин анчах редсоветран çитрĕм. Халăх — икĕ пŭлĕм туллиех (редактор кабинечĕ тата ун çумми).

20-мĕш çулсенче çырнисенчен пĕр-икĕ сăвă, «Хулăм сасă» пĕтĕмпех тата, перерыв хыççăн, «Тайăр» ярăмне, вуларăм. Пуху аван йышăннă пек туйăнчĕ. Маншăн хĕрŭленсе калакансем: Краснов-Кĕçĕнни (Митта металĕ), Ильбеков (орга́н пек янăрать), Давыдов, Уйăп, Долгов, Кузнецов т. ыт. те. Алка та маншăн каларĕ. Ĕçхĕл питĕ те кăлармалла мар тесшĕн те ирĕксĕрех, пăркалана-пăркалана, шăла çыртса сборнике хирĕç калаймарĕ. Алакер [...] вăрттăн пăтратса çŭрерĕ: Тайăр çинчен мар, хăй çинчен çырнă! Паян çĕрĕпех çăхав çырать ĕнтĕ вăл тесе хăлхасенчен пăшăлтатса çŭрет. Кăткă Упи мăк-макран ытла нимĕн те калаймарĕ...

Пуху, пĕтĕмĕшле илсен, маншăн пулчĕ. Шаккурсем, Калюковсем, Кăткă Уписем ăшталанса çŭрени ахалех пулчĕ. Кĕçĕннине Ухсай ирхине: «Пулать паян вăрçă», — тесе каларĕ тет. Кайран, пуху хыççăн, мана пĕтĕм çын умĕнче пырса алă тытрĕ: ан çиллен тет. Калюков пуху вăхăтĕнче, что ни строка — ошибка! тесе каланине каласа çŭренĕ. Шуйттан — хăй вуламан та. Провокаторсен меслечĕ: çынсен кăмăлне сĕвĕрĕлтересшĕн. Çапах та пуху çав вăлтана çакланмарĕ. Пуху хыççăн пăртак уткаласа çŭрерĕмĕр (Долгов, Никандров, Кĕçĕнни, Ильбеков). Çĕнĕ çуртсем курса савăнтăмăр. Çав вăхăтра мана Ухсай шыраса çŭренĕ. [...] Пирĕн киле пынă — питĕрнĕ, Нонна çук. Хăй патне илсе каясшăн, тапăнмаллипех тапăнчĕ — каймарăм: тепĕр чухне терĕм [...].

Пуху хыççăн чылай юлташ пырса алă тытрĕç. Çак эрнере сборнике пĕтерсе парас пулать — юлташсем чĕререн каланине (кирлине) шута илмелле.

Сентябрĕн 29-мĕшĕ. Эпир çывăрса та тăман, Ухсай чупса çитрĕ: «Хусана пĕрле каятпăр, — тет. — Пире Кави Над-

жми кĕтет, телефонпа калаçрăм», — тет. Эпĕ халех каймастăп-ха терĕм.

Çак кунсенче правлени мана Габдрахман Минскин юбилейне ярасшăн. [...]

Сентябрĕн 30-мĕшĕ. Долгов Ваçлейпе Атăл леш енне каçрăмăр. Кун паян питĕ лайăх. Кĕркурипе Кçинкка патне кĕтĕмĕр. Хăна турĕç, питĕ те хавасланса кайрĕç. Виççĕн тата Кĕркурин пĕчĕк хĕрĕ Эля вăрмана кайрăмăр, кăвайт хутăмăр. Сосновка поселокне тухрăмăр, унта пĕр урамра 560 çула çитнĕ ватă хыр. Хулăнăшĕ шăп виçĕ хăлаç (эпĕ, Долгов, Гриша), çӳллĕ, чĕп-чĕрĕ. Йĕкел тума пăрахнă. Ку хыра Наукăсен академийĕ шута илнĕ (вырăнти вăрман хуралçи каланă тăрăх).

Октябрĕн 1-мĕшĕ. Шавли ман сборнике вуласа тухнă, ырлать. Ман халех Хусана кайма пулмарĕ (ыран тухса каймаллаччĕ). Ухсай хăй каясшăн [...], командировка ыйтать. Эпĕ отказ патăм. Ăна та ямаççĕ.

Октябрĕн 2-мĕшĕ. Талвир мана Хусана ярасшăн каллех калаçать. Яхăна та ямарăм. Николай Петров, çамрăк чухнехи юлташăм, «28» поэмăн авторĕ, Союза кĕрсе тухрĕ. Ăна эпĕ уйăх каялла Юхмара курсаччĕ, ун патĕнче хăна пулсаччĕ. Хам хăна тăваймарăм — васкарĕ.

Пинерпи Алтайран таврăнни иккĕмĕш кун.

Паян «Атăл юрри» ятлă тăватă çаврăмлă сăвă çыртăм. Ачасене ĕнер 300 тенкĕ укçа куçартăм ...

Нумаях пулмасть «Виçĕ хăват» ятлă сăвă çырсаччĕ. Тавтапуç, сăвă кăмăлĕ уçăла пуçларĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕ. Эрне кун. Ирхине Атăл хĕрринче уçăлса çӳрерĕм. Павăл Иванов шыва кĕрет. Паранкăпа каякан пĕтĕм чăваш ун çине тĕлĕнсе пăхса тăрать.

К. Иванов кĕлетки пăсланнă. Хĕвел ун çине ӳкнĕ, хура бронза поэтăн пичĕ çинче тĕл-тĕл ылтăн пек йăлтăртатать. Ылтăн чăмăркки (самородок) сыв пулсан çавăн пек сăвă çырмалла. Памятник умĕнчи пусмасем пăсланса тăраççĕ — авалхи киремет пек.

Виçĕм кун ĕçленĕ çĕре Хурипе Кăткă Упи пычĕç. Хурин поэмине каялла тавăрса патăм — туса çитерме. Урса кайрĕ: «Миçе çул тӳрлетмелле, — тет. — Мĕнпе пурăнмалла, ман çăкăр çиес килмест-им?» — тет. «Çăкăршăн çырнă сăвăран пăх шăрши кĕрет, сăвва сăвапшăн çырас пулать», — терĕм. Ку сăмах чи малтан Кăткă Упишĕн пулчĕ. Анланчĕ пулас.

Ĕнер ĕçе каяймарăм. Пӳрте шуратакан пулчĕ. Хĕрарăм. Карчăк. Ĕçесшĕн кастарать. Ноннăран 50 тенкĕ укçа (аванс) ыйтса илнĕ. Нумай та тăмарĕ, тухса кайрĕ (паллах, ĕçме).

Паян тăхăр сехет çитет — халĕ те çук, мухмăрпа выртать пулмалла.

Октябрĕн 6-мĕшĕ. Ӳсĕр майра пăрахса кайрĕ — таси паха! Хваттере пĕр лав пылчăк туса хăварчĕ.

Паян Альберт Канаша Хисеплĕ хут парнелесси çинчен Аслă Советăн приказĕ тухнă. Шавлипе иксĕмĕр паттăр поэта саламлă телеграмма çаптартăмăр (текст манăн):

Вăй патăр, Али паттăр!
Сана саватпăр, ал паратпăр.

Стихван ман кĕнекене мухтаса рецензи çырнă. Ытлашши те каланă. Юрĕ, аванс вырăнне йышăнăпăр. Малалла мĕнпур халпа ĕçлесшĕн.

Паян Овечкинăн çак кунсенче «Литгазетăра» тухнă «Читатели и писатели» ятлă пысăк статйине вуларăм. Салам и браво! Пурăннăçем пурăнас килет. Тăхланланса ларнă бюрократизма хурçă мăлатукпа кӳпке пуçларĕç. Акă ăçта вăл культ киреметне ишни. Пĕлевленсе, пӳрленсе ларнă бюрократизма Ленин ланцечĕпе тасата пуçларĕç (юлашки танлаштару лайăхрах. Кунпа ăçта та пулин усă курмалла).

«Кĕркунне» ятлă сăвва пĕтертĕм.

Октябрĕн 25-мĕшĕ. Паян ир вăраннă çĕре тĕнче шапшурă, юр çуса кайнă. Ман бюллетеньпе тухтăр патне каймалла, пилĕк кун ĕнтĕ чирлекелесе пурăнатăп — ангина.

Венгрире — пăтăрмах.

Октябрĕн 29-мĕшĕ. Паян эпĕ панă «янташ» сăмаха чи малтанхи хут радиопа каларĕç («Чапаев — пирĕн янташ» очерк). Çапла çĕнĕ сăмах аталансах, тымарлансах пырать. Унпа эпĕ малтан Талвир патне янă çырăвăмра, 1954 çулта, киле таврăнас умĕн усă курсаччĕ.

«Кăмăлтана» паян пĕтерсе патăм. 300 йĕрке çĕнĕрен хушрăм. Çапла, нет худа без добра. Редсоветра ыйту лартман пулсан сборник сулмакĕ кун чул пулас çукчĕ.

Ноннăна Мускавран костюм, пальто тата хĕрарăм гарнитурĕ ячĕç. Тавтапуç ачасене, тăрăшаççĕ.

Çак кунсенче çырнă «Кĕрхи илемпе» «Вун тăваттă çапсан» сăвăсене Кĕркурипе Илпек вуларĕç.

Октябрĕн 30-мĕшĕ. Чăвашсен «пулнă пĕтнĕ», «каснă лартнă» сăмах пур. Соответствует русскому «законченный». Законченный дурак — пулнă-пĕтнĕ ухмах!

Ноябрĕн 12-мĕшĕ. Пĕр чăваш, çав тери вырăсланса кайнăскер, хăй вырăс иккенне кăтартасшăн апчху тунă чухне те юри апчхи! тенĕ.

Ноябрĕн 15-мĕшĕ. 12-мĕшĕнче радиопа икĕ сăвă вуласа патăм («Пит маттур-çке...» тата «Атăл юрри»). Радиопа калаçманни 20 çул та пулать пулĕ.

8-мĕшĕнче пуçтарăннă уяв вăйлă пулчĕ. 20 çын ытла. Ноннăпа пĕрлешни 25 çул тултарнă ятпа юрларăмăр, ташларăмăр. Пăлаçи хĕрарăмĕсем (Давыдова, Сорокина) тата Хусанкай арăмĕ юррисемпе савăнтарчĕç. Урамра юрласа пынă чух пире хирĕç кĕрĕк-пиншак тăхăннă чăваш хĕрарăмĕ утса пычĕ — Хусанкайсен айĕнчи магазинсене хураллаканни. Пире «Вĕлле хурчĕ» юрлама ыйтрĕ. Эпир унăн тавра çаврăнса юрларăмăр. Хусанкай кăмăлĕ хуçăлчĕ. Чăваш хыси тĕреклĕ-ха терĕмĕр. Хуралçăн пичĕсем тăрăх куççулĕ шăпăртатса анчĕ!

Кăткă Упи каллех йăпăлтатать.

Талвирпа Тимрясов тата Исаак хушшинчи тав пăшăрхантарать. Элекçей не прав! Укçашăн туслăха парне кӳме хатĕр. Хусанкайпа иксĕмĕр ятларăмăр ăна — яхăнне те ямасть. Капла пулсан, паллах, пĕччен юлать. Шаккурпа Калюковшăн — савăнăç.

Декабрĕн 12-мĕшĕ. Арăм вăл — чĕлĕм. Кирек кама та хăйĕн чĕлĕмĕ тутлăрах туйăнать.

Декабрĕн 13-мĕшĕ. Элекçей Мускавран хыпар илсе килчĕ. Аслине тата мана кандидатран члена куçарнă. Çапла тĕрĕсси 22 çултан тин çиеле тухрĕ. 1934 çулта чăваш писателĕсене члена илес комиссийĕн председателĕ эпĕ хамччĕ. Хамăрăн списока эпир малтанлатса чăваш писателĕсен съезчĕ урлă кăлараттăмăр, вара Мускава çирĕплетме яраттăмăр. Шупуççыннипе Данилов, пирĕн уполномоченнăйсем, пире, Краснов-Аслипе иксĕмĕре, кандидата кăна илтерсеччĕ. Çав вăхăтрах творчество тĕлĕшĕнчен хĕсĕр çынсене члена илтерсеччĕ. Пире ун чухне (Красновпа иксĕмĕре) Золотов-Даниловсене хирĕçле вăй тесе шутланă.

Парти вĕрентĕвĕн кружокĕ пулчĕ. Тема: «В.И. Ленин Толстой çинчен». Икĕ хут тухса калаçрăм.

Декабрĕн 15-мĕшĕ. Иртнĕ каç Ноннăпа театрта пултăмăр. «Вăрман» Островскин. Чăвашсем питĕ те маттур выляççĕ — чĕлхе фактури (вырăсларан куçарни) пĕтĕмĕшпех çухалать (илемсĕр куçарнă тĕлсенче çеç туйăнать), образсем çеç юлаççĕ. Ку вăл чаплă вăйăн палли. Ун пек чух чĕлхе çинчен шухăшламастăн та. Эллепе тата Родионовпа (режиссер) калаçрăм. Рецензи çырма ыйтаççĕ. Уйрăмах Ургалкин (Несчастливцев) тата Ананьева (Гурмыжская) вăйлă вылярĕç. Тĕлĕнмелле ĕнерĕннĕ ансамбль, Мускавра кăтартма пулать.

Куçарнă пьесăсене çакăн пек килĕшӳллĕ вылянине курманччĕ-ха. Публика лайăх йышăнчĕ. Культ ийи чăмланă чăваш интеллигенцийĕнчен никам та çук (пĕр журналист та, пĕр тиек те!), ун вырăнне ахаль халăх (рабочисем, работницăсем, колхозниксем, вĕсен хушшинче пĕр капитан, Герой Советского Союза!) туллиех. Чăваш хĕрарăмĕн хыси хавшаман-ха, халăх тата унăн культури пурăнать, наперекор всем Картошкиным.

Декабрĕн 18-мĕшĕ. 1937 çул — малтанхи арест. Шăп çур çĕрте килсе кĕчĕç. Ачасем çывăрса юлчĕç. Илемпи анчах — алăри ача — çывăрманччĕ. Паянхи пекех ăшă, йĕпе-сапаллă кун. Пирĕн патăрта чух джентльмен пек Исаев мана Ехрем çуртне илсе çитерсен сасартăк урнă йытта, кашкăра тухса кайрĕ — ахăрать, тулашать. Вун тăхăр çул иртрĕ. Çав каç халĕ те халь çеç пулса иртнĕ пек. Çавсем çинчен майĕпен çырас пулать.

Декабрĕн 22-мĕшĕ. «Кăмăлтанăн» хатĕрлесе çитернĕ пĕрремĕш экземплярĕ алла кĕчĕ, ăна Ноннăна парнелерĕм.

Декабрĕн 24-мĕшĕ. Паян юлташсене хам кĕнекене валеçсе патăм; авторски илни (9 экземпляр) çитмерĕ тата хам шутпа 50 экземпляр заказ патăм.

Хусанкая тата Вера патне почтăпа ятăм. Талвирпе чылай калаçса лартăмăр. Мускав хыпарĕсене пĕлтерчĕ. Пире, 6 чăваша, члена илнин мыскарине каласаултарчĕ.

Тинис Петĕрĕ Хусантан историксен конференцийĕнчен таврăнчĕ. Тутарсем булгар теорине пăрахăçа кăларасшăн иккен — каллех Ылтăн уртасем пуласшăн. Пулхăра каллех пĕтĕмĕшпех чăваша пӳреççĕ.

Декабрĕн 25-мĕшĕ. Тинис Петĕрне вĕлерме памарăмăр. Пысăк айăп тунă — диссертацире ытти авторсенчен ятне каламасăр çырса илнисем нумай... Анчах пултарулла вăйçă, пысăк эрудициллĕ ача — хӳтĕлемелле пулчĕ.

Воробьев профессор, Тинисăн научный руководителĕ, питĕ ăслă каларĕ, ĕçе ырă хальлĕн пĕтерме çавă нумай пулăшрĕ. Кузнецов, Долгов, Титов, обкомран Кудрявцев, хăй Андреев, ну тата эпĕ те аванах каларăмăр. Эп каласшăн та марччĕ, анчах Павлов каярах тухса Денисова проходимец теме пăхни мана çĕклерĕ — тивĕçлĕ пек хирĕçлемелле пулчĕ. Пĕркун ВАКа тата пичет урлă пĕлтермеллине пăрахăç турĕç, анчах Тинисе институтран кăларнине тĕрĕс тесе шутларĕç. Çакă тата интереслĕ пулчĕ: Димитриев (уч. секретарь) пĕтĕм общественнăçа Денисов май Митта организациленĕ тет, мĕншĕн тесен Тинис Миттапа арăмĕ енчен

туршăнкă тивет тет. Ку «аргумента» вăл чи юлашкинчен каларĕ, ахăртнех, Совет членĕсене алчăратса ярас терĕ пуль. Эффект кулăшла пулчĕ. Эпĕ справка патăм.

ВАКа пĕлтерессишĕн виçĕ çын сасăларĕç: Иван Павлов, Канюков (виççĕмĕш Романов пулмалла), Димитриев сасăламарĕ. Любимов хальхинче Тинисе хýтĕлекенсен енче пулчĕ. Паллах, эпир Денисовра «кукăр алăллă» ларса çитмен çамрăка мар, ăслăлăх ĕçĕнче шанчăк паракан пултаруллă çамрăка хýтĕлерĕмĕр.

Розалия Тарасовна халĕ йăл илет ĕнтĕ. Айван упăшки пирки йăлт пĕтсе кайнăччĕ. Мĕскĕнсем, пирĕн арăмсем пирĕншĕн, вĕри чунлă упăшкисемшĕн, мĕн чул хĕн кураççĕ!

Декабрĕн 26-мĕшĕ. ...Çĕнĕ çул валли Куçма (Чулкаç) ман «Салам куркине» çырса илчĕ. Хам вуларăм. Радио инженерĕ (хĕрарăм) мана валли пĕр копи туса пачĕ. Сĕтеле тирпейлесе хутăм. Стихван паян пĕр пулхăрăн сăввине вуласа пачĕ — вăйлă, хăй куçарнă. Мухтанма тытăнчĕ. Талант тет. «Эс мар талант, — терĕм — чăваш чĕлхи талант. Чĕлхемĕре мухтар», — терĕм. Савăнса кайрĕ. «Капла питĕ аван пулать: сăпайлă та витĕмлĕ. Мухтанатăн тесе никам та калаймасть», — терĕ.

Декабрĕн 28-мĕшĕ. Поэзи секцинче «Хамăр ялсем» çинчен пысăк доклад турăм (çырса хатĕрленĕ) — 1 сехет те 30 минут. Аван йышăнчĕç. Талвир критиксен статьясен сборникĕнче кăларасшăн. Ĕçхĕлпе Шавли пире мухтаса пĕтерчĕç — Белинские аса илеççĕ (утрата чувства скромности). Поэма çинчен, ахăртнех, сахалрах калаçрĕç пулĕ.

Çак кунсенче пичете хатĕрлес тетĕп.

Поэзи секцинче миçе пуху тумарăмăр кăçал?

Радиора ман передача пулать, паян çырчĕç.

Декабрĕн 29-мĕшĕ. 7 сехет те 30 минутра каçхине вăтăр минут хушши радиопа ман сăвăсене пачĕç. Ум сăмахне Куçма Чулкаç çырнă — ăшă, ырă кăмăллă. Хам «Сиктермерĕн мана», «Атăл çинче», «Олег» тата «Вун тăваттă çапсан» вуларăм. Ефимова Çирахви «Тĕнчере хĕрĕх те пĕр илем», «Атăл юрри», «Кĕрхи илем» вуларĕ.

Передачăна килте Ноннăпа итлерĕмĕр. Кýршĕсем Тосьăпа Тамара килсе саламларĕç.

Паян «Тăван Атăлăн» сигнальнăйне вуларăмăр. Çĕнĕ çула тиража парасшăн.

Ноннăпа 11 сехет çĕрле почтăна кайса тăвансене телеграммăсем патăмăр: Арапуçне, Мускава — ачасене, Рудныя — Кольăна, Киснере — Аньăна.

Декабрĕн 30-мĕшĕ. Паян «Кăмăлтана» хам валли 50 экземпляр туянтăм.

Декабрĕн 31-мĕшĕ. Нонна хамăр валли елка илемлетрĕ. Теттисем — Илемпи пуçтарса хунисем. Елка айĕнче ваткăран тунă юр, ун çинче Михаля карточки, Силпи Кавказран илсе килнĕ тем пысăкăш хыр йĕкелĕ. Çĕнĕ çула мунча кайса кĕтĕмĕр. Халăх — лăчă пек. Нарспи çĕнĕ çула пыма чĕнет, амăшне ярса килтерес пулĕ.

6 сехет те 30 минут. Чăваш старости Митьков радиопа калаçать. Ликбезра вĕренекен пек вулать (чăвашла). Намăс!

Чăваш поэчĕсем радиопа тухса калаçрĕç. Вĕсем хушшинче эпĕ те «Салам куркине» вуларăм. Салам телеграммисем Венгртан, Мускаври хăта-тăхлачсенчен тата Н. Кирилловăран килчĕç. Евдокия Яковлевна килчĕ. Халĕ пурте писательсен Çĕнĕ çул вечерне каятпăр.

1957 çул

Январĕн 1-мĕшĕ. Тĕнчене нумай ăс панă 1956 çул иртсе кайрĕ. Сывă пултăр Çĕнĕ çул — 1957 çул. Эсĕ мĕн парăн тата пире?

Иртнĕ çул маншăн та пултарулăх çулĕ пулса тăчĕ. Мĕн шухăшланине пĕтĕмĕшпех тăваймарăм пулсан та, çапах, вăй çитнĕ таран, чăваш çырулăхĕнче хам сăмаха каларăм.

Ватăлас мар, ўркеве ерес мар, пурнăçран юлас мар — çак кăмăл çĕнĕ çулта мана хăпартлантарса пытăр. Ĕçре вырăссем пек пуçтах (настойчив), китайсем пек ăслă пулас.

«Женьминьжибаоран» илсе «Правдăна» çапнă статья — «Еще раз об историческом опыте диктатуры пролетариата» тĕлĕнтерсе ячĕ. Тĕнче ăсĕ Китая куçнă. Мĕн чухлĕ пĕлў, ăс, витĕр куру! Статьяра тăватă тĕп ыйту: оценка основного пути революции и строительства в Советском Союзе; оценка заслуг и ошибок Сталина; борьба с догматизмом и ревизионизмом; международная солидарность пролетариев стран.

Наци ыйтăвне питĕ кăмăллă çутатса панă. Çак статьяри шухăшсене вырăна хурса ĕçлесе пырсан пирĕн çул çинчи йăнăшсем нихăçан та трагедиллĕ пулмĕччĕç.

Çĕркаç Нонна, Альтук инке, эпĕ писательсен çуртне Çĕнĕ çул уявне кайрăмăр. Уява йĕркеллĕ организацилеймен. Чи кирли — кĕреке çук. Ун вырăнне — буфет, ĕçсеçиме килекенĕн хăйĕн пырса илмелле. Ташлани, юрлани пулчĕ. Урташ, ўсĕрскер, ахăрашрĕ. Нумай лармарăмăр. Хамăн кĕнекене хăш-пĕр юлташсене автографсем туса парнелерĕм.

Паян ирхине Нонна, Шавли, эпĕ Атăл хĕрринче уçăлса çўрерĕмĕр. Çак кунсенче Атăла пĕр бензовоз кайнă, шоферĕ сиксе тухса хăтăлнă, икĕ хĕрарăм, унпа юнашар ларнăскерсем, тухса ĕлкĕреймен, вĕсен виллисене кайран водолазсем кăларнă. Паян çав машинăна шывран кăлараççĕ.

Каçхине Тинис Петĕрĕ килсе ларчĕ. Хамăн çирĕм çул ĕлĕк каланă сăмахăн стенограммине кăтартрăм. Паян кун каланă пекех тет. Чылай каласса лартăмăр.

«Советская Чувашия» паян ман ята та аса илнĕ: 1956 çула ахаль ирттермерĕ тет.

Январĕн 2-мĕшĕ. Ыран Нонна Мускава тухса каять, билет илсе хунă. Нарспине ман ятран асăнмалăх мĕн те пулин илме 2000 тенкĕ укçа яратăп. Мĕскĕн, мĕн тери йывăр вăхăтра вĕренсе тухрĕ вăл! Паян Фетисов профессор статйине (Хусанкай çинчен) редакцилесе ятăм. Çырасса та шĕвĕ çырнă, куçарасса та (Галкин) япăх куçарнă. Петĕр 50 çул тултарнă тĕле лайăх статья параймарăмăр ĕнтĕ. Тĕрĕссипе каласан, ун çинчен хальччен те пĕр йĕркеллĕ, чăн-чăн таланта чăн-чăн тивĕçлĕ статья пулман.

Ĕнер каçхине, 10—11 сехетсенче, уçăлма тухсан Тавăт Ваçлейпе арăмне (Марусяна) тĕл пултăмăр. Хăйсем патне ирĕксĕрлесех илсе кайрĕç. Сăра ĕçрĕмĕр. Арапуç юррине, «Сартумккаран илтĕм сарă лаша», юрласа патăм.

Паян Ухсай мана Союз коридорĕнче чарчĕ: «Мĕншĕн çилленсе çўретĕн, — тет, — эпĕ сана нихăçан та усал туман», — тет. Кĕнеке ыйтать.

Ман мĕскер ун çине çилленесси пур, хăй пĕтĕм тĕнче çине пăнтăхса çўрет.

Кузнецов панă çамрăк Яковлев яланах куç умĕнче — сĕтел çинче. Тĕлĕнмелле сăн. Мĕнпур эпир пĕлекен аслă çынсен чун пахалăхĕсем сăнарланнă унта. [...]

Январĕн 5-мĕшĕ. Ноннăсăр начар. Çĕрле те канлĕ ыйăх çук.

Ĕçе 9 сехете тухмаллине каларĕç. Талвир ăнлантарса панă тăрăх çапла: А[лакĕр] доклад тумалла, тахçанах тумалла, анчах çырма май çук тесе халĕ те хатĕрлемен. Митта кăнтăрла иртиччен килте ĕçлет, çавăн пек пулсан эпĕ тахçанах тумалла тесе калать тет. 4-мĕш числоран ĕçе 9 сехет тĕлне тухатăп. Паллах, кун пек пулсан нимĕн ĕçлемелли те çук.

Венгр килчĕ. Пăва чăвашĕсем «Кăмăлтана» епле кĕтсе илни çинчен каласа пачĕ.

...Паян çакнашкал хыпар пĕлтерчĕ: «Коммунизм ялавĕ» редакци çумĕнчи парторганизаци пухăвĕнче ман кĕнеке

пирки кăмăлсăр калаçнă пулать (тĕрĕслерĕм — калаçман), унтан такам В. Яковлев патне аноним йĕркипе ман кĕнекене почта урлă янă пулать, кунта мĕн кăна çук тесе çырнă пулать (кăна тĕрĕслесе пăхаймарăм). Пăтратчăрах, ун пеккине сахал мар курнă ĕнтĕ. Эпир икĕ ĕмĕр пурăнас çын мар, патша та пулас çук. Пĕртен-пĕр кĕске ĕмĕре çын пек, таса çын пек ирттересчĕ, ирĕккĕн те, ирĕксĕр те сутăнчăк пулас марччĕ.

Ĕнер Асли, Тимрĕç т. ыт. те «Вена танцует» ятлă кинокартина куртăмăр. Кай çĕршыври фильм. Иоганн Штраусем — ашшĕпе ывăлĕ çинчен пулчĕ. Лайăх. Паян хулари партконференци уçăлчĕ.

Паян «Правдăра» Венгрири событисем çинчен статья вуларăм (Б. Пономаревăн). Хăçан китайсем пек çырма вĕренĕпĕр? Тон килĕшмерĕ. Çав чăнлăхах хирĕлмесĕр те каласа пама пулать — ăслăн, лăпкăн, хамăр вăя хамăр туйса.

А. Медведев çырнă «Тутлă апат-çимĕç хатĕрлесси» ятлă чăвашла кĕнеке илтĕм. Чăваш кухни пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн хĕрарăмсене тахçанах кунашкал кĕнеке кирлĕччĕ. Çакă вăл пирĕн культура ўссех пынине пĕлтерет. Кĕнекене питĕ илеççĕ.

С.В. Элкере парне кĕнекине паян тин парайрăм. Посвященине хам вуласа патăм, старик ăшшăн йышăнчĕ, лайăх сăмахсем каларĕ.

Январĕн 6-мĕшĕ. Вырсарни кун. Çур кун тенĕ пек Вальăпа Пинерпи валли виçсĕмĕр хĕллехи тумсем шыраса çўрерĕмĕр, Чапай поселокне те, пир-авăр комбиначĕн магазинĕсене те çитрĕмĕр — юрăхли ниçта та çук.

[...]

Январĕн 7-мĕшĕ. Раштав. Паянхи кун Арапуç кĕрлесе тăнă. Атте-аннесем кашни çул ĕçкĕ тунă. Эйпеç-Паснапуççем виçшер çĕр выртса ĕçетчĕç.

Ноннăсăр кичем. Венгр ыран каясшăнччĕ, ямарăм. Илнĕ билета каялла кайса пачĕ. Халĕ çур çĕр иртни пĕр сехет. Венгрăн Кавказ калавĕсене вуларăмăр. Аван, чĕлхе лайăх, çут çанталăк сăнлăхĕсем шеп. Çынсене туса çитереймен. Тепĕр уйăхран туса çитерсе кунта яма пулчĕ.

Шараф Мударрисран паян çĕнĕ çул парни килчĕ: хăйĕн кĕнеки — «Манăн тантăш». Хирĕç хамăнне ятăм.

Паян «Тăван Атăлăн» пĕрремĕш номерне пиелесе патăмăр, пĕлтĕрхинчен 11 кун малтан. Хусанкайăн иртнĕ номерти сăвви Ухсайпа Ĕçхĕле уртарнă. Кăна, чăнах та, кĕтме пулатчĕ. [...] ... хăйсене хăйсем палласа илнĕ. Манăн «Вун тăваттă çапсан» пирки те: хăй çинчен çырнă ăна тесе

çуйăхаççĕ тет. Абашев патне çитнĕ. Абашев — Долгов патне. Долгов нимĕн те çук унта тенĕ. [...]

Канаш ячĕпе çырнă сăвва Шавлие вуласа патăм. «Вилсен те кунтан вăйлă калас çук. Вил халех, урăх нимĕн те ан çыр, сăвву та юлать». — терĕ экспансивлă Стихван. Эпир унпа пĕр-пĕрне час-часах мухтатпăр. Хусанкая йышăнасшăн мар. Эпĕ, эсĕ, Ухсай тет. Хусанкай тĕнче пек аслине нумайăш ăнланмаççĕ. Çакă япала пире поэт ытла та çывăххинчен килет пуль. Монблан аякран пăхсан çеç пĕтĕмпех курăнать.

Январĕн 8-мĕшĕ. Тавтапуç турра — ыран Нонна килет, унран телеграмма пур.

Асли хирĕлчĕ. Манпа ун хушшинчи калаçăва çырса илсен кулса кайса ўкмелли сцена пулмалла. «Тăваллана», ĕлĕк пĕрре журналта çапăннăскере, тепĕр хут «Тăван Атăл» урлă ярасшăн. Ăна вăл хăй шучĕпе редактор тытса ĕçлеттернĕ иккен, «Чăвашгизра» кăçал кăлараймасть, пирĕн патăрта çаптарасшăн. «Сана малашне тус тесе шутламастăп, эсĕ маншăн гражданин кăна!» — терĕ. Ку кăна-и? Мĕн кăна каласа пĕтермерĕ.

Çитет пуль пурăнса пăспа,
Атя-ха пурăнар ăспа! —

çавăнтах çуралчĕ ман ун пирки мăшăр сăвă.

Кĕскен те пулсан Аслипе иксĕмĕр хушшăмăрти калаçăва çырса хумасăр чăтаймастăп.

Ресторан. Пĕр сĕтел хушшинче Асли тата эпĕ. Асли ялан-хи пекех пăсланса калаçать. Кўрĕшри сĕтел хушшине пĕр шансах пĕтермелле мар куçлăхлă çамрăк çын, хураскер, пырса ларчĕ. Хăйне пирĕн еннелле пăхи-пăхми тытать.

А. Тутар тата вырăссен писателĕсемпе танлаштарсан чăваш писателĕсене сахал тўлеççĕ.

Э. Ытлашши нумай тўлеççĕ.

А. (тĕлĕнсе). Сана эп ăнланмастăп.

Э. Ытлашши нумай тўлеççĕ. Пĕр вунă хут ытлашши.

А. Вăл поэтсене пулмалла. Пире апла мар.

Э. Пире те, сире те. Пур çавăн пеккисем. Пĕр эрне ĕçлекелет те пĕр çулталăк ĕçмелĕх укçа тăвать. Ненормально. Листашăн 2200 вырăнне 220 парас пулать. Вара литературăра çырмасăр пурăнайман çынсем анчах юлаççĕ. Вĕсен выçăлла-тутăлла ларсан та çырмалла — чĕре хушать. Пирĕн халь укçашăн çыракан нумай. Ун пек çынсемпе литература тăваймастăн.

Асли пуçне сулкалать. (Кўршĕри çын хăлхине тăратнă.)

Э. (малалла). Акă эсĕ укçа, укçа тетĕн. Мĕне кирлĕ сана

çавăн чул укçа? 900 тенкĕ пенси илетĕн. Тата гонорар, тĕрлĕрен пособисем мĕн чул илнĕ эпир санпа киле таврăннăранпа.

А. Эпĕ магнитофон илесшĕн.

Э. Мĕн тума?

А. Яла кайса карчăксен, стариксен сăмахĕсене çырса илме.

Э. Писатель композитор мар, ăна магнитофонсăр та юрать. Тата ку магнитофону санăн черетри фикс идейи анчах. Ун пекки сан пулкалать. Темиçе пин парса нимĕне юрăхсăр пӳлĕм илтĕн (Атăл леш енче) — пурăнмастăн; Давыдова вăрçтара-вăрçтара унăн машинкине илтĕн — çапмастăн, ахаль халтăртатса ларать; 75 тенкĕ парса кулинари кĕнеки илтĕн — ресторанта апатланатăн. Магнитофон та сан çав черетри суя шухăшах.

А. Ман радио лартмалла. 2000 тенкĕ тăрать.

Э. Радиошăн уйăхне 5 тенкĕ кирлĕ.

А. Мана ун пекки мар, пĕтĕм тĕнчене итлемелли пултăр (кӳршĕри сĕтел çыннин куçĕсем ялтăраса кайрĕç).

Э. Пирĕншĕн пĕтĕм тĕнче — Мускав. Çавна итлемелле (кӳршĕри сĕтел çыннин куçĕсем сӳнеççĕ).

А. Ман Белорусси, Украина станцийĕсене итлес килет.

Э. Вĕсене йӳн приемникпе те тытма пулать.

А. Хваттерте обстановка тумалла, час хваттер параççĕ.

Э. Обстановка валли 1000—1500 тенкĕ çитет.

А. Кавирсем çеç, урай сарри çакăнтан хаклăрах тăрать.

Э. Ура айне сăхман сарса лар (кӳршĕри сĕтел вăрттăн кулать).

А. Эсĕ ялан толстойлăхупах вара. Е мир çинчен вĕрентен, е ахальлĕн пурăнма калан.

Э. Унсăрăн эпир хамăр кам иккенне манатпăр, халăхран татăлса каятпăр. Халăх мĕнле пурăнать (кӳршĕри сĕтел хăлхана чанк тăратать), пирĕн те çапла пурăнмалла.

Малалла калаçу «Тăваллана» кăларасси çинчен тухса каять.

Э. Чăвашгиз кăçал кăлармасть пулсан, килес çул кăларĕ. Кăçал сан икĕ кĕнеке тухать. Çитет.

А. Килес çулччен, тен, эпĕ вилĕп.

Э. Вилсен посмертнăй издани тухать.

А. Виличчен кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларасчĕ-ха.

Э. Нумай мар, лайăх кăлармалла. Грибоедов пĕр комедипе ĕмĕрлĕхе кĕнĕ, Бомаршен те нумай мар — пĕр хулăн томлăх кăна.

А. Эсĕ çыр ун пек. Ну, кăларатăр-и, кăлармастăр-и?..

Малалла Асли пăсланса каять, кăшкăрма, хăратма тытăнать, ӳкĕтлеме пуçлать. Эпĕ ăна унăн шухăшĕ «нимĕнле

марри çинчен» калатăп, ун пек нихăçан та пулман тетĕп: пĕрре тухнă япалана журналта тепĕр хут çапмаççĕ. Ўкĕте кĕмест. Вăрçса, хирĕлсе: «Малашне эсĕ маншăн гражданин анчах», — тесе алă парать, тухса каять. Эпĕ ĕçе апатран таврăннă çĕре Асли унта ларать, каллех сăмах пуçланать — из пустого в порожнее. Паçăрхи пекех. Анчах кунта халь кўршĕри сĕтел хушшинчи темĕнле тип çук. Алентей итлесе кулса ларать. Асли те манăн калаçасах килменнине кура Алентейпе ытларах калаçать.

Ыран ир 7 сехетре (ыран ир мар ĕнтĕ, паян ир, халĕ 2 сехет) Венгр киле каять. Мефодий Романов валли «Кăмăлтан» яратăп.

Венгра 6 сехетре тăратмалла. Çывăрса юлас марччĕ!

Январĕн 10-мĕшĕ. Ĕнер ирхине 10 сехетре Ноннăна кĕтсе илтĕм. Поезд çур сехет юлса килчĕ. Мĕскĕн, Мускав хыпарĕсене каласа пĕтереймест. Уйрăмах — пĕчĕк Михаля çинчен.

Çĕрле, 12 сехет çурă. Паян, Долгов хĕтĕртнипе, А.Н. Энгельгардтăн кĕнекине илтĕм — «Из деревни. 12 писем». Пĕрремĕш çырăвне вуласа тухрăм. Тĕлĕнмелле вуланать. Акă мĕнле çырмалла ял çинчен: ахальлĕн, ăслăн, ху мĕн курнине, мĕн пĕлнине, мĕн тунине. «Старуха» Шураппана аса илтерчĕ. Скотник ачисем хăйсемпе пĕр пўртре пурăнакан путексемпе выляни хам ачалăха куç умне кăларса тăратрĕ. Ку кĕнеке çинчен В.И. Ленин нумай çырнă (юратса). Ыйткалакансем çинчен мĕнле çырать?!

Январĕн 12-мĕшĕ. ЦКран лектор килнĕ. Эрмен çынни. Хатарлă сăн-питлĕ. Эрменсем хура пулаканччĕ. Ку — çутă. Хĕрсе кайса каласать. Чĕлхене илемлетекен çăмăл акцент пур. Хĕрўллĕ вырăнсенче куçĕсем çунса тăраççĕ. Аллăсене çитнĕ çын. Лекци — эстетика ыйтăвĕ. Икĕ шухăш кăмăла кайрĕ: 1) не всякая правда факта есть правда жизни, 2) в котором человеке Гамлет, в этом общечеловеческое в Гамлете (быть или не быть).

Кузнецов Мускава каять, çула май чăваш тĕррин альбомне (Спиридоновăнне) хăйпе илет. Тĕлĕнмелле ĕç — чăвашсен çырулăхĕ, сăнарлу культури. Йăван пире Бельтовăн (Плехановăн) ĕлĕкхи изданийĕсене кăтартрĕ. Ĕнер Чăвашгиз партпухăвĕнче ўсĕр Çтаппан (Павлов) «Кăмăлтана» хурласа каласнă. Ăна çийĕнчех тивĕçлĕ хурав панă. Ялан чакаланаççĕ, ялан йĕп шыраççĕ — хăçан пĕтĕ ку йăла? [...]

[...]

11 сехет çĕрле.

Энгельгардта каçса кайса вулатăп.

Январён 13-мёшё. Тунти кун. Кăнтăрлаччен килте ĕçлерĕм. Кăнтăрла иртсен Ваçлей Долговпа стройтрест общежитине кайрăмăр. Писательсем çав общежитин шефĕ. Пĕр çуртра 200 ытла хĕр пурăнать. Пӳлĕмсем ăшă, çутă, анчах тăвăртарах. 16—17 кв. метрта 4-шар кравать. Хăш-пĕр кравать çинче икшерĕн выртакансем те пур. Культработницăпа калаçрăмăр. Илемлĕ, çамрăк хĕрарăм. Чăвашла маннă шупашкарсенчен. Аслă шкул пĕтернĕ. Историк. Шкулта сехетсем сахаллипе тата кунта ĕçлет. Хĕрсемпе чăвашла калаçатăп тет (паллах, пĕли-пĕлми). Культработница каланă тăрăх, 5 уйăх хушшинче (вăл кунта 5 уйăх ĕçлет) пĕр туй та пулман. Трагеди. Аслăраххисем хушшинче ӳсекен хĕрсем пур. Пĕр пӳлĕме кĕтĕмĕр. Икĕ хĕр. 18—20 çулхисем. Иккĕшĕ те чăвашла чипер. Пĕри Сĕнтĕр районĕнчен, тепри Вăрнартан. Сĕнтĕр хĕрĕ пĕрре те вирьялла калаçмасть. «Апла калаçсан кулаççĕ, пирĕн чĕлхе литература чĕлхи мар», — тет. Театра çӳреме юратаççĕ. Уйрăмах «Кай-кай Ивана» кăмăла кайнă. «Питĕ кулăшла», — теççĕ. «Чĕре çунать, мĕн тăвас?» курнă. Тата хăйсем патне те артистсем, поэтсем килсех тăраççĕ иккен. Кăçал хăйсем патĕнчех, коридорта, академи театрĕн артисчĕсем «Вăрман» кăтартнă (пĕр-икĕ пайне).

Пурин валли те пĕр кухня. Плита çинчен сахалтан 30—40 кастрюля. Кашнийĕ хăй валли пĕçерет. Пĕçерӳ, çын нумайййипе, каçхине темиçе сехетчен пырать. Кун çинчен «Советская Чувашия» та çырсаччĕ, анчах та ку çитменлĕхе пĕтерес тесе никам та нимĕн те туман-ха. Кунта йӳн хакпа ĕçлекен столовăй кирлĕ. Вара хĕрсен пушă вăхăчĕ нумайрах пулать, ăна-кăна вĕренме те пултарĕччĕç. Халĕ вĕсен нимĕнле кружоксем те çук. «Кройки и шитья» пулнă иккен, вăл та йĕркеллĕ ĕçлемен. Малашне кайкаласах тăрасчĕ унта. Халăхпа çыхăну тытмалла, халăх нушине пĕлмелле. Ытла та эпир, писательсем, пĕр хуйхăсăр пурăнатпăр.

Çула май собора кĕтĕмĕр. Эрхелей службине итлерĕмĕр. Шăвăç чӳлмек (мирта теççĕ пулас ăна) тăхăннă шурă сухаллă ватă-ватă Эрхелей пирĕн енне те пĕр-икĕ хут кадилăпа сулчĕ. Вăл хăйĕн çыннисемпе пĕтĕм чиркӳ тавра çаврăнчĕ: çеттуйсен (иконăсен умĕнче суллать, унтан халăх енне çула май çаврăнса суллать. Свитăра виçĕ çамрăк, çурта чиккисем тытнă, пуçĕсене тая-тая пыраççĕ. Пĕр çамрăк питĕ илемлĕ, 24—25 çулхи çын, çӳллĕ, тăлпан, академире вĕренет теççĕ. Ун пирки пĕтĕм хула хĕрĕсем калаçаççĕ («красивый монах»). Свитăри ытти çынсем — пупсем. Вĕсен хушшинче чăвашла питлисем те. Служба вырăсла. Пĕчĕк чиркӳре чăвашла теççĕ. Такам кулса каланăччĕ: Шупашкарта наци политикине чăн-чăн пурнăçлакансем — пупсем.

Çак кунсенче пĕрре те ӳсĕмлĕ ĕçлеймерĕм. Депресси тесен депресси мар. Так, темĕнле юлхавлăх.

Хусанкайран çыру килчĕ. Тăлмачăсемпе (вĕсем вуннăн) аптăранă, çавăнпа халĕ те киле таврăнаймасть. Сăввисен (тĕрлĕ çул çырнисен) ячĕсем питĕ вăйлисем пур. «Тăван Атăл» юлашки кĕнекинче çапăннисем пирки Шупашкар халĕ те шавлать. Тĕрли тĕрлĕ калаçать. Кирлĕ, усăллă. Ĕçлĕ тавлашу çынсене пĕтĕçтерет, пĕр-пĕрин патне çывăхартать. Этем тавлашура кăна пĕр-пĕрне лайăх ăнланать. ЦК лекторĕ Апресян та кун çинчен каларĕ (ĕнер пирĕн писательсем патĕнче): «Ĕлĕк тавлашуллă япалана пирĕн пичетлеместчĕç, халĕ — юрать», — терĕ. В споре рождается истина.

Январĕн 16-мĕшĕ. «Пурнăç чăнлăхĕ» ятлă статьяна пичет валли хатĕрлесе çитертĕм...

Январĕн 17-мĕшĕ. Тавăт Ваççинчен 700 тенкĕпе «Балтика» (1-мĕш кăларăм) ятлă приемник илтĕм. Кĕрлесе кăна ларать. Антеннăна тула кăларман-ха.

Январĕн 21-мĕшĕ. Ĕнер Илле Тукташ вилнĕ — кăнтăрла иртсен 2 сехетре. Ыран пытару. Ноннăпа пĕрле Тукташ патне кайрăмăр, вăл партпрос çуртĕнче. Хисеплĕ хуралта тăтăмăр. Унтан «Электрикра» «Пролог» ятлă картина куртăмăр. Аслă Ленин. Киле таврăнсан 12 сехет те 45 минутра Хусанкайăн «Дом в Горках» пуçланчĕ — Мускавран, радиопа. Кăмăл савăнăçпа тулать. Ленин çинчен асăннă чух *чăваш çинчен* асăнмасăр хăвармаççĕ. Хусанкай чăвашшăн калама çук пысăк ĕç турĕ, поэтăн хăйĕн халăхĕ умĕнчи чи пысăк парăмне — хăйĕн халăхне чапа кăларассине — Яковлев пек, Ашмарин пек турĕ. Çак сăмахсене унăн поэмине Мускавран панине итлесе çыратăп. Поэмăна вулаканни — Александр Лукьянов.

Январĕн 22-мĕшĕ. Ирхине. Мускаври радио Хусанкая Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ пани çинчен хуравларĕ. Пит лайăх.

Хусанкайпа телефонпа калаçрăм. Ăна хваттерне телеграмма патăм — хам тата Нонна ячĕпе.

Икĕ сехетре Тукташăн ӳтне партпрос çуртĕнчен илсе тухрĕç. Халăх питĕ те нумай пухăннă. Хĕрлĕ площаде çитнĕ çĕре халăх 1000 те иртрĕ пулĕ. Вăйлă демонстраци пек. Кун калама çук ăшă, лăпкă. Лирикăллă çанталăк. Процесси хĕвеле хирĕç пырать. Масар çинче Тукташăн пиччĕшĕ вăйлă сăмах каларĕ, нумайăшĕ йĕрсе тăчĕç. Вырăн — улма йывăççисем хушшинче. Унтан инçе те мар пирĕн анне — Настасья Георгиевна, Давыдовпа иксĕмĕр ун тăпри çине те кайса

килтĕмĕр, пуç тайрăмăр. Пытарса таврăнсан писательсен çуртĕнче асăнса çирĕмĕр. Талвир малтанхи куркана тăкса ĕçрĕ, ун хыççăн — пурте. Илпек, Хури, Кузнецов, Янташ, Хусанкай патне кайрăмăр. Орден илнипе тата «Аптраман таврашĕ» тухнипе саламларăмăр. Хусанкай ĕçкĕ кăларчĕ. Чылай ларнă. Илпек хăйне тытма пĕлеймест.

Паянхи курăм-туйăмсенчен тата çакна палăртмалла: партпрос çуртĕнче Тукташ çинчен ялан музыка (радиоустановка) выляса тăчĕ, Тукташăн юррисене — «Шурă кăвакарчăн», «Шурă акăш» вылярĕç — хурлантарать. Тупăк хыççăн эпир П.Н. Осиповпа пытăмăр. Çул тăрăх — култару, анекдот. Каярах пирĕн çума Хусанкай хутшăнчĕ. Вĕсем масар çине çитмерĕç. Б. Хмельницкий урамне çитсен каялла çаврăнчĕç. Элкер те пирĕнтен инçе мар пычĕ, ахăртнех, вăл нумаях утмарĕ пулас, час эпĕ ăна куçран çухатрăм.

Февралĕн 6-мĕшĕ. Иртнĕ кунсенче çырмалли темĕн чул пулчĕ, анчах кун кĕнекине алла илеймерĕм. Е вăхăт çук, е ўркев.

Паянхинчен пуçлар. Паян урамра, ĕçе апатран кайнă чух, Хăрушсăрлăх комитечĕн пуçлăхне Шатрова тĕл пултăм. Манпа пĕрле вăл горсовет тĕлне çитиех пычĕ. Шатров мана пĕлтĕртенпе паллать — ун патне хамăн арестленĕ чух илнĕ ал çырăвĕсем пирки кайсаччĕ. Çавăнтанпа курсан-тусан пĕрне-пĕри çĕлĕк илетпĕр. Вăл иртнĕ пăтăрмахсем хыççăн парти лартнă çын. Пĕрне-пĕри сывлăх суннă хыççăн паян вăл юнашар утса пынă чух ман творчество ĕçĕсем çинчен интересленчĕ. Ман алăра хамăн кĕнекесемччĕ — 5 экземпляр.

— Акă нумай пулмасть кĕнеке кăлартăм-ха, — терĕм.

— Ун çинчен эпĕ пĕлетĕп, вуларăм. Çитменлĕхсем пур. «Тайăр» поэмăра вăхăт паллисем уçă мар. «Предислови» кирлĕччĕ, — терĕ, — предислови пулнă пулсан лайăх ăнланма пулатчĕ.

Эпĕ ăна хирĕç: «Ăнланмалла марри нимех те çук пек, Тайăра пĕлеççĕ, вăл 1905—1907 çулсенче ĕçленĕ, унăн сăввисем, биографийĕ хрестоматисенче пур. 6—7 çул вĕреннĕ çын пурте Тайăра пĕлеççĕ», — терĕм.

— Пĕлменнисем те нумай, — тет Шатров, — кĕнеке массăсем валли (для массового читателя), — тет.

— Кам вăл массовăй читатель? — терĕм эпĕ. — Вăл ĕнтĕ ликбез та, пуçламăш шкул та, вăтам шкул та, аслă шкул та пĕтернĕ çын — акă кам массовăй читатель, — терĕм.

— Çаплине çапла та, — терĕ Шатров, — ум сăмах кирлехчĕ, вырăссем калашле, кашу маслом не испортишь, — терĕ.

Вара вăл горсовета кĕрсе юлчĕ.

Çакă тĕлĕнтерет — епле улшăнать тĕнче. Виç-тăватă çул каялла ун пек-кун пек пулсан нимĕн калаçса та тăрас çук, — атя, не вортухайся! Айăплă-и, айăпсăр-и — сĕнкĕлтет. Турра шĕкĕр, халь апла мар. Асту, ан йăнăш тесе хăйсемех калаççĕ. Ĕлĕк пулсан вĕсем (унта ĕçлекенсем) çын йăнăшасса савăнса кĕтсе тăнă (çылăх тăвакан çыншăн шуйттан савăннă пек). Çак калаçу пирки эпĕ Элекçее пĕлтертĕм. Шатров Элекçейпе те çаплах калаçнă иккен.

Иртнĕ кунсенчи чи паллă пулăм — Хусанкай юбилейĕ. Январĕн 26-мĕшĕнче каçхине хула халăхĕ Советсен çуртĕнчи аслă зала пухăнчĕ — çапса хĕстернĕ пек. Мускавран Юрий Лаптев, Сергей Смирнов, пирĕн консультант Андриевская, Хусантан Мударрисов килнĕ. Мана Мударрисов хăнапа çывăх пулма хушрĕç. Ун патне çӳренĕ май вырăс писателĕсемпе те ăшшăн паллашрăм. Сергей Смирнов калама çук талантлă поэт, хăйне евĕр саслă, уçă, янравлă, çивĕч ăслă сăвăç.

Торжественная часть вечера вăрăма кайрĕ. Доклад (Сироткин), саламсем, саламсем, саламсем. Автономисенчен килнĕ саламсене эпĕ вуласа патăм, хамран та пĕр çаврăм сăвă каларăм. Петĕр ячĕпе ятарласах сăвă çырсаттăм — «Аслă стихия», Долгов вулаттармарĕ: кая юлтăн, программăра çук, халь кӳртес пулсан тепĕр хут калаçса татăлмалла (обкомра) терĕ.

«Советская Чувашия» саламне вулама Г.Титов хатĕрленнĕ пулнă, анчах хаçатран сăмах Семенова, редактор заместительне, пачĕç. Лешĕ çук та. Вара Талвир: «Жизнь вносит изменения, пойдем дальше», — терĕ. Вăл Титова асăрхаман та иккен. Çакăншăн Гурий тилĕрсе кайрĕ, Пинере ним айăпсăр вăрçса пăрахрĕ, унтан салам кĕнекине президиума ярса киле пăрахса кайрĕ.

Чи илемли — юбиляра, Петĕре, Ăстакасси чăвашĕсем (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) чыс туни пулчĕ. Унтан туй пек халăх килнĕ: арçыннисем тĕрленĕ кĕпесемпе, хĕрарăмĕсем хушпу-шӳлкемесемпе. Пĕр хĕрарăмĕ поэта тем пысăкăш хуплу пачĕ (ывăс çинче), тепри сăра ĕçтерчĕ (ал шăлли витнĕ витререн). Хусанкай стакан сăрине тĕппипех ĕçрĕ, стаканне, тăхтилле, пуçĕ тăрне ӳпĕнтерсе лартрĕ. Çак йăлана илемлĕ тунăшăн халăх поэта та, килнĕ хăнасене те чыс туса алă çупрĕ. Унтан халăх пултарулăх çурчĕ организациленĕ хор юрларĕ. Ку мыскарасене пĕтĕмĕшпех Василий Ржанов (шашкарсем) йĕркеленĕ. Маттур.

Февралĕн 18-мĕшĕ. Январĕн 28-мĕшĕнче писательсен конференцийĕ пулчĕ — итоги литературного года. Ман ята асăнкаласах тăчĕç (ораторсем) — ырăпа. Поэзи çинчен

калакан докладра (Ст. Шавли) ман пирки ытлашшине те каланă. Шакуровпа Калюкова хытă çапрĕç. Халăх чăнах та юратмасть иккен вĕсене. Шаккурĕ трибуна çине тухса: «Тархасшăн, Шавлирен хăтарăр (оградите)», — тесе йăлăнчĕ. Калюковăн калаçăвĕнче те пĕр ăслă сăмах пулмарĕ: тарăху, çуйăху, истерика.

Пухура икĕ кун хушшинче чи вăйлă, ăслă, çивĕч, илемлĕ сăмах Хусанкайăн пулчĕ. Вăл тухса каласшăн марччĕ, анчах хăшĕ-пĕрисем унăн юлашки сăввисенчен пĕрне («Эс çирĕн унăн çăкăрне») тĕрткелесе тăкнине чăтаймарĕ. Вăл сăвă пирки Абашев та ырах каламарĕ: «Халĕ мĕнпур вăйсене пĕтĕçтермелле чух ун пек хирĕçтерекен сăвăсене çапмалла мар», — терĕ. Хусанкай трибуна çине тухсан чи малтан Абашев енне çаврăнса: «Эпĕ пĕлместĕп: кам шухăшне каларĕ Абашев юлташ — хăйĕнне е обкомăнне?» — тесе ыйтрĕ. Абашев: «Сугубо хамăнне», — терĕ. Вара Хусанкай урăх чăрманса тăмарĕ, мĕн калас пеккине ирĕккĕн те çирĕппĕн каларĕ: çыпăçулăх, ăс, хăйне хăй тытма пĕлни унăн каласăвĕнче. Чăн-чăн трибунăшăн, патшалăх ĕçĕшĕн çуралнă çын! Унăн сăмахĕ элекçĕсем çинчен пулчĕ. «Вĕсем, элекçĕсем, тĕнчери империалистсен планĕпе пыракан çынсем, — терĕ. — 1937 çул *кунта* лайăх çынсене пĕтернĕ чух *лере* йăл-йăл кулса, алă çупса тăчĕç, — терĕ. — Халĕ те социализм тăшманĕсем элекçĕсем çине шанаççĕ. Вĕсем çинчен каласмасăр, вĕсене питлемесĕр тăма пултараймастпăр эпир, — терĕ. — Эпĕ дипломат мар, конъюнктурщик мар, сăмсана çиле май тытма флюгер мар, эпĕ хурине хура тетĕп, шуррине шурă тетĕп», — терĕ.

Поэт сăмахне халăх питĕ çывăх йышăнчĕ. Сантăр Артемьев: «Хусанкай пур çинче эпир тăлăх мар!» — тесе каласа хучĕ.

Январĕн 27-мĕшĕнче Хусанкай хăй патĕнче ĕçкĕ турĕ. Çын нумай мар. Аякран килнĕ хăнасем (Лаптев, Смирнов, Андриевская, Мударрисов) тата хамăртан 4—5 мăшăр. Каç питĕ ăнăçлă иртрĕ. Нумай юрларăмăр. Вырăс юррисен сăмахĕсене эпĕ куçарса лартăм. Хусанкай нумай каласрĕ. Хăйĕн юратнă юррине «Эй, пуçана, пуç ыратать» юрласа пачĕ. Эпĕ те хамăнне, «И, мĕн пуян», юрларăм. Ку юрра итлекенсем питĕ юратаççĕ.

[...]

Хам телейлĕ Туфан валли Мударрисовран кĕнеке ятăм.

Хусанкай, унпа эпир юбилей кунĕсенче яланах тенĕ пек пĕрле пултăмăр, Хусанти юлташĕсене Шараф Мударрисовран хăйĕн çĕнĕ портретне, юбилей ячĕпе çапнине, пĕр тĕрке парса ячĕ.

Петĕр Шупашкарта февралĕн 13-мĕшĕччен пурăнчĕ. Ăна эпир Йăванпа иксĕмĕр ăсатрăмăр, сăн ўкерттертĕмĕр, амăшĕпе юрларăмăр. Амăшĕн пĕр юрри сăмахĕсене çырса илтĕм.

Петĕр хăйĕн юбилей сăввине мана халалларĕ («Çурри»). Куншăн чылайăшĕ канăçсăрланнă. Кĕвĕçеççĕ тет Йăван. Сăвă «Тăван Атăлăн» пĕрремĕш кĕнекине каять. Хам та, Элекçейпе Ваçлей те халаллине ярасшăн пулмарăмăр (эпĕ — çынсене чĕрре кўртесшĕн мар пулса, Элекçей — кĕвĕçсе, Ваçлей — дипломатланса), анчах автор яхăнне те ямасть: «Эпĕ ку сăвва нумай-нумай тантăшсен ячĕпе çырнă, Митта çав тантăшсен сăнарĕ», — тет. Текстра пĕр-икĕ вырăн улăштармалла пулчĕ, редколлеги членĕсем пурте килĕшсех каймарĕç (поэт хăй улăштарчĕ).

Паймен ман пата хăйĕн вырăсла очеркне («Славяне» журнал) ярса пачĕ. Эпĕ те ун патне «Кăмăлтана» ятăм.

Патăрьел хаçатĕнче ĕçлекен Маркова «Кăмăлтанпа» пĕрле çакăн пек саламлă сăвă ятăм:

Юлташсем! Янташсем! Патăрьел ачисем!
Юрламасăр пурнăç кичем.
Шавлă ят кунăма — Юхмари юхăма
Ĕлкĕресчĕ поэма тума.

Марковсем литпĕрлешў тунă. Манран пулăшу ыйтаççĕ. Халь тин тухнă «Сăвă техники» ятлă кĕнеке ярса патăм.

Анатолий Петров, Хусанти консерватори студенчĕ, килсе кайрĕ. Килсен-тусан мана курмасăр каймасть. Хăйĕн поэмине (юррине) тата манăн «И, мĕн пуян» юрра купăспа каласа пачĕ. Эпĕ ăна хамăн «Кăмăлтана» парнелерĕм (çакăн пек çырса):

Янрав чĕре янташăма —
Савса тăма, шанса тăма.

Çак кунсенче Арслан [Зверев] патне те ярса парас пулать. Саламне хатĕрлесех хунă:

Тĕнче касса çўрерĕмĕр,
Эп — ирĕксĕр, эс — ирĕкрен.
Алай-пăлай телейĕмĕр
Ăçта кайсан та пĕр иккен.
Тек-тек санран уйрăлас мар,
Атте хули — ват Шупашкар.

Иртнĕ эрне кун тутар чĕлхи кружокĕн пĕрремĕш занятине ирттертĕмĕр. Вĕрентекенни — Р. Давлетшина. Мударрисов ман сăвăсене тутарла куçарса ячĕ. Давлетшина каланă тăрăх, аван куçарнă, анчах хăш-пĕр çĕрте чăвашлинчен уйрăлса кайнисем пур.

Силпипе Илемпи каникула килсе кайрĕç. Силпи виçтăватă кун çех пулчĕ, ытти кунĕсене Карелинче ирттернĕ (йĕлтĕрпе). Пулать те арçури! Ялан тĕнче курса çӳремелле. Хăй çӳренине сăнарлакан альбом кăтартрĕ (Урал, Кавказ, Атăл альбомĕсем), тĕлĕнмелле!

Çак кунсенче нимех те тăваймарăм, ялан çынсен алçырăвĕсемпе лартăм. Вуланисенчен чи хакли — Йăван Кузнецовăн «Чăваш ăслăхĕ». Чирлекелерĕм. Çанталăк — йĕпе-сапа. Йĕпе-сапара эпĕ ялан йăшатăп.

«Пурнăç чăнлăхне» (Алка çинчен) «Ялавăн» 3-мĕш номерĕ валли илчĕç. Тата Хусанкайăн «Аптраманĕ» çинчен çырасчĕ.

Ваçлей отставкăна тухрĕ. Чирлĕ. Калюковсем савăннă. Юсаннă хыççăн отставкине каялла илтересчĕ. Талвирпа иккĕшĕ килĕштерсех каймаççĕ — çав начар.

Февралĕн 19-мĕшĕ. Ĕнер Мĕтерис патне çыру ятăм: вăл ман сăвăсене куçарнă пирки. Йăван патне кĕрсе тухрăм. Вăл Çĕпĕртен (Красноярскинчен) интереслĕ çыру илнĕ, С. Кирилловран. Кириллов «Хыпар» хаçатăн иккĕмĕш редакторĕ (Н.В. Никольский хыççăн). Халь вăл 79 çулта. 1906 çул ӳкернĕ сăн ӳкерчĕкне янă. Хатарлă сăнлă чăваш интеллигенчĕ. Асаилӳ пур, питĕ те сăпайлă çырнă. Аллинчен пĕрре те 79 çулхи ватă темелле мар. Асаилӳ чăвашла.

Плехановăн иккĕмĕш томĕ килчĕ. Шолоховăн малтанхи икĕ томне туянтăм. Шекспира çырăнтăм.

Каçхине Альтюк аппа килсе ларчĕ. Çĕпĕртен каллех çыру илнĕ. Эккей, этем нихăçан та ватăлмасть иккен, çамрăк чухнехине виличчен те манмасть. Аппан çамрăк чухне татăлнă романĕ халĕ, хĕрĕх çул иртсен, каллех сыпăнасшăн.

В.И. Краснов-Аслине сăвăласа кĕнеке парнелерĕм (тахçанах ӳпкелешсе ыйтатчĕ).

Февралĕн 20-мĕшĕ. Ноннăпа «Коммунизм ялавĕ» уявне кайрăмăр. Уяв Советсен çурчĕн пысăк залĕнче пулчĕ. Ваграт Апресянăн «Литературная газетăри» статйи («Шаг времени») кăмăла кайрĕ, хамăр валли чăвашла куçарсан юрать.

Иванов-Таçук поэт паян пирĕн редакцинче пулчĕ. Уçă кăмăллă, хăюллă, ăслă çамрăк çын. Илсе килнĕ çĕнĕ сăввисем лайăх: ăс та, кăмăл та, чĕлхе те пур. Паян правлени Шупуççынни сăввисене кăларас ыйтăва пăхса тухрĕ. «Еркĕне» сборнике кӳртме тумарĕç, шухăш тĕлĕшĕнчен *пăсăк* теççĕ. Мĕншĕн пăсăк — ун çинчен татса калакан пулмарĕ.

Пинерпи яла каникул ирттерме кайрĕ.

Февралĕн 23-мĕшĕ. Совет Çарĕн уявĕ.

...Петĕр Денисовăн Мускавра ĕç тухман. Çапах ача хуçăлмасть: шăла çыртсах ĕçлетĕп тет, çын кулли пулмастăп тет. Тепĕр çултан ĕçне Мускава тепĕр хут тăратасшăн.

Элекçей килсе ларчĕ. Урамра чылайччен уçăлса çÿрерĕмĕр.

Февралĕн 24-мĕшĕ. Вырсарни кун. Кăнтăрла иртсен Ноннӑпа Атăл леш енне кайрăмăр. Кун ăшă, лăпкă, анчах ирĕлмест. (Кăçал ирĕлсе тарăхтарчĕ хĕлĕпех.) Юр çап-çутă — куç шарать. Затонта — пулăçсем. Исаак 8 сехет иртенпе ларса икĕ çут пулă (сорожка) тытнă. Вăл пăра коловоротпа шăтарать. Вăлта вĕçне мотыль (вăрăм туна хурчĕ) тирет. Якимов, редактор, блеснапа ларать — результатсăр.

Атăл леш енĕ уçăлса çÿреме питĕ шеплĕ вырăн. Закусочнăй кĕрсе куртăмăр. Шоферсен улахĕ. Пĕр йĕкĕт (вăрманçă пулас) я никого не боюсь тесе мухтанать, кăкăрне çапать (чăваш). Тепри, çулланнăраххи: «Миша, бояться не надо, но остерегаться следует, у тебя враги», — тет (вырăс çынни). «Эсир ÿсĕр, ÿсĕрле ĕç çинчен калаçмаççĕ ăна», — тет (чăвашла).

Долгов патне пульницана каясшăнччĕ, ывăнтăмăр, тепĕр куна хăварас пулать. Кĕçĕннисем килте пулмарĕç — вĕсем патне кĕресшĕнччĕ.

Мартăн 6-мĕшĕ. Ĕнер 49 тултартăм. Тата çакăн чухлĕ пурăнсан çитет. Пурăнас кăмăл тем пысăкăш, анчах мехелĕ çавнашкал. Чĕре япăх. Пурнăç тиевне тапса туртни туйăна пуçларĕ.

Силпирен саламлă телеграмма çитрĕ. Нонна «Три мушкетера» парнелерĕ. Ĕçри юлташсем ыр сунса саламларĕç. Урташ та, урмăшса кайнăскер, хăйне май чыс турĕ. Ана ман саламлă автограф кăмăла кайман, пурăнсан-пурăнсан тин тавçăрса илнĕ. «Аслă пул» тенине юратмасть. Тем те пĕр каласа тухса кайрĕ. «Националист» тенĕшĕн тав турăм, мĕншĕн тесен ăна калани йывăр пулсан та, çапах *«вăрă» тени мар* терĕм.

Паян Илемпирен почтăпа парне илтĕм — авторучкăпа кăранташ.

Кĕркури (Кĕçĕнни) литконсультант, иккĕмĕш кун ĕçлет. Ача хăй вырăнĕнче. Паян ăна Союза илтĕмĕр. «Тăван Атăлăн» пĕрремĕш номерне алла илтĕмĕр.

Ĕнер Суттайпа юлташĕ пулчĕç. Хăна турăм, Ноннăсăрах (вăл шкул пухăвĕнче пулчĕ). Суттай механизаторсен канашлăвне килнĕ. Арапуç хыпарĕсене чылай пĕлтерчĕ.

С.В. Элкере куртăм. Старик çак кунсенче кĕçех кайман — чĕре тытнипе аптăрать. Вĕлерес марччĕ.

Ухсай ман пата шалпăпа пычĕ: ĕнер Урташ ăна та кӳрентернĕ иккен, подхалим тесе хăртрĕ тет. Çăварне чарас пулать ăна тет, сана та вăрçнă тесе калаççĕ тет. [...]

Мартăн 7-мĕшĕ. Ирех, 8 сехетре, Суттай килчĕ, вăл паян киле каять. Арапуçне кучченеç ятăмăр.

Мартăн 13-мĕшĕ. Юлашки вăхăтра пирĕн Союзра ӳсĕрсем [курăнма] пуçларĕç. Ку япала, ахăртнех, Долгов пульницара выртнинчен килет пулас. Хăратакан çук. Элекçей, чирлĕ чĕреллĕскер, путсĕрсемпе çапăçса питех пăлханасшăн мар пулас. Ĕнер Урташ партпрос çуртĕнче ĕç ялкорĕсемпе писательсен тĕлпулăвĕнче скандал турĕ. Уйăп Мишши сăвă калама пуçласанах пĕтĕм зала чĕтретсе: «Бездарь!» — тесе кăшкăрса пăрахрĕ. Талвир ăна тухса кайма хушсан: «Ăçта эсир мана — Америкăна хăвалатăр-им?» — терĕ. Залри халăх пăлханса кайрĕ, пур çĕртен те: тух! та тух! тесе кăшкăрма пуçларĕç. Урташ тухса кайрĕ, анчах нумайлăха мар, 5–6 минутран каллех килсе кĕчĕ, никамран ыйтмасăр тӳрех трибуна çине улăхрĕ, сăмах калама пуçларĕ. Талвир чарать, анчах залран: «Ан тив, калатăр!» — текенсем пулчĕç. Каласан-каласан оратор тамăклă сасăпа: «Пирĕн хушăмăрта [...] вăрçăран тарнă çынсем пур!» — тесе лаплаттарса хучĕ. [...] Вара Урташ трибуна çинчен анса кайрĕ. Талвир, Алакĕр, Краснов-Асли ăна темĕнле ӳкĕтлерĕç, сĕтĕрчĕç, тĕрткелерĕç, залран кăларса яраймарĕç. Скандал. Илемсĕр, киревсĕр пулу. [...]

[...]

Мартăн 19-мĕшĕ. Сироткин профессор ĕнер пирĕн патăрта, ĕçре, экспромт каларĕ:

Поэтсем тарла-тарла
Вĕренеççĕ тутарла.

Ку пирĕн тутар чĕлхи кружокĕ пирки. С.М. Ислюков депутат патне çакăн пек çыру çыртăмăр:

«РСФСР Аслă Советĕнче каланă сăмахăра вуларăмăр. Республика интересĕсене пĕлсе тата хĕрсе хӳтĕленĕшĕн савăнатпăр». Алентей, Краснов-Кĕçĕнни, Митта алă пусрăмăр. «Пурнăç чăнлăхне» к печати вуласа патăм.

Каçхине 11 сехет çурă. Петĕр пулчĕ. Мускав хыпарĕсене пĕлтерчĕ. Вăл И-па Е-нова Иван Яковлевич мăнукĕ — О. Алексеевна патне илсе кайнă. И. Яковлев тăпри çинче пулнă. И. Яковлев тăприне Шупашкара куçарасси çинчен калаçнă. Аван. Мухтарăм. Аслисене пирĕн çавăн пек çулсемпе те илсе çӳремелле, вара вĕсем халăх интересĕсене

пур енчен те пĕлĕччĕç. И. Яковлев архивĕнче хаклă документ тупнă: И. Яковлев телеграмми, ун çинче В.И. Ленинăн резолюцийĕ пур иккен. Ислюков Верховнăй Советра каланă сăмах пирки калаçрăмăр. Чăваша культура министрĕ вăйлăраххи кирлĕ. Кузнецовчĕ çав вырăна, вăл Зуевăсемпе калаçма пултарĕччĕ, çын çине тухсан çĕлĕке хул хушшине хĕстерсе тăмĕччĕ (юлашки — Петĕр сăмахĕ).

Петĕр ман патăмра сехет çурă хушши пулчĕ. Мунчана васкарĕ. Вăл Шупашкарта пăртак пурăнать-ха.

Мартăн 23-мĕшĕ. Виçĕм кун Петĕрпе музее кайрăмăр. Петĕр Яковлевсен ячĕпе музее И. Яковлевичăн минтер питне парнелерĕ. Ку минтер пичĕ Яковлевăн çул çытарĕн пичĕ пулнă, ăна авал чăваш ялĕсенче чылай курнă. Шупка парусина, тĕрленĕ, чăваш минтерĕсем пек пысăк, варринче КР инициалсем. Ку вăл Яковлев кумăшĕн, А.С. Пушкин пĕлĕшĕн Клеопатра Раевская инициалĕсем. Чăваш шкулĕ чи малтан Раевскисем патĕнче уçăлнă. Петĕрпе чылайччен хула тăрăх çýрерĕмĕр. Музее малтанхи çĕре — Ехрем çуртне (халĕ унта хула Совечĕ) куçарсан аван пуласси çинчен каларăмăр.

Каçхине парти организацин уçă пухăвĕнче пултăм. Ĕçхĕлĕн пултарулăх отчечĕ. Хăюсăррăн, хăракаласан сасси ăша кайнă çын пек турĕ. Мана, Хусанкая юратни çинчен каларĕ.

Ыйту патăм: «Мĕнле сăлтавпа, ăнлантарăр, 1954 çулта сирĕн кĕнекĕрсене 100 пинлĕх, 1955 çулта 30 пинлĕх макулатурăна панă?» — терĕм. П. Золотов реализацилеме тăрăшман иккен. Шавли кăшкăрса пăрахрĕ: «Мĕншĕн манăнне пĕр пуслăх та касман?» — тет.

Шавлипе, Харлампьев мĕскĕне мĕн кăна каласа хăртмарĕç. 1937 çулхи ĕçсене аса илтерчĕç. «Халĕ эсĕ, намăссăр, çав айăпсăр шар курнă çынсене юрататăп тесе тупа тăватăн. Ĕненместпĕр сана», — тет.

Юрать-ха, дипломат Талвир часрах лав çине пырса ларчĕ, унсăрăн мĕскĕнĕн çăкĕ тýнсех каяс пекчĕ. Шел, мĕнле чăтать. Епле пулсан та çын-çке, чунсăр мар. Тупа тăвать, никам çинчен те çăхав çырман тет. Пĕртен-пĕр йăнăшăм — 1937 çулхи айванла çырнă статьям тет. Ĕçхĕле хýтĕлекенсенчен пĕртен-пĕр Урташ пулчĕ. Новеллисем аван терĕç. «Санăн ылтăн шăнăру новеллăсенче», — терĕ Артемьев. Эпĕ тухса калама тумарăм, йýçĕ ыйту панăшăн та пăшăрхантăм. Çынна (кирек кам пултăр) хур тунине курма пултараймастăп, чун темĕн чул тарăхнă пулин те садист пулма пултараймастăп иккен. Нумай пулмасть «К[ом-

мунизм] ялавĕнче» Ĕçхĕл ман «Виçĕ хăват» пирки илемсĕр çырсаччĕ. Пуху пĕтсен вăл ман пата пычĕ: «Тен, эсĕ ман çине кӳреннĕ пулĕ», — тет. «Кӳреннине те, кӳренменнине те каламарăм-çке эпĕ сана, — терĕм. — Сан статйупа килĕшме çук, çак кунсенче ман вăл статья пирки ответ çырма шухăш пур», — терĕм. Чăнах та, ĕнер «Ĕçхĕл юлташа панă хурав» ятлă статья çыртăм. «Т[ăван] Атăлăн» 2-мĕш кĕнекинче каять.

[...]

Асли паян, ĕç хыççăн, Кĕркурипе иксĕмĕре хăйĕн тĕрмери терчĕсем çинчен каласа пачĕ. «Вутра» кĕнекине мана парнелерĕ. Хамăн сăмахсене хамах тавăрса пачĕ: «Чăвашсен пĕр лайăх сăмах пур: юлташ пултăр хăйĕнчен маттур!».

Ĕнер Венгр патне Ноннăпа иксĕмĕр Ашмарин словарьне сутăн илсе ятăмăр.

Мартăн 25-мĕшĕ. Ĕнер каçхине Петĕр патĕнче пултăм. Вырăсла сборникпе ларать: Сидоренко (редактор) паллисене тепĕр экземпляр çине куçарать. Паян хăйĕн суйлавçисем патне каясшăн, мана хăйĕнпе чĕнет — килĕшмерĕм: Альтук аппа çинчен васкавлăн çырса памалла («Ялав» библиотеки валли). Сăмах Шаккур отчечĕ çине кĕрсе кайсан, эпĕ: «Кам та кам садист пулсан та, Митта садист мар иккен», — терĕм. «Эпĕ — садист, шеллеместĕп, [киленетĕп?]», — терĕ П[етĕр]. — С-на шанма хушмасть, провокаци, — тет, — ыттисене калаçтарасшăн, сăмах варласшăн», — тет. Чăнах та, С. вăл шухăша мана та калаттарасшăнччĕ, эпĕ калаймастăп тесен çилленсе кайрĕ. «Эсир ялан урăх çын каласса шанатăр», — тет. Эпĕ ăна çапла ответ патăм: «Мĕн килĕшĕвĕ пултăр — иерохон труби хыççăн шăхличпе тухса калани», — терĕм.

Альтук аппа пульницăран тухрĕ, анчах ӳксе сылтăм аллине хуçнă: гипспа çӳрет. Долгов патне пульницăна никам та çӳремест иккен: çак кунсенче кайса килес.

Апрелĕн 3-мĕшĕ. Иртнĕ вырсарни кун Ноннăпа Долгов патĕнче пултăмăр. Савăнса кайрĕ. Пульница режимĕ йăлтах аптратнă ăна. Чĕри халĕ те начар. Союзри ĕçсемпе питĕ интересленет. Любимов Наум мана: «Эсĕ иккĕмĕш Долгов!» — тесе вăрçнине каласа патăм. Ваçлей ахăлтатса кулать.

Виçĕм кун Ноннăпа Хусанкай патĕнче пултăмăр. Юбилей çырăвĕсене пăхса тухрăмăр: питĕ нумай — таçтан-таçтан. Совет Союзĕнче ăçта кăна чăваш пур—пур çĕртен те поэт ячĕпе саламсем. Хусанкай юбилейĕ чăнах та пирĕн культура событийĕ пулса тăчĕ.

Ёнер ман патăмра Айхи пулчĕ. Талантлă ача, анчах пуçĕнче йĕрке сахал. Импрессионистла сăввисене вуласа пачĕ. Сивлерĕм. Ахăртнех, [Апресянпа?] Хусанкай каланисем чăнлăхран инçех мар пулас — ача пăтрашăнса кайнă. Институтĕнче те çăмăл пурнăçпа пурăнма тăрăшакансем вĕренеççĕ пулмалла. Венгра вăл института ярас мар, Мускав университетне кĕме тăрăштăр. Кун çинчен ăна халех çырса пĕлтерес.

Паян «Т[ăван] А[тăл]» редакцине Тайăр Тимкки çинчен пĕр лайăх статья килчĕ. Ана Тайăр çĕршывĕнче çуралса ўснĕ Данилов М.И. çырнă. Тайăр чăн-чăн революционер-большевик пулнине çирĕп фактсемпе кăтартса парать. Статьяна вăхăтлăха Кузнецова патăм, авторĕ патне çыру ятăм. Статьяра фактлă материал питĕ нумай.

Апрелĕн 4-мĕшĕ. Паян ман пăтăрмахлă кун. Ир кўлĕм ытлаванах 1 сехетчен килте ĕçлерĕм — Альтук çинчен çыртăм. Ĕç тухăçлă пулчĕ. Кăнтăрла иртсен альманах ĕçне кайрăм. Вара мыскара пуçланчĕ. Телефон патне чĕнтерчĕç. Прокуратурăран, Миронов аслă следователь иккен. Хăй патне пыма калать. Кайрăм. Пустуй ĕç — Миловановăпа кўрши вăрçса пурăнни çинчен.

Таврăнтăм. Свердлов колхоз председательне шыраса М. Сорокин кабинетне кайрăм. «Аттелĕх фрончĕ» пирки тавлашса лараççĕ. «Мĕн тавлашмалла, лайăх сăмах, сарлакан усă курмалла, чăваш чĕлхине пире те кĕвве килет», — терĕм. Пĕри: «Вăтăр çул ытла отечественнăй çыратпăр та халь аттелĕх çырас-и? — тет. — Мĕне кирлĕ вырăс сăмахĕ пур çинче?» — тет. Эпĕ: «Ма апла вырăссем фатерлянд фронт темеççĕ? Ма украин çыннисем батьковшина теççĕ? — терĕм. — Мĕншĕн кашни çĕнĕ сăмаха туртмалла, вырăссен те 1812 çулхи вăрçăччен отечественнăй сăмах пулман, — терĕм. — Кашни сăмахрах контрреволюци шырамалла мар», — терĕм. Чĕлхе вырăс сăмахĕсемпе те, хăйĕн çўпçи паракан çĕнĕ сăмахсемпе те ўссе пырать.

Ахăртнех, манпа тавлашакан çын питĕ васкана пулмалла, вăл хутсем пăхса ларатчĕ, çавăнпа ун манпа калаçса тăрас килмен пуль: мана хăвалама пуçларĕ. «Кирлĕ пулсан эсир хăвăр тухса кайăр, эпĕ кунта сирĕн пата килмен», — терĕм. Унтан Муратовпа калаçса тухса кайрăм. Манпа тавлашаканни цензор пулнă иккен — Васяков текенни. Эпĕ алăк урлă каçсанах вăл каллех ман çинчен калаçма пуçларĕ. Эпĕ çаврăнтăм та: «Кут хыçĕнче ан калаçăр, ан кăшкăрăр, кăшкăрас килсен ав урама тухса янтăратăр», — тесе тухса кайрăм. [...]

Вара сăмах илсе каларăм: «Сана, — терĕм Калюкова, — Урташ пĕтĕм ĕç ялкорĕсем умĕнче дезертир терĕ. — Çакă япала — хулиганство. Эсĕ мана паян националист тетĕн — сăлтавсăр, нимĕнсĕр. Çакă та хулиганство».

[...]

Çапла пирĕн ĕçсем. Василий Долгов кайнăранпа ўсĕр хулигансем пуç çинех хăпарса ларма пуçларĕç. Талвир пĕччен чараймасть, хăйĕн чĕрине те хускатас мар тет пулĕ. Çук, кăларса çапичченех ĕçлетĕп — мĕн пулсан пулать, ку ĕçрен кайсан та 3-мĕш номере памасăр каймастăп. [...]

Апрелĕн 6-мĕшĕ. Хуначи Айхине хамăн кĕнеке çине (хăй сутăн илнĕ) çавăн пек салам çыртăм:

Каяс çулу инче, инче...
Ан такăн — *тикĕс мар тĕнче!*

«Ялавăн» 3-мĕшĕ тухнă. Унта ман «Пурнăç чăнлăхĕ» тата Лонгфеллоран пĕр сыпăк. Юлташсем — аван теççĕ. Хам тата та лайăхрах çырмалла тетĕп. Альтук ĕçне ниепле те пĕтеймĕстĕп — тахçанах редакцине памалла. Кузнецов хăй патне редактора чĕнет. Отпускчен тăхтас, 3-мĕш номере туса парас, вара пĕтĕмĕшпех литература (профессионал) ĕçне куçас. Нонна хирĕçкелет: вăл çирĕп зарплатăна кăна ĕненет.

Тутар чĕлхи кружокĕ пирĕн аванах ĕçлет-ха. Ăнлана пуçларăмăр. Вулатпăр, куçаратпăр. Яланах пĕр сиктермесĕр çўрекеннисем 5—6 çын. Эпир, чăвашсем, дробьсене тĕрĕс каламастпăр иккен — тутарсем биштжн дурт (пиллĕкрен тăваттă — 4/5 теççĕ), эпир тăваттă пиллĕкĕмĕш тетпĕр. Нимĕнпе те çак формăна тўрре кăларма çук. М[аксимов]-Кошкинский те тутар чĕлхине каçса кайсах вĕренет. Хамăр чĕлхене лайăхлатас тĕлĕшпе усси нумай. Эпир тахçанах шыракан сăмахсем вĕсен тахçанах пур. Тĕслĕхрен, пирĕн халиччен «беспризорный» сăмах пулман, ăна чăвашла тĕрлĕрен куçарнă. Тутарла формăпа калас пулсан, ку сăмах усравсăр (ача) пулать. Пит те шеп. Сăвă техники тĕлĕшĕпе эпир, чăвашсем, тутартан нумай мала кайнă. Пирĕн кружок çинчен нумай пулмасть «Совет Татарстаны» хаçатра заметка тухнă. Ăна Элекçей Наджмине пытарма кайсан илсе килчĕ. Хусан хăйĕн ятлă писательне питĕ чаплă ăсатнă. Кави чăвашсене хытă хисеплетчĕ.

Апрелĕн 8-мĕшĕ. Каçхине, 6 сехетре, Вадецкипе тĕл пултăмăр. Роман теорийĕ çинчен каласа пачĕ. Унăн виçисемпе шайласан, пирĕн чăвашра пĕр роман та çук. Çаплах та вăл.

Çав-çавах Альтук материалĕсемпе ларатăп. Шепилов ком-

позиторсем патĕнче каланӑ сӑмах питĕ тарӑн, ӑслӑ, мал ĕмĕтлĕ. Тавлашса ӳ́смелли çинчен каларĕ. Пирĕн пур — ялан çапӑçса, пĕрне-пĕри çисе, ура хурса. Союзра Шепилов тухса каланисене иккĕшне те пӑхса тухасчĕ, усӑллӑ пулĕччĕ. Кун çинчен Талвира калӑрӑм. Вадецкий те пултарулӑх ӑмӑртӑвĕ, тавлашӑвĕ çинчен, писательсем пĕрне-пĕри хисеплесе, пĕрпĕрин шухӑшĕсене, ĕçĕсене сума суса, малалла каймалли çинчен каларĕ. Ахӑртнех, ку тĕлĕшпе Мускав çыруçисем хушшинче те йĕркеллех мар пулĕ.

Апрелĕн 9-мĕшĕ. Ылтӑн шывран 17 хут йывӑртарах (удельный вес), мĕн чухлĕ хаклӑраххи çинчен каламӑпӑр.

Пурнан пурнӑçра кӳ́ренӳ́ кӑна мар, савӑнӑç та пур иккен. «Ялаври» статьяшӑн мана паян нумайӑшĕ саламларĕç. Петĕр юри телефонпа шӑнкӑртаттарчĕ: замечательно тет.

Паян «Тӑван Атӑлӑн» иккĕмĕшне «к печати» корректура вулӑрӑм. Каçхине Альтук патне кайрӑм, ун çинчен мĕн çырнӑ пеккине вулӑрӑм. Тĕлĕнмелле: вӑл карчӑка халиччен никам та курман, эпĕ ӑна тупсан пурте ӑшталанса ӳ́крĕç, пĕри те, тепри те ун çинчен çырасшӑн. «Ан ваклан! — терĕм эпĕ ӑна, — хамӑрах тӑватпӑр». Ахаль мар эпĕ ун темипе икĕ çул çӳ́ретĕп. Пулас япала академиллĕ шайра пулмалла, унсӑрӑн аппаланас та мар. Чӑвашгизра тунӑ договорсене саплаштарсан «Альтукӑмпа» лармаллипех ларатӑп.

Нонна аппӑшĕ — Турхан хĕрарӑмĕ — икĕ каç выртса кайрĕ. Кунта вӑл килте хутма вутӑ çуккипе виçĕ уйӑхлӑха пĕр колбасник патне ача пӑхма килсе кĕнĕ. Ачи тĕрмере.

Апрелĕн 11-мĕшĕ. Ван Чун-цзе Китай поэчĕ, Совет Союзĕнче вĕреннĕскер, пĕлтĕр «Советская Чувашия» хаçатра практикӑра пулнӑ çамрӑк çын, И. Кузнецов патне çыру янӑ. Ӑна чӑваш чĕлхипе китай чĕлхинчи пĕрпеклĕхсем интереслентереççĕ. «Нарспине» китайла куçарасшӑн. Юлашки вӑхӑтра Мао Цзе-дун 18 сӑвӑ пичетлесе кӑларнине пичетлет. «Пирĕн халĕ пур çеçкесем те чечекре, пур кайӑксем те юрлаççĕ», — тет Ван Чун-цзе хӑй çырӑвĕнче.

«Тӑван Атӑла» иккĕмĕш кĕнекине «к печати» вуласа патӑмӑр. Ĕçхĕле панӑ хурава хӑвармалла пулчĕ — вырӑн çитмерĕ. Унсӑр пуçне, Талвир та питех ярасшӑн мар: хаçатсемпе чĕрре кĕресрен асӑрханать. Редколлеги членĕсем пурте ярасшӑн, ырларĕç. Ун пек ыйтусемпе тавлашмалла теççĕ. Паян Нонна та, хам та чĕрепе аптӑрӑмӑр — какао юрамасть пулмалла.

[...]

Апрелĕн 14-мĕшĕ. Илемпи валли пианино илтĕмĕр. Хакĕ 5265 тенкĕ. Чемоданова, консультанта, 25 тенкĕ патăм. Çĕклекенсене — 100 тенкĕ. «Сура» ятлă, Çĕмĕрлерен, 50-мĕш номер, пĕрремĕш партирен пулас. Ансан тем пекчĕ. Чемоданов шантарать. Авал хам выляна вальссенчен пĕрне аса илтĕм, Арапуçĕнче Степанов Коля вĕрентнĕччĕ. Ыттисене аса илейместĕп-ха.

Илемпине çапла çырса ятăм: «Свершилась. Твоя заветная мечта сбылась, поздравляю!» — терĕм. Амăшĕ ухмаха тухас пекех хавас. Эх, çын пек пурăннă пулсан çаксем тахçанах пулмалла та.

«Ялав» библиотеки валли «Эпĕ Ленина курни» туса патăм. Пĕр листа ытларах. Альтук ячĕпе тухать.

Паян вун тăваттă çапрĕ. Атăл пăрĕ тапранман-ха. Кăчăкă праçникĕ.

Апрелĕн 16-мĕшĕ. Ĕнер Ноннăпа театрта пултăмăр. «Хĕнхур айĕнче». Вăйлă спектакль. Уйрăмах массăллă сценăсем ăнăçлă. Пуçламăшĕнчен тытăнса вĕçне çитичченех хумханса лартăм. Халăх туллиех. Интеллигенци сахал. Писательсенчен С.В. Элкер çеç. Артистсем пирĕн маттур. Молодов Йăкăнат, Ургалкин, Родионов (Пахом) тĕлĕнмелле выляреç. Кун пек калăппа пурăнма пулать. Чăваш çĕршывĕ хĕсĕр мар.

Паян ир шап-шур юр çуса лартнă. Кăнтăрла ейĕлсе кайрĕ. Политвĕренĕве никам та пымарĕ — Алентей, Алакĕр, эпĕ анчах. Эх, дисциплина та! Пĕлтĕр, Долгов чух, занятисем мĕнле лайăх та интереслĕ иртетчĕç. Коляна тата Венгра çыру çыртăм.

Тимрясов патĕнче пултăм. Мускавран Ленин Иван Яковлевич пирки çырнисен фотокописене янă. Хумхантăм — Ленин хăй аллипе çырнă-çке!

Апрелĕн 17-мĕшĕ. Венгрăн «Кавказне» редакцилесе пĕтертĕм. Çут çанталăк илемĕ, этем кăмăл-туйăмĕ самаях, фактлă материалсем сахалтарах. Туристла (канаканла) çырнă. Вĕренмелле юрать.

Питрав Ибасов килчĕ, Туликемне те Шупашкар кăтартма илсе килнĕ. «Ленина курнине» халĕ те производствăна яман — Г. Ефимов Мускава кайнă, И. Григорьев — Сĕнтĕре...

[...]

Ĕнер Кузнецова та Ильбекова килес çул валли заявка патăм. 50 çул ячĕпе хам мĕн çырнă пеккисене суйларах илсе пĕр 15—20 листаллă кĕнеке кăларасчĕ. Кăçалхи çуллана çавăнпа ирттерес.

Апрелĕн 20-мĕшĕ. Атăл çинче пăр 70 метр хускалнă. Ыран-паян йăлтах тапранмалла. Кун уçă мар, мухмăрлă тăрать. Ыран Аслă калăм. Ача чухнехи савăнăç, çак уявпа çыхăннă ырă кăмăл аса килет. Аттесем виçĕ кун рет тăватчĕç. Ĕçкĕ тĕп çуртран, Миттасем патĕнчен, пуçланатчĕ. Сĕтел хушшинче патриарх сухалла ватăсем ларатчĕç. Çав уяв вăхăтлăха пурнăç нушисене те, пĕр-пĕрин хушшинче пулнă тавсене те мантарнă. Урам тулли тирпейлĕ тумланнă халăх, кашни касрах таканкăччĕ. Атте мункуна пирĕн валли яланах çĕнĕ çăпата туса панă, анне — çĕнĕ портянка. Е тата, çĕнĕ шăлавар çĕлетсен — вăл событи пулнă.

Апрелĕн 21-мĕшĕ. 1 сехет те 30 минут. Лондонран калама çук лайăх музыка.

Аслă калăм. Иртенпех Атăл çинче пăр каять. Ноннăпа кайса куртăмăр. Пăр хушшинчи уçлăхсенче кимĕсем вĕлтлетсе çýреççĕ — леш енне каçаççĕ, вутă шыраççĕ. Иванов бульварĕнче туллиех халăх. Икĕ кулич илтĕмĕр, атте-аннесене асăнса çирĕмĕр. Нонна валли демисезоннăй пальто пăхрăмăр, ыран пырса илме калаçса татăлтăмăр. Павел Сергеевичсем Мункуна чĕннĕччĕ, кайма тумарăмăр, каяс — ĕçмелле.

Ĕçсен — чĕрене юрамасть.

Илемпирен фото çитрĕ. Куçĕсем хурлăхлă. Темĕншĕн вăл яланах çапла ýкет? Пинерпи килсе ларчĕ. Ăна уçăрах кăмăллă пулманшăн инкĕш ятларĕ. Унччен хăй те, инкĕш пасартан таврăниччен, çавăн çинчен кăна калаçса ларнăччĕ: хĕртекен çук мана тенĕччĕ. Инкĕш калаçкала пуçласан тăчĕ те тухса кайрĕ. Тýрккесрех ку чухнехи ача-пăча. Илемпи те çавнашкал. Травмăпа ýсни палăрать пуль. Пирĕн ăнланмалла, ятлама кирлĕ мар. Эпĕ пур — пĕлтĕр Илемпине пĕрре çапса та илтĕм. Кăçал та, киле таврăнсан, асăнчĕ: мана, пысăкскерне, алă хуратăр тет. Эпĕ шухăшламасăр пер те яр: «Ухмаха, ачам, чиркýре те çапаççĕ». Паллах, ăна кăмăла каймарĕ. Пĕлетĕп: ача-пăча ашшĕ-амăшне мĕнле пулсан та каçарать. Анчах ĕлĕкхилле çапса вĕрентни — ухмахлăх, дикость, ответсăрлăх, çăварлăхсăрлăх.

«Огонек» журналта Смолянинович Ленин çинчен асăнса çырнине вуларăм. Смолянинов чылай çул хушши Ленин канцеляринче ĕçленĕ. Тĕлĕнмелле фактсем çырса кăтартать. [...]

Апрелĕн 25-мĕшĕ. Ирхине 8-мĕш сехетре Атăл çине тухрăм. Пăр кайса пĕтнĕ, хутран-ситрен çеç «манса юлнисем» ирткелесе каяççĕ. Вырăнти навигаци уçăлни виççĕмĕш кун. Катерсем тата «двадцатка» Атăл урлă каçаççĕ. Паян Горь-

кинчен пăрахут кĕтеччĕ. Павел Иванович çаплах шыва кĕрет: ăна юлташ тата тепĕр çын тупăннă — çурхи пăтранчăк шывпа чӳхенсе тухаччĕ, ишеччĕ те.

Чикансен ялне халь-халь шыв илес пек, чылайăшĕ çӳлерех вырăнсене палаткăсем карнă, хăмаран çапса тунă хĕллехи пӳрчĕсене пăрахнă. Кăтра пуçлă чикан ачисем пылчăк çинче çара уран çатлаттарса çӳреччĕ. Хула Май уявне тирпейленет. Хӳмесене, бульвар карлăкĕсене шуратаччĕ. Виçĕм кун Якимовпа «благоустройство» сăмах чăвашла çукки çинчен калаçнăччĕ, тума (тупма) пулать: илем-тирпей кӳрес ĕç (кӳресси). Хам шухăша Дубровина тата Павел Николаевича каларăм — килĕшеччĕ, усă курма пулчĕç.

Типографине кĕрсе тухрăм, иккĕмĕш «Тăван Атăла» паян пичете параччĕ.

Майăн 2-мĕшĕ. Май уявне лайăх кĕтсе илтĕмĕр. Илемпи килчĕ. Пианинăран хăпмасть. Огинскине, Шопена, Чайковскине вылять. Инструмента тиркемест [...]

Апрелĕн 30-мĕшĕнче, уяв умĕн, писательсен парти пухăвĕнче, уяв çинчен пĕр сехетлĕх доклад туса патăм (чăвашла). Нумайăшĕшĕн çĕнĕ материалсем патăм. Интересленсех итлерĕç. Асли (Краснов) ман доклад çинчен Ислюкова пĕлтерме ĕлкĕрнĕ — мухтаса.

Петĕр уява килчĕ. Мускав хыпарĕсене пĕлтерчĕ. Вĕсен патĕнче курсра Г.И. Петровский пулнă, «Всеобщее повиновение» вăхăчĕ çинчен каланă. Старик ывăлĕн приговорне (вĕлермелли приговорне) хăй аллипе хăй çирĕплетнĕ. Уявра, демонстрацинче, яланах Петĕрпе пултăмăр, пĕрле сăн ӳкерттертĕмĕр. Стихван пĕр хыпар пырса пĕлтерчĕ: пединститут студенчĕсем ман «Кăмăлтан» макетне йăтса тухнă. «Мĕншĕн санăнне тата Ромен Роллана çеç йăтнă?» — тет Шавли Çтихванĕ.

Виç сехетре Гурий патне кайрăмăр (Ноннăпа). Унта Петĕр арăмĕпе, Йăван арăмĕпе тата эпир палламан çынсем, Гурий хурăнташĕсем, пулчĕç. Гурий патĕнче пĕр-икĕ сехет ларсан Красновсем патне антăмăр (Йăванпа). Нумай юрларăмăр. Василий Иванович йĕрсе пĕтрĕ — кăмăлĕ çемçе. Эпир пынă ятпа Гриша А. В-ча, Ив. Еф-ча тата Анисимова кайса чĕнчĕ. Пурте — хамăр телейлисем. Куççуль те, савăнăç та, шутлă сăмах та нумай пулчĕ. Чăн, пирĕн урамра та уяв! Сывă пултăр чĕрĕлӳ тата пултару уявĕ — Пĕрремĕш май!

Майăн 3-мĕшĕ. Ĕнер ир кӳлĕм аки тăпри çине кайса килтĕмĕр. Тукташ тăпри çинче те пултăмăр — такам пуç кăшăлĕсем хушшине эрех курки лартнă (чăвашла!). Масар

çинчен тӳрех Илпексем патне çитрĕмĕр — чĕннĕччĕ. Унта Элкер арăмĕпе, Хусанкай арăмĕпе, Евстафьев, Уяр тата Кузнецов арăмĕпе пулчĕç. Хусанкай «Пуçанине» тата Тилли «Пуль-пульне» юрласа пачĕ. Илпексем патĕнче пулнă хыççăн тăваттăн: Петĕр, эпĕ тата икĕ ханум (Ноннăпа Вера) Атăл хĕрринче чылай çӳрерĕмĕр. Вера пире чылай хут сăн ӳкерчĕ. Каçхине Денисовсем патĕнче пулнă. Унта та Кузнецов мăшăрĕ, Хусанкай мăшăрĕ т. ыт. пулчĕç. Юрларăмăр, ташларăмăр.

[...] Çĕпĕре пĕр чăваш, Кипексем, каять. Писательсем-пе сывпуллашма кĕнĕ. Мурта районне хамăн икĕ кĕнекене ятăм. Петĕр те (Хусанкай) кĕнекине тата сăнне пачĕ. Çĕнĕ çĕре каякан чăваш Хусанкайран: «Ку кĕнекешĕн мĕн чул пачĕç ĕнтĕ?» — тесе ыйтрĕ. Хусанкайĕ: «Пĕлейместĕп, укçашăнах çырман та ăна», — терĕ. Чăваш парнешĕн савăнса Петĕрĕн аллине чуптума пăхрĕ. Хусанкай: «Çук, çук, апла юрамасть», — тесе аллине туртса илчĕ.

Ишлĕ Шетмĕрен Прокофьев, асаннерен тивекен хурăнташ, килчĕ. Ресторанта пултăмăр.

Мана Мускава вĕренме ярасшăн — Горький институчĕ çумĕнчи литераторсен аслă курсне. Эпĕ — хирĕç мар. Анчах çул тухнă, илĕç-ши? Халĕ унта пиртен Хусанкай тата Кăлкан вĕренеççĕ. Пĕлтĕрсенче çул пирки турткалансах тăман. «Такама ямалла, аптăриш, çамрăксенчен каймаллисем çук», — тет Талвир. Унăн Болгарире пĕр статья тухнă. Çавăн пекех Ангел Тодоровăн пăлхарсен литература хаçатĕнче чăвашсем çинчен пысăк статья пур («Авалтан пыракан пĕрлĕх»), ăна Хусанкай чăвашла куçарать.

Майăн 5-мĕшĕ. Пичет кунĕ. Ĕнер партпрос çуртĕнче пухура пултăмăр. Доклад тăваканни П. Николаев (Тарават) пулчĕ. Чĕлхе çинчен каланă чух мана тĕртсе илчĕ — аттелĕх вăрçишĕн. «Тăван Атăл» идеологи тĕлĕшĕнчен йăнăш произведенисем ярать терĕ. Мĕнле произведенисем — каламарĕ. Çапла, ĕлĕкхилле, тройкăсем ĕçленĕ чухнехилле, апелляцисĕр-мĕнсĕр тӳре тăваççĕ, айăпланаканнипе калаçмасăр-тумасăр приговор çыраççĕ. Савăнăçлă пухусенче хирĕç тухса каласа çук, каласмалли пухусенче кун пек ыйтусене хускатмаççĕ те, хускатас — хăвăн панккавлăхна (невежество) палăртма пулать. Пултарулăх чĕлхи пирки çитес вăхăтрах пĕр статья çырас пулать.

Пуху хыççăн Ноннăпа Хусанкайсем патне кайрăмăр. Çур çĕрчченех ларнă. Хусанкай хăйĕн вырăсла куçарнă сăввисемпе паллаштарчĕ (Казаков куçарнă). Аван.

Паян Илемпине ăсатрăмăр. Ача сĕлкĕш. Килте лайăх тет.

Каяс умĕн пианино патне ларса Огинскин «Полонезне» тата Чайковскин «Кĕрхи юррине» каларĕ. Амăшĕн куççуль тухать. Урама тухсан Хусанкайсене тĕл пултăмăр, вĕсем такси тытса килеççĕ. Эллăпа амăшне лартса ятăм, хам станцине автобуспа кайрăм. Вера виçĕм кун Атăл хĕрринче ўкернĕ карточкăсене кăтартрĕ. Хăшне-пĕрне суйласа илтĕм — аван тухнă. Хусанкай: «Сан сăну фотогеничнăй», — тет. «Илемлĕ çын», — тет Вера. Нонна анчах вĕсемпе килĕшмест. Çамкамас Хусанкай ўкерчĕксем çинче тата та çамкамас тухать. Чăнах та, унăн çамки питĕ илемлĕ: çавăрса тунă пек, таса, пысăк, сывă, пĕр сăмахпа — ăслă. Ахальтен мар Спиридонов художник: «Ку çамкана виçĕ çул ўкерĕттĕм, çапах юратма пăрахмăттăм», — тесе каларĕ тет. Петĕр тепĕр уйăхран таврăнать, вара эпир унпа Сиктĕрмене каяс тетпĕр. Венгртан, Коляран, Силпирен çыру пур.

Майăн 9-мĕшĕ. Çĕнтерўкунĕ. Хĕвел açтахана çĕнтерни (Китайра). Вăрçăра пулнисем паян нумайăшĕ иртенпех уяв тăваççĕ.

[...]

Ĕнер Ноннăпа театрта пултăмăр — «Одна» куртăмăр. Шухăшлаттаракан пьеса, халăх питĕ çывăххăн йышăнать, тĕп героя çемйине каялла тавăрманшăн автора ятлать. Зритель, вăл ача-пăча пек, вĕçĕ яланах лайăх пултăр — вара пьеса лайăх.

Паян ир мунча кĕтĕм, халăх сахал — рехет, çăвăнакансем пирĕн мунча Хусан мунчинчен нумай лайăх теççĕ. Сăвăлла йĕркесем пуçа килчĕç: «Наян-кахала çăкăрпа хăвала» (лашана — сĕлĕпе!).

Сана илсе кайăп ун чухне
Шупашкарăн шурă мунчине.

Майăн 10-мĕшĕ. Ăшă, çутă май. Кун пек май сахал килет. Виçĕм кун кăнтăрла сывлăшра 32° çитрĕ. Йывăççем çулçă сараççĕ, çĕмĕрт чечекре. [...]

Ĕнер Союзра Çĕнтерўкунĕ ячĕпе асаилўсен каçĕ пулса иртрĕ. Фронтовиксем нумай лайăххине каларĕç. Пирĕн чăваш ачисем Тăван çĕршывшăн начар çапăçман. Вăрçăра тата вăрçа пула пĕтнĕ тăванăмсем чуна ыраттарса аса килчĕç (Илле, Иван, Пеття, Коля!). Пилĕк ывăл-тăвантан пĕччен тăрса юлтăм. Мĕнле çирĕп те илемлĕ çемье саланчĕ.

Уйăп Мишши хальхи хăш-пĕр çамрăксен кăмăлĕсем çинчен аван мар хыпарсем каларĕ. Чăнах та, эпир комсомолта тăнă чух çамрăксем тăван çĕршывшăн çунса, хавхаланса пурăннă. Халĕ те çав таса хĕлхем ытла та шала кайнă пек туйăнать. Хальхи çамрăксен çунăвĕнче хĕрў çулăмран ытла

нӳрлĕ тĕтĕм йăсăрланарах парать. Нимĕн те мар — культ амантăвĕ. Юрать-ха, Венкĕр сыввăн, уççăн, патваррăн ӳсет. Вăл нумай пулмасть партине кĕнĕ. Лайăх общественник. Хамăра хунă. Анчах телейĕ хамăрăнни пек ан пултăрччĕ.

[...]

Атăл шывĕ кал-каллăн чакать. Якурирен чакма пуçларĕ (майăн 6-мĕшĕ). Атте çапла калатчĕ çав: Атăл Якурччен тулать, унтан чакма пуçлать тетчĕ.

Кăнтăрла иртсе 2 сехет. [...]

В. Алексеев ал çырăвĕпе ларатăп. Ватă коммунист. Ăслă та хăюллă çырать. Малалла мĕнле пулать — вуласан курăпăр.

Майăн 13-мĕшĕ. Шупашкар пахчисем чечекре. Паян ирхине юри пĕчĕк урамсемпе уçăлса çӳрерĕм. Чиесем, улмуççисем, сиреньсем чечекре. Канăçлăх, тăнăçлăх, мир. Пĕтĕм тĕнче ирхи хĕвелпе çăвăнать. Çĕнĕ чикмекпе Шупашкар (Чебоксарская) урамне улăхрăм. Хула кунтан çитмĕл те çичĕ илемпе курăнать. Хулари пĕчĕк урамсен хăйсен илемĕ пур — канăç илемĕ. Кун пек çĕрте этем чĕринчи лирика чĕлĕхĕсем хăйсене хăйсем янăрама пуçлаççĕ. Демидов художник сачĕ — ытармалла мар.

Ĕнер Ноннăпа Атăл леш енче пултăмăр, хĕвел питĕнче хĕртĕнтĕмĕр, шыва кĕтĕмĕр. Атăл нумай чакнă, анчах катер çав-çавах çаран çинчен çӳрет-ха. Эпир ачасен санаторийĕ хыçĕнче пултăмăр. Кунта хĕртĕнме хăйăр та пур, сулхăнта ларма юманлăх та пур. Шыва сăхсăхса кĕтĕм — шкул ачисем кулаççĕ, Нонна ятлаçать: кощунство тет. Шыва кĕнĕ хыççăн хырлăхра утса çӳрерĕмĕр. Çумăр кирлĕ, кăçал мая кĕнĕренпе пĕр çумăр та пулман.

Шăмат кун каç педагогика институчĕн аслă залĕнче пултăмăр. Унта пултарулăх коллективĕсем концерт пачĕç. Халăх лăк тулли, ытларах — студентсем. Чăваш юррисене те питĕ хапăллаççĕ. Хамăрăн интеллигенци. Чутайсем туй турĕç. Тĕлĕнмелле илемлĕ. Туй арăмĕсем кĕмĕлĕсене йăтаймаççĕ. Çынран пуçтарса çитнĕ. Маттур В. Ржанов — вăйлă ĕçлет. Пединститут хор коллективĕ питĕ вăйлă. Аполлон Галкин ертсе пырать. Таймасова Галя (тутар хĕрĕ) — шăпчăк саслă. Чăвашла, тутарла, вырăсла юрлать. Канашран икĕ студент — Терентьевсем — Хирпӳн лирикăллă юррине лайăх юрларĕç — чуна кайса тивет. Зал вĕсене оваци турĕ.

[...]

Майăн 18-мĕшĕ. Виçĕ каç Кăкшăмра çĕр каçрăм. Кунта эпир Ваçилей Алентейпе 12 кунлăха килтĕмĕр — канма, ĕçлеме. Икĕ вырăнлă пӳлĕм. Малтанхи каç вăрăм тунасем аптăратрĕç. Тепĕр кун чӳречене марля картăмăр — халĕ аван.

Çанталăк канакансемшĕн лайăх тăрать — типĕ, ăшă. Йĕритавра хыр вăрманĕ, креозотпа тулнă сывлăш. Ку сывлăша пичĕкепе хулана турттарма та юрать е, Лапов калашле, ют патшалăха экспортласан та пăсăклă пулас çук. Икĕ пысăк (икĕ хутлă) дача. Павильонсем, беседкăсем. Юманлăх витĕр анлă Атăл сарăлса выртать. Эпир те Алентейпе ярăнтăмăр. Икĕ кун «Хыпарпа» лартăм. Тĕлĕнмелле статьясем пур. Уйрăмах мана пĕр кĕлĕ кăмăла кайрĕ.

«Эй, ман пурнăçа тытса тăракан Патша Турă, мана юлхав шухăшĕ кĕресрен, шанчăк çухатасран, пуçа асла хывасран, кирлĕ мара калаçасран чарса тăр. Мана, ху чуруна, таса шухăш, йăвашлăх, тӳсĕмлĕх, çынна юратса пурăнас кăмăл пар. Эй, Патша Турă, мана хам çылăхăмсене курса тăма пар: эсĕ ĕмĕр-ĕмĕрех мухтавлă. Аминь. Эй Турă, мана, çылăхлăскере, тасат». (Хыпар, 12 №, 1906 çул.)

Шаккур, Калюков пек кашкăр чунлă çынсене çакă кĕлле эпĕ ир те, каç та калаттăрăттăм. Чĕлхе вăйĕ мĕнле, сăмахсем! Анланусем! Ак ăçта вăл поэзи те, философи те! Турă пурри-çуккине пăхмасăрах çак кĕлĕ сăмахĕсем ĕмĕр пурăнмалла. Турă тени вăл — этем ăсĕ, ырă кăмăлĕ, пур енчен те çитĕнсе çитнĕ этем хăй! Турă — идеаллă этем. Идеаллă этем çук, анчах идеал-турă пулмалла, этем ялан хăй хĕнлĕ çулĕ çинче çав идеал патне туртăнмалла, лайăхланса, ырăланса пымалла. [...]

Ĕçлеме кунта вăрăм туна чăрмантарать, унтан ниçта тарса пытанма та çук. Вăрăм туна асман кунсенче павильонта ĕçлеме лайăх.

Евдокия Яковлевна çинчен çырас кĕнекери Анисов образне пуянлатма пĕр сăвă тупрăм:

Çӳл кĕтесре пĕр шăна
Куçне хупса ларать тет.
Йĕри-тавра эрешмен
Хăй каррине карать тет.
Карать тет те юрлать тет:
Çывăр, шăнам, ан вăран,
Юнна ĕçсе тăранам.

(«Хыпар», 45 №, 1906).

Кăна Варварипе Анисов калаçуне кӳртмелле. «Пурнăçра шăна мар, пăван пулас пулать, Варвари инке!» — çавăнта вырнаçтармалла. Шеплĕ пулать.

В. Алентей ăслă, кăмăллă, шӳте çĕклеме пултаракан чĕлхеллĕ çын. Оптимистла скептик. Пурнăç мыскарисене лайăх асăрхать, тĕнчере чап мĕн иккенне пĕлет, этем тени

умĕнче ейкеленмест, мĕншĕн тесен этем хакне аван чухлать. Пĕр сăмахпа каласан, хăрах ураллă пулсан та, çĕр çинче вăта юпа пек тăн-тăн тăрать.

Майăн 30-мĕшĕ. Ĕнер, вырсарни кун, Нонна килсе кайрĕ. Вăрманта уçăлса çýрерĕмĕр. Атăл пырĕнче шыва кĕтĕмĕр. Мыскара пулса иртрĕ. Хуларан икĕ арçын кунти икĕ майра патне кану кунне ирттерме килнĕ. Ĕçме кăна ларнă — арăмĕсем персе çитеççĕ (кýршĕсем систернĕ). Шăйшай, йĕрý, шăл шатăртаттару, чýрече çĕмĕрý, çапăçу. Кунти чăваш хĕрарăмĕсем ку вăрçа «Майра вăрçи» тесе ят пачĕç. Алентей: «Историне тепĕр вăрçă — «Майра вăрçи» çырăнчĕ», — тет. Ноннăна 6 сехетре моторлă кимĕпе ăсатса ятăм. Сăвăсем çыркалатăп. Тухасшăнах мар. Хусанкая пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн вулатăп («Аптраман тавраш»). Генилле тунă сăнлăхсем пур, уйрăммăнах «Пĕрремĕш кун» кăмăла кайрĕ. Шăп чăваш пурнăçĕ! Каснă лартнă. Хамăн шухăшсене çырасах пулать. Ку, ахăртнех, чăвашăн поэт çырнă энциклопедийĕ. Мĕн кăна çук! Быт, культура, хуçалăх — пулни, пурри, пуласси!

Вăрăм туна аптăратать. Пýртре кăна хăтăлкалатпăр. Çил çук чухне пушшех асать.

Майăн 21-мĕшĕ. Атăл хухсах пырать. Ноннăпа шыва кĕнĕ вырăн халь типпе юлчĕ. Шыв хухнă май вăрăм туна нумайланать (çапла калаççĕ). Кунта манпа интересленеççĕ: ăçта ĕçлетĕр? тесе ыйтсах тăраççĕ. «Тиекре. Шупашкар тиекĕ», — тетĕп.

«Аптраманăн» вăрçă картинисенче сăнарлăх вăйĕ çитмест. Ял çинчен çырнисем, чăваш йăлисем, калаçăвĕсем — вăйлă.

Кунта суккăрсем нумай, пĕр çĕре пухăнса купăспа ташлаççĕ, юрлаççĕ, эртелпе уçăлса çýреççĕ. Ертсе çýрекенсем — кăшт курарах параканнисем. Ĕнер хĕрарăмсен (ялтисен) ушкăнне пырса лартăм. Пĕр çармăс хĕрĕ, 18—19-тискер, хупхура та чăп-чăмăр, сухăр юхтаракансен (вздымщиксен) пурнăçĕ çинчен каласа култарчĕ. Вздымка тăвакан хĕрсем хак (инструмент) çивĕчĕшне, çýçĕсене шеллесе, алă çăмĕ, ура çăмĕ, ... çăмĕ çинче тĕрĕслетчĕç тет. (И еще кое-где терĕ.) Çынсем каçса кайса кулаççĕ. Святая простота.

Çĕрĕк каç кино куртăмăр — «Необыкновенное лето».

Кунта ку вăхăтра ĕçлеме кансĕр, пур çĕрте те — вăрăм туна: те çырас, те вĕсене хăваласа ларас.

Элекçейĕн ячĕ «Правдăра» пур. Писательсен пленумĕнче тухса каласнă. Çитрĕ ĕнтĕ ăна курайман çынсене тарăхма!

Суккăрсем паян пăртак ĕçнĕ. Кăмпа айĕнче чылайччен

юрласа ларчĕç. Çаврака сĕтел тавра ларса тухнă, аллисем сĕтел çинче, пуçĕсене уснă — чуна кайса тивмелле хурлăхлă юрласçĕ (чăвашла).

Кунта шăпчăк нумай. Ирсерен вĕсен сассипе вăранатăп. Куккук тунсăхлăн авăтать. Шăнкăрчсем чĕп кăларнă. Улăх типсех пырать. Çĕмĕрт чечек тăкать, йăç улми шап-шурă чечекре.

Майăн 23-мĕшĕ. Ĕнер ир Гомулка докладне, партин пĕрлешăллĕ IX пленумĕнче тунине, вуларăм. Хăватлă ăс. Теоретик. Теоретиксене хирĕç аван сăптăрать, ревизионистсене те лектерет. Пур пирĕн ун çине шанчăксăр пăхакансем те. Гомулка паян кун — марксизм-ленинизмăн чи вăйлă салтакĕсенчен пĕри.

Валентин Бурнаевский килсе кайрĕ. Унпа Атăлта шыва кĕтĕмĕр, улăх тăрăх уçăлса çăрерĕмĕр... Пĕр чăваш çынни, Мускав çыннине, тавлашса, йăлт кукиш турĕ. Чăвашĕ — рабочи, мускавĕ — культработник [...]. «Эпĕ çĕр чăмăрĕ тăрăх виçĕ хут çаврăннă, — тет чăваш, — эсĕ Мускавран ăçта тухса курнă?..»

Сăпайлăх — чăвашăн илемĕ. Вăл пĕтсен мĕн юлать? Пурха. Аптраманлăх пур, ĕçченлĕх пур т. ыт. те. Пурăнатпăр.

Каçхине чăваш хĕрĕсем хут купăспа пит аван ташларĕç. Пире, Алентейпе иксĕмĕре, самодеятельность вечерне хутшăнтарасшăн. Тем тумалла?

...Чехов та Толстой мар-иç, анчах унсăрăн вырăс литературинче мĕн илем пулĕччĕ. Кашниех — пысăк-и вăл, пĕчĕккĕ-и — хăйĕн сăмахне каланă.

[...].

«Аптраман таврашне» вуланă чух *малалла мĕн пулать-ха* тесе вуламастăн (ку вăл сюжет, композици çитменлĕхĕ), Хусанкай *малалла мĕн калать-ха* тесе вулатăн. Чăнах та, поэт вулаканăн кăмăлне туллин çырлахтарать. Ăс, чĕре, чĕлхе — çакă этем илемĕ пĕтĕм роман тăршшĕпе янăраса тăрать.

Майăн 24-мĕшĕ. Кунĕпех ахаль ирттернĕ. Виççĕн: Алентей, Лукоянов (шурут-нурăссем), эпĕ — кăнтăрлахи апатчен Атăл хĕрринче хĕртĕнтĕмĕр. Пулăçсем пулă тытаççĕ, каçхине пулă çиме килме каларĕç.

Каç кăлĕм, апатсем хыççăн, суккăрсемпе «çĕрĕлле» вылярăмăр. Çынсем (ытларах суккăррисем) ĕретĕн ларса тухнă, пĕри кашнийĕн чĕрçи çине тытнă аллине кăт-кăтик, кăт-кăтик тесе тĕртсе тухать, çав вăхăтра кама та пулин «çĕрĕ» тыттарса хăварать. Пĕлме тăратнин «çĕрĕ» камра иккенне пĕлмелле. Пĕлмесен каллех тăрса юлать, каллех камра ик-

кенне пĕлме тăрăшать. Малалла çĕрĕ параканни — çĕрĕ камра пулнă, çавă.

Вăрăм тунасăр пуçне тата ӳпре йăтăнса тухрĕ. Ăшталать. Часрах Шупашкара тарас пулать. Ĕçлеме килнĕскерсем кунтан нимĕн тăваймасăрах каятпăр, пур çĕрте те çыртаканни.

Мускавран питĕ маттур культработник килнĕ, çамрăксене ташлаттарать, юрлаттарать, выляттарать. Пĕр вăйăра мана тӳре (судья) турĕç.

Шăмат кун Нонна килет. Унтан юлас мар, пĕрер кун срок тухмасан та килех каяс.

Хусанкайăн «Аптраманне» вуласа пĕтертĕм. Ăслă, аслă, илемлĕ. Ку эпопея çинчен ĕмĕр калаçмалла. Хам шухăшсене çырасах пулать. «Социализмла реализм тата нацилĕх» — примерно çакăн пек ят пама пулать статьяна.

Çак кунсенчех «Канаш çулĕ» ятлă сăвă çырмалла.

Майăн 25-мĕшĕ. Шăмат кун. Паян каçалла Ноннăна кĕтетĕп. Ыран унпа каяс. Ӳпре тапса тухрĕ, урама тухма çук.

Паян çумăр шапăртатнă сасăпа вăрантăмăр. Пархатарлă çумăр. Çĕр йăлтах типсе çитнĕччĕ. Май уйăхĕнче кăçал пĕр çумăр та пулманччĕ, халăх йăлт хуйха ӳкнĕччĕ. Халĕ лайăх çăвать — лăпкă, ăшă, тикĕс. Куккук авăтать.

Ĕнер пулăçсем Атăл хĕрринче пулă çитерчĕç. Каçхи апат хыççăн пирĕн пата икĕ хĕрарăм, пĕр хĕр килсе ларчĕç. Сăвăсем калама ыйтаççĕ. Алентей [...] халапне ячĕ, эпĕ питех калаçса каймарăм, ĕшеннĕ пек пулса кравать çине тăсăлса выртрăм. Хăратăп — Нонна хаяр.

6 сехет çурă. [...] Пĕтĕм тĕнче уçăлса кайнă. Çумăр хыççăн кайăксем ăмăртмалла юрлаççĕ. Балкон çинче пĕр хĕр — ирех тăнă — тĕрĕ тĕрлет. Чăтаймарăм:

Ирех тăрать, çăвăнать,
Нарспи ĕçе тытăнать, —

тесе иртсе кайрăм. Хĕр ирхи шурăм пуçĕ пек йăл кулчĕ. Тавтапуç, чăвашсен те кирлĕ чух вырăнлăн усă курмалли, çынна савăнтармалли çунатлă сăмахсем, поэтсен пилĕсем сахал мар.

Лукоянов Петр Семенович пĕр интереслĕ факт каласа кăтартрĕ. 20-мĕш çулсенче вăл Мами вулăсĕнче парти комитечĕн секретарĕ пулнă (Т. Ахазов — комсомол секретарĕ). Вулăсра баптистсем ĕрченĕ: Совет укçине илмен, Совет çăкăрне çимен, улмапа, йӳçĕтнĕ купăстапа пурăннă — шурса кайнă. Каçсерен вăрттăн, улах çĕрсенче пухăнса кĕлĕсем тунă (çарамаслансах). Баптистсемпе кĕрешме про-

курорсем, милицисем килнĕ, пулăшман. Обком секретарĕ Я.А. Андреев килет. «Ăçтан ĕрченĕ, мĕнле сăлтавпа ĕрченĕ вĕсем сирĕн?» — тесе ыйтать Андреев. Лукоянов: «Пирĕн кунта чугун çулĕ инçе мар, акăлчансен агенчĕсем сарса çýреççĕ теççĕ. Сăлтавĕ çавăнта пулĕ», — тенĕ. «Эй, ачамсем, ачамсем! Ытла примитивлă шухăшлатăр. Çынсенчен чиркýсене туртса илтĕмĕр, анчах туртса илни вырăнне нимĕн пама ĕлкĕреймерĕмĕр», — терĕ тет. Пушă вырăн (вакуум) пулма пултараймасть этем чунĕнче.

Майăн 26-мĕшĕ. Нонна́на кĕтрĕм-кĕтрĕм — кĕтсе илеймерĕм. Ятарласах пýлĕм пирки те калаçса татăлсаччĕ. Çанталăк çумăрлă пулчĕ — çавăнпа тухас темерĕ пулĕ. Паян ир те сивĕ, нýрлĕ. Килмест пулмалла. Кăнтăрлаччен кĕтетĕп, вара тухса каятăп. Пĕр парти машинăпа тата катерпа ирхи апат хыççăнах ăсанчĕç. Макăракансем те пур. Этем чĕри! Ытла эс час иленетĕн-çке. Илемлĕ çĕрте самантлă çыхăну та илемлĕн курăнать пуль çав.

Ĕнер колхозниксемпе пулă тытрăмăр. Тăваттăн пĕр моторка çине лартăмăр. Кимĕ моторка шыва хирĕç ишет. Унтан чарăнать те, кĕсменçĕ аялалла ишме пуçлать. Мотор ĕçлемест. Пулăçă охан ятлă атмине шыва пăрахать. Икĕ метр ытла тимĕр пĕкечеллĕ охан шыва путать, шыв тĕпĕпе пăяв вĕççĕн сĕтĕрĕнсе пырать (шыва май). Кимĕ ишĕмĕ шыв юххинчен хăвăртрах пулнипе охан шыва хирĕç ишекен пулăсене хирĕç карăнса пырать. Пулăçсем эпир пыриччен чылаях тытнă. Пĕр çтерлĕкĕ килограма яхăн. Виççĕн — Алентей, П[етр] С[еменович], эпĕ — тытнă пек пулăсене пĕтĕмĕшпех илтĕмĕр (3 кг ытла та пулĕ). Каçхине прощальнăй вечер пекки турăмăр.

Чăвашăн юрă культури калама çук ýснĕ. Мĕнле кăна юрă пĕлмеççĕ чăваш хĕрĕсем. Савăннипе куççуль тухать. Мĕнле юрлаççĕ тата, мĕнле юрлаççĕ! Чуна кайса тивет.

Турхан (Комсомольски районĕ) хĕрĕн сăвви:

Уртăш йывăç пулать кăранташ,
Çичĕ ютран пулать хурăнташ.

Майăн 27-мĕшĕ. Ĕнер кăнтăрла иртсен киле таврăнтăм. Нонна ытлашширех тунсăхланă, ун пек чух вăл çилĕллĕ, вара унăн кăмăлне тупма чылай вăй хурас пулать. Ачасенчен çырусем пур, вĕсен хĕрýллĕ вăхăт — экзаменсем. Силпи хăйĕн мал ĕмĕчĕ çинчен çырать — тупачĕ çитĕнсе çитрĕ пулĕ çав. Мĕн тăвас — пиллес, пиртен тухнă йăла мар. Илемпи пĕр кун каласа панă тăрăх, каччи начар мар, кăçал вĕренсе тухать иккен — Силпи факультетнех. Хай, мĕн калас, чĕнпе чĕн, пушăтпа пушăт çыхăнать теççĕ. Ашшĕсем

те хамăр пек çырулăх ĕçĕпе пурăнакан çынсем иккен (Пермь хулинчен). «Çичĕ ютран пулать хурăнташ».

Паян авторсене çырусем çыртăм, хам ятпа та çырусем лăнках пуçтарăннă. Мĕтеррисрен телеграмма пур, Мускава тутар декадине тухса каяс умĕн çаптарнă.

Союзра М.Я. Сироткина тĕл пултăм. «Ленина курнине» мухтать, халăх вăйне, кăмăлне аван кăтартса панă тет. Гурий Титов та пулчĕ, вăл патетика ытларах тесе ўпкелешет. «Ленин çинчен епле хăпартланмасăр çыратăн», — терĕм эпĕ ăна. Сăмах Иван Яковлевич çинчен пулчĕ. Наци ыйтăвĕ çине пирĕн чăваш интеллигенцийĕ Иван Яковлевич чухнех тĕрĕс пăха пуçланă. Халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрса тăракан факторсем çине мар, пĕрлештерекен факторсем çине ытларах пăхнă, çавăнпа та чăвашсен национализмĕ ытти хăш-пĕр республикăсенчи пек пурнăçлă пулман. М. Сироткин Милли концепцийĕсем çинчен калать, унăн, чăнах та, пĕр вăхăтра тўнтерле калаçнисем пулнă. Анчах Милли, калас пулать, чăвашсен обществăллă пурнăçĕнче паллă йĕр хăварайман. Çавăнпа та чăваш национализмĕ çинчен пикенсе калаçни çăвар тутине сая янине тăмасть. Вырăсран уйрăлса пурăнас шухăш чăвашра нихăçан та пулман. «И. Яковлевич ытти халăхсем çине вырăссен спутникĕсем çине пăхнă пек анчах пăхнă», — тет Гурий. Ун чухне позитивлă программа урăхла пулма та пултарайман.

Кăнтăрла иртсен Кĕнеке палатинче Пеття кĕнекисемпе лартăм. Лайăх калавсем пур.

Июнĕн 2-мĕшĕ. Çак кунсенче политкружокăн итоглă занятийĕ пулчĕ. Горкомран — Кузнецов И. Д. ертсе пычĕ. Тема: «В.И. Ленин наци культури çинчен». Эпĕ те тухса каларăм. В.И. Краснов манăн калаçăва питĕ кăмăлларĕ, хăй те, ĕмĕрхи йăлипе, кăшкăрсах, çунатланса кайсах калаçрĕ.

Элекçей Талвир Мускавран пысăк çитĕнўсемпе таврăнчĕ. Вăл писательсен пленумĕнче тухса калани питĕ резонанслă пулнă, Михайлов хăй унăн ыйтăвĕсем çине ответленĕ (хут пирки) тата пленум хыççăн Талвира Тĕпкома чĕнтернĕ. «Тăван Атăлран» уйăхра пĕрре тухса тăракан журнал тума шанчăк пур. Писательсен хисепĕ юлашки илўпе (Кипек, Илпек, Тани Юн) 40 çитрĕ. Çавăнпа малалла пирĕн организаци членсене хăех çирĕплетме тытăнать, Мускавсăрах.

Элекçей чăн-чăн суйласа илнĕ хăнасемпе пĕрле правительство дачинче хăнара пулнă. Унта автономисенчен виçĕ çын анчах чĕнтернĕ (пиртен, тутартан, пушкăртран). Тўрешара çыннисем пурте пулнă (Элекçей çакна çырнă чух хăй килсе кĕчĕ). Унпа Шупашкар тăрăх тухса кайрăмăр. Христо

Ботев валли урам пăхрăмăр — Новая ятлă урам. Хальлĕхе чухăн вырăн-ха, анчах мал ĕмĕтлĕ ен, ўсмелле, илемленмелле. Чул çурчĕсем унта паян кун иккĕ кăна: 5-мĕш шкул тата ача сачĕ. Янко Купала ятне хальхи «Вторая Герцена» текен урама парас тет Элекçей. Унта та пултăмăр. Мишер касси пек, мĕнле кăна урам çук Шупашкарта! Союзра чылай калаçса лартăмăр. Мана Элекçей Украинăна ярасшăн — Çеçпĕл уявне, унтан Минска çитмелле тет, вара хăнасене Украинăран, Белоруссинчен Чăваша илсе килмелле иккен. Килĕшесси пулмасть терĕм. Белорусси тата Украина культури тĕлĕшпе ытла та провинциал эпĕ терĕм. Килĕшмест Талвир, вĕсем Хусанкайпа иккĕшĕ мана палăртса хунă иккен. Чăнах та, манăн халĕ çын çине тухма ятăм та, шывăм та çук, малашне мĕнле пулĕ. Ĕçлес пулать, кута хĕссех! Атăл леш енче те пултăмăр Элекçейпе. Пĕрер черкке эрех ĕçрĕмĕр — ресторацн нумай пулмасть шывран хăтăлнă ятпа. Леш енче паян илемлĕ мар, çил сиксе вĕрет, хăйăр тусать, куçа уçма çук. Атăл халь-халь çĕкленсе каяс пек хумханать.

Тутарсен декади Мускавра мухтавлăн пынипе савăнса чылай калаçрăмăр. Мĕн кăтартăпăр эпир, чăвашсем? Прози пур, поэзи пур; опера çук, театр мĕн кăтартĕ? Тумалла, тумалла, тумалла, чăваш панккавĕсене, афанасьевсене, пăхмасăрах ĕçлемелле. Паян пурăнмалăх çăкăр пар тесе мар, пултăр, ĕмĕрлĕхе пултăр тесе тăрăшмалла.

Июнĕн 7-мĕшĕ. Иртнĕ кунсенче Йăван патĕнче пултăм. Чылай калаçса лартăмăр. Талантлă çын. **Анчах принцип тасалăхĕсем тĕлĕшпе каллех эпĕ ун пирки иккĕленме пуçларăм.** Савантеев иккĕмĕш хут мĕншĕн лекнине каласа патăм. Уншăн, çĕршывра икĕ парти — баланс валли (рабочи тата хресчен) — тăвасси çинчен шухăшланăшăн, эпĕ хам та хупмалла ăна терĕм. Тĕрме çынни! Ун пек кăмăлпа малаллах каяймăн. Унăн çак кунсенче «Чăваш искусстви çинчен пуçа килнĕ шухăшсем» ятлă статйи тухрĕ. Кирлĕ ыйтусем, анчах вĕсене примитивлăн лартнă. Хам шухăша каларăм: министр пек çырнă терĕм. Савăнчĕ. «Анчах ытлашши министрларах пек». Кăна илтсен чăр пăхрĕ. Писательлерех çырмаллаччĕ терĕм. Опера пирки кулăшла çырнă. Ăна тума юрлакансем çеç кирлĕ тет.

Çав кунах филармонинче Васильев Федорăн «Шыварманне» (пĕр пайне) итлерĕмĕр. Вăйă, ярмукка. Лайăх янăрать. Анчах классикăлла произведенисен шайĕнчен пăхса ытла та йывăррăн, асаплăн çырать автор. Ман шухăшпа, пирĕн малтанхи операсем халăх пултарулăх тăпри çинче

ӳсмелле. Классикăлла техника, çĕнĕлĕх, виртуозлăх каярах кирлĕ. Халĕ тăвас, тăвас пулать. Унсăрăн эпир хамăр ума хамăр вăйран ытла требованисем лартса тутарсенчен таçта кая тăрса юлтăмăр. Техника, формализм тыткăнĕнче асапланнă поэтсем, композиторсем, художниксем яланах сахал ĕçленĕ. Васильев, хăй каланă тăрăх, халех этнографизмран тасалма, хăтăлма тăрăшать. Малтан этнографизм çинче пĕр-икĕ япала пар-ха, унтан — куç курĕ.

Дудинцева каçса кайса вулатăп. Маншăн ăнланмалла. Çакăн пек таса кăмăлпа çырнă произведенисем нумайрах пулмасăр пирĕн атмосфера культ сĕрĕмĕнчен тасалса çитеймест. Ман шухăшпа, чăн-чăн советла, ленинла позицисенчен çырнă пархатарлă ĕç.

Ш. Мĕтеррисĕн пĕр сăввине («Ульянов çулĕ») куçартăм. Оригиналĕнчен маларах пек. Ĕнер «Ленина курни» çинчен «Коммунизм ялавĕнче» В. Долговăн рецензийĕ çапăнчĕ. Аван хак панă. Рехмет.

Речь на собрании чувашских писателей от II/IV — 1937 г.

Товарищи, мое выступление будет носить строго критический характер, ибо я уверен, что только критика и самокритика — в самом лучшем из понимании — дают возможность оздоровить организацию наших писателей, что только в критике своих недостатков мы можем по настоящему узнать друг друга, определить свое место в действии, крепко-накрепко спаяться в общем деле и только критика и самокритика обеспечат нам полное развитие нашего движения, где каждый будет чувствовать рядом с собой бойца-товарища с открытой душой и преданным сердцем.

Я думаю, что на этом собрании больше всего будут говорить о наших недостатках в воспитании писательской молодежи, писательских кадров — под углом зрения дальнейшего развития их творческого роста, так как этот вопрос безусловно является основным. Не стану говорить о том, как нужно воспитывать писателей политически и творчески, — это слово оставляю за другими, — скажу только о том, как не нужно воспитывать писательскую молодежь. С этой целью начну прямо с воспитателей и в качестве воспитывающейся стороны большей частью буду иметь в виду себя. Так будет конкретнее.

В 1927 году я написал стихотворение «Сĕрĕмре», которое дало повод многим товарищам обвинить меня в национализме. Это стихотворение было, конечно, сугубо вредное, — вредное потому, что в нем неправильно поставлен вопрос о судьбе чувашского народа, как нации, вне связи с конкретными условиями нашей советской эпохи. Вопрос был поставлен, но не разрешен. Мне, 18-летнему юноше, человеку без всякого образования, не под силу было разрешить этот сложный национальный вопрос. Повторяю,

вопрос был поднят, поднят не зря, но ввиду политической моей беспомощности не разрешен. Я давно осудил это произведение, безусловно осуждаю и сейчас.

Кто-либо пришел ко мне тогда на помощь? Кто-либо разъяснил мне тогда сущность ленинско-сталинской национальной политики? Никто. Правда, Иван Кузнецов выступил по поводу моего «Сĕрĕмре» со специальной статьей, но лишь для того, чтобы объявить, что с сегодняшнего дня к лику националистов причисляется еще один «неверный», именуемый Митта, у которого «крылья подорваны революцией» (последние три слова — Кузнецова). Это был, конечно, пришибеевский окрик против человека, пришедшего к нему за помощью. Человеку нужен был нашатырный спирт («Сĕрĕмре» по-русски — «В угаре»), а он ударил меня оглоблей по голове, тем самым вызвав еще более усиленное головокружение.

Перед кем я должен был склонить голову — перед Кузнецовым, который еще и еще мог повторять на ней свой страшный опыт, или перед теми, кто под видом отеческой ласки протягивал мне руку? Безусловно, я не имея понятия о национализме, не имея инстинкт сомосохранения, больше был склонен к этой — как уже после выяснилось — вражеской националистической руке, нежели к дружеской дубине Кузнецова. Как я мог не уважать хотя бы того же Моисея Федорова, который свои статьи начинал цитатами из моего «Сĕрĕмре», или не быть признательным Милли, который, как мне рассказывали, приходил в благочестивое умиление от моих глупых и вредных стихотворений. Вот перед кем склонялся я тогда, — это было время моих националистических заблуждений и ошибок, это было время ошибок и моих действительных товарищей, которые не умели работать с писательской молодежью.

Только долголетняя практическая работа в деревне вызволила меня из плена этих ошибок и заблуждений.

Осенью 1928 года я, следуя своему глубокому внутреннему убеждению, выраженному в одном из моих тогдашних стихотворений такими словами:

Яла, поэт, яла! Унта эс ĕсĕклемĕн,
Унта çех тупăн эс ĕçпе тивлет... —

оставил работу в редакции «Канаш» и отправился в деревню учительствовать. Я попал в самую захудалую — по тому времени — деревню, где почти не было грамотных людей, организовал там комсомольскую ячейку, культурно-

просветительные кружки, писал заметки против кулачества, в общем, окунулся, как мне думалось тогда, «в самую прозу» наших сельских будней того времени. Большая работа, которую я вел тогда в деревне, сейчас встает передо мною как прекрасное воспоминание о лучшей поре моей молодости, но почему-то мне все это казалось сущей прозой и я, по своей поэтической болтливости, написал такое стихотворение:

Ку пурнăçра пурте-мĕн проза,
Поэзисем кирлех те мар.
Çта çĕрулми, унта чăн роза
Яраймĕ нихăçан тымар.

Поэзисĕр кĕпер хываççĕ,
Унсăрăнах кӳлеç çиле.
Халь ыр çынсем сăвă çырмаççĕ,
Эс те ан çырнă пул, Ваçлей!

И дальше в таком же духе.

В этом же году я встретил товарища Золотова Аркадия и прочитал ему это стихотворение. (Он приехал было тогда в наш район на проведение партийной конференции.)

Что мне ответил тогда товарищ Золотов? Абсолютно ничего. Он, вместо того, чтобы пробрать меня по-дружески за это вредное стихотворение, кажется, даже похвалил меня за «классическое созвучие слов — проза и роза», не обратив внимание на явную «неклассичность» этого стихотворения в смысле несозвучности его с нашим временем. В этом моем стихотворении, как я его сейчас понимаю, ложно констатировалась мысль о жизненном застое, об отсутствии всякой борьбы за поэтическое настоящее и будущее, это стихотворение объявляло нашу жизнь бессмысленной, пустопорожней штучкой.

Почему Золотов мне ничего не ответил? Может быть, он сам тоже был такого же мнения и с таким же настроением, может быть, он даже нашел счастье открыть во мне поэта — выразителя своих мыслей? Судите сами.

После этого у меня создалось самое недоверчивое отношение к тов. Золотову, он не ответил на мой вопрос, он не дал мне совета: как жить и что делать для того, чтобы быть полезным человеком в обществе. Не ради клеветы на тов. Золотова, а ради того, чтобы показать, насколько равнодушны некоторые наши руководители к вопросам нашей жизни — я вытащил этот старый, но ничуть не постаревший факт. Тысячи примеров, тысячи фактов из моей жизни, также из жизни других товарищей, гово-

рят за то, что этот человек — Золотов — никогда не был вдохновителем, энтузиастом, двигателем доверенного ему дела, никогда не был внутренне близок к животрепещущим вопросам нашей культуры, никогда не был связан духовно с носителями этой культуры, не болел, не переживал и не радовался вместе с ними, а просто-напросто относился к своим обязанностям бездушно, как человек, потерявший всякий вкус к жизни, как духовный кастрат.

В противоположность к Золотову, я назову вам другого работника — тов. Краснова, с которым я в первый раз встретился в 1929 году, и эта встреча явилась началом нашей долголетней дружбы. Этот человек с первого же раза почувствовал во мне все мои недостатки, сложившиеся за мои «беспризорные» поэтические годы и сказал: «Тебе нужна такая работа, где будет много борьбы. Я найду тебе такую работу и дам эту борьбу». И, действительно, он, секретарь Вурнарского райкома ВКП(б), пригласил меня к себе — в свой район, рекомендовал учительствовать в одной из ШКМ. Начались знаменитые хлебозаготовки 1929 г., началось, к моему счастью, колхозное строительство в деревне, в общем, я сразу очутился в самом горниле борьбы и сразу ожил, почувствовал, определил свое место в жизни. Он, Краснов, посылал меня, комсомольца, на самые трудные участки борьбы, где и опытным коммунистам приходилось туго. Я и по сей день горжусь — и это самая высокая гордость в моей жизни — я предотвратил вместе с тов. Красновым восстание кулаков, подготовленное во главе с ремесленником Залогиным (Чĕрĕккут) в Ходаровском подрайоне (об этом знают соответствующие организации).

В эти бурные дни я находил время учить ребят, агитировать за колхоз, разучивать песни-агитки с ребятами и писать стихи. Не раз в первом, во втором часу ночи я звонил к В.И.Краснову, будил его и читал свои стихи за тридцать верст по телефону. Моя лучшая вдохновенная поэма (по крайней мере, я сам ее такой считаю) «Хулăм сас» написана под непосредственным руководством (не считайте эту фразу подхалимской) тов. Краснова, каждая строка в ней и моя, и его. Мой лучший вдохновенный очерк «Лав хыççăн лав» написан у него на глазах, в его кабинете, подправлен, запечатан и отправлен его рукой в редакцию. Так нужно и только так нужно работать со старшими товарищами, — так нужно работать не по-подхалимски.

Но суждено было, что мы очень скоро с ним расста-

лись, он уехал учиться, я поехал на районную газетную работу, больше писал статьи, нежели стихи, но все же за два года успел подготовить сборник стихов, приехал в Чебоксары... и здесь я опять должен перейти к личности тов. Золотова и других, ему подобных.

Я нашел, что в организации Союза сидит сын кулака и кулацкий писатель Рзай, при попустительстве Золотова и ему подобных делает свое кулацкое дело, звонит в колокол, зовет своих (но только не «живых зову», как у Герцена), пишет кулацкие рассказы, одним росчерком пера разделывается с произведениями молодых писателей и поэтов, дает им презренные клички — «дурак», «кретин», «иптеш» и др., при этом, по своей исключительной разнузданности и наглости, фиксирует все эти клички под многими восклицательными и другими знаками на рукописях молодых, — видя все это, я и ряд других товарищей запротестовали.

Тов. Ялавин тогда же взялся сделать доклад о творчестве Рзая, — с исключительной целью, чтобы насторожить наших руководящих товарищей против кулацких проделок этого писателя. Но не тут то было. Золотов, Кузнецов, Петтоки (я говорю сейчас о том Петтоки, который, будучи тогда с партбилетом в кармане, частенько валялся не в особенно пристойных местах, кричал всему свету, что ограбили его мужиков, — я не для того, дескать, организовал их в колхоз, чтобы они остались нищими — видите ли, он в 1929 г. случайно оказался организатором колхоза, — а потом, после того, как отрешили его от должности председателя правления чувашских писателей, воспылав желанием исправить положение «своих мужиков», отправился в колхоз, стал директорствовать в молочной ферме, через несколько месяцев погубил там чуть ли не целое стадо коров, попал под суд, потерял партбилет, вернулся обратно в Чебоксары и стал отбывать судебное наказание... где думаете?.. в Союзе писателей, чуть ли не заместителем Золотова. Как видите, круг похождений «блудного сына» завершился, он опять вернулся в отчий дом, на этом закрываем скобку — этот самый Петтоки, Золотов и Кузнецов (простите, я вынужден упомянуть ваши имена рядом с ним по ряду обстоятельств) горой заступились за Рзая. И было за что и за кого заступаться. Как раз перед этим, как будто бы зная предстоящий доклад тов. Ялавина, Рзай опубликовал рассказ «Кӳршӗсем», где он самым бездарным образом, как писатель, ратовал за колхоз. А этим карты в руки! Немедленно рассказ был

объявлен классическим, а писатель — перестроившимся (смотрите номера «Сунтала» того времени), и официальное отношение к Рзаю уже было принято и оглашено. Никто из них и не догадывался, что это произведение Рзаем написано исключительно потому, чтобы усыпить бдительность партийных товарищей.

Дискуссия по докладу т. Ялавина разгорелась, и тогда я в первый раз в своей жизни удостоился быть свидетелем того, как позорно обманывали себя Золотов и ему подобные коммунисты, защищая кулацкого толмача Рзая. Золотов до небес возвышал «Кӳршӗсем» и унижал самым непристойным образом Ялавина, ученый Кузнецов всех противников Рзая глушил цитатами из Маркса и Энгельса, и все это происходило под громкие аплодисменты специально подготовленной авантюристом Орловым некоторой части студентов пединститута, а будущий академик Дмитрий Данилов сидел в Москве и по письмам Рзая писал в русские журналы статьи, выдумывая ради «обогащения» истории чувашской литературы (он этим и сейчас занят) какие-то группировки и группировщиков.

В результате Рзай был поднят, Ялавин свергнут. На второй день дискуссии (дискуссия шла два дня) к началу собрания все уже имели решение Союза писателей, засвидетельствованное законной рукой нашего пастыря Золотова и ему подобных, где по всем радиусам шельмовались такие «склочники», как Ялавин и др. Конечно, после такого решения — после первого же тура дискуссии — не могло быть и речи о самокритике, она была в начале же задушена самым бессовестным образом. Рзай расцветал, Ялавин был повержен на обе лопатки, охал, но не сдавался.

Время, говорят, лучше всего определяет — на чьей стороне правда. А для этого немного времени потребовалось. Не прошло может быть месяца два после этого, Рзай выступает с новым сборником рассказов, которым он, воспользовавшись доверием больших людей, действительно ошарашил всех, даже может быть до некоторой степени Золотова, Кузнецова, Данилова и др., которые его считали исправившимся, на которого возлагали все надежды, как мне казалось тогда, нашей чувашской литературы. Сборник оказался кулацким, недаром тов. Ялавин остроумно и правдиво назвал в своей статье автора этого сборника «звонарем кулацким».

Дело сразу повернулось иначе. Достопочтимый Рзай был формально отрешен от должности «вождя» молодежи чу-

вашской литературы, был установлен другой официальный взгляд на него, но все же, при помощи Золотова, все еще верующего в него как в единого бога — киреметя чувашской литературы, преспокойно проживал тысячи рублей писательских и наркомземовских денег, а главное, ничего не делая. Дмитрий Данилов, другой патрон обиженного кулацкого писателя, пользуясь личным авторитетом, протащил его в члены Союза писателей, защищал, защищает до последнего времени, и когда недавно наши писатели со всей резкостью поставили вопрос об исключении Рзая из Союза, он, Дмитрий Данилов, несмотря на протесты писателей, настоял на том, чтобы исключили Рзая «только условно на год». При решении этого вопроса он не дал голосовать кандидатам и не членам Союза писателей, а воспользовался робкими голосами «запуганных в национализме» писателей. Цитирую из Ленина.

«Товарищ Курский.

...Максимум энергии и строгости. В наших гострестах бездна безобразий. И худшие безобразники, бездельники, шалопаи, это — «добросовестные коммунисты», кои дают себя добросовестно водить за нос. Наркомпост и ревтриб отвечают в первую голову за свирепую расправу с этими шалопаями и с белогвардейцами, кои ими играют». (Ленин.)

Не к нам ли относятся, тов. Золотов и ему подобные тов., эти слова тов. Ленина. Не в бровь, а прямо в глаз!

А если иметь еще в виду то, что тов. Золотов пригрел у себя на груди такого полуавантюриста, полуплута, который все надежды подает на то, что будет целиком с этими качествами, — как Фастовского, то остается сказать одно: тов. Золотов до сего времени не отделался еще от своей близорукости, от беспечного отношения к самому себе и к нашему общему делу.

Но, представьте себе, есть другая особенность у тов. Золотова и счастлив он, что имеет эту особенность, — это его всепобеждающая улыбка. Приходишь к нему, скажем, в раздраженном состоянии, для того, чтобы принять с ним достойный бой, бросаешь перчатку, готовишься к решительному бою, а он спокойнейшим образом поднимает твою перчатку и с этой своей вечной улыбкой подает тебе ее обратно. Вызов отвергнут, руки бойца опустились. Ни Союз писателей, и ни Управление искусств не нуждаются в этой отвратительной улыбке. Эта улыбка недостойна украшать даже евнуха, даже человека с медными пуговицами, торчащего у дверей кабаре.

Я выражаю полное недоверие к этой улыбке и к человеку, носящему ее, ибо он приучил себя к этой улыбке, это — условный рефлекс равнодушного ко всему робота.

Несколько слов о тов. Кузнецове — особо. От тов. Кузнецова мы очень многого ждали. Мы почти с детства знали его, как одного из довольно принципиальных чувашских критиков, хотя и не в меру грубых, впоследствии как неплохого студента ИКП, и когда нам стало известно, что он будет работать в Чувашии в качестве одного из руководителей культурного фронта, я искренне радовался этому факту. И, действительно, в первые годы своей работы в Чувашии тов. Кузнецов сразу дал о себе знать, как о хорошем работнике. По его инициативе была пересмотрена и переделана наша орфография, тем мы сделали огромный культурный шаг вперед, говорят по его же инициативе был возрожден и преподан в новом духе наш прекрасный национальный праздник Акатуй и ряд других не менее важных мероприятий было проведено по его инициативе. Как видите, я следил за работой тов. Кузнецова и, как видите, начало у него похвальное. А продолжение? Тут уж похвастаться, пожалуй, нечем. Надо прямо сказать, наши ожидания полностью не оправдались. Падение кривой в деятельности Кузнецова, мне кажется, началось с его культурной экспедиции, организованной им в конце 1933 г., продолжилось это падение в его «Истории чувашской парторганизации» и кончилось, на мой взгляд, на конференции по языку. Дальше уже, как я наблюдал, Кузнецов и не поднимался и не падал.

Разрешите остановиться на этих трех основных моментах падения кривой в деятельности тов. Кузнецова.

Первый момент — культурная экспедиция. Она была организована, как вам известно, по трем маршрутам и охватила по одному селению в каждом районе Чувашии. Работа была очень интересная, участвовали в ней профессора, врачи, поэты, писатели, музыканты и ряд культурных работников, собрано было огромное количество фактического материала, характеризующего лицо чувашской деревни. За полтора-два месяца истрачено было несколько сот тысяч рублей. А результаты? Как подытожен этот материал? Где научные труды, справочники, альбомы, различные сборники о чувашской деревне, которые в том же году, по словам Кузнецова, должны были увидеть свет. Их нет. Конечно, тов. Кузнецов мне может указать, что ты, дескать, Митта, выпустил один сборник современных чувашских частушек, да я, дескать, написал научную статью о

чувашских банях и колхозных парикмахерах на основе материалов этой экспедиции. Но это смехотворно ничтожно по сравнению с тем результатом, который мы ожидали на основе богатейших материалов экспедиции.

С этих пор, как Кузнецов провалил это великое, я бы сказал, мероприятие в нашей чувашской действительности, в мою душу в первый раз вкралось сомнение к нему. Это чувство мое стало подкрепляться целым рядом последующих фактов.

Факт второй: тов. Кузнецов вот уже несколько лет сиднем сидит над писанием «Истории чуваш». Видимо, в часы отдыха от этой долголетней тяжелой работы он забавлялся и другой работой, а именно — составлением «Истории чувашской парторганизации». Именно такое впечатление производит эта его работа. Мы ждали от него поэму о мужестве и геройстве наших чувашских большевиков, поэму, которая вдохновляла бы нас в дальнейшей борьбе, — этой поэмы мы не получили. Я не собираюсь полностью охаять эту работу тов. Кузнецова, но и нарочитое, плохо обоснованное деление этой истории на два периода — до и после 1926 г. — раз, безудержное восхваление одних и неумное сведение счетов по отношению к другим — два, уделение нескольких развернутых подвалов в газете «Канаш» («История чувашской парторганизации» печаталась в этой газете в течение почти целого года) незначительным поступком таких товарищей, как Зефиров, — три, и бедный, крохоборческий, вялый, неуверенный, нежизненный язык в изложении этой истории — четыре, — делают эту работу далеко не научной и не совсем умной.

Я бы охарактеризовал эту работу тов. Кузнецова следующими словами его «великого предшественника» — придворного историографа Николая Михайловича Карамзина. Он сказал, что: «Многие авторы, несмотря на свою ученость и знание, возмущают дух мой и тогда, когда говорят истину: ибо сия истина мертва в устах их, *ибо* сия истина изливается не из добродетельного сердца; ибо *дыхание любви* не согревает ее». С этого времени в моем доверии к Кузнецову образовалась большая трещина.

Третий момент, характеризующий падение кривой в деятельности тов. Кузнецова, — языковая конференция 1935 г. На этой конференции тов. Кузнецов выступил с начальным докладом — не помню на какую тему, кажется, на тему «Наша политика в языковом строительстве», по крайней мере можно было так его назвать по-кузнецовски. Но это не была политика коммунистической партии. Когда

наша партия говорит устами своего вождя тов. Сталина, что:

«Период диктатуры пролетариата и строительство социализма СССР есть период расцвета национальных культур, социалистических по содержанию и национальных по форме», что: «Эта культура имеет своей целью воспитывать массы в духе интернационализма и укрепить диктатуру пролетариата», что «Пролетарская культура не отменяет национальной культуры, а дает ей содержание и наоборот, национальная культура не отменяет пролетарской культуры, а дает ей форму», что «Такие нации, как туркмены, киргизы, узбеки, таджики (не говоря уже о грузинах, армянах, азербайджанцах и т. д.), несмотря на свою отсталость, не только не обрусели в связи со *строительством* социализма в СССР, а наоборот, возродились и развились в самостоятельные нации», — в то же самое время тов. Кузнецов говорил об обрусении чуваш, об их ассимиляции, правда не о полной на сегодняшний день, но шествующий такими огромными шагами, что ежели не завтра, так послезавтра не должно остаться ни одного чуваша (Так поняли многие, и так нужно было понять выступление тов. Кузнецова на этой конференции). Я уверен, что после этого знаменательного доклада многие наши националисты типа Тинехпи (М.П.Петрова) на другой же день переменили курс и сделались великорусскими шовинистами. После такого пророческого предсказания в этом нет никакого сомнения. И видите ли, тов. Кузнецов «этот неумолимый процесс, обусловленный всем ходом нашей истории», обосновывал тем, что в селе Байдерякове после революции процент говорящих по-русски резко увеличился (это, как он говорил, из материалов его злополучной экспедиции). Я в противовес докладу тов. Кузнецова на этой же конференции, под возмущенные реплики подхалимов вроде Пинер и, вызывая недоумение у чувашских националистов, в каждую минуту готовых быть и там, и сям, и в том, и в другом лагере, безрезультатно старался доказывать, что в селе Байдерякове так же, как и во всей Чувашии, идет небывалый подъем национальной культуры в социалистическом духе, что в этом самом Байдерякове, кроме национальной школы, имеется национальный хор, национальный драмкружок, свои колхозные поэты, ораторы, что эти люди пока и не думают обрусеть или отатариться, хотя многие из них владеют и русским и татарским языком. Я жил в этой деревне целый месяц и имел такое основание говорить. Я говорил конференции, — дело здесь в том, что в строительстве своей национальной куль-

туры нам без участия старшей сестры — многовековой русской культуры не обойтись, что это понимаем не только мы, но и весь народ. Этим объясняется тяга лучших представителей нашего народа к русской культуре, она, русская культура, как неисчерпаемый и всеразвивающийся запас, питает нас в строительстве нашей национальной культуры, она, только она может нам помочь, с достоинством стать со временем в ряды культурных народов мира. Я этому верю, чуваши, как народ, не обиженный природой. С чего бы разглагольствовать тов. Кузнецову об ассимиляции, когда все народы нашей страны со всем пылом и жаром взялись за строительство своих культур, национальных по форме и социалистических по содержанию?

Кто не знает, что процесс ассимиляции — процесс вполне естественный, он будет идти своим, указанным историей путем, что «В период победы социализма в мировом масштабе, когда социализм окрепнет и войдет в быт, национальные языки неминуемо должны слиться в один общий язык, который, конечно, не будет ни великорусским, ни немецким, а чем-то новым», как говорит тов. Сталин, или, как говорит Марр, — «Трудовая жизнь создала их (т. е. языки) — и она же ведет к единству вообще всей речи, предпосылая ей единство хозяйства и общественного строя», — об этом мы знаем ясно, но пока еще это для далекой перспективы национальных культур и национальных языков.

Ну, скажем, есть у нас действительно люди, которые за немедленное слияние с русским народом. Ну, скажем, по-своему правы эти люди, они говорят и действуют, скажем, из действительного убеждения. Разве, разрешите спросить, от этой несвоевременной операции что-либо прибудет в общей социалистической культуре? Ничегошеньки.

Народ, не завершивший до конца своего развития и несвоевременно, механически пришедший к этому великому акту — слияния с другими народами — без предварительного использования всех своих прогрессивных духовных возможностей, сделает огромную историческую ошибку, он не оправдает великий смысл своего рождения и многовекового существования, он окажется дезертиром истории. Наши советские народы до соответствующего времени, конечно, этого не сделают.

Русской культуре и русскому языку, как центральной культуре и центральному языку нашей современности, мы будем учиться вместе со всеми народами нашего Союза,

развивая свою социалистическую культуру, свой язык. Обогащая себя русской культурой, обогатим и русскую культуру и русский язык нашими многонациональными особенностями. Так, мне кажется, нужно понимать содружество народов в строительстве общего языка и общей культуры, на основе единства хозяйства и общественного строя, к нашей великой радости, существующего у нас в Советском Союзе. Так, мне кажется, следует понимать учение гениальных вождей пролетариата Ленина-Сталина по этому вопросу.

Я знаю, что меня и по сей день некоторые товарищи обвиняют в национализме только потому, что я много говорю по этому вопросу. Вопрос этот в наших чувашских условиях как следует (во всех деталях) не разрешен, о нем говорят с опаской, не членораздельно, как бы не обвинили, дескать, в местном национализме и т. д. Поэтому я в моем сегодняшнем выступлении поставил этот вопрос во весь упор.

«В чем состоит существо уклонов в местном национализме? — спрашивает тов. Сталин. И отвечает:

«Существо уклона к местному национализму состоит в стремлении обособиться и замкнуться в рамках своей национальной скорлупы, в стремлении затушевать классовые противоречия внутри своей нации, в стремлении защищаться от великорусского шовинизма путем отхода от общего потока социалистического строительства, в стремлении не видеть того, что сближает и соединяет трудящиеся массы национальностей СССР и видит лишь то, что может их отделить друг от друга».

Никто из здравомыслящих моих товарищей не имеет основания обвинять меня в этих грехах. Я не Юман, который, указывая на электрический свет, кричал: «Уберите эту цивилизацию, она разрушает великую Булгарию, дайте мне хăй чикки (лучину)!». Я не тот националист (фамилию его не помню), который, говорят, проповедывал в первые годы революции возрождение «языческой культуры» (т. е. бескультурья), добивался открытия языческих молелен, который до сего времени, несмотря на то, что учительствует в советской школе, ходит, говорят, в домотканом «улача» и нарочно обувается в лапти. Я, воспитавшийся исключительно в советских условиях, за этими людьми, завершившими свой путь, окарикатурившимися манекенами, не пойду! Я счастливый представитель советского народа, и мой путь ясен.

Рабочий класс Советского Союза под руководством своей

партии покончил со всяким угнетением одной нации другой, уничтожил всякую ненависть одной нации к другой, тем самым создал великую нерушимую дружбу народов на основе взаимопонимания общих целей и задач в едином деле переустройства всей жизни на социалистический лад. Советская власть и наша партия, представляя автономию народам, как бы сказали: создавайте социалистическую базу и на этой основе свободно развивайте вашу культуру, пусть в общей плеяде до конца дружественных народов каждый засверкает своим талантом, образуя совместно с другими небывалой красоты содружество талантов, пусть каждый принесет свою лепту в будущее общество — в коммунизм.

Гарантия на то, товарищи, дана Октябрьской революцией, эта гарантия подтверждена новой Сталинской Конституцией. Вопрос, кажется, ясен и не нуждается ни в русификаторских, ни в националистических толкованиях. Но не так его поставил тов. Кузнецов. Он своим грубо ошибочным докладом дезориентировал всю конференцию, которая по сути дела ничего не сделала и не оставила никаких следов в нашей жизни. Люди съехались, посидели, поболтали, как над мертвой латынью, — по выражению одного из присутствующих, — и, ничего не получив, разъехались. Кстати сказать, эта конференция была созвана по инициативе Научно-исследовательского института социальной культуры, которым в то время руководил троцкист Кутяшов (он же был председателем конференции). Как видите, дело постепенно выясняется. Это они, троцкисты и им подобные, под маской сверхинтернационализма, проповедывают великодержавный шовинизм, покушаясь на священную дружбу народов. Но этому не быть так же, как нашей истории не идти вспять.

Перехожу к Чернову, Наркому просвещения Чувашии.

Под его «мудрейшим», но явно троцкистским руководством, чувашский народ в средних и высших школах был объявлен почти «вне закона». Я знаю факт, и знает об этом тов. Золотов, в Батыревском техникуме студентам запрещалось говорить на их родном языке, преподавание всех предметов было переведено на русский язык, и когда тов. Самойлов, зав. учебной частью этого техникума, заявил протест против этого самодурства, говоря, что для глубокого усвоения преподаваемых наук студентами — недостаточен только русский язык, здесь русскому языку должен придти на помощь родной язык студентов, — Чернов за это назвал его махровым националистом. И неудивитель-

но, что против этого мероприятия, ежели так можно его называть, возникла нездоровая реакция со стороны некоторой части студентов, которые наотрез отказались говорить по-русски (по сообщению директора техникума тов. Ириткова).

Это мероприятие, имейте в виду, было введено Черновым, как раз в тот период, когда тов. Сталин на приеме армянской делегации расспрашивал у делегатов, — все ли благополучно у них в отношении преподавания наук в средних и высших учебных заведениях на национальном языке.

Не мудрено, что несталинское отношение к делу культурного строительства, вселяет в среду нашей интеллигенции неверие в свои силы, в свой язык, в свою культуру, что на этой подготовляемой троцкистами почве возникают такие люди, как наркомпост Назаров, который и с незнающими русского языка говорит по-русски, на этой почве возникают такие группы, как группа шумерлинских «молодцов» из райисполкома, по договору отказавшихся от употребления чувашской речи и беспощадно штрафующих «проговаривающихся», а вырученные на этой «операции» общие деньги пропивают. (Об этом недавно сообщила «Красная Чувашия».) Только одно отрадно, что к этим людям не принадлежат порядочные коммунисты и беспартийные большевики и весь наш народ. Но все же эти люди имеют известное влияние на наших писателей. Почему, вы думаете, долгое время молчал Хумма Çемен, только перед своей смертью заговорил? Почему такой поэт, как Алендей, который лет десять тому назад выпустил прекрасную по тому времени книгу стихов, потом вдруг замолчал? Я могу назвать десятки и десятки таких товарищей. Я уверен, что они поддались этому черному влиянию «Черновых», больше ничем не объясняется. Почему тов. Н.Ф.Данилов, наш Савнă тус, говорит, что чуваш всех нужно научить наукам и ремеслу (это неплохо) и распустить по всему Союзу, ибо они у себя ничего не создадут (это уже глупость, ежели не больше). Это потому, что влияние этих людей, «Черновых», не встречает у нас соответствующего отпора.

Я критикую вас, товарищи, замешанные в это дело и вольно и невольно, в том, что вы забываете самые сокровенные мечты нашего освобожденного народа, о лучшем будущем, что вы не верите в то, что наш одаренный народ, наравне с другими народами, придет и должен придти в коммунистический строй, — где будет общий язык и общая культура — со своей богатейшей культурой и вне-

сет ее в сокровищницу мира, как должное, как вечный памятник о прекрасном, должном, трудолюбивом, умном нашем народе, который только благодаря ленинско-сталинской партии и дружбе всех народов был поднят в один уровень с другими народами мира. Вы забываете, товарищи, то, что у этого народа до Октября не было своей истории, — в этом не мы повинны, но ежели ее и в дальнейшем не будет, — в этом обвинят только нас.

Я считаю недопустимым явлением стремление обвинить людей в национализме за эти искренние чувства. Мы получили возможность выражать эти чувства полным голосом только благодаря Октябрьской революции. Только советская власть и великая партия рабочего класса дали мне право быть творцом, полезным моему обретшему счастье народу и, вместе с тем, возможность быть полезным всему делу, начатому в условиях небывалой дружбы всех народов, населяющих великую нашу родину — Советский Союз. Только советская власть дала мне эти чувства, полные творческих желаний, и я выражаю их как великую благодарность моей власти и моей Сталинской Конституции.

Заявление-жалоба Народному комиссару Внутренних дел Чувашской АССР

Народному комиссару
Внутренних дел Чувашской АССР
заключенного Алатырского ИТК
Чуваш. АССР,
Митта, Василий Егоровича,
происходящего из села Б.Арабузей
Тархановского р-на ЧАССР

заявление-жалоба.

Трагедийное положение — быть обвиненным и не знать, за что же, собственно, обвинили? Единственная мысль — скорее оправдаться, скорее получить свободу. Но в чем мне оправдываться, народный комиссар, какими доводами спасти себя, спасти честь моей семьи, — не знаю! И нет ничего удивительного в том, если эта жалоба к вам только SOS, а не обстоятельное опровержение того решения, которое состоялось обо мне без моего участия и содержание коего мне совершенно неизвестно.

Материалы обвинения, предъявленные мне, были настолько несостоятельны, что мы со следователем букваль-

но не находили о чем говорить. Видимо, поэтому я скоро был оставлен в покое и в течение почти целого года ни разу больше не вызывался.

Долго я надеялся на благополучный исход своего дела, долго утешал себя мыслью о скором освобождении, но, к сожалению, все пошло иначе, и я по чьей-то злой воле оказался в ИТК. Спрашивается, кого осудили? Кто судьи?

Мне говорят, и я тому верю, что решение тройки НКВД ЧАССР по моему делу вынесено еще при Розанове в декабре 1937 года (арестован я 18 декабря 1937 года). Но почему об этом решении объявили мне только 23-го июля 1938 года — мне не известно. В августе прошлого года я узнал об аресте Розанова. Это событие навело меня на мысль, что дело мое будет пересмотрено, и я буду на свободе. Помимо этого, меня не брали в этап, что еще больше поддерживало уверенность во мне на скорое освобождение. Я полагал, что новый нарком, разбирая дела старого, мог обнаружить мое дело и, видя всю несостоятельность предъявленных мне обвинений, решил повременить с исполнением существующего обо мне постановления, дабы предоставить возможность следствию еще раз поинтересоваться моим делом. Иначе я не мог думать, ибо знал и знаю, что малейший критический подход к этому пришибеевскому решению Розанова разрешил бы дело совершенно в противоположном духе. Но, к моему несчастью, мои предположения не оправдались, — 14 декабря 1938 года я неожиданно был вызван в этап и отправлен в колонию.

За что же я мог оказаться в таком положении? Постараемся судить об этом по тем вопросам, которые не совсем членораздельно были поставлены передо мной следователем.

Может быть, меня осудили за то, что я в 1926 году, будучи почти неграмотным во всех отношениях юнцом (мне было тогда 17 лет), написал и опубликовал в редактируемом Золотовым А. И. журнале «Сунтал» стихотворение «Сӗрӗмре» («В угаре»), которое не что иное, как продукт болезненного реагирования на вредные темы, поднятые в то время националистами в чувашской литературе? Это стихотворение не является каким-то литературным выражением националистической платформы в чувашской поэзии, как о нем, оказывается, толковал на следствии Кузнецов И. Д., оно, по существу своему, было своевременным и серьезным предупреждением о том, что нужно остерегать литературную молодежь от вражеских влияний

чувашского национализма. Поэт, ведя рассказ от первого лица, в этом стихотворении заявляет прямо:

«Апла мар, апла мар! Эп аташнă.
Çамрăк пуçăм тискер сĕрĕмре...
Ман пекех шутласассăн кашни —
Кам чечеклĕ çĕнĕ ĕмĕре?»

(Перевод: «Нет, не так, нет, не так! Это только бред.
Голова моя юная в угаре ужасном...
Если все так будут думать, как я,
Кто же тогда сделает цветущей новую жизнь?»)

О чем же пел поэт-недоросль в этом злополучном «Сĕрĕмре»? «Пел» он о том, что уходит славная Булгария с ее древними обычаями, что чувашская культура едва ли имеет будущность. Ясно, о Булгарии и перспективах развития национальной культуры чуваш у меня тогда не было никаких представлений, а «Сĕрĕмре» мое — только несознательное подражание тем, кто действительно серьезно распространял подобные мыслишки. Допустим, что в те годы (1926—1927) я не был свободен от вредоносных влияний чувашского национализма, но в то же время, справедливость требует сказать, — я отмахивался от национализма, давал ему отповедь, правда, не совсем достаточную, и призывал себя и других к новым темам — темам светлой советской действительности, — об этом свидетельствует приведенное здесь четверостишие, а также вся концовка «Сĕрĕмре». Иначе нельзя понимать это стихотворение.

Я никогда не был и не мог быть с националистами, даже делая ошибки, я всегда оставался самим собой — выходцем из деревенской бедноты, верным власти своей родной и ее идеям, никогда не испытывал душевного раздвоения, ибо я инстинктивно чувствовал направление творчества, которое могло быть только советским, только социалистическим. Ошибки мои могут быть объяснены только тем, что я не был вооружен тогда учением Ленина-Сталина. На «черновой» практической работе я действовал правильно, как комсомолец, как активный селькор областных газет — боролся с кулачеством, боролся с искривлениями советских законов на местах, организовал молодежь в комсомол, в различные секции и кружки, — одним словом, в этом отношении я был неплохим членом ВЛКСМ (в комсомоле я с 13 лет), а вот на «поэтическом фронте» я тогда подкачал — и национализм, и есенинщина побывали в моих стихах первого периода.

Как пристают подобного рода болезни вообще — понятно, но не надо забывать и то, что я был тогда довольно легкомыслен и молод, находился как раз в том возрасте, когда люди, не имеющие жизненного опыта и политической подготовки, легко поддаются вредным поветриям своего времени (иногда даже из глупых соображений — лишь бы поддержать моду и быть похожим на «знаменитых», — так было и со мной — когда ходила есенинская зараза и когда хулиганство являлось своеобразным культом для некоторой части литературной молодежи). Нет нужды скрывать, что время было тогда действительно такое, когда чувашские националисты, стоявшие у власти, безнаказанно проповедовали пресловутую «булгарскую теорию», а литературные черные вороны, вроде Воронского, до небес превозносили Есенина. Партия и ее истинные сыны помогли мне разобраться в этих вредных течениях, и мои ошибки далеко не пошли, они своевременно были устранены, как случайное явление, не имеющее ничего общего с моей природой, моим происхождением и характером моего воспитания.

Оглядываясь назад и разбирая свои ошибки в прошлом, я говорю: да, я ошибался, некоторые болезни нэпа сказались тогда на моих стихах, но в то же время я выработал в себе такой иммунитет против подобных болезней, который держится до сих пор и будет держаться, иначе говоря, вся эта зараза побывала в моем здоровом от природы организме только в профилактической дозе, как прививка от других заболеваний.

Неужели за эти ошибки мне могли дать 10 лет ИТЛ? Едва ли? Ибо угар «Сĕрĕмре» давным-давно рассеян, меня в последние 9—10 лет знали и знают как автора колхозных и комсомольских стихов и поэм, как автора неплохих политических стихотворений, посвященных большим вопросам нашей богатой, многогранной советской действительности. «Сĕрĕмре» давно забыто. О нем вспомнил только Кузнецов И. Д. (в 1937 году, т.е. через 10 лет!) и, желая отомстить мне за мои выступления против него, сделал недобросовестный перевод этого стихотворения и представил его НКВД. Под Кузнецовским «Сĕрĕмре» я, конечно, не подпишусь, отказываюсь от его «угарного» творчества: так же, как отказался от своего «Сĕрĕмре» еще в 1928 году.

Никак не думаю, что за «Сĕрĕмре» мне дали такое наказание. За что же тогда?

Может быть, за то, что я в 1935 году на конференции языковедов в Чебоксарах подверг критике слабую работу

языковедов и писателей по развитию чувашского языка и литературы (Кузнецов на следствии эту мою критику истолковал в извращенном виде). Я говорил тогда об отсутствии хорошо разработанной грамматики чувашского языка, что по вопросу перевода с русского на чувашский язык трудов классиков марксизма и классиков художественной литературы существует разнобой, и переводчики не могут найти общего языка, общих принципов и т. д. Я говорил, что есть примеры пренебрежительного, не большевистского отношения к развитию чувашского языка, что нужно побольше пользоваться этим языком, получше оттачивать его, придавать ему силу и гибкость, ибо время требует, чтобы язык в условиях социалистического строительства был самым сильным оружием за коммунизм, а сила и острота этого оружия находятся в тесной зависимости от того, насколько мы уважаем это оружие, насколько часто прибегаем к нему, насколько хорошо и умело им пользуемся. Справедливость требует сказать, что немногие наши языковеды и немногие наши политические работники республиканского масштаба в совершенстве владеют этим оружием. (В этом месте посыпались на меня всевозможные реплики — членораздельные и нечленораздельные — со стороны Кузнецова и его приспешников, сидящих в президиуме.) Чувашский язык должен быть, как и все другие языки Советского Союза, не только языком простых житейских общений, но и языком высококультурных советских книг, языком советской трибуны для чувашского народа. Я говорил, что у нас даже вывески на учреждениях не всегда пишутся на двух языках, как это требуется по существу по существующему на этот счет положению. На первый взгляд, как будто бы это пустячное дело, не стоило бы и говорить — ведь только вывески! Но по-настоящему это не так. Вывески — язык наших советских учреждений, они гостеприимно обращаются к любому советскому гражданину на его родном языке: добро пожаловать, двери для вас всегда открыты. Что значит такое обращение от имени высоких учреждений, размещенных в прекрасных новых дворцах столицы республики, для чувашина-колхозника, только лет двадцать тому назад не знавшего никакого доступа в подобные дворцы. Как не радоваться ему — советская власть говорит с ним на его родном языке. Вот что значит вывеска! — так я говорил на конференции языковедов. (Здесь я восстанавливаю свою речь с такой подробностью лишь потому, что она на конференции не была застенографирована. Куз-

нецов же воспользовался этим моментом и на следствии, оказывается, изложил эту мою речь в искаженном виде.) Язык — оружие классовой борьбы. Это оружие не может быть старым, не гибким, тупым, отсталым, оно, как современное оружие, должно отвечать всем требованиям нашей социалистической эпохи. Нигилистическое отношение к этому великому оружию не имеет ничего общего с политикой партии, наоборот, находится с ней в резком противоречии...

Только узколобый обыватель может подумать: раз человек говорит по таким вопросам, значит, он не свободен от националистических настроений. Обыватель ужасно боится этих вопросов и старается подальше стоять от них, а так как он очень близорук, то все ему в этих вопросах, к которым боится приблизиться, кажется подозрительным, опасным. В таких случаях он говорит — скользкий вопрос! «Скользкий» потому, что он, обыватель, или не знает, или же не разделяет великих положений Ленина-Сталина по этим вопросам. Однажды меня спросили: «Почему у вас фамилия Митта, а не Миттов или Митин?» Обывательщина! А задали мне этот вопрос в таком учреждении, где не может быть места обывателям и обывательщине. Разве в этом национализм?

В последние годы чувашский национализм на фронте литературы и языковедения имел совершенно определенные формы проявления. Люди, под предлогом того, что ничего не выйдет, отказывались работать, стали проповедывать бесперспективность языка и культуры у чуваш, затирали молодежь, бездельничали и в то же время прочно установили практику смычки и любезных взаимоотношений с врагами народа. Под этими людьми я имею в виду, прежде всего, бывших руководителей культурного фронта и Союза писателей Чувашии — Кузнецова И.Д., Чернова Е.С., Золотова А.И. и Данилова Д.Д. Только благодаря их попустительству (вернее — по их прямой поддержке), чувашские националисты и троцкисты творили свои гнусные дела на культурном фронте Чувашии, строили различные преграды и старались создавать деморализующие условия на пути строительства чувашской культуры, национальной по форме и социалистической по содержанию. Они «на деле» желали оправдать поганенькую «теорию бесперспективности» Эльменя.

Истинные коммунисты и комсомольцы культурного фронта Чувашии, зная о такой практике в деятельности чувашских буржуазных националистов, не могли молчать,

они в течение ряда лет выступали не только против Юмана, Петрова М.П. и Рзая В. и др., но без всякой опаски, хотя и рискуя многим, в конце концов взяли под сомнение деятельность и таких руководителей, как Кузнецов и Золотов, а впоследствии сумели разоблачить их, как приверженцев Эльменя, как покровителей чувашского национализма, ведущих политику развала на культурном фронте республики.

Что же, за участие в разоблачении таких людей, по-моему, не обвиняют.

Не зная, за что меня обвинили, я знаю одно: как создано и кем создано мое «дело».

В последние годы Кузнецов И. Д. и его ставленники в Союзе писателей Чувашии имели полное основание думать, что Митта — с его беспокойным характером — для них не совсем удобен. Несмотря на самое, казалось бы, безупречное отношение к нему со стороны руководителей Союза писателей, он, этот парень, и не думает быть вместе с ними в их грязных делах по защите отъявленных кулацких писателей (Рзая, Юмана и др.), он нисколько не разделяет их практику в вопросе воспитания молодых кадров, работа с которыми официально предоставлена Рзаю, неофициально — Юману. Отсутствие подхалимских черт, прямота и непримиримость в принципиальных вопросах, страсть к большевистской критике и самокритике и плюс — честная творческая работа, что характеризует в наше время любого порядочного советского писателя и гражданина, — все это не годилось для кузнецовского, золотовского руководства. К носителям этих качеств они относились со всей осторожностью и предупредительностью, действуя по принципу: где нужно — льсти, где нужно — устрашай, но слишком близко к себе не подпускай!

Действительно, такое своеобразное отношение я имел к себе в последние годы со стороны руководителей Союза писателей. Они, в том числе и Кузнецов, охотно хвалили мои произведения, отмечали особую остроту и содержательность моих выступлений на собраниях, но, в то же время, проявляли высшую нервозность в тех случаях, когда заденешь, бывало, их, как работников плохих и беспечных, не желающих по-большевистски работать и руководить...

До 1933 года я по-настоящему не знал этих людей (Кузнецова, Золотова), но, начиная с этого года, я имел достаточные основания подозревать их в пагубной для чувашской советской литературы деятельности. В упомянутом году

на одном из больших собраний писателей был поставлен вопрос о творчестве Рзая. Основной докладчик по этому вопросу (Ялавин С.В.) правильно охарактеризовал литературную деятельность антисоветскую, кулацкую. Я поддержал докладчика. Как же подошли к данному вопросу Кузнецов и Золотов? Они объявили Рзая «перестроившимся» писателем, чуть ли не классиком советской литературы и требовали, чтобы отношения к Рзаю со стороны других литераторов были «пересмотрены и изменены» — в соответствии с тем, что, дескать, ко всеобщему удовольствию, наконец-то изменилось творческое направление и методы творчества такого даровитого, как Рзай, писателя, о чем свидетельствует его последний рассказ «Кӳршӗсем» («Соседи»). В ответ на это я говорил, что в таком высокопарном стиле беспечных слепцов, не видящих, что впереди, мы не можем судить о творчестве писателя, который еще недавно создавал произведения кулацкого толка. Выходец из кулацкой семьи, в течение многих лет упорно служивший интересам своего класса, в годы развертывания социалистических побед в нашей стране истерично кричавший и угрожающе рычавший: «Кистенӗм çук! Кистенӗм çук!» (Нет кистеня! Нет кистеня! — по общему смыслу стихотворения, — а то бы я расправился с вами!), — такой человек пока не дает повода говорить о себе, как о перестроившемся писателе. Кузнецов и Золотов, видя, что я публично не разделяю их «высокого» мнения, сначала убеждали меня («Твое раннее творчество, Митта, тоже не без изъянов, но ты легко отделался от них; почему же тогда не хочешь допустить мысли, что Рзай тоже, как и ты, освободился от своих ошибок»), а потом стали ругать и оскорблять («Ты — бывший хулиган, не забывай, что ты обязан своим исправлением нам» и т. д.). Докладчик, упорно стоявший на своем, был назван шельмецом, не заслуживающим никакого доверия человеком. Под конец была принята обширная резолюция, объявляющая Рзая советским писателем, а докладчика — прохвостом.

Вскоре после того появился очередной сборник рассказов Рзая, которым признательный писатель отблагодарил своих друзей и покровителей по-цезарски, — сборник оказался чисто кулацким, по настоянию общественности бюро обкома ВКП(б) вынесло о нем и об авторе его специальное решение.

Таких столкновений у меня с Кузнецовым и Золотовым в последние годы было немало. Мне, работнику деревни, немало проработавшему в годы коллективизации

по ликвидации кулачества на селе, здесь, в городе, как-то страшно было видеть защиту кулацких идеологов и кулацких подпевал со стороны высокопоставленных людей. В первое время я просто недоумевал, а впоследствии, видя, что Союз писателей Чувашии, в лице их руководителей, делает определенную ставку на таких людей, — заговорил... (Довольно подробные описания моих взаимоотношений с Кузнецовым и Золотовым вы найдете, народный комиссар, в моей речи на собрании писателей от 10-го апреля 1937 года и отчасти в моих письменных показаниях следствию. Убедительно прошу вас познакомиться с этими документами, которые выяснят вам, на какой почве возникли и обострялись из года в год эти взаимоотношения. Здесь же скажу только одно: будь я в то время равнодушен, как некоторые наши писатели, к вредительской деятельности руководителей Союза писателей и не делай последнего выступления 10-го апреля 1937 года против Кузнецова, Золотова, Данилова Дм. с выражением политического недоверия к ним, я никогда не оказался бы в тюрьме. Также могу сказать — подойди Чемоданов, следователь НКВД ЧАССР, к разбору моего дела со всей серьезностью, я никогда не оказался бы в колонии — с позорным клеймом политически неблагонадежного человека.)

Как же меня посадили в тюрьму?

Мое выступление от 10-го апреля 1937 года, о котором я уже упомянул, явилось основным толчком для развертывания той бессовестной травли, которая была предпринята Кузнецовым против меня и которая продолжалась в течение всего лета 1937 года, пока не был арестован основной вдохновитель этой травли — сам Кузнецов.

Несмотря на то, что это мое выступление получило одобрение большинства и прекрасный отзыв со стороны представителя Москвы (коммуниста Аршаруни), Кузнецов поспешил объявить его (это выступление) националистическим.

Иначе, пожалуй, он и не мог поступать, ибо в нем действовало не столько оскорбленное самолюбие не привыкшего к критике человека, — сколько страх за себя — он прекрасно знал, что эта критика для него даром не пройдет.

Что же, собственно, оставалось делать Кузнецову в ответ на мое выступление? Признаться в том, что я его обвиняю — значит, объявить о своем политическом банкротстве, — на это, конечно, он не мог идти. Оставалось одно — мобилизовать всю силу и тяжесть своего положе-

ния и обрушиться на смельчака, который дерзнул выступить против любимцев секретаря обкома С.П. Петрова. Кузнецов потребовал, чтобы собрание обсудило мое выступление. Осуждающих оказалось немного (Золотов, Захаров Е.З., Данилов Д.Д.). Тогда он «авторитетно» заявил, что Митта, видите ли, критикует не Кузнецова, а руководство обкома, не Золотова и Данилова, а партийное руководство Союза писателей. Потом он придрался к одному месту моей речи, где говорилось о недостаточной разрешенности вопросов, связанных со строительством языковой культуры у чуваш, и заявил: Митта отрицает факт разрешенности национального вопроса народа. (В связи с этим иезуитским выпадом Кузнецова я сделал необходимое заявление собранию. Это заявление у вас должно быть, также имеется у вас мое обстоятельное объяснение, данное по этому вопросу.) Таким ловким способом Кузнецов хотел добиться решения собрания, в котором осудил бы меня, как ярого буржуазного националиста. Несмотря на все старания Кузнецова, собрание на это не пошло, но все же после долгих споров (ведь Кузнецов был тогда членом бюро обкома!), отметило некоторые неточности в моих формулировках, которыми могут воспользоваться националисты (текст того решения собрания писателей в точности не помню, в случае необходимости — в Союзе писателей). Все это не удовлетворяло Кузнецова. Он поставил для себя задачей — во что бы то ни стало доконать Митта. И вот он дает задание своим приспешникам выступать обо мне, как о националисте, переводит мое стихотворение «Сĕрĕмре» и выдает его, как произведение последних лет. Потом откуда-то ловит слух (может быть, просто-напросто, сам выдумал) о том, что Митта, оказывается, в 1927 году имел какие-то отношения к троцкистской организации в Ульяновском Чувашпедтехникуме. Ретивые «кузнецовцы», пользуясь этой выдумкой своего «удамана», начинают кричать обо мне на всех перекрестках, травить на собраниях, пока не выяснилось действительное положение вещей. Тщательным расследованием, предпринятым комиссией партийного контроля и горкома комсомола, устанавливается, что обвинения меня в троцкизме не имеют никаких оснований. Кроме этого, в комиссии партийного контроля (М.М. Сахьянова и З.А. Андреева) к моему выступлению на собрании писателей отнеслись не как Кузнецов, совсем иначе, — в моей речи ничего вредного или ошибочного не нашли, о чем сделали соответствующее заявление).

После этого можно было бы ожидать, что Кузнецов угомонится. Но он был не из таких, чтобы оставить дело без завершения. Путем всяких шарлатанских фокусов и комбинаций, пользуясь методом запугиваний и шантажа, Кузнецов и его приспешники добиваются исключения меня из Союза писателей — сроком на один год, потом исключают из комсомола — якобы за неразоблачение Степанова Н.А., которого я таковым никогда не знал и не имел с ним в последние 10 лет никаких близких связей (обо всем этом — подробно описано в моем письме к М.М. Сахьяновой, копия которого у вас имеется). В общем, вокруг меня создали такую атмосферу, что даже близкие товарищи отшатнулись от меня, как от прокаженного (шутка ли, сам секретарь обкома Петров С.П. назвал Митта националистом!), прекрасно зная, что я, их товарищ, ни в чем не виноват, перед лицом всесильного Кузнецова не все из них находили мужество вступаться за меня.

После падения Кузнецова начатую им травлю против меня повели дальше Иванов П.И. (бывший редактор газ. «Канаш») и Сымокин А.С. (бывший секретарь ОК ВЛКСМ), тем самым продолжая «лучшие» традиции своего безвременно ушедшего «блаженной памяти друга». Вполне понятно, эти люди дозарезу нуждались в самостраховке, им обязательно нужно разоблачить кого-нибудь. Прекрасно зная, что я и не националист, и не троцкист, они без всяких фактов обвинили меня в смертных грехах. Кузнецовский «козел отпущения» им был выгоден, ибо, терзая его, они обеспечивали себе возможность не беспокоить других, кои, как впоследствии выяснилось, действительно являлись националистами и троцкистами.

Следует особо отметить выступление Иванова П.И. на областной партконференции 1937 года, где он, говоря обо мне, как о националисте, нагло обвинял меня в том, что я как будто бы являюсь противником преподавания русского языка в школах Чувашии. При этом он делал вид, что ссылается на мое выступление от 10-го апреля. Имей Иванов поменьше наглости и нахальства, конечно, он никогда не пошел бы на этот поступок. Против русского языка я, конечно, никогда не выступал и в моей речи, на которую так часто ссылался Иванов, нет и не могло быть подобных мыслей. Русский и чувашский языки — это мои родные языки. Я всегда доказывал, что чувашский язык может получить свое полное развитие только благодаря великому русскому языку. Благотворное влияние русского языка на развитие чувашского языка и культуры — уже на

виду. Произведения классиков марксизма и классиков русской литературы прекрасно передаются на чувашском языке. (Я сам, к слову говоря, являюсь одним из переводчиков Пушкина. «Борис Годунов» в чувашском переводе — моя работа.) В обиход чувашской речи в последние десятилетия вошло очень много русских слов и выражений — это тот вклад и та животворящая сила, благодаря чему чувашский язык, как и языки многих национальностей СССР, стал языком современным, революционным, языком советской мысли и советских дел. Враги народа, устроившиеся в некоторых школах нашей республики, по указанию Чернова Е.С. (Наркомпрос Чувашской АССР) и Кузнецова (Культпроп обкома), в каких-то целях хотели изгнать этот язык из чувашских школ, вульгарно мотивируя тем, что родной язык учащихся мешает им в усвоении русского языка. Вот об этом-то я говорил в своем выступлении на собрании писателей. Я имел конкретные данные об извращениях национальной политики партии в школьном вопросе и об этом не мог не говорить. Иванов, говоря обо мне, как о противнике русского языка, наверное, имел в виду этот момент в моем выступлении. Вместо того, чтобы добросовестно проверить все же вопиющие безобразия, о которых я говорил, и принять соответствующие меры к их устранению, он, этот дурак, за несколько лет своей редакционной работы не написавший ни одной более или менее грамотной статьи, обрушился на меня, как на врага, а истинных врагов взял под защиту. (В скобках могу сказать: кто сомневается во мне по данному вопросу, тех я с удовольствием отсылаю к моим многочисленным письмам, написанным к братьям. Почти в каждом из этих писем я говорю о необходимости усиленных занятий над овладением русским языком и русской культурой.)

Итак, я оказался жертвой бессовестной травли, организованной Кузнецовым и его ныне разоблаченными друзьями. Избрав меня объектом гнусных нападений, они бездарно разыгрывали «борьбу с национализмом», с расчетом — освободить себя и своих близких друзей, виновных в националистической деятельности, от подозрений, от могущих быть разоблачений. Но их расчет не удался. Их разоблачили, и они сами досрочно разоблачили себя и друг друга. Теперь известно, что все те болезни, которые бытовали в Союзе писателей Чувашии, и гнусные извращения политики партии на фронте культурного строительства — были результатом деятельности вражеского руководства республики, к которому принадлежал и Кузнецов, и Золотов А.И.

Кузнецов не бросил клеветать на меня и после своего ареста. Несмотря на то, что я пункт за пунктом опровергал все его вражеские версии обо мне, он все же нашел возможность затащить меня за собой в тюрьму (я арестован на один месяц позже Кузнецова).

Писатели Чувашии прекрасно знают историю моей трагедии. Они знают меня как честного советского писателя и гражданина. Ну, как же они могли относиться ко мне, когда выступали против меня такие люди, как Петров С.П., Кузнецов, Иванов П.И. и др.? Они пожимали плечами и недоуменно молчали, а некоторые, правда, таких было очень мало, пробовали и подпевать Кузнецовым (поскольку от них требовали этого в категорической форме). Только после того, как выяснилось истинное лицо руководителей культурного фронта Чувашии, мне стали заявлять, что я мало в чем повинен и, безусловно, буду возвращен в ряды писателей. Так говорил Эльгер С.В., Уйăп Мишши (Шумилов М.Д.), так говорили и думали многие другие. Как они думают сейчас — не знаю, но все же полагаю, что все честные люди, хорошо знавшие меня, должны принять это как недоразумение, которое рано или поздно будет устранено.

Как трудно быть жертвой злой клеветы, но еще труднее сознавать, что ты был избран в качестве незначительной жертвы подлецами, к которым я был очень кстати подброшен Кузнецовым, когда они резко нуждались «в разоблачении кого бы то ни было», но только не себя и не своих близких друзей по совместной вражеской деятельности в комсомоле и партийной организации.

Я — сын трудового народа. Единственная цель в моей жизни — как можно больше пользы принести своему народу и родине. Я горжусь, что мои лучшие стихи переложены в народе на песни и как народное творчество бытуют в наших счастливых колхозах (песня «Заря», записанная в Чувашии и помещенная в прекрасной книге «Творчество народов СССР», — это мои стихи). Я горжусь, что десятки тысяч учащихся в Чувашии знают мои стихи наизусть. Я горжусь, что на республиканской олимпиаде в 1934 году колхозники выступали с моими произведениями. В народе знают меня не как буржуазного националиста, а как советского певца. В первые годы коллективизации, когда я работал в деревне, где только не приходилось мне бывать, колхозники и колхозная молодежь знали меня как инициативного, энергичного комсомольца, как своего советского, колхозного человека.

Это не бахвальство! Я был скромнее скромных. Но теперь, когда против меня выдвинуты такие адские обвинения, я вынужден заявлять вопреки, может быть, правилам нашей этики — о своих достоинствах, которые не могут быть попраны, ибо они принадлежат советскому человеку, как результат его воспитания идеями Ленина—Сталина.

Родители мои — неграмотные чуваши, ни слова по-русски не знающие.

Кто мои братья и сестры в настоящее время?

Старший — Илья — участник гражданской войны, коммунист с 1920 года, низовой партийный и советский работник (несколько лет — секретарь партийных ячеек в разных селениях, председатель колхоза, ныне райфинработник).

Петр — член ВЛКСМ с 1925 года, рабочий лесозавода, первый председатель колхоза в своем селе, строитель крахмального завода при колхозе, потом в армии, в частях ОГПУ, после — Комвуз им. Свердлова в Москве, ныне — работник республиканской прессы.

Иван — комсомолец, работник районной газеты.

Коля — комсомолец, учится в средней школе.

Сестры — колхозницы-ударницы. Жена моя — учительница и работница печати. Сейчас она, несмотря на то, что имеет трех маленьких, учится в пединституте.

Сам я — по профессии учитель, учился в Ульяновском Чувашпедтехникуме, который окончил в 1928 году. С 1928 года по 1932 год постоянно находился в деревне — два года учительствовал, два года работал зам. редактора Б. Батыревской райгазеты. С 1932 года — пять лет в Чувашрадиокомитете (ред. литвещания), несколько месяцев в Чувашгизе.

В этой большой и шумной семье я был любимцем. И спрашивается, мог ли я действовать заодно с теми, кто хотел вернуть нашим старым родителям, их детям и внукам старую жизнь — жизнь беспросветную, голодную, холодную, ту жизнь и те порядки, которые вели чувашский народ по пути вымирания? Я таким подлецом не мог быть. Будь я виновен в антигосударственных делах, я бы просил для себя самой суровой кары, я бы просил уничтожить меня, как самую гадкую тварь, которая изменила всему святому — родине, государству, народу, вождям, товарищам, семье и самому себе. Но поскольку я никогда не был тем, кем меня признали по головотяпскому решению Розанова, прошу, народный комиссар, пересмотреть это ничем не обоснованное решение и вернуть меня к свободной

творческой жизни, которая так быстро расцветает в нашей стране под лучами сталинской конституции.

Несмотря на всякие испытания и тяжести, перенесенные мною в связи с моим несчастьем, я остался самим собой — верным сыном нашей великой родины. Я пробуюсь сейчас огнем: если я липа — сгорю, превращусь в пепел, если я железо — буду сталью. Результат испытания, кажется, в пользу последнего. А посему, народный комиссар, вы поставите крест на решение Розанова, которое является не только необоснованным, но и чем-то другим.

Бывшие люди, с которыми я имею несчастье быть вместе вот уже второй год, склонны рассматривать свое теперешнее положение в связи с обстановкой на Западе и на Востоке. Как же я должен рассматривать мое положение? Я говорю: при всякой погоде, при всех ситуациях внешних и внутренних, я должен быть там, где ведется борьба за освобождение всего человечества, за коммунизм, за великие идеи Маркса—Энгельса—Ленина—Сталина.

Остаюсь в полной надежде на скорое освобождение.

Вас. Митта.

1-го февраля 1939 года.

В Народный суд
Большемуртинского района
бывш[его] счетовода Таловской МТС
Митты Василия Егоровича

заявление.

Согласно приказу дирекции Таловской МТС от 2/II 1954 года за № 18, я уволен с работы в бухгалтерии МТС по причине *отсутствия свободной должности счетовода.*

О том, что этот приказ является необоснованным, свидетельствуют следующие факты:

а) только за 4 месяца до упомянутого приказа я, проработав в бухгалтерии Таловской МТС более 3-х месяцев в качестве внештатного работника, с открытием новых штатных единиц был назначен на свободную должность счетовода (см. приказ по Таловской МТС от 4/X 1953 года за № 283);

б) даже после увольнения меня с работы в штате бухгалтерии МТС *оставались свободными еще 3 должности*: счетовод МТМ, счетовод-кассир и счетовод по капитальному

строительству, которые укомплектованы в настоящее время новыми работниками.

Следовательно, причина, указанная в приказе дирекции Таловской МТС в связи с увольнением меня с работы, является надуманной.

Считая мое увольнение незаконным, я, как член профессионального союза, обратился в РКК с просьбой восстановить меня на прежней должности. К сожалению, РКК согласилась с приказом и, вдобавок, вопреки фактам к здравому смыслу, постаралась задним числом обосновать приказ директора о моем увольнении, утверждая, что *я не имею специальности бухгалтера и на должность счетовода был принят временно.*

Несостоятельность этих запоздалых доводов очевидна:

а) принятые после меня работники, все трое, не имеют ни общего, ни специального образования;

б) согласно приказу по МТС от 4/X 1953 года за № 283, я принят счетоводом *на постоянную работу*;

в) будучи педагогом по образованию, я, на основе достаточного опыта, работал в хозяйственных и др[угих] организациях, знаю и счетное дело, свидетелем чего — моя работа в бухгалтерии Таловской МТС в течение 7,5 месяцев без единого замечания. (В случае надобности, старшие бухгалтеры Таловской МТС Быков Мирон Павлович и Беккер Александр Филиппович могут охарактеризовать мою работу в Таловской МТС — насколько я справлялся со своими обязанностями.)

29 апреля 1954 года Президиум Красноярского краевого комитета профсоюза с[ельского] хозяйства и заготовок отменил решение РКК по моему вопросу и предоставил мне право обратиться в Народный суд на предмет восстановления на прежней работе.

Прошу Народный суд отменить приказ директора Таловской МТС от 2/II 1954 года за №18 и восстановить меня на работе в прежней должности с оплатой за вынужденный прогул в течение 2-х месяцев.

Митта.

1/VI 1954 г.

Приложения:

1) Выписка из протокола №4 заседания Президиума Краевого комитета профсоюза с[ельского] х[озяйства] и заг[отовок];

2) Справка с последнего места работы.

Примечание: В выписках приказов о моем назначении на работу (4/X 1953 г. за №283) и об увольнении меня с работы (2/II 1954 г. за №18) мне дирекцией отказано, каковые прошу Народный суд затребовать к моему заявлению.

Митта.

Жалоба Верховному Прокурору Союза ССР

В конце 1937 года я, в то время еще молодой человек, член ВЛКСМ, учитель по образованию, кандидат в члены Союза советских писателей, был арестован и обвинен — без суда и следствия — в местном национализме.

В 1947 году, освободившись из лагеря, я вернулся на родину, в Первомайский район Чувашской АССР, и через год с небольшим снова был арестован, а впоследствии — выслан в Красноярский край.

К сожалению, качество следственной процедуры и в этот раз оказалось не на высоте: та же, как и в 1937 году, поспешность и полное пренебрежение к элементарным требованиям судопроизводства, та же, вопреки здравому смыслу и фактам, беспардонная предубежденность в виновности подследственного.

Несмотря на мои требования и протесты,

1) мне не было предъявлено обвинение, что явилось бы поводом к повторному аресту и содержанию меня в тюрьме;

2) полное скрытие от меня материалов следствия 1937 года, с которыми я должен был ознакомиться хотя бы в 1949 году;

3) отказ в вызове свидетелей, выставленных мною, из чувашских писателей, товарищей по работе, и людей, знавших меня с раннего возраста;

4) отказ в предоставлении мне очной ставки со свидетелями обвинения.

Все эти моменты, являющиеся поводом к данной жалобе, в той или иной форме отражены в моем деле, рассмотренном Особым совещанием, т. к. я при своей последней подписи (кстати сказать, добытой следствием при помощи, во-первых, трехкратного посещения помощника прокурора Ч[увашской] Республики, который вместо того, чтобы сообщить делу правильное направление, уговаривал меня ехать в ссылку и, во-вторых, установления непосильного для моего здоровья подвального режима).

Обращаясь к Вам с настоящей жалобой, прошу Вашего

указания соответствующим органам о повторном рассмотрении моего дела со стадии предварительного следствия или же, что было бы весьма справедливо, отменить решение Особого совещания как необоснованное, т. к. даже при формальном подходе к делу в данном случае оно не подлежало суду Особого совещания за недостаточностью, не говоря уже о достоверности элементов обвинения...

Так жить, как я сейчас живу, бессмысленно.

Митта.

26 февраля 1954 года.

Заявление в Комитет государственной безопасности при Совете Министров Чувашской АССР от 20 марта 1956 г.

В Комитет государственной безопасности при Совете Министров Чувашской АССР тов. Шатрову
писателя Митта Василия Егоровича

заявление.

Прошу Вашего распоряжения о возвращении мне моих и моего брата Митта Петра Егоровича рукописей, документов и книг, изъятых у меня — в декабре 1937 года и в апреле 1949 года, у брата — в июне 1941 года.

Особый интерес представляют рукописи — все без исключения, а также некоторые книги и документы. Из книг: 1) Сигнальный экземпляр Евангелия на чувашском языке с собственноручной визой И.Я. Яковлева на титульном листе; 2) «Калевала» — в издании «Академия» (Изъяты в 1937 году). Из документов: Свидетельство об окончании мною Ульяновского чувашского педагогического техникума (изъят в 1949 году).

Кроме этого, меня интересует еще один документ — стенограмма моего выступления на собрании чувашских писателей 10 апреля 1937 года, которая должна находиться в моем следственном деле от 1937 года. По возможности — прошу копию с этой стенограммы.

Митта.

20 марта 1956 г.
Адрес: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 28, кв. 16.

АСĂРХАТТАРУСЕМ

ĂНЛАНТАРУСЕМ

Митта Ваçлейĕн икĕ томлă «Çырнисен пуххине» ăста çыравçăн пултарулăх еткерĕ пĕтĕмпех кĕреймерĕ. Вырăсларан куçарнă хайлавсемех тепĕр виçĕ томлăх пухăнма тивĕçлĕ. Ку шута М. Горькин «Фома Гордеев», Л. Кассилĕн «Аслă хирĕçтăру» романĕсем, Н. Островскин «Тăвăлпа çуралнисен» хăш-пĕр сыпăкĕсем, Ф. Гладковăн «Пуç-ураллă этем» калавĕ, тĕрлĕрен статьясем кĕреççĕ. Акă Митта Ваçлейĕ И. Трофимовăн Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çинчен, Г. Титовăн Çеçпĕл Мишши çинчен çырнă асаилĕвĕсене чăвашла куçарса панă. Ун пек тĕслĕхсем татах та пулма кирлĕ. Хăй çырнисенчен ку икĕ томлăха вак-тĕвек хыпарсем, çырусем, куç тĕлне пулман хайлавсем кĕмесĕр юлчĕç.

Хальлĕхе поэт пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă документсене питĕ сахал пухса пама тӳрĕ килчĕ. Хаçат-журналта çыравçăн тĕрлĕ псевдонимпа е ятсăр çапăнкаланă материалĕсем те сахалах мар-тăр. Тĕрлĕрен картотекăпа библиографие кĕмен, асăрхамасăр е юри сиктерсе хăварнă текстсем те тупăнма кирлĕ. Хăш-пĕр çынсен архивĕсенче те халиччен çапăнман алçырусем упранма пултараççĕ.

Митта Ваçлейĕн 1956—1957 çулсенчи «Кун кĕнеки» поэтăн çывăх тăванĕсем ыйтнипе тата ытти тĕрлĕ сăлтава пула ку кĕнекере кĕскен пичетленет. 1938 çулчченхи кун йышши алçырусем хальлĕхе тупăнмарĕç. Çыравçă кĕске кĕнекесемпе уйрăм хутсем çине çырса пынă афоризмла шухăшсемпе сăнавсем чылаях пухăнаççĕ. Вĕсене те ку томра кăларма май килмерĕ.

Н. Добролюбов, Г. Лонгфелло, Я. Дрда хайлавĕсене чăвашла куçарса пичетленĕ май Митта Ваçлейĕ асăннă çынсен биографийĕсене çырса пани сисĕнет. Ун пек тĕслĕхсем татах та пулма тивĕçлĕ. Чăваш халăх поэчĕ Г.А. Ефимов

каланӑ тӑрӑх, 1955 çул тĕлĕнче «Ялав» журналта Чĕлĕм Кавĕрли ячĕпе кулӑшла калавсем çырса пичетлеме Митта Ваçлейĕ те хутшӑннӑ. Вӑл 1—2 калав çырса панӑ имĕш. Вĕçен ячĕçене хальлĕхе тупса палӑртма май килмерĕ. Митта Ваçлейĕ Мефодий Романов (Аркай) патне янӑ çырура Чĕлĕм Кавĕрлине «пирĕн ушкӑн авторĕ» тесе асӑнать, адресата пĕр-пĕр калав ярса пама сĕнет.

Кĕнекене кĕртнĕ текстсен алçырӑвĕçем, çав шутра поэт тĕрлĕ вӑхӑтра çырнӑ çырӑвĕçем те, халĕ Чӑваш патшӑлӑх гуманитари институчĕн ӑслӑлӑх архивĕнче упранаççĕ.

Автобиографи

Малтанхи хут 1958 ç. «Чӑваш календарĕнче» тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Очерксемпе калавсем

Пионер ялĕ. Малтанхи хут 1926 çулхи кӑрлачӑн 31-мĕшĕнче «Çамрӑк хресчен» хаçатра тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Çичĕ çул тултарчĕ. Малтанхи хут 1926 çулхи акан 18-мĕшĕнче «Çамрӑк хресчен» хаçатра тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Илемлĕ юрӑсем сарӑлаççĕ. Малтанхи хут 1928 çулхи утӑ уйӑхĕн 18-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Хисеплĕ вилĕм. Малтанхи хут 1926 çулхи çурла уйӑхĕн 12—14-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Аса илнисенчен. Малтанхи хут 1927 çулхи пуш уйӑхĕн 11-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

«Атӑл пӑлхавçисем» Ульяновскра. Малтанхи хут 1927 çулхи пуш уйӑхĕн 12-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Чĕлĕм Мĕкĕти. Малтанхи хут 1927 çулхи çĕртме уйӑхĕн 6 тата 12-мĕшĕсенче «Çамрӑк хресчен» хаçатра тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Лав хыççӑн лав. Малтанхи хут 1929 çулта «Сунтал» журналӑн 10—11-мĕш пĕрлештернĕ номерĕнче тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Кӑçалхи ака — ӑнӑçлӑ ака. Малтанхи хут 1933 çулхи пуш уйӑхĕн 4-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнӑ. Çавӑнти текст тӑрӑх пичетленет.

Кадкин ятлӑ пĕр çыннă̆н чараксă̆р ĕçĕсем. Малтанхи хут

1932 çулхи авăн уйăхĕн 18-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Çĕршыв юрлать. (Экспедицире курса илтнисем.) Малтанхи хут 1933 çулта «Сунтал» журналта тухнă (9—10 №). Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Кăçалхи калăм. Малтанхи хут 1933 çулхи ака уйăхĕнче «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Радио-хаçат Йĕпреçре. Малтанхи хут 1933 çулхи авăн уйăхĕн 18-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Мур. Малтанхи хут 1933 çулхи авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Пиртен пĕри. Малтанхи хут 1933 çулта «Çамрăк хресчен» хаçатра тухнă (43, 45 №). Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Туркмен кавирĕсем. Малтанхи хут 1935 çулта «Сунтал» журналта тухнă (12 №). Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Мамăк утравĕ. Малтанхи хут 1935 çулта «Сунтал» журналта тухнă (1 №). Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Йĕпреç çулĕсем. Малтанхи хут 1935 çулхи утă уйăхĕн 5-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Ватти. Малтанхи хут 1934 çулхи юпа уйăхĕн 10—11-мĕшĕсенче «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Çамрăкки. Малтанхи хут 1935 çулхи кăрлачăн 4—5-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Шуйттан Левентей. Малтанхи хут 1934 çулта «Хаваслăн ĕçлетпĕр» сборникра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Эпĕ Ленина курни (Е.Я.Орлова каласа панă тăрăх). Малтанхи хут 1956 çулта «Тăван Атăл» журналта (1 №) тухнă. «Ялав» библиотекин 1956 çулхи 1-мĕш номерĕнче тухнă текст тăрăх икĕ сыпăкĕ пичетленет.

Куçарусем

Н. Добролюбов. **«Тĕттĕм патшалăх»** (статья сыпăкĕ). Малтанхи хут 1936 ç. «Сунтал» журналăн 9-мĕш номерĕнче тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Н. Чернышевский. **«Мĕн тумалла?»** (роман сыпăкĕсем). Алçыру тăрăх пичетленет. — ЧПГĂИ ĂА. V уйр. 1396 т.

Л.Н. Толстой. **«Вăрçăпа мир»** (роман сыпăкĕсем). Алçыру тăрăх пичетленет. — ЧПГĂИ ĂА. V уйр. 1396 т.

В. Овечкин. **Район ĕçĕ-хĕлĕ.** Малтанхи хут В. Овечкинăн

1956 ç. чăвашла тухнă «Район ĕçĕ-хĕлĕ» кĕнекинче пичетленнĕ. Çавăнти текст тăрăх çапăнать.

Ян Дрда. **Пан Громек патне аннă ангелсем.** (Калав.) Малтанхи хут 1955 ç. «Ялав» журналăн 3-мĕш номерĕнче тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

И.Т. Трофимов. **К.В. Ивановпа пĕрле ĕçлени.** Алçыру тăрăх пичетленет. — ЧПГАИ АА. V уйр. 1396 т.

Статьясемпе рецензисем

Шиллер чăваш театрĕнче. Малтанхи хут 1932 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

«Такмаксем» кĕнеке ум сăмахĕ. Малтанхи хут 1934 çулта «Такмаксем» кĕнекере ум сăмах вырăнне тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Поэт тата халăх пултарулăхĕ. Малтанхи хут 1936 çулхи раштавăн 31-мĕшĕнче Чăваш АССРĕн Турхан районĕнчи «Коммунар» хаçатра тухнă. Унăн хушма ятне çапла каланă: «Митта Ваçлейĕ Турхан районĕнчи «Коммунар» хаçат çумĕнчи литкружок пухăвĕнче тухса калаçнинчен», — тенĕ. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Н.А. Добролюбов. Малтанхи хут 1936 ç. «Сунтал» журналăн 9-мĕш номерĕнче тухнă. Çав текст тăрăх пичетленет.

Чăваш халăх илемлĕ сăмахлăхĕн пулас антологийĕ. Малтанхи хут 1937 çулта «Канаш» хаçатра тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Юратса çырнă кĕнеке. Малтанхи хут 1955 çулта «Ялав» журналăн 4-мĕш номерĕнче тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Летчиксем. Малтанхи хут 1956 çулта «Ялав» журналăн 2-мĕш номерĕнче тухнă. Çавăнти текст тăрăх пичетленет.

Сахалинти çуркунне. Малтанхи хут 1956 çулта «Ялав» журналта тухнă (2№). Çав текст тăрăх пичетленет.

Альберт Канаш. Малтанхи хут 1955 çулта «Ялав» журналта тухнă (7№). Çав текст тăрăх пичетленет.

Якур Афанасьев çырнă «Тантăшсем» ятлă поэма çинчен. Малтанхи хут 1959 çулта «Шухăшăмпа кăмăлăм» кĕнекере тухнă (354—357 с.). Алçыру тăрăх пичетленет. Унта ăна 1955 çулхи çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче çырса пĕтернĕ тесе кăтартнă. — ЧПГАИ АА. V уйр. 1392 т. 7810 инв. №.

Кăсăя Ваçлейĕн сăввисем пирки. Малтанхи хут 1959 çулта «Шухăшăмпа кăмăлăм» кĕнекере тухнă (359—361 с.). Çав текст тăрăх пичетленет.

«Коммунизм ялавĕнчи» рецензисем. Малтанхи хут 1959

çулта «Шухăшăмпа кăмăлăм» кĕнекере тухнă (352—353 с.). Çав текст тăрăх пичетленет.

Кĕркури Красновăн «Асаматне» вуланă май килнĕ шухăшсем. Малтанхи хут 1959 çулта «Шухăшăмпа кăмăлăм» кĕнекере тухнă (321—330 с.). Çав текст тăрăх пичетленет.

«Ялав» журналăн страницисем тăрăх. Малтанхи хут 1958 çулта «Тăван Атăлта» тухнă. Çав текст тăрăх пичетленет.

Митта Петĕрĕ. «Пăла тăрăхĕнче». Малтанхи хут 1955 çулта «Тăван Атăлта» тухнă. Çав текст тăрăх пичетленет.

Халăх хавалĕ. Малтанхи хут 1956 çулта «Тăван Атăлăн» 1-мĕш номерĕнче тухнă. Çав текст тăрăх пичетленет.

Юрий Скворцовăн сăввисемпе поэмисем. Малтанхи хут 1992 çулта Чăваш ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ кăларнă «Юрий Скворцов» кĕнекере (Г. Юмарт статйинче) тухнă (58 с.). Çав текст тăрăх пичетленет.

Асран кайми кунсем. Малтанхи хут 1956 çулта «Коммунизм ялавĕ» хаçатра чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнче тухнă. Çав текст тăрăх пичетленет.

Пурнăç чăнлăхĕ. Малтанхи хут 1957 çулхи «Ялав» журналта тухнă (3№). Çав текст тăрăх пичетленет.

Петĕр Хусанкай. Малтанхи хут 1958 çулта «Чăваш календарĕнче» тухнă (20—21 с.). Çав текст тăрăх пичетленет.

Алексей Талвир. Малтанхи хут 1958 çулта «Чăваш календарĕнче» тухнă. Çав текст тăрăх пичетленет.

Ĕçхĕл юлташа панă хурав. Малтанхи хут 1959 çулта «Шухăшăмпа кăмăлăм» кĕнекере тухнă (378—380 с.). Çав текст тăрăх пичетленет.

Наум Любимов çырнă «Аслă улшăну» роман çинчен. 1974 çулта «Митта Ваçлейĕ. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ» кĕнекере тухнă. Çав текст тăрăх пичетленет.

Çапа пĕлмен пушă. Алçыру тăрăх пичетленет. — ЧПГĂИ ĂА. V уйр. 1391 т. 7806 инв. №.

Çырусем

1. П. Хусанкай патне янă çырусенчен чылайăшĕ 1988 çулта «Тăван Атăл» журналта пичетленнĕ (3 —4№), вĕсем кунта та çав журналти текст тăрăх пичетленеççĕ. (Çырусен оригиналĕсем А.П.Хусанкайăн килти архивĕнче упранаççĕ.)

Кангин — поэтăн пĕрле вĕреннĕ юлташĕ.

«Ленина асăнса» — ку сăвă малтанхи хут 1958 çулта «Ялав» журналăн 3-мĕш номерĕнче çапаннă.

2. *Чĕрери сăввăма...* Кунта «Тăван çĕршыва» сăвă çинчен сăмах пырать.

3. Çырăва Ашхабад адресĕпе çырнă. Петĕр Хусанкай ун чухне ытти тусĕсемпе Вăтам Азире çул çýренĕ.

Таньков — Антон Таньков, чăваш журналисчĕ, прозаикĕ.

Çак сăмахусем аса килеççĕ... Малалла илсе кăтартнă сăвă сыпăкне П. Хусанкайăн хăш сăввинчен илни паллă мар.

Арк. Золотов — Аркадий Иванович Золотов (1901—1942), чăваш литература критикĕ. Ку çырăва çырнă вăхăтра вăл «Канаш» хаçат редакторĕ пулнă.

П.Г.Григорьев — Миттапа Хусанкайăн çывăх пĕлĕшĕ.

Комсомол тенинчен сирпĕтсе кăларчĕç... — Çав тапхăрта поэт пултарулăхĕ пирки пичетре те чылай хĕрý тавлашу хускалнă, çамрăк сăвăçа С.Есенин майлă çырать тесе айăплаççĕ. Комсомол ретĕнчен кăларасси литературăри çав тавлашусемпе те çыхăннă.

Рсайсем... — Кунта чăваш поэчĕ тата прозаикĕ Виктор Ефремович Рсай çинчен сăмах пырать (1906—1970).

Орешин — П.В.Орешин (1887—1938), вырăс поэчĕ, С.Есенинпа пĕрле хресчен поэчĕсен ушкăнĕнче тăнă.

Клюев — Н.А.Клюев (1884—1937), вырăс поэчĕ, хресчен поэчĕсен вĕрентекенĕ.

Ваçанкка — Н.Т.Ваçанкка (1903—1976), чăваш поэчĕ.

Эсрел поэт — С.Григорьевăн, чăваш поэчĕн, фольклорисчĕн литературăри псевдонимĕ.

4. *«Савни парни»* — Митта Ваçлейĕн поэми, малтанхи хут 1926 çулта «Сунтал» журналта пичетленнĕ. *Пачура* — И.Д. Кузнецов. *Хутарсем* — В.А.Долгов, чăваш литература критикĕ (1906—1990). *Пĕр сăвă...* — «Паян эпĕ хĕпĕртерĕм» сăвă çинчен сăмах пырать. *...тепĕр сăввăма...* — Кунта П.Хусанкая халаллана сăвă çинчен сăмах пырать.

5. *Ылтăн Микули* — Н.Я.Золотов (1898—1967), чăваш фольклорисчĕ, критикĕ.

Пýлер — Атăлçи Пăлхар патшалăхĕн тĕп хули пулнă вырăн, хальхи Тутарстан Республикин район центрĕ.

Петр Григорьевич — П.Г.Григорьев. 3-мĕш çырăва ăнлантарнине вулăр.

«Асамат» ятлă поэма. — Митта ку поэмăна çырса пĕтермен.

«Çирĕм улттă». — П.Хусанкай çырнă поэма.

7. *Кашана.* — 1927/1928 çулхи вĕренý çулĕ пуçланиччен поэта педтехникумран «кăларса янă» та хальхи Ульяновск облаçĕн Чăнлă районĕнчи Каша ялне пуçламăш шкулта ĕçлеме ăсатнă. Ку тапхăр çинчен сăвăçăн мăшăрĕ Н.К.Еремеева-Митта тата В.Сатай асаилĕвĕсене вулăр («Митта Ваçлейĕ. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ». Ш., 1974).

«Сĕрĕмре» поэма 1927 çулта «Сунтал» журналта пичетленнĕ. *«Эмигрант»* сăвă 1928 çулта «Сунтал» журналта пи-

четленнĕ. *«Хура»* — П.Хусанкай çырнă поэма, вăл малтанхи хут 1928 çулта «Сунтал» журналта тухнă.

Ехрим Иванĕ — чăваш поэчĕ.

8. *Пуç янă çĕртен...* — Каша ялĕнчен. 7-мĕш çырăва ăнлантарнине вулăр. *Ман «пĕчĕкçи»* — П.Хусанкай ăнлантарнă тăрăх, Фиса Семенова, студентка.

9. *«Асамат» ятлă кĕнеке...* — Митта ку ятлă кĕнеке кăларма ĕлкĕреймен.

Рсай кĕнекине... — В.Рсайăн «Çамрăк ĕмĕр» сăвă пуххи çинчен сăмах пырать, вăл 1928 ç. тухнă.

«Сунталри» критика çинчен... — Вăл тапхăрта «Сунтал» журналта П. Хусанкайпа Митта Ваçлейне ятласа чылай статья пичетленнĕ.

Петров Хĕветĕре... — Ку çын кам иккенĕ паллă мар.

Полоруссова эпĕ пит «майлă» çыру янăччĕ. — Кунта Митта Н.И.Шелепи ячĕпе эпиграмма çырса яни çинчен сăмах пырать пулас. Н.Т.Ваçанкка 1970-мĕш çулсенче Г.Ф.Юмарта пĕлтернĕ тăрăх, Митта пĕр эпиграммăра Шелепи çинчен çапла каланă имĕш:

Каçăртса çŭриччен сухала
Хире кай та суха сухала.

Меценатова та салам. — Ф. Меценатов — Хĕвел тухăçĕнчи халăхсен институтĕнче вĕреннĕ студент, кайран вăтам шкул валли вĕренŭ кĕнекисем хатĕрленĕ, статьясем çырнă, учительте ĕçленĕ.

10. *ВАПП* — Всероссийская ассоциация пролетарских писателей. Ку ассоциаци съездне Митта кайса килеймен.

Сан «Уяртсанна»... — *«Уяртсан»* — П.Хусанкайăн пĕрремĕш сăвă кĕнекин ячĕ, вăл 1928 çулта тухнă.

К.В.Иванов çинчен баллада çырма тытăнтăм. — Кунта сăмах «Сăваплă кĕтес» сăвă çинчен пырать.

12. *«Питтăпай» мĕнле пурăнать?..* — П.Хусанкай кун пирки çапла ăнлантарнă: «Питтăпай» — эп çырма пуçланă драмăлла поэма. Кайранхи ячĕ — «Юлашки тŭре».

13. *РИК* — «Районный исполнительный комитет» тенине кĕскетсе калани.

14. *«Çилюткă» пирки ĕç мĕнле тăрать...* — Ку тĕл пирки П.Хусанкай çапла паллă тунă: «Пушкин арăмне çырнă çырăвĕнче пур: «Селетка ан çитер — ĕçме ыйтĕç!» — тет.

Хĕветуç, Марттин — камсем, ăçтисем иккенĕ паллă мар.

Тепĕр Петĕре салам. — П.Н.Сумбаев çинчен сăмах пырать, кайран вăл П.Хусанкайăн «Аптраман тавраш» романăн прототипĕ пулса тăнă. Çырăва çырнă вăхăтра вăл Хусанта вĕреннĕ пулас.

15. *Çич çĕр минне* — çĕр тĕпне.

«Хама çеç тивĕçлĕ» ыйтусем... — Сăмах мĕн-мĕн çинчен пыни паллă мар.

16. *...Кирлĕ мар хыпар сиктернĕ теççĕ...* — Сăмах мĕн çинчен пыни паллă мар.

Сборник çырăнса пĕтет... — Кунта сăмах Миттан малтанхи сăвă пуххи «Кăмăл» çинчен пырать.

17. *Иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ Малеевкăра...* — Çыравçăсен çакă кану çурчĕ Мускав çывăхĕнче вырнаçнă.

Проф. Тимофеевпа... — Кунта вырăссен паллă литература тĕпчевçи Леонид Иванович Тимофеев çинчен сăмах пырать пулас.

Пастернак килсе кайрĕ... — Борис Леонидович Пастернак (1890—1960), вырăссен паллă поэчĕ, Нобель премийĕн лауреачĕ.

18. *Нарспи çырăвĕ...* — Ку мĕнле çыру пулни паллă мар.

19. *«Хутар шкулĕшĕн» саламлаççĕ...* — Кунта сăмах С. Шавлин «Илья Ульянов Хутар шкулне уçни» сăвви çинчен сăмах пырать. Вăл малтанхи хут 1949 çулта «Ялав» журналта пичетленнĕ.

...ашшĕпе хреснашшĕн ытарайми çывăхлăхĕ... — Кунта сăмах акă мĕн çинчен пырать: халăх хушшинче И.Я.Яковлев В.И.Ленинăн хреснашшĕ пулнă тесе сăмах çýренĕ, Митта çакна чăнах çапла пулĕ тесе шутланă, анчах чăннипе илсен И.Я.Яковлев пулас революци çул пуçĕн хреснашшĕ пулман.

21. *«Мунчу» лайăх...* — Кунта Илпек Микулайĕн «Мунча» калавĕ çинчен сăмах пырать.

Акимов, Сорбоннăри чăваш несĕпĕ... — Николай Акимов Миттапа пĕрле Красноярск крайĕнчи Таловка ялĕнче пурăннă. Унăн хурăнташĕ — Степан Акимович Акимов 1906 ç. Сорбонна пĕтернĕ, 1920 ç. Чĕмпĕрте халăх вĕрентĕвĕн институтĕнче ĕçленĕ.

22. *Çур министр портфельне тивĕçлĕ пултăн...* — Кунта сăмах А. Талвира Чăваш çыравçисен союзĕн правлени пуçлăхне суйласа лартни çинчен пырать.

«Çутăлсанна» килсенех вуларăм... — А.Талвирăн «Çутăлсан» калавĕ çинчен сăмах пырать.

23. *Чĕрчĕлĕхсен кашни сăмахĕ...* — *Чĕрчĕлĕх* факт тенине пĕлтерет пулас.

24. *Лисин Геннадий* — Геннадий Айхи, чăваш халăх поэчĕ.

26. *Сиваш* кам псевдонимĕ пулни паллă мар. Поэт архивĕнчи машинкăпа çапнă алçыру тăрăх пичетленет.

27. В.Давыдов-Анатрин «Юлташсемпе юнашар» кĕнеки тăрăх пичетленет.

28. *Иккĕмĕш кĕнекене...* — Кунта сăмах «Тăван Атăл» альманахăн çулталăкри 2-мĕш номерĕ çинчен пырать.

29. Осипов, Хрисанов — паллă мар çынсем.

Сирĕн корреспондентăр... — Кунта Митта хăй çинчен калать.

30. *[Иван] Михайлов* — журналист.

Çыру вĕçĕ мĕнле пулни паллă мар.

31. *...вместо одной книги послал две...* — Мĕнле кĕнекесем çинчен сăмах пыни паллă мар.

Нарспипе Сетнер... — Митта кунта хăйĕн кĕрĕвне шӳтлесе Сетнер тесе каланă. Поэт хĕрĕ Нарспи Мускаври университетран вĕренсе тухнă.

А.И. — Анна Ивановна Токсина.

В.И. — Василий Иванович Токсин.

П.П. — Петр Петрович Хусанкай.

Не бросай старика Стасова... — Кам çинчен сăмах пыни паллă мар.

32. *Ехрем* — кам иккенĕ паллă мар.

Петĕр — П.П.Хусанкай.

33. *Эрхипчă* — Василий Архипович Долгов, чăваш критикĕ.

Профессорсен шухăшне... — Кунта М.Я.Сироткин профессорпа ытти паллă тĕпчевçĕсен шухăшĕ çинчен сăмах пырать. Вĕсем Г.М.Титов ĕçĕсене хаклана пулас.

34. *Тинис ачи* — Петр Владимирович Денисов, историк-этнограф.

Тăваттăмĕш кĕнекене... — Кунта «Тăван Атăлăн» çулталăкри 4-мĕш номерĕ çинчен (1955 ç.) сăмах пырать.

...куçару (Шпортăран)... — *Ярослав Шпорта* — украин поэчĕ, К. Ивановăн «Нарспине» украинла куçараканĕ.

«Ялаври» пирки («М. çуркунне»)... — Кунта сăмах П. Хусанкайăн «Малтанхи çуркунне» поэми çинчен пырать. Вăл 1955 çулта «Ялавра» тухнă.

...сонетсем касăлчĕç... — Кунта Тăхтине халаллана сонетсем пичете каяйманни çинчен сăмах пырать.

Ĕмпичче — Т.А.Ахазов.

Иван паттăр... — И.Д.Кузнецов, историк.

Вăрăм Ваçлей — В.А.Долгов, критик.

Дубровский — С.М.Дубровский, паллă совет историкĕ, вăл концлагерьте И.Д.Кузнецовпа пĕрле ларнă. Кунта сăмах И.Д.Кузнецов истори наукисен докторĕн ятне илме диссертаци хӳтĕлени çинчен пырать.

Элекçей — А.Ф.Талвир.

Мăнакка — З.А.Андреева.

Вера ханума куртăм... — *Вера* — В.К.Кузьмина, П.П.Хусанкай мăшăрĕ.

35. Петĕрпе иксĕрсĕр — *Петĕр* — П.П.Хусанкай.

Калюков — А.А.Эсхель.

Энтри ачи кам иккенĕ паллă мар.

Вăрăм Ваççа — В.А.Долгов.

Виççĕмĕш кĕнеке... — «Тăван Атăлăн» 1955 çулхи 3-мĕш номерĕ.

Надежда Ивановна — Н.И.Бабенко, А.Ф.Талвир мăшăрĕ.

36. *Тăваттăмĕшне кăлартăмăр.* — Кунта сăмах «Тăван Атăлăн» 1955 çулхи 4-мĕш номерĕ çинчен пырать.

37. *Анна Ивановна* — А.И.Токсина.

Альтук — Е.Я.Орлова.

Атнер — А.П.Хусанкай, П.П.Хусанкай ывăлĕ.

Йăкăнат Молодов — артист.

Микита Романов — Н.Р.Романов, паллă чăваш этнографĕ, фольклорисчĕ.

Геннадий — Г.Айхи, вăл ун чух Мускаври литература институтĕнче вĕреннĕ.

Гурий — Г.М.Титов.

Асли — В.И.Краснов-Асли.

Ярослав Шпорта — 34-мĕш çырăва ăнлантарнине вулăр.

38. *Атăл* — Василий Волгин.

39. *Элекçей* — А.Ф.Талвир.

Шаккур — Л.Я.Агаков.

Кăткă упи — Я.Г.Ухсай.

Исаак — И.Н.Никифоров (Янташ), çыравçă, историк.

Пиняев — И.Д.Пиняев, мордва поэчĕ.

Йăван — И.Д.Кузнецов.

Пичура — И.Д.Кузнецов.

Çамрăксене салам... — Литература институтĕнче вĕренекен Г.Н.Айхипе М.Г.Хури çинчен сăмах пырать.

40. *Бирма сăвви пырать пек, усă курасчĕ...* — Кунта «Бирма халăх юрри» çинчен сăмах пырать пулас.

Тимахвине çак кунсенче вĕренме ячĕç... — Тимофей Ахазов çинчен сăмах пырать пулас.

Симун — С.М.Ислюков.

Петĕр — П.П.Хусанкай.

Элекçей — А.Ф.Талвир.

Ваçлей — В.А.Долгов.

Дмитрий Данилович — Д.Д.Данилов, критик.

Дубровский — 34-мĕш çырăва ăнлантарнине вулăр.

Нонна — поэт мăшăрĕ.

Анна — А.И.Токсина.

Павăл — П.И.Иванов, чăваш журналисчĕ.

41. *Боткин патне...* — Боткин ячĕпе хисепленекен больница.

Мирун — М.Р.Романов (Еник).
Асли — В.И.Краснов-Асли.
Пирĕн Петĕр — Митта Петĕрĕ.
42. *Т.И.Иванов-Таçук* — чăваш халăх поэчĕ.
43. *Н.Петров* кам иккенĕ паллă мар.
44. *Н.Перинов* — çамрăк автор.
45. *А.В.Лукин* — чăваш поэчĕ.
46. *Деферан* — В.Андреев (Хурамал), сăвăç-журналист.
Якур Ефимов — Г. Ефимов, чăваш халăх поэчĕ.
47. *В.В.Иванов* — чăваш поэчĕ, учитель.
48. *В.П.Орлов* — сăвăç-юптаруçă.
49. *Е.Теветкел* — кăшт-кашт сăвăсем çыркаласа пăхнă автор.
50. *П.Степанов* кам иккенĕ паллă мар.
51. *Ямкин* кам иккенĕ паллă мар.
52. *Урзай* кам иккенĕ паллă мар.
53. *Андреев* кам иккенĕ паллă мар.
54. *Кузьмин* кам иккенĕ паллă мар.
55. *Морсков* — журналист.
Канаш — Альберт Канаш.
Йăван Тимрясов — И.Д.Кузнецов.
Сантăр — А.Д.Кăлкан.
В.В.Тюмеров — 1905—1907 çç. революцие хутшăннă паллă революционер.
«Ылханлă йăх» — П.Н.Осиповăн хайлавĕ.
Ну, пхай! пхай! — Ну, мухтав, мухтав! (Индус чĕлхинчен.)
Джалиль — Муса Джалиль, тутар поэчĕ. Митта В. ун сăввисене чăвашла куçарнă.
56. *Йăван Тимрясов* — 55-мĕш çырура ăнлантарнине вулăр.
«Ленин çулĕпе» — Петĕр Хусанкай сăвви.
«Весеннее» — П.Хусанкай сăвви.
Пхай, пхай! — 55-мĕш çырура ăнлантарнине вулăр.
Элекçей — А.Ф.Талвир.
Давыдов — В.И.Давыдов-Анатри.
57. *Пĕрремĕш кĕнеке... Иккĕмĕш кĕнеке...* — «Тăван Атăл» журналăн номерĕсем.
ЦК çырăвне вулаççĕ... — Сталин кульчĕн сиенĕ çинчен каланă çыру пирки сăмах пырать пулас.
Вĕркĕч — П.И.Иванов, чăваш журналисчĕ.
58. *«Румынсем» хушшинче хускану çук-ха...* Румыние каякан ушкăн çинчен сăмах пырать.
Мускава пыраймастăп... — Кунта Митта Ваçлейĕн Мускаври литинститута вĕренме кайма май килменни çинчен сăмах пырать.
Ултутти-Альтук — Е.Я.Орлова.

59. *И.П.Павлов* кам иккенĕ паллă мар.

60. *Петĕр* — П.П.Хусанкай.

Хуçа (ĕмпиччe). — С.М.Ислюков, КПСС Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ.

Д.С.Эльмен — Чăваш автономи облаçне йĕркелекенĕ.

Йăван — И.Д.Кузнецов.

62. *Паснапуç* — Чăваш Республикинчи Патăрьел районĕнчи ял ячĕ.

63. *...очерк çырса яма вăхăт тупаймăр-и?..* — Митта çапла ыйтнине хуравласа М.И.Ильин Çĕпĕртен вăрăм çыру çырса янă, унта Л.Агаков çинчен аса илни тĕл пулать.

64. *М.Д.Михайлов* — СССР халăх артисчĕ, юрăçă. Вăл Шупашкарта пулни çинчен, унти концерт çинчен çав кунсенчи чăваш пичечĕ чылай çырнă. М.Д.Михайлов Шупашкартан хăйĕн тăван ялне — Чăваш Республикинчи Вăрнар районĕнчи Кольцовкăна çитсе курнă. Ку çырăва адресат аллине çитерни çинчен Митта хăйĕн кун кĕнекинче çырса кăтартнă, унта мухтавлă юрăçа хăй Мускавра 1935 çулта итлени çинчен те асăннă.

Васильев И.В. — чăваш юрăçи.

65. *«Çамрăк коммунист»* — ВЛКСМ Чăваш обкомĕн хаçачĕ.

Пурис Тихонов — Борис Борлен, чăваш поэчĕ, ун чухне асăннă хаçатра ĕçленĕ.

Союза илесшĕн... — Кунта Чăваш писателĕсен союзĕ çинчен сăмах пырать.

Василий Иванович — В.И.Андреев (Хурамал).

66. *Л.В.Таллеров* — чăваш халăх писателĕ.

67. *Али паттăр* — Альберт Канаш.

Мукусев — чăваш журналисчĕ.

Минский — Габдурахман Минский, тутар çыравçи.

Овечкина тĕл пулсан... — В.В.Овечкин, вырăс çыравçи. Митта В. унăн «Район ĕçĕ-хĕлĕ» очеркне куçарса кăларнă.

68. *«Çамрăк ĕмĕтсен» сигналлă экземплярне...* — Кунта сăмах Василий Волгинăн «Çамрăк ĕмĕт» кĕнеки çинчен пырать.

Ваççук — Василий Волгин.

Литпĕрлешӳ пирки... — Чăваш АССРĕн Октябрьски райхаçат çумĕнчи çыравçăсен ушкăнĕ çинчен сăмах пырать.

Манăн кĕнеке... — Митта Ваçлейĕн «Кăмăлтан» кĕнеки çинчен сăмах пырать.

Таня — В.И.Андреев мăшăрĕ.

69. *С.Смирнов, Ю.Лаптев, Н.Андриевская* — Мускавран килнĕ çыравçăсем.

Ш.Мударрис — тутар поэчĕ.

Калаву пирки... — Кунта Уйăп Мишшин калавĕ çинчен сăмах пырать.

71. *Алексеевăн дневникĕ...* — Асăннă дневник авторĕ Алексеев кам пулни паллă мар.

Кăçал эпĕ хам та июльте пырса каясшăн... — Митта В. Тайăр Тимккин çĕршывне çитсе курма ĕлкĕреймен.

72. *Питрав Ибасов* — ача-пăча калавĕсен авторĕ.

Очеркра ăна асăнсах хăварас килет... — Митта В. çырма палăртнă «Пăла тăрăхĕ» очерк çинчен сăмах пырать.

...пирĕн Венгрпа пĕрле ĕçлетĕр... — Митта Петĕрĕн ывăлĕ Вингер Петрович Митта çинчен сăмах пырать.

73. *Алентей* — В.С.Алентей, чăваш халăх писателĕ.

74. *Венгр* — 72-мĕш çырăва ăнлантарнине вулăр.

«Кавказ». — Вингер Митта очеркĕ, вăл 1959 ç. «Çамрăк коммунист» хаçатра пичетленнĕ.

75. *Хрулев* кам иккенĕ паллă мар.

76. В.Ахун Митта В. патне икĕ çыру çырса янă.

77. *Таня* — В.Андреев (Хурамал) мăшăрĕ.

Ваççа — Василий Волгин.

«Шĕнерпуç». — В.Волгин сăвви.

Элекçей — А.Ф.Талвир.

78. *И.А.Алексеев* кам иккенĕ паллă мар.

Калаву мана çырлахтараймарĕ... — Мĕнле калав çинчен сăмах пыни паллă мар.

79. *Я.Л.Зверев* — чăваш журналисчĕ. Митта çыру çырнă чух вăл Çĕпĕрте пурăннă.

Кĕркури — Г.И.Краснов-Кĕçĕнни, поэт-прозаик.

Явтук — Я.Л.Зверевăн мăшăрĕ.

Гриша — Г.И.Краснов-Кĕçĕнни.

Кун кĕнеки

Ку кăларăмра Митта Ваçлейĕ 1956, 1957 çулсенче çырса пынă кун кĕнекин пысăк пайĕ пичетленет. (Ытти çулсенче çырнисем тупăнман.) Унăн алçырăвĕ поэт хĕрĕн Илемпи Миттан килти архивĕнче упранать. Кун кĕнекинчи чылай ятсемпе сăмахсем «Çырусен» пайĕнче те тĕл пуласçĕ. Вĕсене «Асăрхаттарусенче» çав пайра ăнлантарса панă.

«Кун кĕнекин» уйрăм сыпăкĕсем тĕрлĕ вăхăтра «Чăваш ен», Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи «Коммунизм çути» хаçатсенче тата «Ялав» журналта тухнă. Кĕнекери текст сыпăкĕсем оригинал копийĕ тăрăх пичетленеççĕ. — ЧПГĂИ ĂА. 13-мĕш йыш. кĕн. 6513 инв. №.

Документсем

Ку ярăма кĕнĕ документсем пурте алçырусем тăрăх пичетленеççĕ. — ЧПГĂИ ĂА. V уйр. 1398 т. 7842—7845 инв. №.

МИТТА ВАҪЛЕЙЕ
ҪЫРНĂ КĔНЕКЕСЕМ

Кăмăл: Сăвăсем. Шупашкар, 1932.

Кăмăлтан: Сăвăсемпе поэмăсем. Шупашкар, 1956.

Эпĕ Ленина курни // «Ялав» библ. 1956, 2№. Е.Орлова каласа панине Митта В. çырса илнĕ.

Кăмăлăмпа шухăшăм: Поэзи, проза, критика. Шупашкар, 1959.

Халал. Сăвăсем, кун кĕнеки // Ульяновск облаçĕн Чăнлă районĕнчи «Коммунизм çути» хаçат библиотеки, 1972. 14 №.

Думы мои, мечты мои: Стихи и поэма. М.: «Современник», 1976 / Пер. с чувашского Г. Фролова.

Кĕрхи илем: Сăвăсемпе поэмăсем. Шупашкар, 1978.

Çак юрра эп ахаль мар юрларăм: Поэзи, проза, публицистика. Шупашкар, 1990.

МИТТА ВАҪЛЕЙЕ
КУҪАРНĂ КĔНЕКЕСЕМ

Ф. Гладков. Пуç-ураллă этем. Калав. Шупашкар, 1932 .

А. Пушкин. Борис Годунов. Трагеди. Шупашкар, 1937; 1971.

Н. Островский. Тăвăлпа çуралнисем. Роман. Митта В., Н. Патман тата Н. Андреев куçарнă. Шупашкар, 1937.

М. Горький. Окуров хули. Повесть. 1937. Пичетленмен, алçыру çухалнă.

М. Горький. Фома Гордеев. Роман. Шупашкар, 1939; 1955.

Л. Кассиль. Аслă хирĕç тăру. Шупашкар, 1949.

А. Пушкин. Пĕлӳçĕ Олег çинчен хунă юрă. Шупашкар, 1976.

МИТТА ВАҪЛЕЙӖ
ПУХСА ХАТӖРЛЕНӖ КӖНЕКЕСЕМ

Такмаксем. Шупашкар, 1934.

Николай Патман. Акатуй: Суйласа илнисем. Шупашкар, 1958.

Митта Петерĕ. Суйласа илнисем: Калавсем. Шупашкар, 1959.

МИТТА ВАҪЛЕЙӖ ПУРНӐҪӖПЕ ПУЛТАРУЛӐХӖ ҪИНЧЕН ҪЫРНӐ ӖҪСЕМ

Кĕнекесенче тухнисем

Абашев В. Чувашская поэма. Чебоксары, 1964. С. 91—94, 111.

Алга А. Митта Ваҫлейĕн пултарулăхĕ// Митта Ваҫлейĕ. Кăмăлăмпа шухăшăм. Шупашкар, 1959. 5—38 с.

Андреев П. И, мĕн пуян, тăванăм?// Андреев П. Юррăмсем-ҫунатăмсем. Шупашкар, 1978. 166—172 с.

Артемьев А. Хурçă саслă поэт// Артемьев А. Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ. Шупашкар, 1984. 288—295 с.

Васильев (Шубоссинни) Н. Чувашская литература на подъеме// Сб. Растет Советская Чувашия. Чебоксары, 1934. С. 46—52.

Васьлей Митта — LXXX. Буклет/ Сост. А. Хузангай. Чебоксары, 1988.

Давыдов-Анатри В. Митта в моей памяти. Чебоксары, 2003.

Давыдов-Анатри В. Сатин кĕпе. Шупашкар, 1971. 38—39, 42—43, 47—48, 58 с.

Давыдов-Анатри В. Сăвă-юрă янăрать. — Нонна Кирилловна// Аттесен ҫулĕпе. Шупашкар, 1989. 35—37, 39—40 с.

Давыдов-Анатри В. Тус-тăванăм Митта// Давыдов-Анатри В. Юлташсемпе юнашар. Шупашкар, 1981. 54—62 с.

Захаров Е. Митта Ваҫлейĕ// Захаров Е. Чăваш илемлĕ литератури. Шупашкар, 1934. 122—126 с.

Илпек Микулайĕ. Тимĕр: Роман. Шупашкар, 1971. 124—125, 173—174 с.

Канаш А. Митта Ваҫлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ// Канаш А. Шăпчăксем, эсир те итлесе... Шупашкар, 1978. 117—123 с.

Канюков В. Вăтăрмĕш ҫулсенчи чăваш литератури// Канюков В. Писатель ăсталăхĕшĕн. Шупашкар, 1986. 57—59, 77—82 с.

Кузнецов И. Митта Ваçлейĕ// Кузнецов И. Чăваш культурипе литературин хăш-пĕр ыйтăвĕсем тавра. Шупашкар, 1961. 114—116 с.

Кузнецов И. Митта Ваçлейĕ тата унăн пехилĕ// Чăваш календарĕ. 1967.

Кузнецов И. Наци ыйтăвĕпе чăвашсен илемлĕ литературипе. Шупашкар, 1931. 69—72 с.

Митта Ваçлейĕ// Чăваш календарĕ. 1968. Шупашкар, 1967. 45 с.

Митта Ваçлейĕ. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ// Г. Юмарт пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 1974.

Сăваплă ят. Асаилӳсем/ Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ// «Хыпар» хаçат кĕнеки. Шупашкар, 1998. Пуш, 5.

Сироткин М. Митта Василий Егорович// Краткая литературная энциклопедия. Т.III. Москва, 1967. С. 871 — 872.

Трофимов Г. Митта Василий Егорович// Краткая чувашская энциклопедия. Чебоксары, 2001. С. 271.

Хлебников Г. Я. Зрелость поэта-гражданина// Ученые записки ЧНИИ. Вып. XXXIX. С. 197—210. Чебоксары, 1968 (на с. 197), на титуле — 1969.

Хлебников Г.Я. Поэт, взошедший на Голгофу// Хлебников Г. Я. Чувашская литературная классика и ее наследники. Чебоксары, 2001. С. 237—262.

Хлебников Г.Я. Современная чувашская литература. Чебоксары, 1971. С. 152—159.

Хлебников Г.Я. Чăваш совет литератури 1954—1967 çулсенче. // Хлебников Г.Я. Чăваш совет литературин историйĕ. Шупашкар, 1972. 434—436 с.

Хузангай А. Судьба поэта// Сб. Взгляд за горизонт. Чебоксары, 1989. С. 158—210.

Хусанкай А. Кĕрле, пăлхавăрлă сăрнайăм// Митта Ваçлейĕ. Çак юрра эп ахаль мар юрланă. Шупашкар, 1990. 5—44 с.

Хусанкай П. Ăста поэзишĕн// Хусанкай П. Ăсталăхпа чăнлăх. Шупашкар, 1964. 66—68 с.

Хусанкай П. Пуç кăшăлĕ вырăнне// Хусанкай П. Пинпин чĕре. Шупашкар, 1977. 227—235 с.

Шавлы С. Юлташа асăнса// Шавлы С. Кĕсле тытрăм аллăма. Шупашкар, 1968. 148—157 с.

Юмарт Г. Ăста куçару тĕслĕхĕ. А.С.Пушкин. Борис Годунов. Шупашкар, 1972. 5—7 с.

Юрьев М. Василий Митта//Биобиблиографический справочник «Чувашские писатели». Чебоксары, 1964. С. 155—158.

Юрьев М. Митта Ваçлейĕ// Чăваш писателĕсем. Шупашкар, 1967. 193—195 с.

Юрьев М., Романова З. Митта Василий Егорович// Писатели советской Чувашии. Чебоксары, 1988. С. 204—205.

Юхма М. Он открыл сюпьсе Абайдара//Митта Василий. Думы мои, мечты мои. Москва, 1976. С. 57—61; то же.

Хаçат-журналта тухнисем

Абайдаров А. Аслă Шăхаль юрăçи// Вучах. 1991. Çурла, 26.

Айги Г. Обыденность чуда// Дружба народов. 1993. №12. 191 с.

Алакĕр В. Кăмăл...// Кĕнеке. 1933. 2—3 №. 24—26 с.

Алга А. Пиççе çитнĕ ăсталăх// Тăван Атăл. 2 №. 1958. 72—83 с.

Алентей В. Миттапа пĕрле// Коммунизм ялавĕ. 1988. Пуш, 5.

Аслут А. Сильва Митта, гидростроитель// Коммунизм ялавĕ. 1982. Юпа, 29.

Варга И.Ч. Митта Ваçлейне асăнса// Непуйшаг. Эгер (Венгри). 1987. Раштав, 31.

Волков Г. Ĕмĕр асăнма// Коммунизм ялавĕ. 1974. Авăн, 5.

Гордеев Д. Çунаççĕ те, çĕреççĕ те// Хыпар. 1998. Утă, 14.

Гурьянова Р. «Митта патĕнче...»// Хыпар. 1994. Кăрлач, 13.

Давыдов-Анатри В. Асăмри Митта// Тăван Атăл. 1994. 3 №. 54—72 с.

Давыдов-Анатри В. Каттис Мишши юррисем// Ялав. 1994. 3 №. 3 с.

Давыдов-Анатри В. Митта в моей памяти// Советская Чувашия. 1991. 18, 19, 23, 24, 25, 26 апреля.

Дмитриев В. «Ăшă куçлăччĕ, кăмăлла сăн-питлĕччĕ»// Тантăш. 1997. 14 №. Ака, 4.

Егоров В. Пирĕн Митта// Чăваш ен. 1998. 22 №.

Ефимов Г. Туслăхпа хаярлăх// Ялав. 1991. 6№. 20—23 с.

Золотов А. Вулакансен сăмахĕ пуринчен те хаклă// Канаш. 1926. Авăн, 10.

Илпек М. Митта Ваçлейĕ// Коммунизм ялавĕ. 1958. Пуш, 5.

Ильбек Н. Любимый поэт молодежи// Молодой коммунист. 1958. 5 марта.

Ильин М. Такмак калать асатте// Хресчен сасси. 1992. Раштав, 18.

Ильина Н. Тапать, кăлтлатать поэт чĕри...// Хыпар. 2004. Çĕртме, 2.

Исаев М. Çамрăк писательсемпе комсомол// Сунтал. 2№. 1927.

Исмуков Н. Сăпайлăх, тӳркăмăллăх, чăтăмлăх, чунлăх... // Тăван Атăл. 1988. 3 №.

Канюков В. Чувашский поэт В. Митта// Советская Чувашия. 1958. 5 марта (54 №).

Кели Г. «Хулăм сас» поэма объективлăхĕ// Сунтал. 1931. 6 №.

Кузьмина В. Манăн асăмри Митта Ваçлейĕ// Хыпар. 1999. Çĕртме, 25.

Макаров И. Миттасем// Ялав. 1981. 2 №. 32 с.

Макаров И. Юлашки тĕлпулу// Ялав. 1977. 6 №. 28 с.

Малышкин Н. Сăвăçпа паттăр// Хыпар. 1993. Пуш, 6.

Митта Вингер. Йăх несĕлĕ// Ялав. 1992. 7№. 24—26 с.

Никитин В. «Хам сăмаха каларăм...»// Коммунизм ялавĕ. 1968. Пуш, 8.

Петров В. Трагедия известного поэта// Чăваш ен. 1992. 14 марта.

Петров К. Хĕвеллĕн çуталать Митта// Хыпар. 1998. Нарăс, 13, 18.

Петрова И. «Халь те чĕре тĕпĕнче» // Ялав. 1995, 3 №, 115—116 с.

Петрова Р. Пĕр ĕмĕтлĕ тантăшсем// Хатĕр пул. 1983. Пуш, 3.

Савинова М. Хусанкайăн тăватă автографĕ// Хыпар. 1999. Çĕртме, 25.

Сакмаров М. Халĕ те куç умĕнче// Пионер сасси. 1978. Пуш, 4.

Сандров Н. Кăмăлăмпа шухăшăм// Коммунизм ялавĕ. 1959. 129№.

Семенова А. Çыру та çӳрететтĕмĕр// Ялав. 1995. 3 №. 116 с.

Семенов-Шахтер И. Çавăн пек пулнă вăл, Митта// Чăваш ен. 1993. 10 №.

Çаваç В. «Савни парни» пирки// Сунтал. 1927. 2 №. 20 с.

Талвир А. Митта Ваçлейĕн пултарулăхĕ — халăх пуянлăхĕ// Тăван Атăл. 1968. 2 №.

Теветкел Н. Митта еткерлĕхĕ// Коммунизм ялавĕ. 1989. Утă, 2.

Тимофеев Н. Халăхпа пĕрле, малти ретре// Ялав. 1974. 1 №.

Усли В. Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕнче [Митта Ваçлейĕн ĕçĕсене тишкерсе тухни] // Канаш. 1937. Утă, 12.

Федоров А. Митта Ваçлейĕ Вăрнарта// «Хусан» альманах (Хусан). 1968. 250—261 с.

Федоров В. Встречи на Соловках. Из воспоминаний узника// Литературная Удмуртия. 1993. 19 августа.

Федотов М. Митта Ваçлейĕн «Кăмăлĕпе шухăшĕ»// Тăван Атăл. 1959. 4№.

Федотов М. Митта Ваçлейĕн «Кăмăлтан» сăвă кĕнеки çинчен// Ялав. 1958. 6№.

Хлебников Г. Лебединая песня Василея Митты// Молодой коммунист. 1968. 19 марта.

Хутар В. Поэт çулĕпе «Кăмăлĕ»// Трактор. 1933. 6 кĕн., 127—141 с.

Юмарт Г. Вилсен те пурăнать этем// Çамрăксен хаçачĕ. 2004. Çурла, 13.

Юмарт Г. «Енисей сăввисем» // Хыпар. 1997. Раштав, 18.

Юмарт Г. Сăвăçăн чăнлăхĕпе чунлăхĕ// Хыпар. 2003. Пуш, 5.

Юмарт Г. «Сăввисем чăн-чăн ĕнчĕ пек» // Тăван Атăл. 2003. 3№. 41 с.

Юмарт Г. Çитеймен ĕмĕтсем// Хыпар. 1996. Çĕртме, 10.

Юмарт Г. «Этем, этеме ан пул ытлашши» // Хыпар. 1993. Пуш, 5.

Юмарт Э. Хăйне евĕр сăмах ăсти// Çамрăксен хаçачĕ. 2003. Пуш, 7—13.

Юхма М. Митта Ваçлей кĕперĕ// Вучах. 1993. Кăрлач, 1.

Я[лавин] С. Савăнăç кĕнеки// Канаш. 1935. 26 №.

Яковлев В. ...И, мĕн пуян, тăванăм?// Хресчен сасси. 1994. Ака, 1.

Ялкир П. Митта йăхĕ// Хыпар. 1999. Кăрлач, 27.

ТУПМАЛЛИ

Редакцирен 7
Автобиографи *(Митта Ваçлейĕ)* 9

ОЧЕРКСЕМПЕ КАЛАВСЕМ

Пионер ялĕ 11
Çичĕ çул тултарчĕ! 12
Илемлĕ юрăсем сарăлаççĕ . . . . . —
Хисеплĕ вилĕм *(калав)* 13
Аса илнисенчен 26
«Атăл пăлхавçисем» Ульяновскра 28
Чĕлĕм Мĕкĕти *(очерк)* 29
Лав хыççăн лав *(очерк)* 34
Кăçалхи ака — ăнăçлă ака 36
Кадкин ятлă пĕр çыннăн чараксăр ĕçĕсем 38
Çĕршыв юрлать 42
Кăçалхи калăм 54
Радио-хаçат Йĕпреçре 57
Мур *(Йĕпреç калавĕ)* 61
Пиртен пĕри 65
Туркмен кавирĕсем 71
Мамăк утравĕ 75
Йĕпреç çулĕсем *(Иртнĕ-çýренĕ чух çырса илнисем)* . . . 79
Ватти 89
Çамрăкки 102
Шуйттан Левентей 118
Эпĕ Ленина курни 122

КУÇАРУСЕМ

Тĕттĕм патшалăх *(Н.А.Добролюбов)* 130
«Мĕн тумалла?» роман сыпăкĕсем *(Н.Чернышевский)* . . 134

«Вăрçăпа мир» роман сыпăкĕсем *(Л.Н.Толстой)* 143
Район ĕçĕ-хĕлĕ *(Валентин Овечкин)*. 152
Пан Громек патне аннă ангелсем *(Ян Дрда)* 181
К.В.Ивановпа пĕрле ĕçлени *(И.Т.Трофимов)* 188

СТАТЬЯСЕМПЕ РЕЦЕНЗИСЕМ

Шиллер чăваш театрĕнче 196
«Такмаксем» кĕнеке ум сăмахĕ 198
Поэт тата халăх пултарулăхĕ 199
Н.А.Добролюбов 201
Чăваш халăх илемлĕ сăмахлăхĕн пулас антологийĕ . . . 204
Юратса çырнă кĕнеке 208
Летчиксем 212
Сахалинти çуркунне 213
Альберт (Альпăрт) Канаш 214
Якур Афанасьев çырнă «Тантăшсем» ятлă поэма çинчен . 215
Кăсăя Ваçлейĕн сăввисем пирки 218
«Коммунизм ялавĕнчи» рецензисем 220
Кĕркури Красновăн «Асаматне» вуланă май килнĕ шухăшсем 221
«Ялав» журналăн страницисем тăрăх 230
Митта Петĕрĕ. «Пăла тăрăхĕнче» 239
Халăх хавалĕ 240
Юрий Скворцовăн сăввисемпе поэмисем 242
Асран кайми кунсем 243
Пурнăç чăнлăхĕ 250
Петĕр Хусанкай 275
Алексей Талвир. 277
Ĕçхĕл юлташа панă хурав 279
Наум Любимов çырнă «Аслă улшăну» роман çинчен . . 281
Çапа пĕлмен пушă 287
Çырусем 291

КУН КĔНЕКИ

1956 çул 358
1957 çул 425
Документсем 459
Асăрхаттарусем 491
Библиографи 504

Чувашский государственный институт
гуманитарных наук

Литературно-художественное издание

МИТТА ВАҪЛЕЙЁ
(Василий Егорович Митта)

ҪЫРНИСЕН ПУХХИ
II том

СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ
Том II

На чувашском и русском языках

Составитель, автор предисловия
и комментариев *Г.Ф. Юмарт*

Редактор *Р.К. Игнатьева*
Художественный и технический редактор *А.В. Семенова*
Корректоры *Г.И. Алимасова, Н.П. Печникова, Н.Г.Ильина*
Компьютерная верстка *М.В.Филипповой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 22.02.05. Формат 84x108[1]/32. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 26,88. Учетно-изд. л. 30,25. Тираж 1000 экз. Заказ № К-5150. Изд. № 27.

ГУП «Чувашское книжное издательство», 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.